С(ЧУВ)
А-23
18427-ЧУВ.

Леонид
Агаков



# Чи хакли

Национальная библиотека ЧР
4-018427

18427

К9
К С(Чув)
А23

ЛЕОНИД АГАКОВ

# ЧИ ХАКЛИ



ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ ● ШУПАШКАР — 1974

С (Чув) 2
А—23



ПРОВЕРЕНО
20 10 09 ОКТ 2017

Пирĕн чăваш литературинче хĕрĕх çул ытла ĕçлекен Леонид Агакова — Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премин пĕрремĕш лауреатне — чăннипех çамрăксен писателĕ теме пулать. Хăйĕн паллăрах пур произведенийĕсенче те вăл совет çамрăкĕсен, комсомолецсен пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне, вĕсен кĕрешӳне кăтартса парать.

Аса илĕр-ха: «Пĕрре çуркунне» повеçре 1920—1922 çулсенчи çамрăксем Совет влаçне çирĕплетесшĕн, ял пурнăçне çĕнетесшĕн паттăррăн кĕрешсе ялти кулаксемпе тĕрлĕ банда юлашкисене çĕнтереççĕ. «Шанчăк» романра, «Яланах салтаксем» повеçре тата нумай калавсенче чăваш çамрăкĕсем ытти тăванла халăхсен ывăлĕ-хĕрĕсемпе пĕрле Отечественнăй Аслă вăрçă фрончĕсенче епле хастаррăн çапăçнине ӳкерсе кăтартнă.

Çак кĕнекери «Чи хакли» романра та тĕп геройсем — çамрăксемех. Суту-илӳ шкулĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн икĕ çамрăк хĕр — Лариса Логиновăпа Кира Шакова — яла каяççĕ те чунчĕререн тăрăшса ĕçлеççĕ, çав вăхăтрах халăха улталаса ун шучĕпе пуйма тăрăшакансене хирĕç пĕтĕм вăя хурса кĕрешеççĕ. Вĕсемшĕн чи хакли — чыс. Чыса çамрăкранах упрамалла, ăна нихăçан та варалама юрамасть... Йывăр ку кĕрешӳ, мĕншĕн тесен суя чунлă этемсене хӳтĕлекенсем те пур, çапах та чăнлăх çиеле тухать, хĕрсем çĕнтереççĕ.

18427-ЧУВ

А $\frac{0733-090}{М136(03)74}$ 35—74 © Чувашское книжное издательство—1974 г.

Чувашская республиканская
библиотека



# ЧИ ХАКЛИ

РОМАН

**Чыса çамрăкран упра.**

*(Ваттисем калани).*

## 1

— Питĕ аван! Калама та çук лайăх! Савăнтартăр мана!..

Райпо председателĕ Владимир Яковлевич Фролов, аллăсенчен иртнĕ шуранкарах сăн-питлĕ, кукшаланма пуçланă, офицерсен евĕрлĕ кивĕрех симĕс китель тăхăннă çын, тин çеç вуласа тухнă хутсене сĕтел çине хучĕ те çиелтен пĕртен-пĕр аллипе шап! тутарчĕ.

— Тахçанах кĕтетпĕр сире! — Вăл хăй умĕнче ларакан çамрăк хĕрсем — Лариса Логиновăпа Кира Шакова — çине кăмăллăн пăхрĕ.— Анчах мана çак тĕлĕнтерет-ха: мĕншĕн эсир иккĕн çеç килнĕ? Эпир сахалтан та пилĕк-ултă çын ярса пама ыйтнăччĕ-çке! Тен, сирĕн хыççăн татах килекенсем пулаççĕ? Э?

— Ăна пĕлме пултараймастпăр,— терĕ Лариса Логинова, чăп-чăмăр питлĕ, хура çӳçне арçынла кĕскен кастарнă хĕр, хăйĕн юлташĕнчен кăшт аслăрах пек курăнаканскер.

— Сире ун çинчен нимĕн те каламарĕç-и?

— Çук, каламан. Пире Кирăпа иксĕмĕре сирĕн района направленисем пачĕç те — эпир килтĕмĕр, шăп çитме хушнă вăхăтра çитрĕмĕр ав, пĕр кун та кая юлман...

— Вăл тĕрĕс-ха, аван... Вăхăтра çитнĕ, маттур эсир, ун пирки сăмах çук,— терĕ Фролов, пачкăран сигарет илсе хыпнă хыççăн хăрах аллипех спичка çутса.— Суту-илӳ шкулĕнчен эсир кăçал миçен вĕренсе тухрăр-ха?

— Çитмĕлĕн пулас...

— Охо! Çитмĕл специалист! Рота вĕт ку! — Фролов калех сĕтеле çапса илчĕ.— Çав çитмĕлтен пире икĕ çын çеç ярса панă пулать! Ну, вăл кадрсен начальникне

тепĕр канашлура ăс-пăс паратăп-ха эпĕ! Ялан çывăхри районсене ыр туса пурăнать — лешсем кашни кун тенĕ пекех Шупашкара çитсе йăпăлтатаççĕ те... Эпир унта ик-виç уйăхра та пĕрре çеç пулатпăр, çавăнпа та пире пурте чăн юлашкинчен лекет — таварĕ те, кадрсем те, ытти те... Анчах кадрсем пире çав тери кирлĕ! Çав тери! Кăçал кăна эпир хамăр районра çичĕ çĕнĕ магазин уçрăмăр. Суту-илӳ ĕçне вĕреннĕ çынсем çуккипе пирĕн унта такам шуйттанĕ те ĕçлет — ăнман ветфельдшертан пуçласа парикмахер пулнă çын таранах! Шкулта виçшер çул çеç вĕреннисем те пур, лайăххăн ал та пусаймаççĕ. Иккĕшĕ çур çултанах растрата турĕç — те ĕçлеме пĕлменнипе, те юри, мур пĕлет вĕсене! — Фролов йывăррăн сывласа илчĕ те малалла калама тытăнчĕ: —Мухтанмасăрах калатăп, лайăх лавккасем те сахал мар пирĕн, таварçаврăнăшне те ирттерсе тултараççĕ, жалобăсем те çук вĕсем пирки, лавккисенче — таса, тирпейлĕ, пырса кĕрсен кашни тавар тӳрех куçа курăнать, витринăсем те хитре... Ну, теприсем вара...— Вăл хăрах аллипе сулса илчĕ.— Пылчăк, тусан, кĕтессенче — эрешмен картисем, пир-авăрĕ те, ата-пушмакĕ те, тетрачĕ те пĕр купара, теприсем краççынне те сахăрпа юнашарах лартаççĕ, тимĕр-тăмăрĕ те кĕнекесемпе пĕрле! Нимĕнле культура та çук!

— Вĕрентес пулать эппин вĕсене,— терĕ ку таранччен шарламасăр ларнă Кира Шакова, куçĕсем çине аннă сап-сар çӳçне аллипе каялла ывăтса ярса.— Суту-илӳ культурине хăнăхчăр...

— Вĕрентетпĕр! Ырăпа та калатпăр, ятласа та пăхатпăр, тепĕр чух канашлусенче çунтаратпăр кăна, санинспекци штрафсем хурса тӳлеттерет, пурĕпĕр усси сахал! Ăшаласа илнĕ хыççăнах лавккине кăшт кăна йĕркене кĕртет вăл, анчах тепĕр уйăхран-иккĕрен кайса кур — каллех ним латти çук. Хăшĕсен çипуçĕ те хăрушла. Калăпăр, вăл халь кăна хăй килĕнчи витере навус хырнă, çур сехетрен çав тумтирпех, çав чосăнкипех лавккана пырса кĕрет, халат та тăхăнмасть, çуман аллипех михĕрен сахăр е премĕк илсе турттарса парать, мур пуçĕ!

— Юрамасть-çке ун пек... — терĕ Кира.

— Юраманнине шута илеççĕ-и вĕсем! Эпир ял çыннисем, пире юрать, улпутсем мар, теççĕ. Пĕр сăмахпа каласан, хĕрсем, чылай çĕрте пирĕн суту-илӳ культури

пит начар-ха. Çавăнпа та пире çак ĕçе вĕреннĕ çынсем ытларах кирлĕ, ытларах. Шупашкарти пуçлăхсенчен пĕрмай ыйтатпăр — парăр пире çамрăк специалистсем, нумайтарах парăр! Анчах кăçал та иккĕн çеç килтĕр авă. Сахал ку, питĕ сахал! Капля в море, теççĕ-иха вырăссем? Шăп çавă...

Фролов пӳрнине пĕçертме тытăннă сигарет тĕпне катăк пепельница çине пусса сӳнтерчĕ те ассăн сывласа ячĕ.

— Çапла, хĕрсем! Эпир халь пĕрмай ялпа хула хушшинчи уйрăмлăха пĕтерсе пырасси, ял культурине ӳстересси çинчен калаçатпăр. Пирĕн парти лартнă задача вăл. Ун çинчен парти программинче те каланă, эсир ăна лайăх пĕлетĕр-ха ĕнтĕ, вĕренмен çынсем мар. Çав задачăна куллен пурнăçа кĕртсе пырасси пирĕнтен, суту-илӳре ĕçлекенсенчен те, нумай килет, çапла-и?

— Вăл тĕрĕс ĕнтĕ,— пуçне тайса илчĕ Лариса.

— Акă, сăмахран, çынсен çипуçнех илер. Лайăх çипуç та — культура палли. Пирĕн хамăр халăха лайăхрах, хитререх тумлантарма тăрăшмалла. Калăпăр, лавккара пĕр-пĕр çамрăк каччă костюм илет... Тепĕр продавец алла мĕнле костюм лекет — çавна тыттарать, лешĕ, илме пыни, ăна тăхăнса пăхнă-пăхман «лайăх, лайăх!» тесе, часрах укçине илмеваскать. Анчах костюмĕн хулпуççисем те сарлака, усăнсах тăраççĕ, çаннисем те вăрăм, каччă костюм мар, темле михĕ тăхăннă пек курăнать... Юрать-и çавăн пек костюма сутма?

— Паллах, юрамасть...

— Мĕн тумалла продавецăн? Урăххине тупса памалла! Ан тив, суйлатăр çав каччă, хуть те вунă костюм тăхăнса пăхтăр! Хитре пултăр. Тăп-тăп. Ятарласа хăй çине çĕленĕ пек. Тен, вăл каччăн ыран ЗАГСа каймалла? Пулма пултарать вĕт ун пекки? Пултарать. Костюм хыççăн эс ăна кĕпе суйласа илме пулăш. Унтан галстук, кĕпе тĕсĕпе килĕшекеннине тупса пар. Мода журналĕ çинчи ӳкерчĕк пек тухса кайтăр çав каччă лавккаран. Вара вăл сана тахçанччен ырăпа асăнса пурăнĕ, çынсене те каласа парĕ, санăн халăх умĕнчи авторитету ӳсĕ... Çапла-и? Тĕрĕс калатăп-и эпĕ?

— Тĕрĕс пулмасăр...

— Халь тата пирĕн магазинсенче кил таврашĕнче кирлĕ электроприборсем нумайлансах пыраççĕ — электроутюгсем, плиткăсем — пылесоссем таранах. Вĕсем

хĕрарăм пурнăçне çăмăллатаççĕ. Вĕсене илекенсем те сахал мар. Анчах пирĕн хăшпĕр продавецсем çав приборсене мĕнле ĕçлеттермеллине те пĕлмеççĕ...

— Эпир кăшт чухлатпăр,—йăл кулса илчĕ Кира.— Радиоприемниксем, проигрывательсем, телевизорсем те хăратмаççĕ пире.

— Чухлатăр пуль, тетĕп çав. Çынсене çав япаласене юратма вĕрентес пулать... Е тата кĕнекесене илер. Ку ĕнтĕ уйрăмах «интеллигентлă» тавар. Ăна — илекенне кура — сĕнме пĕлес пулать. Учителе пĕр йышши кĕнеке, агронома — тепĕр йышши, механизатора пачах урăхла кĕнеке кирлĕ-çке! Фермăсенче тунсăхласа пурăнакан хĕрсем юрату çинчен çырнисене каçса кайса вулаççĕ, шкул ачисем — приключенисем ыйтаççĕ, разведчиксем, шпионсем çинчен... Анчах кĕнеке лавккине ĕçлеме ăнсăртран пырса лекнĕ ветфельдшер е парикмахер кама мĕнле кĕнеке сĕнме пултарать? Вăл хăй те шкул хыççăн виç кĕнеке вуласа тухман вĕт! Çавăн пиркиех пирĕн тепĕр чух чип-чипер сутăнмалли кĕнекесемех пăнтăхса выртаççĕ, юлашкинчен вара, вĕсен «товарный вид» çухалнă тесе, списать тăватпăр. Тăптăр убыткă! Пире те, патшалăха та...

— Пулма пултарать çав,— килĕшрĕ Кира.

— Пултарать мар, вăл чăнах çапла! Эпĕ ĕнтĕ вуникĕ çул ĕçлетĕп çак вырăнта, ялти суту-илӳри чир-чĕрсене хамăн хăрах алă çуккине пĕлнĕ пекех пĕлекен пултăм, анчах вĕсене çийĕнчех пĕтерме вăй-хал çитмест. Пĕр çĕрте йĕрке тăватăн — унччен те пулмасть тата мĕн те пулин сиксе тухать. Тав турра, растратăсем çулленех сахалланаççĕ, анчах тавар илекенсене улталани, муталани пĕтмест-ха. Çук, пĕтмест, мур! Акă, юлашки ик-виçĕ уйăх хушшинче килнĕ жалобăсем...— Фролов сĕтел ещĕкĕнчен хулăн кăвак папка туртса кăларчĕ.— Мĕн çинчен çырни çук пуль унта! Паллах, ытла пурте тĕрĕс мар, юри, кураймасăр çырнисем те тем чухлех, анчах, шел пулин те, тĕрĕссисем те нумайçке! Тем тĕрлĕ те улталама хăтланаççĕ халăха хăшĕсем, чыса-намăса çухатнисем! Тытатпăр вĕсене, ĕçрен кăларса ывăтатпăр, хăшĕсене суда паратпăр, çавах жуликсенчен тасалса çитейместпĕр-ха. Тахăшĕ ун пек этемсене талпиçенпе танлаштарса çырнине астăватăп: пĕрне кăклатăн, кĕçех унпа юнашар тепри сиксе тухать, шуйттан!



Фролов татах сигарет хыпса тивертрĕ.

— Пĕтĕмпех кадрсенчен килет, хĕрсем, йăлтах кадрсенчен! Пур çĕрте те таса чунлă, ăнлануллă, чан-чăн совет çыннисем, пуринчен ытла хăйсемшĕн мар, халăхшăн чунне парса ĕçлекенсем пулма тивĕç пирĕн, çавăн чух тин пĕтме пултараççĕ суту-илӳри йĕркесĕр-лĕхсем... Ку енчен ĕнтĕ сирĕн, çамрăксен, пример кă-тартмалла. Хăвăрăн тĕрĕс, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлемелле кăна мар, кукăр аласене пăрса лартма, вăрăсене тăрă шыв çине кăларма та пулăшмалла. Халь те нумайăшĕ пулăшаççĕ те-ха пире, çителĕксĕртерех-ха вăл. Хамăр хушăри кĕсен-çăпана пирĕн хамăрăн ытларах çине тăрса пĕтерсе пырас пулать!

Хĕрсем чĕнмерĕç. Тĕп-тĕрĕс сăмах пирки мĕн калатăн?

Тулта тĕттĕмленме пуçларĕ.

— Ну, юрĕ, эппин, хĕрсем, малтанлăха кун чухлĕ калаçнипе çитĕ, вăхăт та чылай пулчĕ ĕнтĕ,— терĕ Фролов.— Эсир ывăннă та пуль, çиес те килет пуль. Кайса апат çийĕр те канăр ыранччен. Ресторан хупă-ха пирĕн, ремонтра, анчах чайнăй вуннăчченех ĕçлет. Инçе мар вăл, урам урлă кăна. Колхозник çуртне хам шăнкăравлăп — уйрăм пӳлĕм паччăр сире. Укçине ан тӳлĕр, хамăр шутран пулать...

— Ĕçлеме ăçта каясси пирки мĕнле вара, хăçан калатăр? — ыйтрĕ Лариса.— Нимрен малтан çавна пĕлесчĕ-çке пирĕн...

— Ун пирки, хĕрсем, ан пăшăрханăр, вăл ыран паллă пулĕ,— терĕ Фролов.— Вырăнĕ нумай, çапах та манăн правлени членĕсемпе калаçса илмелле пулать.

— Пире иксĕмĕре те пĕр çĕре вырнаçтарма пул-масть-ши, председатель юлташ? — ыйтрĕ Кира.— Пĕр-ле пулсан пит аванччĕ те?

— Пĕрле... — Фролов пӳрнисемпе сĕтеле тăкăртат-тарса илчĕ.— Ытла пĕрлех пулаймасть пуль çав. Ан-чах пĕр-пĕринпе çывăх ялсенче пулма пултаратăр та пуль. Хушши инçе мар — виç-тăват километр çеç. Хăнана çӳреме ансат пулать...

— Питĕ аванччĕ!

— Юрĕ. Ыранччен, эппин, хĕрсем! — Фролов пу-кан çинчен тăчĕ те Ларисăпа Кирăна ал пачĕ.

— Килĕшрĕ мана ку председатель, пит лайăх çын пулмалла,— терĕ Лариса хăйĕн тантăшне, вĕсем райпо çуртĕнчен урама тухсан.

— Куртăн пуль, вăрçăра пулнă çын, сулахай алли çук,— ун çине хулпуççи урлă пăхса каларĕ Кира.— Фронтовик. Эп сăнанă тăрăх, фронтовиксем вĕсем çынсемпе яланах кăмăллă пулаççĕ, ĕçпе пыракан-ыйтакансемпе кăмăллă калаçаççĕ. Хамăрăн шкул директорнех, Михаил Петровича, аса ил-ха эсĕ. Полковник пулнă вăл, кăкăр тулли орден-медаль унăн, ют çĕршыв наградисем те пур, тепĕр çын пулсан, сăмсине каçăртсах пăрахмалла, çывăха та ан пыр, анчах вăл хуть те кампа та епле ăшшăн калаçать? Пирĕншĕн, студентсемшĕн, яланах тăван атте пекчĕ-иç! Фронтовиксенчен бюрократ пулаймасть те пулĕ, тесе шутлатăп эпĕ. Çынсене хаклама пĕлеççĕ вĕсем...

— Сисрĕн-и эсĕ, епле вăрттăн лекци вуласа пачĕ вăл пире? — юлташне чавсипе тĕртсе илсе йăл кулчĕ Лариса.— Хăй ахаль çеç калаçать пек, çав хушăрах вĕрентет, вĕрентет... Тем çинчен калама та ĕлкĕрчĕ! Тавар илекенсемпе мĕнле пулмалли çинчен те, халăха улталӑма юраманни çинчен те... Чее çын!

— Ĕçĕ çавă ĕнтĕ унăн. Пурне те кирлĕ пек йĕркеллĕ ĕçлекен тăвасшăн. Пĕтĕм районри суту-илӳшĕн ответ тытать те-ха.

— Çапла çав...

Вĕсем пĕр хушă крыльца умĕнче чарăнса тăчĕç, йĕри-тавралла пăхса илчĕç. Ку райцентр ахаль ял пекех, юлашки çулсенче туса лартнă икĕ хутлă темиçе çурта шута илмесен, тепĕр пысăк ялтан ним уйрăмми те çук.

— Питĕ лăпкă-çке кунта, Шупашкартипе танлаштарсан...— терĕ Лариса.— Ку шăплăхран хăраса та каймалла...

Чăнах та, таврара çав тери шăп ĕнтĕ. Пĕр сасă та — ни машина сасси, ни çынсем калаçни илтĕнмест. Райпо умĕнчи çӳллĕ ăвăссен кушăрхама пуçланă çулçисем çеç хуллен-хуллен вĕркелесе илекен çилпе хускалса чăштăртатаççĕ. Инçетре йытă вĕрни илтĕнчĕ. Сылтăм енчи хĕрессĕр чиркӳ хыçĕнчен тем пысăкăш хĕртнĕ çатма пек уйăх шуса тухни курăнчĕ. Унтан сасартăк, юнашарах, урамри мăн репродуктор хĕрсене хăратмал-

лах хăрăлтатрĕ, шăхăрса-кĕрлесе илчĕ те, тахăшĕ мăн сасăпа калаçа пуçларĕ:

— Итлĕр, итлĕр. Районри çĕнĕ хыпарсене пĕлтеретпĕр...

— Ха, кун пекки те пур иккен-ха кунта,— çӳлелле пăхса илчĕ Кира.— Эпир иксĕмĕр килсе çитни çинчен пĕлтермеççĕ-ши-ха? — кулса илчĕ унтан.

— Ун пек чысах тивĕçлĕ мар пуль-ха эпир, тусăм. Ытла та пĕчĕк кайăксем, çерçисем кăна вĕт. Атя çиме, ман хырăм татăлсах ӳкет,— Кирăна çаннинчен туртрĕ Лариса.

Хĕрсем площадь урлă каçса чайнăя пырса кĕчĕç. Самаях вăрăм, лутра йывăç çурт иккен ку. Алăк патĕнчех тумтир çакмалли вырăн пур, анчах унта пушпушах, тумтир йышăнакан çынни те çук. Питĕ тĕксĕм тата кунта — мачча çумĕнче пĕртен-пĕр пĕчĕк лампочка çунать, ăна та пулин тусан хупласа лартнă, шăнасем вараласа пĕтернĕ.

— Хывăнмасăрах иртетпĕр пуль ĕнтĕ,— терĕ Лариса.

— Мĕн тăвас тетĕн, айăпĕ пирĕнте мар,— килĕшрĕ Кира.

Вĕсем малти пӳлĕме, апат çимелли «зала», иртрĕç те йĕри-тавралла пăхрĕç. Сăмсана тӳрех çунăк çу, тĕтĕм шăрши пырса çапрĕ. Çынсем нумай мар-мĕн, пилĕк-ултă сĕтел хушшинче çеç лараççĕ, анчах пурте çиелти тумтирсемпе — хăшĕ плащпа, хăшĕ ватникпа, карттусĕсене хывманнисем те пур. Урайĕнче çӳп-çап, иртенпе те шăлман пулмалла, пуканĕсем çине тăхантарнă чехолсем тахçан шурă пулнă пулмалла та, халь хуралса сăранлансах ларнă — пăхма хăрушă, сĕтелĕсене çынсем апат çисе кайнă хыççăн йĕпе мунчалапа лăп-лап кăна шăлкаланă курăнать, таса мар. Малти кĕтесри сĕтел тавра, тăватă çын вырăнне, улттăн-çиччĕн ларнă та çав тери шавлăн, пĕр-пĕрине пӳлме тăрăшса калаçаççĕ, тем пирки тавлашаççĕ, ахăр. Пĕрре пăхсах курăнать — пурте питĕ хĕрĕнкĕ.

Тĕлĕнмелле!

Ларисăпа Кира, темрен шикленнĕ пек асăрханарах утса, буфет патнелле иртрĕç те черет вĕçне пырса тăчĕç. Черечĕ пысăках мар, темиçе çын çеç. Унччен те пулмарĕ, хайхи малти кĕтесре ларакан ӳсĕр ушкăнран пĕри, арпашăнса кайнă çӳç-пуçлăскер, сиксе тăчĕ те, тăн-тан

уткаласа, черетре тăракансем çине пăхмасăрах, буфет çине ик аллипе те шакăрт! чавсаланчĕ.

— Л-лисук! Тепĕр литр... — терĕ те вăл тытăнчăклăн, ывçинчи лутăрканса пĕтнĕ хут укçасене буфетчица умнелле ывăтрĕ.

— Çитет сана! Халь те ÿсĕр, резин пекех пулса кайнă! — кăшкăрсах каларĕ ăна буфетчица, хĕп-хĕрлĕ питлĕ, пăтранчăкрах кăвак куçлă пуклак хĕрарăм.

— К-кам? Эп ÿсĕр-и? — кăкăрне чышса илчĕ лешĕ.— М-мана ÿсĕртме четвĕрт кирлĕ! Пар, теççĕ сана! Нуммай ыйтмастăп вĕт! Ик пол-литрпа çырлахатăп...

— Памастăп! Çук манăн урăх! Кай кунтан, çынсене кансĕрлесе ан тăр! — хаяррăн ал сулчĕ буфетчица.

Анчах ÿсĕрри çав самантрах ăна аллинчен ярса тытрĕ.

— Л-лисук! Кама отказ паратăн эсĕ, шутласа пăхха! М-мана-и? Миçе çул юрататăп пулать те сана... Авă, кур, ман туссем кĕтсе лараççĕ, кур, тетĕп! — Вăл каялла çаврăнса юлташĕсем çине кăтартма пикенчĕ те, сулăнса кайса, черетре малта тăракан хĕрарăма буфет çумне хĕстерсе лартрĕ. Лешĕ, «кай, эсремет, тăр чипер!» тесе, ÿсĕр çынна çурăмĕнчен иккĕ-виççĕ чышса илчĕ.

— Л-лисук! Этем пул ĕнтĕ! Ахаль ĕçместпĕр эпир, ĕçпе ĕçетпĕр! Мăкриччи пирĕн, мотоциккăл илетĕп! Л-лису-ук!

— Ы-ы, çĕр çăтманскер! Çынçанкă! Ме, тыт, шуйттан! — терĕ те вара буфетчица, васкасах таçтан аялтан икĕ çур литр кăларса пачĕ.

— В-во! Пулчĕ те тарарам! — савăнса кайрĕ ÿсĕр çын, кĕленчесене ыталаса.— Ылтăн çын çав эсĕ пирĕн, Лисук! Ахальтен мар сана пурте юрататпăр! Ытараймастпăр! Э-эх, Лиса-Лиса-Лисаветтă, я люплю тебе са эттă!..— Вăл ташланă пек те туса илчĕ.

— Кай тата, мĕн йăйăр пек ахăрса тăратăн! — кăшкăрчĕ буфетчица.

— Тăхта, Лисук, тăхта... Эс мана сдачи патăн-и çав? — каллех буфет çине тайăнчĕ лешĕ.

— Мĕнле пуртă аври сдачийĕ тата?! — ÿсĕр çынна куçĕсемпе çунтарса илчĕ хĕрарăм.— Мĕн сÿпĕлтететĕн эсĕ, пьянчук?

— Руп-целковăй пулма кирлĕ...

— Кĕсре хÿри мар-и! Сдачи парăп эп сана! Ĕнерхи

парăма мантăн-им? Кай куç умĕнчен, атту яратăп ак мĕнпе те пулин...

— Ну, юрĕ-çке, Лисук... Уншăнах вăрçмăпăр... хамăр çынсем — майлашăпăр... Тепĕр чух ун пек те мар лартаççĕ пире! Кĕçĕр хăнана пырас-и? Кĕртетĕн-и?

— Асту, сăмсуна çапса лапчăтатăп! — кăшкăрса пăрахрĕ те буфетчица умĕнчи сăра куркине çавăрса тытрĕ. Тинех уйрăлса кайрĕ вара ӳсĕр çын...

Халь çеç мĕн пулса иртнине тĕлĕнсе те йĕрĕнсе пăхса тăнă Ларисăпа Кира, черет шунă май, буфетчица умне çитрĕç.

— Мĕн парас сире? — вĕсене куç хĕррипе çеç пăхса илчĕ вăл.

— Вĕри апат çиес килет. Меню пур-и сирĕн? — ыйтрĕ Лариса.

— Мĕн менювĕ пултăр халь тин! Ресторан мар пирĕн. Кухньăра купăста яшкипе вир пăтти çеç юлнă.

— Çавсене икшер çырса парăр, эппин. Тата кофе пур-и унта, компот-и, мĕн-и...

— Чей анчах пирĕн. Вăл та сивĕннĕ пуль-ха.

— Пит чухăн пурăнатăр-çке!

— Манран килмест. Ăна эсир пуçлăхсене калăр. Тата пирĕн кунта кофе-компотсенчен ытларах... лешне ыйтаççĕ, хаяррине!

— Вăл яланах пур пуль ĕнтĕ?

— Татăлмастпăр. План тултармалла-çке! Планĕ пысăк.

— Ăнланатăп...

Хĕрсем тепĕр енчи чӳрече умĕнчи сĕтел хушшине, ӳсĕрсенчен аяккарах, кайса ларчĕç. Часах вĕсем патне пĕр 23—25 çулсенчи хĕрарăм-официантка пычĕ. Пуçĕнчи кивĕ тутăрне хыçалалла, «майралла» çыхнă, умĕнчи саппунĕ хуралса-сарăхса ларнă, тем те тăкăннă пулмалла ун çине — яшки те, чейĕ те. Пĕлме çук, тен, вăл саппунĕ аркипе сĕтелсене те шăлнă-и! Анчах пуринчен ытларах хĕрсене çак официантка пирус мăкăрлантарни тĕлĕнтерчĕ.

— Ну, кун пеккине курманччĕ-ха хальччен! — терĕ Лариса, çав официантка вĕсен талонĕсене илсе кайнă хыççăн.— Çăварне пирус хыпсах çынсене апат парса çӳрет, эппин!

— Пирус кĕлĕ яшка çине тăкăнать, приправа пу-

лать — тĕрлĕ специсем выртăнне,— тутине пăчăртаса кулса илчĕ Кира.

— Культура! Ах, вăйлă культура... Калатăп-ха ăна!

— Ан шарла. Эпир кунта çисе пурăнас çук вĕт, ăнсăртран темиçе сăмах каланипе вĕсен йĕркисене улăштараймăн.

— Тĕлĕнетĕп-ха эпĕ... Халь кăна райпо председателĕ пирĕнпе суту-илӳри йĕркелĕх, санитарипе гигиена çинчен çав тери ăслă калаçса ларчĕ. Анчах унăн хăйĕн куçĕ умĕнчех, райцентртах хăрушла антисанитари! Тата ӳсĕрсем тем чухлĕ! Нивушлĕ нихçан та килсе пăхмасть вăл кунта, нимĕн те курмасть?! Райцентрта кун пек пулсан, лере, ялсенче, «глубинкăра» мĕнлерех пуль! Хăрасах кайрăм-ха эпĕ...

Официантка фанертан тунă поднос пеккипе (тĕрĕссипе, ăна чăвашла ывăс темелле кăна ĕнтĕ) хĕрсем мĕн тӳлесе илнине çĕклесе пычĕ.

— Çийĕр, тархасшăн...

Хĕрсем пĕр кашăк та сыпаймарĕç-ха, сасартăк малти кĕтесре ларакан ӳсĕрсем хăлхана çурмалла киревсĕр сăмахсем кăшкăрма тытăнчĕç те, столовăйри ытти çынсем пекех, Ларисăпа Кира вăртах вĕсен еннелле çаврăнса пăхрĕç. Лешсем çапăçмах тапратрĕç, сĕтел çинчи чашăк-тирĕк урайне вăркăнса арканчĕ, тахăшĕ теприне пушă эрех кĕленчипе çапни курăнчĕ, унтан пурте пĕр-пĕрине тӳпелеме тапратрĕç.

Пирус туртакан официантка, ним хăрамасăр, тӳрех вĕсем патнелле ыткăнчĕ:

— Чарăнăр, шуйттансем! Кунта мар, ав, урама тухса çапăçăр! Чарăнăр, теççĕ сире!..

Вăл пĕрине çаннинчен тытса аяккалла туртрĕ, теприне тĕртсе ячĕ, анчах темиçе самантранах тахăшĕ ăна хăйне чышрĕ курăнать те, вăл стена çумне çитсе çапăнчĕ. Ӳсĕрсем лăпланас çуккине курса, пуклак буфетчица часрах урамалла чупрĕ.

Çапăçу вăйлансах пычĕ, ĕнтĕ пĕр-иккĕшĕн пичĕсем çинче юн курăнчĕ. Ларисăпа Кира ни чĕрĕ, ни вилĕ тенĕ пек пăхса тăчĕç.

— Ма килсе кĕтĕмĕр пуль ку шăтăка! Атя, тухса таратпăр, атту таçта хамăра та лектерĕç мĕнпе те пулин! — Ларисăна хулĕнчен ярса тытрĕ Кира.

— Пĕтĕмпех буфетчица туса хучĕ çакна! — терĕ

Лариса çав тери тарăхнă сасăпа.— Ахаль те ӳсĕр çынсене мĕн тума тепĕр литр таран памаллаччĕ-ха унăн!

Çав самантрах хĕрсем çапăçакан арçынсенчен пĕрин аллинче çап-çутă çĕçĕ ялтăртатса илнине курчĕç.

— Ай, пĕтрĕмĕр! Вĕлереççĕ! — кăшкăрса ячĕ Кира.

Анчах лешĕ никама та сиен тăваймарĕ — стена çумĕнче тăнă официантка пĕррех ун патне сиксе çĕçĕллĕ аллинчен буртăнчĕ.

— Варсу-ун! Тĕрмене ларассу килчĕ-и? — кăшкăрчĕ вăл.— Пăрах çĕççӳне! Пăрах, теççĕ!..

Шăп çав вăхăтра чайнăя хăвăрт кăна икĕ милиционер пырса кĕчĕç. Вĕсем çывхарнине курсан, çапăçакансем тӳрех кăшт урăлнă пек пулчĕç, пĕр-пĕринчен уйрăлчĕç.

Милиционерсем хулигансене çурăмĕсенчен тĕрткелесе илсе тухса кайсан, хайхи официантка каллех Ларисăпа Кира патне пычĕ.

— Эсир пит хăрарăр пуль ĕнтĕ...— терĕ те вăл, пуш пукана сиктерсе, вĕсен сĕтелĕ хушшинех ларчĕ.

— Хăрамасăр! Пĕри çĕçĕ кăларчĕ вĕт! — терĕ Кира.— Епле шикленмерĕр эсир ун патне пыма?!

— Чарас, терĕм-çке! Ӳсĕр те-ха вăл, тăнне çухатнă та, тем туса хума та пултарать. Кайран — ĕмĕрлĕх хуйхă. Çынне лайăх паллатăп, арăмĕ тин çеç ача çуратрĕ, больницăран та тухман-ха. Мĕн пулатчĕ-ха арăмĕпе ачи киле таврăннă тĕле ку тĕрмене кайса ларсан? Çав шухăш кĕрсе кайрĕ ман пуçа...

— Час-часах пулаççĕ-и вара сирĕн кун пек спектакльсем? — ыйтрĕ Лариса, тинех çиме тытăнса.

— Уйăхра пĕр-икĕ хут пулать çав, вăрманта ĕçлекенсене ĕç укçи панă хыççăн. Укçине нумай илеççĕ, хăяматсем! Шоферсем, трактористсем те-ха. Лайăх тӳлеççĕ вĕсене... Пухăнаççĕ вара тĕпĕртетме! Тĕрĕссипе каласан, урăх ниçта каймалли те çук вĕсен — клубĕнче кичем, ни вечерсем, ни спектакльсем пулмаççĕ, эрнере икĕ хут кино кăтартаççĕ ĕнтĕ аран-аран, анчах картинăсем — виçĕм-тăватăмçулхисем... Ирĕксĕр тенĕ пекех чайнăя килеççĕ вара çамрăксем, камăн кĕсйинче мĕн чухлĕ пуррине пуçтараççĕ те тытăнаççĕ ухмаха ерме...

Чайнăйри çынсем пурте тенĕ пекех тухса кайса пĕтрĕç. Официантăн ĕç пулмарĕ ĕнтĕ, вăл çаплах хĕрсем-

пе пӗрле ларчӗ. Ҫӗнӗ ҫынсемпе калаҫас килчӗ курӑнать унӑн.

— Каҫарӑр та-ха мана...— терӗ вӑл кӑшт тӑхтасан,— ӑҫтан килнӗ эсир кунта, хӗрсем? Ӑнсӑртран, артисткӑсем мар пуль те?

Лирасӑпа Кира иккӗшӗ те ун ҫине питӗ тӗлӗнсе пӑхрӗҫ.

— Мӗншӗн ун пек ыйтатӑр?

— Кунти ҫынсем маррине куратӑп та-ха. Хӑш чух артистсем те килкелеҫҫӗ пирӗн пата. Чӑн та, сайра килеҫҫӗ. Столицӑран инҫе пурӑнатпӑр-ҫке! Тӗттӗм кӗтес. Кичем. Эсир Шупашкартан пуль?

— Ҫавӑнтан килтӗмӗр-ха. Паян ҫеҫ. Анчах артисткӑсем мар вара.

— Студентсем-и, эппин?

— Ун пек каласан юрать те пуль. Эсир хӑвӑр тата... кунтисемех-и? Ҫакӑнтах ҫуралса ӳснӗ-и?

— Ҫук, ҫук,— пуҫне пӑркаласа илчӗ официантка,— инҫетрисем эпӗ, Хӗрлӗ Чутай тӑрӑхӗнче Штанаш ятлӑ чиркӳллӗ ял пур, ҫавӑнтан.

— Кунта мӗнле килсе лекнӗ вара эсир?

— Вӑрӑм истори вӑл... Тем пек ӗмӗтленсе пурӑннӑ пулин те, вӑтам шкул пӗтернӗ хыҫҫӑн малалла вӗренме каясси пулмарӗ, анне чирлӗччӗ, ӑна пӑрахса хӑварма ҫукчӗ, ҫавӑнпа та эпӗ хамӑр ялти лавккана ӗҫлеме кӗтӗм — малтанхи продавец пенсие тухрӗ. Анчах ҫулталӑк та иртмерӗ — жуликсем муталаса хучӗҫ мана, чутах тӗрмене пӗтӗрсе чикетчӗҫ. Аран хӑтӑлкаласа юлтӑм! Унтан анне вилчӗ, пӗчченех пурӑнкаларӑм, тепӗр виҫ уйӑхран кил хупсах Шупашкара тухса кайрӑм. Унта ман аттен авалхи тусӗ пурччӗ, вӗсем граждан вӑрҫинчех пӗрле ҫапӑҫнӑ, питӗ ырӑ ҫын, ҫав мана хӑйӗн паллանӑ ҫыннисем урлӑ пӗр ҫӗре кладовщика вырнаҫтарчӗ, анчах склад заведующийӗ темле махинацисем тума тытӑннине сисрӗм те часрах тухса кайрӑм: татах тем курӑн! Ҫавӑн хыҫҫӑн укҫа-тенкӗшӗн, пурлӑхшӑн ответ тытмалли ӗҫсемпе нихҫан та ҫыхланас темерӗм вара... Складра ӗҫленӗ чухнех кунти пӗр шоферпа паллашнӑччӗ — вӑл тӗрлӗ хатӗрсем тиесе кайма пыратчӗ унта,— лайӑх ача пек туйӑнчӗ, килӗшрӗ мана, юратрӑм та пулмалла,— вара вӑл мана ҫакӑнта илсе килчӗ. Туй пекки турӑмӑр. Ман кил-ҫурта сутса килтӗмӗр, укҫа та пулчӗ пирӗн малтанлӑха пурӑнмалӑх. Анма-



18427-45В
Чувашская республиканская
библиотека
им. М. Горького

рĕ вĕт — нумай та пурăнаймарăмăр упăшкапа, вăл хĕрĕнкĕ пуçпа çул çинче пĕр хăлхасăр карчăка машинпа таптаса вĕлернĕ те — ларать халь. Ăна хупсан, пĕр-ик эрнеренех, унăн амăшĕ мана, мăн хырăмлăскернех, килĕнчен хăваласа кăларчĕ: хуть те ăçта пурăн!

— Мĕншĕн ун пекех тискер хăтланнă вара вăл? — питĕ тĕлĕнсе ыйтрĕ Лариса.

— Мăнтăр пирки. Ватă мар та-ха хăй, хĕрĕхрен тин иртнĕ, юнĕ вылять пуль. Ирĕк кирлĕ пулнă ăна часрах. Мана хăваласа ячĕ те виç кунтанах пĕр пожарнике киле кĕртрĕ. Ыр курать-ха халь, лайăх — лешĕ кашни ĕçмессеренех ун питне-куçне кăвакартса ярать. Çавă чух!

— Хăвăр ăçта пурăнатăр вара? — çак хĕрарăма чунтан хĕрхенме пуçласа ыйтрĕ Кира.

— Пĕр карчăк патĕнче, паян-ыран тӳнсе каяс пек пĕчĕк пӳртре... Тухса тармалла та çав ăçта та пулин — ача пĕчĕкки кансĕрлет, тата ним пĕлмен ют çĕре кайса кĕме те хăратăп. Такамсем хушшине пырса лекетĕн-ха! Çынсене шанма пачах пăрахрăм эп. Тĕнчере пĕр ыр çын та çук пек, пурте пĕр-пĕрине усал тума çеç тăрăшнă пек туйăнать...

— Ку тĕрĕс мар вара, аппа... Ыр çынсем çапах та нумай çĕр çинче. Эсир мĕн ятлă-ха? — терĕ Кира.

— Инна теççĕ мана, Инна Семеновна, хушаматăм та Семенова.

— Эпĕ те: эсир ун пек шутлани пĕртте тĕрĕс мар, тетĕп,— çиме чарăнсах хушса хучĕ Лариса.— Пурнăçра пăт-пат путсĕр çынсем тĕл пулни пирĕн хушăра лайăх çынсем çуккине пĕлтермест. Совет çыннисен пурнăç саккунĕ çавăн пек-çке: пĕри — пуриншĕн, пурĕ — пĕриншĕн...

— Ай, ан калăр! — ал сулчĕ официантка.— Эсир халь ытла та çамрăк-ха, пурнăçа пĕлместĕр, анчах эп хам тӳссе куртăм ĕнтĕ çынсен тискерлĕхне! Шакалсем пурте! Акă, каларăм-çке, продавецра ĕçленĕ чух мана ним айăпсăр, эп айван пулнипе, манăн опыт çуккипе усă курса, кăшт çеç хупса лартмарĕç çăхансем! Хăйсем лайăх кăна пуйса юлчĕç çав хушăрах...

— Епле пулма пултарнă-ха ун пек? — ыйтрĕ Лариса. Вĕсем Кирăпа иккĕшĕ те официантка куçĕнчен пăхрĕç.— Васкамастăр пулсан, каласа парăр-ха, Инна Се-

меновна. Тен, пирĕншĕн те усăллă пулĕ сирĕн пурнăçра пулса иртнине пĕлни?

— Чăнах, чăнах, питĕ пĕлес килет,— терĕ Кира та.

— Çынсене ĕненнĕ эпĕ,— ассăн сывласа ячĕ Семенова.— Шаннă! Хам илмен тавара илнĕ тесе ал пустарчĕç базăра. Ан пăшăрхан, ку накладной тăрăх таварне ыранах пырса паратпăр сана, халь пире отчет валли питĕ срочно документ кирлĕ, çавă çеç, терĕç те... ĕнентĕм вĕсене. Епле ĕненместĕн-ха? База пуçлăхĕпе склад заведующийĕ иккĕшĕ пĕрле калаççĕ пулать те! Шухăшласа та тăмарăм вара, накладной çине ал пусрăм-хутăм. Копине хама пачĕç... Ухмах пулнă мар-и!

— Накладнойĕнче кăтартнă таварсем миçе тенкĕлĕхчĕ?

— Тăхăрçĕр тенке яхăн...

— Сахал мар ку.

— Нумай çав! Вăл укçашăн манăн çулталăк ытла ĕçлес пулать!

— Ну, малалла мĕнле пулчĕ? Илсе пымарĕç-им таварне?

— Çук çав!.. Пĕр кун кĕтетĕп, иккĕ, виççĕ кĕтетĕп — никам та нимĕн те илсе пымасть ман пата. Хам кайрăм вара каллех района, потребсоюз базине. Пуçлăхĕ, Эзенкин тенĕ этем, мана ал пусма çине тăрсах хистекенни, çук — курорта тухса кайнă. Эп склад заведующийĕ патне чупатăп, ыйтатăп — парса ярăр мана хайхи тавара! Вăл, самаях ӳсĕрскер, кулма тапратрĕ: ай-ай, ăслă-çке эсĕ, хĕрупраç, пĕр накладнойпа икĕ хут илесшĕн! Сана таварне тахçанах парса янă вĕт, эсĕ «илтĕм» тесе ал пуснă, тата мĕн шĕвĕртни кирлĕ сана?! Эпир те тăнсăр сурăхсемех мар пуль? — тет. Çапла каласа, складран тĕккелесех кăларса ячĕ мана. Макăртăм эпĕ, анчах мĕн усси? Эзенкинĕ таврăнасса кĕтес, терĕм. Вăл килсен вара тӳрех ун патне кайрăм, аса илтертĕм ĕç мĕнле пулнине, таварне илмесĕрех накладной çине ал пуснине.

— Мĕн терĕ вара вăл?

— Вĕлерсех пăрахрĕ мана! «Ним те пĕлместĕп, ачам, астумастăп ун пеккине, эс ал пуснă пулсан — таварне илсех кайнă ĕнтĕ»,— тесе хучĕ! — «Илсе кайнă та — приходламан, салатнă пуль-ха унталла-кун-

талла! Халь растрата пулса тăнă та санăн, эс çăлăнмалли майсем шырама тытăннă!»

— Тĕрĕс мар! Илсе кайман эпĕ вăл тавара! Растрата та туман, пĕр пус та тытман! — кăшкăртăм та эп ăна хирĕç, ман куççулĕ пĕрхĕнсе тухса кайрĕ.

— Растрата тунипе туманни ревизи хыççăн курăнĕ,— терĕ Эзенкин, ман çине калама çук сиввĕн пăхса.— Недостача пулсан закон тăрăх ответ тытатăн. Пĕлетĕн пуль, халăх укçине салатнăшăн пуçран ачашламаççĕ. Тĕрме шăрши кĕрет унта!

Эпĕ шак! хытрăм. Ним те калаймастăп, тăрук чĕлхесĕр пулса ларнă пекех. Хамăн шăпăртатса куççуль юхать.

Вăл кăшкăрса пăрахрĕ:

— Манкуна юхтарса ан тăр кунта! Эс мĕн, пĕрре макăрса кăтартнипех ĕнентерес тетĕн-и мана? Кайса шутла лайăххах, миçе тенкĕлĕх растрата тунă эс хĕрсене канфет çитерсе, каччăсене эрех ĕçтерсе, хавна валли капăр япаласем туянса! Леш накладной пирки çавар та ан уç — унта кăтартнă тавар пĕтĕмпех сан çинче шутланать, мĕншĕн тесен илсе кайнă эс ăна...

— Илмен! Пыман вăл тавар ман пата! — куççулĕ витĕрех юлашки хут паттăрланма тăтăм эпĕ.

— Ку сăмахсене эсĕ мана мар, прокуратурăра следователе калăн, тен, вăл ĕненĕ, мана ĕнентерейместĕн! — терĕ те Эзенкин шăл витĕр,васкасах тухса кайма хатĕрленсе тумланма тытăнчĕ.

Мĕн тумалла ĕнтĕ?

Вăл прокуратурăпа следователь çинчен асăнсан, эп сывлайми пулса тăтăм пулмалла. Чутах кайса ӳкеттĕм. Ал-урара пĕр вăй та юлмарĕ манăн. Пуçа хăрушă шухăш çиçĕм пек пырса çапрĕ: ав ăçталла пăрăнать ман пурнăç, хальччен çынăнне шăрпăк та тытса курман хĕр пурнăçĕ!.. «Халăх укçине салатнăшăн пуçран ачашламаççĕ... Тĕрме шăрши кĕрет кунта!» — Эзенкин унччен кăшт малтарахрах çеç каланă сăмахсем тепĕр хут янраса илчĕç хăлхара.

Лектереççĕ эппин мана, ним айăпсăр пĕтереççĕ!..

— Миçе çулта пулнă-ха эсир ун чух? — хуллен ыйтрĕ Кира.

— Вунтăххăр та тултарман.

— Хăрушă...

— Мĕн хăрушă?

— Вунтăххăртах тĕрмене кайса ларма. Пуринчен ытла — хĕрачашăн.

— Хăрушă пулмасăр! Вилсех выртмалла çав хăраса! Е ун çинчен шухăшланипех ухмаха ерсе каймалла!

Семенова, йывăррăн сывласа, тăнлавĕсене ик аллипе пĕр харăс сăтăркаласа илчĕ.

— Ахаль хăтланман Эзенкин çавăн пек. Сăлтав пулнă. Кайран, пĕр-ик çултан тин пĕлтĕм эп ăна,— Шупашкарта ăнсăртран тĕл пулнă хамăр ял çынни, пирĕн кӳршĕ пулнăскер, каласа кăтартрĕ. Çав райпотребсоюз базин пуçлăхĕ Эзенкин пирĕн Çеменккей раттине шутсăр курайман иккен, тахçантанпах шăл хăйраса пурăннă...

— Мĕншĕн-ши?

— Колхозсем тунă вăхăтра ман атте унăн ашшĕне персе пăрахнă, тет...

— Епле... персе пăрахнă?

— Пуян пулнă тет çав Эзенкинсем. Шыв арманĕ тытнă вĕсем Айхал шывĕ çинче, ялта лавкка пулнă, таврари çынсене чăпта çаптарнă, тата темтепĕр. Колхозсем пуçлансан, паллах, раскулачить тунă çаксене. Ялтан та кăларса ямалла тунă — Çĕпĕре, ссылкăна. Анчах кăларса яриччен малтан хальхи Эзенкинăн ашшĕ яла колхоз тума пынă уполномоченнăя чӳрече витĕр пăшалпа персе вĕлернĕ те, вăрмана тухса тарса, бандитра çӳреме тытăннă. Чылай пулнă тет ун пеккисем пирĕн тăрăхра... Çавăн йышши этемсем пĕр çĕре пухăнса шайккă тунă, хĕçпăшал та пулнă вĕсен. Пĕтĕм тавралăха хăратма тытăннă вара. Активистсене вĕлернĕ, вĕсен кил-çурчĕсене вут тĕксе çунтарнă. «Кам колхоза кĕрет, вăл тепĕр куннех вилет!» —тесе çырнă хутсем салатнă ялсем тăрăх... Ман атте ун чухне хамăр районри милицире ĕçленĕ, çав Эзенкинсен бандине аркатма ун хыççăн йĕрлесе çӳренĕ. Темиçе уйăх хушши тытайман тет никама та, лешсем пытанма пĕлнĕ пулмалла: ăçта та пулин сăтăр тăваççĕ те пач çухалаççĕ. Юлашкинчен çапах та сĕм вăрманти пĕр çырмара хупăрласа илнĕ çаксене. Бандитсем тарма тапратнă. Çавăн чух пирĕн атте Эзенкин ашшĕне хуса çитсе персе ӳкернĕ, тет. Района илсе çитериччен, çул çинчех вилсе кайнă вăл... Ку, хальхи Эзенкин, çавăн çинчен пĕлнĕ — çынсем каласа панă пуль ĕнтĕ. Çамрăк чухнех çĕр кăшласа тупа тунă тет вăл: «Çеменккейсене нихçан та каçар-

мастăп, тавăратăпах!» — тенĕ тет. Ĕмĕр тăршшипех усранă курăнать çав шухăша хăйĕн тискер чĕринче. Аттене ним те тăвайман вăл — атте çаплах милицире çӳренĕ, унтан фронтра пулнă, вăрçăран таврăнсан — каллех милицире. Унăн пĕтĕм пурнăçĕ халăх куçĕ умĕнче пулнă — ăна нимĕнпе те такăнтараймастăн. Аллă пиллĕкмĕш çулта атте йывăр чирлесе вилчĕ — рак пулнă унăн. Вăл пурăннă пулсан эпĕ, тен, малалла вĕренеттĕмех пулĕ те, чирлĕ аннепе иксĕмĕрех юлсан вăл шухăша пăрахма тиврĕ. Ĕçлеме кĕтĕм. Çав Эзенкин аллине пырса лекрĕм вара... Пирĕн ратта тавăрас шутпа вăл мана улталаса асаплантарма тытăнчĕ...

— Мĕнпе пĕтрĕ-ха сирĕн ĕç? Айăпласах çитерчĕç-и, чăнах ответ тытмалла пулчĕ-и çав ултавшăн? — питĕ пăлханса ыйтрĕ Лариса.

— Ответне тыттараймарĕ мана Эзенкин, темле тăрăшсан та ĕç тухмарĕ унăн, анчах нервăсене пит хытă тăпăлтарчĕ, шуйттан! Миçе каç чăлăм куç хупмасăр макăртăм пуль. Ирччен пуç айĕнчи çитар йĕп-йĕпе пулатчĕ. Анне те хытăран хытă чирлерĕ çавăн пирки. Пĕр эрне хушши ăшра пĕр тĕпренчĕк çăкăр пулман — анмасть! Юрать, анне çине тăрсах кунне пĕрер-икшер стакан сĕт ĕçтеретчĕ...

— Хута кĕрекен никам та пулмарĕ-и вара çав вăхăтра?

— Уй! — ал сулчĕ Семенова,— хута кĕрекенсем пулас мар-тăк — пĕтеретчĕ вăл мана! Пулчĕç хута кĕрекенсем, çавсем кăна çăлса хăварчĕç, тес пулать.

— Йĕркипе кала-ха...

— Йăлăхтармарăм-и эп сире? — Семенова хĕрсем çине вĕсен кăмăлне пĕлесшĕн пулнă пек пăхса илчĕ.

— Çук, çук, мĕн эсĕ! Питĕ итлес килет-ха! — терĕç Ларисăпа Кира пĕр харăсах.

— Эзенкин хăратса тăкнă хыççăн эпĕ ун патĕнчен мĕнле тухнине те астумастăп. Ăнран кăларсах янă вăл мана. Урама тухсан инçе те кайман, пĕр хапха умĕнчи сак çине ларнă та ӳлесех макăрнă. Мĕн чухлĕ ларнине те пĕлместĕп. Пуç çаврăнса кайнă пулмалла манăн... Унтан сасартăк хама такам хулпуççирен лăсканине туйрăм та хĕрарăм сассине илтрĕм: «Мĕн пулнă сана, хĕрача? Ма макăратăн? Кам кӳрентерчĕ кун пекех?..» Куççене аран уçса пăхрăм та — хам умра комсомол райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ Альбина Якушкина тă-

нине курах кайрăм. Ним те калаймарăм малтанах — куçсене мăчлаттаратăп çеç. Вăл тӳрех палласа илчĕ те мана — районри кашни комсомолецах паллатчĕ пулмалла вăл хĕр! — татах хытăраххăн ыйтрĕ: «Мĕн пулчĕ, Семенова?» Ăна ответ парас вырăнне: «Пĕтрĕм эпĕ!» — терĕм те каллех, макăрса ятăм. «Епле пĕтрĕн? Мĕншĕн?» — татах ыйтрĕ те вăл, хулран тытса сак çинчен тăратрĕ. «Атя-ха райкомола, каласа пар мĕн пулнине!»

Якушкина мана хăй патне те мар, тӳрех райкомолăн пĕрремĕш секретарĕ Володя Петров пӳлĕмне илсе кĕртрĕ. Мана вăл та паллатчĕ,— вĕреннĕ чух эпĕ пĕрикĕ çул хушши хамăр шкулти комсомол организацин секретарĕ пулнă. Якушкина мана ăçта тĕл пулса илсе килни çинчен каларĕ. Эп çаплах йĕркене кĕрейместĕпха, куççуле чараймастăп. Петров мана графинран шыв ярса ĕçтерчĕ, унтан диван çине лартса çурăмран лăпкаса илчĕ. Якушкина тепĕр енчен ларчĕ.

— Ну, каласа пар пире чипер, мĕнле хуйхă пулнă санăн, мĕншĕн çавăн пекех пăлханатăн?

Эп йăлт каласа патăм вĕсене: çапла та çапла, мана илĕртсе, улталаса суя накладной çине ал пустарчĕç, таварне илсе пырса памарĕç, халь мана çав илмен тавара приходламасăр салатнă тесе айăпласшăн, эс растрата тунă, теççĕ, тĕрмене хупассипе хăратаççĕ...

— Питĕ вăйлă номер! — пĕççине шарт! çапрĕ Петров.

— Кун пеккине Эзенкин çеç тума пултарать,— хушса хучĕ Якушкина.— Вăл мана нихçан та тĕрĕс çын пек туйăнман!

Унтан мана тĕпчеме тытăнчĕç:

— Накладнойĕнче çырнă таварсене эсĕ чăнах илмен, эппин? Нимĕн пытармасăр кала. Тен, ăнсăртран, маннă эс ăна?

— Тăхăрçĕр тенкĕлĕх тавар илсе пынине епле манма пулать?! — кăшкăрсах ятăм вĕсене хирĕç.— Эпĕ, хăшпĕр продавецсем пек, ĕçре ӳсĕр тăмастăп вĕт! Таварне илсе пынă пулсан, çав кунах приходланă пулăттăм! Пĕр ещĕк спичка е пĕр михĕ тăвар илсе пырсан та çийĕнчех учет кĕнекине çыратăп эпĕ!..

Каллех куççем шывланчĕç манăн: нивушлĕ кусем те ĕненмеççĕ? Ултавçă, жулик, растратчик тесе шутлаççĕ?

Петров телефон трубкине тытса Эзенкин патне шăнкăравларĕ.

— Мĕн пулса иртнĕ сирĕн Штанашри магазинра ĕçлекен Семеновăпа?

Самантранах трубкăра лешин хулăн сасси кĕрлеме тытăнчĕ. Вăл мĕн калани пире Якушкинăпа иксĕмĕре те пĕтĕмпех илтĕнчĕ:

— Жалобăпа пыма ĕлкĕрчĕ, эппин? Чее иккен, шельмăскер, çамрăк пулин те, тӳрех хӳтлĕх шырама тытăннă!

— Мĕн пулнă унăн, тесе ыйтатăп эпĕ! — сассине хытарчĕ Петров.

— Мĕн пултăр ун пек йăх-яхсен! Пысăк растрата палăрать. Эпир парса янă тавара приходламан. Пин тенкĕ патне! Эп райпо председательне пĕлтертĕм ĕнтĕ, ыранах ревизи яратпăр, терĕ. Эсир те хăвăр енпе пăхса тухăр — социалистически собственнăçа салатакансем комсомолта тăма пултараймаççĕ, вĕсемшĕн пĕр вырăн çеç — тĕрме!

Эпĕ йĕп çинче ларнă пек лартăм...

— Семенова вăл тавара илмен, тесе ĕнентерет! — терĕ Петров.— Тен, сирĕн хăвăрăн йăнăш пулнă унта? Тĕрĕслесе пăхмалла мар-ши?

— Э, вăл халь тем те калĕ! «Эп вăрларăм!» тесе калакан вăрă пулнă-и çĕр çинче хăçан та пулин? Суять, ан ĕненĕр! Ăна тавар парса янине пирĕн склад заведующийĕ те, хамăрăн шофер та çирĕплетсе калаççĕ. Лешин нимĕнле оправдани те çук. Пĕр сăмахпа — растрата унăн. Темиçе кунтан ревизи акчĕпе паллашма пултаратăр, унта пĕтĕмпех курăнĕ. Ыйтусем тата пур-и?

— Çук.

Петров трубкăна хучĕ те пĕр хушă чĕнмесĕр ларчĕ.

— Н-да... истори! — терĕ унтан.— Питĕ паттăр калаçать Эзенкин, айăплаттарасшăнах пулмалла... Кун пекки пулманччĕ-ха пирĕн. Суту-илӳре комсомолецсем сахал мар, анчах эп райкомолта ĕçлеме тытăннăранпа нихăшне те айăпламан...

— Куна та айăпламалла мар! — тăрук сиксе тăрса, аллипе хыттăн сулса ячĕ Якушкина.— Ĕненместĕп эпĕ Семенова растрата тума пултарнине! Пус, кас — ĕненместĕп! Эзенкин хăй темскер хăтланать унта! Ман шутпа, çакăн пек туса хунă вăл: Семеновăна наклад-

ной çине ал пустарнă та, таварне леçсе парас выранне ăна сулахаялла янă, укçине хăй персе чикнĕ!

— Манăн свидетельсем пур — склад заведующийĕ, шофер, тет... — Якушкинăна пўлчĕ Петров.

— Во, во! Вĕсем виççĕшĕ пĕрле тунă çак преступление! Укçине хăйсем хушшинче валеçнĕ, халь пĕр каварлă пулса пирĕн ним айăпсăр комсомолкăна шыва путарасшăн! Эзенкинĕ, паллах, лешсенчен ытларах илнĕ-ха. Куна ал пустарнă хыççăнах курорта тухса вĕçнĕ тет-иç! Мăнтăрпа сывлайми пулнă арăмне те илсе кайнă пуль-ха. Сахал укçа кирлĕ-и иккĕн тан Крым—Кавказсем тăрăх ярăнса çўреме? Вăт, мелне тупнă вăл!..

Çав тери тарăхса, вĕриленсе калаçрĕ Якушкина. Вăл калаçнăçемĕн ман чĕрере шанчăк çуралса пычĕ: тен, хута кĕрсе çăлса хăварĕç вĕсем мана епле те пулин, Эзенкин мăшкăлĕ пулма памĕç?

Сăнран пăхсан, Володя Петров та хăй ăшĕнче Якушкина сăмахĕсемпе килĕшни палăрчĕ.

— Итле-ха, Альбина, кун пирки эпир халех ОБХСС инспекторне систерсен лайăхрах пулмасть-ши? — терĕ вăл кăшт тăрсан.

— Тĕрĕс! Пĕлтерес пулать!— çав самантрах килĕшрĕ Якушкина.— Вырăнтах пулсан, кунта килме йыхăрас. Мăн кăмăллă çын мар, килет вăл. Семенова ăна пирĕн умрах йăлт каласа патăр...

Çур минут та иртмерĕ пуль, Петров ОБХСС инспекторĕпе калаçма тытăнчĕ:

— Комсомол саламĕ, Мурат Михайлович! Чăрмантарас терĕм-ха сана. Эс çамрăксене яланах пулăшаканччĕ... Нумай пулмасть пăшал перекенсен ăмăртăвне лайăх йĕркелерĕн, унтан комсомол активĕнче халăх пурлăхне салатакансемпе кĕрешесси çинчен пит лайăх лекци туса патăн, пурте кăмăллă пулчĕç ун чух... Çук, халь лекци пирки мар. Куçа-куçăн калаçмалли пур... Телефонпа калама пултараймастăп. Пуç çаврăнмалли пĕр ыйту сиксе тухрĕ, сансăр ответ тупаймастпăр... Май пулсан, халех кил-ха. Тавтапуç!

Петров трубкăна хучĕ те аллисене хире-хирĕç сăтăркаласа илчĕ.

— Килет Мурат Михайлович, пулăшать пире! Маттур çын вăл, вăрçăра та разведчик пулнă, темиçе хут

тăшман тылне кая-кая килнĕ... Тăвата орден таран ахалех памаççĕ пуль çынна!

Инспектор нумай кĕттермерĕ, часах пычĕ. Сăнран пăхсан, пĕртте милицире ĕçлекен çын темелле марччĕ ăна — пĕвĕпе лутрарах, сăнĕ-пичĕ типшĕм, куç харшисем те, уссийĕ те ыраш улăмĕ тĕслĕ, хĕсĕкрех кăвак куçĕсем пит йăвашшăн курăнаççĕ.

Хăй шӳтлеме юратаканскер иккен. Петров пӳлĕмне кĕрсенех алăк патĕнче чарăнса тăчĕ те, сылтăм аллине тăнлавĕ патне тытса, рапорт панă пек турĕ:

— Аслă начальниксем хушнипе милици капитанĕ Арайкин персе çитрĕ! Малалла мĕнле приказ пулать?

— Тĕпелелле иртмелле те ак çак диван çине лармалла çеç,— терĕ Петров йăл-йăл кулса.— Унтан пĕр халап итлемелле...

— Эп — пионер пекех, яланах хатĕр! — терĕ Арайкин.

Питĕ тимлĕн итлерĕ вăл эп каласа панине. Сайра хутра çеç пăт-пат ыйтусем паркаларĕ. Ман алăри накладной копине илсе ун-кун çавăркаласа пăхрĕ те хăй кĕсйине чиксе хучĕ.

— Ан хăра, çухатмастăп,— терĕ мана.

— Мĕн тумалла ĕнтĕ, Мурат Михайлович? — ыйтрĕ райкомол секретарĕ, эп пĕтĕмпех каласа парсан.— Пире Семенова комсомолка пĕртте айăплă пек туйăнмасть. Пулăшасчĕ ăна!

— Пăхăпăр, курăпăр, тĕрĕссине шырăпăр, май пулсассăн — тупăпăр,— терĕ Арайкин.

— Эс сăвăсем çырма тытăнман пуль те? — кулса илчĕ Петров.

— Пирĕн ĕçре тепĕр чух сăвă мар, трагеди те çырăн,— ал сулчĕ Арайкин. Унтан мана каларĕ: — Эсĕ, хĕрĕм, халь манпа пĕрле пыр та — çакăнта каласа кăтартнине хут çине çырса пар. Кайран вара киле кай та юрла-юрла ĕçлеме тытăн...

— Те юрламалла-ха, унăн, те макăрмалла пулать? — иккĕленнĕ пекрех каларĕ Якушкина.

— Ревизипе пырсан тем кăтартĕç-ха! — хушса хутăм эп.

— Хăратăн, эппин? — ыйтрĕ Арайкин.

— Хăрамасăр!

— Ан хăра. Вăрламан вĕт эс? Вăрлакансем хăраччăр. Ревизи тăваççех пулсан, эп хам та пыратăп-ха

унта. Нумай пулать сирӗн пӗвере кӗмӗл караcсемпе пӗрле шыва кӗменни...

Çапла каларӗ те, сывлăх сунса, ал парсах тухса кайрӗ вăл.



— Халь ӗнтӗ, Семенова, ан хуйхăр, Мурат Михайлович жуликсене тăрă шыв çине кăларатех,— терӗç Петровна Якушкина.

Эп киле таврăнтăм. Ыран ревизи килет пуль тесе, çав кунах лавкка урайне çуса тухрăм, унта-кунта палăракан тусан-пăрахсене тасатрăм, таварсене тирпейлӗрех вырнаçтартăм. Хамра нимӗнле айăп та çуккине пӗлсе, лăпланнă пек пултăм, анчах хамăн чун çав-çавах вырăнта мар.

Питӗ тӗлӗнтӗм: ревизорсем пымарӗç. Тепӗр кунне те, ик кунтан та, эрнерен те. Эп, яланхи пекех, лавккана ир-ирех уçса, майӗпе сутă турăм. Хам çаплах кӗтетӗп: ак, халех, çак самантрах персе çитеççӗ иккӗн-виççӗн! Чăн малтан Эзенкин кӗрсе тăрать пуль-ха... Вăл ман куç умӗнче тăнă пекех туйăнать. Анчах та çук-ха, пымасть никам та. Кун хыççăн кун иртет...

Ман лавккара таварсем сахаллана пуçларӗç. Сахăр юлмарӗ, спичкă пулса — вăл та пӗтрӗ. Ял çыннисем ятлаçма тытăнчӗç: «Мӗншӗн илсе килместӗн? Кахал эсӗ, халăхшăн тăрăшмастăн!..» Пӗлмеççӗ те-ха вӗсем нимӗн те... Ревизи килессе кӗтекенскер, ăçта каям-ха эпӗ? Çынсене суймалла пулчӗ: «База ӗçлемест, хупă, унта ревизи тăваççӗ...»

Пӗлнӗ пекех каланă эп çакна! Чăнах та питӗ тӗплӗ ревизи тунă-мӗн çав кунсенче Эзенкин патӗнче ОБХСС пуçарнипе!

Кӗтмен çӗртен, ман пата хайхи Мурат Михайлович Арайкин пырса кӗчӗ. Прилавок умне пырса тăчӗ те йăл-йăл кулса каларӗ:

— Ырлăх-сывлăх сунатăп хĕрÿ чĕреллĕ комсомолкăна...

Тăруках палласа та илеймерĕм эп ăна: пĕркунхи пек мар, урăхла тумланнăччĕ — плащпа, кепкăпа, аллинче кивĕрех портфель. Сассинчен уйăрса илтĕм. «Ак хайхи, килсе çитрĕ ревизи!» — чĕре яштах турĕ манăн, ал тупанĕсем тарласа кайрĕç.

— Мĕнле пурăнатăн, Семенова? — ыйтрĕ вăл хуллен.

— Пурăнкалатăп-ха... çил-тăвăл кĕтсе,— терĕм эпĕ.

— Мĕншĕн çил-тăвăл кĕтетĕн? Лăпкă та уяр çанталăк килĕшмест-им вара сана?

— Мĕншĕнне хăвăрах пĕлетĕр ĕнтĕ...

Лавккара пĕр-икĕ çын кăначчĕ. Вĕсем тухса кайсан Арайкин мана алăка хупса хума хушрĕ. Эпир хыçалти пÿлĕме, «подсобкăна», кĕрсе лартăмăр.

— Ну, мĕнле çĕн хыпарсем пур санăн? Ĕçсем еплерех пыраççĕ? — ыйтма тытăнчĕ ОБХСС инспекторĕ.

— Хыпарсем çук, ĕçсем начар пыраççĕ, таварсем пĕтсе çитрĕç, çынсем вăрçаççĕ, эп ниçта тухмасăр ревизи кĕтсе ларатăп,— терĕм ăна хирĕç.

— Ревизи пулмасть сан патăнта,— терĕ вăл.

— Епле пулмасть? Эзенкин каларĕ-çке?

— Эзенкина ăна хăйне тĕрĕслеççĕ-ха. Шупашкартан тăваттăн-пиллĕкĕн килчĕç. Ырăпах иртессĕн туйăнмасть. Тем те хăтланса пĕтнĕ вăл хăйĕн помощникĕсемпе пĕрле. Ĕç питĕ шала кĕрсе кайнă. Хамăр хушăра каласан, тăван ялĕнче пĕлтĕр лартнă икĕ хутлă пÿртпе те, кăçал илнĕ «Москвичпа» та сывпуллашмалла пулать унăн. Хăй те ирĕкре çÿреймест пуль, тегĕп.

— Мана улталаса ал пустарнă накладной пирки... мĕнле?

— Малтан виççĕшĕ те хытă тăчĕç — Эзенкинĕ хăй те, склад заведующийĕ те, шоферĕ те. Таварне леçсе панă эпир, теççĕ. Кунне, числине те калаççĕ. Анчах шаларах кĕрсе лайăххрах тĕрĕслесен паллă пулчĕ — сан патна тавар илсе килме шутламан та вĕсем. Сана тивĕçлĕ тавар пĕтĕмпех урăх çĕрелле кайнă.

— Епле палăртрăр-ха эсир ăна, Арайкин юлташ?

— Ун çинчен сан пĕлмесен те юрĕ, хĕрĕм. Саншăн чи хакли — хăвна айăпламанни пуль? — кулса илчĕ инспектор.— Çапла-и?

— Ку тӗрӗс,— килӗшрӗм эпӗ,— мана урӑх ним те кирлӗ мар...

Вӑл манӑн инвентаризаци кӗнекине илсе чылай хушӑ уҫкаласа пӑхса ларчӗ.

— Лайӑх ҫырса пынӑ,—терӗ юлашкинчен, кӗнекене аяккалла хурса.— Малашне те ҫавӑн пекех ӗҫле.

— Урӑх нимӗн те тӗрӗслеместӗр-и? — ыйтрӑм эпӗ.

— Эп сан пата тӗрӗслеме мар, ҫула май, Эзенкин ултавӗ тӑрӑ шыв ҫине тухни ҫинчен калама ҫеҫ кӗтӗм,— терӗ вӑл. Эп тинех ҫӑмӑллӑн сывласа ятӑм...

Официантка хӑйӗн хурлӑхлӑ калавне пӗтерчӗ те пирус тивертсе ячӗ. Ларисӑпа Кира пӗр-пӗрин ҫине пӑхса илчӗҫ. Пӗр хушӑ нихӑшӗ те чӗнмерӗҫ. Шухӑша ячӗ хӗрсене ҫак Семенова историйӗ.

Унтан сӑмаха Лариса пуҫларӗ:

— Ҫапах та, ыр ҫынсем пурах, эппин, Инна Семеновна! Эсир каланӑ пек, пурте пӗр-пӗрине усал тума тӑрӑшмаҫҫӗ? Сире йывӑр килсен, хута кӗрекенсем тупӑннӑ-ҫке, сире хӑтарнӑ вӗсем. Ҫав райкомол секретарӗсемпе ОБХСС инспекторӗ пулман пулсан, тен, сире чӑнах та питӗ йывӑр килетчӗ? Тӗрӗс калатӑп-и эпӗ?

— Ыр ҫынсем вуҫех те ҫук теместӗп эпӗ, паллах, пур вӗсем, нумай, унсӑрӑн пирӗн пурнӑҫ мӗнле тытӑнса тӑтӑр-ха,— терӗ Семенова.— Анчах таса мар чунлисем те час-часах тӗл пулаҫҫӗ-ҫке! Пӗртте тӳрӗ кӑмӑлпа пурӑнмаҫҫӗ, кукӑр-макӑр ҫулпа пыраҫҫӗ, шав мӗнле те пулин «майлаштарма», тӗрӗсрех каласан — ултала-ма, вӑрлама, чи ирсӗр майсемпе пуйма тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫавсем тарӑхтараҫҫӗ мана, ҫавсене пӗтӗм чун-чӗререн кураймастӑп эпӗ!

— Ун пеккисене пирӗн закон тӑрӑх айӑпласҫӗ...

— Тытсан — айӑпласҫӗ, тӗрӗс, анчах тытиччен мӗн чухлӗ сиен кӳреҫҫӗ вӗсем? — Семенова пуҫӗпе буфет еннелле сулса илчӗ те шӑппӑнтарах кала пуҫларӗ.— Ҫав тӗрӗс ӗҫлет тесе шутлатӑр-и? Апла пулмасӑр! Куратӑп эпӗ — тем тӗслӗн те улталать халӑха. Эрехне черккесене ярса сутнӑ чух та ҫур литртан ним мар ултҫӗр-ҫичҫӗр грамм кӑларать...

— Епле апла? Ҫур литр — пилӗкҫӗр грамм кӑна-ҫке? Ыттине вара шыв ярать-и? — ыйтрӗ Кира.

— Шыв хутӑштарма ӗлкӗреймест, мӗншӗн тесен кӗленчисене ҫынсен куҫӗ умӗнче уҫма тивет. Вӑл эрехне ярса панӑ чух черккине мал еннелле тайӑлтарса ты-

тать. Илекенне эрех çителĕклех кайнăн туйăнать, анчах черккен тепĕр енче — çурри кăна. Пичкери сăрана сутнă чух вара, ăна юри кăпăклантарса, сахалтан та пĕр çĕр курка ытларах кăларать. Илекенсем çавна сисмесçĕ те — ах, сăри лайăх, çемçе, кăпăклă! — тесе ĕçеççĕ. Вăл кулкаласа çеç тăрать — çирĕм-вăтăр тенкĕ кĕсъере унăн! Хакĕсене те хăех тăвать: калăпăр, пĕчĕк кукăль е бутерброд улт-çичĕ пус тăрать, вăл ăна, никам курман чух, вунă пуспа ярăнтарать. Ценниксем — тавар мĕн хак тăнине çырни — нихçан та çук унăн. Мĕн каламалли! Укçана ывçи-ывçипе пĕтĕрсе чикет, тухатмăш!

— Мĕнле-ха вара... ăна никам та тĕрĕслемест-им? Директор е заведующи пур пуль-çке кунта?

— Пулмасăр! Паллах пур! Анчах пĕр каварлă вĕсем, пурте пĕр ушкăнра — заведующи те, кладовщикĕ те, поварĕ те, буфетчици те!

— Эсир... эсир вара çакна пĕле тăркачах ун çинчен никама та каламастăр-и? — пăлханнипе кăштах чĕтреме пуçланă сасăпа ыйтрĕ Лариса, Семенова куçĕнчен пăхса.

— Мĕнле калатăн? Кама?! Манăн та пурăнмаллаçке, çăкăр çимелле! Вĕсене хирĕç пырсан—тӳрех кăларса ыватаççĕ, анчах кунта, районта, пĕр тухса ӳксен ĕç тупма та йывăр. Пĕррехинче çак Маттĕрне шкул ачисене куçкĕретех улталаса янине куртăм та...

— Мĕнле?

— Ултă пус тăракан кукăльшĕн тăхăршар пус илчĕ... Çавна курсан, чун чăтаймарĕ, мĕншĕн пĕчĕк ачасене кӳрентеретĕн ун пек, вĕсемшĕн виçĕ пус та темех, пĕрер кăранташ туянма пултараççĕ вăл укçапа, терĕм те—урнă йытă пек сиксе ларчĕ ман çине! Тем те, тем те каласа пĕтерчĕ! Эс ху вăрă, жулик пулнă та, ыттисене те хăвăн пек тесе шутлатăн-и?! Хăй мана çӳпĕ вырăнне те хумасăр кӳрентерни çитмест, заведующие элеклесе пана ман çинчен. Лешĕ çав кунах чĕнсе пăсăрлантарма тытăнчĕ: кам ирĕк пана сана çын ĕçне хутшăнма?! Мĕншĕн коллектива хирĕç пыратăн? Пирĕн пурин те килĕштерсе ĕçлемелле! «Ара, вăл ачасене улталаса янине хам куртăм-çке!»—терĕм те, заведующи мана тата хытăрах кăшкăрса пăрахрĕ: «Ĕненместĕп! Матрена Федоровна буфетра вунă çул ытла ĕçлет, ун пирки нихçан та пĕр жалоба та пулман, вăл никама та улталаман! Йăнăшсем пулма пултарнă, анчах кам ĕçĕнче

йăнăш пулмасть ?! Пирĕн коллектив тусăй, эпир пĕр-пĕрне пулăшса пыратпăр, эсĕ пур — тӳрех çынна айăплама тытăннă. Шухăшласа пăх-ха лайăххрах каллемалле: ăçта ĕçлетĕн эсĕ — пирĕн чайнăйра е милицире? Асту, малашне те кунтах ĕçлес тетĕн пулсан — хăвна тытма пĕл! Сан биографине те лайăх пĕлетпĕр эпир, çавăнпа та питех ан сик!» Çĕрĕпе макăртăм çавăн хыççăн. Тек вара нихçан та çăвар уçмарăм. Хуть те мĕн хăтланччăр!

— Юрамасть-çке ун пек,— терĕ Кира, сивĕнсе кайнă чее сыпа-сыпа.— Сан куçу умĕнчех халăха улталаççĕ, государство пурлăхне çаратаççĕ пулсан, ун çинчен епле-ха шарламасăр тăмалла?! Акă, пĕр сехет каялла çеç райпо председателĕ Фролов та каларĕ пире: «Хăвăрăн тĕрĕс, таса чунпа ĕçлемелле кăна мар, кукăр алăсене пăрса лартма та, вăрăсене тăрă шыв çине кăларма та пулăшмалла сирĕн»,— терĕ...

— Эсир мĕн тума кайнă Фролов патне? — тĕлĕнерех ыйтрĕ официантка.— Пĕр-пĕр лайăхрах япала туппа пама ыйтрăр-и? Пулаççĕ ун пеккисем, тепĕр чух Шупашкартан та килеççĕ — столицăра тупса илеймеççĕ, кунта туянаççĕ. Эсир те çавăн пирки пулĕ-ха?

Ларисăпа Кира пĕр-пĕрин çине вăрттăнтарах пăхса йăл кулчĕç.

— Çук, эпир нимĕн те ыйтман, илес те темен-ха, тата пирĕн япаласем туянма халлĕхе кĕсъе тĕпĕсем те якарах,— терĕ Лариса.

— Ыйтса намăс курманни те аван,— терĕ Семенова,— ыйтнă пулсан та Фролов нимĕн те памастчĕ, юратмасть вăл аякран япала илме килсе çӳрекенсене. Питĕ çирĕп кăмăллă, тӳрĕ çын, пĕлетĕп ăна. Аякран килекенсем вĕсем — е спекулянтсем, е мăнтăрпа сикекенсем, тет. Хамăр района панă тавара хамăр çынсенех сутатпăр, вĕсен те хуларисенчен кая мар тумланмалла, тет.

— Тĕрĕс калать. Анчах, вăл чăнах та эсир каланă пек çирĕп кăмăллă та тӳрĕ чунлă çын пулсан, ма-ха... çак сирĕн чайнăйри йĕркесĕрлĕхсене курмасть? Килсе çӳремест-им вăл кунта? Тата эсир хăвăр та пĕрре кăна мар тĕл пулса йăлтах каласа пама пултарнă...

— Ку чайнăйпа Фролов хуçа мар çав. Вăл пулнă пулсан...

— Епле хуçа мар?

— Пирĕн чайнăй райпон мар, ОРСăн *.

— Унăн пуçлăхĕ мĕнлескер тата?

— Аптрамалла çынах мар-ха вăл, Фролов пекех инвалид, анчах çур çула яхăнах больницăра выртать. Ун вырăнне заместителĕ юлнă — так, ни ăсĕ, ни пăсĕ, тенĕ пек, çăварĕнчен эрех шăрши кĕмен кун çук. Хăш чух ăна кунтан хыçалти алăкпа михĕ пекех çĕклесе каяççĕ.

— Тĕлĕнмелле йăласем иккен сирĕн кунта! — ассăн сывласа ячĕ Кира.— Ак çак пукансем çинчи пылчăкпа «крахмалланă» чехолсене курсан та хăсăк тухмалла... Хăçан çунă-ши вĕсене?

— Эпир тĕлĕнме пăрахнă ĕнтĕ. Пĕр уйăх каялла кунти антисанитари çинчен райхаçатра пит хитре фельетон та тухрĕ, çапах нимĕн те улшăнмарĕ унтанпа.

— Каçарăр та, Инна Семеновна, анчах сирĕн умăрти саппун та столовăйра çакмалли саппунах мар,— терĕ Кира.— Кăшт тасарах пулнă пулсан кансĕрлемен пулĕччĕ...

Официантка саппунĕ çине пăхса ал сулчĕ.

— Ансăртран пулчĕ-ха ку, паçăр сыснасене апат тухса панă чух çыхса ятăм та, кайран салтма маннă...

— Мĕнле сыснасене? — татах тĕлĕнсе ыйтрĕ Кира.

— Чайнăй сыснасем усрать. Тăваттă тан. Апат юлашкисем, паранкă хуппisем нумай юлаççĕ çке. Анчах кунти хуçасем кĕркунне вĕсене пуссан та вăрăлла хăтланаççĕ: сысни пилĕк пăт таять, прихода виçĕ пăт тесе çыраççĕ. Юлашкине валеçеççĕ. Пĕлтĕр мана та пĕр виçĕ килограмм пек пачĕç — çăвара хуплама. Анчах эпĕ унсăр та шарламастăм-ха.

— Çав выльăхсене официанткăсен пăхмалла-и вара?

— Хушаççĕ те — мĕн тăвас тетĕн. Çавăн пек кунти пурнăç!

Ларисăпа Кира тухса кайма хатĕрлене пуçларĕç.

— Пирĕн колхозник çуртне çитсе вырнаçас пулать-ха...

— Çапах та, каламарăр-ха мана, кунта мĕн çăмăлпа килнĕ эсир? — ыйтрĕ Семенова.

— Ĕçлеме, ĕçлеме килнĕ сирĕн пата! — пат татса каларĕ Лариса.

---

* ОРС — отдел рабочего снабжения.

— Мĕн ĕçлеме? Ăçта?

— Суту-илӳре ĕçлемелле пулать. Продавец пулма вĕреннĕ эпир. Ялти лавккасенче продавец пулатпăр...

— Ах, а-ав епле! Каламаççĕ тата хăйсем... — Официантка хĕрсем çине пăхса пĕр хушă шарламасăр тăчĕ.— Йывăр ĕç суйласа илнĕ эсир хăвăра валли. Тата... хăрушă! — терĕ унтан.

— Мĕншĕн хăрушă? — ун куçĕнчен пăхса ыйтрĕ Кира.

— Эп сире халь кăна хам çинчен каласа кăтартрăм-çке. Ним айăпсăр, пĕр пус растрата тумасăр, чутах тĕрмене кĕрсе лараттăм! Сирĕн те çавăн пек пулма пултараймасть тетĕр-им?

— Асăрханарах ĕçлĕпĕр, сисĕмлĕрех пулăпăр,— терĕ Лариса.— Хамăр вĕреннĕ шкулта пире вĕсем пирки те сахал мар каланă. Милици çыннисем те лекцисем вуласа паратчĕç. Çавăнпа та тӳрех танатана кĕрсе ӳкмĕпĕр, тесе шутлатпăр.

— Хăюллă эсир...

— Ытла хăрамах шут çук-ха. Ăспуç йĕркеллĕ пулсан, таса кăмăлпа ĕçлесен — мĕн пултăр? Хăшĕ-пĕрисем суту-илӳре вăтăр-хĕрĕх çул пĕр шăйрăксăр ĕçлеççĕ. Пĕтĕмпех çынран хăйĕнчен килет пуль?

— Ах, пĕтĕмпех çынран хăйĕнчен килмест çав! — тарăхнă пекрех каларĕ Семенова.— Эп те тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесеттĕм, улталас, вăрлас ĕмĕт нихçан та пулман манăн, анчах пурĕпĕр вăрă, растратчик туса хума тапратрĕç мана...

— Çавăн йышши путсĕр çынсем хушшине лекнĕ эсир,— терĕ Лариса.— Хăвăр чухласа илеймен камсемпе ĕçленине...

— Пĕлетĕп ăна. Шакалсен аллине лекнĕ. Халь пурте лараççĕ-ха вĕсем. Анчах ун пеккисем урăх çук тетĕр-и? Мĕншĕн хаçатсенче час-часах растратчиксене, халăх пурлăхне салатакансене суд туни çинчен çыраççĕ? Акă, нумай та пулмасть каласа кăтартрĕç-ха: пирĕн районри Кагаева хушаматлă пĕр продавщица, чылай çула çитнĕскер ĕнтĕ — ачисем авланса, качча кайса пĕтнĕ, аякра пурăнаççĕ — Шупашкарти перекет кассине пилĕк пин хунă, тет. Кив укçапа шутласан, аллă пин вĕт ку! Тахăшĕ унран: «Ай-уй, кинемей, кун чухлĕ укçа ăçтан тупрăн, лотерейăпа «Волга» выляса, уншăн укçан илмерĕн пуль-çке?» — тесе ыйтнă та, ку:

«Пӗтӗм кил-ҫурта, выльӑх-чӗрлӗхе сутрӑм, халь ӗнтӗ ачамсем патне Ҫӗпӗре каятӑп»,—тенӗ пулать... Анчах пӗр турпас та, пӗр кушак ҫури те сутман вӑл, пӗтӗм килӗ-ҫурчӗ мӗнле пулнӑ — ҫаплипех, шуҫ тимӗр айӗнче крепость пек ларать. Курнӑ эпӗ вӑл мӗнле пурӑннине,— пӗррехинче ун лавккинчен хамӑр чайнӑй валли ҫӑмарта илсе килтӗмӗр,— чӑн-чӑн улпут! Хӑй ялпора хуҫа — ҫирӗм ҫула яхӑн сутӑ тӑвать, килӗнчи ӗҫӗсене йӑлтах хӑлхасӑр тӑлӑх хӗр туса пырать — тарҫӑ ӗнтӗ, ӑна та пулин выҫлӑн-тутлӑн усрать, теҫҫӗ. Ӑҫтан тупнӑ вӑл хӗрарӑм ун чухлӗ укҫа? Мӗнле майпа ҫавӑн пек кил-ҫурт ҫавӑрма пултарнӑ? Ӗҫ укҫи унӑн уйӑхне ҫитмӗл-сакӑрвун тенкӗрен ытла пулмасть, унпа нумаях сикеймӗн, керменсем лартаймӑн! Вӑрламан-и ӗнтӗ вӑл? Тем тесен те вӑрланӑ! Пӗр ҫул — ик ҫул мар, вуншар ҫул хушши никам сисмелле мар вӑрласа пурӑннӑ, пӗр тенкӗ ҫумне вуншар тенкӗ хушса пынӑ! Ҫапах та районра ҫав этем шутсӑр ыр ятлӑ — суту-илӳ ударникӗ вӑл, таварҫаврӑнӑшне уйӑхран уйӑха тултарса пырать, илекенсем яланах кӑмӑллӑ, тав тӑваҫҫӗ имӗш ӑна, ун сӑнӗ райпо умӗнчи хисеп хӑми ҫинче ҫакӑнса тӑрать... Пӗтӗмпех суя! Ӗненместӗп ҫав хӗрарӑм таса пулнине,— тӳрӗ кӑмӑлпа, пӗр ултавсӑр ӗҫлекен ҫын ҫавӑн пек пуйма пултараймасть! Ҫапла мар-им?

Хӗрсем ӑна хирӗҫ ытла тӳрех нимӗн те калаймарӗҫ. Шухӑша ячӗ вӗсене Семенова сӑмахӗ. Самаях ӗнентермелле каларӗ-ҫке вӑл. Ҫапах та унпа пӗтӗмӗшпех килӗшме ҫук. Ытла та тӗксӗм сӑрсемпе сӑрласа кӑтартать вӑл пурнӑҫа...

Кӑшт тӑрсан, сӑмаха Лариса пуҫларӗ:

— Сире итлесен, Инна Семеновна, суту-илӳре вӑрӑхурахсем, халӑха, патшалӑха ҫаратакансем кӑна ӗҫлеҫҫӗ, тесе шутлама пулать. Тӗрӗс мар-ҫке вӑл! Пирӗн ҫӗршыври суту-илӳре вуншар, ҫӗршер пин ҫын таса кӑмӑлпа, чунне парса ӗҫлет, халӑхшӑн тӑрӑшать! Эпӗ хамӑр ялти продавецах астӑватӑп — вӑрҫӑ инваличӗччӗ вӑл, протезпа ҫӳретчӗ, пӗлтӗр сарӑмсӑр вилсе кайрӗ — ӗмӗрне те хӑй ҫумне пӗр пус хӗссе юлман вӑл, нихҫан никама улталаман,— эп ӑна тӗп-тӗрӗс пӗлетӗп! Хӑй вилсен, унӑн перекет кӗнеки ҫинче шӑп пилӗк тенкӗ пулнӑ, терӗҫ... Ӑна та вӑрӑ темелле-ши вара?

Семенова чӗнмерӗ.

— Пӗлетӗр-и, Инна Семеновна, пирӗн шкултан

кашни çул утмăл-çитмĕл хĕрпе каччă продавеца вĕренсе тухать. Вĕсене пурне те ялпосене ĕçлеме яраççĕ. Шкул дирекцийĕ вĕсемпе тачă çыхăну тытать, виçĕ çул вĕсем мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе тăрать, лешсем хăйсем те шкула пыра-пыра каяççĕ, хăйсен пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласа параççĕ... Юлашки пилĕк çул хушшинче пирĕн шкултан вĕренсе тухнисенчен пĕри те айăпа кĕмен! Пурте ырă ятлă. Чылайăшне ахаль продавецсенчен магазин заведующийĕсем туса хунă. Мĕн калăр ĕнтĕ çакăн пирки? Халь пире Кирăпа иксĕмĕре илĕр. Эпир комсомолкăсем, совет суту-илĕвĕнчи çынсен мĕнле пулмаллине, вĕсен мĕнле ĕçлемеллине пире икĕ çул вĕрентнĕ. Нивушлĕ вара эпир вăрлама, тавар илекенсене улталама, патшалăха сиен тума пултаратпăр?.. Вăрă-ултавçă ĕмĕр-ĕмĕр вăрласа-улталаса пурăнма пултараймасть, хăçан та пулин шалчи тулатех унăн, хăçан та пулин пурĕпĕрех лекет те закон тăрăх ответ тытать. Юлашкинчен — тĕрме. Вăл паллă. Пирĕн Кирăпа иксĕмĕрĕн тĕрмене лекес, хамăр ята ĕмĕрлĕх çĕртес, хамăрăн çамрăк ĕмĕре пĕтерсе хурас килет-ши? Эпир мĕн, хамăршăн хамăр тăшман-и?

Семенова каллех нимĕн те каламарĕ.

— Паллах, питĕ шел,— терĕ малалла Лариса,— лайăх çынсем хушшинче ирсĕрсем те пурăнаççĕ — вăрлаççĕ, улталаççĕ, растратăсем тăваççĕ те, вĕсене пула вара халăх ыттисем çинчен те лайăх мар шутлать. Питĕ тарăхмалла çавăншăн! Эппин, хамăр ята ярас мар тесе, çав пур йĕксĕксене хирĕç пирĕн пур вăя хурса кĕрешмелле, хăраса тăмалла мар вĕсенчен, хĕрхенмелле те мар, йăлт тăрă шыв çине кăларса пымалла. Тыттармалла! — вĕриленсе, хĕрелсе кайсах каларĕ Лариса.

Анчах унăн «агитацийĕ» официанткăна ытлах ĕнентермерĕ пулас.

— Сăмахпа калама çăмăл,—терĕ вăл сӳрĕкреххĕн.— Кун пек сăмахсене кашни пуху-канашлурах калаççĕ. Тытса пăх-ха эс вĕсене! Питĕ вăрттăн, çав тери чее хăтланаççĕ-çке, вĕренсе çитнĕ. Сăмахран, пирĕн повар катлет тума мĕн чухлĕ фарш, мĕн чухлĕ авăртнă сухари хунине ăçтан пĕлетĕн? Паллах, сухарине нормăран икĕ хут ытларах хурать, фаршне — икĕ хут сахалтарах. Хакĕ—çавах. Мĕне пĕлтерет çав? Вăрлани мар-и?! Калăр-ха мана!

— Тĕрĕслеттерес пулать. Ăна валли суту-илӳ инспекцийĕ пур...

— Тĕрĕслĕн вĕсене! Каларăм-çке — буфетчица шкул ачисене улталанине куçкĕрет курса асăрхаттартăм та, кайран мĕнле ахăрсамана пуçланса кайрĕ? Чут çеç ĕçрен тухса вăркăнаттăм!

— Пурпĕрех кĕрешес пулать! Чăнлăх яланах çĕнтерет,— терĕ ăна хирĕç Кира.— Эп пулсан — тӳсес çук.

— Ĕçлесе кур-ха, йăмăкăм, ĕçлесе кур пăртак. Тути-масине пĕлĕн вара. Тен, халь калаçнине пĕрре кăна мар аса илĕн...

— Инна, питĕр алăка, хупма вăхăт çитрĕ! — илтĕнчĕ çав самантрах буфетчицăн сасси.

## 3

Райпо председателĕ Фролов хăй сăмахне манман, районти «гостиницăна» шăнкăравласа пĕлтернĕ иккен. Ларисăпа Кира унта пырсан, коридорти сĕтел хушшинче чăлха çыхса ларакан ватăрах хĕрарăм тӳрех ыйтрĕ вĕсенчен:

— Эсир Шупашкартан килнĕ хĕрсем пулĕ-ха, çапла-и? Пирĕнпе Улатимĕр Яккăлч калаçрĕ...

— Çавсем-ха, çавсем, кинемей,— пуçĕсене тайса илчĕç хĕрсем.

— Пӳлĕм хатĕр сире валли, ав, коридорăн леш вĕçĕнче. Вăл пӳлĕм пирĕн — хаклăрах хăнасем валли, унта эпир Шупашкартан килнĕ начальниксене усратпăр...

— Эпир начальниксемех мар та ĕнтĕ...— йăл кулчĕ Кира.

— Пулăр-ха хăçан та пулин, ăçта васкас? — хĕрарăм куçлăхне хывса кĕсйине чикрĕ те сĕтел хушшинчен тăчĕ.— Ку чухнехи начальниксем хушшинче хĕрарăмсем те тем чухлех. Арçынсенчен темиçе хут усалтарах вĕсем. Кăçал çуркунне пĕри пулчĕ те пирĕн патра — йăлт кутăн-пуçăн çавăрттарчĕ! Хăй шĕпĕн пекскер кăна, арçын ыталамалăх та çук, çӳçне хĕртнĕ кирпĕч тĕслĕ сăрласа лартнă, хăлхисенчен лайăх çăраççи унки пысăкăш алкасем çакса янă, сасси вара — чăн-чăн арçури сасси...

— Эс пире хамăра панă пӳлĕме илсе кай-ха, эп-

пин,— терӗ Лариса, ку хӗрарӑм хӑйӗн халапне часах пӗтерес ҫуккине кура.

— Атьӑр ара, атьӑр! — дежурнӑй, кӗсйинчи ҫӑраҫҫисене чӑнкӑртаттарса, коридор вӗҫнелле утрӗ, анчах калаҫма чарӑнмарӗ. Хӗрсем ун хыҫҫӑн пычӗҫ.— Пирӗн заведующи те ытла хӑракан ҫынах мар, вӑрҫӑра ахвицер пулнӑскер, хӑйӗнпе ытлашши хирӗҫекенсем пулсан, тепӗр чух вырӑсла та лаплаттарса хурать, анчах ҫав хӗрарӑм умӗнче ташласа кӑна тӑчӗ вӗт! Хаҫатра статья кӑларатӑп, «Капкӑна» лектеретӗп, сана ӗҫрен сирпӗттеретӗп! — тесе кӑшкӑрать те лешӗ...

— Мӗншӗн ун пекех кӑшкӑрчӗ вара вӑл? — тӳсеймесӗр ыйтрӗ Кира.

— Ир вӑрансан, мӑнтӑр пӗҫҫи ҫинче хӑнкӑла тытнӑ. Хӑнкӑли калаҫмалӑх та ҫук, йӗп вӗҫӗ пек ҫеҫ, ҫыртма та пӗлмест пуль. Пулман пирӗн ун пек тавраш, хӗрарӑмӗ хӑй таҫтан тупса килнӗ пулмалла ӑна, анчах ҫавӑн пирки унта та кунта шӑнкӑравларӗ, санитарнӑй врача чӗнтерчӗ, тисинфекси тутарчӗ...

— Тен, тӗрӗс те тунӑ пуль вӑл? — терӗ Лариса.— Халӑх выртса тӑракан ҫуртсенче хӑнкӑла-пӑрҫа таврашӗ хунаттармалла марах ӗнтӗ.

— Ун ҫинчен этемле калаҫмалла мар-им? Ку вӗт тепӗр урама илтӗнмелле ҫухӑрать, хӑйне кӗҫӗр такам пусмӑрласа кайнӑ пек!

— Кам пулнӑ вара вӑл, ун пекскер? Мӗнле начальник?

— Мур пӗлет-и ӑна... Ҫӗвӗ мастерскойне тӗрӗслеме килнӗ тет-и! Пӗр виҫӗ кун янраса пурӑнчӗ. Укҫи купипех пулнӑ пулмалла — кӑҫал уҫнӑ мӑн лавккаран харӑсах вунӑ арҫын кӗпи — леш вӗри утюгпа тӗкӗнме юраманнисене, илчӗ, тет, унтан тата ҫыхнӑ кӗпесене, шеппӗр теҫҫӗ-и-ха ҫавсене, купипех туянчӗ, чӑштӑрчӑштӑр тӑвакан ҫӳхе плащсем темиҫе илчӗ, тет. Тем тума кирлӗ пулнӑ-ҫке ӑна ун чухлӗ тумтир? Те еркӗнӗсем нумай...

— Спекулянтка пулнӑ апла вӑл,— терӗ Лариса.— Ун пек япаласене Шупашкарта тупса илме хӗнтерехчӗ, пӗр хушӑра магазина кӑларнӑ кунах илсе пӗтеретчӗҫ. Киле таврӑнать те акӑ вӑл, япаласен хакне вунӑ-вунпилӗкшер тенкӗ ӳстерсе ярӑнтарать. Пур ун пеккисем!

— Пур пуль ҫав, пур пуль. Ҫӑмӑл укҫана хапсӑнакансем сахал-и! Анчах Улатимӗр Яккӑлч ҫакӑн ҫинчен

пĕлсен прикащĕкне шутсăр хытă выкăвăр панă, чут çеç ĕçрен хуса яман, малашне аякран килекенсене курттăмăн ним те сутма хушман, терĕç. Пăркăçланă...

...Дежурнăй Ларисăпа Кирăна ырă каç сунса тухса кайрĕ, вĕсем саланса кашни уйрăм вырăн çине выртрĕç, анчах кун каça самаях ывăннă пулсан та, тăруках çывăрса каяймарĕç.

— Эппин, ырантан пирĕн çĕнĕ пурнăç пуçланса каять, тусăм,— терĕ Лариса, тутлăн анасласа-карăнса илсе.— Ĕçлеме тытăнатпăр...

— Пуçланчĕ пуль вăл çĕнĕ пурнăç,— терĕ ăна хирĕç Кира.— Шкулта илтмен икĕ лекци итлерĕмĕр ĕнтĕ паян...

— Мĕнле лекци çинчен калатăн эсĕ? — пуçне çĕклерĕ Лариса.

— Райпо председателĕ пĕр йышши лекци турĕ, чайнăйри официантка — тепĕр йышши... Турăçăм, мĕн кăна каламарĕ вăл! Пуртеултавçă, пурте вăрă имĕш, пĕр-пĕрине хисеплени çук, сиен кăна тума тăрăшаççĕ... — Кира ӳппĕн çаврăнса чавсаланса выртрĕ.— Чăнах та, ун пек пулсан, суту-илӳре ĕçлеме мар, çĕр çинче пурăнма та хăрамалла-çке!

— Ăнланатăп эпĕ вăл хĕрарăма, тиркеме те шутламастăп ăна,— терĕ Лариса, маччаналла пăхса выртса.— Чĕрине суранласа пĕтернĕ унăнне. Питĕ хытă, ĕмĕрлĕхе суранланă. Кăмăлне нихçан тӳрленмелле мар хуçнă. «Психическая травма», теççĕ пулас ăна вырăсла. Çавăнпа та вăл никама та шанми пулнă. Эс акă хăвна ун вырăнне тăратса пăх-ха темиçе самантлăха: малтан сана, чип-чипер таса чунпа ĕçлекене, ним намăса пĕлмесĕр шутсăр вăйлă улталаççĕ те тѐрмепе хăратма тытăнаççĕ. Пин тенке яхăн растрата!.. Анчах эсĕ пĕр пус та тытман... Ку историрен хăтăлкаласа тухатăн — тепри пырса çапать: упăшкуна хупаççĕ, сана, йывăр çынна, урама кăларса пăрахаççĕ. Кун хыççăн тата ху ĕçленĕ çĕрте хĕсме тытăнаççĕ — темшĕн мар, тӳрĕ сăмахшăн, чăннине каланăшăн! Эс пĕччен, никам та çук санăн... Çакăн пек япаласем çыншăн ахалех иртсе каяççĕ тетĕн-и? Чĕрере нимĕнле йĕр те хăвармаççĕ, тетĕн-и?

— Аçтан ахаль иртсе кайтăр ун пекки...— килĕшрĕ Кира.

— Çавă çав! Айăпсăрах темтепĕр тӳссе ирттерни ун

ăшчиккине çунтарсах тăрать пуль. Пире вăл хăйĕн историсене чунĕ вĕчĕхсе çитнипе каласа пачĕ...

— Эп те çапла шутлатăп. Анчах хăй чăнах та питĕ тӳрĕ кăмăлласкер пулмалла.

— Тĕрĕс пурнăçпа пурăнакан çемьере ӳснĕ. Ашшĕ, ав, пĕрмай милицире ĕçленĕ, тет-иç: вăрçăччен те, вăрçă хыççăн та... Усал ĕçсемех тума вĕрентмен пуль ачине!

Хĕрсем пĕр хушă чĕнмесĕр выртрĕç. Çуртра шăп пулчĕ, вăл пуш-пушă пекех. Урамри репродуктортан çеç чуна лăплантаракан илемлĕ кĕвĕ илтĕнсе тăчĕ.

— Шухăшласан, хамăр та темле çынсем патне лекетпĕр-ха, хамăрăн та тем курмалла!— терĕ Кира кăшт тăхтасан.— Иккĕмĕш работниксем пулатпăр вĕт-ха халлĕхе, такама пăхăнса ĕçлеме тивет? Пĕр-пĕр йĕксĕк патне лексен...

— Хăрама та пуçларăн-им çав официантка каласа панă хыççăн?

— Хăранăшăн каламастăп. Манăн лайăх çынсемпе ĕçлес килет. Ялан килĕштерсе, пĕр кăмăлпа, пĕр-пĕрине шанса. Вара кӳренмелли те, тарăхас-тăвасси те пулмĕччĕ...

— Суд умне тăма та тӳр килмĕ, тесе хуш тата,— кулса илчĕ Лариса.— Çапла-и?

— Унтах çитмĕпĕр те-ха...

— Аçтан пĕлетĕн ăна, тусăм. Тем те пулма пултарать. Пурнăç çулĕ питĕ вăрăм, анчах эпир çав çул пуçламăшĕ патне çеç çитсе тăнă-ха. Нума-ай утас пулать вăл çулпа...

— Эс ху та хăрама пуçланă мар-и?

— Уншăн мар. Опыт çук-çке-ха пирĕн. Икĕ çул хушшинче магазинсенче темиçе хут практикăра пулнине эсĕ опыт тесе шутлатăн-и? Ниме те пĕлтермест вăл...

— Çапах та ăна-кăна чухлатпăрах ĕнтĕ.

— Темле-çке, ĕçлесе курмасăр калама йывăр. Эп çакна çеç асра тытатăп: пур енчен те питĕ асăрханса, пĕр йăнăш тумасăр ĕçлес пулать. Хăвна улталасран хытă сыхланмалла... Ну, çитĕ, çывăр! — терĕ юлашкинчен Лариса, сĕтел çинчи электричество лампине сӳнтерсе.— Калаçмалли пирĕн ыран та нумай пулĕ-ха...

...Лариса Логиновăпа Кира Шакова Шупашкарти суту-илӳ шкулне кĕме икĕ çул каялла пынă та экзамен-

сем панă вăхăтрах паллашнă, кайран вара мĕн вĕренсе тухичченех туслă пурăннă. Шкулăн виçĕ уйрăм пулнă — ялти лавккасем валли продавецсем хатĕрлекенни, кулинар-поварсене тата çăкăр пĕçерекенсене вĕрентекенни. Ларисăпа Кира продавеца вĕреннĕ. Общежитинче те пĕрлех пурăннă вĕсем, класра та юнашарах ларнă, практикăна та пĕрле кайнă, май килнĕ чух — сайра хутра — театр-киносене те пĕр-пĕринчен уйрăм çӳремен. Тăвансем пекех пулнă çав: хĕсĕкрех самантсем килсе тухсан та (япала илме укçа çитмест-и, пĕр-пĕр вечера кайнă чух хитререх тумланмалла-и, тем-и...), вĕсем пĕр-пĕрине яланах «çăлнă», иккĕшĕ тăрăшса, йывăрлăхран тухмалли мелне тупнă-тупнах.

Анчах хăйсем пĕр-пĕринчен пачах расна пулнă вĕсем. Кĕлетке-сăнран та, кăмăлтан та. Лариса çӳллĕ, типшĕм, кăшт кăна курпунтарах, сăнĕ-пичĕ хура, çапах та тиркемелле мар, илемлĕ, уйрăмах вăл шап-шур тикĕс шăлĕсене кăтартса кулнă чух питçăмартисем варринче пулакан путăксем килĕшӳллĕ курăнаççĕ. Кăмăлĕ тикĕс унăн, çын хăйне кӳрентерме пултаракан сăмахсем каланă чух та ăна тăруках пӳлсе хумасть, итлесе пĕтерсен тин хирĕç калать, лешĕн сăмахĕсем тĕрĕс мар пулсан, ăна куçĕнчен тăй-й... пăхать те, «лăпăртататăн çав кирлĕ мара!» тесе аяккалла пăрănса ута парать. Тек калаçмасть те вара.

— Вăхăт çук манăн сан пек айвансемпе пакăлтатма, тата çăвар тутине те ярас килмест...— тет кăна.

Кира Шакова пĕвĕпе Лариса хулпуççийĕ таран çеç, çӳçĕ сап-сарă унăн, куçĕсем уяр çанталăкри пĕлĕт тĕслĕ, сăмси кăшт каçăртарах, питçăмартисем çинче хĕлле те чĕкеç шатри йĕрĕсем палăраççĕ, алли-ури мăнтăркка, вăраххăн утма пĕлмест вăл, ялан чупнă пекех çӳрет, калаçасса та хăвăрт калаçать, пулчĕ-пулмарĕ тавлашма кĕрсе каять, хăй тĕрĕс каланине ĕнентерме тăрăшса аллисемпе те сулкалать, урипе те тапкаласа илет, тавлашнă чух çĕнтереймесен вара çавăнтах макăрса илни те пулать.

— Ман куçсене йĕпе вырăна лартнă çав,— тет хăй ун пирки тепĕр чух кула-кула.— Эп мар, анне айăплă уншăн...

Пĕр-пĕринчен çавăн пек расна çынсем çав тери килĕштерсе пурăннинчен пурте тĕлĕннĕ. Вĕсем хирĕçнине, хăр-хар калаçнине никам та курман-çке пĕрре те.

— Лариси икĕ çул аслăрах, Кирăна вăл амăшĕ пек тытать, ăна итлеттерме пĕлет, çавăнпа тату пурăнаççĕ вĕсем,— тенĕ юлташĕсем.

Шупашкара вĕсем тĕрлĕ çĕртен пынă, Лариса — Етĕрне тăрăхĕнчен, Кира — Елчĕк енчен, çавăнпа та калаçасса та пĕр-пĕринчен урăхларах калаçнă, Ларисăн «хăçан» тес вырăнне «хăнча», «мĕншĕн» тес вырăнне «ма-ка?» сăмахсем тухса кайнă, Кира çавăншăн унран тăрăхлакаласа та илнĕ, анчах Лариса кӳренмен уншăн, тусĕпе пĕрле хăй те кулса хирĕç тавăрнă:

— Çавах юрататăп хамăр енчи чĕлхене. Сирĕнни пек çемçешке мар, çирĕп чĕлхе пирĕн! Мĕн вăл «утаймасть» тени? Отимасть, темелле ăна! Мĕнле сăмах вăл — «пӳрнеске» тени? Порняска, темелле! Янтрать покранимĕр!

— Пукра нимĕрĕ çав,— тăрăхласа кулнă Кира.

Унпа пĕрле Лариса хăй те кулнă.

Шупашкара пыричченхи пурнăçĕ вĕсен иккĕшĕн те пĕр майлăрах пулнă: ялти шкулта сакăр класс пĕтернĕ те колхозра ĕçленĕ, унтан комсомол райкомĕ сутуилӳ шкулне вĕренме кайма путевка панă. Паллах, хăйсемпе калаçмасăр, хăйсен кăмăлĕсене пĕлмесĕр туман ку ĕçе. Лайăх ăнлантарнă,— мĕне вĕренмелле, кам пулса тухмалла вăл шкултан. Хĕрсем хапăл тусах килĕшнĕ.

Иккĕшĕ те çурма тăлăх пулнă тата: Лариса ашшĕ, вăрçăран йывăр аманса таврăннăскер, вăл çуралсан пĕр пилĕк çултан чире ерсе вилсе кайнă, амăшĕ вăрçă хыççăн çуралнă виçĕ ачапа юлнă та пĕр арçына киле кĕртнĕ, лешĕ ĕçекенскер пулнă пирки Лариса юратман ăна, тăван килĕнчен те пуринчен ытла çавăншăн тухса кайнă. Кирăн вара вăл пĕр вунă çулта чухнех амăшĕ сасартăк чĕрепе аптраса вилнĕ, ашшĕ тепре авланнă, анчах амаçури амăшĕ Кирăна çимеллипех çинĕ, унран хăтăлас тесе Кира вунулттăра чухнех ăна юнашар ялти пĕр услапа вăрлаттарса яма тăнă, Кира вара килтен тухса тарса урăх ялта, ватă кукамăшĕ патĕнче пурăннă, шкултан вĕренсе тухсан та çав колхозрах ĕçленĕ. Шăп Шупашкара вĕренме килес чух кукамăшĕ те вилсе кайнă...

Пурнăç ачашламан вĕсене иккĕшне те. Пĕчĕкренех хура-шур курнă та вĕсем, пурнăç çине халь те хăшĕпĕрисем пек çăмăллăн пăхман. Сăпай, тирпейлĕ, перекетлĕ пурăнма тăрăшнă, каччӑсемпе те çӳресех кай-

ман — ăçта васкас? Вĕренме килнĕ-тĕк — вĕренес пулать, нимрен ытла — çын пулма тăрăшмалла!

Суту-илӳ шкулĕнче вĕренӳ пĕтес умĕн кашни вĕренекенех дирекцие чĕнсе калаçнă:

— Ăçталла кайма кăмăл пур? Çуралса ӳснĕ çĕрелле-и е урăх вырăна? Хăвăнтан килет!

— Маншăн пурпĕр, хуть те ăçта ярсан та,— тенĕ Кира.

— Çав района каятăн-и? — директор Шупашкартан самаях инçетри район ятне асăннă.

— Каятăп!

— Манăн та унпа пĕрле кайма пулмасть-ши? — ыйтнă директор умĕнче Кирăпа юнашар тăракан Лариса. Вĕсем ĕçлеме пĕр çĕреллерех лекме тăрăшасси çинчен малтанах калаçса татăлнă: «Пĕрле вĕренсе пĕрле пурăннă, ĕçлессе те пĕрлех ĕçлесчĕ-çке!..»

Директор хирĕç пулман. Вара Ларисăпа Кирăна иккĕшне те çак района янă. Вĕсем кунта хальччен пĕрре те пулса курман.

## 4

Ирхине вĕсем пĕр ултă сехетрех тăрса тумланчĕç, пит çурĕç, çӳçĕ-пуçĕсене турарĕç те, лара-тăра пĕлмен Кира тӳрех васкатма тытăнчĕ:

— Атя, учрежденисем уçăличчен часрах кайса апат çиетпĕр, кайран пирĕн вăхăт те пулать-ха, те пулмасть...

Чайнăйра, талонсем илсен, хĕрсем ĕнерхи сĕтел хушшинех вырнаçрĕç. Кĕçех вĕсем патне хăйсем каçхине паллашнă официантка Инна пырса тăчĕ. Халь вăл пĕртте каçхи пек мар, таса, тирпейлĕ тумланнăччĕ.

— Мĕнле канкаларăр кĕçĕр çĕнĕ çĕрте? — ыйтрĕ вăл хĕрсенчен.

— Тавтапуç, питĕ лайăх çывăрнă! — терĕ Лариса.

— Эпĕ ак çывăрманпа пĕрех... Халь пуç çурăлсах тухать,— ассăн сывласа илчĕ Семенова.

— Мĕншĕн ун пек тата? Чăрмантаракансем пулчĕç-им?

— Ман Славик, ман ача, эппин, садикре сасартăк йывăр чирлесе ӳкнĕ, ӳпки шыçма тытăннă унăн...— куçĕсем шывланчĕç хĕрарăмăн.— Кăнтăрлах чирленĕ, анчах мана пĕлтермен темшĕн. Хваттер хуçи, ват кар-

чăк, ачана садикрен илсе килнĕ те ăна-кăна асăрхаман та пулмалла, çывăратса яма тăрăшнă çеç. Эп киле таврăннă чух ача сывлайми те пула пуçланă, куçĕсене те уçмасть. Часрах тухтăр патне чупрăм. Больницинче никам та çук, сестра кăна, мĕн тума пултарать вăл? Кайрăм пĕр тухтăрĕ патне килне. Çук иккен, Шупашкара кайнă. Тепри патне çитрĕм, алăкран шаккасан мана хирĕç арăмĕ тухрĕ — Порфирий Васильч хăй те чирлĕ, температурăпах выртать, терĕ. Эп кăшкăрса макăрса ятăм: ман ача вилет! Тухтăр çакна илтрĕ пулмалла та çенĕке кăштăртатса тухрĕ — ан макăр, пыратăп, терĕ. Арăмĕ хыпăнса ӳкрĕ, ярасшăн мар, ху та аран сывлатăн вĕт, сан выртмалла, тет, анчах тухтăр ăна хирĕç: шăп эсĕ, эп врач, хама темле йывăр пулсан та манăн çынсене пулăшмалла, терĕ. Ватăскер вăл, çитмĕлтен те иртнĕ пуль, аран кăштăртаткаласа çӳрет, çапах та хăйĕн ĕçне пăрахмасть, эмеллет çынсене, тăрăшать вăйĕ çитнĕ таран... Хисеплеççĕ ăна пурте. Пычĕ вăл манпа пĕрле, ачана пăхрĕ, укол турĕ, пĕр сехет ытла ларчĕ ун çумĕнче, хама та лăплантарчĕ — ан хăра, иртсе каять, тет. Тем пекех тав турăм ăна... Паллах, хам çĕрĕпех çывăраймарăм. Ирпе вара ачана больницăна кайса хутăм.

— Çăмăлланчĕ-и халь? Сывалас пек-и? — пăшăрханса ыйтрĕ Кира.

— Аптрамалла мар пек-ха... — Семенова каллех йывăррăн сывласа илчĕ.— Çав тери ăнмасть ман пурнăç, яланах мĕн те пулин тупăнать ман валли... çинеçине... Ĕмĕрне те çынсем пек пĕр хуйхăсăр, лăпкăн пурăнса курас çук пуль эпĕ... Ача вилсе кайсан, туршăн та, хам та пурăнмастăп çут тĕнчере!

— Чипер калаçăр, Инна Семеновна, лăпланăр,— терĕ Кира,— сывалатех сирĕн ывăлăр, ӳпке шыççи хальхи медицинăшăн темех мар!

— Пĕлме çук, пĕлме çук... — куçĕсене тутăрпа шăлса илчĕ официантка.— Чĕре сиксех тухать ĕнтĕ...

Вăл Ларисăпа Кирăна çимеллисем илсе пырса пачĕ те урăх сĕтелсем патне кайрĕ.

— Чăн та ăнмасть иккен ку çамрăк хĕрарăмăн пурнăçĕ,— пуçне пăркаласа илчĕ Кира.— Инкек çине синкек унăн. Питĕ хĕрхенетĕп эпĕ çавăн пек çынсене...

— Хĕрхенни — сахал, хĕрхенме ăна кашниех пултарать, çапах та унтан мĕн усси? — терĕ Лариса, тусĕ

çине пăхса.— Пулăшма тăрăшас пулать ун пеккисене.

— Анчах эпир иксĕмĕр мĕнпе пулăшма пултаратпăр ăна? Хамăр та тин çеç çăмарта хуппинчен тухнă чĕпĕсем пек-ха.

— Ку тĕрĕс. Тен, хамăрăн та çынсенчен пулăшу ыйтмалла пулĕ...

Чайнăйран тухсанах, сакăр сехет çитмен пулин те, хĕрсем райпона кайрĕç. Фролов пырса та ларнă-мĕн, хĕрсене вăл ĕнерхи пекех питĕ кăмăллăн йышăнчĕ, тӳрех хăйĕн сĕтелĕ умĕнчи пукансем çине ларма сĕнчĕ.

— Ну, кăмăлăрсем еплерех сирĕн? Çĕр процентах пуль? — ыйтрĕ вăл, йăл-йăл кулкаласа.

— Аванах-ха... Малашне мĕнле пуласси вара сирĕнтен килет,— терĕ Лариса, хăй те йăл кулса.

— Мĕншĕн манран? — тĕлĕннĕ пек пулчĕ Фролов.

— Эпир халь сирĕн алăра та... — хушса хучĕ Кира.

— Пирĕн алăри пирĕн алăра та-ха, çапах та пĕтĕмпех пирĕнтен килмест пуль çав, пуринчен ытларах хăвăртан килет пуль, тусăмсем,— терĕ Фролов.— Паллах, эпир çамрăк специалистсене пур енчен те пулăшса пыма тивĕç, анчах вĕсен хăйсен те пĕтĕм вăя хурса тăрăшас пулать. Чуна парса ĕçлемесĕр малалла кайма çук.

— Наянланма шутламастпăр-ха пĕрре те...

Фролов хăй умĕнчи хутсенчен пĕрине алла илчĕ те Ларисăпа Кира çине темиçе самант пăхса ларнă хыççăн:

— Сирĕн пирки çавăн пек шут турăмăр эпир...— терĕ.— Логинова юлташăн Вăкăрвара каймалла пулать, Шакова юлташăн — Улăххĕррине. Хушши инçе мар вĕсен.

— Хальччен ĕçленисем ăçта вара, мĕншĕн пушаннă вăл вырăнсем? — çийĕнчех ыйтрĕ Лариса.

— Унта çакăн пек: Улăххĕрринчи иккĕмĕш продавец ватăччĕ, пенсие кайрĕ, Вăкăрварĕнче пĕр хĕрача — çичĕ класс кăна пĕтернĕскер ĕçлетчĕ те, заведующи чирленĕ вăхăтра пĕччен юлса недостача туса хунă. Чылай пысăк укça! Суда памарăмăр ăна, укçине тӳлеттертĕмĕр те кăларса ятăмăр çеç. Хĕрхентĕмĕр хĕрачана.

— Мĕнле пулнă-ха ку? — шикленнĕ пекрех ыйтрĕ Кира, малтан Лариса çине пăхса илсе.

— Кам пĕлет ăна! — хулпуççисене хускатса илчĕ

Фролов.— Хăй вăл «эп пĕр пус та тытман, яланах тĕрĕс ĕçлесе пынă», тет, куççулĕпе макăрать, анчах ревизие хирĕç куççулĕпе нимĕн те тăваймастăн-çке! Хĕрĕ çамрăк, пит хитрескер, каччăсем татăлман ун умĕнчен, уйрăмах заведующи больницăра выртнă вăхăтра ирĕнкаçăн тĕпĕртетнĕ тет лавккара, хăшне-пĕрне «кĕтмелле те пĕтмелле» эрех те парса янă пуль, теприне пирус, хĕр-тусĕсене канфет, канфетне хăй те çинĕ пуль... Сахал-и! Тепĕр чух паллана çынна пальто-костюм та кивçен парса янисем пулаççĕ, анчах лешĕн кайран укçи пулмасть... Пухăнать вăл пĕчĕккĕнех! «Илме çăмăл та — хума йывăр», тенĕ сăмах пур продавецсем хушшинче. Укçине ыранах каялла хуратăп, тесе кассăран илеççĕ те — хураймаççĕ, хурас вырăнне тата пăртак илеççĕ. Пулчĕ те вăл растрата! Çав хĕрачан та çавăн пек пулма пултарнă...

— Тен, заведующи айăпĕ те пулнă унта? — татах ыйтрĕ Кира.

— Каларăм-çке, заведующи больницăра выртнă, сасартăк чирлесе ӳкнипе ăна лавккаранах илсе тухса кайнă. Аппендицит приступĕ çапса ӳкернĕ ăна. Операци тунă вырăнĕ час тӳрленменнипе пĕр виçĕ эрне выртрĕ больницăра, çав хушăра леш хĕрача пĕчченех ĕçленĕ.

— Эппин, заведующине больницăна ăсатас умĕн, лавккара тавар мĕн чухлĕ юлнине шута илмен? Тен, недостачи малтанах, çав хĕр пĕччен юличченех пулнă?

Райпо председателĕ Кира çине кăшт кăмăлсăртараххăн пăхрĕ.

— Кун çинчен калаçмăпăр, хĕрĕм, иртнĕ япала ку,— аллине çĕклерĕ вăл.— Унти заведующи Кагаева питĕ тĕрĕс çын, ку лавккара вунпилĕк çул ытла ĕçлет. Халăх ăна шанса икĕ хутчен ял Совет депутатне суйланă. Леш хĕрне питĕ хĕрхенчĕ хăй, хам вырăна тăма хатĕрлесшĕнччĕ ăна, шел, ĕç тухмарĕ, халь ĕнтĕ урăххине шырас пулать, терĕ. Хĕрĕн тӳлеме укçи пулманнипе, ăна кивçен те панă, терĕç...

— Ырă кăмăллă хĕрарăм, эппин,— темшĕн тутине пăчăртаса ассăн сывласа илчĕ Кира.

— Усал сăмах çук ун пирки. Хамăр та шанатпăр. Чăн та, хăйне майлăрах çын ĕнтĕ — питех калаçма юратмасть, çынсемпе хутшăнсах каймасть, чиркĕве те çӳрет, теççĕ, анчах ĕçре — тĕплĕ.

— Чимĕр-ха, вăл хĕрарăмăн хушамачĕ мĕнле тетĕр эсир? — сасартăк тем аса илсе ыйтрĕ Лариса.

— Кагаева, терĕм-çке. Ангелина Егоровна.

— Ай-яй, чаплă ят! Ку ятпа чăнах та ик çунатлă ангĕл пек таса пулас пулать,— йăл кулса, хăйĕн хулпуççийĕсем çинче çунат пур пек туса кăтартрĕ Кира.— Чиркĕве те çавăнпах çӳрет пуль!

— Кагаева, Кагаева... — Лариса хăйĕн хĕр-тантăшĕ еннелле çаврăнса ларчĕ.— Ăçта илтрĕмĕр-ха эпир ку хушамата?

— Ĕнер чайнăйра официантка каларĕ,— тӳрех аса илчĕ Кира.

— Хăш официантка? — куç харшисене тăрук пĕтĕçтерсе ыйтрĕ Фролов.— Семенова-и? Мĕн каларĕ?

— Çук, нимех те каламарĕ...— официанткăна асăнни темшĕн вырăнсăр пулнине туйса хĕрелсе кайрĕ Лариса.— Лайăх пурăнать, нумайранпа ĕçлет, терĕ çеç.

— Мĕн пирки тапратрĕ вăл ун çинчен?

— Астумастăп ĕнтĕ, темле, ăнсăртран пулчĕ вăл...

— Вăл хĕрарăмăн чĕлхи вăрăм, пурне те тиркет, тем те лăпăртатса пама пултарать.

— Лăпăртатнинех сисмерĕмĕр. Сăмахран каласан, сире хăвăра питĕ мухтарĕ вăл...

— Тем тума кирлĕ пуль вăл пакăлтатни! — Фролов сигарет тивертсе ячĕ.— Тĕп-тĕрĕс калас-тăк, вăл Кагаевăпа ĕçлеме пулать. Вĕренмелли те пур унтан. Опытлă çын. Пысăк практик. Логинова юлташа ун патне ярас терĕмĕр ĕнтĕ. Хирĕç мар пуль?

— Епле хирĕç пулам-ха эпĕ? Сирĕнтен килет,— терĕ Лариса.

— Шакова юлташа — каларăм-çке-ха — Улăххĕррине яратпăр. Питĕ хитре ял, юханшыв çумĕнче, йĕритавра — ем-ешĕл çаран, вăрман. Курорт пек вырăн!

— Курортсем кирлĕ мар-ха пире халех, унта ватăлсан çӳрĕпĕр,— хаш! сывласа илчĕ Кира.— Унти çынни мĕнлескер тата, председатель юлташ? Кампа ĕçлемелле пулать манăн?

— Çынни... çынни хурламалла мар,— терĕ Фролов.— Салтакра пулнă, пĕр-икĕ çул старшина званипе сверхсрочно та служить тунă, ватă амăшĕ пĕччен пурăннă пирки çеç таврăннă. Килсен авланнă, арăмĕ учительница, ача пур вĕсен, часах иккĕмĕшĕ пулать пулмалла.

— Ытла та пӗтӗмпех пӗлетӗр-ҫке эсир...— кулса илчӗ Лариса.

— Епле пултӑр-ха тата? Хамӑрӑн кадрсене пур енчен пӗлмесӗр ӑҫтан ӗҫ тухтӑр? Хушамачӗ — Вахрамеев унӑн, ячӗпе ашшӗ ячӗ — Сидор Терентьич. Лайӑх ӗҫлет, суту-илӳ йӗркисене пӑсмасть, жалобӑсем те ҫукрах ун пирки, пӗлтӗр пайщиксем ӑна иккӗмӗш хут магазин заведующийӗ пулма суйларӗҫ. Заведующисене пайщиксем суйлаҫҫӗ-ҫке, вӑл йӗркене пӗлетӗр пуль?

— Пӗлетпӗр...

— Шкул, клуб, радио тавраше пур-и унта? — ыйтрӗ Кира.

— Пурте пур. Клубӗнче телевизор, унта кашни каҫах халӑх лӑк тулать. Телевизор тенӗрен... унсӑр ял ҫук халь. Кӑҫалхи икӗ квартал хушшинче кӑна районра утмӑл телевизор ытла сутрӑмӑр. Ялти интеллигенци ҫеҫ мар, колхозниксем те нумай туянаҫҫӗ! Халӑхӗ пуян мар-и халь! Тата ҫакна та асӑрханӑ эпӗ: ӗлӗк, эпир ҫамрӑк чух, ялти каччӑсем нимрен малтан хуткупӑс туянасси ҫинчен ӗмӗтленетчӗҫ, ку вара чи пысӑк телей пулнӑ вӗсемшӗн, халь пур — кашни тенӗ пекех телевизор валли укҫа пухать...

Вӑл татах тем каласшӑнччӗ, анчах ҫав вӑхӑтра телефон чӑнкӑртатса илчӗ. Фролов трубкӑна ярса тытрӗ.

— Эп итлетӗп... Миҫере? Юрӗ... Асту, манатӑп пуль ун пеккине!

Вӑл трубкӑна хучӗ те сӗтеле тӑкӑртаттарса илчӗ.

— Питӗ шел! Эп сире, хӗрсем, хӑвӑр ӗҫлемелли ялсене хамах илсе каясшӑнччӗ, унти хамӑр ҫынсемпе паллаштарасшӑнччӗ, хваттерсем те тӳрех тупса парасшӑнччӗ — пулмарӗ. Вунпӗрте ӗҫтӑвком ларӑвӗ пуҫланать. Шӑпах пирӗн ыйтӑва пӑхса тухаҫҫӗ паян — Ҫӑкалӑхра кӗнеке лавкки уҫас пирки...— Вӑл сӗтел ҫинчи хутсене пӗр ҫӗрелле пуҫтаркаларӗ.— Ну, юрӗ! Эпӗ лешсем патне ҫырусем ҫырса парӑп та, сире Вася мансӑрах леҫсе ярӗ, тепӗр ик-виҫ кунтан вара хам пырса курӑп эсир мӗнлерех вырнаҫнине. Юрать пуль ҫапла?

— Кам вӑл — Вася? — ыйтрӗ Лариса.

— Ман шофер...— Фролов васкасах ҫырма тытӑнчӗ.

— Турӑҫӑм, ҫӗр ҫинчи пур шоферсем те Вася ятлӑ пулас! — кулса ячӗ Лариса.— Пирӗн шкулти шофер та Ваҫҫӑччӗ, эпир практикӑра пулнӑ магазина тавар турттаракан шофер та Вася, кунта та Вася...

Фролов та кулчӗ:

— Манӑн тата тепӗр Вася пур — фургонпа ҫӳрекенни... Каччисем иккӗшӗ те лайӑх-ха, пӗлтӗр ҫеҫ ҫартан таврӑннӑскерсем, аван ӗҫлеҫҫӗ. Акӑ, пире кирлӗ Ваҫҫи персе те ҫитрӗ!

Хӗрсем сисмен те — алӑкран сӑран пиншакпа сӑран карттус тӑхӑннӑ ҫӳллӗ, яштака сар каччӑ кӗрсе тӑнӑ. Карттусне кӑшт чалӑштарарах лартнӑ, ун айӗнчен пысӑках мар «чолка» кӑларса янӑ, сылтӑм аллин шӗвӗр пӳрнинчен ҫаклатнӑ ҫут вӑчӑраллӑ автомашина уҫҫине вӗлтӗр-вӗлтӗр ҫавӑркалать.

— Паян ӑҫта та пулин каймалла пулать-и, Владимир Яккӑлч? — алӑк патӗнчен ыртмесӗрех ыйтрӗ вӑл.— Каймалла мар пулсан, эпӗ кӑштах профилактика тӑвасшӑнччӗ...

— Каймалла пулать ҫав,— терӗ Фролов.— Ак ҫак хитре хӗрсемпе.

— Шупашкарах леҫмелле мар пуль те?

— Сан мӗн, ҫав териех Шупашкара каяс килет-им? Ҫураҫнӑ хӗр ҫук пулӗ-ҫке унта санӑн? Ӗнер те Шупашкара асӑнтӑн...— кулам пекки турӗ Фролов.— Ахальтен мар пуль!

— Ахальтен мар ҫав, Владимир Яккӑлч,— терӗ шофер.— Эп унта энерготехникума заочно вӗренме кӗрес тесе заявлени ярсаттӑм. Виҫ эрне иртрӗ ӗнтӗ, анчах ответ ҫук-ха. Ҫавӑнта кӗрсе пӗлес тесеттӗм ҫула май. Ҫавӑ ҫеҫ.

— Ан пӑшӑрхан, Вася, ҫак кунсенчех ҫитӗпӗр-ха унта. Халь Вӑкӑрварӗпе Улӑххӗррине кайса килмелле пулать.

— Ху та пыратӑн-и?

— Ҫук, пӗччене леҫетӗн.— Фролов Ларисӑпа Кира еннелле пуҫӗпе сулса илчӗ.— Ӗҫлеме каяҫҫӗ вӗсем унта.

Шофер хӗрсем ҫине пӑхса йӑл кулчӗ те карттусне тӳрлетенҫи турӗ, сӑран пиншак аркисене турткаласа илчӗ.

— Слушаюсь, Владимир Яккӑлч...

— Анчах асту эсӗ, хӗрсем умӗнче хӑвӑн маҫтӑрлӑхупа мухтанма тӑрӑшса лихачла ан ҫӳре, ӑҫта та пулин пырса ҫапӑнса ҫынсене сусӑрлатса ан пӗтер! — кударах асӑрхаттарчӗ Фролов.

— Сусăртсан хамăнах качча илес пулать вара,— кулчĕ шофер та.

— Иккĕшне те-и?

— Çук, мана пĕри те çитет, теприне шăллăма илсе паратăп, вăл кĕçех çартан таврăнать ĕнтĕ, тиркемеллех мар, танкист...

— Юрĕ, юрĕ, Вася, пĕр калаçма тытăнсан, чаракĕ çук санăн. Задани çакăн пек: Шакова юлташа Улăххĕрринчи лавккана кĕртсе хăваратăн, Логинова юлташа Вăкăрварне çитеретĕн.

— Задачăна ăнлантăм. Унта ĕçлеççĕ-и вара вĕсем? Мĕншĕн кунта, район центрĕнче мар? — кăмăлсăрланнă пек пулчĕ шофер.

— Сан шухăшна пĕлеймерĕмĕр, çавăнпа,— терĕ Фролов, куллине пытарса. Унтан пукан çинчен тăчĕ те хĕрсене конвертсем тыттарчĕ.— Ку хутсене магазин заведующийĕсене парăр. Сăмахпа калăр: кĕçех хам пырса куратăп. Ну, телей пултăр сире! — вăл хĕрсен аллисене тыта-тыта чăмăртарĕ.— Вĕçтерĕр ĕнтĕ халь. Çулăр такăр пултăр...

Ларисăпа Кира хăйсен пысăках та мар чăматанĕсене çĕклерĕç те шофер хыççăн алăк патнелле утрĕç. Çавăнтах Фролов кăшкăрчĕ:

— Вася! Ну, мĕнле кавалер эсĕ, тĕлĕнмелле санран!

— Мĕн тата, Владимир Яккăлч? — ăнланмасăр ун еннелле çаврăнса пăхрĕ шофер.

— Хĕрсене кам ухмахĕ чăматан йăттарать?! Ах, айван-çке...

— Айăплă! Каçарăр, эп çамрăк-ха, тӳрленме пултаратăп... — терĕ те шофер, хĕрсен аллисенчи чăматансене илме тăчĕ, анчах лешсем памарĕç, аяккалла пăрăнса тăчĕç.

— Йывăр мар, хамăрах çĕклетпĕр!

Райпо умĕнче брезент тăрăллă, самаях кивĕ, унтанкунтан шăйрăлкаласа пĕтнĕ «газик» тăрать. Вася-шофер ун алăкне уçрĕ те, халь ĕнтĕ чăн-чăн «кавалер» пекех хăтланма тытăнчĕ,— йăрст тăсăлса тăрса, аллипе машина ăшнелле кăтартрĕ, пуçне тайса илчĕ:

— Тархасшăн кĕрсе вырнаçăр, хисеплĕ хитре хĕрсем... Лимузинĕ чаплах мар манăн, çапах та çитес çĕре илсе çитерме пултарать...

Хĕрсем вырнаçкаласан, хăй те кĕрсе ларса, машинăна хускатасшăн стартер çине пусрĕ. Пĕрре, иккĕ,

виççĕ... нăй-нăй-нăй... нăй-нăй-нăй! Мотора «чун кĕмерĕ». Татах темиçе хут çавăрчĕ — пурĕпĕр усси пулмарĕ шереметĕн.

— Ш-шуйттан...— шăппăн, хăй тĕллĕн вăрçса илчĕ Вася.

— Хĕлхем çухалнă, теççĕ-и-ха кун пек чух, Вася? — кударах ыйтрĕ Лариса.— Час-часах пулать-и сан кун пекки?

— Тăн кайрĕ ĕнтĕ çак кивĕ драндулетпа, тахçанах металлома памалла ăна! — терĕ те шофер çав тери тарăхнă сасăпа, самантранах машинран сиксе тухса, мотор ăшĕнче чакаланма тытăнчĕ.

Хĕрсем пĕр хушă ним чĕнмесĕр машинăн уçă алăкĕ витĕр тулалла пăхса ларчĕç. Шупашкарти пек мар çав: машинăсем те чупмаççĕ, портфельсемпе сумкăсем çĕклесе унталла-кунталла васкакансем те çук. Лăпкă. Акă, машина умĕпех пысăк хĕрлĕ ĕне пĕр-пĕр бюрократ пекех пуçне каçăртса, мăнаçлăн, васкамасăр утса иртрĕ. Хыççăнах улт-çич çăвăрлă сысна иртни курăнчĕ. Юнашарах хурсем какалани илтĕнчĕ.

Ирĕк!..

Вася чылай тăрмашрĕ. Пĕрре машин капотне хупса хăй вырăнне кĕрсе ларчĕ те каллех стартер çине пусса пăхрĕ — мотор чĕрĕлмерĕ, вара хăйĕн ларкăçĕ айĕнчен «заводной ручка» илсе тухса çавăрма тытăнчĕ.

— Çуранах танккамалла пулмасть-и пирĕн капла? — Ларисăна хулĕнчен тĕртсе илчĕ Кира.

— Кам пĕлет. Пулма та пултарать...

Çав вăхăтрах хайхи чăкăртăш мотор лăкăр-лăкăр... лăкăр-лăкăр... турĕ те унтан йĕркеллех ĕçлеме тытăнчĕ. Вася часрах хăй вырăнне кĕрсе ларма васкарĕ.

— Тарăхса вилсе каймалла...— мăкăртатрĕ вăл.— Вуншар пин растратăсем тунине тӳсеççĕ, путлĕ машина туянаймаççĕ!

Вăл ĕнтĕ «газик» алăкне хупса ăна хускатса яма та тытăннăччĕ, сасартăк инçетре те мар хыттăн кăшкăрни илтĕнчĕ:

— Вася-а! Чим-ха, тăхта-а!..

Хĕрсем кантăк витĕр пăхрĕç. Машина патнелле хура куçлăх тăхăннă темле çын чупать иккен. Çара пуçăн, кĕске пальтине йӳле янă, пĕр аллинче сăран папка, тепринче хăмăртарах шлепке, хăй çаплах ал сулса кăшкăрать:

— Вася-а! Ан ка-ай!..

— Кам ку? Мĕнле çын? — ыйтмасăр тӳсеймерĕç Ларисăпа Кира.

— Райхаçатра ĕçлекен каччă. Поэт тата çитменнине,— терĕ Вася.

— Поэт?! Хушамачĕ мĕнле?

— Чатта, тесе çырать вăл...

— Çатма? — чутах кулса яратчĕ Кира.

— Çатма мар, Чатта. Чатта Микули, тесе ал пусать сăввисем айне. Паспортри хушамачĕ — Чатайкин.

— Илтмен ун пек поэт ятне.

— Илтĕр-ха хăçан та пулин. Сăввисене сирĕн Шупашкарти хăшпĕр вĕçкĕн поэтсенчен лайăхрах çырать. Фельетонсем тĕлĕшĕпе те пултарать ачи. Тепĕр чух таккойски çунтарса илет!



Çав самантра лешĕ машин патне чупса çитрĕ те, сывлăшне çавăраймасăр, хашка-хашка ыйтрĕ:

— Ăçта каятăн, Вася?

Шофер хăйĕн маршрутне каларĕ.

— Тусăм! Манăн та çул çав еннелле, лартса кай тархасшăн! — вăл вăрăм та çинçе пӳрнисемпе шофера çаннинчен çатăрах ярса тытрĕ.— Турă пул! Срочно очерк çырмалла... Вырсарникун номерĕ валли! Паян эрнекун ĕнтĕ. Çăл мана! Лартса кай! Манран тухать вара!

— Темле-çке... — юри иккĕленнĕ пек турĕ шофер,— эп хам хирĕç мар та, ман пассажиркăсем темле? Килĕшеççĕ-ши санпа пĕрле çӳреме? Машина вĕсен аллинче, вĕсенчен ыйтса пăхас пулать...— хăй вăрттăн кулчĕ.

Çакна илтсен, Чатайкин йăпăр-япăр куçлăхне хыв-

са машина ăшнелле пăхрĕ. Унта хăй палламан икĕ çамрăк хĕр ларнине курсан çухалсах кайрĕ. Чыхăнчĕ.

— К-каçарăр... кăххăм-кăххăм... Сирĕнпе пĕрле пыма юрамĕ-ши? Питĕ шутсăр васкавлă ĕçпе каятăп. Пĕр учительница çинчен очерк çырмалла, ыран ирччен... Атту-тăк редактор çакать мана. Сире кансĕрлемĕп эпĕ... — хăвăрт каларĕ вăл.

— Сирĕн пурнăç ун пек хăрушлăхра пулсан — кĕрсе ларăр часрах! — терĕ Лариса, кулса ярса.— Çынна вилĕмрен çăлма яланах хатĕр эпир.

— О! Тавтапуç! Пур иккен-ха çĕр çинче ырă çынсем! — Чатайкин машинăна кĕрсе ларчĕ те тӳрех хăюлланса кайрĕ, хĕрсем еннелле çаврăнса аллине тăсрĕ.— Пĕр кампание лекрĕмĕр пулсан, паллашар: Чатта Микули, кунти райхаçатăн литература сотрудникĕ...

— Ма пĕтĕмпех каламастăн тата? — ун çине хулпуççи урлă пăхса илчĕ шофер, хăй çав самантрах машинине хускатса ячĕ.

— Тата мĕн каламалла? — тĕлĕннĕ пек пулчĕ Чатта.

— Районĕпе чапа тухнă поэт тесе...

— Ун çинчен шарламаççĕ. Поэт — должнăç мар.

— Мĕн тата вăл?

— Призвани, теççĕ вырăсла. Тур пани. И вообще эс мана çынсемпе паллашма ан кансĕрле-ха! — вăл каллех хĕрсем еннелле çаврăнчĕ.— Эсир камсем пулатăрха, хĕрсем? Мĕн ĕçпе пирĕн районра? Каçарăр та, анчах чăн-чăн журналистăн пĕтĕмпех пĕлмелле...

— Çын нумай пĕлсен час ватăлать, темеççĕ-и çав? Сирĕн ун пек ытла час ватăлас килмест пулĕ-çке? — терĕ ăна хирĕç Кира, кула-кула.— Е хăратмасть-и ку сире?

— Ватăласси инçе-ха вăл... — ал сулчĕ Чатта,— таçта çĕрпе пĕлĕт хыçĕнчех. Çирĕме те çитмен эпĕ...

— Сисĕнет ку,— йăл кулса илчĕ Лариса та.

— Каласамăр ĕнтĕ! Е эсир çав тери çынсене калама юраман ĕçпе çӳретĕр-и? Тен, сирĕн ятăрсене те пĕлме юрамасть? Инкогнито, Гоголĕн «Ревизорĕнчи» городничи каланă пек... — хăпмарĕ Чатта.

Вара тепĕр пилĕк минутран пĕтĕмпех пĕлчĕ — хĕрсен ячĕ-хушамачĕсене те, вĕсем ăçта, мĕн тума кайнине те. Пĕлсен вара тата хĕрӳллĕрех калаçма тытăнчĕ:

— Ырлатăп! Савăнатăп! Хамăр пата килекен каш-

ни çěнě кадр хěпěртеттерет мана — вăйланатпăр! Çынсем пур çěрте те кирлě пире, вăл шутра — суту-илӳре те... Чăн та, пирěн районра халь суту-илӳ ěçě лайăхлансах пырать, çапах та, хаçатсен умстатйисенче çырнă пек каласан, çитменлěхсем те пур-ха. Паллах, кěрешетпěр вěсене пěтерессишěн. Пирěн хаçат та пěрмай кěрешет... Эп хам та миçе фельетон çыртăм пуль тěрлě çитменлěхсем пирки...

— Фельетонěсем хытă пулăшаççě-и вара? — ыйтрě Лариса.

— Пулăшмасăр! Пичет — питě вăйлă хěçпăшал. Паллах, унпа тěрěс усă курма пěлсессěн... Тěл перес пулать, снайпер пек! Сире Вăкăрварěпе Улăххěррине ячěç-ха, эппин? Ну, унта магазинсем пирки сăмах та çук! Лайăх, шанчăклă çынсем ěçлеççě. Уйрăмах Вăкăрварěнчи лавкка заведующийě, Кагаева Ангелина Егоровна, питě кăмăлла каймалла çын, пырсан куратăр акă... Хăй вара ай-вай паттăр хěрарăм! Кольчуга тăхăнтартса аллине хěç тыттарсан—каснă-лартнă авалхи витязь пулса тăмалла! Ну, ěçлессе те ěçлет вара—нихăш енчен те тиркейместěн! Эп ун çинчен очерк та çырнăччě пěлтěр... Шутсăр ěçчен! Сад вăйлă унăн — улмуççи, чие, тěрлě хурлăхан... Çырлисенчен килти эрех пит лайăх тăвать вăл. Ну, эрехех мар ěнтě — сок. Хăй вăл ăна çырла шывě, тет. Пěр-икě стакан ěçетěн те çав шыва, тӳрех кăмăл çěкленет, поэт сăмахěсем аса килсе каяççě...

— Мěнле сăмахсем-ши? — ыйтрě Кира.

— Тěнче илемсěрех те мар, сăвву кăна шăрантăр ирěк!

... Газик тип-тикěс уйпа, çип çапнă пек тӳрě çулпа ыткăнса пычě. Çулăн ик енěпе пěр çич-сакăр çул каяллла лартнă йывăçсем вěлтлетсе юлаççě,— вěсем хушшинче хурăнě те, çăки те, хурами те, юманě те пур,— халь вěсен çулçисем кăшт сарала пуçланă та, ытармалла мар хитрен курăнаççě.

— Шупашкарпа Канаш хушшинчи çул пекех кунта, йывăçěсем çамрăкрах кăна,— терě Лариса.— Илемлě...

— О, пирěн районра илемлě вырăнсем питě нумай! — каллех хěрсем еннелле вăшт кăна çаврăнса ларчě Чатта.— Ытармалла мар вăрман-катасем, улăхсем, шăнкăр-шăнкăр шывěсем, тем тарăнăш кӳлěсем...

— Кӳллисенче — шапасем, ҫапла-и? — ӑна пӳлсе кулса илчӗ Кира.

— Вӗсем те пур! Каҫсерен тытӑнаҫҫӗ вара юрлама... Пилӗк ҫухрӑма илтӗнет! Шапана тиркеме ҫук ӑна, тусӑмсем, шапа вӑл поэзире те ҫирӗп вырӑн йышӑннӑ чӗрчун. Крылов асатте юптарӑвӗсене вуланӑ пуль? Чӑваш юптаруҫисем те шапасӑр пурӑнаймаҫҫӗ — Кӑлканӗ те, Галкинӗ те, ыттисем те. Вӗсенчен пӗри «пылпа шапа пи-ит тутлӑ!» тесе ҫырни те пур... Те хӑй тутанса пӑхнӑ?

— Патриот иккен эсир, Чатта юлташ, хӑвӑр район патриочӗ...

— Епле пултӑр-ха тата? Тӑван ҫӗршыва юратасси хӑвӑн килне, ҫуралнӑ ялна, районна юратнинчен пуҫланать! «С чего начинается Родина?» юрра илтнӗ пуль? Ҫав тери лайӑх юрӑ...

— Пит нумай пӗлетӗр-ҫке эсир...

— Журналиста унсӑр юрамасть. Тем пӗлни те кирлӗ ӑна.

Машина сӑртран анса питӗ илемлӗ, карлӑкӗсене нумай та пулмасть сенкер сӑрпа сӑрланӑ кӗпер ҫине пырса кӗчӗ, кӗпер айӗнче — туллиех шыв, ахӑртнех аялараххра пӗве тунӑ-тӑр.

— «Шуҫӑм» колхоз пӗви! Пулӑ нумай кунта! — кӑшкӑрчӗ Чатта.

— Шапасем кӑна мар-и? — кулчӗ Лариса.

— Кӗреҫе сарлакӑш карпсем! Ҫу каҫа колхоз вуншар центнер сутса укҫа тӑвать! Ун примерӗпе халь тата темиҫе колхозра ҫакӑн пек пӗвесем тума тытӑнчӗҫ-ха...

Сӑрта хӑпарса тата пӗр-ик километр пек кайсан, машина тип-тикӗс те сарлака улӑха анчӗ. Каллех юханшыв иккен, каллех пӗве. Пӗвинче тем чухлӗ шап-шурӑ кӑвакал ярӑнса ҫӳрет. Икҫӗр, виҫҫӗр мар, пилӗкҫӗр те пулӗ. Тен, унтан та ытларах-и! Ытармалла мар! Ларисӑпа Кира кун пеккине кинора ҫеҫ курнӑ.

— Ак ку вара «Мир» колхозӑн пуянлӑхӗ! — каллех кӑшкӑрчӗ Чатта.— Тепӗр енче — Улӑххӗрри. Эсир ӗҫлесе пурӑнмалли ял,— терӗ вӑл унтан, Кирӑна пӳрнепе тӗллесе.

— Ҫитрӗмӗр те-и?

— Ҫитрӗмӗр! Ҫӑтмах пек вырӑн. Кашни ҫуллах

кунта юрă уявĕ пулса иртет. Э-эй, янăрать те вара тавралăх!..

— Чăнах та тем те пĕлетĕр-çке эсир!

— Унсăр май килмест. Пирĕн ĕçре энциклопедист пулас пулать. Анчах писатель пулас тесен — уйрăмах нумай пĕлмелле. Ăна Горький калана...

— Эсир писатель пуласшăн-ха, эппин?

— Пур-ха ун пек ĕмĕт. Халлĕхе сăвăсем çеç çыркалатăп, кайран, тен, прозăна та куçăп-и. Пушкин та проза çырнă. Шавли те калавсем çыра пуçларĕ. Сăвă — йывăр япала, рифма шыраса тăн тухать. Маяковский ун пирки мĕн каланине пĕлетĕр-и?

Аслă поэт мĕн каланине хĕрсене ăнлантарса параймарĕ Чатта, газик ял варринчи уçă вырăна лартнă вăрăмрах йывăç çурт умне çитсе чарăнчĕ. Пуринчен малтан Чатта сиксе анчĕ, унтан Ларисăпа Кира машинăран тухса хăйсен кăштах тусанланнă, лутăрканнă тумтирĕсене аллисемпе шăлкаласа тасатрĕç.

— Ак çак ĕнтĕ сирĕн универмаг,— лавкка çине тĕллесе кăтартрĕ Чатта Кирăна.

— Эпĕ унăн вывески çине «сельмаг» тесе çырнине çеç куратăп-ха, поэт юлташ! — кулса илчĕ Кира.

— Ку вăхăтлăха çеç вăл,— ал сулчĕ Чатта.— Тепĕр икĕ çул та иртмест акă, кунта икĕ хутлă чул çурт ӳссе ларать, ун проектне эпĕ хам куçпа курнă. Сакăр çын ĕçлемелле... Пĕр сăмахпа, универмаг тăваççĕ! — такама рапорт панă пекех шатăртаттарса каласа тăкрĕ вăл. Унтан аллипе малалла сулчĕ: — Атьăр, паллаштарам сире... Магазин заведующийĕ — ман йысна.

— Йысна?! Хăш енчен? — куçĕсене хĕссе чалăшшăн пăхрĕ ун çине шофер.— Эсĕ Куçма Чулкаçăн Лапшу Çтаппанĕ пек тыттара пуçларăн пулмалла, хисеплĕ тусăм!

— Тĕп-тĕрĕс калатăп! — парăнмарĕ Чатта.— Вăл ман анне аппăшĕн усрав хĕрĕн йăмăкне качча илнĕ. Çавăнпа та эп ăна ним иккĕленмесĕрех тăван тесе шутлама пултаратăп.

Шофер кулса ячĕ:

— Ун пек тăвансене тĕнчере нумай тупма пулать. Пинĕ-пинĕпе!

Анчах Чатта ун çине çаврăнса та пăхмарĕ, хăйĕннех каларĕ:

— Маттур çын вăл ман йысна. Çамрăкрах чух пĕр

хушă артист пулнă, арăмĕпе иккĕшĕ те колхоз театрĕнче ĕçленĕ, çавăнта паллашса пĕрлешнĕ вĕсем. Хăш чух, кăмăлĕсем пулсан, халь те выляççĕ. Арăмĕ учительница унăн, анчах халь клубра ĕçлет...

— Культурăллă çемье, эппин,— терĕ Лариса.— Лайăх пулать Кирăна ун пек çынсемпе пĕрле ĕçлеме.

Вĕсем лавккана кĕчĕç.

— Хĕрӳллĕ салам, йысна! — пĕр аллине çĕклесе, урипе урайне тăк-тăк! туса илчĕ Чатта, унтан прилавок хыçĕнчи вăтам пӳллĕ, сарлакарах питлĕ, пысăк чакăр куçлă, янах таранах бакенбардсем ӳстернĕ çынна ал пачĕ.— Йышăн хăнасене! Кĕтменччĕ пуль...

— Салам, Колька,— терĕ лешĕ, Чатта аллине чăмăртаса, анчах хăй палламан хĕрсем çине пăхрĕ. «Кусем мĕнле кайăксем тата?» — тесе шухăшларĕ пулмалла ăшĕнче.

— Паллаш, Сидор Теренч! Ку хĕрача — Кира Шакова, çамрăк кадр, тин çеç суту-илӳ шкулĕнчен вĕренсе тухнă, сан патăнта ĕçлеме килчĕ. Йышăнăр ыр кăмăлпа. Люби и жалуй, теççĕ пулас вырăссем...

— Питĕ аван... Тахçанах çын ярса парасса кĕтетĕп! — заведующи, прилавок урлă карăнса, хăй патнерех пынă Кирăна алă пачĕ.— Вахрамеев, Сидор Терентьевич.

— Шакова Кира...— кăшт иментĕ пек пулса аллине тăсрĕ хĕр.

— Аçу ячĕ мĕнле тата? — ыйтрĕ Вахрамеев.

— Вăл кирлĕ те мар пуль, ку таранччен мана никам та атте ячĕпе чĕнмен... Эп ăна хăнăхас та çук...

— Хальччен эсир студентка пулнă, халь ĕнтĕ — служащи, мăн çын, юрамасть унсăр, аçу ячĕпех чĕнес пулать,— терĕ Вахрамеев, питне-куçне кăмăллăрах тума тăрăшса.

— Кирилловна...— хĕрелсе кайрĕ хĕр.

— Кира Кирилловна, эппин? Лайăх ят! Халь эсир районран килтĕр-и? Приказ пекки пур пуль ман валли?

Кира плащ кĕсйинчен Фролов тыттарса янă конверта кăларса пачĕ.

— Шалта мĕн пуррине пĕлместĕп...

Вахрамеев конверт ăшĕнчи хута кăларса хăвăрт вуласа тухрĕ.

— Ăнлантăм,— терĕ унтан.— Ĕçлетпĕр, эппин...—

Вăл кăшт аяккарах тăракан Лариса çине пăхрĕ.— Ку юлташ кам пулать тата?

— Лариса Логинова, теççĕ ăна,—каллех ăнлантарма васкарĕ Чатта,— вĕсем Шакова юлташпа пĕрле килнĕ, ăна Кагаева патне çитерме хушнă пире.

— Пит аван... Ангелина Егоровна та пĕчченех ĕçлет-ха çав, ăна та помощник кирлĕ, тĕрĕс. Хăй çамрăках мар, ывăнать те пулмалла...

— Чăн малтан, йысна, эсĕ Шакова юлташа йĕркеллĕ хваттер тупса пар,— терĕ Чатта, Вахрамеева шĕвĕр пӳрнипе юнанă пек туса.— Ну, ĕçре те пулăшас пулать малтанхи вăхăтра...

— Эс инструктаж памасăрах чухлатпăр-ха ăна, тăванăм,— кăмăлсăр пулнă евĕрлĕрех каларĕ Вахрамеев.— Пирĕн патра пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулать. Ман çинчен фельетон çыраймастăн, материал пулмасть кунта сан валли...

— Как калас, йысна, как калас! Мухтаннă хĕр хăйĕн туйĕнче мĕн тунă тет-ха? — кулса ячĕ Чатта.— Ну, эпир малалла вĕçтертĕмĕр! Сыв пулăр та пур пулăр... Часрах Вăкăрварне çитес пулать, унта манăн хамăн пит васкавлă ĕçсем пур. Кайрăмăр, Логинова юлташ!

Лариса Кира патне пырса ăна харăсах ик аллинчен тытрĕ.

— Сывă пул, эппин, халлĕхе, тусăм...

— Çапла каламалли çеç юлать ĕнтĕ халь,— ун кусĕнчен пăхрĕ те Кира, хурланнă пек пулчĕ.— Çыру çыр...

— Тен, çак кунсенчех тĕл пулăпăр-и?

— Çулне пĕлсен, çӳреме те пулать пуль. Хушши инçе мар, теççĕ.

Вĕсем хуллен кăна ыталанса пĕр-пĕрине питçăмартисенчен чуптуса илчĕç.

— Телейлĕ пул!

— Эсĕ те...

## 5

...Урамра çӳрекен хур-кăвакалсене, сысна çурисене хăратса, кашни хапха айĕнченех тенĕ пек сиксе тухакан çăмламас йытăсене антăхса каясла вĕртерсе, Вася-шофер хăйĕн машинипе уя ыткăнса тухрĕ те тӳрех

сулахаялла пăрăнса вĕçтерчĕ. Тĕксĕмрех чӳрече витĕр тин çеç шăтса тухнă тип-тикĕс ешĕл калча курăнчĕ, телефон юписем вĕлтлетсе юлчĕç, анчах Лариса халь тулалла пăхмарĕ, машинăн кайри ларкăçĕ çине хутланса ларса, ним чĕнмесĕр пычĕ. Чатта пĕрре шоферпа, тепре Лариса еннелле çаврăнса пĕрмай калаçрĕ, анчах Лариса ун сăмахĕсене питех тăна илмерĕ.

Улăххĕрринче Кирăпа сывпуллашса уйрăлнă хыççăн ăна халь сасартăк питĕ кичем, салху пулса кайрĕ. Нумай та пулмасть пĕрлеччĕ вĕсем, пĕр-пĕринчен нихçан уйрăлман туссем. Шкулта та, общежитире те, тĕрлĕ магазинсене практикăна ярсан та. Пĕлтĕр кĕркунне пĕтĕм курсĕпех Йĕпреç вăрманне кăмпа татма кайсан та уйрăлман... Ун чух Ларисăпа Кирăна аслă группăри Гриша Арсентьевпа Федя Кольцов питĕ пулăшрĕç... Кайран вĕсем туслашсах кайрĕç, Шупашкара таврăнсан пĕрле çӳреме тытăнчĕç, хăйсем пĕр-пĕрине ун çинчен ним каламан пулсан та, Гриша — Ларисăна, Федя — Кирăна юратни сисĕнчĕ, анчах каччăсем вĕренсе тухсанах вĕсене Совет Çарне илчĕç. Çапах та вĕсем хушшинчи туслăх пĕтмерĕ, хĕрсемпе каччăсем пĕрпĕрин патне тăтăшах çырса тăчĕç. Каччисен кăмăлĕсем улшăнман пулмалла. Пĕр икĕ уйăх каялла Гриша Арсентьев Чехословакирен çырса янă çырура Ларисăна «эпĕ ялан санпа пĕрле пуласси çинчен ĕмĕтленетĕп...» тенĕччĕ. Федя Кольцов та Кира патне питĕ хĕрӳллĕ çырусем ярать,— Ларисăпа Кира хăйсен салтакри тусĕсен çырăвĕсене яланах пĕр-пĕрине вулаттараççĕ...

Халь акă Лариса пĕччен. Унăн темле ют çĕрте, унччен курман-илтмен, палламан çынпа ĕçлемелле. Мĕнлескер-ши вăл Кагаева? Райпо председателĕ ырларĕ-ха ăна. Çак райхаçатра ĕçлекен кулăшларах Чатта та çине тăрсах мухтарĕ. Чайнăйри официантка вара ĕнер пачах урăхла каларĕ ун çинчен. Тахăшĕ çав Кагаева ятлă хĕрарăм перекет кассине пилĕк пин тенкĕ хунине курнă, тет. Аçтан пухма пултарнă вăл ун чухлĕ укça?! Пилĕкçĕр те мар вĕт-ха,— пилĕк пин! Тĕлĕнмелле... Иртнĕ хĕлле театрта Островскин «Тăвăл» ятлă драмине курнăччĕ. Кабаниха тенĕскер пур унта,—этем мар ĕнтĕ, чăн-чăн çынçиен! Çавăн йышшискер мар-ши ку? Çук пуль... Кабанихăсем ĕлĕкхи саманара пулнă... Кагаева портретне районри Хисеп хăми çине те кăларса çакнă, тет-çке!

— Авă, курăна пуçларĕ сире кирлĕ ял! — Чатта малалла кăтартса кăшкăрнине илтрĕ Лариса.— Виçĕ çил арманĕ çунаттисемпе хăлаçланса ларнине куратăр-и? Вăкăрвар арманĕсем вĕсем...

Тепĕр пилĕк минутран машина çав армансем тĕлĕпе тусан мăкăрлантарса иртрĕ те яла кĕрсе анаталла вăркăнчĕ. Ахальтен мар Вăкăрвар тенĕ иккен ку яла — вăл тем тарăнăш тип çырма ик енĕпе вырнаçнă. Лавкки шăп çав çырма хĕрринче иккен. Улăххĕрринчи пекех кивĕ лутра çурт, вĕтĕрех пĕренесенчен купаласа тунăскер. Ун çумне тата хулăн хăмасенчен тăрăхларах сарай пекки туса лартнă,— таварсем хумалли «подсобкă» пулмалла ĕнтĕ вăл.

Паçăрхи пекех, машинăран чăн малтан Чатта сиксе тухрĕ те самантранах пĕлтерчĕ:

— Хупă! Алăк çинче — ак çак ман шлепке пысăкăш çăраççи çакăнса тăрать. Мĕн тăватпăр?

— Çынсенчен ыйтса пĕлес те килне кайса пăхас пулать,— терĕ шофер.— Тен, апата кайнă...

Шăпах çав вăхăтра пĕр хĕрарăм çырмаран картлă кĕвентепе шыв йăтса хăпарать-мĕн. Машинпа килнĕ ют çынсене курсан, хăех чарăнса тăрса ыйтрĕ вăл:

— Сире лавăшник кирлĕччĕ пуль те-ха?

— Шăп та шай çав кирлĕ! — терĕ Чатта, ун патнелле пĕр-икĕ утăм туса.— Ăçта-ши вăл? Таçта тухса кайман-ши? Пĕр-пĕр туя е çын пытарма... Сахал-и ĕçе пăрахса каймалли сăлтав!

— Кай, ытла тĕлĕнмелле калаçатăн-çке эсĕ! — куçĕсене чарсах пăрахрĕ хĕрарăм.— Пирĕн ялта туй таврашĕ те çук паян, çын вилни те пулман, çырлахтăр турă...

— Ăçта, эппин, лавкка хуçи?

— Анчахрах кунтаччĕ, пĕр çынпа михĕсем çĕклерĕç. Тавар илсе килнĕ пулмалла. Халĕ, тен, килне кайнă пуль... Ку вăхăтра лавккана çӳрекенсем питех çук та. Халăх ир-каç нумай пулать. Ытах кирлĕ пулсан, килне кайса пăхăр ара. Инçе пурăнмасть вăл, ак çапла кайсан сулахайри пралукалла пăрăнмалла та тӳрех шатрун пӳрт курăнать, умĕнчи решеткине кăвак сăрпа сăрланă.

— Тавтапуç, инке, пире тĕплĕ информаци панăшăн! — пуçне тайса пӳрнисене шак! тутарса илчĕ Чат-

та.— Халь ĕнтĕ эпир сирĕн лавкка хуçине хупă куçпа та тупма пултаратпăр!

— Кай, артис пулмалла эсĕ, самăй камит кăтартаканни...— терĕ ăна хирĕç хĕрарăм. Хăй кăмăллăн кулкаласа илчĕ.

Заведующи патне çамрăксем машинпах кайрĕç. Чатта вырăсла хапха калинккине уçса пĕр урипе шалалла ярса пуссанах картишĕнче сăнчăр чăнкăртатни, çав тери мăн сасăллă йытă вĕрни илтĕнчĕ те, вăл мечĕк пек каялла сиксе тухрĕ.

— Кашкăр унта! Тӳрех тытса çурма пултарать! — чутах кăшкăрса яратчĕ вăл.— Халь туяннă пулмалла, пĕлтĕр çукчĕ унăн кун пек тискер кайăк...

— Мĕнле кĕретпĕр-ха, эппин? — ыйтрĕ Вася-шофер.

— Мелне, стайне тупас пулать! — Чатта ун-кун пăхкаларĕ те çĕртен пĕр вăрăмрах патак илсе решеткене шаккама тытăнчĕ.— Кагаева! Ангелина Егоровна! Тух-ха, хаклă хăнасем килчĕç сан пата! Йышăн!

Вăхăт нумай та иртмерĕ, кĕçех малти чӳрече уçăлчĕ те хĕрарăм пуçĕ курăнчĕ. Тутăрне каялла çавăрса çыхнă, тулли питçăмартисем хĕп-хĕрлĕ, хăй тăрăшсах тем чăмлать.

— Кам унта? — хыттăн ыйтрĕ вăл.— Мĕн ара, хыççăнах сĕтĕрĕнсе çӳретĕр, кунне пĕрре ларса апат çиме те памастăр?! Кĕтĕр пăртак, пырса уçатăп тепĕр сехетрен-иккĕрен!

— Эпĕ-ха ку, Ангелина Егоровна, ан вăрç-ха эсĕ, сана питĕ срочно курмалла! — терĕ Чатта, решетке урлă кармашса. Анчах чӳрече умĕнчи йывăçсем кансĕрлерĕç курăнать, Кагаева ăна палласа илеймерĕ пулмалла. Тата хытăрах кăшкăрчĕ:

— Кам вара эсĕ, ун пекех васкаканскер?

— Чатайкин!

— Мĕнле Чакайкин? Аçтисем? Илтмен ун пек çын çинчен!

— Чакайкин мар, Чатайкин! Районри редакцинчен. Астумастăн-и, эп сан çинчен çырнăччĕ...

— Э-э, эс пултăн-и-ха ку, шĕвĕркке!

— Эп сан патна пĕр çын илсе килтĕм. Хĕпĕртетĕн акă ăна курсан!

— Чим, тăхта, эппин...

Çав самантрах чӳречере кил хуçи пуçĕ курăнми

пулчӗ. Тепӗр ик минутран вӑл калинккерен тухса тӑчӗ — тӗреклӗ, сарлака та самӑр хулпуҫҫиллӗ, ик янахлӑ кӳпшек хӗрарӑм. Ун пеккисем пирки шӳт тума юратакансем «ӑна пуслӑхпа ҫапсан та урараи ӳкерес ҫук», теҫҫӗ. Паҫӑр ҫул ҫинче, Чатта ӑна ахальтен мар авалхи витязьпе танлаштарнӑ иккен.

— Э-э, эс пӗччен мар-ҫке! — терӗ вӑл, Чаттана ытахальтен пек ал парса.— Ваҫҫине паллатӑп-ха, вӑл хамӑрӑн ямшӑк, анчах ку мӗнле хӑна пулчӗ тата? — Кагаева, вырӑнтан тапранмасӑрах, пуҫӗпе Лариса еннелле сулса илчӗ.

— Логинова, Лариса Логинова! Чӑнах та хӑна вӑл, Ангелина Егоровна! — ун умнерех пычӗ Чатта.— Анчах сан патна пӗр кун-ик кунлӑх килнӗ хӑна мар, нумайлӑха килнӗ ҫын, тен, яланлӑхах-и!

— Ӑнлансах ҫитеймерӗм-ха сана, тавариш Чатайкин,— шӗвӗр пӳрнине ҫӗклесе пӳлчӗ ӑна Кагаева.— Тӳрӗрех каласан мӗнле-ши?

— Сан помошник пулать вӑл! Сан пата ӗҫлеме килнӗ! Шупашкартан янӑ ӑна кунта...

Ку таранччен ним шарламасӑр тӑнӑ Лариса кӗсйинчен конверт кӑларса Кагаевӑна пачӗ:

— Фролов юлташран... Унта ман пирки ҫырнӑ пулмалла...

Кагаева ҫырӑва мӑнтӑркка пуклак пӳрнисемпе тытрӗ те ӑна уҫса вулас вырӑнне Ларисӑна пӗр-икӗ хутчен пуҫӗнчен пуҫласа урисем таранах пӑхса илчӗ. Ҫавна сиснипе хӗре питӗ аван мар пулса кайрӗ. «Мӗншӗн вӑл ман ҫине сутӑн илмелли выльӑх ҫине пӑхнӑ пек пӑхать? — шухӑшларӗ хӑй ӑшӗнче.— Манӑн вӑй пурри-ҫуккине пӗлесшӗн-ши?..»

— Атьӑр-ха, эппин, пӳрте, ӗҫ ҫинчен урамра мар, сӗтел хушшине ларса калаҫас пулать,— терӗ те унтан Кагаева, картишнелле ҫаврӑнса кӗчӗ. Ун хыҫҫӑн, хӑрахӑрах, ҫамрӑксем те кӗчӗҫ, анчах хапха патнех ҫитекен вӑрӑм сӑнчӑрти кашкӑр тӗслӗ йытӑ, ҫисе ярасла вӗрсе, вӗсене пӗр утӑм та малалла ирттермерӗ, хуҫи ӑна мӑйӗнчи чӗн ункӑран тытса хӑйӗн «пӳртне» тӗксе кӗртсен, ун алӑкне питӗрсе лартсан тин вӗсен крыльца ҫине хӑпарма май килчӗ.

— Ай-ай, усал-ҫке сан овчарку! — терӗ Чатта, йытӑ «пӳрчӗ» ҫине тепре пӑхса илсе. Вӑл пуринчен те ытла-

рах хăранă пулмалла, тути хĕррисем те кăвакарса кайнăччĕ унăн.

— Хуралçăсăр та май килмест-çке,— терĕ Кагаева,— улах пралукра пурăнатăп, çĕрле тем шухăшлă çын та килсе кĕме пултарать, арçын çук манăн вăрăхурахсене хăратма, кравул кăшкăрсан та килсе çăлакан пулас çук... Каç пулсанах йытта сăнчăртан вĕçертсе яратăп та хăрамастăп вара. Садне те сыхлать, кил таврашне те. Усси пур, ачам, эп ăна ахаль тăрантармастăп!

Кагаева кĕтмен хăнасене çенĕхрен пӳрте кĕртрĕ. Сăмсана тӳрех темле йывăр шăршă пырса çапрĕ. Пăнтăх шăрши. Пӳртне нумайранпа тасатман, уçăлтарман, уçă сывлăш кĕртмен пулмалла. Кагаевăн татах хăна пулнă иккен — Лариса малти кĕтесри сĕтел хушшинче самаях кукшаланнă, шĕвĕртерех хĕрлĕ сухаллă, шĕшлĕ евĕрлĕ вăрăм сăмсаллă арçын ларнине курчĕ. Сĕтел çинче — çурри ытла пушаннă «московски» кĕленчи, çатмара — ăшаланă чăкăтпа çăмарта юлашки, юнашар — икĕ пушă стакан. Чăнах кансĕрленĕ иккен вĕсене ăнсăртран килсе çитнĕ çынсем, çавăнпа кăмăлсăр пулнă Кагаева...

— Палланă çын çула май кĕчĕ те, кăштах çырткалас терĕмĕр, хам та паян иртенпех çимен те... — çамрăксем умĕнче тӳрре тухма тăрăшнă пек каларĕ кил хуçи. Лешсем сак çине ларнăччĕ кăна — вĕсене сĕтел хушшине чĕнчĕ: — Апат тĕлне пултăр пулсан, эсир те килĕр-ха, çырткалăр пирĕнпе пĕрле...

— Тавтапуç, Кагаева, эп тин çеç килте çисе тухрăм,— ал сулчĕ Вася-шофер.

— Манăн та çиес килмест, эпир юлташпа иксĕмĕр чайнăйра пултăмăр,— терĕ Лариса та.

— Чайнăйра пулни — мĕн вăл? — тутине мăкăртрĕ Кагаева.— Унта чей вырăнне те мăшкăлтăк шывĕ çеç параççĕ. Эп сире хуть килти çырла шывне тутантарса пăхам! Ту-утлă ман çырла шывĕ! Халь чиркӳре те çук ун пекки. Ларăр, ларăр! — вăл Чаттана хулпуççинчен тĕртсе илчĕ.— Эс ют çынах мар, ырă пример кăтартсам юлташусене!

— Эп хам та выçă мар та ĕнтĕ, çăкăр-тăвара хирĕç пулма хушмаççĕ... Ларар пуль! — Чатта аллисене хирехирĕç çат-çат! çапса илсе сĕтел хушшине, леш шĕшлĕ сăмсаллă çын çумне ларчĕ.— Çырла шывĕ чăнах та

ытармалла марччĕ-ха санăн, астăватăп,— терĕ унтан Кагаевăна. Самантранах хăйĕнпе юнашар лараканнинчен ыйтрĕ: — Эсĕ, юлташ, Чăрăшкассинчи завмаг пулас-ха, çапла-и? Васюков вĕт сан хушамат?

— Ç-çапла,— терĕ шĕвĕр сухал,— вара мĕн-ха?

— Нимех те мар,— тутине чалăштарарах кулса илчĕ Чатта.— Сан çинчен хамăр хаçатра çырнине астăватăп кăна. Кайран эсĕ жалобăпа пытăн...

— Çырма тем те пулать. Хут тӳсет, теççĕ. Анчах хут çине те тĕрĕссине çырас пулать, сре элеклемелле мар... — мăкăртатрĕ Васюков.

— Сан пирки çырни тĕрĕс пулнă-çке? Тавар хакне ӳстерсе сутнă вĕт-ха эсĕ? Пересортица пулнă санăн? Таварсен хакне çынсене курăнмалла çырса çакман?

— Ушипкă пулнă вăл. Эп мар, арăм ушипатсă тунă — хам чирлĕ чух. Тӳрлетнĕ эпир вăл йăнăша, ытлашши килнĕ укçине тавăрса панă. Халь шито-крыто, пĕр айăп та çук. Темле шырасан та тупаймастăн...

— Пулма пултарать,— ассăн сывласа ячĕ Чатта.— Шито-крытосем тума маçтăр эсир. Алран тытсан та вăрă мар теприсем.

— Чатайкин юлташ, эс мĕн ара тӳрех опăхăссăри милици пек калаçа пуçларăн, ами? — куç харшисене ăмăрлатса пăхрĕ ун çине кил хуçи.— Ĕçлекен çын йăнăшма та пултарать. Камăн йăнăш пулмасть пуль? Ним туман çын çеç йăнăшмасть, теççĕ мар-и? Эп акă торговльăра вунпилĕк çул ытла ĕçлетĕп, хăнăхса çитнĕ ку ĕçе, çапах та тепĕр чух хам йăнăшнине сисетĕп. Темле, чун сисет çавна! Тытăнатăп вара шырама... ăçта йăнăш пулчĕ-ши? Тӳрлетес пулать-çке часрах вăл йăнăша, унсăрăн темрен тем сиксе тухĕ! Ят кайĕ!

— Юрĕ, Ангелина Егоровна, тек калаçмăпăр ун çинчен,— терĕ Чатта.— Ăнсăртран пуçланнă сăмаха тăсса ярас мар.

Кил хуçи Ларисăпа шофера та ирĕксĕрлесе тенĕ пекех сĕтел хушшине лартрĕ. Çав вăхăтра тултан çĕтĕкрех фуфайка, кивĕ мăн пушмак, пуçне килти тачка çиппрен çыхнă калпак тăхăннă пĕр вунçичĕ çулсенчи хĕр кĕрсе тăчĕ. Кагаева ăна кăчăк туртса хăй патнелле чĕнсе илчĕ те хыттăн кăшкăрса каларĕ:

— Христин, тепĕр çатма чăкăтпа çăмарта ăшала-ха часрах!

Хĕр ним чĕнмесĕрех алăк патне кайса тумтирне

хывса çакрĕ те чăлана кĕчĕ. Ун хыççăн Кагаева та кĕрсе кайрĕ.

Сĕтел хушшинче пĕр хускалмасăр, пăталанă пек ларакан Лариса пӳрт ăшчиккине пăхса çаврăнчĕ. Кĕтесри турăшсем çеç мар (вĕсем нумай, вуннă та пулĕ — пĕчĕкки, пысăкки, вăтамми...), ытти япаласем те кивĕ: стена çинчи куккуклă сехет те, чăлан çумĕнчи юман буфет та, кайри стена çумĕнчи «шишкăллă» кравать те. Ун çине капан пекех купаласа тултарнă çитарсен пичĕсем те çĕнех мар, сылтăм енче ларакан тем çӳллĕш хыçлă диванăн пружинĕсем те тапса тухма пуçланă. Пуканĕсем те тахçанхи йышши.

— Питĕ перекетлĕ пурăнать пулас... — шухăшларĕ Лариса.

Çавăнтах районри чайнăйра официантка каласа панине аса илчĕ: «Шупашкарти перекет кассине çĕнĕ укçапа пилĕк пин хунă... килĕ-çурчĕ крепость пек... килĕнчи ĕçсене пĕтĕмпех хăлхи илтмен тăлăх хĕр туса пырать, ăна та пулин выçлă-тутлă усрать, пулчĕ-пулмарĕ хĕнесе илет, тет... Ак çакă, халь чăлана кĕнĕ хĕрача пуль-ха вăл. Сăнран пăхма — чип-чипер, юратмалласкер...»

Лариса чĕри хыттăн-хыттăн тапма тытăнчĕ.

«Паян ирхине тата Фролов, райпо председателĕ, çак Кагаевăпа пĕрле ĕçленĕ çамрăк хĕре растрата тунăшăн кăларса яни çинчен каларĕ-ха... Çав растратăна вăл хĕр хăех тунă-ши? Тен, ăна юри путарма заведующи «пулăшнă»? Паçăр Кира ун пирки иккĕленсе Фроловпа кăшт тавлашса та илчĕ-ха... Ой, питĕ сыхă пулас пулать манăн, çав тери асăрханса ĕçлес пулать!..»

## 6

Кагаева чăлантан тем пысăкăш кĕленче банкăпа хăйĕн «çырла шывне» илсе тухса сĕтел çине лартрĕ.

— Айтурух, куна ĕçсен эпир пурте мук-мукăлчак тăвакан пулатпăр-иç! — тĕлĕннипе аллисене сарса пăрахрĕ Вася-шофер.

— Ан хăрăр, килти çимĕç, нимĕнле олкоколисăм та çук унта,— терĕ кил хуçи, тутине пĕр еннелле чалăштарса (ку ĕнтĕ вăл йăл кулни пулчĕ пулмалла).— Акă, писатель юлташ калама пултарать, вăл тахçан пĕрре тутанса пăхнăччĕ пулас-ха ăна...

— Тӗрӗс, сыпса курнӑ,— тӳрех ҫирӗплетрӗ Чатта.— Вӑйлӑ продукци, калама та ҫук!

— Эппин, ҫӑмарта пиҫиччен пӑртакшар ярар-ха ӑна, апат валли ҫул уҫӑлтӑр,— терӗ те унтан кил хуҫи, буфетран тата виҫӗ таса стакан илсе, пурне те хӗррипе тан тултарчӗ.

— Ну, эсӗ ҫӗнӗ вырӑна килсе ҫитнӗшӗн пултӑр, эппин, ку...— Кагаева хӑйӗн аллинчи стакана Лариса умӗнчи стаканпа шаклатрӗ.— Тыт, хӗрӗм! Эсир те, юлташсем...— ыттисене пӑхса ҫаврӑнчӗ вӑл,— именсе ан тӑрӑр, тӗппипех ҫавӑрса хурӑр!

— Эп... эп ӗҫейместӗп, нихҫан та ӗҫсе курман,— тӑрук пиҫнӗ ҫырла пек хӗрелсе, пуҫне пӑркаларӗ Лариса.

— Ним те пулмасть, ан шиклен эсӗ, московски— российски мар вӗт, килти япала! Паллашнӑ ятпа сыпса кур ӗнтӗ! — ҫине тӑчӗ Кагаева.— Атту-тӑк эпӗ кӑмӑлсӑр пулатӑп, мана ҫын вырӑнне хуман пек туйӑнма пултарать...

— Тӗрӗс, ырӑ кил хуҫи кӑмӑлне хуҫас мар... — Чатта та хӑйӗн стаканне Лариса стаканӗпе шаклатрӗ.

— Так точнӑ! Хӑнара яланах хуҫана пӑхӑнмалла! — терӗ те унччен шарламасӑр ларнӑ шӗшлӗ сӑмсаллӑ Васюков, умӗнчи ҫурри таран пушаннӑ ҫур литр кӗленчине ярса тытрӗ.— Акӑ, мана ҫак урнӑ ӗне сӗтне лартса панӑ та, манӑн ӑна вилсен те ӗҫсе ямалла... Унсӑр хуҫи мана тепре килсен алӑкран та кӗртмест. Анкӗл Егорччӑн карахтерӗ вӑйлӑ! Унпа килӗштерсе пурӑнма пӗлмелле. И вопше ҫӗр ҫинче пӗр-пӗринпе килӗштерсен ҫеҫ йӗркеллӗ пурӑнма пулать, ҫавна яланах асра тытӑр эсир, ҫамрӑксем...— вӑл пӑтранчӑк куҫӗсемпе Чатта ҫине пӑхрӗ.— Хаҫатсенче элеклесе ҫырма та кирлӗ мар! Ҫапла-и? Эсӗ, сӑмахран, филиттон ҫырса мана ӗҫрен сирпӗтетӗп, тӗрмене хуптаратӑп, терӗн пуль теха... шалиш, тӑванӑм! Эпир Анкӗл Егорччӑпа иксӗмӗр торговля енӗпе тахҫантанпах ӗҫлетпӗр, шанчӑклӑ ҫынсем, пире такӑнтарма восмошнӑҫ та ҫук, пирӗн пур ҫӗрте те... апторитет! Кашни йӗпе сӑмсаранах хӑраса таракан йышшисем мар эпир! Эпир...

— Марк Васильч, ҫынсем умӗнче чӗлхене кӑштах чарма пӗлес пулать ӑна! — сассине тӑрук хытарса Васюкова пӳлсе лартрӗ Кагаева.— Мӗн лӑпӑртатса ларатӑн? Тултар та ӗҫ эрехне йышпа пӗрле!

— А-а... юрать, Анкӗл Егорччă, юрать... — хӗсӗк куҫӗсене хăвăрт-хăвăрт мăчлаттарса илчӗ Васюков.— Йышпа пӗрле эпӗ вутта та кӗме хатӗр, хуть те хăҫан та...

Арҫынсемпе Кагаева тӗппипех ӗҫрӗҫ. Лариса пӗрикӗ ҫăвар ҫеҫ сыпрӗ, анчах вăл та пулин ун пырне хӗртса илчӗ. Ҫав вăхăтрах леш чӗмсӗр хӗр сӗтел ҫине пăсланакан ҫатма пырса лартрӗ те хăй каллех ҫӗтӗк фуфайкине тăхăнса пӳртрен тухса кайрӗ. Тулта унăн ӗҫ нумай пулнă пулмалла.

— Халь ҫыртăр ӗнтӗ, юлташсем, уй урлă каҫнă ҫыннăн выҫатех вăл, тем тесен те! — сӗнчӗ Кагаева, хăй те ҫиме тытăнса.

Унччен самай ӳсӗрӗлнӗ Васюков, чăмла-чăмла, татах калаҫма пуҫларӗ.

— Пирӗн пӗтӗм пурнăҫ — кӗрешӳ,— теҫҫӗ хăшӗсем... Килӗшместӗп! Тӗрӗс мар сăмах вăл. Кала-ха вăт эсӗ, ăслă ҫын... — Васюков тăрăшсах ҫиекен Чаттана чавсипе кăт-кăт! тӗртсе илчӗ.— Кала! Мӗн тума кӗрешмелле пӗр-пӗринпе? Мӗншӗн? Ик ӗмӗр пурăнас пур-и? Хуть кӗтӳҫ пул эсӗ, хуть миниҫтӗр пул — ҫав-ҫавах тур панинчен ытла пурăнаймастăн! Ҫапла-и? Тӗрӗс калатăп-и эпӗ?

— Этем кăна мар, слон та ик ӗмӗр пурăнмашшине кашниех пӗлет, уншăн мӗн-ха вара? — Васюков ҫине пăхмасăрах ыйтрӗ Чатта.

— Вара-и? Вара акă мӗн, ҫамрăк тăванăм... — Васюков черкке тӗпне юлнă эрехе сыпса ячӗ.— Ҫав пӗртен-пӗр ӗмӗре лăпкăн-лăпкăн, никампа та хирӗҫмесӗр, пуринпе те килӗштерсе, сокласнă пурăнса ирттерес пулать. Пӗр-пӗрине тапăнмалла мар, пулăшса пымалла, кирлӗ пулсан — хурлăхран та хăтармалла... Акă, эпир Анкӗл Егорччăпа пи-итӗ килӗштеретпӗр. Пулăшатпăр пӗр-пӗрине. Эп — ăна, вăл — мана... Сахал пулать-и пурнăҫра! Лайăх-и ҫав? Кала эс мана, ăслă ҫын!

— Начар теме ҫук.

— Анчах мӗншӗн теприсем ун пек мар, э? Мӗншӗн чакаланаҫҫӗ, ҫын айăпне шыраҫҫӗ, пулчӗ-пулмарӗ шалăпăсем ҫыраҫҫӗ? Таҫта та ҫыраҫҫӗ вӗт-ха — райпона, райкома, народнăй контроля, прокурора. Мускав таранах! Мӗншӗн? Ăнлантар!

— Сăлтавӗсем пулаҫҫӗ эппин, ҫавăнпа ҫыраҫҫӗ пуль. Ахальтен ма ҫырччăр? Калăпăр, кам та пулин

куçкĕретех вăрлать, халăха улталать, тĕрĕс мар пурăнать пулсан...

— Унпа мар! — сĕтеле çат! çапрĕ Васюков.— Курайманнипе! Çын лайăх пурăннине курайманнипе, вот и всё! Хайсем пурăнма пĕлмеççĕ те — тарăхнипе кĕвĕçеççĕ. Çыра-аççĕ вара! Строчить тăва-аççĕ çĕр çăтмансгерсем — чăр-чăр-чăр...

— «Пурăнма пĕлмеççĕ» тенине мĕнлерех ăнланмалла-ши ăна, Васюков юлташ? — çиме чарăнсах ун куçĕнчен пăхрĕ Чатта.— Ман шутпа, пирĕн халь кам лайăх ĕçлет, çав лайăх пурăнать. Е тата урăх майсем те пур-и сан шутпа? Ăнлантар-ха.

— Пĕр пус çумне виçĕ пус хушма пĕлес пулать, вот што! — терĕ Васюков ним тытăнса тăмасăрах.

— Ăçтан тупмалла-ха çав виçĕ пусне? Ăна ĕçлесе илмелле пуль? Урамра, çул çинче йăванса выртмастьçке вăл! Вăрламалла-и? Апла та май килмест пуль, вăрласан — тытаççĕ!

— Аслă çын темрен те укça тăвать, унăн пурлăхĕ те хутшăнсах пырать. Ĕмĕртен çапла пулнă. Наянсемпе тăмсайсем çеç çити-çитми пурăннă. Выçă та ларнă, кутне тăхăнма йĕмĕ те пулман...

Чатта, хăйне такам йĕппе тирнĕ пекех карт! сиксе, ун еннелле çаврăнса ларчĕ.

— А-ав мĕнле юрлатăн иккен-ха эсĕ, Васюков! Ку юрра пит лайăх пĕлетпĕр эпир. Илтнĕ ун çинчен. Кулаксен юрри вăл! Халăха çаратса, çынсене çука хăварса пуйнă-пуйнă та лешсем, кайран хăйсем çаратнисенченех эс каланă пек каласа мăшкăлланă! Ăçтан аса илтĕн эсĕ ку юрра? Маттур, матту-ур...

— Кулаксем çук халь, тавариш! — Васюков татах черккене тути патне тытрĕ, анчах лере ним те юлман иккен.— Тахçанах, эс çураличченех как класс пĕтернĕ вĕсене. Кăкланă. Халь эпир пурте трудящий. Çĕрнекунне шутламасăр ĕçлетпĕр. Тар юхтарса... Н-да! Çапла мар-им, Анкĕл Егорччă?

— И-и, мĕн кулакĕ пултăр ĕнтĕ халь тин, никам çын ĕçĕпе пурăнмасть çав ку чухне! Эпир ĕнтĕ кусăмахне те манса кайнă! — Васюковпа килĕшсе, шĕн ассăн сывласа илчĕ те Кагаева, каллех стак тултарма тытăнчĕ.

— Кулаксем çук, ку тĕрĕс,— çаплах Васюк пăхрĕ Чатта,— анчах вĕсен ирсĕр юррисене к

сем, кулакла шухăш-кăмăллă çынсем пур-ха! Сахалах та мар тата вĕсем!

— Пережиткă, тесшĕн ĕнтĕ эс... — куçĕсене вуçех хĕссе лартса, йĕрĕнчĕклĕн кулса илчĕ Васюков.— Сосланири пережиткă... Çапла-и?

— Çапла, тейĕпĕр. Теприсем эс каланă пек пĕр пус çумне виçĕ пус та мар, тӳрех виç тенкĕ хушма тăрăшаççĕ. Вĕсен пĕтĕм ĕмĕчĕ — епле пулсан та пуясси, урăх ним те кирлĕ мар вĕсене. Укçа, пурлăх ытларах пултăр. Паян — ĕнерхинчен, ыран — паянхинчен нумайтарах. Унтан тата, тата, вĕçĕ-хĕррисĕр! Анчах тӳрĕ кăмăлпа ĕçленипех пулмасть-çке вăл, ун пек пуйма такама улталама, вăрлама, жуликла махинацисем тума тивет... Хăшĕсем çавăн пек тăваççĕ те вара!

— Пулĕ, çут тĕнчере тем те пулĕ! — хулăн тутине пăчăртаса илчĕ кил хуçи.— Пурне ăçтан пĕлсе çитерен? Эпир тата питĕ лăпкă кĕтесре пурăнатпăр та... илтсех каймастпăр ун пеккине.

— Эпир санпа саккун хушнă пек пурăнатпăр, Анкĕл Егорччă, пирĕн совĕç яланах таса! — кăкрине çапса илчĕ Васюков.— Сăмахран каласан, вунпилĕк çул хушшинче ман лавккара пĕр аллă-утмăл ревизи те турĕç пуль, анчах пĕрре те вунпилĕк пус çитменни пулман... Дебет-кредет яланах сто процент!

— Ман хамăн та çавах çав,— терĕ Кагаева, тулли стакансене хăнасем умне лартса.— Тĕрĕс ĕçленине мĕн çиттĕр! Тата эпĕ тĕрме таврашĕнчен вилĕмрен хăранинчен те хытăрах хăратăп, çавăнпа та кашни пĕр пуса виçшер хут шутласа хуратăп. Эс ман пата хуть кăнтăрла, хуть çĕрле пырса ревизи ту — нихçан та çур пус çитменнине тупаймастăн! — вăл ним чĕнмесĕр ларакан Ларисăна куçĕнчен пăхрĕ.— Малашне те çавăн пекех ĕçлесчĕ-ха, пирĕн çинчен нихçан та усал сăмах ан тухтăр, яланах ырăпа асăнччăр пире пур çĕрте те.. Çапла пуль, хĕрĕм? Тĕрĕс калатăп-и?

— Тĕрĕс ĕнтĕ, епле пултăр-ха тата... — терĕ Лариуллен.

Эппин, тепрер ĕçсе парăр-ха, юлташсем! — хĕкайнă, çамки çине тар тапса тухнă Кагаева статытса çĕклерĕ.— Пурин те пĕр-пĕринпе килĕшĕркеллĕ ĕçлесе пурăнмалла пултăр...

п ĕçейместĕп урăх, пултараймастăп,— ик ал-

липе пĕр харăс сулса, пуçне пăркаласа илчĕ Лариса.— Кăмăлшăн сыпса патăм, çитет...

— Манран та пулмасть тек, Ангелина Егоровна, заданипе каятăп, ĕçлемелле! — стаканне ывçипе хупларĕ Чатта.

— Мана вуçех те юрамасть, эп руль тытатăп,— терĕ Вася-шофер.

— Э-эй, аптрамалла сирĕнпе, çамрăксемпе! Кампани тума та çук-иç! Апла пулсан, хам та ĕçместĕп, манăн та лавкка кайса уçмалла, сынсем пухăнчĕç пуль,— Кагаева аллинчи стаканне каялла лартрĕ.— Ман çĕнĕ помошник те лавккапа паллашмалла пырса курать пуль. Çапла-и, хĕрĕм? — Ларисăран ыйтрĕ вăл.

— Паллах, пыратăп, епле пултăр-ха тата... — терĕ хĕр.

Пурте тапранса сĕтел хушшинчен тухрĕç. Чăн юлашкинчен Васюков хускалчĕ, анчах сĕтел хушшинчен тухиччен малтан кĕленче тĕпне юлнă эрехе стакана ямасăрах, пырĕнченех ĕçсе ячĕ те тутине çаннипе шăлса илчĕ.

— Яланхи йăлапа, остаткине снимать тăвас терĕн-и, Васюков? — тӳсеймесĕр кулса ячĕ Чатта çакна курсан.— Пултаратăн, тупата...

— Остатки-сладки,— терĕ ăна хирĕç Васюков ним вăтанмасăрах.

«Мĕнле ĕçлет-ши-ха ку çын, çакăн пек нумай ĕçекенскер? Вунпилĕк çул хушшинче вунпилĕк пус çитменни те пулман ман лавккара, тет хăй. Анчах растратăсем, вăрланисем пуринчен ытларах ĕçекен çынсен пулаççĕ, тетчĕç-çке пире шкулта?» — шухăшларĕ Лариса, Васюков çине йĕрĕнерех пăхса. Лешĕ тумланасса та питĕ тирпейсĕр тумланнă-мĕн: лутăрканчăк «бумажнăй» пиншак çухави те, ун айĕнчи хулăн кĕпи те сăранлансах ларнă, хырăмĕ тăрăх тем те юхнă пулмалла — такам юри сăрласа янă, тейĕн. Сарлака шăлаварĕ те çавăн пекех. Хĕл ларасси тахçан-ха, анчах вăл калушлă чосăнки тăхăннă. Çӳçне, тен, кăçал пĕрре те касман-и — тепĕр чечукăнни пекех ĕнси çинелле ӳссе аннă, çитменнине пăтрашса пĕтнĕ, ĕмĕрне тура хурса курман пек. Халь апат çинĕ чух сайра сухалĕ çумне чăкăт тĕпренчĕкĕсем çыпăçса тулнă.

«Магазина, тавар илекенсем умне те çакăн пекех тухса тăрать ĕнтĕ вăл. Кам пĕлет, тен, халат та тăхăн-

масть? Анчах пире халăх умне хуть те хăçан та таса, тирпейлĕ тумланса тухма вĕрентрĕç. Халат тăхăнмасăр прилавок умне те тăма юрамасть... Кагаева ун пек мар, тирпейлĕ пулмалла-ха, епле пулсан та, вăл — хĕрарăм. Васюковпа танлаштараймăн ăна. Анчах... мĕнле туслă пурăнма пултараççĕ-ха çакнашкал расна çынсем? Мĕн çыхăнтарать Васюковпа Кагаевăна? Е лешĕ чăнах ăнсăртран килсе кĕнĕ-ши? Мар пуль. Кагаевăпа туслă пурăнни, пĕр-пĕрине пулăшни çинчен Васюковĕ темиçе хут та каларĕ. Ӳсĕрпе лăпăртатмарĕ пулĕ-çке?..»

Çак шухăшсем Лариса пуçĕнче питĕ хăвăрт вĕçсе илчĕç.

— Ангелина Егоровна, хваттер пирки мĕнле-ха тата, Логинова юлташăн ăçта пурăнмалла пулать? — илтрĕ те вăл çав вăхăтра Чатта сассине, Васюков çине пăхма пăрахса, вĕсен еннелле çаврăнчĕ.

— Кăмăлĕ пулсан, хам патра та пурăнма пултарать, пӳрчĕ пысăк манăн, çемйи — иккĕн анчах, вырт-са тăмалăх вырăн пур. Кунта килĕшмесен урăх çĕрте те тупăпăр, хăй мĕнле шухăшлать! — терĕ Кагаева, сăмахĕсене темле тăсса, юрланă пекрех.

— Мĕн калăр ĕнтĕ, Логинова юлташ? — ыйтрĕ Чатта.

— Маншăн... пурĕпĕр, хуть те ăçта пулсан та. Хам эпĕ никама та чăрмантарас-кансĕрлес çук,— терĕ Лариса.— Ангелина Егоровна килĕшет пулсан, кунта та аван маншăн...

— Эп те çапла шутлатăп! Пĕрле ĕçлетĕр, пĕрле пурăнатăр. Пĕр çемье пек! Амăшĕпе хĕрĕ пек!

Чатта Ларисăна куçĕнчен пăхрĕ.

— Юрать ара... — терĕ хĕр.

— Пулчĕ! Тата тепĕр ыйту татăлчĕ пирĕн! Пит аван! Эпĕ киле таврăнсанах кун çинчен Фролова каласа паратăп... Çапла та çапла, хисеплĕ Владимир Яковлевич, сирĕн хĕре вырнаçтарса килтĕм, халь ăна качча памалли çеç юлчĕ, тетĕп... — Чатта кăмăлĕ тулчĕ те, унăн шӳтлесси килсе кайрĕ пулмалла. Вăл, сылтăм аллине чĕри тĕлне илсе пырса, Кагаевăпа Ларисăна пилĕк таранах авăнса пуç тайрĕ те хăвăрт калама тытăнчĕ: — Ну, халь ĕнтĕ... ырлăх та сывлăх, килĕшӳ те телей сунатăп сире чунтан-вартан! Таварĕ ялан лавкка тулли пултăр сирĕн, суту-илӳ пĕр вĕçĕм ăнса пытăр, усал хыпар-хăнар ан тухтăр сирĕн пирки! Кунтан ытла

сăмахăм çук... Çитменнине çитерĕр, ытлашшине каçарăр. Тайма пуç сире, ырă çынсем!

Пурте ахăлтатса кулса ячĕç.

— Ай-ай, мыскараçă иккен эсĕ, Чатайкин! — терĕ Кагаева, пуçне енчен енне сулкаласа.— Камите каймалла çеç санăн!

— «Айтарти» мăн кĕрӳрен те кая мар эсир! — терĕ Лариса та тулли кăмăлпа.

— Литературăна пĕлетпĕр кăштах,— куçне хĕссе илчĕ Чатта.— Ну, халь ĕнтĕ эпир малалла вĕçтертĕмĕр. Тепрер эрнерен-иккĕрен, çула май, кĕрсе тухăп-ха сирĕн пата.— Вăл малтан Лариса, унтан Кагаева аллине тыта-тыта чăмăртарĕ.

— Килĕр, килĕр! Яланах хаклă хăна пулатăр пирĕншĕн! — терĕ Лариса хавассăн. Çак «районĕпе чапа тухнă поэт» чăннипех килĕшрĕ ăна. Асĕ те пур-мĕн унăн, кăмăлĕ те уçă, шӳт тума та пĕлет. Ун пек çынсемпе нихçан та кичем пулмасть. Тата Шупашкарти хăшпĕр поэтсем пек мухтанни, вĕçкĕнленни те сисĕнмест. Вĕçкĕнсене Лариса тӳсме пултараймасть...

Чаттана ăсатма вăл урамах тухрĕ. Машина тапрансан та аллипе вĕл-вĕл сулса юлчĕ. Унтан, Кагаева халех лавккана каясси çинчен каланине астуса, васкасах крыльца картлашкисем тăрăх чупса хăпарчĕ, çенĕхе кĕрсе пӳрт алăкне уçса ячĕ те... урай варринче леш ӳсĕр Васюков кил хуçин мăйĕнчен ик аллипех уртăнса тăнине курах кайрĕ. Хĕрарăмĕнчен лутрарахскер, ун пуçне хăй патнелле туртать, чуптăвасшăн пулмалла...

Лариса пат! чарăнса тăчĕ те ним тума пĕлмерĕ. Ни кĕрес, ни тухас, тенĕ пек.

— Ан ахăр, теççĕ сана! Тупнă аташмалли вăхăт! Тепĕр чух кил! — ун ытамĕнчен вĕçерĕнесшĕн ăна кăкăрĕнчен тĕртсе каялла чакрĕ Кагаева. Унтан тăрук алăкра тăракан Ларисăна асăрхарĕ те Васюкова питĕнчен çупса янă пек турĕ.— Шуйттан! Кам хушрĕ сана çакăн пек хыпса лартма, çынран çакăнмасăр та ура çинче тăраймастăн халь? Килне мĕнле çитетĕн-ха? Пырса тăрăнатăн акă ăçта та пулин, эсремет!

Васюков, тайкаланса, сак çине кайса ларчĕ.

— Çитетĕп!.. Маншăн ан хăра... Эп таçта та çитнĕ! — аллисемпе сулкаласа, çĕрелле пăхрĕ вăл.— Кунта çывăрма та пултаратăп... ак, сан вырăн çине хăпарса выртатăп та...

— Вырттарăп эп сана, кĕтсех тăр! Кай тухса! — кăшкăрчĕ Кагаева.— Ерçӳ çук манăн санпа лăпăртатса вăхăт ирттерме, лавккана каяс пулать пирĕн.

— Халех, чим... — Васюков сĕтел еннелле пăхрĕ.— Çул курки те памастăн-и?

— Çитет ĕнтĕ сана, çитет! Мĕн эсĕ, тĕпсĕр пичке пекех паян?

— Хĕрхенетĕн-им çырла шывне? Ы-ы, кулак... Чатайкин тĕрĕс каларĕ сан пирки... Ме, укçа паратăп сана пĕр стаканшăн! — кĕсйине хыпалама тапратрĕ Васюков.

— Кирлĕ мар сан укçу! Эп сана хăвна хĕрхенетĕп, ухмаха!

— Хальччен ухмах пулман, пулас та çук... Пурăнма пĕлетпĕр-ха, ан палка эсĕ. Иксĕмĕр те... пултаратпăр! Э-эх, летят у-утки...

— Чипер, чипер эсĕ! Мункун мар паян юрласа ларма!

Кагаева ăна сĕтел çинчи тулли стакансенчен пĕрине илсе пачĕ.

— Ме, эппин, çакна кӳп те тухса ут! Арăму çухатрĕ пуль-ха. Тытса тӳнккет акă киле пырсан...

— Çу-ук, тӳнккемест... Эпир унпа питĕ миллăй пурăнатпăр. Ман арăм хороши халь, ĕлĕкхи пек мар. Эп сан патна ĕçпе килнине пĕлет вăл. Комерцине те ăнланать, сурăх пекех ухмах пулсан та... Укçа шутне пĕлет, шуйттан! — Васюков стакана лăнкăрт-лăнкăрт пушатрĕ те сак çинчен тăчĕ.— Эпир санпа иксĕмĕр те комерсанттăсем вĕт-ха, Анкĕл Егорччă, э? Çапла-и? Кала!

— Ан сӳпĕлтетсе тăр ӳсĕр пуçупа! — çилĕпе кăшкăрса пăрахрĕ ăна Кагаева.— Мĕн йытă хӳри комерсанчĕ пултăр пирĕн çумра? Ялти чи мĕскĕн прикащĕксем эпир, тарçăсем пекех ĕçлетпĕр, кашни çур пуса шутлатпăр...— вăл, темрен асăрханнă пек, йăпăрт çеç Лариса çине пăхса илчĕ, унтан каллех Васюкова пăскăртма тытăнчĕ.— Эс мĕн, килти тислĕке хулари садоводсене сутса комерсант пулса кайрăн-и? Е йытă çурисене сутса пуйрăн-и, пĕркун вĕсем санăн кĕтӳпехчĕ... Манăн хуть сутмалли нимĕн те çук, пуçра шăрка та тупаймастăн!

— Э-э, Анкĕл Егорччă, суя-ан... суятăн куна! Эпир... эпир санпа пурăнăпăр-ха...

— Çитĕ кун чухлĕ пуш параппан çапнипе, Марк Васильч! Хуп шăршлă çăварна! — Кагаева унăн пăтари кивĕ плащне вĕçертсе илсе йăпăр-япăр тăхăнтарчĕ.— Атя, ăсатса ярам ялтан тухиччен, атту тата урам варринчех тăсăлса выртăн сысна пек. Чатайкин йышши пĕр-пĕр шăхлич курĕ те, наччас «Капкăна» картинккă тусах çапса кăларĕç! Намăса ăçта чикес вара? Атя, атя, ут! Çирĕпрех тыт хăвна!

Васюкова алăк патне илсе çитерсен, Кагаева чăлан çумĕнче ним чĕнмесĕр, хытнă пек пулса тăракан Лариса еннелле çаврăнса каларĕ:

— Эс кăшт кăна кĕт-ха, эппин, эп çак махмута ялтан кăларса ярам. Халех таврăнатăп, унтан вара лавккана кайăпăр...

— Юрать, юрать,— килĕшсе пуçне сулса илчĕ Лариса.

Вĕсем кĕпсĕртеткелесе тухса кайсан, Лариса малалла иртсе чӳрече патне пычĕ. Пӳрт умĕнчи йывăç тураттисем хушшипе урамра мĕн пурри питех курăнмарĕ те, вăл сак çине ларса шухăша кайрĕ. Килĕшмерĕç ăна халь кăна ун куçĕ умĕнче пулса иртнисем. Çав тери кăмăла каймарĕç. Кагаева çынсене тӳрех эрехпе хăналама тытăнни те, сĕтел хушшинче калаçнисем те, унтан ӳсĕр Васюков лăпăртатни те... Пулаççĕ те çав йĕрĕнмелли типсем! Пăхсан хăсăк тухса каять! Лавккара ĕçлет тет-ха хăй... Мĕнлерех-ши ун лавккинче? Ĕнер райпо председателĕ Фролов каланă пек, пылчăк, тусан, кĕтессенче — эрешмен картисем, пир-авăрĕ те, тимĕр хатĕрсем те, тетрачĕ те пĕр купара пуль ĕнтĕ... Кĕнекесем те пулсан, вĕсемпе мĕнле сутă тăватьши вăл?

Сасартăк хĕре питĕ кичем, салху пулса кайрĕ. Шкул аса килчĕ. Мĕн тери лайăх пурăннăччĕ икĕ çул хушши! Юлташсем нумайччĕ, туссем. Гриша Арсентьев... Ытармалла мар каччă! «Эп ялан санпа пĕрле пуласси çинчен ĕмĕтленсе пурăнатăп» тенĕ вăл юлашки çырăвĕсенчен пĕринче. Анчах халь вăл кунтан питĕ, питĕ инçетре-çке! Хамăр çĕршывра та мар! Эп те акă çак аякри района, нихçан курман-илтмен яла килсе кĕтĕм. Мĕнлерех пулĕ-ши манăн кунти пурнăç? Хăçан тĕл пулăпăр-ши эпир Гришăпа? Тата тĕл пулма май килĕши? Çартан таврăнĕ те, эпĕ Шупашкарта çуккипе урăххине юратса пăрахĕ те... Сахал-и хĕр! Ман пек мар чап-

лисем каччăсăр çӳреççĕ. Чăн та, Гриша служба срокĕ пĕтнĕ хыççăн татах вĕренетĕп, тетчĕ, ытла тăруках авланса ямасть-и, тен. Анчах эпир те, Кирăпа иксĕмĕр, малалла вĕренесшĕн вĕт-ха. Пĕрер-икшер çул ĕçлесен, заочно пулин те вĕренме кĕресчĕ... Ниушлĕ ĕмĕр-ĕмĕрех ялпо продавецĕ пулса пурăнмалла? Эпир çамрăк-ха, çав тери çамрăк, пирĕн пĕтĕм пурнăç — малта, ыранхи кунра. Пирĕн ĕмĕт, çак ӳсĕр Васюковăнни пек, пĕр пус çумне виçĕ пус хушса пырасси те, Кагаевăнни пек кермен евĕр çурт-йĕр лартса ăна овчаркăпа сыхласа пурăнасси те мар. Епле пулсан та, пирĕн халăха ытларан ытла усă кӳрекен çынсем пулса çитме тăрăшмалла...

Алăк уçăлса хупăнни илтĕнчĕ те, Лариса картах сиксе каялла çаврăнса пăхрĕ. Пӳрте хайхи Кагаева патĕнче пурăнакан хĕрача кĕнĕ иккен. Вăл темиçе утăм тусанах, Лариса ун патнелле пырса аллине тăсрĕ.

— Паллашар-и санпа? — кăмăллăн йăл кулчĕ вăл.

— Ман хăлха илтсех каймасть, хытăрах кала,— терĕ хĕрача.

— Паллашас тетĕп санпа! — кăшкăрнă пекех каларĕ вара Лариса.— Эс мĕн ятлă-ха?

— Христин эпĕ...

— Мана Лариса, теççĕ!

— Хитре ят санăн... лайăх!

— Санăн хăвăн та лайăх-çке?

— Юратмастăп хам ята. Шкулта вĕреннĕ чух ачасем манран Христос тесе мăшкăллатчĕç...

— Кил-ха, иксĕмĕр ларса калаçар кăштах! — малти сак çинелле кăтартрĕ Лариса.

— Ларма вăхăчĕ çукрах çав манăн,— пуçне пăркаларĕ Христин,— каç пуличчен выльăхсем валли шыв кӳрсе тултармалла, аппа тата урай çуса тухма хушрĕ...

— Ĕлкĕретĕн! Эп хам та пулăшăп сана, паян манăн ним те тăвас çук-ха... — Лариса ăна хулĕнчен тытса ирĕксĕр тенĕ пекех хăйпе юнашар сак çине лартрĕ.

— Миçере эсĕ, Христин?

— Ватăлтăм ĕнтĕ... — çĕрелле пăхса йăл кулса илчĕ хĕр.— Кăçал çуркунне вунтăххăра кайрăм.

— Сăнран пăхсан, сана вунулт-вунçич çултан ытла памалла мар.

— Асси эпĕ, пĕчĕккĕ, çавăнпа вăл...

— Ним те пĕчĕккĕ мар, вăтам. Пурте ман пек тăсланкă пулмаççĕ-çке! — кулчĕ Лариса.

— Эс хитре, юратмалла...

— Эс хитре мар-им тата? Пăх-ха, ӳтӳ шап-шурă, çӳçӳ-пуçу сап-сарă, куçусем уяр кунхи пĕлĕт пек...

— Ытла та кĕнекере çырнă пек калаçатăн-çке эсĕ...

— Эп тĕрĕссине калатăп!

— Мана хăлха илтменни пĕтерет. Çынсем пек пурăнса курас çук эп нихçан та... Ĕçе те илмеççĕ мана. Çуркунне аппаран ыйтмасăрах ытти хĕрсемпе пĕрле вербовкăпа кайма тăрсан та пăрахăçларĕç, хăлхасăррисем кирлĕ мар, терĕç... Питĕ хытă макăртăм çавăншăн, ниçта кайса кĕме пĕлмерĕм çав!

— Мĕнрен пулнă вара вăл санăн?

— Пĕр вуниккĕре чух хытă шăнса чирленĕ хыççăн пăсăлса юлнă.

— Тухтăрсем патĕнче пулнă-и? Вĕсем мĕн теççĕ?

— Атте илсе çӳрекелерĕ те, усси пулмарĕ. Халь ĕмĕрлĕхех чăлах пулса юлтăм ĕнтĕ, ним тума та çук. Тепĕр чух пурăнас килми те пулать. Кайăттăм та сикĕттĕм пĕр-пĕр тарăн çырмана...

Хĕр хурланчĕ пулмалла, куçĕсене шăлкаласа илчĕ. Ларисăн ăна çав тери хĕрхенес килсе кайрĕ, вăл Христина хулпуççинчен ыталаса илчĕ.

— Ун пек шухăшлама та, калаçма та кирлĕ мар, Христин! Этем пурнăçĕнче темле йывăрлăхсем пулсан та, вĕсене тӳссе ирттерсе яма тăрăшмалла... Эпир çамрăк вĕт-ха! Пурăнан пурнăçра начарри çеç мар, лайăххи те, савăнмалли те пулатех пирĕн, çавна шанас пулать!

— Манăн пулмасть... — пуçне пăркаларĕ Христин.

Лариса ăна пилĕкĕнчен ыталаса илчĕ.

— Пулать вăл, тусăм, пулать! Курăн акă!

— Тарçăн мĕн савăнмалли пултăр? — Ларисăран ыйтса пĕлме ĕмĕтленнĕ пек пăхрĕ хĕр.— Тарçă та мар, чура вĕт эпĕ, чĕмсĕр чура! Иртен пуçласа сĕм-тĕттĕмччен лăш курмасăр ĕçлетĕп çеç. Ниçта тухса çӳрейместĕп, никампа хутшăнмастăп, ним курмастăп... Йытă пек ывăнса çитетĕп те кун каçа, хăш чух ура салтмасăрах çывăрса каятăп. Ыр сăмахне çавах илтместĕн... Ятласси, вăрçасси вара — кашни кунах...

— Итле-ха, Христин...— Лариса ăна тата хытăрах ыталарĕ.— Çак кил хуçи, Ангелина Егоровна, эппин,

кам пулать саншăн? Тăван-и, хурăнташ-и е пачах ют çын?

— Ман анне йăмăкĕ вăл. Аппа тетĕп эп ăна. Ун патне нушапа килсе янă мана...

— Мĕнле... нушапа?

Христин чĕнмерĕ, темиçе самант хушши Лариса куçĕнчен тинкерсе пăхрĕ. Иккĕленчĕ пулмалла вăл: каласа памалла-ши ку ют хĕре хăй çинчен, çук-ши? Тата мĕн усси ăна каланинчен? Вăл ăна çавах нимĕнпе те пулăшас çук, ун йывăр шăпине çăмăллатас çук. Анчах Лариса ăна чи çывăх тус-тăван пекех ыталани, ун çине питĕ кăмăллăн пăхни Христин иккĕленнине çавăнтах пĕтерсе хучĕ. Вара ерипен калама пуçларĕ...

— Пирĕн атте эп хăлхасăр пулнă хыççăн тепĕр çултанах сарăмсăр вилсе кайрĕ — ун чĕри çурăлнă, терĕç. Çемье пысăкчĕ, манран аслисем те, кĕçĕннисем те пурччĕ. Вĕсем вĕренкелерĕç-ха, анчах эпĕ илтми пулнă хыççăн килтех лартăм. Халь эпĕ хытăрах каланине кăшт илтетĕп ав, малтанах пĕртте илтместĕмччĕ... Таçти хăлхасăр-чĕлхесĕрсен шкулне вырнаçтарма та хăтланкаларĕç мана—темшĕн ĕç тухмарĕ: те вырăнĕ пулман, те урăх сăлтавпа... Пĕррехинче вара çак Анкĕлин аппа пирĕн пата пырсан аннене каланă: «Парса яр мана ку хăлхасăр ачуна, хампа пĕр чашăкранах çитерĕп-ĕçтерĕп, тумлантарăп, хам ача пекех усрăп, сана хăвна та çăмăлтарах пулать, пĕр çăвар катăлать»,— тенĕ. Анне хĕпĕртесех кайнă уншăн... Хăй ун чухне чирлекелеме тытăннăччĕ, йывăрччĕ ăна пире усрама... Тата çичĕ юта мар, хăйĕн тăвание, йăмăкне, парса ярать-çке ачине! Анчах ман пурнăç кунта çичĕ ют патĕнчинчен те йывăртарах пулчĕ çав. Тăванса çитнипе тухса тарма та шутласаттăм, анчах ниçта кайма та çук-çке! Анне вилчĕ, ытти ачисене ял Совечĕсем унтакунта вырнаçтаркаларĕç — пĕрисене ФЗОна, теприсене — ача çуртне, аслисем çын пулчĕç ĕнтĕ, кĕçĕннисем те вĕренсе пыраççĕ, эпĕ çеç тарçă пулса юлтăм... Мĕн курман пуль! Кăмакаран вĕри шывлă мăн чугуна кăларнă чух тăрук тӳнтерсе пĕçĕсене те пĕçертсе янă, аслăк çинчен выльăх апачĕ антарнă чух ӳксе урана та мăкăлтанă — пĕр виçĕ уйăх уксахласа çӳрерĕм,—пĕрре никам çук чух сĕрĕм тивнипе чут çеç вилмен... Темме вилмен-çке пĕрех хут! Ĕçĕ-пуçĕ пĕтетчĕ вара, тек тарăхса-хуйхăрса пурăнасси те пулмастчĕ...

— Апларах-ха, эппин, сан пурнăç... — Христина шеллесе, урăх ним калама та аптрарĕ Лариса.

— Çавăн пек çав,— ассăн сывласа ячĕ Христин.— Усалне нумай курнă, ыррине курасси пулас çук.

Пĕр хушă чĕнмерĕç. Кăшт тăрсан Лариса, Христин куçĕнчен пăхса, çапах та лăплантарма пикенчĕ:

— Тен, ырри те пулĕ-ха, Христин... Пурнăç ялан пĕр пек пымасть.

— Ан йăпат эс мана,— терĕ ăна хирĕç Христин.— Пĕлетĕп эпĕ... Мĕн такăнса ўкичченех çапла пулать. Ним те улшăнмасть. Аппа хăй вăл улпут майри пекех пурăнать, хăй аллипе нимĕн те тумасть, килти ĕçсем пĕтĕмпех ман çинче — выльăхĕ-чĕрлĕхĕ, кайăкĕ-кĕшĕкĕ, пахчи, апачĕ-çимĕçĕ, пурте! Вăл лавккине кайса килет те, какăриччен апат çинĕ хыççăн тăсăлса выртать пĕр кана, унтан тăрать те — ăна туман та куна туман, ку апла мар та леш ун пек мар, тесе кăшкăрма тытăнать. Шарламинччĕ хуть! Мĕн тумаллине эпĕ унсăрах пит лайăх пĕлетĕп те — ал çитмест-çке!.. Ўсĕрĕлсен пушшех усал, çвер пекех пулса каять. Тўрех пĕр-пĕр япала илсе ярăнтарать мана — хуть те ăçтан лектĕр... Кайса пытанатăп вара ăçта та пулин, вăл урăлса çитессе кĕтетĕп. Ĕçки-çикине час-часах тăвать хăй, унсăр пĕр эрне те иртмест пуль. Темле çынсене ертсе килет-çке — пĕрине те палламастăп, темшĕн ĕçеççĕ — мур пĕлет вĕсене! Мăнтăр пирки, укçа нумайййипе ĕнтĕ, мĕншĕн тата! Уй, тĕпĕртетеççĕ вара, юрлаççĕ, ташлаççĕ, чисти ахăрсамана! Ниçта кайса кĕрейместĕп ун пек чух — ăна пĕçер те куна ăшала, лешсем тухса кайсанах урай çу, ўсĕрсем вĕсем тепĕр выльăхран та ытларах вараласçĕ вĕт — урайĕнче лапра-çĕпре, чĕлĕм тĕпĕ, сурчăк, хăсăк... Курма пултараймастăп! Анчах тасатасах пулать. Тепĕр кунне хăй лавккаран таврăннă тĕле пўрт ăшчикки тап-таса та çап-çутă пулмасан — çисех ярать!

— Хăй çумасть ĕнтĕ вăл? Ун хăнисем пулнă-çке, вĕсем вараласа хăварнă? — тарăхса ыйтрĕ Лариса.

— Уй, ма çутăр?! Тата çăваймасть те вăл! Пĕшкĕнеймест! Асăрхамарăн-и, хырăмĕ мĕн пысăкăш — виçĕ пăт çу та пулĕ унта. Мухмăрпа аптранă кунсенче аттине те хам тăхăнтартса яратăп. Мунчара та эпех çăватăп ăна, хăй ытлашши çисе тултарнă ĕне пекех пашкаса выртать сак çинче. Питĕ йывăр унпа пурăнма... Мана çеç мар, пурне те тиркет вăл, ун шучĕпе, тĕнчере хăйĕн-

чен ăсли никам та çук... Асту акă, сана та тиркет пулĕха пурăна киле, унăн йăли çапла... — Христин калама чарăнса Лариса куçĕнчен пăхрĕ.— Эп сана шанатăп... Асту, эп каланисем çинчен ан шарла ăна, пĕлсен — вĕлерет вăл мана...

— Çук, çук, нихçан та çăвар уçмастăп, эс мана çав териех айван тесе шутлатăн-им? — ĕнентерсех каларĕ Лариса.— Анчах ун çинчен каласа панăшăн чĕреренех тав тăватăп, манăн унпа ĕçлемелле-çке, вăл мĕнле çын пулнине пĕлес пулать... Аппу халь ăсатма кайнă çын мĕнлескер тата, çав Васюков тени?

— Этем мар вăл, чĕр шуйттан! — терĕ Христин.— Ăна курсан, сывлăш та пӳлĕнсе ларать манăн...

— Мĕншĕн вара ун пекех?

— Малтанхи арăмне хĕне-хĕнех чире ертсе вĕлерне. Арăмĕ пит лайăх çынччĕ, пĕрре килнĕччĕ кунта. Пичĕ-куçĕ кăн-кăвак, пăхма хăрушă! Аппана шутсăр хытă вăрçрĕ...

— Мĕн пирки?

— Ун упăшкине астарнăшăн...

— Çав ӳсĕр Васюкова-и? — тĕлĕннипе куçĕсене чарсах пăрахрĕ Лариса.— Вĕсем... Ангелина Егоровнăпа иккĕш... туслă-и? Кай, ĕненес те килмест!

— Мĕн ĕненмелле марри пур унта? Вĕсем пурăнма пуçлани виç çул та çитрĕ пуль.

— Тьфу! Ирсĕр...

— Леш килет те, малтан иккĕшĕ юнашар ларса шут шăрçипех тем шутлаççĕ, унтан ĕçеççĕ-ĕçеççĕ те... Васюковĕ кунтах юлать.

— Санран та вăтанмаççĕ-и?!

— Мана çын тесе шутламаççĕ те-ха... Анчах вĕсем пĕрле выртнине пирвайхи хут курма тĕл килсен — ун чух эпĕ, кĕлетре çывăрнăскер, тем ĕçпе пӳрте ир-ирех килсе кĕтĕм те — аппа мана чутах çапса пăрахатчĕ! Кам умĕнче те пулин кун çинчен çăвар уçсан — наркăмăш парса вĕлеретĕп, тесе хăратса пĕтерчĕ. Паллах, эп никама та шарламан. Пуçласа сана калатăп. Çынсем ахаль те пĕлеççĕ, эп каламасăрах. Мăшкăллаççĕ тепĕр чух манран: Васюков хăшинпе çывăрать сирĕн, Анкĕлпа-и, санпа-и? Тен, черетпе?—теççĕ... Питĕ тарăхатăп çавăншăн. Пĕлмен çынсем чăнах тем те шутлама пултараççĕ! Васюковĕ халь тепре авланнă, питĕ çивĕч арăм

илнĕ, тет, касак пекех, тет, анчах хăй халь те кунта çĕр касĕкалать-ха. Те сисмест лешĕ...

— Ăнран кăларса ямалла япаласем çинчен калатăн эсĕ, Христин!

— Пурăнсан ху та курăн-ха вĕсене, вара, тен, тĕлĕнми те пулăн. Эп хам хăнăхнă ĕнтĕ.

Христин, калаçма чарăнса, чăлан çумĕнчи сехет çине пăхса илчĕ те вĕри шывпа сапнă пекех сиксе тăчĕ.

— Пĕтрĕм! Ара, каç пулать-иç! Часрах шыв патне чупас манăн...



Вăл çенĕхе тухрĕ те витрисене кĕмсĕртеттерме тытăнчĕ.

— Тăхта, Христин, эп те пыратăп санпа! — кăшкăрчĕ Лариса, хăвăрт кăна тумланма тытăнса.— Ман валли те витресем туп!

Христин ăна илсе каясшăн пулмарĕ, ан пыр, шывне эпĕ хамах тултса тултаратăп, сана шыв йăттарсан аппа вăрçать ак мана уншăн, терĕ, анчах Лариса итлемерĕ ăна, пăтара çакăнса тăракан тепĕр картлă кĕвентепе урайĕнчи пуш витресене илчĕ те унпа пĕрлех тухрĕ.

— Эс мана шыв йăтма та пĕлмест тетĕн-им? Эп те ялта çуралса ӳснĕ, тусăм, çитменнине — чăваш чĕппи...

Çăлĕ аякра-мĕн, тăкăрлăкран пăрăнса тухсан тепĕр урампа чылай пымалла, унтан чалăш-чĕлĕш картлашкасем тăрăх çырмана анмалла.

— Халь аптрамасть-ха, анчах лапра-çĕпре вăхăтĕнче, хĕллехи сивĕре е çил-тăман чух асапланмалăх пур кунта,— шухăшларĕ Лариса, вĕсем витресене тултарса каялла хăпарма пуçласан.

Хӗрсене ял ҫыннисем — арҫынсемпе хӗрарӑмсем те тӗл пулкаларӗҫ. Христинпа пӗрле ют ҫынна, Ларисӑна, курсан, кашниех чарӑнса, кӑшкӑрсах ыйтрӗ:

— Ӑҫтан тупрӑн эс ку хитре майрана, Христин?

— Хӑна килчӗ-им сирӗн пата?

— Хӑна, хӑна! — кӑшкӑрчӗ вӗсене хирӗҫ Христин.— Хаклӑ хӑна!

— Мӗншӗн шыв йӑттаратӑн хӑнуна? Асту, пилӗкӗ хуҫӑлса каять!

— Хуҫӑлма-асть! Ун пилӗкӗ ҫирӗ-ӗп!..

Асса килнӗ шыва картиш варринчи мӑн валашкана ярсан, Христин пушӑ витрисене каллех картлӑ кӗвентинчен ҫаклатса ҫӗклерӗ.

— Эс пӳрте кӗрсе лар ӗнтӗ, манӑн тепӗр виççӗ хутлас пулать,— терӗ вӑл Ларисӑна.

— Ҫук, ҫук, юлмастӑп,— килӗшмерӗ Лариса,— эп те пыратӑп! Шывӗ мана хама та кирлӗ-ҫке! Тата эсӗ урай та ҫумалла, терӗн...

— Аппа ятласа пӗтерет мана куншӑн! Эс хӑна вӗт-ха... епле-ха апла?..

— Ятлаттармастпӑр, ан хӑра.

Вара хӗрсем виҫӗ хут кайса килчӗҫ шыв патне. Картишӗнчи валашкана та, ҫенӗхри каткана та тултарчӗҫ, витрисем те хӗррипе танах пулчӗҫ.

Ӗнтӗ каҫ та пула пуҫларӗ, Кагаева ҫаплах таврӑнмарӗ-ха. Кӗтӳрен килнӗ ӗнене суса кӗрсен, Христин урай ҫӑвас терӗ. Лариса та, ҫийӗнчи кофтипе юбкине хӑвӑрт кӑна хывса, кивӗрех халат тӑхӑнчӗ те унпа пӗрле ӗҫлеме тытӑнчӗ.

— Иксӗмӗр наччасра ҫуса тухатпӑр!

Христин унран тӗлӗнчӗ:

— Хулара пурӑннӑ пулсан та, ӗҫлеме юрататӑн-ҫке эсӗ!

— Мӗне пӗлтерет вара хулара пурӑнни? — терӗ ӑна хирӗҫ Лариса.— Эс мӗн, унта ӗҫлемесӗрех ҫӑкӑр ҫиеççӗ, тетӗн-им? Халь улпутсем ҫук вӗт, кашниннех ӗҫлес пулать, кам ӗҫлемест — вӑл ҫимест, теççӗ.

— Унта ҫамрӑксем капӑр тумланса, пӗр-пӗринпе ыталанса, урамсем тӑрӑх киттар каласа ҫеҫ ҫӳреççӗ, тенине илтнӗ те эпӗ...

— Тӗрӗс, пур ун пеккисем, сӑвӑс йышшисем. Анчах нумай мар. Тата вӗсене никам та ҫын вырӑнне хумасть.

— Шăпанасем-и вĕсем?

— Апла каласан та юрать. Ыттисем вара пурте е вĕренеççĕ, е фабрикăсенче, заводсенче ĕçлеççĕ. Тем те тăваççĕ — хурçă та шăратаççĕ, шутсăр кăткăс машинсем те туса кăлараççĕ, пир-авăр та тĕртеççĕ, вуншар хутлă çуртсем те купалаççĕ...

— Хĕрсем те-и?

— Вĕсем те! Ку чухне хĕрсем туман ĕç те çук. Акă, халь Шупашкар урамĕсенче пы-ысăк троллейбуссем çӳреççĕ. Курнă-и эс вĕсене?

— Аçтан курас-ха манăн... Эп Шупашкар хăш тĕлтине те пĕлместĕп çак тарана çитсе.

— Автобус пеккисем вĕсем, анчах икĕ хут пысăкрах тата электричество вăйĕпе чупаççĕ. Çавсене те хĕрсемех тытса пыраççĕ!

— Чăваш хĕрĕсемех-и?

— Чăваш хĕрĕсемех! Ну, паллах, малтан вĕрентнĕ вĕсене...

— Эс те çавăн йышши, эппин...

— Çук, эпĕ сутă тума çеç вĕреннĕ. Икĕ çул. Унччен ялта пурăннă. Сан пекех шыв та кӳнĕ, урай та çунă, колхозра та ĕçленĕ. Эс те ĕçлетĕн пуль колхозра?

— Аппа мана колхоза ямасть. Пирĕн иксĕмĕрĕн килте ĕçлесе те хырăм тăранать, тет. Тепĕр чух хĕрсемпе пĕрле утта та, тыр вырма та каяс килет — аппа хушмасть. Кăçал пĕрререн пĕрре колхоз пахчине çырла татма кайрăм та, уншăн та хытă вăрçрĕ.

— Клуба çӳретĕн-и хуть? Спектакльсем, киносем курма...

— Çу-ук! Кайман. Эс унта кайнинчен мĕн усси, çавах илтместĕн вĕт! — тет аппа. Кинина кайма укçа кирлĕ те... ман çук вăл. Аппа килте çук чух радио турилккине хăлха патнерех тытса итлекелетĕп, çавă çеç манăн.

— Кĕнекесем те вуламастăн пуль ĕнтĕ...

— Кунта килнĕренпе кĕнеке тĕсне те курман. Часах вулама та манатăп, пуквисене те паллами пулатăп пуль!

Хĕрсем урайне çуса алăк патнелле чакса пычĕç.

— Апайтурух, ку мĕне пĕлтерет тата?! — сасартăк илтĕнчĕ вĕсен хыçĕнче Кагаева сасси. Христин илтмерĕ пулмалла, анчах Лариса çийĕнчех тӳрленсе тăчĕ те, тарланă çамкине çаннипе шăлса, кăмăллăн ответ пачĕ:

— Урай ҫăватпăр, Ангелина Егоровна...

— Ăна хам та куратăп, ташламастăр,— терĕ Кагаева, тумтирне хывмасăрах кăмака ҫумĕнчи тенкел ҫине лак! ларса.— Сана мĕншĕн ҫутарать лешĕ, ман ухмаххи! — вăл халь те пуҫне ҫĕклемесĕрех ĕҫлекен Христин ҫине кăтартрĕ.— Хăй пĕччен ҫуса тухайман-им хальччен? Паҫăрах хушса хăвартăм-ҫке ăна! Ы-ых, кахал, эсрелĕ! Хырăмне тултарас та ăҫта та пулин тăрăнса ыйха ҫапас шухăш анчах унăн... Урайне унпа пĕрле ҫума сана вăл хăй каларĕ пуль-ха?

— Ҫук, Ангелина Егоровна, эп хам! Хамăн кăмăлпа! Малтан ик-виҫ хут шыв патне кайса килтĕмĕр, унтан урай...

— Шыв та кӳртерчĕ-и сана?! — Ларисăна кăшкăрсах пӳлчĕ Кагаева. Вăл кăшкăрнине илтсе, Христин урай ҫума пăрахса тӳрленсе тăчĕ те ун ҫине питĕ хăраса пăхрĕ.— Эс мĕн хăтланатăн, шуйттан пукани?! Хăнана мĕншĕн ĕҫлеттеретĕн? Ак, аллунти йĕпе мунчалуна тытăп та, туртăп та туртăп пуҫу урлă!

— Мĕншĕн, Ангелина Егоровна? — тӳрех Христин хутне кĕчĕ Лариса.—Унăн ним айăпĕ те ҫук. Вăл мана питĕ илсе каясшăн марччĕ, анчах манăн хамăн каяс килчĕ, сирĕн яла курмалла, ҫăл тĕлне пĕлмелле. Чăнах хам ҫине тăтăм!

— Ҫынсем те курчĕҫ-и вара сире?

— Темиҫе ҫын тĕл пулчĕ. Ман пирки Христинран «кам вăл?» тесе те ыйткаларĕҫ хăшĕсем...

— Пĕтрĕ пуҫ! — мăнтăр пĕҫҫине шап! ҫапрĕ Кагаева.— Намăс. Ҫынсем мĕн шутларĕҫ пуль ман ҫинчен!..

— Мĕнех шутлама пултарнă вара вĕсем?

— Мана ахаль те тарҫăпа пурăнать, теҫҫĕ. Пĕр махмучĕ, комсомолсен секретарĕ, пĕркун куҫранах каларĕ: помещĕк эсĕ, есплататтăр, терĕ. Ҫак Христин пирки тапăнаҫҫĕ, эп ăна, тăлăха, хĕрхеннипе усранине пĕлмеҫҫĕ! Халь тата ытларах тиркеҫҫĕ ĕнтĕ: ун патне хуларан помошник ярса панă, анчах вăл ăна ҫав кунах хăй валли ĕҫлеттерме тытăннă! Каллех ман ята пăсаҫҫĕ, анчах эпĕ, хĕрĕм, виличчен партейнăй те пулса курасшăн-ха. Партине мана тахҫанах йыхăраҫҫĕ, ерҫӳ ҫуккипе ҫеҫ кĕреймерĕм ҫак таранччен...— Вăл кăштах лăпланнă пек пулчĕ.— Ну, апла пулсан, ҫукаласа пĕтерĕр те урайне, ҫикелесе выртса кансан та юрать пуль.

Лавккине паян каяймарăмăр ĕнтĕ. Нимех те мар ун-шăн, пире валли ыран та кун пур...

Кагаева тенкел çинчен тăрса тумтирне хывасшăн пулчĕ, анчах çав вăхăтрах Лариса асăрхаттарчĕ ăна:

— Ангелина Егоровна, сан çурăму та, çаннусем те çара çӳпĕ! Фуфайкине тухса силлес пулать...

— Э-эй, шуйттан! — тарăхса кайрĕ Кагаева.— Çав пьянчука пула хам та темиçе хут ӳкрĕм мар-и! Çӳреççĕ сĕтĕрĕнсе, вĕсене ăсатса яр тата... Тьху!

Вăл тулалла тухсан, Христин Лариса çине пăхрĕ те, пуçĕпе алăк еннелле сулса, йĕрĕнерех кулса илчĕ:

— Ӳкнипех çавăн пек пулмасть ĕнтĕ. Йăваланнă вĕсем вăрманта, кухайкине сарсах...

## 7

Кун каçа самаях ывăннăскер, Лариса часах çывăрса кайрĕ. Питĕ лăпкă, тĕлĕк-мĕн курмасăрах çывăрчĕ вăл. Анчах çур çĕр иртсен чылайран тахăшĕ малти чӳречерен шакканине илтсе вăртах вăранса кайрĕ. Куçне уçрĕ те темиçе самант хушши итлерĕ... Пӳртре шăпах, çӳллĕ кравать çинче кил хуçи йывăррăн сывласа хар-латтарни çеç илтĕнет.

— Тăк-тăк-тăк... — тутараççĕ чӳречерен. Кăшт тăх-таççĕ те каллех шаккаççĕ. Унтан саспа калани те ил-тĕнчĕ: — Ангелин инке! Егоровна! Тăр-ха!

Пĕр хушă Лариса хăйне вырăн туса панă кив диван çинче ним хускалмасăр выртрĕ. Кăштах хăрани те пул-чĕ унăн. Мĕнле çынсем çӳреççĕ сĕм-çĕрле? Ырăпа-и, усалпа-и? Тен, вăрă-хурахсем? Çук-ха, хурахсем пул-сан шаккамалла мар, вĕсем тӳрех çĕмĕрсе кĕме тытăн-малла... Анчах та, тен, юри улталаса уçтарасшăн? Кĕреççĕ те — çаратаççĕ...

— Шак-шак-шак...

Лариса сиксе тăчĕ те кравать патне чĕрне вĕççĕн чупса пырса кил хуçине вăратма тытăнчĕ:

— Ангелина Егоровна! Шаккаççĕ, такам сана чĕнет...

Ыйхи йывăр иккен лешин. Çаплах харлаттарать. Лариса ăна хулпуççинчен тытса силлерĕ:

— Вăран-ха! Такам килнĕ сирĕн пата!

— Э? Мĕн? — тинех вăранса куçне уçрĕ Кагаева.

— Чӳречерен шаккаççĕ, тетĕп-çке! Чылайранпа ĕнтĕ...

— Кам шуйттанĕ-ши! Каллех пьянчуксем эрех тархаслама килчĕç пуль ĕнтĕ, çĕр çăтманскерсем!

— Пĕлместĕп...

Çав вăхăтра чӳречерен татах тăкăртаттарчĕç. Кагаева хăйĕн çӳллĕ кравачĕ çинчен сăртран шуса аннă пекех шуса анчĕ те урам енчи чӳрече патне пырса хаяррăн кăшкăрса ыйтрĕ:

— Кам унта? Мĕн чорчĕ кирлĕ?

— Уç-ха часрах, эпĕ ку, Шакмаков! — илтĕнчĕ тултан.

— Мĕн эсĕ çĕр хута сĕтĕрĕнсе çӳретĕн... ваймать! Килте эрех çук манăн, тӳс ирччен, шуйттан карланки!

— Эрех мар-ха, Егоровна! Ĕçпе эпĕ... Эс уç часрах!

Кагаева электричество çутса ячĕ, кăмăлсăр мăкăртатса атăпа фуфайка тăхăнчĕ те тула тухса кайрĕ. Лариса каллех вырăнĕ çине выртрĕ, анчах ыйхи вĕçсе кайрĕ ĕнтĕ унăн.

Вăл чăлан çумĕнчи куккуклă сехете пăхса илчĕ: иккĕ иртсе виççĕ çине кайнă иккен. Мĕнле çын килсе кĕме пултарать çак вăхăтра? Çынни палланăскерех пуль-ха, ахаллĕн Кагаева ăна хирĕç тухас çук, хăваламалла та ямалла. Каллех паçăрхи Васюков йышши мар-ши? Пит те тĕлĕнмелле-çке ку...

Сехет шаккарĕ, вăхăт шурĕ. Картишĕнче йытă вĕрме тапратрĕ, хытăран хытă, хытăран хытă, пырне çурса пăрахас пек. Унтан Лариса урам хапхи нăтăртатса уçăлнине, автомобиль моторĕ кĕрлеме тытăннине, машинĕ картишнелле кĕнине илтрĕ.

— Тахăшĕ кунта çĕр выртмалла килнĕ пулмалла... — шухăшларĕ хĕр.— Ют çынах мар, эппин...

Кĕçех мотор сасси хыçаларах кайса шăпланчĕ. Унтан пилĕк минут иртрĕ, вуннă, çирĕм — пӳрте никам та пырса кĕмерĕ. Кил хуçи хăй те таçта кайса çухалнă пекех пулчĕ.

— Мĕншĕн апла-ха ку?.. Мĕне пĕлтерет? Мĕн тăваççĕ вĕсем? — хăрамах пуçларĕ Лариса.— Ангелина Егоровнăна юри чĕнсе тухса тем тумарĕç пуль те? Христина вăратас мар-ши? — Вăл каллех диван çинчен тăрса картиш енчи чӳречерен пăхрĕ, анчах ним те кураймарĕ. Тулта тĕп-тĕттĕм. Картишне тикĕт тултарса лартнă пек. Машина таврашĕ те палăрмасть, çынсем çӳрени те куранмасть... Лариса чӳречене хуллен кăна пĕр виç пӳрне сарлакăш уçрĕ те сывламан пек пулса

итлеме тытăнчĕ. Сасăсем пур-мĕн: темскер хыттăн кăшăрт! кăшăрт! шăк-шак! чăнкăрт! тăвать. Хушăран ҫынсем те мăкăртатаҫҫĕ. Кагаева сасси те илтĕнчĕ.

— Машин ҫинчи япаласене пушатаҫҫĕ, темле тавар илсе килнĕ пулмалла,— терĕ Лариса хăй ăшĕнче.— Анчах та, тавар пулсан, ăна тӳрех магазин складне хумалла-ҫке? Ҫĕрле пулнă пирки кунта пушатаҫҫĕ-ши? Ирччен?

Вăхăт чылай иртрĕ. Пĕр сехет те пулĕ. Лариса куҫĕсене уҫсах выртрĕ. Унтан ҫенĕхе ҫынсем кĕнине илтрĕ те, часрах стена еннелле ҫаврăнса, утиялпа пуҫĕ ҫийĕнченех витĕнчĕ.

Малтан Кагаева хăй кĕчĕ пулмалла, ун хыҫҫăн — ют ҫынсем.

— Хуллентерех эсир, ман хĕрсем ҫывăраҫҫĕ,— асăрхаттарса каларĕ Кагаева, чăлан еннелле утса.

— Мĕнле хĕрсем? Санăн пĕр хĕр кăначчĕ мар-и? — ыйтрĕ тахăшĕ.

— Хăна хĕр пур тата... Паян ҫеç килчĕ-ха...

— Мĕнлескер? Хитре-и? Тен, пире кăтартăн ăна? Пирĕн каччă пур, кĕҫĕрех ҫураҫма пултаратпăр,— шӳтлесе илнĕ пек турĕ тепри.

— Ан янра-ха кирлĕ мара!— пӳлчĕ ăна Кагаева.— Атьăр, чăлана кĕрĕр те тĕк ларăр, эп халех сире кирлине илсе кĕретĕп...

Кагаева малтан чăланти лампочкăна ҫутса мăн пӳлĕмрине сӳнтерчĕ. Унтан ҫенĕхе тухса кĕчĕ. Лариса ун аллинче эрех кĕленчисем пĕр-пĕрине тĕртĕнсе чăнклатнине илтрĕ.

— Кай, каллех ĕҫеҫҫĕ! — йĕрĕннипе ҫӳҫенсех илчĕ Лариса.— Иккĕмĕш хут паян! Ниушлĕ кил хуҫи хăй те ĕҫет-ши? Мĕнле пурăнмалла капла? Ĕҫекен ҫынсемпе ырринех курас ҫук...

Чăланта чăнах ĕҫрĕҫ. Малтан, Кагаева асăрхаттарнипе пулас ĕнтĕ, ҫав кĕтмен ҫĕртен килсе кĕнĕ ҫынсем хуллентерех калаҫрĕҫ, сăмахĕсене уйăрса илме пулмарĕ, анчах кăшт тăхтасан хĕрчĕҫ пулмалла та чаракĕ пулмарĕ, шапăлтатрĕҫ кăна. Вĕсем мĕн ҫинчен калаҫнине Лариса йĕркеллех ăнланса ҫитеймерĕ, ҫапах та уйрăм сăмахсене уҫҫăнах илтсе выртрĕ.

— Калымне халех парăр, унсăр вовҫҫă тиеттерместĕп, чиччас шăхăртатăп та тыттаратăп, тет шуйттан охранникĕ! Укҫа ҫук-ха халь, пĕркунхи пек, тепре кил-

сен паратпăр, тетĕп. Нишашто килĕшмест, мур, улталасшăн эсир мана, жуликсем, тет. Унччен икçĕр-виççĕр грамм ĕçрĕ-ха хăй. Пуçне кайсан, пушшĕ нахальнăланчĕ — тавай та тавай! Ним тума та çук, пĕр хĕрлĕ хут тыттарма тиврĕ сволăча...

— Ну, таварĕ вара — высшей марки! Шуçĕ те, шиферĕ те...

— Мĕншĕн пит кая юлса килтĕмĕр, тетĕн-и? Ара, эпир шоççасем тăрăх çӳремен-çке, унта çĕрле те контрольсем, патрульсем пулаççĕ, çавăнпа та кукăр-макăр çӳреме тиврĕ, унтан-кунтан, уй-уй урлă, çырма тăрăх, тенĕ пек... Ялсем витĕр вара ураган пекех тухрăмăр, нимĕнле арçури те хуса çитес çук пире!

— Ан янрăр, ан янрăр! — каллех асăрхаттарчĕ Кагаева.— Хĕрсене вăрататăр!

Тĕрĕссипе, вăл çак калаçăва Лариса илтсе ăнланасран хăрарĕ...

— Мĕн янраманни пур халь тин, камран хăрамалла? — терĕ ăна хирĕç тахăшĕ.— Ĕçне тунă, çитес çĕре çитнĕ эпир. Уйри тăмана та курман пире, ялти йытă та палласа юлайман. Шито-крыто!

Лариса чĕри картах сиксе илчĕ. «Шито-крыто...» Камран илтнĕччĕ-ха паян ку сăмаха? Э-э, леш ӳсĕр Васюков каларĕ! Кайран ăна Чатта вăрçса тăкрĕ: «Шито-крытосем тума пĕлетĕр çав эсир»,—терĕ... Кунта час-часах калаççĕ иккен çавăн пек!

Хĕр иккĕленме пуçларĕ: темле питĕ таса мар ĕç, преступлени туман-ши ку çынсем? Патшалăх пурлăхне вăрламан-и? Чăнах ара! Мĕншĕн охраннике «хĕрлĕ хут» — вун тенкĕ тыттарса хăварнă? Мĕншĕн кукăр-макăр çулсемпе çӳренĕ, ялсем витĕр «нимĕнле арçури те хуса çитмелле мар» ыткăнса тухнă? Камран тарнă вĕсем? Япалисене кунта пушатрĕç-ха... Анчах, тепĕр тесен, Кагаева вăрланă япаласене йышăнас çук-çке. Преступлени вăл. Уншăн суд тăваççĕ. Суту-илӳре вунпилĕк çул ытла пĕр кăлтăксăр ĕçленĕскер, ниушлĕ «сулахай» таварсемпе çыхланать? Мĕн тума кирлĕ ăна ун пек хăтланни? Пулма пултараймасть кун пекки! Хăй паçăр кăна пурнăçра нимрен ытла тĕрмерен хăратăп эпĕ, терĕ ав...

Пĕр сехет пек ларсан, çĕр варринчи «хăнасем» тухса кайрĕç. Лариса утиял айĕнчен хăрах куçпа пăхсах курса юлчĕ: виççĕн пулнă вĕсем. Анчах тĕттĕмре пĕрин

сăнне те курмарĕ. Алăк патне çитсен, пĕри, хулăн саслăскер, чарăнса тăрсах каларĕ кил хуçине:

— Ангелин Егорна, эппин, ĕçне часрах тăвасчĕ! Укçа питĕ кирлĕ!

— Укçи яланах кирлĕ вăл,— терĕ Кагаева.— Малтан шанчăклă хуçа тупас пулать-ха. Пĕрре шăхăрнипех пулмасть ку. Кĕтме тивет...

Вăл «хăнасене» картишĕнчен кăларса урам хапхине питĕрсе кĕчĕ те, вырăнĕ çине эхлете-эхлете хăпарса выртса, тутлăн анасласа илчĕ.

— Ах, тур çырлах, тур ан пăрахах,— пăшăлтатрĕ унтан.

Лариса хăй пĕтĕмпех курни-илтнине пĕртте систермерĕ, çывăрнă пек пулса выртрĕ. Анчах вăрахчен çывăраймарĕ вăл. Шутсăр тĕлĕнтерчĕ ăна сĕм-çĕрле çавăн пек «хăнасем» килсе кайни. Пăлхатрĕ. Иккĕлентерчĕ. Самаях хăратрĕ тата. Сехет тăрринчи куккук тăватă хут авăтсан тин тĕлĕрсе кайкаларĕ хĕр.

Ирхине вăрансан та тӳрех çавăн çинчен аса илсе шухăшлама тытăнчĕ. Чылай выртрĕ ним хускалмасăр. Кагаева хăй çывăратчĕ-ха, Христин хăйĕн яланхи ĕçĕсене тума тухса кайма та ĕлкĕрнĕ. Ларисăна шухăшлама никам та кансĕрлемерĕ.

— Çук, кунта май килмест пуль,— терĕ вăл хăй ăшĕнче.— Юрамĕ унпа пĕрле пурăнма. Такамсем çӳреççĕ ун патне, тем тăваççĕ? Аяккарах пулас пулать. Хам тĕллĕн пурăнас...

Кайран, Кагаевăпа пĕрле чей ĕçме ларсан, çапах та ыйтрĕ:

— Мĕнле çынсем килсе кайрĕç ара çĕрле? Темскер илсе килчĕç пулас? Эп кăшт çеç, тĕлĕк курнă пек, сиссе юлтăм...

Кагаева ун çине чăрр... пăхрĕ. Куçĕсем темле сивĕн, курайман пек çуталса илчĕç. Анчах хăй çавăнтах кулянçи туса илчĕ.

— Э-э, пустуй кăна! — терĕ вăл, çăвар туллин чăмласа.— Хам валли кăштах шифер, кăштах шуç çыртарсаттăм та, паллант шоферсем çавна кĕртсе парса хăварчĕç çула май... Чăрмавшăн кăштах сыптармалла пулчĕ, шоферсемпе унсăр ĕç тума çук-çке!

— Сирĕн çурт-йĕр тăррисем чиперех пекчĕ мар-и? Татах витес тетĕр-им? — хăюсăртарах ыйтрĕ Лариса.

— Саппас кармана çурмасть, теççĕ ăслă çынсем.

— Вăл тĕрĕс-ха... — килĕшнĕ пек турĕ Лариса, анчах хăйĕн иккĕленесси пĕтмерĕ. Кагаева картишне тухсан, вăл чăланта çĕрулми шуратса тăракан Христин патне пырса ыйтрĕ:

— Эсĕ çĕрле такамсем килсе кайнине сисмерĕн-и?

— Сисмен, анчах лупас айне шанкă илме кайсан ăнлантăм. Каллех шуç-тимĕр листисем, шихвер купалана унта.

— Епле... каллех?

— Каллех çав. Кăçал çăва тухнăранпа виç-тăват хут та пулчĕ ĕнтĕ ун пекки. Малтан илсе килсе хураççĕ, унтан тиесе каяççĕ. Ялан çĕрле тата, çын курман чух.

— Ангелина Егоровна ăна хăй валли илтĕм, тет-çке?

— Суять! Мĕн тума кирлĕ ăна тимĕр-шихвер? Пĕтĕм çурчĕсене виçĕмçул çеç çĕнĕрен витсе-иç? Сутать ăна, курăн акă. Укçа тăвать. Ĕлĕкхи усламçăсем пекех вăл, кашни утăмрах улталать çынсене, шутпа унăн тахçанах тĕрмере лармалла та, анчах никам та сисмест пулмалла. Тата тусĕсем нумай унăн, çавсем пулăшаççĕ пулас. Хăлха илтмесен те, куç курать-çке манăн...

— Мĕнле туссем вĕсем? Камсем?

— Çав кĕçĕр килсе кайнисем те ун тăшманĕсем мар ĕнтĕ, тусĕсемех. Ĕççене пĕрле тăваççĕ. Районри начальниксемпе те килĕштерсе пурăнма пĕлет. Пĕр хĕрарăм пур унта... вĕшле йытă пек ырханскер, чикан майри пек хураскер. Çав килсен вара виçшер кун пурăнса каять. Ĕçеççĕ, çиеççĕ унпа — шучĕ те çук, çиелтен аппа ăна яланах кучченеçсем тыттарса ярать. Йăлтах курацăп эпĕ...

Тултан Кагаева кĕни илтĕнчĕ те, Лариса Христина часрах айăкĕнчен тĕксе, пўрнипе юнарĕ: ан шарла!

Христин сăмахĕсем çирĕп аса кĕрсе юлчĕç: «Кăçал виç-тăват хут та пулчĕ ĕнтĕ ун пекки... Сутать ăна, курăн акă... Укçа тăвать...»

— Палланă çынсем урлă («по блату!»), хăй валли тесе, патшалăх хакĕпе çыртарса илет те кайран хаклă хакпа сутать пулмалла... — тавçăрса илме тăрăшрĕ Лариса.— Патшалăх пурлăхĕпе спекуляци тăвать, эппин. Христин тĕрĕсех калать пулсан... Тен, ун пек те мар-и? Çын мĕн тунине, вăл мĕнле шухăш-кăмăлпа пурăннине тăруках ăçтан пĕлетĕн? Йăнăшма та пулать.

Эп — ҫӗнӗ ҫын, ӗҫлеме те тытӑнман-ха, манӑн халь, ҫынсем мӗн тунине сӑнаса, хӑнӑхса ҫеҫ пымалла...

## 8

— Пирӗн, хӗрӗм, чӑн малтан инвентаризаци тутарас пулать ӗнтӗ, ҫапла-и? — терӗ Кагаева, арчаран тин ҫеҫ кӑларнӑ мурккаллӑ капӑр тутӑрне тӗкӗр умӗнче ҫыхса.— Эпир пӗр-пӗрне ахаль те нихҫан таулталасҫук, пирӗнтен нихӑшӗ те хӑй ҫумне ҫур пус хӗссе юлас ҫук та-ка, анчах саккун — саккунах, унӑн хӑйӗн ҫирӗп йӗрки пур. Эп хам ку таранччен саккуна пӑсса курнӑ ҫын мар, пӑсассӑм та ҫук, ҫавӑнпа та саккун хушнӑ пекех тӑвӑпӑр. Сире те саккуна пӑхӑнса ӗҫлеме вӗрентнӗ пуль. Халех района шӑнкӑравлӑпӑр, кунти ҫынсене чӗнӗпӗр. Шутлаччӑр, виҫчӗр, турттарса пӑхчӑр та кирлӗ пек актӑ ҫырччӑр, эпир иксӗмӗр вара ал пусӑпӑр та «солидарнӑ» ӗҫлеме тытӑнӑпӑр... Ҫапла-и? Тӗрӗс калатӑп-и? — вӑл Лариса ҫине темле чеереххӗн пӑхса йӑл кулнӑ пек турӗ.

— Епле пултӑр-ха тата, паллах, тӗрӗс! — килӗшрӗ Лариса.

Ку йӗркене вӑл, суту-илӳ шкулӗнче вӗренсе тухнӑскер, хӑех лайӑх пӗлнӗ: иккӗн ӗҫлемелли магазина ҫӗнӗ ҫын пырса кӗрсен, пӗтӗм тавара, укҫа-тенкӗне шута илсе, райпопа е ялпопа «эпир ҫавӑн чухлӗ тенкӗлӗх тавар, ҫавӑн чухлӗ укҫа йышӑнтӑмӑр, уншӑн малашне эпир иксӗмӗр пӗр тан ответ тытатпӑр», тесе договор тумалла. Кайран, пӗр-пӗр ревизи хыҫҫӑн тавар е укҫа тухманни палӑрсан, мӗн чухлӗ ҫитменнине ҫурмалла хывмалла. Вырӑсла ӑна «солидарная материальная ответственность», теҫҫӗ. Паллах, ун пек ӗҫленӗ чух иккӗшӗн те ҫав тери тӳрӗ кӑмӑллӑ пулмалла, пӗр-пӗринчен ним те пытармалла мар, сутнӑ таваршӑн илнӗ кашни пӗр пус куҫ умӗнче шутлӑ пултӑр. Анчах, вӗсен шкулне ОБХССран пынӑ лектор каланӑ тӑрӑх, ҫавӑн пек «солидарнӑ» ӗҫлеме килӗшсе ал пуснӑ ҫынсем хушшинче те тепӗр чух жуликсем пулаҫҫӗ-мӗн. Пӗри вӑрлать, тепри вӑл вӑрланин ҫуррине ним айӑпсӑрах, макӑра-макӑрах тӳлет. Пӗтмен-ха ҫав намӑссӑр-чыссӑр ҫынсем! Хӑйсем пуйса юласшӑн тем те тума пултараҫҫӗ, чи ҫывӑх ҫынна та хӗрхенсе тӑмаҫҫӗ!

...Ларисӑпа Кагаева лавккана пынӑ чух ун умне

çынсем чылай пухăннăччĕ ĕнтĕ. Ватăраххисем Кагаевăна пăт-пат сывлăх сунчĕç, çамрăккисем ытларах Лариса çине пăхрĕç. Мĕнле çĕнĕ çын тата ку? Мĕн туса çӳрет вĕсен «лавăшникĕпе» пĕрле?

— Сутă тумастпăр паян,— терĕ Кагаева, картлашкасем тăрăх утса хăпарнă май, никам çине пăхмасăрах.

— Ай-уй! Мĕншĕн тата?!

— Эпир сана тахçантанпах кĕтрĕмĕр! — хыпăнса ӳкрĕç çынсем.

— Мана пĕр пачкă тăвар анчах кирлĕ...

— Пирĕн килте пĕр шăрпăк та юлман... Парса яр ĕнтĕ тархасшăн!

Пурте Кагаева хыççăн лавкка крыльци патнелле туртăнчĕç.

— Çук, çук! Никама та кĕртместĕп, пирĕн ревизи, инвентаризаци пулать! — аллине çĕклесе пĕлтерчĕ Кагаева.— Ан та ыйтăр, ан та тапăнăр пустуй. Кайăр килĕрсене!

Çав вăхăтра лавкка патне темле лăпсăрккарах хĕрарăм чупса пычĕ.

— Анкĕлин! Сана ял Советне телехвон патне чĕнеççĕ, районтан! — хашка-хашка кăшкăрчĕ вăл.— Темле этем майсăр хаяр хĕрарăм калаçать... Атя часрах!

Кагаева лавккана уçса та ĕлкĕреймерĕ, уççисене часрах кĕсйине чикрĕ те тӳрех крыльца çинчен анса леш хĕрарăм хыççăн утрĕ. Анчах çынсем саланмарĕçха. Вĕсем хушшинче кăмăлсăр калаçнисем илтĕнчĕç:

— Яланах çапла, хăй мĕн тăвас тет — çавна тăвать... Хуçа мар-и!

— Ĕнер кăнтăрла иртсен вуçех те уçмарĕ, иккĕ килсе пăхрăм. Килне кайса чĕнсен — вăрçса тăкать...

— Пĕркун çавăн пек питĕ нушнă-кирлĕ пулчĕ те, кайрăм эпĕ. Чут хăйĕн кашкăрне сăнчăртан вĕçертсе вăслаттаратчĕ ман çине!

— Ытлашши мăнтăра кайрĕ çав...

— Шутсăр улталама тытăнчĕ тата. Каялла тавăрса паракан укçине шутласа илмесен, виçĕ пус та пулин хĕссе юлать!

— Нумай пулмасть нӳретнĕ сахăр сутрĕ-ха... Иртирех пырсан, сахăр миххипе юнашар тулли шыв витри тăнине хам куртăм... Юри тăваççĕ ăна, сахăра йывăрлатма. Пĕлетĕп!

— «Капкăна» çырса ярас пулать-ха пĕрре!

Лариса, лавкка алăкĕ çумне тайăнса, çынсем калаçнине ним чĕнмесĕр итлерĕ. Хăйĕн нимĕнле айăп та çук çинчех ăна сасартăк питĕ намăс пулса кайрĕ, унăн пичĕ те çăтăрах пĕçерсе хĕрелчĕ.

— Çĕрле хăй килĕнчен, чӳрече витĕр парса яракан эрехшĕн тӳленĕ чух вара нимĕнле сдачи те çук,— мăкăртатса илчĕ картлашка çине чĕлĕм туртма ларнă хĕрлĕрех сăмсаллă, сайра сухаллă çын.

— Çавна шута илсе, эсĕ яланах кăнтăрла сакотовкă ту, çĕр хута шыраса ан çӳре! — кулса илчĕ унран тахăшĕ.

— Тепĕр чух кăнтăрла илни çитмест-çке-ха...

— Пьянчуксенчен шăйăртăрах, вĕсене шеллеместĕп эпĕ! — терĕ курпунтарах хĕрарăм, хаяррăн ал сулса.

— Ара, пиртен илнĕ ытлашши укçине вăл хăйĕн кĕсйине хурать-çке, кассăна хывмасть! Пире çаратса хăй пуять...

— Кам хушать сана пуйтарма? Ан кӳп çĕр хута! Кăнтăрла лĕрккени çитмест-и?

«Ав мĕнлерех калаçăççĕ иккен-ха ун çинчен... — шухăшларĕ те Лариса, хăйĕн пичĕ хĕрелнине çынсем асăрхасран лавкка чӳречи еннелле çаврăнса тăчĕ.— Анчах райпо председателĕ Фролов ăна çав тери ырласа калаçрĕ ĕнер. «Кагаевăпа ĕçлеме пулать. Вĕренме те пулать унран. Опытлă çын. Пысăк практик...» Чăнах та, «опычĕ» пур, эппин, тавар илекенсем уççăнах çакăн пек калаçăççĕ пулсан...»

— Эс кам пулатăн-ха тата, хĕрĕм? — ыйтрĕ çав вăхăтра хĕрарăмсенчен пĕри.— Анкĕлин тăванĕ-хурăнташĕ мар-и? Ĕнер ун патне темле çамрăк майра килнĕ, терĕç, çавă пуль-ха эсĕ!

— Никамах та мар... хам ĕçпе килтĕм,— терĕ Лариса хăюсăррăн.

— Ревизор штоль? — ыйтрĕ тепĕр арçынĕ.— Ревизор пулсан, тавар хакĕсем пирки лайăххах тĕрĕсле-ха эс унта. Што-ттă ненормальнă. Эп пĕркун хамăр лавккара ывăл ача валли фухайкă тăхăр тенкĕ парса илтĕм, анчах Çĕнçырма лавккинче çавăн йышшинех çиччĕ çурăпа сутаççĕ. Ыйтрăм Анкĕлинран, тăхăр тенкĕ мар, çиччĕ çурă вĕт, ма улталарăн мана, терĕм. Анчах вăл мана темле кив накладнойсем кăтартрĕ те —

поматтёрни послать турĕ. Чыхăнсах лартăм вара, ним те шарлаймарăм! Мĕнле йĕрке ку?

— Пурăнма пĕлет-ха, мĕн каламалли! Ахальтен мар перекет кассине пинĕ-пинĕпе хурать пуль! — терĕ тата тепри.

Çынсем кун çинчен те пĕлеççĕ иккен...

Кĕçех Кагаева хăй хашкаса çитрĕ те лавккине васкасах уçрĕ.

— Ну, кам мĕн илес тенине илĕр те, халех хупатăп лавккана! Районран пуçлăхсем килеççĕ! — терĕ вăл кĕтсе тăракан çынсене.

Тепĕр çирĕм минутран лавккара никам та юлмарĕ те, Кагаева алăка леш енчен çаклатса хыççăр пукан çине лак! ларчĕ.

— Ну, юратмастăп-çке çав инвентаризаци таврашне! — хаштах сывласа ячĕ вăл.— Чакаланатăн вара ухмах пек...

— Паянах килеççĕ-и? Мĕнле çынсем килеççĕ? — хуллентерех ыйтрĕ Лариса, ун куçĕнчен пăхса.

— Матрена Гавриловнăпа Тимофей Сергейч, иккĕн тан,— терĕ Кагаева, тарланă мăйне тутăр вĕçĕпе шăлашăла.

— Камсем вĕсем?

— Пĕлместĕн-им вăл пуçлăхсене? — тĕлĕннĕ пек пулчĕ Кагаева.

— Ăçтан пĕлес-ха манăн... Эп сирĕн района килни те иккĕмĕш кун çеç те-ха...

— Райпора пулнă-çке эсĕ?

— Унта эпир пĕр Фроловпа кăна калаçнă...

— Матрена Гавриловна — ун хушамачĕ Сятровăха — Фролов заместителĕ, Тимофей Сергейч — бухгалтер-ревизор. Çыннисем лайăх-ха. Анчах майлă шăлма пĕлмесен тир сĕвме те пултараççĕ.

— Мĕнле... «майлă шăлма пĕлмесен»? — куçĕсене чарсах ыйтрĕ Лариса. Ытла тĕлĕнмелле пек туйăнчĕ ăна ку сăмах.

— Çавна та чухламастăн-и? — кулса илчĕ Кагаева.

— Тем, тăна илейместĕп çав. Ун çинчен вĕрентмен пире.

— Мĕнле калас сана? Ну, юрама пĕлмесен, эппин, вĕсемпе хирĕçсе-тавлашса кайсан...

— Мĕншĕн ятарласах «юрамалла» вара? Вĕсем хăйсен служба ĕçĕпе килеççĕ, уншăн шалу илеççĕ, ун-

тан ытла мĕн кирлĕ? — тӳррĕн каласа хучĕ Лариса. Хăй, пăлханма пуçласа, хĕрелсех кайрĕ.

— Э-эх, çамрăк-ха çав эсĕ, хĕрĕм, айван, пурнăç тути-масине пĕлместĕн, ним чу-ухлĕ те пĕлместĕн, тĕрлĕ йышши пуçлăх-начальниксемпе ĕç туса курман,— юрланă пек каларĕ Кагаева.— Сĕрмен урапа тикĕс кусмасть, типĕ кашăк çăвара ыраттарать, тенĕ ваттисем. Ана илтмен те пулĕ-ха эсĕ!

— Урапи тикĕс кустăр тесе, взятка памалла мар-и тата вĕсене?!

— Тепĕр хут айван! Мĕн взятки пултăр? Кам взятка парать? Уншăн суд тăваççĕ. Параканне те, илекенне те. Ахаль çеç тав тумалла. Вĕсен те кăмăлĕ уçăлтăр, хăвна та лайăх пултăр... Э-эх, турăçăм-турă, пурнăç пурăнса ирттересси — аннӳ арки çинче йăпанасси мар ça-ав, хĕрĕм! — ик пĕççине харăс шарт! çапса илчĕ Кагаева.— Тепĕр çыннăн тĕсне те курас килмест, анчах эсĕ унпа йăпăлтататăн, хăнана чĕнсе пĕр сĕтел хушшинче ларатăн, куччене-еç тыттарса яратăн. Мĕншĕн тесен вăл эсремет кирлĕ сана çав вăхăтра, вăл сана усă кӳме, мĕнпе те пулин пулăшма е хурлăхран хăтарма пултарать... Çавăншăнах чунна хытаратăн та шăлна йĕретĕн: ах, Иван Иванч, ыр çын-çке эсĕ, ах, хисеплетĕп сана... Ĕç-ха, çи-ха, ан тирке-ха!

— Хăвăн кăмăлна, хăвăн чунна хирĕç пыратăн, çапла-и? — ăна куçĕнчен тӳррĕн пăхса ыйтрĕ Лариса.

— Э-эй, мĕн кăмăлĕ, мĕн чунĕ пултăр унта! — такама çапнă пекех ал сулса ячĕ Кагаева.— Ĕçне тусанах суратăн ун çине, ăна ярса ĕçтернĕ стаканне те виçĕ хут вĕри шывпа çăватăн — шăрши-марши те ан пултăр унăн!

— Анчах леш çынни сана татах кирлĕ пулсан?

— Каллех тӳсес пулать...

Лариса пуçне пăркаласа йывăррăн сывласа ячĕ:

— Эп пултарас çук ун пек. Çынни патне чун туртмасан, мĕнле-ха кăмăллăн калаçатăн унпа? Паллах, ĕç пирки таçта учреждениpermalink калаçма пулать-ха, анчах киле чĕнсе, юнашар ларса... çук, çук! Сăмахран каласан, ĕнерхи Васюковпа...

Кагаева тăрук пуçне чалăштарса Лариса çине тăй-й... пăхрĕ. Килĕшмерĕ пулмалла ăна Васюкова тирксе йĕрĕнерех асăнни. Унтан хашш! сывласа ячĕ:

— Пурнăç, хĕрĕм, пурнăç хушать тепĕр чух...

— Пирӗн пурнӑҫ хуть те хаҫан та тӳрӗ ҫулпа пымалла. Кукӑр-макӑр сукмаксемпе, суйса-йӑпӑлтатса, ятарласа юрама тӑрӑшнипе мар. Пире ҫапла вӗрентнӗ. Кӗнекесенче те ҫапла ҫыраҫҫӗ...

— Кӗнекере тем те ҫырма пулать, хут тӳсет вӑл, теҫҫӗ, анчах пурнӑҫ кӗнеке ҫинчи пек яп-яка пулса пымасть-ҫке! Пурнӑҫра тумхахсем те, лакӑмсем те пит нумай тӗл пулаҫҫӗ, ҫавсен тӗлӗпе хӑвна сиен тумасӑр, ҫамкупа ҫапӑнмасӑр иртсе кайма пӗлмелле,— юри вӗрентнӗ пек, куҫӗсене хӗссе каларӗ Кагаева.

— Этем пурнӑҫӗнче чи хакли — яланах тӳрӗ чунлӑ пулни, тетчӗ час-часах пирӗн шкул директорӗ Михаил Петрович. Хӑвӑн чысна упрама пӗлмелле, тетчӗ. Чуну таса пулсан, нимрен те хӑрамалли ҫук...

— Юрӗ, хӗрӗм, тавлашмӑпӑр ун пирки,— терӗ Кагаева, пукан ҫинчен тӑрса.— Тӗрӗс калатӑн, тӳрӗ чунлӑ пулнине ним те ҫитмест. Эп те хам ӗмӗре тӳрӗ чунпа, ялан тӗрӗс ӗҫлесе ирттернӗ. Ахаллӗн мана ҫак лавккара та вунултӑ ҫул таран тытас ҫук... Халь акӑ мӗн. Районрисем кӑнтӑрла тӗлне ҫитетпӗр, терӗҫ. Эп ял Советне кайса калаҫам, инвентаризаци комиссинче пӗр-пӗр депутат тата лавкка комиссин членӗ пулмалла. Унсӑр юрамасть, йӗрки ҫапла. Кама хушаҫҫӗ — чӗнтерччӗр. Эсӗ, хӗрӗм, ҫав хушӑра ӳркенмесӗрех ҫырмаран шыв ӑсса килсе унти-кунти тусансене шӑлкала та урайне ҫуса тух-ха. Кунтине ҫеҫ мар, кайри пӳлӗмне те ҫӑвасчӗ. Начальниксем килеҫҫӗ-ҫке, тасарах пултӑр. Уйрӑмах Матрена Гавриловна таса маррине юратмасть. Темтепӗр каласа вӑрҫать — ӑҫта сирӗн санитари, ӑҫта гигиена... Урайне ҫума пултаратӑн иккен-ха эсӗ, килте куртӑм каҫхине... Юрать-и?

— Юрамасӑр! Халех тытӑнатӑп! — терӗ Лариса.

— Вӑт, спаҫҫипӑ сана, хӗрӗм! Яланах ҫавӑн пек килӗштерсе ӗҫлӗпӗр санпа, пӗр-пӗрине пулӑшӑпӑр...

— Мӗн пулӑшни пур унта? Лавккара таса пулни иксӗмӗршӗн те кирлӗ пуль?

— Вӑл апли апла та-ха, эс ҫӗнӗ ҫын-ҫке!

— Ман шутпа, ӗҫе ӑна тӳрех пӗтӗм вӑйран, чуна парса тытӑнас пулать, аран-аран хусканкаласа мар. Анне ҫапла калатчӗ пирӗн...

— Ку та тӗрӗс, хӗрӗм. Ак сана уҫҫисем, шыв патне кайнӑ чух алӑкне питӗрсе хӑварма ан ман, асту...

Вӗсем пӗрлех тухрӗҫ. Ик витрепе ал вӗҫҫӗнех шыв

ăсса килнĕ хыççăн Лариса малтан лавкка ăшчиккине пăхса çаврăнчĕ. Тусанĕ-пăрахĕ пур çĕрте те ытлашши-пех иккен — сентресем çинче те, чӳречесем çинче те. Прилавоксене те чылайранпа нӳрĕ мунчала тĕкĕнмен курăнать. Хăшпĕр таварсем те самаях тусанланнă. Уй-рăмах сулахай енчи кĕтесре, кĕнекесем тытнă çĕрте, ним йĕрки те çук. Хăшпĕр кĕнекесене кутăн тăратса хунă. Чылайăшĕ сарăхсах кайнă. Лариса виççĕш-тăваттăш-не тыткаласа пăхрĕ. Малтан ун аллине кукуруза ӳстер-ме вĕрентекен самаях хулăн кĕнеке лекрĕ. 1957 çулта кăларнă. Унтан кăркка ĕрчетесси çинчен калакан кĕ-неке. 1956 çулта тухнă. Ун хыççăн харăсах алла икĕ сăвă кĕнеки лекрĕ — 1960 çулта кăларнăскерсем.

— Халь пирĕн 1969-мĕш... — ассăн сывласа ячĕ Ла-риса.— Пит пысăк стаж ку кĕнекесен! Нивушлĕ çĕнĕ-реххисем çук?! — вăл васкасах ытти кĕнекесене тыта-тыта пăхма тапратрĕ. Çук иккен! Пĕртен-пĕр кĕнеке тупăнчĕ 1965 çулта тухни, вăл та пулин... нимĕçле. Мĕн шутпа ярса панă-ши ăна кунта? Пăхман та ĕнтĕ, хунă та янă базăри пĕр-пĕр тăмпуç! Ну, ĕçлеççĕ те çав теп-рисем!...

— Паян шăпах пуçлăхсем килеççĕ, кĕнекесем пир-ки ятарласах калаçатăп-ха вĕсемпе! — шут турĕ Лари-са.— Юрамасть кун пек. Ял çыннисем валли те çĕнĕ кĕнекесем илсе килсех тăрас пулать...

Вăл питĕ тăрăшса, юрла-юрлах ĕçлерĕ. Малтан тĕр-лĕ çĕрти тусана шăлчĕ, унтан урайне вырăнĕ-вырăнĕпе кусарпа хырсах çурĕ. Тасалăха юратнă çав вăл. Халь тата районран килекен пуçлăхсем умĕнче те намăс ку-рас килмерĕ унăн. Епле пулсан та, паянтан пуçласа, унăн çакăнта ĕçлесе пурăнмалла-çке. Таса, хитре, культурăллă пултăр. Паçăр лавкка ăшчиккине пăхса çаврăннă чухнех шухăшларĕ: ăна-кăна улăштарас, таварсене урăхларах вырнаçтарас, тӳрех куçа курăн-малла витринăсем тăвас пулать. Хуларинчен кая мар пултăр. Лавкки пĕчĕкех мар, ăна илемлĕрех, тавар илме килекенсене ытларах килĕшмелле, вĕсен куçне илĕртмелле, чунне туртмалла тума май пур. Лариса ăна тума пултаратех. Ахаль вĕреннĕ-им икĕ çул?

Сасартăк алăкран шаккарĕç. Заведующи таврăнса килчĕ пуль, тесе, Лариса урай çунă чух йĕпенесрен çĕклесе пиçиххирен тирсе янă юбкине антармасăрах алăка пырса уçрĕ те... крыльца çинче Кагаева мар, тем-

ле çамрăк арçын, хулари пекех тумланнăскер — «болонья» плащпа, шлепкепе, галстукпа — тăнине курах кайрĕ.

— Ай! — шари çухăрчĕ те вăл, аяккалла сиксе илсе, алăка шарт! хупса лартрĕ. Вăтаннипе, хăранипе чĕтремех ерчĕ.

Кăшт тăрсан, леш çын каллех шаккарĕ.

— Уçăр ĕнтĕ...

— Уçмастăп! Хушман! Юрамасть! — терĕ ăна хирĕç Лариса хыттăн.

— Мана пирус çеç кирлĕччĕ...

— Хуçи çук! Эп сутмастăп! Ман сутма юрамасть.

— Ан хăрăр-ха эсир, çаратма килмен эп сире. Уçăр та икĕ пачка «Беломорпа» пĕр коробка спичка çеç парса ярăр...

— Çук, çук! Ним те памастăп, кайăр!

— Ытла та хаяр-çке эсир...

— Çавăн пек эпĕ!

Унччен те пулмарĕ, çав çын сăнĕ чӳречере курăнчĕ. Интеллигентлă çын пек хăй. Кăмăллăн кулса, ик пӳрнине çăварĕ патне тытса, пирус туртнă пек турĕ. Унтан аллă пуслăх укça кăларса кăтартрĕ.

— Тархасшăн, хĕрача! Вилĕм — туртас килет!

— Манăн сутă тума права çук-ха! — пуçне пăркаласа кăшкăрчĕ Лариса.— Ан та кĕтсе тăрăр, усси пулмасть...

Çав самантрах алăк хыçĕнче Кагаевăн арçынларах сасси илтĕнчĕ:

— А-а, Валентин Васильч, эсĕ-çке ку! Ырă кун пултăр!

— Ырă кун, Ангелина Егоровна,— терĕ арçынĕ те.

— Мĕн туса çӳретĕн эс кунта? Эп çук чух ман çĕнĕ помошник патне улаха кĕрес темерĕн пуль те?

— Кĕресшĕнччĕ те, çывăха та ямасть-ха вăл! Ик пачка пирус пама çур сехет тархаслатăп, итлемест! Питĕ кутăнскер пулмалла... ай-ай!

— Тĕрĕс тăвать! Сирĕнпе, арçынсемпе, кутăн пулас пулать çав, унсăрăн эсир наччас пуç тăрне хăпарса ларатăр. Ав, манăн пĕркунхи помошник, хам çук чухне яш-кĕрĕмсене лавккана кĕрте-кĕрте тем пысăкăш недостача туса хунă, аран-аран тĕрмерен çăлкаласа хăвартăмăр çăмăлттая...

Кагаева алăкран шаккарĕ.

— Уç ĕнтĕ, хĕрĕм, ан хăра халь!

Лариса алăка уçсанах, вăл мăн аттипе лаплаттарса шала кĕрсе тăчĕ, анчах леш арçынĕ тул енчех юлчĕ.

— Ара, çынни урай çăвать-мĕн! Типичченех тепре çумалла тăвас мар, çын ĕçне хисеплеме хушнă,— терĕ вăл.

— Кĕр, кĕр, Валентин Васильчча! Темех мар, шăлса илĕпĕр,— кăчăк туртрĕ лавкка хуçи.— Паллаштарам-ха сире... Ак манăн çĕнĕ помошник, Ларис ятлă, хушамачĕ Логинова, ку вара, хĕрĕм, пирĕн шкул директорĕ Валентин Васильч Цветков, вăлах партейнăй секретарь, калама çук лайăх çын, ун пек кăмăллă çын сайра...

— Ытлашши калаçса ан кай-ха, Ангелина Егоровна,— пӳлчĕ ăна арçын,— аван мар. Палламан çын умĕнче хĕретме пултаратăн, эп вăтанакан этем!

— Чăн сăмахран мĕн вăтанмалли пур? — терĕ Кагаева.

— Çапах та, юрамасть ун пек. Ну, паллашар, эппин... — Цветков Ларисăна ал пачĕ.— Ангелина Егоровна ман ята каларĕ ĕнтĕ...

— Ман ята та каларĕ... Лариса...

— Ĕçлеме килтĕр пулать пирĕн пата? Питĕ аван ку, саламлатăп сире. Лайăх пирĕн кунта.

— Вĕренсе тухнă хыççăн ĕçлемеллех ĕнтĕ.

— Тĕрĕс. Комсомолка пуль?

— Епле пултăр-ха тата...

— Хăвăртрах учета тăрас пулать. Комсомол енĕпе те ĕç тупса парăпăр сире. Ялта ĕç нумай...

— Ĕçĕнчен хăрамастăп. Шкулта та бюро членĕ пулнă.

— Пит аван... Ну, халь ĕнтĕ туртмалли парăр та, каям эпĕ. Часах манăн урок пуçланмалла,— Цветков аллинчи сехечĕ çине пăхса илчĕ.

— Мĕн вĕрентетĕр эсир? — ыйтрĕ Лариса.

— Истори, обществоведени, географи,— учительсем çитмеççĕ! Парăр, эппин, пирусне...

Лариса Кагаева çине пăхса ыйтрĕ:

— Сутă тума юрать-и мана, Ангелина Егоровна?

— Юрамасăр! — ал сулчĕ Кагаева.— Пуçла ĕçлеме, пуçла!

Лариса Цветкова икĕ пачка пируспа пĕр коробка спичка тыттарчĕ. Хăй кула-кула каларĕ:

— Эсир ёнтĕ манран тавар туянакан пĕрремĕш çын пултăр, директор юлташ. Хамăн профессие сирĕнтен пуçларăм...

— Уншăн ан пăшăрханăр, ман алă çăмăл, сирĕн суту-илӳ яланах тухăçлă та ăнăçлă пулса пырĕ, ăна шантарсах калама пултаратăп,— кăмăллăн кулса илчĕ Цветков та.— Ну, тавтапуç сире. Сыв пулăр...

— Эс каланă пек, чăнах аван çын пулмалла ку,— терĕ Лариса вăл тухса кайсан Кагаева çине пăхса.

— Хурламалла мар та, ытла пур çĕре те пырса сĕкĕнет,— терĕ лешĕ кăмăлсăртараххăн.— Ăна пуринчен те нумайрах кирлĕ пек. Вăл çеç тĕрĕс пурăнать, тейĕн. Тиркет пурне те — правленине те, ял Советне те, ку апла мар та леш ун пек мар. Мана та çулăхрĕ пĕрре...

— Мĕн пирки?

— Ав çав тавар пирки... — Кагаева кĕнекесем выртакан сентре еннелле сулса кăтартрĕ.— Мĕншĕн кив кĕнекесем çеç санăн, мĕншĕн çĕннисене илсе килместĕн, тет. Эп айăплă-им уншăн, лерен ярса памаççĕ пулсан? Анчах хăйне арăмĕ пăрахнă тет-ха. Ырăранах мар пуль!

## 9

«Пĕр хĕрарăм пур унта... вĕшле йытă пек ырханскер»,— тенĕччĕ ĕнер Христин, Кагаева патне районран килекен пуçлăхсем çинчен калаçнă чух. Куна вăл Матрена Гавриловна Сятрова пирки каланă-мĕн...

Ăна пĕрремĕш хут курсанах, Лариса Христин каланине аса илчĕ. Хăй питĕ çӳллĕ — ун çӳллĕш хĕрарăм пинте пĕрре кăна пулать пуль,— юри типĕтнĕ пек ырхан, хулпуççи шăммисем, хул калакĕсем хулăн кофта айĕнчен те шăкăриех палăраççĕ, аллисене усса тăнă чух чĕркуççи патнех çитеççĕ, малалла тăссан, вĕсем Ларисăна темшĕн урапа туртисем пек туйăнса кайрĕç. Ӳчĕ чикансен пекех хуп-хура, пĕчĕк пичĕ çинчи сăмси хуран куклинчен те кая мар. Ятарласа тунă карикатура ёнтĕ, тупата! Пысăк çавракa куçĕсем ялкăшса кăна тăраççĕ, çынна пĕрре пăхсанах çунтарса ярас пек.

— Пĕр-пĕр айăпшăн кун аллине лексен, пуçĕпех пĕтес пулать... — унпа ал тытса паллашсанах шухăшларĕ Лариса.— Шăмă-качкипех çисе ярать ку этем...

Унпа пĕрле килнĕ бухгалтер — пĕчĕкçеç, темле çап-

çавракa кĕлеткеллĕ, кукша, тимĕр кăшăллă куçлăх тăхăннă, сăмсипе тек нăш-нăш тăвакан старик вара Ларисăна тӳрех ватă кушак пек туйăнса кайрĕ. Калаçасса та сăмса витĕр, кушак мăрлатнă евĕр калаçать: мăр-мăр-мăр... Хушамачĕ те кулăшла иккен унăн — Ярапаров. Леш пурте пĕлекен ташă юррине аса илтерет: ай, ну, яра пар, юлашкине пире пар...

Мĕн тĕрлĕ çын çук пуль тĕнчере!

Лавккан хыçалти пӳлĕмĕнче плащне хывса унти пĕчĕк сĕтел хушшине ларсанах, Сятрова чăматан пекех пысăк сар сăран сумкинчен «Казбек» коробки кăларса пирус тивертрĕ те Ларисăран ыйтса пĕлме тытăнчĕ: ăçта çуралса ӳснĕ, ашшĕ-амăшĕ кам пулнă, шкулта еплерех вĕреннĕ... Комсомолта хăçантанпа? Дисциплина пирки ятланисем пулман-и? Каччăсем пирки епле? Кампа туслă?

— Кун çинчен ыйтнăшăн ан тĕлĕн эсĕ, хамăрăн кадрсем пирки пирĕн пĕтĕмпех, тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлмелле,— терĕ Сятрова, Ларисăна куçран шăтарас пек пăхнă май пирусне мăкăрлантарса.— Уйрăмах пирĕн продавецсене шанчăксăр çынсемпе çыхланассинчен хытă асăрхаттармалла. Ку тĕлĕшрен хĕрсен пушшех сыхă та сисĕмлĕ пулас пулать. Акă, кунта сан умĕн ĕçленĕ хĕрача çавăн пиркиех çунса кайрĕ. Хамăр та çамрăк пулнă, пĕлетпĕр: хĕр тенин каччă та, юрату та пулма пултарать, анчах темле хĕрӳллĕ юратăва та патшалăх пурлăхĕпе хутăштармалла мар. Эс мана ăнланатăн пуль?

— Ăнланатăп,— пуçне пĕксе илчĕ Лариса,— эсир мана каччăсене укçа тӳлемесĕр, кивçен эрех пама хушмастăр, çапла-и?

— Эрех кăна мар, тепĕр чух, хăйне ытларах юраттарас тесе, магазинсенче ĕçлекен хĕрсем хăйсен каччисене хаклă сорочкăсемпе костюмсем тăхăнтартса янисем те пулнă.

— Маншăн ун пек хăрушлăх çук,— хăюлланма пуçларĕ Лариса.— Ман каччăна патшалăх ахалех лайăх тумлантарать...

— Епле... патшалăх тумлантарать? — пуçне вăшт çĕклесе ыйтрĕ Сятрова.— Мĕнле ăнланмалла куна?

— Салтак вăл. Тата питĕ инçетре, часах килсе кĕрес çук ман патăма. Урăх çĕршыврах!

— Ну, апла пулсан чăнах та хăрамалли çук,— ку-

лам пекки турĕ те çакăн хыççăн Сятрова, Лариса унăн пĕр шăлĕ те хăйĕн маррине курчĕ — пурте тимĕр. Вара хăй ăшĕнче кулса та илчĕ: ку шăлсемпе вăл чăнах, паçăр шутланă пек, хуть те кама та шăмми-мĕнĕпех çисе яма пултарать!

Ялти çынсенчен инвентаризаци комиссине ял Совет секретарĕнче ĕçлекен Юдеркин — леш райпо бухгалтер-ревизорĕ пекех аллăсенчен иртнĕ çын тата библиотека заведующийĕ Якимова — пĕр вăтăр çулти чăмăркка сап-сар хĕрарăм пулчĕç. Якимови лавкка комиссин членĕ иккен. Пурте пухăнса çитсен, çынсем Сятрова кăтартнă тăрăх икĕ ушкăн пулса, таварсене турттарма, виçме, шутлама тытăнчĕç. Ларисăна çырса пыма лартрĕç.

— Астăвăр, пĕр коробка спичка та, пĕр йĕп те шута кĕмесĕр юлмалла мар! — пӳрнепе юнасах асăрхаттарчĕ Сятрова ĕçе тытăнас умĕн комисси членĕсене.— Материальнăй ценноçпа шӳтлеме юрамасть. Халăх пурлăхĕ вăл. Социалистически собственноç! Уншăн эпир хамăр пуçпа ответ тытатпăр!

— Пĕлетпĕр, пĕлетпĕр, Матрена Гавриловна,— мăрлатса илчĕ Ярапаров, куçлăхне сăмса тутрипе шăлса тасатнă май,— политграмăт кирлех мар пире кунта. Сăмахран каласан, манăн пĕтĕм пурнăç çакăн пек лавккасене тĕрĕслесех иртрĕ...

— Аса илтерни нихçан та кансĕрлемест! — куçĕсене çуталтарса илчĕ ăна хирĕç Сятрова.

...Пĕр виçĕ сехет пек ĕçлесен, Кагаева Сятровăпа тем пăшăлтатса илнĕ хыççăн килне кайса килчĕ те «кăшт-кашт çырткалама» сĕнчĕ.

— Килĕшетĕп, ик алăпах сасăлатăп куншăн, ма тесессĕн выçварла йăнăшсем туса тăкма пулать,— терĕ Ярапаров, тавар сентрисем çумне тайăнтарнă пусма çинче тăраканскер. Унтан Кагаева çине темшĕн куçлăхне хывсах тинкерчĕ те мăйне сăтăркаласа илчĕ.—Пыра тусан та тулчĕ, чӳхесе ярас пулать...

Хыçалти пӳлĕмри сĕтел çине Кагаева мăн сумкăран çăкăр, ăшаланă аш, тăварланă хăяр кăларса хучĕ, виçĕ консерва банки уçса лартрĕ те Сятрова куçĕнчен пăхрĕ.

— Саккуски начарах мар та ĕнтĕ... мĕн тумаллаши, Матрена Гавриловна? Сирĕн кăмăл...

— Хăвăнне ху пĕл, эс хуçа кунта, эп мар,— терĕ

лешӗ.— Мана кирлӗ мар хуть, анчах Тимофей Сергейч пырне тусан тулчӗ тет ав...

— Ҫитменнине лавккари тусан сиенлӗ вӑл, унта тӗрлӗ осадка пулать, тисинфекцисӗр ниепле те май килмест,— терӗ Ярапаров, каллех мӑйне сӑтӑркаласа.

— Ну, килӗр, эппин, пурте,— чӗнчӗ Кагаева, сӗтел ҫине икӗ ҫур литр кӑларса лартса.

Пуринчен малтан Сятрова кӗрсе ларчӗ сӗтел хушшине, унтан ыттисем те пычӗҫ. Ял Совет секретарӗ Юдеркин Ярапаровпа юнашар вырнаҫрӗ, унӑн та пырӗ ярӑнни сисӗнчӗ — вӑл тутине ҫуллакаласа илчӗ. Библиотека заведующийӗ ларасшӑнах пулмарӗ, киле кайса ачасене пӑхса килес пулать, терӗ, анчах Кагаева ӑна вӑйпах тытса лартрӗ сӗтел пуҫне. Лариса ҫаплах лармарӗ-ха, аякран пӑхса тӑчӗ.

— Эс мӗн тата, сан хырӑму выҫмасть-им? — терӗ ӑна Кагаева, кӑмӑлсӑрланнӑ пек.— Кил, лар халӑхпа пӗрле! Пурте пӗр ӗҫ тӑватпӑр пуль? Мӗншӗн сан уйрӑм пулмалла?

Хӑй ҫавӑнтах стакансене эрех тултарма тытӑнчӗ. Арҫынсене хӗррипе тан, хӗрарӑмсене ҫуршар.

— Мана та туллиех ярса пар, Егоровна, эп пӗрре ӗҫсен урӑх ӗҫейместӗп,— терӗ Сятрова, хӑй умӗнчи стакана Кагаева патнелле шутарса. Лариса тӗлӗнсех кайрӗ: анчахрах «мана кирлӗ мар хуть», терӗ-ҫке вӑл? Унтан тӗлӗнмелли татах та пулчӗ: тулли стакана Сятрова арҫынсем пек те мар, пӗрре сывлӑш ҫавӑрмасӑр ӗҫсе ячӗ...

— Ҫакӑн пек хытканскер, халех тӳнсе каять пуль ку! — хӑрарах шухӑшларӗ Лариса. Анчах Сятрова тӳнме шутламарӗ те. «Пӗрре ӗҫсен урӑх ӗҫместӗп», тенскер, кайран арҫынсемпе пӗрле татах тепӗр ҫур стакан ӗҫрӗ.

— Хӑнӑхнӑ, эппин! — терӗ Лариса хӑй ӑшӗнче.

Ӑна хӑйне те ҫине тӑрсах сӗнчӗҫ пулин те, вӑл эрех стаканне алла та тытмарӗ. Библиотека заведующийӗ те ӗҫмерӗ. Вӗсем иккӗшӗ пӑртак ҫырткаларӗҫ кӑна, ячӗшӗн тенӗ пек.

Кунашкал чухне, паллӑ ӗнтӗ, ҫынсен чӗлхи салтӑнать. Пуринчен малтан Ярапаров пуҫларӗ.

— Маттур хӗрарӑм ҫав эсӗ, Ангелин Егорна! — терӗ вӑл, чышкӑ пысӑкӑш аш татӑкне пур-ҫук шӑлӗсемпе тӑпӑлтарса.— Миҫе ревизи турӑм пуль сан патӑнта хам

ĕмĕрте, пĕрре те лектереймерĕм! Ялан баш-на-баш тухать санăн. Тĕплĕ ĕçлетĕн!

Çапла каларĕ те, пуçне тăрук чалăштарса, куçĕсене хĕссе кулса илчĕ. Тепри пулсан ăнланатчĕ ĕнтĕ: никам сисмелле мар, нихçан тупмалла мар вăрлатăн, тени пулчĕ-ха ку...

— Малашне те лектерейместĕн, кукша пуç! — тулли кăмăлпа кулчĕ Кагаева та, хăйне мухтанăшăн хĕпĕртенĕ пек.

— Калатăп-çке, тĕплĕ ĕçлетĕн! Çавăнпа та санăн лавккуна пилĕк çулта пĕрре тĕрĕслесен те çитмелле. Кашни çул ревизи туса чăрманма та кирлĕ мар. Тĕрĕс калатăп-и? — Сятрова çине пăхса илчĕ бухгалтер.

— Çапла, пурте Ангелина Егоровна пек ĕçлесен, пит лăпкă пурăнаттăмăр эпир,— килĕшнĕ пек каларĕ Сятрова.

— Атту вĕт... мĕн кăна хăтланмаççĕ тепĕр çĕрте!— Ярапаров йывăррăн сывласа ячĕ.— Иртнĕ уйăхра эпир Владимир Яккăлч Фроловпа иксĕмĕр Шупашкарта пултăмăр. Потребкоопераци системинчи растратăсемпе хищенисене хирĕç кĕрешес вопроспа совещаниирттерчĕç унта. Докладне итленĕ чухнех çӳçпуç вирелле тăрса кайрĕ манăн. Тӳсме çук хăрушă вĕт! Тав турра, пирĕн районра пулмаççĕ ун пеккисем...

— Каласа пар-ха, эппин, кăштах, эпир те пĕлер,— терĕ Юдеркин.

— Мĕн каламалли! Çаратаççĕ! — пĕççисене çапса илчĕ Ярапаров.— Хăшĕсем пилĕкшер, сакăршар, вуншар пин хаплаттарнă. Кив укçапа шутласан, çĕр пин вĕт вăл! Çĕр пи-ин!..

— Кай, ăçта чикеççĕ пуль ун чухлĕ укçана! — хăранă пек, пăлханнă пек, ассăн сывласа илчĕ Кагаева.— Эпир уйăхне утмăл-çитмĕл тенкĕ илнипех пурăнатпăр.

— Чикеççĕ, сначчăт! Тупаççĕ вырăнне!

— Лексен — тĕрме-çке вăл, вуншар çуллăх тĕрме, епле хăрамаççĕ-ши?! — пуçне пăркаласа илчĕ Юдеркин.— Сăмахран каласан, манăн ун пек тума нихçан та хăюлăх çитес çук...

— А вăрă вăл... вăрă нихçан та лекесси çинчен шутламасть,— терĕ Ярапаров.— Пĕрре иртсе каять, тепре ...виççĕмĕшĕнче те лекмĕп-ха, тет. Куçĕ выçă; тăранма пĕлмест, пуйнăçемĕн пуяс килет унăн...

— Çапах та, хăçан та пулин çакланать-çке! Лекмен вăрă çук! Пĕрре улталатăн, иккĕ улталатăн, виççĕмĕшĕнче ларса макăратăн, тенĕ ваттисем ĕлĕкех. Тĕрĕс сăмах вăл!

— Çакланасшăн мар çав вĕсем. Лекес патне çитсен те хăтăлса юлмалли майсем шыраса тупаççĕ. Чăн та, пур чухне те ăнăçлă пулмасть вĕсем тăрăшни, çапах та... шутсăр чее мар-и! Акă, сăмахран каласан, пĕр районти ялпо лавккинче икĕ хĕрарăм ĕçленĕ. Пĕри çав ялсемех пулнă, тепри аякран пынăскер. Пĕрле пурăннă, «солидарнă» ĕçленĕ, иккĕшĕ те пĕр тан ответлă. Анчах иккĕшĕ те хусах пулнă вĕсем, упăшкасăр, свободнă. Йĕвенне тытса пыраканĕсем пулман, эппин. Ну, вăйпитти хĕрарăмсен юнĕ вылянă ĕнтĕ хăш чух, унсăр пулмасть. Хăнасем çӳренĕ вĕсем патне. Час-часах ĕçкĕ, ташă и так далее... Çынсем сисе пуçланă вĕсем ытла та шикарнă пурăннине. Пĕлтернĕ кирлĕ çĕре — апла та капла, тавай, килсе тĕрĕслĕр. Янă çаксем патне икĕ çын, ревизи тума ĕнтĕ. Çыннисем ман пек хăлтăр-халтăр кукшасем мар, чăн-чăн молодецăсем пулнă, тет. Хваттере магазинта ĕçлекенсем патнех кĕнĕ — ялта Шупашкарти пек гостиницăсем çук. Ну, хăна тунă кусене лешсем, какăричченех ĕçтернĕ-çитернĕ пуль ĕнтĕ, унсăр мар. Унтан çывăрма та выртнă... икĕ мăшăр пулса. Тем хăтланнă вĕсем, кам пĕлет! Çĕр варринче, ревизорсем иккĕшĕ те ним туйми-сисми çывăрса кайсан, çав хĕрарăмсенчен пĕри, аслăраххи, заведующи ĕнтĕ, хăйĕн ăнсăртран тур панă каччи çумĕнчен ху-ллен-хуллен тăрса тухать те, лавккине чупса кайса, пĕр чăмăркка ваткăна зажигалкăпа йăпăрт кăна тивертсе алăк айĕнчи кушак шăтăкĕ витĕр шалалла ывăтать... Планне малтан шухăшласа тунă вĕсем — пĕр хĕрарăмĕ ревизорсемпе пĕрле тухса кайсан, тепри темиçе минутлăха юлнă та урайне те, стенасене те краççын сапнă. Недостача пысăк пулассине чухланă вĕсем, çавăнпа та лавккине çунтарса ярас тенĕ — ĕçĕ-пуçĕ çавăнпа пĕттĕр!

— Вара... вара магазинĕ çунсах кайнă-и? — ыйтрĕ хăранипе чут çеç чĕтреме ермен Лариса, Ярапарова пӳлсех.

— Епле пултăр-ха тата? Пĕр тивертсе янăскер, ма ан çунтăр вăл? Çитменнине, краççын сапнă...

— Сӳнтереймен те-и?

— Йăлт, тĕппипе çунса кайнă! Ним те юлман. Тăптăр убыткă çирĕм ултă пин. Калама хăрамалла! Кив укçапа икçĕр утмăл пин-иç вăл, чĕрĕк миллион!..

— Ним те пулман-и вара çав хĕрарăмсене? Пĕлеймен-и вĕсем хăйсен магазинне хăйсемех çунтарса янине? — татах ыйтрĕ Лариса.

— Пĕлнĕ çав! Пĕлеймен пулсан, ун çинчен совещанинче те каламан пулĕччĕç. Суд тунă, хупса лартнă. Заведующщине ытларах, теприне кăшт сахалтарах панă. Анчах малтан питĕ хытă туннă вĕсем, чут çеç хăтăлса юлман, каналйăсем! «Эпир ĕçрен ывăнса таврăннă та питĕ хытă çывăрнă, нимĕн те пĕлместпĕр...»—тенĕ. Следствине леш ревизорсем те чутах йăнăш çулпа ярасçĕ-мĕн: эпир унтах çывăрнă, пушар пуçланиччен пўртрен никам та тухман, тенĕ. Прокурор-судьясен чĕлхинче «алиби» тенĕ сăмах пур, вăл сăмах преступлени вăхăтĕнче çын урăх çĕрте пулнине пĕлтерет. Çак хĕрарăмсем те, ревизорсем пулăшнипе, кăшт кăна «алиби» туса хуман хăйсем валли! Питĕ чее хăтланнă-çке заведующийĕ: лавккана тивертсе ярсан вăл часрах киле таврăннă та, аялти кĕпи таранах хывăнса, каллех ревизор çумне йăпшăнса кĕрсе выртнă! Ыталанă та пулĕ-ха... Пушарĕ пĕтĕм яла çутатмалла ялкăшма тытăннă хыççăн тахăшĕ вĕсен чўречинчен пырса шаккасан тин сиксе тăнă та вырăн çинчен, ревизорсене вăратнă: пĕтрĕмĕр, пирĕн лавкка çунать!.. Анчах следователĕ шутсăр ăслăскер пулнă пулмалла, ĕненмен лавккана такам ютран пырса тивертнине, заведующипе ура явса çывăрнă ревизор каланине те шута илмен, питĕ çине тăрса тĕпчене-тĕпченĕ те лавккана хăйсемех çунтарнине тĕп-тĕрĕс кăтартса панă. Леш хĕрарăмсен ирĕксĕрех хăйсен айăпне йышăнма тивнĕ...

— Мĕнле тупнă-ши айăпне? Пĕтĕмпех çунса кайнă вĕт-ха, ним йĕрĕ те юлман! — терĕ Юдеркин, ыттисем пекех çав тери тĕлĕнсе итлесе ларнăскер.

— Хуть те мĕнле преступникĕн те йĕр юлатех, теççĕ суд-прокурор таврашĕсем. Çаксен те юлнă иккен. Следователь лавкка кĕлĕ ăшĕнче зажигалка тупнă. Çавăнтан пуçланнă та вара. Мĕншĕн лекнĕ вăл унта? Кирлĕ пулсан, лавккара спичка çук-и?

— Чăнах, мĕншĕн зажигалкăпа тивертнĕ-ха лешĕ?

— Спичка çил çинче час сўнет, ăна темиçе хут чĕртме тивет, час та пулмасть, çĕрле пулин те кам та

пулсан асăрхама пултарать. Зажигалка шанчăклăрах. Анчах чĕртекенĕ, васканипе, ăна кĕсъене чикеймен пулмалла, çухатса хăварнă. Улика пулса юлнă вара... Унччен малтан, обыск тунă чух, çав следователех лавкка заведующин килĕнчи шкапра ватка çыххине асăрханă, унăн пĕр кĕтессине тăпăлтарса илнĕ иккен. Урамра та пĕр чăмăркка ватка выртнă. Каллех улика...

— Пултараççĕ çав следстви-розыск çыннисем! — тулли кăмăлпа мухтаса илчĕ Юдеркин.

— Вĕсене çавăншăн çăкăр çитереççĕ пуль! Çавăнпа темтепĕр шăршласа тупаççĕ,— терĕ Кагаева.

— Анчах, вĕсем пулмасан, вăрăсене, тĕрлĕ жуликсене кам йĕрлесе тытĕ-ха? Эпир иксĕмĕр-и? Илтрĕн пуль — çирĕм ултă пинлĕх çунса кайнă, тет! — тăрук вĕриленчĕ ял Совет секретарĕ.— Эп хам пулсан, ун пек çынсене... кутăн çакмалла!

— Ытла та хаяр-çке эсĕ, Нил Петровчă,— пуçне пăркаласа илчĕ Кагаева.— Тепĕр чух суд умне ним айăпсăр тăракансем те пулаççĕ. Çынни винават та мар, ăна айăплаççĕ... Вĕсене те çакатăн-и?

— Эп айăплисем çинчен калатăп! Çын чăнах айăпсăр пулсан, вăл пурпĕрех лапра-çĕпререн тасалса тухатех, каллех ыр ятлă пулать. Анчах куçкĕрет вăрлакансене, халăха сиен кӳрекенсене хытă тытмалла, ним чухлĕ те хĕрхенсе тăмалла мар! — сĕтел çине чышкипе çапсах илчĕ Юдеркин.

— Халь те хĕрхенсе тăмастпăр-ха вĕсене, çирĕп тытатпăр,— терĕ çак хушăра темшĕн шарламасăр ларнă Сятрова, çĕнĕ пирус тивертсе,— жуликсене нихçан та каçару çук. Анчах хамăр района илсен, эпир мухтанма пултаратпăр: сахаллансах пыраççĕ пирĕн растратахищенисем, процент çулсеренех чакать!

— Тĕрĕслесех, сăнасах тăратăр, лайăх ертсе пыратăр, çавăнпа ĕнтĕ вăл,— ун майлă шăлса илчĕ Кагаева.

Чылаях хĕрнĕ Ярапаровăн татах калаçасси килчĕ пулмалла.

— Интере-еснă япаласем пĕлтĕмĕр эпир çав совещанинче! — терĕ вăл, кӳпшек пӳрнисемпе сĕтеле тăкăртаттарса.— Анран тухса каймалла тĕлĕннипе! Хăшĕсем малтан пĕр-пĕринпе шутсăр килĕштерсе, пĕр шухăшлă пулса вăрлаççĕ, çав тери, калама çук туслă пурăнаççĕ, хурăнташланса, кумаланса пĕтеççĕ. Анчах ответ тытмалли самант килсе тухать те — никам та

айӑпа хӑй çине илесшӗн мар, пурте таса пуласшӑн! Тытӑнаççӗ хайхи туссем-кумасем пӗр-пӗрине путарма, апайтурух! Пӗри акӑ — Шупашкар тӑрӑхӗнче пулнӑ-ха ку — дефицитлӑ таварсене халӑх умне кӑлармасӑрах, вӑрттӑн сутса пурӑннӑ... Япалисен хакне нумай ӳстерсе сутни çитмест, укçине пӗтӗмпех хӑй кӗсйине хунӑ, продягӑ. Ревизи-мӗн пулсан растратӑ ан палӑртӑр, тесе, çав чее хӗрарӑм тепӗр завмагпа калаçса татӑлать те, сулахаялла янӑ таварсене ӑна панӑ пек туса таварсӑр накладнойсем çырать. Паллах ӗнтӗ, ахаль мар, алла алӑ çӑвать. Виç-тӑватӑ çул ахӑрса пурӑннӑ вӗсем çавӑн пек. Татах та пурӑннӑ пулӗччӗ те, сасартӑк леш магазинне, таварсӑр накладнойсем йышӑннине, урӑх çӗрте магазин уçнӑ пирки хупмалла тунӑ. Анчах магазина хупас умӗн ревизи, инвентаризаци пулать-çке-ха! Хайхи завмаг вӗри çатма çинчи пек ӑшталанма тытӑнать — суя накладнойсем пур, таварне магазина илсе килнӗ пек шутланать, анчах таварӗн шӑрши те пулман кунта! Чупать часрах лешин патне: е эсӗ çав накладнойсенче асӑннӑ таварсене тиесе пыратӑн ман патӑма, е вӗсен хакне укçан паратӑн, унсӑрӑн пӗтетӗп эпӗ, анчах тӗрмене пӗччен каймастӑп, сана та пӗрлех илсе каятӑп, тет... Срокне сана манран та ытларах пама пултараççӗ, тет тата. Унталла та кунталла чупкалать суя накладнойсем çыраканни, ниçта кайса кӗреймест, çапах та мӗн тӑвӑн ӗнтӗ халь тин? Таварӗ те çук, укçине те тахçанах вӗл-вӗл вӗçтерсе янӑ. Тӗрме!.. Юлашкинчен, аптраса çитнипе, магазинтах тытать те аккумулятор кислотине ӗçе парать! Вилӗмре кӑна ман çӑлӑнӑç, тенӗ ӗнтӗ...

— Вилнӗ пуль вара? — ыйтрӗ Кагаева.— Çавӑ чух тата ӑна! Пурӑнма пӗлес пулнӑ ухмахӑн...

— Çук, вилеймен. Тӑнран кайса, çухӑрса выртнӑ. Çынсем лавкка чӳречине çӗмӗрсе кӗрсе, больницӑна ӑсатнӑ часрах. Лере çӑлкаланӑ ӑна, çапах та çын мар вӑл халь, ӗмӗрлӗх инвалид...

Пӗр хушӑ нихӑшӗ те чӗнмерӗ. Пурне те шухӑша ячӗç çав хӑрушӑ историсем. Уйрӑмах Лариса пӑлханса кайрӗ. Кун пеккисене нихçан та илтмен-çке вӑл. Мӗн кӑна хӑтланмаççӗ пуль чыссӑр, намӑссӑр этемсем! Мӗн чухлӗ сиен кӳреççӗ халӑха! Усал çумкурӑкне кӑклануӑ пекех кӑкласа тӑкмалла ун пеккисене, пӗри те ан пултӑр суту-илӳре!..

— Кун чухлĕ каннипе çитет пуль, ĕçе тытăнатпăр пуль? — пукан çинчен эхлетсе тăчĕ Кагаева, кăштах вăхăт иртсен.

— Çиччас тытăнатпăр, ан васка ытлашши,— терĕ Ярапаров,— тепĕр халап çеç ярса паратăп сире...

— Ытла та хăрушă-çке сан халапусем, итленĕ чух пĕтĕм çанçурăм çӳçенсе илет!

— Ку хăрушă мар. Кулма та пулать. Итлĕр акă...

— Кала, кала, Нил Петрович, çамрăксемшĕн усăллă пулĕ,— терĕ Сятрова, пирусне пашлаттарнă май Лариса çине куç харшисем айĕн пăхса.— Пĕлччĕр вĕсем мĕн тума юранипе юраманнине тата тĕрĕс ĕçлемесен мĕн пулса тухнине...

Лариса пичĕ пĕçерсех илчĕ, унăн тăрук çилĕ килсе кайрĕ. Ятарласа ун валли каларĕ вĕт-ха çак тухатмăш тĕслĕ хĕрарăм ку сăмахсене. Кур-ха, мĕнле вĕрентет!

— Сятрова юлташ,— терĕ вăл чĕтреме пуçланă сассипе,— эп сире пурнăçра пĕрремĕш хут куратăп, эсир те мана пуçласа куратăр, анчах эсир ку сăмахсене ман валли каларăр пулсан — кăлăхах тăрăшрăр. Совет çыннин ахаль пурнăçра та, ĕçре те мĕнле пулмаллине мана пионер чухне те, комсомолта та, шкулта та вĕрентнĕ. Хам ĕçлесе илнĕ укçана халăх укçипе пăтраштарма, уйрăмах вăрлама-улталама юраманнине те питĕ лайăх пĕлнĕ пек туйăнать...

— Эс мĕн, йăмăкăм, çиллентĕн-им? — кулам пекки туса тимĕр шăлĕсене кăтартрĕ Сятрова.— Çилленме кирлĕ мар. Эпĕ тепĕр чух çамрăксем те йăнăшсем туни çинчен çеç каласшăн пултăм. Акă, сан умĕн çакăнта ĕçленĕ хĕрача...

— Пĕлетĕп, илтнĕ ун çинчен,— Сятровăна пӳлчĕ Лариса.— Тăватçĕр тенкĕ патне тӳлеттернĕ ăна. Анчах манăн нихçан та ун пек тӳлемелле пулмĕ, тетĕп-ха.

— Аванччĕ, питĕ аванччĕ! Ырлатăп çеç сана кун пек сăмахшăн...

Сятрова тутине пăчăртарĕ те пирусне чашăк çине пусса сӳнтерчĕ. Килĕшмерĕ ăна Лариса çавăн пек пӳлсе тӳррĕн калани. «Пăх-ха эс ăна, епле шăрчăк, сăмах та каламалли çук! Курăпăр-ха, малашне еплерех сикекен пулăн ман умра! Ман алăра вĕт эсĕ!» — шухăшларĕ вăл. Хăйне нихçан никам та — ни арçын, ни хĕрарăм — юратманнине пĕлсе, ăна кашни утăмрах туйса, вăл хăй те никама та юратман, çынсене ырă тăвасси

пулман унăн. Ватта юлнă — хĕрĕхелле сулăннă хĕр, арçын ачашланине те пĕлменскер, вăл уйрăмах çак Лариса пек çамрăк та хитре хĕрсене юратман. Юратман çеç те мар, курайман вĕсене. Хăйне пăхăнса тăракан лавккасенче ĕçлекен хĕрсене пулчĕ-пулмарĕ хĕсме тытăннă, нумайăшне вĕри куççулĕпе макăртнă вăл. Пурте хăранă унран, çав вăхăтрах чунтан курайман, хăйсем хушшинче ăна тем тĕрлĕ ят та панă — тухатмăш, вĕреçĕлен, çынçиен... Анчах пĕри те хирĕç калайман, вăл сăлтавсăрах ятлама, тĕтĕрленме тытăнсан пуçĕсене пĕксе кăна тăнă. Лариса ун йышши пулмарĕ, каларĕ те хучĕ ăна хирĕç — ан вĕрент, сансăрах пĕлетĕп! Сятровăна чĕринченех тивертрĕ...

Çав вăхăтра каллех Ярапаров калаçма тытăнчĕ:

— Тепĕр истори çинчен калама парăр ĕнтĕ мана! Тĕлĕнсе хытса каймалли истори... Никам шухăшласа кăларма пултарас çук ун пеккине, туршăн-хĕвелшĕн!

— Ну, кала, эппин, кала, чĕлхӳ пит кĕçтет пулсан,— терĕ Кагаева.— Ытла вăрăма ан яр тулькким.

— Вăрăм мар ку, рас-рас каласа паратăп! Хăш-хăш жулик-мошенниксем, растрата туса тултарсан, ответ тытасран хăтăлас шутпа килĕсенчен тухса тараççĕ. Арăмне, ачи-пăчине, кил-çуртне пăрахсах каяççĕ. Пач! çухалать çын, çăла пăрахнă йĕп пек! Паллах, малтанлăха хăйне пурăнмалăх кăпиттал пур унăн — кассăна тĕппипех шăлса кайнă, выçă вилмест. Кайран, аяккарах кайса, ĕçе вырнаçать ăçта та пулин. Çивĕчреххисем паспорт та улăштараççĕ, урăх ят-хушаматпа пурăнма тытăнаççĕ...

— Илтнĕ ун пеккисем çинчен, илтнĕ, Нил Петрович! — пӳлчĕ ăна Сятрова.— Пурăна киле, пурĕпĕр тытаççĕ ун пеккисене, хамăр çĕршывра çавах ĕмĕр-ĕмĕр пытанса пурăнаймастăн. Тупаççĕ!

— Çавна каласшăн та эпĕ, хисеплĕ Матрена Гавриловна! Питĕ тĕлĕнмелле пример... Совещанинче докладчик каласа пачĕ... Пĕр продавщица аллă виççĕмĕш çултах чылай хушă выручкине банка хывмасăр пурăннă та кивĕ укçапа хĕрĕх пин ытла пухнă. Унтан çав шуйттан ватă амăшĕпе ик ачине пăрахсах килтен тухса тарнă. Вунтăвата çул хушши, хăйне милици органĕсем тупаймасса шанса, пытанса пурăннă, эсрел! Темле майпа урăх паспорт туянса Кузьмина Мария Кузьминичнăран Павлова Мария Павловна пулса тăнă, шăп вунă



çул çамрăкланнă — çуралнă çулне 1922-мĕшĕнчен 1932-мĕш туса хунă. Пермь облаçĕнчи пĕр совхоза ĕçе вырнаçнă. Кăшт пурăнсан, вăл çав суя ятпах, суя паспортпах Данилов гражданина качча кайнă та унăн хушаматне йышăннă. Халь ĕнтĕ çав Кузьмина-Павлова-Данилова хăйне милици таврашĕсем ĕмĕрне те тупаймĕç, тесе шанма пултарнă. Юрласа кăна пурăн! Анчах та кĕçех юрлас вырăнне макăрмалли самант çитсе тухнă: шыраса тупнă ăна, тытнă та суд тунă. Тĕрĕс каланă çав ваттисем: хăвăн шăпунтан ниçта та тарса ӳкейместĕн! Хуса çитетех вăл сана!

Ярапаров калама чарăнсассăнах Юдеркин хушса хучĕ:

— Пирĕн, чăвашсен, «шалчи тулать» тенĕ сăмах пур. Питĕ ăслă сăмах çав! Тĕрĕс сăмах!

— Тĕрĕс сăмах нумай та, ытла пур чух та асра тытмастпăр-çке вĕсене эпир,— терĕ ăна хирĕç Ярапаров.— Вунçичĕ çул ревизорта ĕçлесе, чыла-ай курнă эпĕ...

## 10

Комисси тепĕр кунне те каçалла сулăниччененех ĕçлерĕ.

Чăн юлашкинчен, пур йышши таварсене те шутласа-виçсе пĕтерсен, черет сулахай енчи кĕтесре, виç-тăват сентре çинче выртакан кĕнекесем патне çитрĕ. Çакăнта вара, ним шутламан çĕртенех, Ларисăн каллех Сятровăпа кăштах тытăçса илме тиврĕ.

— Ку кĕнекесем пурте кивĕ, паян тытса вуламалли пĕрре те çук, тавар тĕсĕ те тахçанах пĕтнĕ, çавăнпа та вĕсене списать туса часрах çĕннисене илсе килес пу-

лать,— терĕ Лариса.— Халь çĕнĕ кĕнекесем нумай тухаççĕ, вулакансемшĕн усăллă, интереслĕ кĕнекесем...

— Ай-ай, пит çăмăл калаçатăн-çке эсĕ, хĕрача! — тăрук куçĕсене çутăлтарса илчĕ Сятрова.— Кам ирĕк парать-ха пире списать тума? Тата кам шучĕпе списать тăватăн? Хăвăн шутупа-и?

— Ун пирки инструкци пур,— терĕ ăна хирĕç Лариса хăюллăнах.— Кĕнекесем кивелсен, вĕсене магазинта усрамалли срок иртсен, списать тума та юрать. Хăвăрах шутлăр-ха, мĕн усси çак мунчала пек пулса кайнă брошюрăсене магазинта тытнинчен?

Сятрова тутине чалăштарчĕ те Кагаевăна чавсипе тĕртсе илчĕ:

— Куртăн-и, Ангелина Егоровна, хальхи çамрăксем пире еплерех вĕрентеççĕ? Эпир санпа иксĕмĕр нимĕн те пĕлместпĕр, анчах вĕсем йăлтах пĕлеççĕ ав... — унтан вăрт! Лариса еннелле çаврăнчĕ вăл: — Списать тăвасси çинчен сăмах та пулма пултараймасть. Тавара ăна сутас пулать. Сутас!

— Кам ухмахĕ илтĕр вĕсене укçа парса? Кама кирлĕ ку кĕнекесем?

— Ан хăра, хĕрĕм, сутатпăр, сутатпăр,— Ларисăна лăплантарма тăрăшнă пек, ăна хулпуççинчен лăпкарĕ çав самантрах Кагаева.

— Мĕнле майпа? — ун çине тĕлĕнсе пăхрĕ Лариса.

— Тупатпăр майне, тупатпăр...

— Ытти таварсем çумне «привес» туса-и? «Принудительный ассортимент» туса-и? Анчах вăл саккуна пăсни пулать, уншăн пире хамăра лекет кăна...

— Тавара сутма пĕлнĕшĕн нихçан та, никама та лекмен-ха! — сассине хытарчĕ Сятрова.— Сутма пĕлменшĕн, затоварриванишĕн, чăн та, пуçран ачашламаççĕ, преми те памаççĕ!

— Çапах та кĕнекесем пирки шухăшласчĕ-çке. Çĕннисене часрах илсе килесчĕ.

— Кусене сутса пĕтермесĕр нимĕн те памастăп!— татса хучĕ Сятрова.— Эс тин çеç вĕренсе тухнă çын, кĕнекесемпе мĕнле сутă тумаллине пĕлетĕн курăнать, кăтарт хăвна çав ĕçре, пурин те пример илмелле пултăр санран, вара эпир сана чунтан тав тăвăпăр!

Лариса хĕп-хĕрлĕ пулса кайрĕ те урăх чĕнмерĕ. Анчах парăннине пĕлтермерĕ ку. «Шупашкара, потреб-

союза çырса ялатăп-ха эп кун пирки...» — шухăшларĕ вăл хăй ăшĕнче.

...Акă, пĕтĕм ĕç пĕтрĕ, акт çырчĕç, ун çине пурте — вăл шутра Лариса та — ал пусрĕç. Унтан Кагаевăпа пĕрле договор çине ал пусмалла пулчĕ: çак кунтан пуçласа эпир хамăр йышăннă таварсемшĕн, пĕтĕм пурлăхшăн пĕр тан ответ тытатпăр. Вĕсем хыççăн договора Сятрова ал пусса, пичет хурса çирĕплетрĕ.

— Ну, телейлĕ те ăнăçлă ĕçлемелле пултăр сирĕн! — Кагаевăпа Лариса аллисене тытса чăмăртарĕ Сятрова, анчах хăй çапах та Лариса çине сиввĕн пăхса илчĕ. Тин çеç килнĕ çамрăк продавщица унпа пĕрремĕш хут тĕл пулсанах ытла хăюллă калаçни питĕ килĕшмерĕ ăна. Хăнăхман-çке вăл ялти продавщицăсем хăйĕнпе тавлашнине, хирĕç калаçнине илтме. Тӳсме пултарайман ăна хирĕç сăмах калама хăякансене. Ун пеккисене асрах тытса пурăннă... майлă самант çитиччен!

Ĕç пĕтнĕ хыççăн, райпо машини килсе çитиччен (ăна ярса пама Сятрова ирех ял Советне кайса шăнкăравларĕ-ха), Кагаева районри пуçлăхсене хăйĕн килне илсе кайса хăналарĕ.

— Тавтапуçах сире, ыр çынсем, пирĕн пĕтĕм тавара килсе тĕрĕсленĕшĕн, атту эп хам та пĕлместĕм-ха мĕн чухлĕ мĕн пуррине! — терĕ Кагаева, эрехне те, «çырла шывне» те ытларах тутанма сĕнсе. — Халь ĕнтĕ пĕтĕмпех куç умĕнче, чипер йĕркеллĕ сутă тумалла çеç пирĕн...

— Тепрер эрнерен-иккĕрен тăваттăмĕш квартал шучĕпе тавар нумай паратпăр,— терĕ Сятрова.— План та пысăкланать. Ăна епле пулсан та ирттерсе тултарма тăрăшăр. Ăмăртакансем нумай, премисĕр юлма пултаратăр.

— Таварĕ пулсан, ăна сутма пĕлĕпĕр-ха. Халăхра укçа пур хальхи вăхăтра, çыннисем тем те илеççĕ, ĕлĕкхи мар... — терĕ Кагаева тулли кăмăлпа.— Эсир халь тӳрех района каятăр-и ĕнтĕ е тата таçта кĕрсе тухмалла пулать? — ыйтрĕ вăл кăшт тăрсан.

— Улăххĕррине каятпăр кунтан. Вахрамеев патне те çĕнĕ çын пынă-çке, ак кун юлташĕ... — Сятрова пуçĕпе Лариса еннелле сулса кăтартрĕ.— Унта та инвентаризаци тума тивет.

— Лайăх-ха вăл, вĕреннĕ çамрăксем килни,— терĕ

Кагаева,— атту тек пире культурнă ĕçлеместĕр тесе вăрçаççĕ. Тен, вĕсем пиртен маттуртарах ĕçлĕç, вара эпир те ватлăхра та пулин кирлĕ пек ĕçлеме вĕренсе пырăпăр...

Ку сăмахсене Кагаева юри, çамрăксене тиркес, вĕсенчен тăрăхлас шутпа каланине Лариса пит лайăх туйрĕ, çапах та ним те шарламарĕ. Лавккара Сятровăпа тавлашкаласа илнĕ хыççăн унăн тек чĕрре кĕрес килмерĕ. Хăвăн пултарулăхна сăмахпа мар, тавлашса та мар, ĕçпе кăтартас пулать. Ĕçпе, урăх нимпе те мар!

...Урамра мотор сасси илтĕнчĕ, машин нартлатрĕ, картишĕнче овчарка хаяррăн вĕрсе ячĕ. Пурте чӳрече витĕр пăхрĕç те райпо шоферĕ Вася чупса иртнине курчĕç. Тепĕр самантранах вăл пӳрте кĕчĕ те, салтакла йăрст тăсăлса тăрса, хăвăрт кăна честь панă пек турĕ.

— Здравия желаю пурне те! Матрена Гавриловна, эсир хушнипе иккĕмĕш класс шоферĕ Вася Васильков килсе çитрĕ... как штык!

— Маттур, Вася, халех кайăпăр,— терĕ Сятрова, ун çине пăхмасăрах.— Кĕт пăртак.

— Есть!

— Пирĕнпе ларса кăшт çырткала-ха, Вася,— кăчăк туртрĕ ăна Кагаева.— Çырла шывне сĕнместĕп...

— Тавтапуç, ман хырăма халь савăл çапсан та кĕмест, тин кăна чайнăйран тухса килтĕм.— Вăл, аллинчи машин уççипе вылякаласа, кăмака çумĕнчи сак çине ларчĕ.— Сăмах майĕн каласан, чайнăйра ĕнер ирпе ЧП пулнă-ха унта...

— Мĕнле ЧП тата? — хăрана пек, тӳрех ыйтрĕ Сятрова.

— Леш мăнтăр буфетчица Лисукпа кладовщика арестленĕ.

— Арестленĕ?! Мĕншĕн?

— Сăлтавне милицисем мана пырса пĕлтермерĕç, анчах хăлха хĕррипе илтсе юлтăм: вĕсем иккĕшĕ питĕ махлевать тунă имĕш. Килĕсенче таçта ăсатма хатĕрлесе хунă продуктсем тата укçа нумай тупнă, тет. Çĕр банка ытла «çăра сĕт», ну, леш ара, тутли, сахăрпа туни тупăннă, пĕр икçĕр коробкă тĕрлĕ йышши консервă — чи лайăх йышши пулăсенчен туни, ашран туни тата ытти те...

— Ун пек-тĕк, вĕсем таçта Çурçĕр полюсне кайса пурăнма хатĕрленнĕ пуль! — кулнă пек, тарăхнă пек

каларӗ ял Совет секретарӗ Юдеркин.— Кунта пуръннӑ чух ун чухлӗ консерва мӗн шуйттанӗ тума кирлӗ ҫынна?!

— Ниҫта кайма та шутламан, пуйма ҫеҫ шутланӑ! — терӗ Вася-шофер.— Пӗтӗм юмахӗ те ҫавӑнта ҫеҫ!

— Тӗлӗнмелле...— пуҫне пӑркаласа илчӗ Сятрова.— Буфетчици питӗ тӳрӗ ҫын пек туйӑнатчӗ мана. Темиҫе ҫул ӗҫлерӗ унта...

— А-ах, вӑл мӗнлерех ҫын пулнине пӗлетпӗр-ҫке, Матрена Гавриловна! — ал сулчӗ Ярапаров.— Сискеленӗ!

— Мӗн сиснӗ эс?

— Сӑмахран каласан, эрехпе пит чее хӑтланнине... Саккун тӑрӑх мӗнле пулмалла? Буфетра сутакан кашни эрех кӗленчи ҫинче «столовая» текен штамп пулмалла, ку вара ӑна наценкӑпа сутмаллине пӗлтерет. Лисук сутакан эрех кӗленчисем ҫинче ун пек штамп эрнере пӗрре е, тен, уйӑхра та пӗрре кӑна пулнӑ. Мӗн тунӑ вӑл? Эрехне магазинран ещӗкӗ-ещӗкӗпе нормальнӑ хакпа илсе пынӑ та хӑй буфетӗнче наценкӑпа яра панӑ! Пӗр ещӗкренех мӗн чухлӗ калым? Эрехне илсе пырса параканни — кладовщик Муркин, ӑна эп хамах темиҫе хут курнӑ. Калымӗ вӗсен ҫурмалла пулнӑ пуль!

— Эпӗ буфетсем тӑрӑх эрех ӗҫсе ҫӳремен те — пӗлместӗп. Калаҫнине кура, вӑл мана ырӑ ҫын пек туйӑнатчӗ те...

— Лекиччен пурте ырӑ ҫынсем пек курӑнаҫҫӗ вӗсем,— ним шухӑшламасӑрах каласа хучӗ Вася-шофер, анчах ун сӑмахӗ Сятровӑна та, Кагаевӑна та кӑмӑла каймарӗ курӑнать.

— Камсем вӗсем — пурте? — ҫиллессӗн ыйтрӗ Кагаева.

— Ну... ҫав самӑр Лисук пеккисем!

— Эп те ырханах мар та, эс мана та ҫав шутах кӗртесшӗн-и?

— Сӑмаха ӑна кӑштах шухӑшласа калас пулать, Вася! — асӑрхаттарчӗ Сятрова.— Ҫынсене ним ҫукранах кӳрентерме пулать.

— Тавтапуҫ ӑс панӑшӑн,— терӗ Вася-шофер йӑл кулса,— тӳрленме тӑрӑшӑп, Матрена Гавриловна...

Ним чӗнмесӗр ларнӑ Лариса ҫав чайнӑйри буфетчица сӑнарне те, Инна ятлӑ официантка ун ҫинчен мӗнмӗн каласа панине те аса илчӗ: вӑл ҫур литртан ҫич-

çĕр грамм кăларнине те, кукăль илме пынă шкул ачисене епле улталанине те, ун пирки хăйне асăрхаттарсан, Иннăна темтепĕр каласа тăкнине те, çинчен заведующие жалоба панине те, лешĕ ĕçрен кăларса ярассипе хăратнине те...

«Лекнĕ, эппин, çапах та...» — шухăшларĕ Лариса.

— Буфетĕнче кам тăрать вара халь вĕсен? — ыйтрĕ Сятрова шофертан. Ăна çав хыпар питех те пăшăрхантарнă пулмалла.

— Пĕр официанткăна тăратнă...

— Ятне пĕлместĕн-и унне? Инна мар-и? — ыттисем пач кĕтмен çĕртен калаçăва хутшăнчĕ Лариса.

— Шăпах çавă сут тăвать,— терĕ шофер.— Ĕçне пĕлсех каймасть-ха, лешин пек вăрт-варт çаврăнкалаймасть, анчах сдачине пĕр пус таранах тĕрĕс шутласа пама тăрăшать, ăна асăрхарăм...

— Ну, тупнă та тепĕр шанчăклă çын! — тутине чалăштарса илчĕ Сятрова.— Илтнĕ эп ун çинчен, хăйсен ялĕнче пин тенкĕ ытла растрата тунă тет вăл, анчах темле майпа хăтăлкаласа юлнă.

— Тĕрĕс мар ку! — терĕ ăна хирĕç Лариса.— Вăл пĕртте айăплă пулман! Ăна жуликсем таварсăр накладной çине ал пустарса улталанă. Таварне хăйсем аяккалла сутнă, айăпне кун çине тиенĕ. Следстви органĕсем тӳрре кăларнă ăна, лешсене хупнă...

— Эс ăçтан пĕлетĕн?

— Илтнĕ.

— Хăш вăхăтра ĕлкĕртĕн ун çинчен илтме?

— Çавах мар-и! Хуть те хăш вăхăтра пултăр. Анчах çав официанткăн нимĕнле айăп та пулманнине тĕптĕрĕс пĕлетĕп...

— Пурпĕрех шанмалли çын мар! — татса хучĕ Сятрова.— Çитменнине, элек сарма юратать пулмалла, чĕлхи питĕ вăрăм, теççĕ. Эп хам пулсан, вăл хĕрарăма буфет çывăхне те ярассăм çук!

— Ун пек çынсемпе сыхăрах пулмалла çав,— килĕшрĕ Кагаева.

Ларисăн ăна хирĕç те тавăрса калас кăмăл пулчĕ, анчах шăлне çыртрĕ, чĕнмерĕ. «Сан пеккисемпе мĕнлерех пулмалла-ши? Хăвна пĕлесчĕ...» —тесе шухăшларĕ çеç хăй ăшĕнче. Ăна ĕнер лавкка умĕнче пухăнса тăнă çынсем калаçни аса килчĕ: «Ытлашши мăнтăра кайрĕ... шутсăр улталама тытăнчĕ, виçĕ пус та пулин хĕс-

се юлать... нӳретнĕ сахăр сутрĕ... «Капкăна» çырса ярас пулать пĕрре!..» Тавар хакĕсене ӳстернине те асăнкаларĕç хăшĕсем... Христин каласа панисене те астурĕ Лариса: «Ĕлĕкхи усламçăсем пекех вăл, кашни утăмрах улталать çынсене... районри пуçлăхсемпе пурăнма пĕлет... кашнинчех кучченеçсем парса ярать...»

Сятровăпа Ярапаров çисе-ĕçсе тăранса сĕтел хушшинчен тухрĕç, кайма хатĕрленчĕç. Вĕсемпе пĕрлех ял Совет секретарĕ Юдеркин та кăштăртатса тухрĕ: «Тавтапуç сана, Анкĕл Егорччă, çăкăр-тăваршăн»,— тесе кивĕ карттусне тăхăнчĕ, анчах карттусĕн сăмси ĕнси еннелле пулчĕ те унăн, Вася-шофер сăмах тĕксе илчĕ:

— Çырла шывĕ те пуçа çавăрать иккен, мучи? Капла эсĕ урампа та кутăн утса каятăн пуль?

— Ма апла калатăн? — ăнланаймарĕ Юдеркин.

— Тĕкĕр çине пăх-ха! Çынсем тӳрех эс ревизире пулнине пĕлме пултараççĕ...

— Э, хăямат! — карттусне тĕрĕс тăхăнса ал сулчĕ те Юдеркин, тайкалансах тухса кайрĕ.

Сасартăк шофер хăйне çамкинчен çат! çапрĕ.

— Э-эх, тăрнаккай! Манăн халех склероз пуçланать пулмалла! — терĕ унтан, сак çинче ларакан Лариса патнелле ик-виç утăм туса.

— Мĕн пулчĕ тата? — ыйтрĕ Лариса.

— Салам илсе килнĕччĕ сан валли, калама мансах кайнă!

— Камран-ши? — ун çине тĕлĕнсе пăхрĕ хĕр.

— Лешинчен ара... Виçĕмкун пирĕнпе пĕрле ларса килнĕ Чатта Микулинчен, район поэтĕнчен! Шăп эпĕ кунта тухса килес умĕн урамра тĕл пултăмăр. Эп ăçта каяссине пĕлчĕ те, аллисене ик еннелле сарса пăрахса «ак çакăн пысăкăш, ытама кĕми салам кала Логинова юлташа!» — терĕ. «Асту, ан маннă пултăр!» — тесе чышкине те кăтартрĕ унтан...

Лариса йăл-йăл кулса илчĕ:

— Тавтапуç, курсан хăйне те манран салам кала...

— Килетĕп тет-ха вăл сирĕн пата, анчах халлĕхе вăхăт çук, тет...

— Килтĕр ара, юрататăп эпĕ ун пек хаваслă çынсене. Унпа нихçан та кичем пулас çук пуль.

Вĕсем калаçнине Кагаева тăрăшсах итлесе тăнă иккен.

— Эсĕ, хĕрĕм, çав редакцинчи Чакайкина чĕне-

тĕн-и? — терĕ вăл, тутине тăсса.— Пуш параппан вĕт вăл, мĕн тума çыхланмалла унпа? Хаçатра лăпăртатса чипер çынсене кӳрентерет кăна. Шăршласа çӳрет район тăрăх ăçта мĕн урлăрах выртнине...

— Сана кӳрентермен-çке, астăватăп, пит мухтаса çырнăччĕ вăл сан пирки,— Лариса вырăнне ответ пачĕ Вася-шофер.

— Мана... мана тиркеме причинĕ çук çав! — пуçне каçăртсах илчĕ Кагаева.

Районрисене ăсатма Кагаевăпа Лариса иккĕшĕ те урама тухрĕç.

Сятровăпа Ярапаров машинăна кĕрсе ларнăччĕ ĕнтĕ, Вася-шофер мотора ĕçлеттерме те тытăннăччĕ, тапранмалла та каймалла кăна, сасартăк Кагаева шофера çаннинчен тытрĕ:

— Тăхта-ха, Вася, эп пĕр япала çинчен мансах кайнă! Тăхта, эп халех, халех!

— Юрать ара, эп васкамастăп,— терĕ шофер.

«Мĕн манма пултарнă-ха ку?» — картишнелле чупсах кĕнĕ Кагаева хыççăн тĕлĕнсе пăхса юлчĕ Лариса.

Виç минут та иртмерĕ пуль, хайхи кил хуçи икĕ хул хушшине те çиелтен хутпа чĕркенĕ пысăк банкăсем хĕстерсе тухрĕ.

— Чей ĕçме... çак варение илсе кайăр-ха тархасшăн! — хашкаса пычĕ вăл машина патне.— Хам пĕçерни! Кăçал чие çырли питĕ ăнса пулчĕ те, кайăксене çитерсе сая ярас мар, терĕм, çĕр çывăрмасăр пĕçертĕм мар-и! Ту-утлă пулчĕ!

— Аван мар капла... Хĕл каçа хăвна кирлĕ пулĕ!— илме килĕшмен пек туса илчĕ Сятрова.

— Манăн тата тепĕр çирĕм банка! Эп хам пĕччен виçĕ хĕлте те çисе ярас çук. Ан тиркĕр ĕнтĕ, илсе кайăр, эп сире темшĕн мар, пĕтĕм кăмăлтан паратăп вĕт! Тутанса пăхмаллăх çеç вăл, нумай мар... — чунтанах ӳкĕтлерĕ Кагаева.

Банкăсене ун аллинчен Ярапаров илчĕ.

— Паракантан ил, çапакантан тар, тенĕ ваттисем, Матрена Гавриловна,— терĕ вăл.— Ыр сунакана кӳрентерер мар, эппин. Эпир те ăна хăçан та пулин тав тума пĕлĕпĕр...

— Мĕн тав тăвасси çинчен калаçатăн эс, Тимофей Сергейч? Килти япала-иç, укçа парса илмен!

«Ак хайхи, Христин каланă пек, кучченеç те пул-

чĕ,— шухăшласа тăчĕ Лариса.— Çакăн хыççăн епле тиркеччĕр-ха ăна вĕсем?..»

...Тепĕр çур сехетрен Кагаевăпа иккĕшĕ лавккана кайрĕç. Унта темиçе çын пырса тăнă-мĕн, анчах Кагаева тӳрех каларĕ вĕсене:

— Паян сутмастпăр, ревизи хыççăн таварсене вырнаçтармалла, лавккара йĕрке тумалла.

Çăраççине уçса шала кĕрсенех, вăл пукан çине ларчĕ те çав тери ывăнса çитнĕ пек хашлатса ячĕ.

— Ф-фу... аранах тасалтăмăр-иç ку хăнасенчен! Йăлăхтарсах çитерчĕç, çĕр çăтманскерсем!

— Ытла йăлăхтарнă пекех туйăнмарĕ-ха, питĕ лайăх пăхрăн вĕсене, юлашкинчен кучченеç те парса ятăн авă,— терĕ Лариса, ун çине куларах пăхса.— Кăмăлĕсене тултартăн...

— Мĕн тăвас тетĕн, хĕрĕм! — татах йывăррăн сывласа илчĕ Кагаева.— Пурте пуçлăхсем айĕнче çӳретпĕр мар-и. Тепĕр чух вĕсен майлă та шăлма пĕлес пулать... Анчах эсĕ вăт Матрена Гавриловнăпа пустуй тавлашма пăхрăн. Ытлашши хăюллăн калаçрăн. Юратмасть вăл ун пеккине. Тата нихçан та манмасть. Хăçан та пулин аса илтеретех.

— Мĕн вара, хăйĕнпе килĕшмесĕр калаçнăшăн та тавăрать-им?

— Тавăрать тесе калама пултараймастăп, анчах май килсен хĕссе лартма пултарать. Тĕрĕссипе калаçсан, вĕреçĕлен вăл!

— Сăнран пăхсан та вĕреçĕлен майĕ пур çав,— килĕшрĕ те Лариса, тӳсеймерĕ, кулса ячĕ.— Çемйи пур-и унăн? Упăшки, ачисем...

— Çук никам та. Хĕр вăл.

— Хĕ-ĕр?! — тата хытăрах кулчĕ Лариса.— Ну, апла пулсан вара чăнах...

— Мĕн?

— Хăрамалла. Эпĕ кашни ватă хĕр чĕринчех виçшер шуйттан ларать тенине илтнĕччĕ. Тен, тĕрĕсех-и?

— Ăна пĕлместĕп, анчах районри лавккасенче ĕçлекенсем унран пурте вутран хăранă пекех хăраççĕ, çавна пĕлетĕп.

— Хăраççĕ кăна мар, кураймаççĕ те пуль, çапла-и? Çапах та кучченеçсем параççĕ ăна... — тĕртсе илчĕ Лариса.

— Мĕн тăвас тетĕн, пурин те пурăнас килет! — аллисене ик еннелле сарчĕ Кагаева.— Пĕр банка варенишĕн, вăл çуралнă кун пĕр кофтăлăх пурçăн е пĕр мăшăр туфли панăшăн никам та ыйткалакан пулса юлмасть, анчах уншăн кайран хăйне пурăнма канлĕрех пулать...

— Вăйлă сăмах. Ĕнентерÿллĕ. «Эп — сана, эс — мана... алла алă çăвать...» Çав пулать ĕнтĕ ку. Çапла-и?

— Хуть те мĕнле шутла, анчах унсăр май килмест.

— Чим-ха, Ангелина Егоровна, райпора унта пуçлăхсем татах та пур-çке-ха! Сăмахран, Фролов çак Сятровăран аслăрах, председатель вăл, Сятрова унăн заместителĕ кăна. Фролова та çавăн пек кучченеçсем параççĕ-и вара районри продавецсем?

Кагаева ал сулса пуçне пăркаласа илчĕ.

— Çу-ук... Фролов патне ун пеккипе пыраймастăн! Эс ăна пĕр пачка пирус укçасăр пама тăрсан та тир сĕвет вăл санне! Тата Фролов вăл завмаг-продавецсенчен аяккарах тăрать, ку Матрени кадрсемпе ĕçлет. Пурте ун аллинче эпир. Çавна шута илеççĕ.

— Апла, паянтан пуçласа, эпĕ те ун аллине лекрĕм пулать-ха?

— Епле пултăр-ха тата? Каларăм-çке, пурте начальства айĕнче çÿретпĕр, ку вара пирĕн чи çывăхри начальник. Пулчĕ-пулмарĕ ун умне пырса тăма тивет. Вăлах хăртать, вăлах мухтать. Пăхăнас пулать. Эс мĕн, никама пăхăнмасăрах пурăнас тетĕн-им?

— Ун пек шутлама эпĕ анархист мар-ха, аслисене пăхăнмалла, вĕсем каланине итлемелле, хушнисене тумалла, вăл пĕтĕмпех тĕрĕс,— терĕ Лариса,— анчах та ĕç йĕркине пăхăнни вăл... унтан-кунтан çулламаллине пĕлтермест пулĕ-çке, Ангелина Егоровна? Юрама хăтланса взяткăсем памаллине те пĕлтермест! Хам çинчен калас пулсан, манран нихçан та, ĕмĕрне те... çуллакан çын пулаймасть. Мĕнле тăваççĕ ăна — пĕлмеспĕп, пире вĕрентмен вăл ирсĕрлĕхе, таса чунпа ĕçлеме çеç вĕрентнĕ. Аслисене çавăн пек йăпăлтатса, парнесем парса юрама, хăвăн майлă çавăрма тăрăшни вăл — хăвăн чысна пĕтерни пулать-çке! Хăвна ним вырăнне хуманни, этем тивĕçне çухатни! Çав этем тивĕçне, хăвăн чысна çухатсан — мĕнле пурăнмалла?

— Э-эх, хĕрĕм,— ассăн сывласа ярса пукан çинчен хуллен тăчĕ Кагаева,— çамрăк çав эсĕ, çамрă-ăк! Пурнăçра тем тума та тивет тепĕр чух. Чыс, совĕç, намăс

тенӗ самахсене эпир те пӗлетпӗр те ҫав, хӑвӑн чысупа мӑнкӑмӑлланнипе те ӗҫ тухмасть.

— Анчах та чыс — этем пурнӑҫӗнче чи хакли-ҫке вӑл, Ангелина Егоровна! Тӳрӗ кӑмӑлпа, таса чунпа, ҫынсене улталамасӑр, кӳрентермесӗр, хӑвна шанса панӑ ӗҫе тӗплӗ, унталла-кунталла пӑркаланмасӑр туса пурӑннине мӗн ҫиттӗр? Ун пек пулсан, такамсене йӑпӑлтатни те, вӗсене юрама тӑрӑшса темтепӗр туни те кирлӗ мар. Ҫапла мар-им?

— Тӗрӗс, хӗрӗм, пӗтӗмпех тӗрӗс сан юрру, килӗшетӗп санпа, кун пирки урӑх тавлашмӑпӑр,— терӗ Кагаева.— Халь ӗҫе тытӑнас пулать пирӗн. Мӗнрен пуҫлӑпӑр-ши? Каллех урай ҫуса тухас пулать пуль, вара таварсене тирпейлӗрех вырнаҫтарас та лавккине уҫас. Халӑх вӑрҫма тытӑнӗ тата, виҫҫӗмӗш кун сутӑ тумастпӑр...

— Юрать, Ангелина Егоровна, урайне халех ҫӑвӑп. Унтан пур ҫӗре те ценниксем туса ҫакас пулать, атту пирӗн пӗр тавар ҫинче те хакне кӑтартни ҫук. Юрамасть ун пек.

— Мӗн тума кирлӗ вӑл ценниксем? Эпӗ кашни тавар хакнех наизуҫ пӗлетӗп, куҫ хупса калама пултаратӑп. Ку вӑтӑр пус, ку аллӑ, лешӗ пӗр тенкӗ... Эс те часах хӑнӑхатӑн акӑ, йывӑр ӗҫех мар вӑл...

— Хакӗсене пурӗпӗр ҫырса ҫакас пулать,— ҫине тӑчӗ Лариса.— Эпир хамӑр пӗлни — сахал, тавар илекен кашни ҫын ун хакне тӳрех хӑй куҫӗпе куртӑр. Ун пек тусан, пире никам те ӳпкелеме, «тавар хакне ӳстерсе сутать» теме пултараймасть. Ценниксем пирки тата Центросоюз приказӗ те пур, ӑна пире шкулта вуласа панӑ, пит хаяр приказ — ценниксем йӗркеллӗ мар пулсан, завмагсемпе продавецсене хытӑ ответ тыттармалла, тенӗ.

Кагаева, тутине мӑкӑртса, ал сулса илчӗ.

— Вӑл хут таткисем ниме те пӗлтермеҫҫӗ-ха, хӗрӗм, тавар хакне ӳстересех текен ценниксемпе тата лайӑхрах улталама пултарать, вунпилӗк пус вырӑнне ҫирӗм пиллӗк, вӑтӑр пус вырӑнне аллӑ туса хурать те, кайрӗ вара унӑн! Кашни тавар илекен ҫынах накладной ҫине пӑхмасть. Эп хам нихҫан та ун пек хӑтланман, хӑтланассӑм та ҫук, анчах хӑшӗсем ҫавӑн пек хӑтланни ҫинчен илткеленӗ...

— Ҫук ӗнтӗ, пирӗн магазинра кашни тавар ҫинчех

ценник пултăр, Ангелина Егоровна. Закон вăл,— терĕ Лариса.

— Ту ара, ту, эп чаратăп-им сана? Ӳркенместĕн пулсан...

— Кирлĕ ёçе тума ма ӳркенес?

— Юрĕ, юрĕ, эс каланă пек пултăр...

## 11

...Усалли çеç мар, ырă хыпар та халăх хушшинче хăвăрт сарăлать çав!

Тепĕр эрнеренех Ларисăна пĕтĕм Вăкăрвар пĕлекен пулчĕ. Ватти те, вĕтти те мухтарĕ ăна, ун çинчен пĕрпĕрине каласа пачĕ.

— Лавккана пыракансемпе чĕвĕлти чĕкеç пек калаçать! Ытарма çук вăл калаçнине!

— Пĕр япалашăн çеç пыратăн ун патне — ик-виç япала туянса тухатăн: ăна та сĕнет, кăна та... Ниепле те тӳсмелле мар илмесĕр!

— Пуç тутрисене пĕрин хыççăн теприне çыхтарса пăхтарать, тĕкĕр умне çавăтса пырса кăтартать, юлашкинчен вара «сана ак çак ытларах килĕшет, çакна ил», тет...

— Çитсă илнĕ чух та çавăн пекех суйлаттарать! Кам валли, мĕн валли илнине ыйтса пĕлет те хăй сĕнме тытăнать: кукаму валли пулсан — çак лайăх, хăвна валли — ак ку...

— Мана укçа тавăрса панă чух икĕ пуслăх вакки пулмарĕ те унăн, тем таран шырарĕ, унтан пурĕпĕр тупаймарĕ те, ман умра айăпа кĕнĕ пек хĕрелсе, каçарма ыйтса, ик коробкă шăрпăк парса ячĕ...

— Лавккинче мĕнлерех таса тата халь? Асăрхарăр-и? Таварĕсем епле йĕркеллĕ выртаççĕ! Тата кашнин çинчех хакне çырни пур.

— Ятарласа вĕренсе килнĕ тет те вăл...

— Маттур, маттур хĕрача...

— Анчах Анкĕлинĕ ăна та леш пĕлтĕрхи хĕрачана çисе янă пек çисе ямасан юрĕччĕ...

— Ытла тăруках шăл айне пулассăн туйăнмасть-ха ку, питĕ çивĕч-иç! Хулара пурăннă, халăх хушшинче пулнă, лешин пек чĕмсĕр мар.

Лавккана халăх йышлăран йышлă çӳреме пуçларĕ. Пуринчен ытла — çамрăксем. Хĕрсем те, каччăсем те.

Хӗрӗсем пӗчченшерӗн те мар, пиллӗкӗн-улттӑн пӗрле пырса кӗреççӗ те тӳрех Ларисӑпа калаçма тытӑнаççӗ — ӑна пар та куна суйласа илме пулӑш. Хӑшне кӗпелӗх, хӑшне саппунлӑх, теприсене тутӑр кирлӗ. Ытти таварсене те илеççӗ — резин атӑ, чӑлха-пушмак, сӑмса тутри, тутлӑрах супӑнь, одеколон-духи таранах. Вӗсене йӑлтах Лариса хӑй суйласа парать. Çав вӑхӑтрах ӑнсӑртран каччӑсем пырса кӗрсен, тӑрӑхлама пӑхаççӗ, Ларисӑна: «Эс килнӗренпе пирӗн хӗрсем ытла тутлӑ шӑршланса кайрӗç», тесе кулкалаççӗ, анчах Лариса вӗсене çийӗнчех тавӑрса калать: «Хӗрсем тутланаççӗ, анчах эсир вӑт çаплах йӳçӗленсе пыратӑр-ха, пируспа эрехсӗр пуçне ним илнине те курмастӑп...»

Эрех пирки шӑв-шав та пулса иртрӗ. Пӗррехинче, ир-ирех, Лариса лавккана пӗччэнех пырса уçсан, унта икӗ тракторист пырса кӗчӗç те çур литр ыйтрӗç. Лариса памарӗ. Эрех таврашне вунпӗр сехетчен сутмастӑп, терӗ. Вӗресех кайрӗç лешсем, хыттӑнах калаçма тытӑнчӗç.

— Эс мӗн, хитре пике, пире хулари саккунсем тӑрӑх усрас теместӗн пуль те? Не выйдет ун пек! Кунта пирӗн хамӑрӑн расписани!

— Выйдет,— терӗ Лариса.— Совет саккунӗсем хулара та, ялта та пӗр пекех. Вунпӗрсӗр эрех памастӑп сире, ӗçӗ те пӗтрӗ.

— Мухмӑр пирӗн, каçхине эпир туйра пулнӑ, пӗлетӗн-и çавна?

— Ман ӗç çук унта, эсир хуть те ӑçта ӗçсе супнӑ пултӑр...

— Мӗн тумалла-ха пирӗн? Мухмӑр-çке, пуç ырать!

— Мухмӑр çӑра чейпе лайӑх иртет, теççӗ. Илӗр акӑ индийскипе грузински чей, вӗсене хутӑш пӗçерсе ӗçӗр тӑраниччен. Питӗ шутсӑр чаплӑ чейсем, шӑрши кӑна мӗне тӑрать!

— Эс ху шӑршла хӑвӑн чейӳсене, пире очищӗнни пар!

— Памастӑп.

— Итле-ха, хитре пике... Эс çын-и, çын мар-и?

— Çын тесех шутлатӑп-ха хама.

— Чӗрӳ пур-и санӑн, çук-и?

— Пур пек туйӑнать...

— Çук санӑн нимӗнле чӗре те! Чул муклашки чӗре

вырӑнне, акӑ мӗн! Ҫынсене хӗрхенме пӗлместӗн! Анкӗлин Егорна пире нихҫан та чарман, хуть те хӑҫан илсе ӗҫ. Эсӗ ак килнӗ-килмен хӑвӑн йӗркӳсене тума тытӑннӑ. Мӗнле ӑнланмалла куна?!

— Хам йӗркесене тумастӑп эпӗ, совет суту-илӗвӗн йӗркисене тытса пыма тӑрӑшатӑп ҫеҫ. Пӗтӗм ӗҫӗ те ҫав кӑна.

— Кун пек... кун пек эсӗ пирӗн патра нумаях тытӑнса тӑраймастӑн, ачамккӑ! Кӑларса ывӑтаҫҫӗ сана! Ялти пурнӑҫӑн хӑйӗн йӗрки пур, ҫавна пӗлес пулать!

— Пур ҫӗрте те совет йӗрки. Ҫав йӗркене пӑхӑнса, ҫӗр ҫул таранах пурӑнма ӗмӗтленетӗп-ха эпӗ. Ҫӗр ҫултан ҫуррине — сирӗн ялта, сире вӑхӑтсӑр мухмӑр уҫтармасӑр... — кулса илчӗ Лариса.

Нимсӗрех тухса кайрӗҫ йӗкӗтсем.

Ҫак хыпар та ял тӑрӑх пит хӑвӑрт сарӑлчӗ. Хӗрарӑмсем шутсӑр ырларӗҫ Ларисӑна уншӑн, янрасах илчӗҫ:

— Юрать-ха ку, атту теприсем ирхи апатченех персе лартаҫҫӗ те, кунӗпе ҫын мар вара! Анкӗлини, халер пырса ҫапманскер, нумайӑшне пьянчука кӑларса ячӗ, эсрел! Ун патне ҫӗр варринче те кайса ӗҫетчӗҫ-ха. Ҫур литршӑн пӗр полтинӑ хушса параҫҫӗ те — хуть те четвӗрчӗпе кӳп! Текех ун пекки пулминччӗ...

Лавккара «пит кӑмӑллӑ майра» сутӑ тунине илтсе, унта хӑш-хаш каччӑсем ахалех, ӑна курмалла пырапыра кайрӗҫ. Пӗр пачкӑ пируспа спичка илеҫҫӗ те Ларисӑна сӑмах хушма, ӑна калаҫтарма тӑрӑшаҫҫӗ, ун-кун ҫинчен ыйтса пӗлнӗ пек тӑваҫҫӗ. Уйрӑмах колхозри ӗҫсӗр аптранӑ ветфельдшерпа ир-каҫ анчах ӗҫлекен радиотехник пӗр-пӗринпе ӑмӑртнӑ пекех ҫӳреме тытӑнчӗҫ. Хӗре хӑйсем майлӑ ҫавӑрас шухӑш та пулчӗ курӑнать вӗсен, анчах ӗҫ тухсах каймарӗ — Лариса вӗсене иккӗшне те пит лайӑх тӗтӗрлентерсе кӑларса ячӗ: ветфельдшерне тепӗр ҫынпа пӗрле тин ҫеҫ илнӗ чӗрӗк эрехе лавккарах ӗҫме тӑнӑшӑн, техникне — «Казбек» илсе ҫавӑнтах пӑравус пек мӑкӑрлантарма тытӑннӑшӑн лекрӗ.

— Магазин — хупах мар! — терӗ пӗрине.— Табак тӗтӗмӗ таварсене шӑршлантарать, вӗсем ҫине ларса тӗсне пӑсать, эс кунта юри сиен кӳрсе тӑратӑн! — терӗ теприне.

Ҫав кунах, кӑнтӑрлахи апат вӑхӑтӗнче, таса хут



листи çине пит хитре саспаллисемпе çырса çапрĕ: «Асту! Пирĕн патра эрех те ĕçмеççĕ, табак та туртмаççĕ!»

Малтанхи кунсенче Кагаева, чирленĕ пек пулса, пуçĕ ыратни çине ӳпкелесе пурăнчĕ. Лавккана пырать те алла нимĕн те тытмасть, Лариса мĕнле ĕçленине пăхкаласа çеç ларать. Пыракан-кĕрекен çынсемпе кăшт-кашт калаçкаласа илет, кайри пӳлĕме, таварсем упраннă çĕре, кĕркелесе тухать те киле каять.

— Эс ĕнтĕ паян пĕчченех сутă тукала, пĕтĕм шăмшак çĕмĕрлет манăн, пĕр вăй та çук, кайса выртамха,— тесе хăваратьЛарисăна.

— Юрать ара, юрать, хал çук пулсан вырт,— тет ăна хирĕç Лариса.— Ан пăшăрхан, пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулать!

Ĕçлессе вăл пĕтĕм чунне парса ĕçлерĕ ĕнтĕ. Лавккана пыракан кашни çыннах кăшт та пулин савăнтарасси килчĕ унăн — кĕпе илет-и вăл, тутăр-и, пушмак-и, пула е сахăр, пурпĕр хăйне пурнăçра кирлĕ япала туянать-çке! Тулли кăмăлпа тухса кайтăр. Киле пырсан та хăй лавккара пулни çинчен ырăпа асăнтăр...

Кăштах пушă вăхăт пулсан малтан вырăнтан хускатма тивнĕ япаласене, уйрăмах пусма-таварсене, тумтир таврашĕсене юсарах, хитререх курăнмалла туса хучĕ. Эрех сентрисем çине çеç питех пăхас килмерĕ унăн, анчах вăл та таварах-çке, ăна та йĕркеллĕ тытас пулать. Ним те ун-кун сапаланса ан лартăр, йăваланса ан выртттăр!

Лариса час-часах хăйĕн ытарайми тусне, Улăххĕрринче ĕçлеме юлнă Кирăна, аса илчĕ, ун çинчен шухăшларĕ. Вăл мĕнлерех вырнаçса çитрĕ-ши? Хваттерте кам патĕнче, мĕнле çынсемпе пурăнать-ши? Ĕçĕ еплерех пырать-ши? Унти лавкка заведующийĕ (унăн хушамачĕ Вахрамеев пулас-ха) Ларисăна кăмăллă çын пек туйăнчĕ-ха, Кирăна кӳрентерме кирлĕ мар. Тата Кири хăй те шăртне тăратма пултарать, ăна питех кӳрентереймĕн... Инçе те мар ĕнтĕ Вăкăрварĕпе Улăххĕрри хушши, кайса килме те пулатчĕ Кира патне, анчах Кагаева чирлекелет те ав, пăрахса кайма çук. Ялти лавккана ирпе ирех уçмалла, кăнтăрла пĕр-ик сехет хупса тăратнă хыççăн каçхине те вăрахчен сутă тумалла— халăхĕ татăлма пĕлмест, пĕрре те ахаль тăмастăн!

...Лариса ĕçлеме пуçласан пĕр вунă-вуник кунтан,

каçалла сулăнсан, урамра сасартăк машина нартлатрĕ те, темиçе самантранах лавккана малтан райпо председателĕ Фролов, ун хыççăн Чатта поэтпа Вася-шофер кĕрсе тăчĕç. Лавккара никамах та çукчĕ, Лариса пĕртен-пĕр хĕрарăма ача пушмакĕсем суйлаттарса тăратчĕ. Пырса кĕнĕ çынсене вăл тӳрех палларĕ те тăруках çухалса кайнă пек пулчĕ, кĕрхи анис улми пек хĕрелчĕ.

— Ырă кун пултăр, Логинова юлташ! — ун умне пырса пĕртен-пĕр аллине тăсрĕ те Фролов, хĕре куçĕнчен пăхса йăл кулса илчĕ.

— Ырă кун... сывлăх сунатăп! — ал пачĕ Лариса.

— Хĕрӳллĕ салам! — Фролов хыççăнах хĕр аллине чăмăртарĕ Чатта та.

— Сире те салам...

— Ну, мĕнле пек, Логинова юлташ? Суту-илӳ ăнса пырать-и? Хăнăхатăр-и? — тӳрех ыйтма тытăнчĕ Фролов. Хăй çав вăхăтрах лавкка ăшчиккине питĕ тимлĕн пăхса çаврăнчĕ.

— Сутатпăр-ха майĕпе,— терĕ Лариса, кăштах лăпланса.

— Кагаева хăй ăçта?

— Апат хыççăн килеймерĕ-ха, кăшт чирлекелет те...

— Пулма пултараймасть! Ангелина Егоровна чирлет-и? — тĕлĕннĕ пек ыйтрĕ Чатта.— Ун тĕлне пулсан, хуть те мĕнле чир те виç çухрăма тармалла-çке! Çав тери паттăр çын...

— Вырăнпах выртмасть пуль те?

— Çук, çӳресси çӳрет, анчах пĕрмай пуç ыратать, тет...

Фролов алăк патĕнчерех тăракан шофера хушрĕ:

— Вĕçтер, Вася, лартса кил лавкка хуçине! — унтан каллех Ларисăпа калаçма тытăнчĕ: хваттер пирки мĕнле, килĕшет-и кунта, кӳренмеллисем пулмарĕç-и, халăх мĕнлерех пăхать ун çине, çынсемпе паллашатăн-и, хĕр-юлташсем тупăнмарĕç-и-ха? Паллашни кирлĕ вăл, унсăр кичем пулать, кичем пулсан — кăмăл пĕтет, çын ĕçре те сӳрĕкленет...

— Ним пирки те ӳпкелешместĕп-ха, Владимир Яковлевич, халлĕхе пурнăç йĕркеллех пынă пек туйăнать,— терĕ ăна хирĕç Лариса.

Вĕсен калаçуне сасартăк леш ача пушмакĕ илнĕ хĕрарăм хутшăнчĕ:

— Пăшăрх..нмалли çук, ку хĕрачана ĕнтĕ пĕтĕм ял

пӗлсе ҫитрӗ! — терӗ вӑл, Лариса ҫине кӑтартса.— Пурте мухтаҫҫӗ! Хам та калама пултаратӑп: спаҫҫипех сире пирӗн пата ҫакӑн пек ыр кӑмӑллӑ лавӑшник ярса панӑшӑн! Лешӗ, пирӗн ватти, вӑл вӗт...

— Мӗн, начар-им? Нумайранпа ӗҫлет-ҫке? — ыйтрӗ Фролов.

— Юрӗ, нимӗн те каламастӑп. Ытлашши пулӗ тата! — хӗрарӑм вӑрт! ҫаврӑнчӗ те васкасах тухса кайрӗ.

— Таварсем сахалтарах, председатель юлташ,— терӗ Лариса кӑшт тӑхтасан.— Ҫак хушӑра ик-виҫӗ ҫын телевизор килсе ыйтрӗҫ, вӗсем пӗрре те ҫук пирӗн, хӗрарӑмсем электричествӑпа ӗҫлекен ҫӗвӗ машинисем ыйтаҫҫӗ — вӗсем те ҫук... Куратӑр — пусма-тавар енчен те пуян мар эпир, ытла пурте пӗр тӗслӗрех, пӑхма кӑмӑллӑ тӗслисем ҫукпа пӗрех: кӑвак, сарӑ, симӗс... Хӗрсем хитре чечеклисене ыйтаҫҫӗ! Хулари пек капӑр ҫӳресшӗн!

— Ҫимеллисем пирки мӗнле?

— Макарон, рожки пур, сахӑр, песок ҫителӗклӗ-ха, анчах канфетсенчен — ҫӑвар маччине ҫилӗм пек ҫыпӑҫса ларакан «подушки» ҫеҫ, илмеҫҫӗ те ӑна. Кунта леш «кайӑк сӗчӗ» тенисемех кирлӗ мар пулӗ, анчах шоколадлӑ канфетсем пулмаллах. Пурне те пӗлсех ҫитейместӗп-ха, ҫапах та интеллигенци чылай пулас кунта. Пируссенчен те лайӑхраххисене ыйтаҫҫӗ, фильтрлӑ сигаретсем илсе килӗр, теҫҫӗ.

— Ӑнланатӑп,— терӗ Фролов,— асра тытӑпӑр, шута илӗпӗр...

— Ҫӗнӗ кӗнекесем ыйтаҫҫӗ тата! Пурте — ҫамрӑккисем те, ватӑраххисем те! Вӗсем пӗрре те ҫук пирӗн. Пӑхӑр-ха эсир, Владимир Яковлевич, мӗнешкел хлам выртать кунта! — Лариса Фролова кӗнеке сентрисем умне илсе пычӗ.— Мӑшкӑл! Вунӑ ҫул каяллах тухнӑ брошюрӑсем — ак кукуруза, кӑркка, кишӗр... Ну, никам тытса вулас ҫук сӑвӑсем пур ӗнтӗ темиҫе экземпляр. Пӗр роман, пӗр повесть, пӗр пьеса ҫук! Анчах вӗсем халь нумай тухаҫҫӗ... Инвентаризаци тунӑ чух сирӗн заместителе каларӑм та ун ҫинчен, килӗшмерӗ пулмалла эп калани — мӗн пур, ҫавна сутӑр, тесе хӑварчӗ. Мӗнле сутмалла вӗсене? Кам илет? Тахҫанах списать тумалла!

— Тӗрӗс, Владимир Яковлевич, кӗнекесем сутасси ҫине тимлӗрех ҫаврӑнса пӑхас пулать,— калаҫӑва хут-

шăнчĕ Чатта.— Кунта çеç мар, ытти лавккасенче те питĕ япăх! Пуринчен ытларах — утиль выртать...

— Куна та шута илĕпĕр,— терĕ Фролов.— Çитес çывăх вăхăтрах пур завмагсене те пухса кĕнекесемпе сутă тăвасси çинчен ятарласа каласма палăртнă-ха эпир... А эсĕ, Логинова, ним ўркенмесĕрех çак пур кĕнекесен списокне туса, вĕсем хăçан тухнине, хакне кăтартса ман пата ярса пар. Пăхăпăр эпир...

— Юрать, председатель юлташ! Паянах тăватăп ку ĕçе! Анчах эсир пире çĕннисене ярса парасси çинчен те ан манăр вара...

— Манмастăп, хĕрĕм, манмастăп...

Çак самантра лавккана Кагаева хашкаса пырса кĕчĕ.

— Ах, ту-ур, эс килнĕ-çке, Владимир Яккăлч, эс килнĕ-çке! Вăт, пулать те кĕтмен хăна... — юрласах ячĕ вăл, Фролова ал парса.— Каçар ĕнтĕ кĕтсе илейменшĕн... Тем, çак кунсенче питĕ пуç кашланипе аптрарăм-çке. Пĕрре больницăна çитсе пăхмалла та-ха, вăхăт çук-çке, вăхăт çу-ук! Ĕçлетпĕр, халăхшăн тăрăшатпăр, план тултаратпăр. Атя-ха, ирт-ха лерелле, ĕçпе килнĕ пуль, ятлама-и, ăс пама-и, ларар калаçса, ура çинче тăрар мар...

Кагаева райпо председательне хыçалти пўлĕме илсе кĕртрĕ.

— Мĕн çăмăлпа, мĕнле хыпарпа, Владимир Яккăлч? — ун куçĕнчен айăпа кĕнĕ йыт çури пекех пăхса ыйтрĕ вăл ларнă-ларман.— Ырăпа-и, усалпа-и? Пирĕн вăрçмалли нимех те çук пек те-ха...

— Апла та мар, капла та мар, ахалех,—терĕ Фролов.— Паян кăшт пушăрах кун килсе тухрĕ те, магазинсене курса çўрес терĕм. Тухса çўременни чылай пулать те...

— Кирлĕ, вăл та кирлĕ, Владимир Яккăлч! Пире тĕрĕслес пулать çав, киле-киле вĕрентес, тепĕр чух ятлас та пулать!

— Сана ятламаллиех çук пек-ха, Ангелина Егоровна.

— Манăн та çитменлĕхсем пулма пултараççĕ, пурне те ăçтан асăрхаса çитеретĕн...

— Ну, çĕнĕ продавщица мĕнлерех? Пĕлсе çитрĕн пуль ĕнтĕ? Ĕçлеме пултарас пек-и?

— Хурламаллиех çук пек-ха, Владимир Яккăлч,

аван хĕрача. Итлет. Ĕҫчен. Тăрăшать-ха. Малашне мĕнле пулассине пĕлместĕп, анчах халлĕхе маттур пек курăнать. Чăн та, ĕне чĕрни пусманни, ҫăмăлтараххи сисĕнет ĕнтĕ, вăл сисĕнет...

— Хăш енчен?

— Ара, карахтерĕ... Пурне те хăй шутланă пек тăвасшăн...

— Тен, унăн хăй майлă туса ĕҫе лайăхлатас килет? Ҫамрăксем сĕннине те йышăнас пулать пирĕн. Вĕсен ăсĕ-пуҫĕ ҫивĕчрех.

— Аслисене вĕрентме пăхать... Пĕркун Матрена Гавриловнăпа чутах хирĕҫсе каятчĕ. Ун кăмăлне хуҫрĕ пулмалла...

— Леш... кĕнекесем пирки-и? — ăна пӳлсе ыйтрĕ Фролов. — Тĕрĕс каланă, вăл кĕнекесене тахҫанах кăларса пемелле, ахалех вырăн йышăнса тăраҫҫĕ. Питĕ кивĕ.

— Ун ҫинчен шалăп пама та ĕлкĕрчĕ-и? — тăрук куҫĕсене чарса пăрахрĕ Кагаева.— Пăх-ха ăна... ай-ай, ҫивĕч!

— Нимĕнле жалоба та паман, кĕнекисене кăтартрĕ ҫеç. Кусене списать туса, халех ҫĕннисене, кирлисене ярса паратпăр.

— Кĕнекисемпе вĕсемпе ытлашши васкамасан та юрать-ха, хырăм туттиех мар вăл, ҫăкăр-тăвар мар,— терĕ Кагаева,— ытла кашниех ыйтмасть ăна...

— Ку тĕрĕс мар вара, Ангелина Егоровна! — ун куҫĕнчен пăхса ҫирĕппĕн каларĕ Фролов.— Кĕнеке те ҫăкăрах. Астăн, чун-чĕре ҫăкăрĕ. Малашне кĕнекесем ытларах пама пуҫлатпăр сире, курăн.

— Сирĕн ирĕк ĕнтĕ, пире мĕн? — хулпуҫҫисене хутлатса илчĕ Кагаева.— Кĕнекепе оборот тума, план тултарма ҫук, ҫавăнпа ҫеҫ каларăм.

— Пирĕн ĕҫре оборот ҫинчен ҫеҫ шухăшлани ҫителĕксĕр, Ангелина Егоровна. Халăха воспитани парасси, унăн культурине ӳстерсе пырасси ҫинчен те манма юрамасть.

— Юрамасть ĕнтĕ, ăҫтан юратăр... — куҫĕсене мăчмăч хупса илчĕ те Кагаева, темле хутланса, пĕчĕкленсе ларчĕ.— Пĕлетпĕр, чухлатпăр ăна, халь те тăрăшатпăр. Ним ăнланман ҫынсемех мар...

Вĕсем ҫапла калаҫнă вăхăтра сутă тумалли мăн пӳлĕмре Чаттапа Лариса та пĕр чарăнмасăр калаҫса тă-

чĕç. Фроловпа пĕрле Чатта паян Улăххĕрри лавккинче пулнă иккен, Кирăна курса калаçнă, лешĕ ун урлă Ларисăна салам каласа янă.

— Мĕнле пурăнать вăл унта? Ик эрне курман, тунсăхласа çитрĕм, çав тери курас килекен пулчĕ! — терĕ Лариса.

— Аванах пурăнатăп, терĕ. Хваттер лайăх тупса панă ăна, пĕр ватăрах пĕччен карчăк патĕнче...

— Хăй мĕнле? Улшăнман-и? Чиперех-и?

— Эп ăна унччен пĕрре кăна курнă та, улшăннинех сисмерĕм. Халь кĕркунне пулсан та, вăл мана çурхи чечек пекех туйăнчĕ...

— Ним пирки те ÿпкелемест-и?

— Çук, пессимизм тавраш̆ĕ палăрмарĕ. Драмкружока çырчĕç, праçник валли спектакль хатĕрлетпĕр, тет.

— Ăна пултарать-ха вăл, шкулта та пĕрмаях вылятчĕ. Малтанхи çул вĕреннĕ чухне чутах театр студине кайса кĕретчĕ, темлерен çеç пăрахрĕ вăл шухăша. Каччăсем пирки шарламарĕ-и тата? Ун хыççăн çÿрекен нумай пулакан.

— Ку кăткăс ыйтăва хускатман эпир. Анчах кун йĕркинче вăл ыйту та пулма пултарать. Каларăмçке — чăн-чăн çурхи чечек!

— Эсир хăвăр иккĕмĕш хут курсах юратса пăрахмарăр-и ăна, Чатта юлташ? — чееремхĕн пăхса илчĕ каччă çине Лариса.— Поэтсен чĕри хĕрÿллĕ, теççĕ!

— Халлĕхе çирĕплетсех калаймастăп, анчах — ăçтан пĕлес? — ун пек хăрушлăх ман ума тухса тăма пултарать те пуль,— йăл кулчĕ Чатта.— Пысăк хăрушлăх...

— Мĕншĕн хăрушлăх-ха вăл? Юратакан çын телейлĕ, темеççĕ-и?

— Килĕшместĕп. Юратса пăрахнă çын вăл йĕркеллĕ шухăшлайми пулса каять. Ăспуçĕ пăтранать унăн. Анчах манăн ĕçлемелле. Пирĕн, журналистсен ĕçĕнче, пит таса ăстăн кирлĕ.

— Апла, сирĕн ĕмĕр-ĕмĕр юратмасăр пурăнмалла-и?

— Пирĕн пуринчен ытларах пурнăçа юратмалла. Халăха юратмалла, уйрăм çынсене мар. Куна мана пĕр ăслă çын каларĕ.

— Хĕрарăма юратни те халăха юратни шутне кĕмест-им?

— Кĕрет пуль те... вăл урăхларах матери. Тепĕр енчен пăхсан, Горький каланă-ха ун пирки: вилĕмрен хăтăлайман пекех, хĕрарăмран та ниçта тарса хăтăлаймастăн, тенĕ. Вăйлă каланă!

Хыçалти пӳлĕмрен Фроловпа Кагаева тухрĕç.

— Сана чей те пулин ĕçтерсе ямаллаччĕ те, васкатăр пуль,— терĕ Кагаева.— Халь ăçталла çул тытатăр ĕнтĕ?

— Чăрăшкассине, Васюков патне çитесшĕн-ха,— терĕ Фролов.— Каллех жалобăсем пычĕç ун çинчен. Хăй ялан ӳсĕр, лавккинче çамрăк арăмĕ шуровать тăвать, теççĕ... Япала илме пыракансене темтепĕр каласа кӳрентерет, хакĕсене камран мĕн чухлĕ илес тенĕ — çавăн чухлĕ илет имĕш. Кайса курас...

— Илтмен, илтмен ун пеккине,— пуçне пăркаларĕ Кагаева.

Чатта Лариса аллине тытса хытă чăмăртарĕ.

— Тепре куриччен, Логинова юлташ!

— Хушаматсăр пуçне, манăн тата ят та пур, журналист юлташ...

— Пĕлетĕп, анчах ятран чĕнме хăяймастăп-ха,— терĕ Чатта.— Епле пулсан та, эсир столицăран килнĕ хĕр, эпĕ — мĕскĕн провинциал çеç.

— Юморист эсир!

— Пур пăртак. Фельетонсем çырма юрататăп.

— Хăрамастăр-и? Лектереççĕ ак пĕрре-пĕрре. Çурхи чечек пек хĕрсен макăрмалла пулать.

— Кашкăртан хăракана вăрмана кайма хушман. Эп хăракан йышшиех мар. Пĕтсен те тĕрĕслĕхшĕн пĕтетĕп...

Вĕсем иккĕшĕ те кулса ячĕç.

Фроловпа Чатта тек тытăнса тăмарĕç. Машин хускалса кайсан, Фролов Чаттана чавсипе тĕртсе ыйтрĕ:

— Ну, мĕнле, поэт? Кăмăла кайрĕ-и сана Кагаева помошникĕ?

— Аван хĕрача,— терĕ Чатта.— Эсĕ ху мĕнле шутлатăн?

— Шанчăклă, чунне парса ĕçлекен çын пулассăн туйăнать-ха. Пĕрер çултан ăна завмаг тума та май килĕ...

— Тӗрӗс! Ҫамрӑк кадрсене ҫул уҫса парса, ӳстерсе пырас пулать!

— Халь те ҫавӑн пек тума тӑрӑшатпӑр. Кӑҫал ҫичӗ лавккана комсомолецсен аллине патӑмӑр.

## 12

Тата тепӗр вунӑ кун пек иртрӗ.

Лариса ӗҫе хӑнӑхрӗ ӗнтӗ, ӑна хӑй кунта тахҫантанпах ӗҫленӗ пек туйӑнма пуҫларӗ. Чылай ҫынсене паллакан, лавккана пыракансенчен кама мӗн кирлине пӗлекен пулчӗ. Шкул директорӗ Цветков пырсан, Лариса ун умне тӳрех «Беломор» кӑларса хурать, медпунктри ҫӑвӑр путек пек хура кӑтра ҫӳҫлӗ Соня ятлӑ сестрана кирек хӑҫан та икҫӗр грамм ирис турттарса памалла, ик-виҫ кунта пӗрре пырса тӑракан пӗчӗк кӑна кукӑр карчӑка «нюххи» — сӑмсапа шӑршламалли табак парас пулать, пӗр ватӑ учительница ялан пулӑ консерви илет... Хӗрсене, паллах, ҫитсӑ-сатин, штапель-пурҫӑн кирлӗ, ытти ҫӗрелле пӑхмаҫҫӗ те вӗсем. Каччисем ытларах эрех сентрисем ҫинелле пӑхаҫҫӗ, анчах хитререх кӗпесем, джемперсем, «виҫесӗр» носкисем суйласа илекенсем те чылай пулаҫҫӗ. Ӗҫсӗр тӑмастӑн пӗрре те, яланах мӗн те пулин сутатӑн...

Лариса колхозри комсомол организацине учета тӑчӗ, ҫамрӑксен пӗр пухӑвӗнче пулчӗ. Райкомолтан пынӑ пит маттур каччӑ ҫамрӑксен хӗллехи политвӗренӗвӗ, халӑх хушшинчи культмассӑллӑ ӗҫсем ҫинчен лайӑх доклад туса пачӗ. Ҫавӑнтах Октябрь уявне хатӗрленсе ирттерме комисси турӗҫ те унта Ларисӑна та кӗртрӗҫ.

Пуху хыҫҫӑн ҫамрӑксем кино курчӗҫ — «Золото» ятлӑ фильм пурне те питӗ килӗшрӗ. Унта пӗр комсомолка, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче нимӗҫ фашисчӗсем пырса кӗме тапратнӑ хулари банкра упраннӑ государство ылтӑнне кутамккаласа, хӑйӗн ҫулӗ ҫинче тем тӗрлӗ хӑрушлӑх, йывӑрлӑх пулнӑ пулин те, ӑна хамӑраннисем патне илсе ҫитерннине кӑтартнӑ. Мӗнешкел хӑюллӑ, паттӑр, нимрен хӑрами ҫын, пуринчен те ытла — мӗн тери таса чунлӑ, тӳрӗ кӑмӑллӑ, чӑн-чӑн совет ҫынни пулмалла ун пек тума! Тем пысӑкӑш хутаҫ ылтӑн пулнӑ ҫав хӗр аллинче, ӑна вӑл «вӑрҫӑ хыҫҫӑн усӑ курӑп-ха» тесе питӗ тӗплӗ пытарса хума та пултарнӑ — пӗр свидетель те

пулман-çке, хĕрпе пĕрле пынă старик те вилнĕ! — анчах хĕрӳ чĕреллĕ патриотка фронт урлă каçса хамăр çынсене тупасса шанса малаллах, малаллах утнă...

Лариса çавăн пек таса чунлă çынсене кăтартакан тепĕр кинофильма астăвать. Вунсаккăрмĕш çулта Владимир Ильич Ленин хушнипе пĕр рабочи тырăллă кĕпĕрнесене кайса Питĕрти выçăпа аптракан ĕççыннисем валли пĕр эшелон тырă илсе килет. Анчах çулпуçа вăл мĕн хушса янине тĕп-тĕрĕс туни çинчен пырса пĕлтерсенех тăнсăр пулса ӳкет çав рабочи.

— Мĕн пулнă ăна? — пăлханса ыйтать Ленин тухтăртан.

— Выçă пирки... обморок,— тет тухтăр.

— Анчах пĕлетĕр-и эсир, тухтăр, çак çын халь кăна пĕр эшелон тырă илса килнĕ! — тет Ленин тата ытларах пăлханса.

Çын аллинче утмăл-çитмĕл вакун тырă пулнă, анчах хăй выçса вилес патне çитсен те пĕр пĕрчĕ тĕкĕнмен! Хăй çинчен шухăшламан çав вăл, выçă рабочисем, вĕсен çемйисем çинчен, вĕсене вилĕмрен хăтарасси çинчен шухăшланă!

«Çакăн пек фильмсене суту-илӳре ĕçлекенсен канашлăвĕсенче кăтартсан аван пулмалла,— шухăшларĕ Лариса.— Фролова тепре курсан калатăп-ха, ятарласах калатăп!»

...Клубран тухса тĕттĕм урампа кил еннелле кăшт кайсанах, Лариса çулне сасартăк темле хĕр пӳлчĕ.

— Логинова юлташ, чăрмантарнăшăн каçар та-ха, ман сана темиçе сăмах каламалли пур,— терĕ вăл хуллен.

— Мĕнле сăмах? Кала ара, итлетĕп,— питĕ тĕлĕнсе, кăштах хăранă пек те пулса чарăнса тăчĕ Лариса.

— Эсĕ пирĕн лавккари çĕнĕ продавщица...

— Çавă. Мĕн вара?

— Эп те темиçе уйăх каялла сан пекех продавщица пулнă...

— Ах, çавă-и-ха эсĕ? Пăртак... илтнĕ сан çинчен,— терĕ Лариса, хăйĕн чĕри тăруках хыттăн тапма тытăннине туйса.

— Эс ман çинчен усаллине çеç илтме пултарнă— вăрă, аскăн, каччăсемпе ашкăнса пысăк растрата тунă,

чут çеç тĕрмене лекмен... Çапла вĕт? Çавăн пек каласа панă сана?

— Çавăн пекрех çав.

— Тĕрĕс мар вăл, юлташ... Пĕртте тĕрĕс мар, пĕтĕмпех суя! Ĕçĕ-пуçĕ иртнĕ ĕнтĕ, халь тин манăн хăрамалли те çук, тӳрре тухма та тăрăшмастăп, çитменнине эсĕ прокурор та, следователь те мар, çапах та калас килчĕ сана...

— Итлетĕп, эппин. Тĕрĕссипе, манăн хамăн та пĕрре-пĕрре сана тĕл пулса каласçас шут пурччĕ-ха. Паллашар — мана Лариса, теççĕ, эс мĕн ятлă-ха?

— Вера эпĕ, ялта Верук, теççĕ.

— Хушамату тата?

— Мучарова... Тен, ăçта та пулин ларăпăр? Ав, шур пĕренесем выртаççĕ çавăнта, пахча çумĕнче...

— Юрать ара,васкамалли çук-ха, пăртак ларма та пулать.

Вĕсем тепĕр вунă-вунпилĕк утăм туса хурăн пĕренисен купи хĕррине ларчĕç. Калаçу ытла тӳрех пуçланмарĕ, хĕрсем пĕр хушă чĕнмесĕр, пĕр-пĕрин çине пăхкаласа илчĕç — лайăхрах паллашасшăн пулнă пек. Лариса кĕтрĕ, Мучарова калас тенĕ сăмахĕн пуçламăшне тупаймарĕ пулас, çĕрелле пăхса ассăн сывласа илчĕ.

— Хуть ĕнен, хуть ан ĕнен, маншăн пурĕпĕр,— терĕ унтан,— анчах эпĕ вăл лавккара укçа кăна мар, пĕр шăрпăк та тытман... Йăлтах Кагаева хăй туса хучĕ çавна...

— Мĕнле майпа-ши?

— Хам та ăнланса юлаймарăм ăна. Паян кун та пĕлместĕп. Те райпоран тиесе килнĕ тавара лавккана вуçех кĕртмен, те эп çук чух иле-иле тухса кайнă. Пĕрле ĕçленĕ чух çăраççисене ман алла пĕрре те паман вĕт вăл, яланах хăй тытнă. Заведующи те-ха... Пĕррехинче вăл сасартăк, лавккара ларнă çĕртех, чирлесе ӳкрĕ, темскер тытса пăрахрĕ ăна. Этем сăнĕ те юлмарĕ, вилнĕ çын пекех кăвакарса кайрĕ, аран йынăшса выртрĕ. Шутсăр хăрамалла! Эп часрах медпункта чупрăм, фельдшерицăна илсе пытăм, унтан, вăл хушнипе, колхоз правленине машин ыйтма вĕçрĕм. Тепĕр çур сехетренех Кагаевăна больницăна хурса кайрĕç. Мана нимĕн те хушса хăвараймарĕ вăл, калаçайми те пулнăччĕ те. Эп ĕçлерĕм вара, пĕр-пĕчченех. Питĕ асăрханса, хăра-хăра, кашни пĕр пуса куç пек упраса ĕçлерĕм. Ни-

кам та ҫӳремен ман пата кирлӗ мар вӑхӑтра. Ир пырса уҫнӑ та лавккана каҫ хупса кайнӑ. Каччӑсемпе тӗпӗртетнӗ тесе пустуй калаҫҫӗ. Лавккине пыратчӗҫ ӗнтӗ, хӗрӗ-каччисем те татӑлмастчӗҫ, темелле. Анчах мӗн кирлине илнӗ те — тухса кайнӑ, ытти пур ҫынсем пекех. Пӗрререн пӗрре пулчӗ аван мар япала, анчах эп уншӑн ним чухлӗ те айӑплӑ мар...

— Мӗнле... япала?

— Туй сикрӗ вӑл кун ҫак ялта. Питӗ вӑйлӑ туй пулчӗ. Эрехне лавӗпех сутрӑм пулмалла — пыраҫҫӗ те илеҫҫӗ, пыраҫҫӗ те илеҫҫӗ. Ик эрнери план та тулчӗ пуль пӗр кунтах! Каҫаллапа лавккана хайхи туй ачисем пырса кӗчӗҫ — пӗр кӗтӳ. Пурте хытӑ хӗрнӗ ӗнтӗ, юрлаҫҫӗ, кӑшкӑрашаҫҫӗ, пӗри купӑсне ҫухӑртать. Татах эрех ыйтаҫҫӗ... Патӑм. Ҫавӑнтах, мӗнле май килнӗ ун пек ӗҫме тапратрӗҫ, хӑшӗ стаканпа, хӑшӗ пырӗнченех. Лавккаран тухма хӑвалатӑп — итлемеҫҫӗ. Тухса каяс вырӑнне лавккарах ташлама тапратрӗҫ. Тӗпӗр-тӗпӗр, тӗпӗр-тӗпӗр, ухмаха ернӗ пек! Прилавок хыҫӗнчен тухса тӗрткелеме тытӑнтӑм ҫаксене — кайӑр кунтан, тетӗп. Вӗсем «эс те ташла пирӗнпе!» тесе кӑшкӑрма тапратрӗҫ, ал ҫупаҫҫӗ, шӑхӑраҫҫӗ, аран каялла тарса кӗтӗм. Унччен те пулмарӗ — чӳрече чӑнкӑр-р! турӗ. Пӗр ӳсӗрӗ тайӑнса кайса чавсипе лектернӗ пулмалла ҫав. Эп макӑрсах ятӑм... Юрать-ха ҫав вӑхӑтра пӗр ват ҫын пырса кӗрсе хӳтерсе кӑларчӗ хулигансене. Кантӑкне те хӑех лартса пачӗ кайран. Хам укҫанах тӳлесе ятӑм уншӑн... Нимӗнле айӑп та пулман манӑн, Кагаева пуҫлӑхсене йӑлт урӑхлатса каласа панӑ ман ҫинчен, юриех элекленӗ. Лешсем ӗненнӗ пулмалла... Анчах эпӗ питӗ йӗркеллӗ ӗҫленӗ! Каҫ пуласпа кун каҫа пухӑннӑ укҫана хам ҫумма илеттӗм те лавккине ик ҫӑраҫҫипех питӗрсе аннепе пӗрле киле таврӑнаттӑм,— вӑл мана кашни кунах илме пыратчӗ. Эпир ку ялта мар, кӳршӗ ялта, Пӑруварӗнче пурӑнатпӑр, виҫ ҫухрӑм кунтан. Уй урлӑ каҫмалла, пӗчӗк вӑрман витӗр тухас пулать — пӗччен хӑрамалла укҫапа ҫӳреме. Укҫишӗн питӗ хӑраттӑмӑр эпир. Хам тӗллӗн банка кайса хурайман эпӗ — ӑна валли ҫырмалли хучӗсем те пулман ман алӑра. Кам та пулин киле пырса ҫаратасран та чун ҫукчӗ пирӗн. Вара, пӗр ҫын ӑс панипе, пухӑннӑ укҫана эпӗ хам ятпа перекет кассине хывса пытӑм. Виҫ эрнерен, Кагаева таврӑнсан, эп вӑл укҫана пӗр пус таранах тӗп-тӗрӗс па-

тăм ун аллине. Анчах вăл çавăнтах мана: тавай, иксĕмĕр «саморевизи» тăватпăр, терĕ. Турăмăр та... пирĕн сакăрçĕр тенкĕлĕх тавар тухмарĕ. «Солидарнă» ĕçленĕ май, çав укçан çуррине ман тӳлемелле. Ун чухлĕ укçа ăçтан тупас манăн? Атте тахçанах çук, аннепе иксĕмĕр çеç, чухăн пурăнатпăр. Ним тума пĕлменнипе, чунăм тăвăнса çитнипе, тупата, чутах çакăнаттăм, анчах аннене хĕрхентĕм — эп вилсен вăл та хăй çине ал хуратчĕ пуль. Унтан вара... мĕн тăвас? Ик хĕл каçнă пăру пурччĕ, ăна сутрăмăр — çитмерĕ, пĕртен-пĕр тӳшеке, пур-çук пек тумтире, аттен вăрçăран тăхăнса килнĕ кивĕ шинелĕ таранах сутса ятăмăр та... татăлкаларăмăр аран-аран, макăра-макăра. Çавăнтан вара Кагаева лавккине ура та ярса пусман, тăварпа спичкă кирлĕ пулсан та урăх яла кайса илетĕп...

— Эс... эс мана мĕн тума каларăн кун çинчен? — тăрук питĕ пăлханса кайнă пулин те, хуллен ыйтрĕ Лариса.

— Нимшĕн те мар,— терĕ палламан хĕр,— асăрхаттарас терĕм çеç сана. Эс те ман пекех çамрăк, тин çеç ĕçлеме пуçлатăн та... асту, сыхланарах пурăн вăл этемпе! Тĕрĕссипе, ăна этем темелле те мар, çынçиен темелле. Хăйĕн упăшкине те вăл хăех вĕлернĕ, теççĕ çак ял çыннисем. Те тĕрĕс, те тĕрĕс мар, пĕлместĕп, анчах пулнă та пулĕ...

Лариса пĕр хушă хытнă пек пулса ларчĕ.

«Сыхланарах пурăн вăл этемпе... этем те мар, çынçиен...»

Çак сăмахсем ун чĕринех пырса тиврĕç.

Вăл, шăннă пек, çӳçенсе илчĕ.

— Урăх ним каламалли те çук манăн, каям ĕнтĕ эп,— терĕ Мучарова, ура çине тăрса.— Кăмăлсăр ан пул чăрмантарнăшăн...

— Мĕн чăрмавĕ пултăр... — ал сулчĕ Лариса.

— Хăвна шеллесе каларăм, темшĕн мар. Санăн шăпу та манăнни пек ан пултăр, тетĕп-çке.

— Тавтапуç, Вера. Асрах тытăп эс каланине. Кĕрсе тух тепĕр чух. Тус-юлташсем пулăпăр...

— Çук ĕнтĕ, ку лавккана эпĕ виличчен те пырса кĕрессĕм çук. Сывă пулса юл!

— Чипер кай...

Вĕсем пĕр-пĕрине ал парсах уйрăлчĕç.

Лариса ерипен кăна кил еннелле утрĕ...

Миçе çын каларĕ ĕнтĕ ăна Кагаева çинчен! Чайнăйри официантка Инна, хăйĕн патĕнче пурăнакан хăлхасăр Христин, халĕ ак çак палламан хĕрача; ку яла килсен тепĕр куннех, лавккана пĕрремĕш хут кайсан, тавар илме пынă çынсем ăна тем тĕрлĕ тиркесе калаçнине илтме тӳр килчĕ... Анчах пĕртте ăнланмалла марха: райпо председателĕ ун çинчен япăххине ним те каламасть, пачах урăхла, малтанхи хут калаçнă чухах «вăл хĕрарăмпа ĕçлеме пулать, вĕренме те пулать унран, опытлă çын», терĕ. Машинăпа кунталла килнĕ чух Чатта поэт та мухтарĕ ăна. Инвентаризаци вăхăтĕнче те Сятровăпа Ярапаров тем тĕрлĕ ырларĕç: «Сан лавккуна пилĕк çулта пĕрре тĕрĕслесен те çитмелле... ялан баш-на-баш...»

Хăшĕ тĕрĕс? Кама ĕненмелле? Лариса хăй ку таранччен Кагаева тĕрĕс мар ĕçленине, çынсене улталанине пĕрре те асăрхамарĕ-ха. Чăн та, Лариса килнĕренпе лавккара питех ĕçлемерĕ вăл, чирленĕ пек пулчĕ, тем... Çакă çеç килĕшмерĕ Ларисăна: Кагаева пуçлăхсене шутсăрах юрама тăрăшать, вĕсен умне тем кăларса хума та хатĕр. Кунсăр пуçне тата темле хăрамалла çынсемпе килĕштерсе пурăнать. Сăмахран, леш Васюков, ун еркĕнĕ... Мĕн тери ирсĕр çын! Пĕркун çĕр варринчех такамсем ун картишне шуç-тимĕр, шифер пушатса хăварчĕç. Хам валли туянтăм, «саппас кармана çурмасть», терĕ Кагаева ун чухне, анчах тепĕр темиçе кунтанах çав пурлăха тахăшĕ илсе тухса кайнă. Ун çинчен Лариса ăнсăртран пек-мĕн пек ыйтсан, Кагаева пĕр тытăнмасăрах: «Япăххине илсе килнĕ, тиркерĕм те сутса ятăм, кайран лайăхраххине туянатăп», терĕ. Чăнах та, эрне те иртмерĕ пуль, Лариса лупас айĕнче каллех тимĕр-шифер курчĕ. Малтанхинчен те ытларах. Те вараланасран, те ытла тăрук куçа курăнасран, вĕсем çине хăмасем хунă та çийĕнчен тата утă витнĕ... Темле пит çăмăллăн килсе выртать-çке Кагаева патне дефицитлă япала? «Блат», теççĕ. Çав пуль ĕнтĕ. Анчах, шутласан, таварсене «блатпа» илни те преступлениех вĕт-ха!

Ним те ăнланма çук...

Лариса çавăн пек иккĕлентерекен тĕрлĕ шухăшсемпе пăтранса Кагаева килĕ умне çитнĕччĕ кăна — сасартăк вырăсла хапха уçăлса кайрĕ те картишĕнчен «газик» текен çăмăл автомобиль кĕрлесе тухрĕ. Тĕттĕмре

Лариса вăл машина шоферне те, унпа юнашар ларакансене те курса юлаймарĕ.

— Мĕнле хăнасем пулчĕç тата? — ыйтрĕ Лариса хапхана шал енчен тĕкĕлесе тăракан кил хуçинчен.

— Пĕр паллана колхоз председателĕ-ха ку,— терĕ лешĕ.— Ĕлĕк ман старикпа питĕ туслăччĕ вăл, вĕсем вăрçăра та пĕрле пулнă. Çула май кĕркелесе тухать çавăн пек тепĕр чух. Пĕрер стакан çырла шывĕ ĕçетпĕр те лара-атпăр юмах ярса, ман старика асăнкаласа...

Кагаева çăварĕнчен «старик» сăмах тухни Ларисăна кăштах тĕлĕнтерчĕ. Уйăха яхăн ун патĕнче пурăнса, вăл хăйĕн упăшкине асăннине вуçех илтменччĕ-ха. Пĕррехинче Лариса ун çинчен ыйтсан, Кагаева мăкăртатса кăна илчĕ:

— Вăрçă, вăрçă пĕтерчĕ пирĕн арçынсене...

— Фронтра вилнĕ эппин вăл?

— Çук, киле çиткелерĕ те — нумаях пурăнаймарĕ, суранĕсем пирки хĕн курса вилчĕ...

Урăх нимĕн те каламарĕ.

Кун хыççăн нумай вăхăт иртсен, Кагаевăна суд туса тĕрмене хупсан тин, ун пирки ялта пит нумай калаçма тытăнсан тин пĕлчĕ Лариса: фронтран таврăннă упăшки, арăмĕ вăрçă вăхăтĕнче ытла та ирĕккĕн пурăннине, ют арçынсемпе чарусăр йăкăлтатнине, тахшинпе çыхланса ача та пăрахнине пĕлсе, ӳсĕрпе темиçе хутчен те урайне пăрахсах таптанă, çынсем умне тухмалла мар кăвакартса пĕтернĕ имĕш, çавăн хыççăн Кагаева ăна пĕрре урăлма памасăр денатурат ĕçтере-ĕçтере вĕлернĕ. Айăплама май килмен ăна: çын хăй ĕçсе вилнĕ!

Упăшкин юлташĕ килсе кайни çинчен Кагаева халь питĕ ĕненмелле каларĕ. Анчах пĕртте ун пек çын пулман çав лешĕ. Çула май та кĕрсе тухман вăл, ятарласа пынă. Питĕ вăрттăн ĕçпе. Ун çинчен вĕсем Кагаевăпа иккĕшĕ çеç пĕлме пултарнă. Урăх никама та систерме юраман...

...Халь ĕнтĕ Кагаева чир-чĕртен сывалса çитрĕ пулмалла, ĕçе Ларисăпа танах çӳреме тытăнчĕ. Хăш чух çеç унта-кунта кайса килет — колхоз правленине, ял Советне çитмелле, тет. Тем ĕç пур-çке унăн унта! Анчах пĕррехинче Лариса хăйĕн чун савнийĕ Гриша Арсентьев патне каçах çырнă çырăва манса хăварнă пирки киле чупса кайрĕ те... лавккаран «эп наччас правление

кайса килем-ха», тесе тухса кайнӑ Кагаева каллех Чӑрӑшкассинчи лавкка хуҫипе, леш шӗшлӗ сӑмсаллӑ Васюковпа, «ҫырла шывӗ» ӗҫсе ларнине курчӗ.

— Эс мӗне кура ӗҫ вӑхӑтӗнче каллӗ-маллӗ йӑрккаса ҫӳретӗн?! — тӑрук кӑшкӑрса пӑрахрӗ Кагаева.— Мӗнле йӑла вӑл?! Йӑпӑртлӑх та шанма ҫук-иҫ сана! Кам хушрӗ сана ҫак вӑхӑтра лавккана хупса кайма?

Ларисӑн ӑна хирӗҫ питӗ витермелле тавӑрса каласси килчӗ, анчах юри кулам пекки турӗ ҫеҫ:

— Каҫар, Ангелина Егоровна, эсир кунта ӗҫ вӑхӑтӗнчех туй тунине пӗлмен эпӗ. Тек нихҫан та ҫакӑн пек кӑнтӑрла килсе кансӗрлемӗп сире иксӗре... ыр курма!

Ҫавӑнтах ҫытар айне чиксе хунӑ ҫыруне илчӗ те ҫил пек тухса вӗҫрӗ. Анчах тепӗр ҫур сехетренех Кагаева хӑй те лавккана пычӗ. Малтан прилавок хыҫӗнче мӑшлаткаласа ҫеҫ тӑчӗ, унтан, лавккара пӗр хушӑ никам та пулман чух, Ларисӑна куҫ харшийӗсем айӗн ҫисе ярасла пӑхса463 каларӗ:

— Чӗлхене ӑна кӑштах чарма пӗлес пулать, хӗрӗм! Пурӑнма пӗлекен ҫын нихҫан та кирлӗ-кирлӗ мара палкамасть. Тепӗр чух тата ытлашши вӑрӑм чӗлхесене кӗскетсе те яраҫҫӗ!

— Ку мӗн, мана юнани, хӑратса калани пулчӗ-и ӗнтӗ? — ыйтрӗ те Лариса, ун ҫине пит хӑюллӑн пӑхса, тутине ҫыртса лартрӗ.

— Эп ку тарана ҫитсе никама та юнаса курман. Асӑрхаттаратӑп ҫеҫ сана,— терӗ Кагаева.

— Тавтапуҫ, эппин, ӑс панӑшӑн,— пуҫне сулса илчӗ Лариса.

Ҫав кун вара вӗсем урӑх пӗрре те калаҫмарӗҫ.

Тӗрӗссипе, леш Пӑрувар хӗрӗ Верук ҫак Кагаева хӑйне мӗнле нуша кӑтартни ҫинчен каласа панӑ хыҫҫӑн Ларисӑн унпа пуплесех те килмерӗ. Кунтан кун чун сивӗнсе пычӗ. Анчах хӑй палӑртмарӗ ӑна: епле пулсан та пӗрле ӗҫлемелле-ҫке, пӗрле пурӑнмалла!

Лавккара Кагаева хӑй пусма-тавар, пир-авӑр, кӗпейӗм, атӑ-пушмак, чашӑк-тирӗк сутнӑ енче тӑчӗ, кӗнеке, хут кӑранташ та ун аллинче пулчӗ, Лариса ҫимелли-ӗҫмеллисемпе — сахӑрпа, чейпе, пулӑпа, пируспа, эрехпе—сутӑ турӗ. Кам та пулин сахӑр илнӗ хыҫҫӑн пӗр мӑшӑр чӑлха-носки е ҫитсӑ виҫтерсен тата эрех ыйтать пулсан, сутаканӗсен хӑйсем ялан тӑнӑ вырӑнтан урӑх ҫӗре те кайма тивет: Кагаевӑн — Лариса патне, Лари-

сăн — ун патне. Анчах та яланах мар ку, тепĕр чух вĕсем пĕр-пĕрине кăшкăрса калаççĕ çеç:

— Çак çын валли пĕр кило сахăр турттар-ха, укçине илтĕм!

— Ку ачана ик тĕслĕ çыракан кăранташ тупса пар-ха!

Кагаева сутă тума чăнах та пултарать-мĕн, ыйтнă таварсене наччас илсе парать, пир-авăра хăвăрт виçет, укçине мĕн чухлĕ илмеллине те шăкăрт та шакăрт шутласа хурать. Хăнăхса çитнĕ ĕнтĕ Опыт пысăк пулнă çав унăн, райпо председателĕ калашле.

Хăй умĕнче çынсем çук чух Лариса, вăл мĕнле ĕçлени çине питĕ тимлĕн пăхса тăрса, унăн «техникине» ăнланма пуçларĕ. Ара... чăнах улталать-çке ку çынсене! Чип-чиперех, куçкĕретех улталать! Никам сисмелле мар майлаштарса пырать!..

Пĕрре асăрхарĕ Лариса, тепре, унтан тата тепре курчĕ. Тӳсеймерĕ вара, пĕррехинче темле хĕрарăм пилĕк метр çитсă илсе тухса кайсан, Кагаева патне пычĕ те хуллен кăна каларĕ:

— Ангелина Егоровна, эсĕ пир-авăра чалăш касатăн вĕт. Санăн пĕр енĕ тепĕр енĕнчен пĕр тăватă сантиметр вăрăмрах пулса тухать...

— Эс мĕн, ăна виçсе пăхрăн-им? — терĕ Кагаева, çавăнтах кăмăлсăрланса.

— Виçмесĕрех курăнать вăл...

— Куçусем пит çивĕч, эппин, санăн. Кам пĕлет, тен, йăнăшатăп та пуль тепĕр чух. Йăнăшсăр пулать-им пурнăçра!

— Йăнăшса мар-ха, юри çапла тăватăн эсĕ. Миçе хут куртăм ĕнтĕ хăрах хĕррине юри вăрăмлатнине...

— Мĕн-ха вара? Эс мана кашни пĕр метр çитсă илекене виç-тăват сантиметр ытларах касса партарасшăн-и? Кайран недостача пулса тухтăр-и пирĕн иксĕмĕрĕн?

— Тĕп-тĕрĕс виçес пулать...

— Пусма-тавара нихçан та тĕп-тĕрĕс виçейместĕн, ачам! Хăшĕ хутланать, хăшĕ тăсăлать. Çавăнпа та ăна сутнă чух питĕ асăрханас пулать. Вĕрентем-и? Акă, кур...— Кагаева прилавок çине сутма пуçланă тĕрке илсе хучĕ.— Метрпа виçсе илнĕ хыççăн тытатăн та, кăшт чалăшрах касатăн, пĕр ик-виç сантиметр... Паллах, илекен сисмелле ан пултăр вăл. Тепĕр çынна сут-

на чух хайхи вӑрӑмрах енчен тытса касатӑн. Каллех пӗр виҫ сантиметр юлать санӑн. Ӑнлантӑн-и? Никамшӑн та кӑренмелле пулмасть. Пӗр тӗркерен хӑвӑн валли кофтӑлӑх юлатех. Материалӗ тӑсӑлаканни пулсан, платье те кӑларма пулать. Кӑмӑлу пур-и, ак ҫак тӗркерен эп сана халех пӗр блузкӑллӑх татса парам? Ахалех пулать вӑл, укҫасӑрах. Ан хӑра эсӗ, тӗрке виҫи чакмасть уншӑн...

Ларисӑн пӗтӗм пичӗ-куҫӗ вут пек пӗҫерсе кайрӗ. Темиҫе самант хушши нимӗн те чӗнеймерӗ вӑл. Ӑнран тухса кайнӑ пекех тӑчӗ.

— Пӗлмен-и эс ҫавна? — юри куларах ыйтрӗ Кагаева.— Пурте ҫапла тӑваҫҫӗ, манран пуҫланман...

— Пурте?! Пурте улталаҫҫӗ-и? — йывӑррӑн сывласа ячӗ Лариса.

— Мӗн ултавӗ пур унта? Ҫын мӗн чухлӗ ыйтать, ҫавӑн чухлӗ илсе каять, ӑна хӑй ыйтнӑ пек виҫсе панӑ...

— Сутаканӗ те пуять, ҫапла-и?

— Э, ҫав ик-виҫӗ сантиметрпа нумай пуйӑн! Тьфу! — сурнӑ пек туса хаяррӑн ал сулчӗ Кагаева.— Пуяс текенсем вӗсем ун пек мар тӑваҫҫӗ... Тупнӑ калаҫмалли!

— Анчах уйӑхра... ҫур ҫулта, ҫулталӑкра мӗн чухлӗ пухӑнать?! Миҫе пин сантиметр? — шӑтарас пек пӑхрӗ Лариса лавкка заведующийӗ ҫине.— Халӑха куҫкӗрет ҫаратни мар-им ку?

— Ан лӑпӑртат кирлӗ мара! Урама тухса кӑшкӑрас теместӗн-и тата ҫав виҫӗ сантиметр ҫитсӑшӑн? — Лариса хӑйӗнпе пӗр кӑмӑллӑ пулманшӑн палӑрмаллах кӑренсе, Кагаева тепӗр еннелле ҫаврӑнса тӑчӗ.

Пӗр хушӑ нихӑшӗ те чӗнмерӗҫ.

Унтан сӑмаха Лариса пуҫласа, сассине хӑпартмасӑр, анчах питӗ ҫирӗппӗн каларӗ:

— Акӑ мӗн, Ангелина Егоровна... Пирӗн лавккара паянтан пуҫласа текех кун пек фокус нихҫан та ан пултӑр. Асту: них-ҫан та! Эпир санпа иксӗмӗр ӗлӗкхи усламҫӑ-купецсем мар хамӑр ҫынсене ним намӑса пӗлмесӗр улталама. Пирӗн пур чух та, кашни утӑмрах таса чунпа ӗҫлемелле!

Вӑл пат! пат! утса хӑй вырӑнне кайса тӑчӗ.

Тепӗр ирхине, лавккана Кагаевӑран чылай малтан пырса, ҫуллӑ шур сӑр — белилӑ банкине уҫрӗ те прилавока урлӑ темиҫе ҫӗрте тӳп-тӳрӗ йӗрсем ӳкерсе хучӗ.



— Ку мĕнле йăрансем тата?! — тарăхса кайнă пекех ыйтрĕ Кагаева вĕсене курсан.

— Çаксем-и? — кударах пăхрĕ ун çине Лариса.— Ятарласах сана пулăшас тесе турăм. Ăнсăртран, куç курманнипе йăнăш пуласран. Малашне пир-авăр сутнă чух тĕркене прилавок çине хуратăн та çав шур йĕр тăрăх касатăн. Ак çапла... — Лариса ĕçе мĕнлерех тумаллине кăтартрĕ, анчах хăй Кагаева çине пăхмарĕ те.— Кун пек пире никам та тиркеме пултараймĕ. Çитсăна тĕп-тĕрĕс каснине илекенĕ хăй те курать...

Кагаева хулпуççисене хускаткаласа илчĕ çеç.

— Ĕççĕр аптрасан, этем тем те шухăшласа кăларать çав!

Хăй килĕшмен пулсан та, Лариса лавккара пур чухне Кагаева çакăн хыççăн пир-авăра çав йĕрсем çине хурса касрĕ...

Пĕр-ик кунтан Лариса тата тепĕр питĕ тарăхмалла япала асăрхарĕ. Лавккана пĕр ватăрах хĕрарăм пычĕ те пилĕк метр утмăл икĕ пус тăракан çитсă ыйтрĕ. Кагаева ăна мĕн кирлине виççе пачĕ те, шут шăрçисене шăк-шак тутаркаласа илсен, хĕрарăма хăлхинчен кăшкăрса каларĕ — лешин хăлхи витĕрех пулман курăнать:

— Виçĕ тенкĕ те аллă пилĕк пус!

Хĕрарăм хĕвĕнчен укçа кăларнă вăхăтра Лариса çав çитсă хакне хăй шутласа пăхрĕ. Виçĕ тенкĕ те вунă пус çеç тухать-мĕн.

— Йăнăшнă эсĕ, Ангелина Егоровна, ытлашши илетĕн, тепре шутласа пăх-ха! — терĕ çавăнтах.

Кагаева тӳрех çиллентернĕ кăркка аçи пек хĕрелсе кайрĕ, çапах та тавар хакне çĕнĕрен шутласа укçана тĕрĕс илчĕ.

— Кай, мĕнле ара ку?.. Тепĕр чух ăнсăртран пулать çав тем те...— мăкăртатса илчĕ хăй.

«Тепĕр чух та мар, ăнсăртран та мар, яланах ятарласа çапла тунă-ха эсĕ... Кам хутла пĕлсех каймасть, кам ăсра хăвăрт шутлаймасть, вĕсене пурне те лартма тăрăшнă!» — çилĕпе шухăшларĕ Лариса.

Çакăн хыççăн вĕсен иккĕшин хушшипе хура кушак чупса иртнĕ пекех пулчĕ. Кагаева та, Лариса та пĕрпĕринчен ютшăнма пуçларĕç, сахал калаçрĕç, Лариса ĕнтĕ ун патĕнчен урăх хваттере куçса каясси çинчен те шухăшлама тытăнчĕ.

Кагаева вара çурăлса каяс пек тарăхса, çиллине шăнараймасăр, ним тума пĕлмесĕр пурăнчĕ. Каç выртсан та вăрахчен çывăрса каяймасăр, асаплăн шухăшласа енчен енне çаврăнкаларĕ... Ăçтан килсе лекрĕ ман тĕле ку эсремет хĕрĕ?! Пĕтерет вĕт, пĕтĕм пурнăçа пăсса хума пултарать! Вĕт-шак япаласене асăрхани темех мар, анчах урăххисене сисме пуçласан мĕн пулĕ? Картишĕнче тимĕрпе шифер выртать, ниепле вырнаçтараймарăм-ха, Васюкова калас пулать, часрах хуçа туптăр... Халь кăна Яракассинчи Пуклаков çирĕм мăшăр резин атă килсе пăрахрĕ, пĕрине те сутман-ха. Кăларма та хăратăп ĕнтĕ... Çав таварсем ăçтан килсе выртнине ку пĕлсен... лектерет, тем тесен те лектерет, пĕрре куç хупса илме те ĕлкĕрейместĕн! Хваттерне мĕн шуйттанĕшĕн хам пата кĕртрĕм-ши ăна? Ах, вăл ўсĕр пуçа!.. Ун чух урă пулнă пулсанах кĕртместĕмччĕ ĕнтĕ. Халь мĕн тăвас? Ĕçрен кăларса ярасси çинчен шухăшлама йывăр, Фролов тўрех хўрине тăратать — мĕншĕн, мĕн пирки? Сятровăпа калаçса пăхсан мĕнлеши? Таçта урăх çĕре куçарма пултараймĕ-ши вăл ăна? Каллех Фроловран хăрамалла, ирĕк парас çук вăл ун пек тума. Эппин, хваттертен те пулин хўтерсе ярас пулать ăна. Ман кил тĕлне те мантăр вăл! Ура та ярса ан пустăр! Мĕнле сăлтав тупас-ха? Тупасах пулать. Ăна хам патра тытса усрасан, ырăпа пĕтес çук... Эх, пурнăç, пурнăç! Ытла та такана çинчи шыв пек чўхенет-çке вăл! Халь кăна пит лайăхчĕ, никам та кансĕрлеместчĕ, пурăн та пурăн ыр курса! Ярса пачĕç çак арçури хĕрне... Комсомол мар-и вăл! Унăн тўрĕ чунлă, таса кăмăллă пулмалла-çке! Хăйĕн улăштарса тăхăнма саппас йĕмĕ те çук пулас-ха, çавах сăмсине каçăртать, упăте, парсан та илмест... Епле пурăнас тет-ши, ухмах!

Лавккара тавар илекенсене улталасси çавах пĕтмерĕ унăн, анчах халь вăл питĕ асăрханса хăтланчĕ. Лариса пурĕпĕр сисрĕ ăна: е тенкĕ те икĕ пус тăракан çитсăна тенкĕ те вуникĕ пуспа сутать, е виç тенкĕлĕх ача пушмакне виççĕ çурăпа ярать. Лариса тунă «ценниксене» чылай таварсем çинчен иле-иле пăрахрĕ. Пиравăра та сайра хутра, хутла пĕлекентерех çынсем пырсан çеç прилавок çинчи шур йĕр тăрăх касрĕ. Ытла тăрук хирĕçсе чĕрре кĕрсе каясран, Лариса халлĕхе сиснине те сисмĕш пулчĕ.

Анчах чĕри хыпсах тухрĕ унăн. Мĕнле пурăнмалла

кун пек?! Вăл, Лариса, пĕтĕм чунне парса ĕçлĕ, тăрăшĕ, çав вăхăтрах Кагаева кĕсйине тултарĕ. Кун каçа тавар сутса пуханнă укçине вĕсем уйрăм тытаççĕ, каçхине тин пĕрлештереççĕ. Тепĕр чух икшер-виçшер кун уйрăм тытни те пулать. Тем чухлĕ хăварать Кагаева хăй валли, ăçтан пĕлетĕн ăна? Çитменнине асли-çке вăл, заведующи, «солидарнă» ĕçлемелле пулин те, ăна пулчĕ-пулмарĕ тытса тĕрĕслейместĕн!

«Ман куç умĕнчех чыссăр, намăссăр ĕçсем пулаççĕ. Эпĕ вара çавна курса тăнă çĕртех... нимĕн те тăваймастăп пулать! Юрамасть-çке ун пек! Пире ун пек вĕрентмен... Ултавçăсене, халăх укçи-тенкине хăй çумне чикме тăрăшакансене тăрă шыв çине кăлармалла. Кунти райпо председателĕ Фролов та Ларисăпа тата Кирăпа пĕрремĕш хут калаçнă чухах ятарласа асăрхаттарчĕ: «Хăвăрăн тĕрĕс, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлемелле кăна мар, кукăр алăсене пăрса лартма, вăрăсене тăрă шыв çине кăларма та пулăшмалла...» Эпĕ пур — нимĕн те тăваймастăп-ха авă. Çаксене курса тăнă çĕртех ним шарламаннипе эпĕ хам та чыса — этем пурнăçĕнче чи хаклине! — çухатнă çын пулса тăратăп!.. Çук-çук, мĕн те пулин тăвасах пулать. Халех, вăраха ямасăрах. Шарламасăр тăмалла мар! Жулика пытарса усрамалла-и?! Кагаевăна хăйне «чарăн, ун пек ан хăтлан», тенинчен усси пулмасть, ку паллă. Чарăнас çук вăл. Çынсене улталаса пуйса пырас йăла усал чир пекех ернĕ ăна. Сыватаймастăн! Ыранах райпона кайса калас. Леш тухатмăш Сятровăна мар, вĕсем Кагаевăпа иккĕшĕ пĕр урапа çинче ларни паллă. Председательне хăйне, Фролова, каласа парас пулать! Анчах... ĕненĕç-ши ăна, тин çеç ĕçлеме тытăннă хĕрачана? Кагаевăн авторитечĕ пысăк, вăл ыр ятлă, нумайранпа ĕçлет, тавар çаврăнăшне уйăхран уйăхах тултарса пырать. Ун пирки — ку лит те тĕлĕнмелле! — жалобăсем те çук имĕш. Унăн сăнне районри Хисеп хăми çине кăларса çакнă. Грамотăсем пĕр купа унăн. Лариса килсен тепĕр куннех кăтартрĕ вĕсене... Лариса кам? Халлĕхе никам та мар! Ах, тупăннă та тĕрĕслĕх шыраканни! тесе кулĕç кăна унран. Чайнăйри официантка Инна хăйсен буфетчици пирки тĕрĕссине каласан, чут çеç ĕçрен тухса ӳкмен ав. Чăн та, лешне хупса лартнă тет-ха...»

Асапланмах тытăнчĕ Лариса. Апат та анмарĕ унăн, лăпкăн çывăрма та пултараймарĕ вăл...

## 13

Ларисӑн района каясси пулмарӗ, унран малтан Кагаева хӑй кайрӗ. Пӗр каҫхине вӑл ҫӗрӗпех ахлаткаласа, йынӑшкаласа выртрӗ те ир тӑрсан Ларисӑна хуллен кӑна каларӗ:

— Тем пулчӗ мана, больницӑна ҫитсе пӑхас пуль. Эс паян пӗчченех ӗҫлекеле... Май килсен, райпона та кӗрсе тухӑп, пур-и вӗсен пире валли мӗн те пулин... Куран — таварсем пӗтсе пыраҫҫӗ, капла пирӗн план та тулаймасть акӑ...

— Чирленӗ пек туйӑнсан каяс пулать ҫав,— терӗ Лариса.— Чире ӑна ҫийӗнчех, ытлашши йывӑрланиччен пӗтерсе хума тӑрӑшмалла. Больницӑна выртма хушаҫҫӗ пулсан та — килӗш, лавккишӗн ан хӑра, эпӗ леш Вера Мучарова пек туй ачисене кӗртсе ташлаттарас ҫук...

Кагаева тӑрук тӗлӗнсе Ларисӑна витӗр шӑтарас пек пӑхрӗ.

— Эс... эс ӑҫтан пӗлетӗн вӑл путсӗр хӗр ятне? Хӑйӗнпе тӗл пултӑн-им ӑҫта та пулин?

— Ҫу-ук, ун тӗсне те курман, палламастӑп та ӑна,— пуҫне пӑркаласа илчӗ Лариса.— Ҫынсем калаҫнине ҫеҫ илтрӗм.

— Мӗн теҫҫӗ ҫынсем?

— Нимех те мар... Шалккӑ хӗрачана, айӑпсӑрах айӑплӑ пулса, юлашки тӳшекне сутса тӳлерӗ, теҫҫӗ кӑна.

— Асту, айӑпсӑр пуль! — сассине хытарчӗ Кагаева.— Сакӑрҫӗр тенкӗ тухмарӗ унӑн саморевизи хыҫҫӑн. Хам укҫаран тӑватҫӗр тенкӗ тӳлемелле пулчӗ усалшӑн! Урамра йӑваланса выртмасть ун пек укҫа...— ҫилӗпе мӑкӑртатса хӑвӑрт тумланма тытӑнчӗ Кагаева.

— Тӑватҫӗр тенкӗ темех мар-ха вӑл сан пек пуян ҫыншӑн... — юриех йӗкӗлтенӗ пек каларӗ Лариса.

— Кам пуян? Хӑш енчен пуян эпӗ? — куҫ шуррипе пӑхрӗ Кагаева хӗр ҫине.— Пуян ҫын ман пек пурӑнмасть вӑл! Пӑх-ха лайӑхрах, пӳртре пӗр ҫӗнӗ япала та ҫук, йӑлт кивелсе кайрӗҫ, диванӗ те ҫӗтӗк, пуканӗсем те лӑнчӑр-ланчӑр. Пӗр тумтирпе пилӗк ҫул ҫӳретӗп...

— Ытлашши хытса пурӑнатӑн, ҫавӑнпа вӑл, Ангелина Егоровна. Перекет кассинче миҫе пин-ха санӑн?

— Тьфу, ухмаха ернӗ пуль эсӗ! — аллинчи тутӑра

ваш! сак çине ыватрĕ Кагаева.— Мĕнле пинсем çинчен калаçатăн? Мĕн пинĕ пултăр? Çĕр, тесчĕ хуть. Вăл та çук-ха! Куна кам лăпăртатса пачĕ тата сана?

— Камне астумастăп, анчах илтнĕччĕ пĕрре. Нумаях пулмасть Шупашкара кайсах пилĕк пин хывнă, теççĕ.

— Тур çырлахтăрах! — пĕççине çат! çапса илчĕ Кагаева.— Мĕн кăна шухăшласа кăлармаççĕ пуль курайманнипе! Ăçтан шăтăкран тупам эпĕ вăл таран укçа?! Тьфу, тьфу! Манăн леш перекет кĕнеки те ĕмĕрне пулман. Мĕн тума кирлĕ вăл мана? Укçи пулсан, эп ăна килте те пит лайăх усранă пулăттăм, анчах çук-çке укçи, çу-ук! Веçех юмах ку, шутсăр усал элек! Анчах эсĕ çав ирсĕр элексене пĕтĕмпех ĕненсе пыратăн пулмалла. Сисетĕп-ха, юлашки вăхăтра ман çине чалăшшăн пăха пуçларăн. Халь пĕлтĕм ĕнтĕ эс мĕн пирки мана ĕçре те тиркеме пуçланине!

— Эп пĕртте тиркемен сана, ытла палăракан йăнăшсем тунă чух асăрхаттарнă кăна. Эс çилленетĕн уншăн...

— Çилленместĕп! Йăнăшсене тӳрлетес пулать çав. Унсăр ăçтан юратăр? Пĕр-пĕрин йăнăшĕсене асăрхаттармасан, солидарнă ĕçлени те пулмасть вара. Атя-ха, хĕрĕм, малашне мирлĕ пурăнар... — Кагаева Лариса умне пырса аллине ун хулпуççийĕ çине хучĕ. — Питĕ килĕштерсе пурăнас килет манăн санпа!

— Манăн та хирĕçсе пурăнас кăмăл çук.

— Эппин, калаçса татăлтăмăр-и? Юрать-и?

— Юрамасăр! Эп яланах хатĕр...

Анчах нумая пымарĕ вĕсем çакăн пек килĕштерни. Тепĕр куннех арканчĕ вăл килĕшӳ.

...Район салине çитсен, Кагаева больницăна кĕриччен малтан райпона, ун председателĕн заместителĕ Сятрова патне кĕчĕ. Леш ăна питĕ кăмăллăн, хапăл тусах йышăнчĕ:

— Килех, кил, Ангелина Егоровна, курманни чылай пулать, тунсăхламах пуçларăм саншăн...

Епле пултăр-ха тата? Кагаева ун патне нихçан та пушă алăпа пыман, яланах мĕн те пулин тыттарса хăварнă. Япала тавраш пулмасан та, пĕр аллă тенкĕ те пулин «кивçен» парса хăварнă. Вунă çул ытла туслă пурăнаççĕ-çке!

— Мĕн çăмăлпа килмелле пулчĕ, Ангелина? Чир-

лемерĕн пуль те? — Кагаевăна çемçе пукан çине ларт-санах ыйтма тытăнчĕ Сятрова.

— Çапларах çав, тем, хавшама пуçларăм,— йы-вăррăн сывласа ячĕ Кагаева, аллипе сылтăм аякĕнчен тытса.— Çакăнтан тирет...

— Пĕвер ыратать, эппин, санăн, тусăм,— терĕ Сят-рова.— Мана хама та хушшăн-хушшăн аптратать-ха вăл. Ĕçме юрамасть теççĕ ун пек чух, тăварлă çиме хушмаççĕ. Эс ĕçкелетĕн пуль-ха?

— Сайра хутра çеç... апат умĕн килти çырла шыв-не сыпкалатăп.

— Э-эй, санăн çырла шывĕ те тепĕр эрехрен иртте-рекенччĕ!

— Măшкăлтăк шывĕ мар çав... кăмăла çĕклет пăртак.

— Больницăра пултăн-и?

— Çук-ха. Малтан сана курас, терĕм. Ĕç пур. Ка-лаçмалла.

— Юрĕ, калаçăпăр. Анчах эпĕ больницăна шăнкă-равлам-ха, эппин, сана тухтăр патне кĕме çырса ху-ччăр. Черетсĕр йышăнччăр.

— Тавтапуç, Матрена Гавриловна, яланах ыр тăва-тăн мана...

— Ырри-усалли хире-хирĕç вăл, Ангелина!

Телефонпа калаçса илнĕ хыççăн Сятрова Кагаева куçĕнчен шăтарасла пăхрĕ:

— Тем йынăш пулмарĕ пуль те? Асăрханмастăн эсĕ тепĕр чух...

— Тав турра, йăнăш тăвассинчен хăтарать-ха вăл мана,— терĕ Кагаева, йăл кулса.— Тата йăнăшсем ту-ма эпир санпа тин çеç çуралнă ачасем те мар. Урăх-хи пур.

— Мĕн тата?

— Мĕн пултăр! Леш йĕпе арка... эсир ярса панă хĕрачапа тăн тухма пуçларĕ-ха манăн! Ытлашши ăслă мар-и! Пурне те курать, пурне те пĕлет, каçса кайсах вĕрентет мана. Йăлăхма пуçларăм! Аптрал унпа... Тем тумалла?

Сятрова темиçе самант хушши чĕнмесĕр урамалла пăхса ларчĕ.

— Эсир иксĕр килĕштерес çуккине эпĕ ун чухнех, инвентаризаци тума пырсанах, ăнлантăм,—терĕ унтан.

— Ĕçлессе ĕçлет-ха хăй, ӳркенес-тăвасси çук, анчах... сăмси ытла та вăрăм, куçĕ те латсăр çивĕч!

— Анкаратăп... Пур çĕре те сĕкĕнет, хутшăнать, пурне те курать, сана тиркекелет ĕнтĕ... кансĕрлет... Çапла-и?

— Çапла çав!

— Так, та-ак...

Сятрова сĕтел ещĕкне уçса ухтаркаларĕ те Кагаева умне темле хут кăларса хучĕ.

— Çакна курнă-и эсĕ?

— Мĕн вăл? Шалăп тавраш мар пулĕ те? — хăранă пек пулчĕ Кагаева.— Ку чухне тем амакĕ те пулма пултарать...

— Вуласа тух-ха, курăн, пĕлĕн...

Кагаева васкасах хăйĕн тĕпсĕр тарăн кĕсйинчен куçлăх кăларса тăхăнчĕ те вулама тытăнчĕ. Кĕçех ун алли чĕтреме пуçларĕ.

— Мана кăтартман вăл куна, эпĕ нимĕн те пĕлместĕп! Хăй ирĕкĕпе, манран вăрттăн тунă, шуйттан хĕрĕ! — терĕ унтан, хĕп-хĕрлĕ пулса кайса.— Хăш вăхăтра хăтланнă-ши? Кашни кĕнекине çырса тухнă вĕт-ха, кашнин хакне лартнă...

— Вăл çеç те мар-ха унта, тусăм: кĕнекисем хăш çулта тухнине те кăтартнă. Пурте кивĕ, тесе ĕнентерме... Фролов ĕненнĕ ав, резолюци çырса хунă: «Списать по акту. Тов. Сятровой — проследить, обеспечить магазин новой литературой»...

— Кай, кай! — лăпланаймарĕ Кагаева.— Хăçан ĕлкĕрнĕ вăл ку ĕçе тума? Пĕр хушă чирлекелесе пурăнтăм, çавăн чух муталаннă ĕнтĕ, эсремет хĕрĕ!

— Н-нда! — терĕ те Сятрова сăмса витĕр, пирус хыпса тивертрĕ.— Çирĕп мăйăр лекрĕ сана, Ангелина Егоровна. Ытла тăруках хыпса катаймăн. Шăл хуçма пулать. Кĕнекисем пирки вăл инвентаризаци тунă чухнех хытă тавлашрĕ-ха манпа, ун чухнех шутларăм эпĕ — ку ăçта та пулин çырса ямасть-и? Юрать-ха, Фролов патне çеç çырнă, пĕр-пĕр редакцие янă пулсан питсене хĕрететтчĕ пирĕнне. Кĕнекисем санăн чăнах та навус анчах ĕнтĕ, тахçанах кăларса ывăтмалла.

— Ара, хăвăр хушмастăр та...

— Халь Фролов хушнă ав. Основани пур санăн.

— Вĕсене çунтарса ярас-и вара?

— Кĕнекесене çунтарма хушмаççĕ...— Сятрова хура хăрăк пӳрнисемпе сĕтеле тăкăртаттарса илчĕ.

— Мĕн тăвас, эппин? Шкул ачисем мукулатур пухаççĕ — вĕсене парса ярас-и?

— Макулатурăна пама та шел... Миçе тенкĕлĕх-ха пĕтĕмпе?

— Виççĕр вуникĕ тенкĕлĕх. Пысăк убытка...

Сятрова тăрук сĕтел хушшинчен тухрĕ те пӳлĕм алăкне хытăрах туртса хупса каялла пырса ларчĕ.

— Эпир вăл убыткăран прибытка тăвăпăр, Ангелина...

— Ăнланаймастăп.

— Списать тумалли актне кунтах çырăпăр. Тав ту хăвăн помошникна — кĕнекесен списокне лайăх çырнă вăл. Унта çырнисене акт çине куçармалла çеç. Актăн пĕр экземплярĕ кунта, райпора юлтăр, теприне хăвăнпа илсе кай. Анчах лешне... мĕн ятлăччĕ-ха вăл санăн?

— Кам?

— Помошнику ара!

— Логинова, Лариса.

— Логиновăна ан кăтарт. Ним те ан пĕлтĕр вăл. Усра тепĕр ревизи пуличчен. Килес çулччен! Кĕнекисене сут. Сут! Укçине вара...

— Ăнлантăм, Матрена Гавриловна! — куçĕсене çутăлтарса илчĕ Кагаева.

— Çук-ха, ăнлансах çитеймен эсĕ,— Сятрова сăнĕ тăруках улшăнчĕ, Кагаева çине вăл чĕпĕ тытма хатĕрленнĕ хурчка пек пăхрĕ. Унтан хуллентерех каларĕ: — Икçĕр тенкине мана паратăн, çĕр тенки хăвна пултăр. Çитет сана. Ахаль те кашни кунах хăвăн çумна вунă тенкĕрен кая мар юлса пырать санăн...

— Тур çырлахтăрах, Матрена Гавриловна, мĕн эс... ăçтан пултăр ун пек? — хыпăнса ӳкрĕ Кагаева.

— Ан палка,— çилленнĕ пекех ал сулчĕ Сятрова.— Тен, халĕ, çĕнĕ работник пуррипе, кăшт асăрханатăн пулинех. Пĕччен чух мĕн хăтланнине пĕлетĕп! Питĕ пултаратăн.

— Матрена Гавриловна... — куçĕсене хăвăрт-хăвăрт мăчлаттарчĕ Кагаева,— эп сан умăнта нихçан та парăмра пулман...

— Юрĕ, кам кама мĕн чухлĕ усă тунине шутламăпăр. Хамăр хушăра вăл. Пĕр йытă та пĕлмест.

— Анчах мĕнле сутас-ха манăн вăл кĕнекесене? Илмест вĕт-ха никам та! Халăхĕ ăслă халь...

— Майне тупăпăр. Пулăшăп сана... Сиссе те юлаймастăн акă вăл макулатура мĕнлерех сутăнса пĕтнине.

— Пулăшсан... тем пекчĕ!

— Хамăн сăмаха эпĕ яланах çирĕп тытатăп, эс ăна пĕлетĕн.

— Ăна пĕлетĕп-ха, пĕлетĕп...

— Логинова пирки... халлĕхе тӳскеле. Хытăрах тыт. Ытлашши çывăха ан яр. Унăн пурне те пĕлмесен те юрать, эс — заведующи, пуçлăх. Чухлатăп, санăн вăл хĕртен хăтăлас килет ĕнтĕ, анчах та тăруках ун пек тума май килмест пулĕ. Сăлтав çук. Тата çамрăк работниксене пирĕн Фролов питĕ хӳтĕлет. Çапах та ан кулян, пурăна киле майлаштарăпăр. Тепрер уйăхран Иккĕмĕш Вăрманкас лавккинчи продавщица декрета каять, çуратнă хыççăн та пĕр çулталăк ĕçлес мар пек калаçрĕ-ха. Çавăн чух эпир сан помошникна тытăпăр та ун вырăнне ярăпăр. Пурăнтăр унта каç-каç кашкăрсем ӳленине итлесе. Ăнланатăн-и?

— Питĕ ăслă çын çав эсĕ, Матрена Гавриловна! — аллисене хире-хирĕç сăтăркаласа илчĕ Кагаева.— Ăçтан кăна пулма пĕлнĕ пуль!

— Ан йăпăлтатса лар, ват тилĕ! — тăрук кулса ячĕ Сятрова, унтан пирусне юлашки хут ĕмсе тĕтĕмпе чыхăнчĕ те куççулĕ тухиччен ӳсĕрчĕ. Сывлăш çавăрса илсен вара ерипен каларĕ: — Эс халь больницăна кай эппин, унтан тухсан каллех кунта кил. Эп унччен кĕнекесене списать тумалли актне çырса çаптарсах хурăп. Начальствă хушнă ĕçе ăна вăхăтра тăвас пулать,— куçне чеен хĕссе илчĕ юлашкинчен.— Çапла-и?

— Юрĕ, Матрена Гавриловна, эс каланă пек пултăр...

...Кагаева час таврăнмарĕ, райпона ĕç пĕтес умĕн тин пычĕ.

— Эс хушнă пулсан та черетсĕр йышăнмарĕç, каналйăсем, пит нумай кĕтмелле пулчĕ, унтан пĕр пӳлĕмрен тепĕр пӳлĕме çӳретсе тăна ячĕç,— ӳпкелешрĕ вăл Сятрова умĕнче.— Кунпа та ĕç пĕтмерĕ-ха, ыран ирпе çимесĕр-ĕçмесĕр пыма хушрĕç. Анализсем тăвас пулать, терĕç. Киле каясси пулмасть паян, сан патрах çĕр выртма тивет, Матрена Гавриловна. Юрать пуль?

— Юрамасăр! Мĕн кирлĕ марри çинчен ыйтса ла-



ратăн? — терĕ те Сятрова, кăвак папкă хушшинчен хитре пичетленĕ хутсем кăларса хучĕ.— Акă, алă пус актсем çине... Тĕрĕс шутламан сан хĕрачу — кĕнекисем виççĕр вуник тенкĕлĕх мар, виççĕр çирĕм иккĕлĕх иккен. Шутларăм эп.

Кагаева куçлăх тăхăнса акт çине пăхкаларĕ те, Сятровăн ылтăн тĕслĕ авторучкине илсе, тутине пăркаласа, икĕ экземплярĕ çине те хăйĕн хушаматне кукăрткаласа хучĕ.

— Çăвас пулать эппин паян ку актăна...— терĕ унтан.

— Çусан та çылăх мар,— килĕшсе пуçĕпе сулчĕ Сятрова.

— Апла... эп лавккана кĕрсе тухатăп та тӳрех сан хваттере пыратăп, юрать-и? Мĕн илес?

— Мĕн пултăр... Коньяк ĕнтĕ! Çакăн пек тухăçлă ĕç тунă хыççăн та... — Сятрова актсем çине кăтартрĕ,— ахаль эрех лĕрккени — хамăра хамăр хисеплеменни пулать вăл!

— Иксĕмĕрех ларатпăр-и, урăх никама та чĕнместĕн-и?

Сятрова Кагаева çине пуçне чалăштарса пăхрĕ.

— Сана... арçын шухăшĕ кĕмерĕ пулĕ-çке?

— Уй, ан калаçах ун пек, Матрена Гавриловна!— ик аллипе пĕр харăс сулса ячĕ Кагаева.— Арçын çинчен шухăшлама пăрахни вунă çул та иртрĕ пуль!

— Чăрăшкассинчи Васюков — арçын мар-им? Пĕлетпĕр эпир!

— Кай, кай, пустуй вăл, курайманнипе калаççĕ. Çав усал çумне выртиччен, эп луччă упăтепе выртăп!

— Ненай, ненай-çке! Вут çунмасăр тĕтĕм тухмасть, теççĕ...

— Эппин-тĕк, иксĕмĕр кăна ларатпăр пулсан, эп пĕр кĕленче çеç илетĕп. Çитет пуль?

— Çитмест. Пĕр çынна кăчăк туртма тивет пирĕн. Хамăра кирлĕ çын вăл. Тата питĕ шанчăклă,— терĕ Сятрова.

— Кам-ши?

— Шемекеев, пирĕн база заведующийĕ. Вăл пире çак ĕçре пулăшма пултарать... — Сятрова каллех актсем çине кăтартрĕ.—Ходовой тавар кирлĕ. Паянах сутăнмалли тавар. Ун пеккипе пĕрле вара сан пăнтăхнă кĕнекӳсем пĕрре куç хупса илнĕ хушăрах сутăнса пĕтеççĕ. Ăнлантăн-и?

— Ăнланмасăр! Калатăп-çке, сан пек ăслă çын...

— Юрĕ, шăлна йĕрсе ан лар. Ту мĕн хушнине. Коньякне виççĕ ил. Лешĕ вăл пĕр тытăнсан лаша пекех ĕçет. Темскер, ман хамăн та ĕнертенпех пыр ярăнса çӳрет-ха...

Вăл кун Лариса, пĕччен юлса, питĕ лайăх ĕçлерĕ. Лавккаран халăх татăлма пĕлмерĕ, пĕри пырать те тепри пырать, ăна пар та куна пар. Тата нихăшĕ те хăйне мĕн кирлине илсен тăруках тухса каймасть, мĕн пирки те пулин Ларисăпа калаçса илет. Кăнтăрлапа фермăра ĕçлекен хĕрсем пĕр харăсах пиллĕкĕн-улттăн пырса кĕчĕç. Пĕр сехет хушши вара лавкка янраса кăна тăчĕ. Хĕрсем пусма-тавар, пир-авăр таврашĕсене алла илсе хăйсем çумне тыта-тыта пăхманни хăвармарĕç,— килĕшет-и мана кун пекки, çук-и? Çӳлĕ кĕлеллĕ пушмаксене те тăхăнкаласа пăхрĕç хăшĕсем, тутăрсене çыха-çыха, шăрçасене çака-çака тĕкĕр умĕнче çаврăнкаларĕç. Хăйсем таçта васканă пек пĕр-пĕрине пӳлсех калаçаççĕ, пĕрмай кулаççĕ тата, каçса кайсах ахăлтатаççĕ...

— Мĕн ара эсир паян ытла хаваслă, пурте ыранах венчете каяс пек? — хĕрсемпе пĕрле хăй те кулса ыйтрĕ Лариса.

Малтан шăп пулчĕç хĕрсем, пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç. Унтан пĕри, ыттисенчен кăшт аслăрах пек курăнаканни, чикан евĕр хура та лутрарах хĕре аякĕнчен тĕртрĕ:

— Кала, комсорг! Мĕншĕн пит хаваслă-ха эпир, Лисук?

— Тĕрĕссине-и? — ыйтрĕ унран лешĕ.

— Суйине мар ĕнтĕ!

Хура хĕр Лариса патнерех пырса прилавок çине чавсаланчĕ те ăна куçĕнчен пăхрĕ.

— Хаçат-журнал вулас пулать, лавăшник! — терĕ те унтан, чĕлхине кăларса кăтартнă пек туса кулса ячĕ.

— Мĕн пур вара хаçатсенче пит савăнмалли? — ыйтрĕ Лариса.

— Пур çав! Райхаçатра сводка тухнă — пирĕн ферма ку кварталта пĕтĕм районĕпе пĕрремĕш вырăн йышăннă. Эппин,— преми пулать. «Ялав» журналăн хуплашки çине пирĕн сăнсене кăларнă, эппин, пĕтĕм республикипе чапа тухрăмăр. Курман-и?

— Çук-ха, курман...

— Акă, пăхса савăн апла-тăк...— хĕр-комсорг хăйĕн пиншакĕн шалти кĕсйинчен самаях лутăрканнă журнал кăларса Ларисăна тыттарчĕ те татах йĕл кулса илчĕ.— Паянхи почтăпа çитрĕ...

Чăнах та, журнал хуплашки çине — темиçе тĕслĕ сăрпа, питĕ илемлĕн! — халь лавккана пырса кĕнĕ хĕрсен сăнĕсене кăларнă-мĕн. Пурте шап-шур халатсемпе, шурă тутăрсемпе, тикĕс шурă шăлĕсене кăтартса кулса тăраççĕ. Иккĕш-виççĕшĕ хулĕсенчен шурă шуç витресем çакса янă. Хĕрсен хыçĕнче — хитре ешĕл вăрман...

— Хăçан ӳкерĕннĕ эсир кун пек? — ыйтрĕ Лариса.

— Пĕр-ик уйăх каялла хамăр райхаçатри леш Чатта поэтпа пĕрле Шупашкарти редакци фотографĕ килнĕччĕ те, çав ӳкерчĕ. Шутсăр култараканскер хăй, эп сире республикăри пур арçынсем те — вунулт çулхисенчен пуçласа утмăл çулхисем таран — вилсе каясла юратмалла ӳкерсе кăларатăп, ман ӳкерчĕк тухсан сирĕн пата кашни кун вуншар евчĕ пырать акă, тет...

— Ӳкерчĕкĕ чăнах та питĕ лайăх пулнă,— терĕ Лариса.

— Анчах мана килĕшмест,— пуçне пăркаларĕ комсорг Лисук.

— Мĕншĕн килĕшмест?

— Ытла пурте шăлсене йĕрсе тăратпăр, пире такам çав вăхăтра çурăмран юри кăтăкласа тăнă пек...

— Мĕн тата, макăрса ӳкерĕнмеллеччĕ-им пирĕн? — терĕ аслăрах хĕрĕ, Фетис ятли.— Пурсăмăра та каччăсем пăрахнă пек, çапла-и?

— Таçта-ха вăл каччисем,— ал сулчĕ тепри, Униç, малти икĕ шăлĕ çине ылтăн коронка тăхăнтарнăскер.—

Фермăрах иртет пурнăç, ниçта тухса çӳреместпĕр, никама курăнмастпăр. Ват хĕрсем пулса юлатпăр ак пурте. Кам курать пире, кам пĕлет?

— Халь пĕлеççĕ ĕнтĕ,— Лариса журнал хуплашки çине кăтартрĕ.— Редакци çынни калана вĕт — пĕтĕм республика юратса пăрахать сире... Курăн акă, пачки-пачкипе çыру килме пуçлать,— куçне хĕссе илчĕ вăл.

— Лавĕ-лавĕпе мар-и тата!

— Ун пек те пулма пултарать. Кашни çырăвĕнче— каччин сăнӳкерчĕкĕ. Суйла та суйла, хăшĕ ытларах килĕшет...

— Пĕр-пĕр пьянчук е чарусăр хулиган тупатăн вара хăвна валли вĕсем хушшинче,— терĕ те Лисук, аллипе алăк еннелле сулчĕ.— Ну, çитет пуль кун чухлĕ пакăлтатнипе, ĕçлес пулать...

— Ним те илместĕр-и вара хăвăр чапа тухнă ятпа? — юриех тĕлĕннĕ пек ыйтрĕ Лариса.— Сирĕн ырăнта тепри пулсан...

— Эс мĕн, пире эрех ĕçтерсе ярас теместĕн пуль те? — куларах пăхрĕ ун çине ылтăн шăллă Униç.— Ахаль мар ара, кивçен, кĕтмелле те пĕтмелле...

— Ун пекех ухмахла шухăш çук-ха,— терĕ Лариса.— Анчах пĕр икçĕршер грамм канфет турттарса пама яланах хатĕр...

— Укçа çук-çке пирĕн,— пуçне пăркаларĕ Униç.

— Мĕнле вара эсир, çакăн пек маттур хĕрсем, укçасăр çӳретĕр пулать? Теприсенне, качча кайнисенне, упăшкисем тытса илеççĕ хуть, анчах эсир хăвăр хуçа, никама та парăмлă мар...

— Çумра тытмастпăр. Ансăртран ĕçсе ярасран хăратпăр! — кулчĕ Униç.

— Епле укçа çук пултăр пирĕн? Пур! — терĕ сасартăк Лисук, Ларис еннелле çаврăнса тăрса.— Турттар пĕр кило чи лайăххине! Хам хăналатăп паян хĕрсене.

— Ара, комсоргăн пирĕншĕн тăрăшмалла çав! — терĕ тахăшĕ.— Хăçан та пулин эпир те хăналăпăр-ха...

Лариса йăпăр-япăр пĕр килограмм чи хаклă канфет — «Эстафета» ятлине — виçрĕ те хутпа чĕркеме пикенчĕ, анчах Лисук чарчĕ ăна:

— Ан чăрман, кашни хăйне мĕн чухлĕ кирлине илтĕр...

Хĕрсем кула-кулах тараса чашки çинчи канфета ывăçла-ывăçла илчĕç те çавăнтах çиме тытăнчĕç.

— Ай-ай, тутлă-çке ку, хăямат!..

— Хакĕ те пур та ĕнтĕ...

— Сăпаççипах сана, Лисук, çак тарана çитсе те çимен кун пеккине!

— Мана мар, лавăшника тав тăвăр, вăл ăс пачĕ, атту-тăк нимсĕрех тухса каяттăрччĕ-ха,— терĕ комсорг.

Хĕрсем шавласа-кулса, пĕр-пĕрине тĕрткелесе тухса кайсан, лавккара пĕр хушă пушах пулчĕ. Лариса ерипен утса урам еннелле тухакан чӳрече патне пырса тăчĕ. Тулта çумăр çума тытăннă иккен. Ерипен, шăпăр-шăпăр çăвать, çуркуннехи евĕр. Тӳпере пĕлĕтсем те çук пек,— ăçтан çăвать ку çумăр? Ăнсăртран пĕр пĕлĕт татки килсе лекнĕ пулмалла — ялăн анат вĕçĕнче, ав, йывăç тăррисене хĕвел çутатать. Самаях саралнă çулçăсем чăн та ылтăн пекех-çке. Хитре...

Ларисăна кичем пула пуçларĕ. Кунта килнĕренпе вăл ниçта та кайман, никампа та тĕл пулман, лавккана пыракансемпе çеç калаçкаланă. Савнă каччинчен, Гриша Арсентьевран та темшĕн пĕр çыру та çук. Лариса ун патне иккĕ-виççĕ те çырчĕ, ответ килмерĕ. Тен, адресĕ улшăннă унăн? Салтакăнне пĕлме çук, паян кунта та ыран унта. Апла-тăк, Лариса хăй янă çырусем каялла таврăнмалла-çке? Кам пĕлет, тен... вăл Ларисăна манма та пуçларĕ? Çук, çук... Унăн юлашки çырăвĕсене аса илсен, ун пек пулмалла мар пек. Ялан пĕрле пулма ĕмĕтленни çинчен çырнăччĕ вăл... Пĕлесчĕ, Кирăн Федя Кольцовĕ çырать-ши? Вĕсем Гришăпа иккĕшĕ пĕрле-çке, пĕр ротăра, пĕр взводра, пĕр отделенире тесе çырнăччĕ иккĕшĕ те!

Шутласан тĕлĕнсех каймалла, уйăх ытла иртрĕ, вĕсем Кирăпа пĕрре те пĕр-пĕринпе тĕл пулаймарĕç. Вăхăт çук, ялан ĕçре. Иртен пуçласа каçчен. Ĕçĕнче пăшăрханмалли, кӳренмелли япаласем те тупăнкаларĕç-ха ĕнтĕ... Кагаева ăна уççăнах нимĕн те каламан-ха та, çапах Лариса пирки кăмăлсăр пулни хытах сисĕнет. Килĕшмест ăна Лариса, питĕ килĕшмест! Чăрмантарать-çке ăна вăл. Тавар илекенсене улталаса пурăнма, вăрттăн майсемпе пуйма кансĕрлет. Тен, вăл Ларисăран хăтăласси, лавккара каллех пĕччен юласси çинчен те ĕмĕтленет? Унăн намăссăр ĕçĕсене, тĕп-тĕрĕссипе каласан — вăл куллен тăвакан преступленисене никам та ан систĕр, ан куртăр, вĕсене тума ан чартăр! Ĕмĕт-

ленет те пуль. Анчах Лариса хăрамасть-ха унтан. Ĕçсем ытла шала кĕме пуçласан, Кагаева малашне те хăйĕн яланхи меслечĕсемпе çынсене улталама пăрахмасан, вăл кирлĕ çĕре кайса тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пама та пултарать. Райпо председательне, халăх контрольне, райкома,— ОБХСС таранах!

...Питĕ аван мар ĕнтĕ вăл, пĕрле ĕçлекен çын çинчен унта-кунта кайса калани, анчах çынни куçкĕретех преступлени тăвать пулсан — епле шарламасăр тăратăн? Преступление пытарни — хăй преступлени. Кун пирки вĕсен шкулне ОБХССран пынă подполковник хăйĕн лекцинче питĕ лайăх ăнлантарса панăччĕ, тĕслĕхсем те илсе кăтартнăччĕ. Эсĕ кам та пулин преступлени туни çинчен пит лайăх пĕлсе тăнă çĕртех ун çинчен власть органĕсене пĕлтермесен, сана уголовнăй йĕркепех айăплаççĕ.

Ах, ан пултăрччĕ-çке ун пекки нихçан та!..

Лариса чӳрече умĕнчен пăрăнчĕ те темлерен сылтăмри сентресем çинче халĕ те-ха тусанланса выртакан кĕнекесем çине пăхрĕ. Çавăнтах хăй ку юрăхсăра тухнă тавар пирки райпо председателĕпе калаçнине, унтан Кагаева лавккара çук чух кĕнекесен списокне туса Фролова ярса панине аса илчĕ.

— Çитнĕ-ши ман çыру ун патне? Çитнĕ пулсан, мĕншĕн-ха çак таранччен те кĕнекесене списать тума хушакан приказ килмест? — шухăшларĕ хĕр.— Аса илтерсе, тепре çырас мар-ши ун патне?

Паян райпора Сятровăпа Кагаева ку кĕнекесем пирки хăйсем тĕллĕнех акт çырса «убыткăран прибыткă» тăвасси çинчен калаçса татăлнине, çав ятпа çак сехетре Кагаева районри продмагра коньяк илсе тănине пĕлмен çав вăл...

Ыран мĕн пулса иртессине те пĕлме пултарайман...

## 14

Сасартăк урамра мотоцикл çатăртатнă сасă илтĕнчĕ, вăл сас питĕ хăвăрт çывхарса килчĕ, унтан мотоцикл лавкка тĕлне çитсе кĕр-р, кĕр-р! чăх-чăх! турĕ те шăпланчĕ.

— Кам килчĕ-ши капла? Пĕр-пĕр тракторист пулĕха, çавсен пĕр çĕтĕк мотоцикл пур пулас... — шухăшларĕ те Лариса, кăштах сапаланнă çӳçпуçне вăш-ваш тӳрлеткелесе илчĕ.

Анчах лавккана нимӗнле тракторист та мар, Лариса темиҫе минут маларах кӑна аса илнӗ ытарайми тусӗ, Кира Шакова, кӗрсе тӑчӗ. Ун хыҫҫӑн — район поэчӗ Чатта...

Ҫӑварне карсах пӑрахрӗ Лариса тӗлӗннипе. Ытла та кӗтмен ҫӗртен, пӗлӗт ҫинчен татӑлса аннӑ пекех пулчӗ-ҫке ку!

— Кирушка, чунӑм, тӑванӑм!.. — кӑшкӑрса ярсах прилавок хыҫӗнчен чупса тухрӗ те вӑл тусне хирӗҫ, ӑна ҫӑтӑр-ҫатӑр ыталаса илсе чуптума тытӑнчӗ.— Епле килме пӗлтӗн? Мӗнле ҫил вӗҫтерсе килчӗ сана?! Эп саншӑн ҫав тери тунсӑхларӑм, ҫав тери!..

— Тӑхта-ха, Лара... — Кира унӑн ытамӗнчен вӗҫерӗнесшӗн пулчӗ.— Асту, вараланса пӗтетӗн... Куратӑн-и, еплерех эпӗ? — вӑл самаях пылчӑкланнӑ юбкипе жакет ҫанни ҫине кӑтартрӗ.

— Ай-уй! Мӗн пулчӗ капла? — тӗлӗнчӗ Лариса.

— Мӗн пултӑр! Ак ҫак рыцарь... — Кира куҫлӑхне сӑмса тутрипе шӑлкаласа ним чӗнмесӗр тӑракан Чатта ҫине кӑтартрӗ,— хӑйӗн «чудо техники» текен драндулечӗпе мана «с ветерком» илсе килетӗп тесе мухтанчӗ те, пӗр ҫырма вӗҫӗпе пӑраннӑ чух ывтӑнтарса ячӗ мар-и! Ну, татӑлчӗ ман ҫамрӑк ӗмӗр!—терӗм ҫав... Унтан сиксе тӑратӑп та—куратӑп: алари сумка пӗр пилӗк метр аяккалла кайса ӳкнӗ, драндулет пӗр ҫӗрте чӑхлатса выртать, поэт тепӗр ҫӗрте тӑват уран упаленет... Хӑйӗн фарисене шырать иккен... ну, куҫлӑхне, эппин!

— Ак япала! Сусӑрланмарӑр пуль те нихӑшӗ те?— хӑраса ыйтрӗ Лариса.— Ал-урусем тӗрӗсех-и?

— Турра шӗкӗр, мана ним те пулман, анчах рыцарь хӑйӗн ҫамки ҫине лайӑх кӑна мӑкӑль лартма ӗлкӗрнӗ. Куран, митал пек...— кулса ячӗ Кира.— Чылая пырать-ха вӑл...

— Пымасть,— ал сулчӗ Чатта,— ман сурансем йыттӑнни пекех пит час тӳрленеҫҫӗ...

— Епле-ха апла эс... Чатта юлташ? Вӗлереттӗн вӗт ман туса?! Хӑвна та кайса хупатчӗҫ пӗр вун ҫуллӑха!— ҫилленнӗ пекрех пулма куҫ харшисене пӗтӗҫтерсе ыйтрӗ Лариса.

— Эпӗ... эп айӑплӑ мар,— пуҫне пӑркаласа мӑкӑртатрӗ Чатта.— Ҫулӗ йӑпӑлкаланса кайнӑ... Кунта сирӗн ҫумӑр кӑшт ҫеҫ ҫунӑ курӑнать, лере витререн тӑкнӑ пекех шарлаттарнӑ. Ҫул йӗп-йӗпе. Ҫырма пуҫӗнче

лакăм пуррине куртăм та унта лекес мар тесе руле тă-рук сулахаялла пăртăм, анчах малти кустăрми пылчăк çинче йăртах шуса кайрĕ те... пулчĕ вара мĕн пул-малли...

— Иксĕр те çырмана вăркăннă пулсан? Пĕтеттĕр-ччĕ-иç?

— Эп çырмаран аяккалла тытрăм çав.

— Çамкусăр пуçне урăх сиен пулман-и хуть?

— Куçлăхăн пĕр кантăкĕ тухса ӳкнĕ. Тупаймарăм ăна... Плащ çанни çурăлнă тата. Анчах вăл нимех те мар, саплатăп.

— Мотоциклĕ камăн, хăвăн-и?

— Çук, редакцин. Анчахрах ремонтран тухрĕ.

— Унччен çӳрекеленĕ-и эс унпа? Тен, руле пирвай-хи хут тытсанах хĕр умĕнче мухтанассу килнĕ санăн? Çамрăк поэтсем вĕсем вĕçкĕнрех халăх, мухтанма юра-таççĕ, тенине илтнĕччĕ эпĕ...

— Ун пек мар ĕнтĕ... Нумай чупнă — пĕлтĕр те, кăçал та.

— Паянхи пек вăркăнса кайнисем час-часах пулнă-и?

Чатта куçлăхне тăхăнма тăчĕ, анчах пĕр кантăкĕ çуккине аса илчĕ пулмалла та, майĕпе кăкăрĕ çинчи кĕсъене чиксе хучĕ, унтан Ларисăна куçран пăхса ассăн сывласа ячĕ.

— Пĕлетĕр-и, мĕн калас килет манăн сире? — ыйт-нă пек турĕ вăл.

— Мĕн-ши? Кала, именсе ан тăр...

— Йăнăш тунă эсир хăвăрăн пурнăçра... Пысăк йăнăш!

— Мĕнле йăнăш? — Ларисăпа Кира иккĕшĕ те ун çине тăрук тĕлĕнсе пăхрĕç: мĕн калама пултарать ку каччă?

— Сирĕн хальхи пек продавец мар, следователь е прокурор пулма тăрăшмалла-мĕн. Допрос тума пит ăста эсир...

Хĕрсем ахăлтатса кулса ячĕç. Чатта хăй те йăл-йăл кулчĕ.

— Ах, айван-çке эпĕ, сире курса хĕпĕртенипе ăспуç салансах кайрĕ пулмалла,— терĕ унтан Лариса.— Атьăр-ха, иртĕр, подсобкăна кĕрсе ларăр хуть! Кăшт тăхтасан лавккана хупатăп та — ман пата кайăпăр, сирĕн тумтирсене те тасатмалла, çиес те пулать...

Кӗтмен хӑнасене хыҫалти пӳлӗме кӗртсе лартсан, вӑл пӗрре Кира ҫине, тепре Чатта ҫине пӑхса ыйтма тытӑнчӗ:

— Ҫапах та, калӑр-ха тархасшӑн, ӑҫта тӗл пулса, епле майпа килме шут турӑр ман пата? Ытла шутсӑр тӗлӗнтертӗр-ха эсир!

— Акӑ, каллех допрос пуҫланчӗ! — Кирӑна куҫ хӗссе илчӗ Чатта.

— Допрос мар-ха... Ҫапах та пӗлес килет-ҫке манӑн! Тен... кам пӗлет сире, тен час-часах тӗл пулатӑр эсир? — Халь ӗнтӗ Лариса чеереххӗн куҫ хӗсрӗ.— Эп кӑна кунта никама та курмастӑп, пӗр-пӗччен пурӑнатӑп...

— Йыснӑшӗ патне пыркаласа каять вӑл хӑш чух... Ман заведующие йысна тет те-ха! — пуҫӗпе Чатта еннелле сулчӗ Кира.

— Те йыснӑшӗ патне-ха, те... йыснӑшӗн помошникӗ патне! — Лариса Чаттана куҫран пӑхрӗ.— Хашӗ тӗрӗсрех, тен, тӳррипе калӑн, поэт-писатель, э? Тӳррипе, ним пытармасӑр!

— Каларӑм-ҫке, следователь пулмалла сирӗн! — ал сулчӗ Чатта.

Лариса ӑна пӳрнипе юнарӗ:

— Сӑмах ман пирки пымасть. Асту-ха, пӗркун Фроловпа пӗрле килсен эсӗ кама ҫурхи чечекпе танлаштартӑн ҫав? Тата мӗнле хӑрушлӑх ҫинчен каларӑн ун чух?

Чатта чӗнмерӗ, хӑлхи вӗҫне турткаласа илчӗ ҫеç. Анчах Кира ҫийӗнчех ыйтрӗ:

— Хӑрушлӑх? Мӗн пирки?

— Сана юратса пӑрахас хӑрушлӑх пирки калаҫрӗ вӑл,— кулса ячӗ Лариса.— Шутсӑр хӑратӑп, терӗ, ман пеккисен юратма юрамасть, терӗ.

— Чӑнах-и ку, Коля-Колька-Микулай? Ниушлӗ эпӗ ҫав териех хӑратма пултаратӑп? Кашкӑр мар пуль? Ку тарана ҫитсе никама та ҫыртман-ха.

Чатта халь хӗрелсех кайрӗ, ҫамкине ал лаппипе сӑтӑрса илчӗ.

— Эсир... эсир мана тарлаттарсах ятӑр,— терӗ вӑл.— Сире тата кӑшт итлесен, тухса тармалли ҫеç юлать манӑн...

— Ҫук ӗнтӗ, тараймастӑн халь тин! — ӑна хулпуҫҫинчен тӗртсе каларӗ Кира.— Ун пек договор пулман

пирĕн.— Вăл Лариса еннелле çаврăнса ларчĕ.— Пĕлетĕн-и, эпир сан патна килесси мĕнрен пулчĕ?

— Пĕлместĕп çав, ахальтен ыйтатăп-им? — терĕ Лариса.

— Иртнĕ вырсарникун, çак районнăй классик хăйĕн йыснăшĕ патне пырсан, эп ăна хам паян вунтăххăр тултарасси çинчен каларăм пулмалла...

— Айтурух! — аллисене хире-хирĕç çапса илчĕ Лариса.— Чăнах та эс çуралнă кун-çке паян! Эп ăна мансах кайнă! Ху та астутарман. Чатта юлташа каланă ав... Ну, Кира, мĕн тăвас сана куншăн?

— Эс тăхта-ха, ан вăрç! Ăна та темле ăнсăртран çеç каласа ятăм. Анчах вăл астуса юлнă иккен. Паян кĕрлеттерсе те çитрĕ. Пуш алăпа та мар тата, шампанскипе!

— Ак хайхи, рыцарь...

— Мĕн каласси пур! Ку çеç те мар-ха, портфельне эрехпе пĕрле Есенин кĕнекине чикнĕ. Ме сана çуралнă кун ячĕпе, тет. Эп хăтăрсах тăкрăм ăна...

— Мĕншĕ-ĕн? — тĕлĕнсе, хĕрхенсе илчĕ Лариса.

— Ачалла хăтланнăшăн! Кам хушнă ăна, кам мĕн ыйтнă унран? Чутах каялла хăваласа яраттăм.

— Хăвăн ухмахна кăтартаттăн çав ун пек тунă пулсан! Çынни сана хисеплесе, тен, чун-чĕререн юратса, ыр кăмăлпа пырать, эсĕ пур... хăваласа ярасшăн пулнă ăна. Ĕмĕрлĕх кӳрентереттĕн çынна! — вăрçнă пекех каласа тăкрĕ Лариса.

— Хам та çапла шутларăм çав,— терĕ Кира.— Юрĕ, пĕррелĕхе каçарас, терĕм. Анчах менелникне кунта мар, Лариса патĕнче тăвăпăр, унта кайма транспорт пур санăн, терĕм каччăна. Ну, малалла мĕн пулнине пĕлетĕн ĕнтĕ... — Кира хăйĕн вараланнă тумĕ çине кăтартрĕ.— Çуралнă кун ячĕпе хайхи хĕрӳ чĕреллĕ кавалер мана пылчăк çинче те йăвалантарчĕ...

— Юрĕ-çке, темех мар, тасалать,— ал сулчĕ Лариса.— Анчах ман пата килме ăс çитернĕшĕн тем пекех спаççипă сана. Кӳр-ха, эппин, тепре чуптăвам сана уншăн! Ы-ых, саркайăк, юрататăп-çке сана, мура!

Çав вăхăтра лавккана такам килсе кĕчĕ — кун çинчен алăк çумне çакнă пĕчĕк шăнкăрав сасси систерчĕ.

— Чимĕр-ха, атьсемĕр, çын килчĕ унта,— терĕ Лариса, пукан çинчен сиксе тăрса.— Ман заведующи таврăнмарĕ-ши? Района кайнăччĕ те ирхине...

— Килмест вăл паян,— терĕ Чатта,— ан та кĕт.

— Ăçтан пĕлетĕн?

— Эп ăна тухса килес умĕн больница тĕлĕнче куртăм — питĕ кăмăлсăрччĕ, ырана юлса ирпе юн пама хушнă имĕш.

— Э, апла пулсан — пит аван! — хĕпĕртесех кайрĕ Лариса.— Хамăра ирĕк, сан менелнике тума пире никам та кансĕрлемест,— Кирăна пуç тӳпинчен хуллен шаклатса илчĕ те вăл, васкасах лавккана тухрĕ.

Нумай та тăмарĕ — каялла чупса кĕчĕ. Темшĕн питĕ савăнса кайнă хăй, тути кулать, куçĕсем йăлтăртатаççĕ. Тӳрех Кира патнелле ыткăнчĕ те аллинчи хута кăтартса кăшкăрчĕ:

— Çаксене курнă-и эс? Камсем вĕсем?!

— Хăçан... хăçан ярса панă сана ку ӳкерчĕке? — тĕлĕнсе ыйтрĕ Кира.— Ма пĕлтерместĕн, пытарса усратăн?

— Халь! Халь килчĕ! Ак, почтальон кĕрсе тухса кайрĕ-иç! Турăçăм, савăнăç çине савăнăç паян, Кируша!.. — тусне çурăмĕнчен лăпкаса илчĕ Лариса.— Пăх-ха эсĕ вĕсем çине, мĕнле маттурланса кайнă!

— Тĕрĕс... Чăн-чăн гвардеецсемех çав! — терĕ те Кира, хашш! сывласа ячĕ.— Анчах мана ярса паман ку ӳкерчĕке...

— Эп те тин çеç илтĕм-иç! Тен, эс тухса кайсанах сан патна та пырса выртнă ун пекки! Таврăнсан куратăн ак...

Хĕрсем пĕр хушă тек ним чĕнмесĕр ӳкерчĕк çине пăхса ларчĕç.

Чатта та тӳссе тăраймарĕ, Кира çурăмĕ хыçне пырса ун аллинчи ӳкерчĕк çине пăхрĕ. Икĕ салтак пĕрле ӳкерĕннĕ-мĕн. Рядовойсем мар, иккĕшĕ те сержантсем. Патвар, тулли питлĕскерсем. Пĕри, хурарахxи, кăшт çӳллĕрех пулмалла, анчах теприн хулпуççийĕсем сарлакарах. Ӳкерĕннĕ чух иккĕшĕ те объектив çине пăхса ларнă та, халь хĕрсем çине шăтарас пек пăхнăн туйăнать.

— Ыйтма ирĕк парсамăрччĕ... — терĕ Чатта кăшт тăрсан,— мĕнле каччăсем кусем?

— Пирĕнпе пĕрле вĕреннĕ ачасем,— ним тытăнса тăмасăр ответ пачĕ Лариса,— ак ку акă Гриша Арсентьев, ку — Федя Кольцов. Вĕсем çара кайнăранпа çул-

талăк çитрĕ ĕнтĕ. Хамăр çĕршывра та мар, Чехословакире пурăнаççĕ...

— Лайăх йĕкĕтсем вĕт? — ыйтрĕ Кира, Чатта çине хулпуççи урлă пăхса илсе.— Килĕшеççĕ-и сана?

— Маттур пулмалла иккĕшĕ те...

— Маттур маррисемпе мĕн тăвас? Эпир хамăр начар-им?

— Сирĕн пирки эп хам сăмаха тахçанах каланă...— терĕ Чатта.

— Мĕн каланă? Эп илтмен-çке? Тен, тепре калăн? — çулăхрĕ ăна Кира.— Лайăх-и эпир, усал-и? Юратма пулать-и пире?

Чатта темиçе самант тытăнса тăчĕ, унтан хĕр аллинчи фотографи çине кăтартса, кӳреннĕ пекрех сасăпа каларĕ:

— Çак пулас генералсем ахальтен яман пуль хăйсен сăнĕсене...

— Кĕвĕçетĕн-и-мĕн? — куçĕсене хĕссе ыйтрĕ Кира.

— Кĕвĕçме манăн нимĕнле право та çук...

— Право çеç мар, сăлтавĕ те çук,— терĕ Лариса.— Каларăм-çке, пирĕнпе пĕрле вĕреннĕ каччăсем çеç вĕсем, эпир вĕсен çураçнă хĕрĕсем те мар. Пĕр-пĕрине сăмах паман. Вĕсем те, эпир те ирĕклĕ.

— Çыруне вуламастпăр-и? — ыйтрĕ Кира.

— Ăна кайран, килте вулăпăр,— ал сулчĕ Лариса.— Халь каяр пуль ĕнтĕ, лавккана хупатăп эпĕ. Сан менелнику ячĕпе мĕн илсе каяс? — ыйтрĕ Кирăран.— Наливкăсăр пуçне путли нимĕн те çук пирĕн кунта, хуть те кравул кăшкăр...

— Вăл та юрать! Шампански пур вĕт, пире çитет. Ман телее пулас çав, мотоцикл çинчен ывтăнсан та çĕмĕрĕлмен...

— Кавалер валли, тен... — Лариса Чатта çине кăтартрĕ,— çирĕпреххине илсе чикес? Поэтсем ĕçме пĕлеççĕ, тенине илтнĕччĕ эпĕ!

— Э-э, çук-çук! — ик аллипе сулчĕ Чатта,—поэтах пулса çитмен-ха эпĕ... Хĕрлисĕр пуçне — ни-ни-ни! Астăватăр пуль, пĕркун Ангелина Егоровна хăна тунă чух та çырла шывĕ çеç тутанса пăхрăм. Эп эрех мар, ытларах канфет-шоколад юрататăп.

— Юрĕ, эппин, апла пулсан...

Тепĕр сехетрен, Кагаева килĕнче хăнасене пит çутарсан, Кира хăйĕн вараланнă тумтирне хывса Лари-

сăн хитре кăна костюмне тăхăнсан, вĕсем пурте сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕç. Христин вĕсене çăмартапа чăкăт ăшаласа пачĕ. Лариса ăна хăйне те сĕтел хушшине чĕнчĕ, анчах ĕмĕрте те ют çынсемпе пĕр сĕтел хушшинче ларса курман Христин çывăха та пырасшăн пулмарĕ, «Ангелин аппа пĕлсен çапса пăрахать мана куншăн»,— терĕ, çапах та çивĕч Кира ăна вăйпах тытса пырса лартрĕ те пӳрнипе юнасах каларĕ:

— Паян эп çуралнă кун, эп мĕн хушнине пурин те итлемелле!

Малтан тăраничченех кулмалли пулчĕ: Чатта хăйĕн шампански кĕленчине пĕли-пĕлми уçса хĕрсене сирпĕтсе пĕтерчĕ, вĕсем çĕленрен хăранă пек кăшкăрса сике-сике тăчĕç, унтан кулма тапратрĕç. Эрехĕ чут çеç çурри таран сая каятчĕ.

— Ну, районнăй классик, этем мар пуль эсĕ! — ура тапсах, кула-кула кăшкăрчĕ Кира.— Çуралнă кун ячĕпе эс мана паян пĕрре пылчăк çинче йăвалантартăн, тепре эрехпе сапса пĕтертĕн... Мĕн тăвас ман сана куншăн?

— Каçарăр, тархасшăн каçарăр, юри мар... опыт çуккипе... — мăкăртатрĕ Чатта, хĕп-хĕрлĕ пулса кайса.

— Каçарас-и, Лариса? Е тытса хĕнес-и?

— Пĕррелĕхе каçарас пулать ĕнтĕ, тата паян санăн кунĕ çапăçмалли кун мар, ангел кунĕ...

— Çавăн пирки çеç тӳсетĕп ĕнтĕ хам та!

— Çамрăк-ха эпĕ, тӳрленетĕп... — кулчĕ Чатта.

Тин вара, лăпланса, черккесене тултарса, çамрăксем Кирăна «çĕр çул пурăнма, ĕмĕр-ĕмĕр телейлĕ пулма, пур ĕмĕтсене те пурнăçа кĕртсе пыма» ыр сунса ĕçрĕç.

Кăшт ларсан, иккĕмĕш черкке умĕн, Кира хăй «тост» каларĕ:

— Атьăр-ха, тусăмсем, çакна... хамăр чысшăн ĕçер! Чыса çамрăкран упра, тенĕ ваттисем. Яланах, мĕн виличченех таса пултăр пирĕн чун-чĕре, пирĕн шухăшкăмăл, пирĕн чыс! Нихçан та ан варалантăр вăл, уяр кунхи пĕлĕт пек таса пултăр. Çапла-и?

— Ах, тĕрĕс сăмах-çке ку! — сиксе тăчĕ Чатта.— Питĕ тĕрĕс! Куншăн эпĕ пĕрре мар, виççĕ те ĕçме хатĕр!

— Çапла пултăр! — терĕ Лариса та, хăй черккине Кирăпа Чатта черккисемпе шаклаттарса.— Ĕмĕрех, пур чухне те!

Малтанах нумай тăкăннă шампански пĕтрĕ те вĕсен. Лариса хăй лавккаран чиксе килнĕ наливкăна алла илсе ăна уçма каллех Чаттана сĕнчĕ, анчах лешĕ халь хăрасах ӳкрĕ:

— Ой, çук-çук, татах тăкса ярăп та, эсир мана çапсах пăрахатăр вара... Манăн пурăнас килет-ха!

— Хăравçă та иккен эсĕ, Коля-Колька-Микулай!— кулса ячĕ Кира.

— Пур чух та мар,— терĕ Чатта.— Хăш чух паттăр та пулма пултаратăп. Сăмахран каласан, эпĕ хам пурнăçра кашкăр та тытнă...

— Кашкăр?! Эс кашкăр тытнă-и? Кай, ан култар-ха тархасшăн!

— Кашкăр çав! Паллах, пĕччен мар, халăхпа пĕрле. Пĕррехинче пирĕн ял фермине темле ухмахскер пырса кĕнĕ те, сиссенех витере хупăрласа илтĕмĕр çавна, шăп та шай Крылов асатте юптарăвĕнчи пек. Вăл алăк айĕпе тухса тарма тăрсан, эп ăна алăри пуртăпа пĕррех патăм пуçĕнчен. Çавăнтах вилсе выртрĕ шеремет... Кайран мана хамăр ялта чылайччен Кашкăр Микули тесе пурăнчĕç...

— Тĕлĕнмелле,— терĕ Лариса.— Кашкăртан хăраман, хĕрсенчен хăратăн пулать.

— Хĕрсем... хĕрсем вĕсем урăх категори! — шĕвĕр пӳрнипе юнанă пек туса илчĕ Чатта.— Хăшĕсем пĕрре пăхсанах чĕрене шăтарма, çав тери пысăк суран туса хăварма пултараççĕ. Пурăн вара асапланса...

— Асапланса курнă та-им эсĕ?

— Хам курман та... анчах ман пĕр юлташ... юлташах та мар ĕнтĕ, лайăх палланă çын, чут çакăнса вилетчĕ.

— Хĕршĕн-и?

— Камшăн пултăр тата. Çитмĕл çулхи карчăкшăн мар ĕнтĕ.

— Вăл та сан пекех поэт-и?

— Çук, поэт мар, парикмахер. Талантлă парихмахер, тес пулать. Хăйĕн ĕçĕнче — чăн-чăн артистчĕ. Ячĕ те янравлăччĕ — Роланд Туривыльский.

— Роланд? Ăçтан килсе лекнĕ кунта... француз?

— Француз мар вăл, ман пек чăвашах. Паспортĕнче — Раман, хушамачĕ — Чесоткин.

— Ан тĕлĕнтер-ха, ун пек хăрушă хушамат та пулма пултарать-и?

— Пултарать. Тӗп-тӗрӗс калатӑп, Раман Чесоткинччӗ вӑл. Анчах та эсир хӑвӑрах шухӑшласа пӑхӑр-ха: санитарипе гигиена деятелӗ ҫавӑн пек ирсӗр хушаматпа пурӑнма пултарать-и? Хӑех ӑнланнӑ вӑл ӑна: «Кун пек хушаматпа эпӗ кӗҫ-вӗҫ пӗр клиентсӑр тӑрса юлатӑп!» — терӗ мана пӗррехинче. Янравлӑрах хушамат тупса пама ыйтрӗ. Эп ӑна литературӑпа искусство ҫыннисенчен пример илме сӗнтӗм, хушаматна хӑвӑр ял ятӗнчен ту, терӗм. Пур-ҫке-ха тӗрлӗ асламассем, енӗшсем, маяксем тата ытти те... Вӑл тӳрех килӗшрӗ, вара йӗрӗнмелле Чесоткинран чип-чипер Туривыльский пулса тӑчӗ. Кӑшт тӑхтасан ятне те улӑштарасшӑн пулчӗ. Эп вӑл вӑхӑтра шӑпах французсен авалхи эпосне — «Песнь о Роланде» вулаттӑм та, Раманран Роланд тума канаш патӑм. Вилсе каясла хӗпӗртерӗ ман цирульник! Кун пек чаплӑ ят тупса панӑшӑн эп сан сухална ӗмӗр-ӗмӗр песплат хыратӑп, терӗ...

— Ай-ай, питӗ пысӑк гонорар пама пулнӑ-ҫке вӑл сана! — терӗ Лариса.— Анчах эсӗ пирӗн калаҫу теминчен пӑрӑнса кайрӑн-ха, тусӑм. Мӗн пирки чут ҫеҫ ҫакӑнман-ха ҫав... Анатринский?

— Анатринский мар, Туривыльский... Акӑ мӗнле пулнӑ унӑн. Райбольницӑна тин ҫеҫ ӗҫлеме килнӗ ҫамрӑк хӗр-тухтӑра ниҫта кайса кӗрейми юратса пӑрахнӑ та вӑл, ӑна пӗрмай курасшӑн пулса, ун патне эрнере ик-виҫӗ хут приема ҫӳреме тытӑннӑ. Паян пуҫ кашлать унӑн, ыран айӑк чикет, тепӗр кунне хырӑмӗ ыратать. Ну, тухтӑрӑн мӗн те пулин памаллах ӗнтӗ «ыратать» тесе ӳпкелекене. Ҫак пациент слон пекех сывӑ пулнине пӗлсе тӑнӑ ҫӗртех, ӑна кашнинчех ниме пӗлтермен микстурсем ҫырса панӑ. Паллах, райбрадобрей вӗсене ӗҫмен, киле пырсанах тӑкнӑ... Анчах хӑй те парӑмра юлман вӑл, кашни приема каймассеренех тухтӑра санитарка урлӑ ылтӑн тӗслӗ хутпа чӗркенӗ одеколон парса хӑварнӑ. Парикмахерскинче нумай-ҫке вӑл тавар, навалом!

— Тухтӑра илӗртме ӗнтӗ, кӑмӑлне ҫавӑрма,— кулчӗҫ хӗрсем.

— Ҫав ӗнтӗ! Ахаль-им? Чылай йӑтнӑ курӑнать одеколонне... Анчах пӗррехинче, ҫак Чесоткин-Туривыльский каллех приема пырсан, хӗр-тухтӑр ӑна калатьхурать: «Хисеплӗ Ромео, эсӗ питӗ паттӑр ҫын пулмалла, тӗрмене лекесрен те хӑрамастӑн курӑнать...» Ман

тус тĕлĕнсе хытсах каять: «Мĕншĕн тĕрмене лекмелле манăн?!» «Растратăшăн. Хищенишĕн. Одеколон вăрланăшăн,— тет тухтăр.— Ман патра халь эс килсе панă вунçичĕ флакон тăрать, ав, пĕр карçинккă пухăнчĕ, паян та илсе килтĕн пуль-ха. Укçа парса илмен вĕт эс ун чухлĕ одеколон? Мелкое хищение, теççĕ ун пеккине, анчах мелкое пулсан та пит лайăх айăпласа ответ тыттараççĕ... Илсе кай каялла, атту эпĕ вăл пĕтĕм пуянлăха милицие леçетĕп те, кам илсе панине калатăп...» Хайне вĕри шывпа сапнă пек сиксе тăрать те Раман, çавăнтах тухтăр умне чĕркуçленет: «Хĕрхенĕр... Кӳрентертĕм пулсан — каçарăр,— тет,— ку пĕтĕмпех сире хисепленипе, сире юратнипе пулчĕ! Ёненĕр, эп сире юратнă пек никама та юратман, эсир маншăн — çут хĕвел!» тесе мăкăртатать, тухтăр аллине тытса чуптума тапратать, макăрать... «Мана юратма хăрушă,— тет ăна хирĕç тухтăр,— ыран манăн упăшка килсе çитет, вăл разрядлă боксер, пĕрре çапсах вăкăра вĕлерме пултарать!»

— Ак хайхи, тупать вĕт хăйне валли...— терĕ Лариса.

— Чим-ха, каласа пĕтертĕр,— пӳлчĕ ăна Кира.— Ытла та интереслĕ-ха ку...

— Калатăр ара, эп хирĕç мар...

— Пуля пек тухса вăркăнать те Туривыльский больницăран, ним тума пĕлменнипе одеколон флаконĕсене йăлт çырманалла вăрать, унтан чайнăя чупса кĕрсе икçĕр-виççĕр грамм янклаттарать,— паллах, хĕрлине мар, шуррине,— вара парикмахерскине пырать те, чĕтрекен аллисемпе ĕçлесе пĕринне чутах çур янахне касса илет-мĕн бритвăпа, çӳç кăтралатма пынă хĕр ĕнсине хĕртнĕ щипципе пĕçертсе ярать, лешĕ çухăрма тытăнсан пăрахса тухса тарать те каллех ĕçет, ӳсĕрĕлсе кайсан шăп милици тĕлне пырса ӳкет те: «Çакăна-ап! Халех çакăна-ап!» — тесе кăшкăрма тытăнать... Милицире çĕр каçнă хыççăн вăл пĕр эрне ытла йывăр чирлесе выртрĕ, анчах больницăна каймарĕ: ман психологи хуçăлнă, ăна нимĕнле эмел те тӳрлетеймест, терĕ. Сывалсан та пĕр-ик уйăх кĕрхи шăна пек çӳрерĕ, никампа та хутшăнмарĕ, эрех ĕçни те палăрмарĕ, шăппăн асапланса пурăнчĕ пулмалла, унтан сасартăк кучран çухалчĕ, кайран тин пĕлтĕмĕр—вербовкăпа Çурçĕре тухса кайнă, терĕç. Анчах каяс умĕн леш тухтăр патне

хăйĕн юнĕпе çырса хăварнă тет: «Хам вилнĕ кун та сан ятна асăнатăп...»

— Вăйлă истори... — йăл-йăл кулса илчĕç Ларисăпа Кира.— Чăн та кăвар чĕреллĕ пулнă ку парикмахер! Авалхи романсенчи рыцарсенчен кая мар. Ун пеккисем сайра пуль ку чухне...

— Хĕр пирки асапланчĕ çын,— терĕ Чатта,— хĕр пирки! Телейсĕр юрату, мĕн тăвассу пур...

— Леш тухтăрăн упăшки чăнах килнĕ-и вара?

— Пулман унăн нимĕнле упăшка та, юри каланă вăл, Туривыльские сивĕтме! Çынни, тĕрĕссипе каласан, ăслах марччĕ ĕнтĕ...

— Çапларах пуль çав. Чипер ăслă-пуçлă çын юратнă хĕр патне «ман вар ыратать» тесе каяс çук.

Тулта тĕттĕмленчĕ. Çынсем калаçнине илтсех кайман Христин паçăрах Кагаева выльăхĕсем патне тухрĕ, унтан шыв ăсма кайрĕ. Сĕтел хушшинче халь çамрăксем виççĕнех ларчĕç — Ларисăпа Кира тата Чатта.

— Сан калавна пула,— терĕ ăна Лариса,— ман наливка çинчен те манса кайрăмăр-иç! Юрамасть кун пек...— вăл черккесене юн пек хĕрлĕ те çăра шĕвек тултарчĕ.— Тытăр-ха. Куна мĕншĕн ĕçĕпĕр?

— Туслăхшăн! — терĕ Чатта.— Çĕр çинче туслăх — чи хăватлă вăй, çавна нихçан та манмалла мар...

— Тĕрĕс, манмалла мар çав!— терĕ Кира.

— Эппин — туслăхшăн!

— Тен, юратушăн та пултăр? — Чатта çине чеереххĕн пăхса илчĕ Лариса.— Май килнĕ чух...

— Вăл ыйту паянхи кун йĕркинче тăмасть,— терĕ Чатта.— Тата, ăслă çынсем каланă тăрăх, вăл ыйту пирки нихçан та васкама кирлĕ мар...— вăл лĕх-лĕх кулса илчĕ.— Манăн тусăм Туривыльский опытне шута илни те ытлашши пулмасть...

Ĕçрĕç те çырткаларĕç.

— Эх, халь çакăнта музыка пулнă пулсан аванччĕ те çав! — терĕ Кира.— Мĕн вара кун пек, типĕлле... Ман ташлас килсе кайрĕ! Радионе те пулин яр-ха, Лариса, мĕн пур унта?

Анчах радиопа темле лекци вулаççĕ иккен.

— Юрĕ-ха, кăшт тăхтарахпа музыка та пулĕ сан валли,— терĕ Лариса.— Халь эсĕ хăвăн çинчен каласа кăтарт-ха, Кируша, Шупашкартан килсе ĕçлеме тытăн-

нăранпа та курман-çке эпир пĕрне-пĕри... Мĕнле пурăнатăн?

— Эп хам та санран çавăн пекех ыйтма пултаратăп — эс мĕнле пурăнатăн? — терĕ ăна хирĕç Кира.

— Ман çинчен сăмах кайран пулĕ, малтан эс кала!

— Мĕнех калас-ха манăн? Аван пурăнатăп, теме çеç пултаратăп... Магазин заведующийĕ Вахрамеев питĕ лайăх çын...

— Ман йыснана хурламалли çук çав, вăл тĕрĕс,— хушса хучĕ Чатта.

— Йысна-и, тете-и, кум-и, хăйматлăх-и — вăл «званисем» ниме те пĕлтермеççĕ-ха,—ал сулчĕ Кира.—Эпĕ ç ы н, э т е м çинчен калатăп. Çынĕ лайăх вăл. Манпа яланах кăмăллă, пыракан-каякансемпе те питĕ йĕркеллĕ, никама та кӳрентересси çук унăн, хамàр ĕçре — тирпейлĕ, алли кукăрри сисĕнмест пĕрре те, выручкăна кашни каçах шутласа иккĕн ал пусатпăр... Ытти енпе те ĕç нумай унăн — парторганизаци секретарĕн заместителĕ, ял Совечĕн культкомисси председателĕ, пропагандист, темтепĕр. Хăш-хăш кун килне апат çиме çеç кĕрсе тухать пулмалла...

— Арăмĕ мĕнле?

— Вăл та кунĕ-кунĕпех ерçмест. Клубĕнче те, библиотекинче те ĕç тем чухлех унăн. Библиотека заведующийĕ декрета кайнă та, ун ĕçне те Валя туса пырать. Халь, авă, праçнике хатĕрленмелле...

— Аван апла пулсан. Савăнатăп саншăн!

— Хăвăн ĕçӳсем мĕнлерех пыраççĕ тата? Санăн та аванах пуль?

— Темле каламалла...— тытăнарах каларĕ Лариса.— Йывăртарах тесен те юрать пуль. Ытла пур чух та килĕштерейместпĕр-ха эпир...

— Ангелина Егоровнăпа килĕштерместĕр-и? — тĕлĕнчĕ Чатта.— Пулма пултараймасть! Ман шутпа, питĕ лайăх çын вăл. Эп ун çинчен пĕлтĕр хамăр хаçатра очерк та çырса кăлартăм...

— Пĕлетĕп, хаçатра çырса ăна чапа кăларни çинчен эс пире пĕркунах каларăн. Анчах эсĕ, поэт юлташ, унăн ăшчиккине кĕрсе курнă-и, мĕнлерех вăл хĕрарăмăн чунĕ, чĕри, кăмăлĕ?

— Кашни автор, вăл халтурщик мар пулсан, хăйĕн геройĕсен чунне уçса пама тăрăшать... Эпĕ те çавах ĕнтĕ,— терĕ Чатта.

— Тăрăшсан та, тепĕр чух ĕçĕ пулса çитеймест-çке?

— Вара мĕн, эпĕ Кагаевăна тивĕçлипе кăтартса парайман, тесшĕн-и эсир?

— Пĕлместĕп. Вуласа курман эс ун çинчен мĕн çырнине. Анчах ман заведующи мĕнлерех ĕçленине, вăл мĕнле шухăшпа пурăннине пĕр уйăх хушшинче çителĕклех пĕлтĕм ĕнтĕ.

— Начар ĕçлет-им? Ăна пурте мухтаççĕ-çке!

— Начар теме çук. Пит лайăх ĕçлет. Анчах пĕтĕмпех... — Лариса Чаттапа Кира çине пăха-пăха илчĕ,— хăйĕншĕн. Хăйне валли. Пуясшăн. Ак çакăнта тултарасшăн! — вăл хăйĕн платйин кĕсйине çапса илчĕ.— Кашни кун, кашни самантра çавăн çинчен çеç шухăшлать вăл. Шухăшлать çеç те мар, шухăш-ĕмĕтне пурнăça кĕртсе пыма тăрăшать...

— М-м... Ытлашширех калаçатăр пуль эсир...—куçĕсене мăч-мăч тутарса илчĕ Чатта.— Темшĕн, ĕненес килмест манăн...

— Ан ĕнен ара, кам хушать сана. Анчах эпĕ хам куçпа курнине, хам сăнаса пĕлнине калатăп. Сире суйнинчен мĕн тухать мана? Тата эпĕ элекçĕ те мар, вăл усал чир çук-ха манăн, турра шĕкĕр.

Чатта çамкине сăтăркаласа илчĕ.

— Тĕлĕнтерсех пăрахрăр-ха эсир мана... — терĕ унтан.— Миçе çул ĕçлет вăл кунта — пĕр растрата та, нимĕнле недостача таврашĕ те пулман унăн, таварçаврăнăш планне ирттерсе тултарать,— кун çинчен мана сведенисем райпора пачĕç. Пурте Кагаева пек ĕçлесен, пирĕн суту-илӳ шайĕ тем териех ӳссе каймалла, терĕç...

— Кампа калаçнă-ха эс унта? — ыйтрĕ Лариса.

— Кадрсем енĕпе Сятрова ĕçлет, Матрена Гавриловна, ун патĕнче пултăм эпĕ, пĕр сехет ытла мухтарĕ вăл кунти завмага, унтан Кагаева хăй патне илсе килчĕ, магазинне куртăм, çыннипе паллашрăм, ыйтса пĕлтĕм, вăл мана хисеп грамотисем кăтартрĕ...

— Унтан ĕçтерчĕ пулĕ-ха... — йăл кулчĕ Кира.

— Çук, темех ĕçмен, çырла шывĕ çеç тутантăмăр... Пĕтĕмпех Сятрова каланă пек курăнчĕ,— тав тунисем нумай, жалобăсем çук. Тĕрĕс мар сведенисем панă-ши вара мана Сятрова?

— Пĕтĕмпех тĕрĕс калама пултарнă вăл,— терĕ Лариса.— Епле-ха тĕрĕс ан пултăр? Растратăсем те çук,

план та ытлашшипех тулса пырать унăн. Ажур, теççĕ пулас ун пек чух...

— Мĕн тата? Эппин, пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулмаллаçке?

— Пулмалла çеç мар, çавăн пек пулса пырать те унăн... Яп-яка та çап-çутă. Ырă ят, хисеп... Анчах эсĕ, журналист юлташ, суту-илӳри обмер, обвес, обсчет, пересортица тата ытти çавăн пек сăмахсене илтнĕ-и хăçан та пулин?

— Илткеленĕ хăш чух... Питĕ усал сăмахсем!

— Мĕне пĕлтереççĕ вĕсем?

— Тавар илекенсене, халăха тĕрлĕ майсемпе улталанине...

— Пĕлетĕн иккен çапах та!

— Пирĕн, журналистсен, пурне те пĕлмелле...

— Анчах кунти завмага мухтаса çырнă чух çав сăмахсен пĕлтерĕшĕ çинчен шухăшламан эсĕ.

— Мана ун йышши сведенисем паман...

— Ун пек сведенисем пулнă пулсан та, Сятрова сана ун çинчен пĕлтерес çук, мĕншĕн тесен Кагаевăпа иккĕшĕ питĕ туслă пурăнаççĕ курăнать. Пĕр-пĕрне сутас çук вĕсем. Çăхана çăхан куçран сăхмасть, теççĕ пирĕн енчи чăвашсем...

— Пирĕн тата кашкăра кашкăр кăшламасть, тени пур,— терĕ Кира.

Чатта пĕр хушă ним чĕнмесĕр, аллинчи пуш черккене çавăркаласа ларчĕ. Тарăн шухăша кайрĕ пулмалла. Куçĕсене час-час мăчлаттарчĕ, хуллен шăхăранçи турĕ.

— Çапсах хуçрăр эсир мана... — терĕ унтан, Лариса çине пăхса.— Эппин, эпĕ суйса çырнă, хамăрăн вулакансене улталанă? Пулманччĕ-ха манăн ун пекки...

— Тен, улталасах улталаман та пуль,— терĕ ăна хирĕç Лариса,— эсĕ çак Кагаева кунта нумайранпа ĕçлени, унăн недостачăсем пулманни, плансене уйăхсеренех ирттерсе тултарни çинчен çырнă пуль вĕт? Урăхла каласан, медале çутă енĕпе кăтартнă?

— Çапла.

— Унта тĕрĕс марри нимĕн те çук. Анчах çав медалĕн тӳнтер енне пĕртте пĕлмен эсĕ. Пĕлекенĕсем — каламан. Эппин, эс хăв пит лайăх улталаннă...

— Апла пулсан — эп сисĕмсĕр çын! — вĕчĕленсе илчĕ Чатта.— Журналистăн, хаçатçăн сисĕмлĕ пул-

малла, çынпа пĕрре калаçсанах унăн чăн-чăн хакне чухласа илме пĕлмелле! Манăн вăл пултарулăх çук...

— Пурăна киле пулĕ-ха, пурнăçри опыт пухăнса пынă май çын ăсланать, теççĕ.

— Пурте мар,— пуçне пăркаласа илчĕ Чатта.— Теприсем пурăннăçемĕн ухмахланса пыраççĕ. Тен, эпĕ шăпах çавăн йышши?

— Çапах та эсĕ хăв ăсланасса шан,— ăна хулпуç-çинчен çат! çапса илчĕ Кира.— Пессимист пулни ки-лĕшмест хальхи поэта.

— Вăл çапла, вăл тĕрĕс... Шанас пулать,— килĕшрĕ те Чатта, Ларисăран ыйтрĕ: — Çапах та, тен, эсир ма-на кăшт тĕплĕрех каласа парăр? Мĕнле... киревсĕр, саккун хушман ĕçсем тăвать Ангелина... ну, сирĕн завмаг?

— Чăнах, Лариса, кала-ха, манăн та пĕлес килет ун çинчен! — хушса хучĕ Кира та.

— Мĕнле калас-ши сире... — хаш! сывласа илчĕ Лариса.— Халь кăна суту-илӳри усал сăмахсене аса илтĕмĕр-çке... Обмер, обвес, обсчет, пересортица... тавар хакĕсене прейскурантринчен пысăклатса сутни... Çак пур меслетсемпе те питĕ ăста усă курать вăл. Тавар илекенсенчен никам та сиссе юлаймасть ăна. Анчах эпĕ пĕрре мар, иккĕ мар, вунă хут та ытла асăрханă ĕнтĕ...

— Хăйне кларăн-и ун çинчен?

— Ăçтан тӳсетĕн каламасăр! Анчах вăл кашнин-чех «ăнсăртран пулчĕ ку йăнăш», тесе ирттерсе яма тăрăшрĕ. Унтан, пĕррехинче, хама та тавар илекенсене мĕнле улталамаллине вĕрентме хăтланчĕ.

— Чăнах-и?! — картах сикрĕ Чатта.

— Хăйĕн «производствăри опытне» парать ĕнтĕ сана! — терĕ Кира.

— Мĕн вĕрентрĕ-ха вара?

— Мануфактурăна виçнĕ чух еплерех тытса кассан лайăхрах пулассине кăтартрĕ. Ун меслечĕпе ĕçлесен, кашни тĕркерен хăвна валли ик-виç метр е унтан та ытларах хăварма пулать...

— Эс мĕн терĕн вара?

— Çав самантрах çурăлса каяс пек тарăхрăм та— кун пекки пирĕн магазинра тек нихçан та пулмасть!— терĕм.

— Кагаева мĕн терĕ?

— Мĕн калатăр вăл? Кулкаланă пек туса ирттерсе ячĕ. Эп вара çавăнтанпа ăна пĕртте шанми пултăм: темле ирсĕр ĕç те тума пултарассăн туйăнчĕ вăл мана. Йăнăшман эпĕ — ун хыççăн та çынсене улталанине сисе-сисе чартăм...

— Паллах, вăл сана уншăн ыталаса чуптуман,— терĕ Кира.

— Чуптăвасси çинчен каларăн-ха! Çисех ярĕччĕ те — шăл витмест.

— Мĕн асăрхарăр-ха эсир ун ĕçĕнче? — васкаса ыйтрĕ Чатта.

— Тавар хакне ӳстерсе сутни те, укçа тĕрĕс мар тавăрса пани те, ытти те пĕрре кăна мар пулчĕ. Анчах эпĕ пурне те сисме пултарап-им? Тата хăйне кашнинчех асăрхаттарма та аван мар — çын укçине куçкĕрет вăрлатăн вĕт эсĕ, тени пулать-çке вăл...

— Ирттерсе яратăн-и вара?

— Тепĕр чух курмиш те пулатăп çав. Тытса хĕнесим ман ăна?

— Тĕрĕс мар ку! Тĕрĕс тумастăр эсир! — сĕтеле çапса илчĕ Чатта.— Çынна улталанине, урăхла каласан, преступлени тунине, курса тăнă çĕртех шарламанни вăл хăйне майлă «соучастие», преступлени тунă çĕре хутшăнни пулать! Ну... соучастиех пулмасан та— пособничество, преступлени тума пулăшни!

— Укрывательство, теççĕ ăна,— Чатта сăмахне тӳрлетрĕ Кира.— Преступление пытарни...

— Пĕлетĕп,— терĕ Лариса.— Çавна пĕлни асаплантарать те мана. Тепĕр чух тахçанччен çывăрса каяймасăр шухăшласа выртатăп. Мĕн тумалла? Райпона çырса ярас — усси пулас çук, унтан эп пĕлтернине элек вырăнне хума пултараççĕ. Кагаевăн — авторитет, ырă ят. Эп — тин çеç ĕçлеме тытăннă çамрăк продавец. Кама ĕненеççĕ? Паллах, мана мар, Кагаевăна. Çĕнтерсе пăх-ха эс ăна! Авă, ман умĕн ĕçленĕ Пăрувар хĕрачи, Вера Мучарова, растрата туман çĕртенех, завмаг тăрăшнипе, растратчик пулса тăнă та — килти юлашки кĕпе-йĕме сутса аран хăтăлкаланă. Тĕл пулса калаçрăм эпĕ вăл хĕрачапа. Халь те макăрас пек çӳрет. Анчах Кагаева ун пирки тем те калать, леш районри вупăр карчăкĕ Сятрова та ун юрринех юрлать. Иккĕшĕ пĕр каварлă пулса хĕссе лартман-ши çав чĕмсĕр хĕрачана, тетĕп-ха эпĕ...



— Малашне те кун пекех пулса пырсан, мӗн тума шутлатӑн-ха эсӗ? — ыйтрӗ Кира.

— Ним калама та пӗлместӗп. Тытман вӑрӑ — вӑрӑ мар-ҫке вӑл. Кӗсъене ҫаратса ҫӳрекен карманниксене те преступлени тунӑ ҫӗрте алӑран, «с поличным» тытсан ҫеҫ айӑплаҫҫӗ. Куна епле тытам-ха эпӗ? Юлашки вӑхӑтра, хирӗҫкелесе илнӗ хыҫҫӑн, питӗ вӑрттӑн хӑтланма пуҫларӗ. Асӑрханать. Анчах хӑйӗн йӑлине пӑрахманнине пӗрмаях сисетӗп. Касса аппарачӗ ҫук пирӗн, сутнӑ япалашӑн укҫа мӗн чухлӗ илсе юлни паллӑ мар. Укҫине те ик тӗрлӗ тытатпӑр — вӑл хӑй умӗнчи ещӗке пӑрахать, эп — хам ещӗке, каҫхине тин пӗрлештеретпӗр. Тепӗр чух ик-виҫ кун та иртет. Кӑмӑл пулсан, хуть те мӗн чухлӗ илсе чик хӑвӑн ҫумна. Эп хам пӗр пус та тытмастӑп хуть, таси паха, анчах ун ҫумӗнче укҫа яланах пур пулмалла. Мӗн чухлине турӑ та пӗлмест... Нумай пулмасть «Москвич» илме тытӑннӑ пӗр учитель пырса виҫҫӗр тенкӗ кивҫен ыйтрӗ те, Кагаева малтан тӗлӗннӗ пек пулса пӗҫҫисене ҫапсах илчӗ: «Тур ҫырлах, ман пек чухӑнӑн ӑҫтан пултӑр ун чухлӗ укҫа, кулатӑн пуль тӑлӑх карчӑкран!» — терӗ. Анчах лешӗ укҫине ик-виҫ кунтанах, арӑмпа иксӗмӗр шалу илсенех тавӑрса паратӑп, машинне илсе килсен чӑн малтан сана лартса патша майри пек ярӑнтаратӑп, тесе шӳт тукаларӗ те — ман завмаг чӑлана кӗрсе пӗр наччасрах илсе тухса пачӗ мӗн ыйтнине. Шутсӑр чухӑн мар-и!.. Кулак вӗт вӑл, тарҫӑпа пурӑнать, ак ҫак хӗрача... — Лариса чӑлана кӗнӗ Христин еннелле кӑтартрӗ,— хӑй йӑмӑкӗн хӗрӗ пулсан та — крепостной чура пек пурӑнать ун патӗнче, ҫӗрне-кунне пӗлмесӗр ӗҫлет, ыр сӑмах илтмест...

Лариса кӗленчери наливкӑ юлашкине черккесене ячӗ.

— Пӗтерер ҫакна, тӗсӗ те ан пултӑр...

— Юлашки хут кӗрешер эппин алкоголизма хирӗҫ, ан пултӑр вӑл пирӗн таврара! — аллисене сӑтӑркаласа илчӗ Чатта.

— Юлашки тутлӑ пулакан... — терӗ те Кира, пушатнӑ черккине сӗтел ҫине лартсанах репродуктор тӳмине сылтӑмалла пӑрчӗ. Пӳртре кӑмӑла ҫӗклекен хаваслӑ ташӑ кӗвви янраса кайрӗ.

— Ак хайхи, ман валли! — тӳрех сиксе тӑчӗ Кира.— Атьӑр, ташлатпӑр!— Вӑл урай варрине чупса

тухса ташлама тытӑнчӗ.— Кил манпа ӑмӑртса ташлама, Коля! — Чатта патнелле авкаланса пырса ӑна аллинчен туртрӗ хӗр.— Тух, теҫҫӗ!

— Эп... эп ташлама пӗлместӗп... юратмастӑп! — каялла чакрӗ Чатта.

— Турӑҫӑм! Мӗн тери кая юлнӑ ҫын иккен эсӗ! Ташӑ — искусство вӗт вӑл, искусствӑна юратман ҫын— ӑҫтан поэт пултӑр? Атя, теҫҫӗ, ташла манпа! Унсӑрӑн... юратмастӑп сана!

— Ну, кун пек асӑрхаттарнӑ хыҫҫӑн ташлама тивет, поэт юлташ! — кулса ячӗ те Лариса, ал ҫупса такмаклама тытӑнчӗ: — Атя, Чатта, яра пар, юлашкине пире пар...

Ирӗксӗрех хушнине итлеме тиврӗ каччӑн. Сӗтел хушшинчен тухрӗ те хӗр тавра ҫаврӑнкалама тытӑнчӗ. Ташлама пӗлкелет-мӗн хӑй. Музыка туйӑмӗ те лайӑх. Кӑшт тӑхтасан Лариса та тӳссе тӑраймарӗ, аллисене вӗҫекен кайӑк пек сулкаласа, ҫинҫе кӗлеткине ун-кун авӑнтаркаласа пычӗ Кирӑпа Чатта патне.

Репродукторта пӗр ташӑ кӗвви тепӗр кӗвӗпе улшӑнчӗ. Ҫамрӑксем ташларӗҫ. Халь ӗнтӗ Чатта та хӗрсе кайрӗ — пӗрре Кирӑпа, тепре Ларисӑпа ташларӗ вӑл.

— Ахалех пытарма тӑрӑшнӑ эс хӑвӑн талантна! — кӑшкӑрчӗ Кира.

— Эпир иккӗн, вӑл пӗччен, ҫавӑнпа тархаслаттарасшӑн пулнӑ вӑл! — кулчӗ Лариса.— Поэтсем мӑн кӑмӑллӑ халӑх, теҫҫӗ...

— Сирӗнпе пӗрле тем тума та килӗшӗн,— терӗ Чатта.

— Ҫавӑн пек ҫав эпир! Сыхӑ пул!

Вӑхӑт чылая кайрӗ ӗнтӗ, сехет йӗппи вуннӑ патнелле пычӗ.

Сасартӑк тултан тахӑшӗ урам хапхине хыттӑн шаккани илтӗнчӗ—шан-шан-шан! Пӗрре, иккӗ... ҫине-ҫине!

Ҫав вӑхӑтрах картишӗнчи йытӑ каҫса кайса вӗрме тапратрӗ.

Ҫамрӑксем шӑпах пулчӗҫ.

Лариса кӑмака ҫумӗнче ура салтма тытӑннӑ Христин патне пырса, хыттӑн кӑшкӑрса ыйтрӗ:

— Эс хапха тӗкӗленӗ-и?

— Тӗкӗленӗ ҫав, мӗн вара? — терӗ Христин.

— Такам шаккать унта, тухса пӑхмастӑн-ши? Ыйт — кам, мӗн тума килнӗ, аппу ҫук тесе кала...

— Уй, çёрле пӗччен ма тухатӑп ара? — пуçне пӑркаларӗ Христин.

— Атя эппин, пӗрле тухӑпӑр.

— Такам шуйттанӗ сӗтӗрӗнсе килнӗ ӗнтӗ... — кӑмӑлсӑр мӑкӑртатрӗ Христин, хывнӑ пӗр çӗтӗк пушмакне çӗнӗрен тӑхӑнса.— Йӑлӑхтарса çитерчӗç вӑл çӗрлехи хӑнасем...

— Эп те тухам-и сирӗнпе? — ыйтрӗ вӗсем калаçнине илтнӗ Чатта.

— Тух çав, тух! — терӗ Кира.— Кам пӗлет, тен, хурахсем унта, хуçи çуккине пӗлсе çаратма килнӗ? Çапах та, поэт пулсан та, арçын вӗт эсӗ...

Хапхана татах кӗмсӗртеттерчӗç. Йытӑ хытӑран хытӑ вӗрчӗ.

— Кам унта? Мӗн кирлӗ? — сассине юри хаярлатса ыйтрӗ Лариса хапха умне пырсан.

— Ангелин Егорна, эсӗ-и ку? — терӗ урам енчи арçын хулӑн сасӑпа.— Уç-ха часрах!

— Килте çук вӑл,— терӗ Лариса.

— Эс кам?

— Ун патӗнче хваттерте пурӑнатӑп.

— Уç-ха, сӑмах пур.

— Манпа сирӗн нимӗнле сӑмах та пулма пултараймасть, эп ют çын, нимӗн те пӗлместӗп. Эрех кирлӗ пулсан та ан ыйт, килте сутмастпӑр, вӑл йӑлана пӑрахнӑ.

— Уç-ха, тетӗп, тытса çиместӗп ӗнтӗ сана! Пӗччен те мар эп кунта, свидетельсем пур! — сассине хытарчӗ ют çын.

— Уç, курар, камсем унта... — Ларисӑна шӑппӑн каларӗ Чатта.— Пӗлер çапах та, мӗн шыраса çӳреççӗ çӗр варринче?

Вӗсем калинкkене уçса урама тухрӗç. Тӗттӗм пулин те, хапхаран пӗр темиçе метрта грузовик тӑнине тӳрех курчӗç. Радио ярса ташланӑ чух машина мӗнле пырса тӑнине сисмен иккен çамрӑксем.

— О, нумайӑн-çке эсир! Çапах та хапха уçма хӑратӑр... — терӗ ют арçын, тулли михӗ пек лутакаскер.— Хуçи ӑçта вара сирӗн? Тен, ялтах вӑл, хӑнара-мӗнре? Тен, чӗнсе килме пулать ӑна? Питӗ кирлӗ вӑл пире, срочно курмаллаччӗ!

— Чӗнсе килме çук, районра вӑл, больницӑна кайнӑ,— терӗ Лариса,— хӑçан килессине те пӗлместпӗр.

— Çаван пек паттăр хĕрарăм та больницăсем тăрăх çӳрет-и? — тĕлĕннĕ пек пулчĕ ют çын.

— Чир-чĕр тепĕр чух хуть те кама та пит лайăх çавăрса çапать,— терĕ Чатта.— Сирĕн унпа ĕç пурччĕ пуль ĕнтĕ?

— Ĕçсĕр кам çӳрет ку чухне! Служба! — Чатта çине чалăшшăн пăхса илчĕ арçын.

— Служба ĕçĕсене кăнтăрла тăваççĕ так-тă... — Чатта тăруках иккĕленме тытăнчĕ: ыр çынсемех-ши кусем? Тĕрĕс ĕçпех килнĕ-ши? Жуликсем мар-ши? Мĕне пĕлтерет кун пек çĕрлехи «визит»?

— Вăхăт çитмест, çавăнпа та тепĕр чух çĕрле те ĕçлеме тивет пире, хаклă юлташ!

— Каçăрăр та-ха... — ытларах та ытларах пăлханса, Чатта çав çын патнерех пычĕ.— Кам пулатăр вара эсир? Ăçтан килтĕр?

— А эсĕ ху кам... мана допрос тума?

— Допрос тумастăп эпĕ, анчах ыран е виçмине Ангелина Егоровна таврăнсан ăна каласа памалла-çке пирĕн... кам, мĕн ĕçпе килнĕ...

— Ăна вăл сансăрах пĕлет!

— Тен, эсир ун патне тавар илсе килнĕ? — лăпланмарĕ Чатта.— Апла пулсан, ак çак хĕрача — Кагаева помошникĕ, йышăнма пултарать...

— Хĕрачасемпе çыхланмастпăр эпир, пире хуçи кирлĕ. Таварĕ çавăн йышши пирĕн, пули-пулми çын йышăнма пултараймасть.

— Мĕнле пит чаплă тавар апла вăл? Тен... — Чатта хăйĕн шухăшне тытса тăраймарĕ, персе ячĕ: — Тен, «сулахаййи», алăран алла памалли? Тавар — укçа, укçа — тавар? Сĕм-çĕрле çеç сутмалли?

— Кун пек лăпăртатакансенне малти шăлĕсене катса яраççĕ, хаклă тусăм! Сăмаха ăна пуçпа шухăшласа калаçаççĕ, гражданин! Эсĕ мĕн, пире жулик-мазуриксем выранне хуратăн-и? Эсĕ ху кам ара, кун пекех ытла çивĕчскер?

— Хăвах каларăн-çке, гражданин эпĕ. Совет гражданинĕ. Çавăнпа çĕр варринче палламан çынсем мĕнле тавар турттарса çӳренине пĕлесшĕн çунатăп... — Чатта машина еннелле утма тăчĕ, анчах леш çын çав самантрах ăна хулĕнчен ярса тытрĕ.

— Не вашшă делă! Кашни йĕпе сăмса тĕрĕслеме пуçласан тата...

— Ма тӗрӗслемелле мар?! Эп... эп дружинник! Районри дружинниксен штабӗн членӗ! — кӑшкӑрчӗ Чатта.— Тӗрӗслеме право пур манӑн!

Ҫав самантра машина патӗнче тата икӗ мӗлке куранчӗ.

— Кӗсре хӳри мар-и! Дружинник кӑтартӑп эп сана... пӗрре янклаттарса ярсан! Ҫакӑнтах тӑсӑлса ӳксе хӑвӑн хушаматна манса кайӑн, ҫулламан пӑру! — Чаттана тӗртсе ячӗ ют ҫын.

— Асту, питӗ хытӑ ответ тытмалла пулать сан куншӑн! — кӑшкӑрчӗ Чатта, каллех машина патнелле кайма тӑрса.— Темле вӑрӑсем пулмалла эсир! Вӑрӑсем, урӑх никам та мар! Кӑтартӑр документсене!

— Санӑн мӗн, ак ҫак заводной ручкӑна тутанса пӑхас килет-и? — ун умне тепӗр ҫын тухса тӑрса аллинчи кукӑр тимӗре кӑтартрӗ.

Тӳсме ҫук хӑраса кайнӑ Лариса Чаттана пиншак аркинчен тытрӗ.

— Коля, тархасшӑн ан ҫыхлан, тем туса хурӗҫ...

— Ним те тӑваймаҫҫӗ! — малаллах туртӑнчӗ халь ӗнтӗ калама ҫук тарӑхса кайнӑ Чатта.— Машинин номерне астуса юлас пулать вӗсенне!

— Ак сана номер! — терӗ те ҫакна илтсенех тепӗр ют ҫынӗ, Чаттана сулахай янахӗнчен чул пек чышкипе питӗ хытӑ ҫапрӗ. Йӗкӗт куҫ-пуҫӗнчен вут-хӗм сирпӗнчӗ, хӑй сулӑнса кайрӗ, темлерен ҫеҫ ӳкмерӗ.

— Бандитсем! — кӑшкӑрчӗ вӑл.— Хӑтӑлаймастӑр! Суд умне тӑратӑрах куншӑн!

Ҫав самантрах мотор хӑватлӑн кӗрлерӗ, хыҫалти хӗрлӗ ҫутӑ йалт! йалт! туса илчӗ те, грузовик вырӑнтан хускалса малалла ыткӑнчӗ.

— Номерне, номерне пӗлмеллеччӗ! Эп нимӗн те курмастӑп, куҫа ҫапса шӑтарчӗ пулмалла, шуйттан...— мӑкӑртатрӗ Чатта, сулахай янахне тытса.— Мӗн тери ирсӗрсем пур-ха пирӗн ҫӗр ҫинче...

— Номерне курса юлтӑм эпӗ,— терӗ Лариса хӑранипе урмӑшнӑ сасӑпа,— пит лайӑх куртӑм: 33—12 ЧУА...

— Маттур, Логинова... Апла пулсан, вӗсем пирӗн алӑра! Тархасшӑн ан ман, халех ҫырса хур...

Пӳртре хӗрсем чӑн малтан Чатта пит-куҫне пӑхрӗҫ. Сулахай куҫӗ шыҫса ларма та ӗлкӗрнӗ, йӗри-тавра хӗп-хӗрлӗ.

— Часрах, халех сив шывпа тытас пулать! — терĕ те Лариса, алшăлли илсе ăна йĕпетме чăланалла ыткăнчĕ.

— Чĕрĕ çĕрулмине касса хураççĕ теприсем çав вырăна... — сĕнчĕ чĕтремех ернĕ Христин.

Питĕ пăлханчĕç хĕрсем.

Анчах Кира Чатташăн пăшăрханнă пек, ăна хĕрхеннĕ пек пăхса тăчĕ-тăчĕ те, пуçне пăркаласа илсе, сасартăк кулса ячĕ:

— Пĕтернĕ сан фотографие, Коля-Колька-Микулай! Ну, ăнать те паян сан пурнăçу! Тупата, историллĕ кун, темелле! Малтан мотоцикл çинчен вăркăнса çамкуна катрăн, халь акă киле килсех хĕнесе хăварчĕç шеремете...

— Саншăн — кулă, анчах вăл çапкаланчăк мана суккăр тума пултарнă! — терĕ Чатта, йывăррăн сывласа ярса.— Юрать-ха, свинчатка пулман ун аллинче. Пĕлетĕн-и, хулиган-бандитсен çавăн йышши япала пур — çынна пĕрре çапсах вĕлереççĕ...

— Пĕтĕмĕшпе илсен, пит хитре эс халь... Ик енче те пĕрер мăкăль ларать. Симметрична!

— Чарăн-ха, Кира, ача вăййи мар вĕт! — пӳлчĕ ăна Лариса, Чатта çамкине йĕпе алшăллипе явалаcа.

— Халь акă индус пулса тăчĕ пирĕн каччă... Хуть те кино çине ӳкер! — çаплах лăпланмарĕ Кира.

— Эс айăплă, йăлтах саншăн пулчĕ,— ун çине хăрах куçĕпе пăхрĕ Чатта.— Темшĕн мар, сан менелнику пирки килтĕмĕр-çке кунта? Кам хушнă сана шăп паян çуралма?

— Айăпа йышăнатăп, Коля... Анчах мĕн тăвас-ха манăн? Эп пĕрре чуптунипе санăн пĕтĕм ыратни-мĕнĕ иртсе каяс-тăк — тытса чуптăваттăм, анчах усси пулас çук... Сăмах майăн каласан, сана çак тарана çитсе пĕр хĕр те пулин чуптунă-и-ха? Çук пуль!

— Ан кул-ха эсĕ... Халь пирĕн чуптуни çинчен мар, малалла мĕн тăвасси çинчен шухăшламалла.

— Сан аманнă янаху пирки-и? Ыран больницăна каятăн акă, тухтăртан справка илетĕн...

— Çук-ха, вăл мар. Çав шуйттансене часрах тыттарасси çинчен калатăп эпĕ. Ахаль килмен-ха вĕсем, машинĕ çинче темле вăрттăн груз, «сулахаялла» ярăнтармалли тавар пур! Çавна сутасшăн çӳреççĕ. Мана машина çинче мĕн пуррине пырса пăхма тăнăшăн лек-

терчӗҫ вӗт! Мӗн пулма пултарнӑ-ши унта, эсир мӗнле шутлатӑр?

Хӗрсем ҫийӗнчех нимӗн те калаймарӗҫ.

— Кам пӗлет... темскер! — терӗ Лариса кӑшт тӑрсан.— Ҫапах та кӑштах тавҫӑратӑп пек-ха...

— Мӗн?

— Пирвайхи хут мар-ха ку, ҫӗр варринче такамсем грузовиксемпе килни. Кун пекки эсир мана ҫак яла леҫсе ярсан малтанхи каҫах пулчӗ. Ҫакнашкалах сӗмҫӗрле темле ҫынсем грузовикпа килчӗҫ те лупас айне вӑрахчен темскер пушатрӗҫ, унтан пӳрте кӗрсе эрех ӗҫрӗҫ. Ирхине лупас айӗнче тимӗрпе шифер купи куртӑм та, Кагаевӑран: ку тавара кам, мӗн валли илсе килчӗ, тесе ыйтрӑм, вӑл мана: хам валли ҫыртарсаттӑм та, паллanӑ шоферсем ҫула май кӗртсе хӑварчӗҫ, терӗ. Ӗненмерӗм ӑна — ӗҫсе ларнӑ чух леш ҫынсем укҫине часрах илесси ҫинчен калаҫрӗҫ. Темиҫе кунтанах ҫав тимӗрпе шифер куҫран пач ҫухалчӗ. Ӗне сулласа кайнӑ пек. «Япӑххине илсе килнӗ, сутса ятӑм, хам валли урӑххи пулать»,— терӗ Кагаева. Кӑшт тӑхтасан чӑнах та тепӗр машина илсе килчӗҫ. Халь те лупас айӗнчех выртать-ха вӑл строийматериалӗ. Ҫак Христин каланӑ тӑрӑх, ун пекки малтан та час-часах пулкаланӑ...

— Чимӗр-ха, чимӗр! Эп... эп ӑнланма пуҫларӑм! — терӗ Чатта.— Ҫав ҫӗрлехи хӑнасем таҫтан вӑрланӑ строийматериал илсе килсе параҫҫӗ, Кагаева сутать ӑна. Укҫи — ҫурмалла...

— Ытла ҫурмалла пулмасан та, процентне сахалах илес ҫук-ха вӑл, укҫашӑн вилсех каяканскер,— терӗ Лариса.

Чатта пӗр минут пек шухӑша кайса ларчӗ.

— Вӑраха яма юрамасть! — терӗ те унтан, ваш! сиксе тӑчӗ.— Телефон ӑҫта-ши кунта — ял Советӗнче-и, правленире-и?

— Иккӗшӗн те пур,— терӗ Лариса.— Мӗн шут тытрӑн вара эс? Ҫӗр хута кампа калаҫасшӑн?

— Милици начальникӗ патне шӑнкӑравлатӑп...

— Хӑвна хӗнени ҫинчен-и? — каллех кулса ыйтрӗ Кира.— Вӑл событи ҫинчен эсӗ ирхине киле пырсан та пит лайӑх пӗлтерме пултаратӑн вӗт? Унччен куҫу тата ытларах шыҫать, каласа пани те вара ӗнентерӳллӗрех пулӗ... Ҫапла мар-им?

— Мана пĕрре тăхăнтарса яни пысăк событиех мар-ха вăл,— ал сулчĕ Чатта,— манăн çак машина çинчен систерес пулать — халех пĕлччĕр, камăн вăл, мĕнле çынсем çӳреççĕ унпа çĕрле? — вăл плащне пăтаран вĕçертсе илсе хăвăрт кăна тăхăнчĕ.

— Машинĕ пирки епле пĕлме пултараççĕ-ха? — тĕлĕнчĕ Кира.— Республикăра ун пек грузовиксем вунă пин те ытла пулĕ. Шыра-ха вĕсем хушшинче кунта килсе кайнине...

— Айван та иккен эсĕ, тусăм! — терĕ ăна хирĕç Чатта.— Кашни машина çине ахальтен номер çакаççĕ-им? Эпир ку грузовикĕн номерне пĕлетпĕр-иç? Автоинспекцире картотека пур — çав номер тăрăх ун хуçине наччас тупаççĕ!

— Ăна ыран та пĕлтерме пулать...

— Тата тепĕр хут айван! Юрамасть ырана хăварма. Халех, кĕçĕрех шăнкăравламалла, ыранччен преступниксем хăйсен йĕрне ним палăрми пытарма ĕлкĕреççĕ. Машинне те вырăна пырса лартĕç, çуса та тасатĕç, тем те тăвĕç! Атя, Лариса, ертсе кай мана телефон патне.

— Юрĕ ара, ун пекех васкамалла пулсан... — килĕшрĕ Лариса.

— Эп те пыратăп,—терĕ Кира,—ма юлатăп сиртен?

## 15

Чаттапа хĕрсем тĕттĕм урампа колхоз правленийĕ еннелле васкаса утнă вăхăтра 33—12 ЧУА грузовик Вăкăрварпа Чăрăшкасси хушшинчи çул çинче ӳлерĕ. Пĕр пĕчĕк кĕпер урлă каçсанах кайри кустăрмисемпе çумăр шывĕ тулнă лакăма кĕрсе ларчĕ те ниепле те тухаймарĕ вăл. Апла, капла пăркаларĕ руле шофер, машинăна каялла та чакарма тăчĕ, малалла та туртăнтарчĕ — усси пулмарĕ. Шоферпа юнашар ларса пынă пуклак этем ăна темтепĕр каласа вăрçса тăкрĕ...

— Ну, Венька, пуçна çапса çурас пулать санне куншăн! Услап! Мĕншĕн аяккарах тытмарăн, тăмана!

— Карлăк урлă сиктермеллеччĕ-им машина? Качака таки мар пуль вăл? — çилĕпе пăхрĕ ун çине шофер.

— Тĕрĕс каларăн! Санăн машинпа мар, кив урапана качака таки кӳлсе çеç çӳремелле! Куна пĕлнĕ пулсан, санпа çыхланмастăмччĕ...

— Эп те, кун пек инҫете каяссине пĕлнĕ пулсан, килтен тухмастăм! — терĕ шофер.— Грузне ăҫта пушатассине пĕлместĕр, ҫынна сĕтĕрсе ҫӳретĕр.

— Сана куншăн укҫа параҫҫĕ, тăмпуҫ!

— Ирччене ларма тивсен пит лайăх лекетпĕр акă! Сан укҫу та кирлĕ пулмасть вара, тĕрмере апат ахалех ҫитереҫҫĕ...

— Мĕнле тĕрмере? Чипер калаҫ, ухмах!

— Пĕлместĕп-им эпĕ кузовра мĕнле тавар выртнине? Стройкăран вăрласа тухрăр-иҫ ăна?

— Ан сӳпĕлтет! Никам та ним те вăрламан! Курмарăн-им, охранниксем хăйсем пулăшрĕҫ тиеме?

— Ма-ха ан тиеччĕр вĕсем? Пĕр-ик литрлăх панă та вĕсене — пулчĕ те! Эрех тесен, вăл йышши ҫынсем тăван амăшне те сутма пултараҫҫĕ, пĕлетпĕр! Жуликсем! Сирĕн пекех...

— Ку сăмаха асăрханарах кала эсĕ, Ясмаков! Ху та пирĕнпе пĕрлех-ха, лекес-тăвас пулсан сана та пуҫран ачашламĕҫ. Миҫемĕш рейс-ха ку санăн? Миҫе хут пытăн пирĕнпе? Шутла-ха лайăхрах, пурĕ миҫе тенкĕ парса пуйтартăм эп сана? Чĕнместĕн? Тоттă ҫав!

— Тух машинран, ан янраса лар! — пуклак ҫынна чавсипе тĕртсе илчĕ шофер.— Кустăрмасем айне пăрахма мĕн те пулин шыраса тупас пулать, унсăр тапранаймастпăр!

Вăл кабина алăкне уҫса тулалла сикрĕ, ун хыҫҫăн пуклакки те тухрĕ, вĕсене кура кузовра ларса пынă тепĕр ҫынĕ те анчĕ. Вĕсем кĕпертен кăшт ҫӳлерех хăпарчĕҫ те инҫетре те мар темле улăм куписем курсан савăнсах кайрĕҫ.

— Часрах, часрах йăтăр! — кăшкăрчĕ пуклакки, пуринчен малта лăпăстатса.— Васкăр!

Питĕ хытă чупкаларĕҫ вара вĕсем калле-малле.

...Пĕр ҫур сехет пек тăрмашсан, шофер машинăна лакăмран кăларчĕ-кăларчех. Тепĕр вун-вунпилĕк минутран вара 33—12 грузовик Чăрăшкассинчи лавкка хуҫи Васюков килĕ тĕлне ҫитсе чарăнчĕ.

— Ку упăти килте пултăрччĕ хуть! — терĕ те шоферпа юнашар пынă пуклак этем, кабинăран сиксе тухса крыльца патнелле чупрĕ. Самантранах алăк шашулккине тытса чăнкăртаттарчĕ.

— Э-эй, хуҫи-и! Тух-ха!

Шалта сас пулмарĕ.

Пуклак этем татах чăнкăртаттарчĕ, крыльца алăкне атă кĕллипе тапа-тапа илчĕ.

— Васюков, каянни! Çитĕ сана çамрăк арăмпа йăпанса выртма! Тăрса тух-ха часрах, васкамалла!

Тинех крыльца алăкĕ хыçĕнче хĕрарăм сасси илтĕнчĕ:

— Кам эсрелĕ çĕмĕрлет унта?

— Эпĕ-ха ку, Шишкин...— ĕне пек сывласа ячĕ пуклакки.

— Мĕнле Шишкин? Ăçтисем?

— Шупашкартан. Астăватăн пуль, пĕр виç эрне каялла сире ăна-кăна килсе патăм. Иксĕмĕр ташласа та илтĕмĕр ун чух...

— Каллех сĕтĕрĕнсе çитрĕн пулать?

— Çитрĕм çав! Сана курас килчĕ-çке, Мархи... Чун чăтмарĕ!

— Лăпăрти! Кĕртместĕп ак сана, кай хăвăн çулупа.

— Ой, Мархи, юрамасть ун пек! Эп питĕ вашнă ĕç-пе... Нумайлăха та мар, шутсăр васкатăп мар-и!

Хĕрарăм алăка уçсанах Шишкин тени ăна ыталаса илчĕ.

— Ы-ых, пăрчăкан... Çĕр тенкĕ парăттăм çав!

Хĕрарăм, ун ытамĕнчен вĕçерĕнсе, малалла пичке пек мăкăрăлса тăракан хырăмĕнчен чышрĕ.

— У-у, намăссăр! Сысна аçи! Ан нăрăхлат!

— Пĕркун ку сысна аçине тиркемерĕн-çке? Чип-чиперех пĕр кăмăллă пултăмăр!

— Астумастăп. Ўсĕрĕлсе кайнă эп ун чух. Ан та асăн ун çинчен. Хăсас килет. Васюков пĕлсен — пусать иксĕмĕре те.

— Юрĕ, юрĕ, ан çилен... Хăй килте-и?

— Килте. Çывăрать вăл, харлаттарни кунтах илтĕнет ав.

— Ўсĕр мар пуль?

— Хăш кaç урă пулнă тетĕн эс ăна?

— Вăратас! Эп таварпа килтĕм.

— Мĕнле тавар?

— Пĕркунхи пекех — тимĕр, шифер...

— Лекетĕр акă пĕрре-пĕрре. Прощай свободă пулать сире.

— Мĕнех вара... Эс передачăсем илсе пыратăн вĕт? Аш кукли, çуллă икерчĕ тата темтепĕр...

— Шĕвĕртни мар-и! Пĕр утăм та тумастăп. Пурăнăрах тĕрме яшкине лĕрккесе, мана мĕн?

— Шеллеместĕн, эппин?

— Мĕн шеллемелли пур сире? Ман валли арçын пĕтнĕ-и? Атя, ут, ут, хурах пек ан тăр тĕттĕмре.

Вĕсем пӳрте кĕрсенех Васюков арăмĕ Мархи çутă çутса ячĕ. Ун упăшки кравать çинче çывăрмасть иккен, урайне пăрахса панă кив кĕрĕк çине месерле выртнă та, алли-урисене вилнĕ шапа пек саркаласа ыйăха туртать кăна.

— Ма ара кун пекех йăвалантаратăн юратнă стариккуна? — тӳсеймесĕр кулса ыйтрĕ Шишкин.— Ăна юнашар хурса, хы-ытă ыталаса выртас пулать!

— Асту! Эп мар-и вăл çак ӳсĕр ват сăсăла ыталаканни! Качака шăрши кĕрет унран, тӳсме пултараймастăп...

Мархи хăйĕн упăшки патне пырса ăна урипе тĕрткелеме тытăнчĕ.

— Вăран-ха, эсремет! Çын килчĕ сан патна, тăр! Тăр, теççĕ!

Васюков йăшаланкаласа илчĕ, темскер măкăртатрĕ, анчах арăмĕ ун пĕççине ыраттармаллах тапсан куçĕсене уçрĕ.

— Мĕн пулнă? Ма тивен? — ним ăнланмасăр пăхрĕ арăмĕ çине.

— Калатăп-иç, çын килчĕ!

— Эпĕ çитрĕм-ха сан патна каллех, ĕç пур,— терĕ Шишкин, маларах иртсе.— Палларăн-и?

— Палларăм та-ха... — Васюков, эхлеткелесе, аран тăркаларĕ те сак çине ларчĕ.— Ай-ай, шельмă, хытă çывăрнă-çке эпĕ... Халь мĕн — ир-и, каç-и?

— Çур çĕр.

— Э, апла-тăк пит аван,— хĕрлĕ çăмлă кăкăрне хыçкаласа илчĕ Васюков,— татах çывăрма май пур.

— Çывăрмалла мар-ха, хуçи, ĕç тумалла,— терĕ Шишкин.— Хăвах чухламалла, эс хыçкаланса ларнине курма килмен эпĕ сан патна. Таварпа килнĕ. Калаçса татăлас пулать.

— Мĕн илсе килтĕн?

— Пĕркунхи пеккиех. Самăй ходовой.

— Мĕн чухлĕ?

— Кузов хĕррипе тан. Листисене шутламан. Йышăнатăн пуль?

Васюков татах аллине хёвне чиксе ярса хыҫкаланчӗ.

— Йышӑнма тивет пуль. Хӑшӗ-пӗрисем ыйткаларӗҫ-ха манран.

— Машинне картишне кӗртес апла. Тухса уҫ хапхине.

— Чиччас, тухӑпӑр ак... — Васюков сасартӑк питкуҫне пӗркелентерсе арӑмӗ ҫине пӑхрӗ.— Мархи, чунӑм, пар-ха пӗр ҫур стакан, туршӑн та пуҫ ҫурӑлса тухать...

— Ҫурӑлтӑр-иҫ! Ҫавӑ чух! Кам хушать сана кашни кун кӳпме? — терӗ те арӑмӗ, чӑланалла пӑрӑнчӗ.

— Пар, тетӗп, шуйттан кӗвенти! — кӑшкӑрчӗ Васюков, макӑрса ярас пек.— Вилетӗп! Эп таҫта ӗҫсе ҫапкаланса ҫӳремен, пумилккере пулнӑ, ыр ҫынна асӑнса ҫеҫ ӗҫнӗ...

— Кун пек ӗҫсе пурӑнсан, часах акӑ хӑвӑн пумилкку та пулӗ-ха!

— Ы-ы, вӗреҫӗлен...

— Юрӗ, Васюков, вӑрҫса-ҫӗтӗлсе ан лар, малтанӗҫне тӑвар-ха, мухмӑр-сухмӑрсене кайран та уҫӑпӑр,— терӗ Шишкин.— Урамра ман юлташсем кӗтсе ларассӗ. Вӑхӑт сахал пирӗн, тул ҫутӑличчен Шупашкара ҫитсе ӳкмелле...

— Анкаратӑп-ха, тӗрӗс, кашкӑрсем яланах ҫӗрле ҫӳреҫҫӗ, ҫын куҫне курӑнма хӑраҫҫӗ вӗсем... — йӗплесе илчӗ Васюков.— Атя, эппин...

Шӑп вуникӗ сехетре районри милици начальникӗн — Конон Иванович Сумбатов майорӑн — хваттерӗнче телефон чӑнкӑртатрӗ. Ҫывӑрас умӗн ҫӗнӗ «Огонекри» детектива вуласа выртакан майор журнала аяккалла хучӗ те аллине тӑсса трубкӑна тытрӗ. Каҫхине вӑл телефонне яланах пуҫ вӗҫне лартнӑ, ма тесессӗн ун патне ҫӗрле те час-часах шӑнкӑравланӑ. Ӗҫӗ ҫавӑн пек-ҫке унӑн...

— Кам-ши, ӑҫта мӗн пулнӑ-ши тата? — кӑмӑлсӑрланса шухӑшларӗ вӑл, хуллен сас пачӗ: — Итлетӗп...

— Эсӗ-и ку, Конон Иванч? — илтӗнчӗ трубкӑра.

— Эпӗ, Сумбатов. Кам калаҫать?

— Салам! Чатайкин чӑрмантарать-ха сана. Редакци сотрудникӗ, дружинниксен районри штабӗн членӗ...

— Пӗлетӗп, пӗлетӗп эс камне, Чатта юлташ. Паллӑ ҫын... — хӑй ӑшӗнче кулса илчӗ майор.

— Тархасшăн каçар çак вăхăтра шăнкăравланăшăн. Анчах лару-тăру çавăн пек килсе тухрĕ...

— Эс ăçтан калаçатăн? Начар илтĕнет...

Проводăн тепĕр вĕçĕнчи Чатта трубкăна вĕрчĕ — ффу, ффу... Унтан ӳсĕрсе пырне тасатрĕ те хытăрах кăшкăрма тытăнчĕ:

— Вăкăрварĕнче эпĕ, кунти колхоз правленинчен калаçатăп.

— Мĕн тăватăн эс унта çĕр хута?

— Ĕçпе килсеттĕм, хаçат валли материал илме. Сасартăк кĕтмен япала пулчĕ... Преступниксене тĕл пултăм.

— Мĕнле преступниксене?

— Кунти завмаг. Кагаева патне кĕçĕр вунă сехетсем иртсен виççĕн темскер тиенĕ грузовикпа пычĕç. Хăйсене паллаттармарĕç, эп вĕсен машини çинче мĕн пуррине пăхма тăрсан мана хĕнесе тăкрĕç — чут çеç хăрах куçсăр юлаттăм... Ман шутпа, таçтан темскер вăрланă та вĕсем, сутма килнĕ...

— Завмагĕ хăй çукчĕ-и?

— Вăл районра, кăнтăрла эп ăна больница патĕнче куртăм.

— Машини кайран ăçталла кайрĕ?

— Тĕп-тĕрĕс калаймастăп. Чăрăшкасси еннелле кайрĕ пулмалла. Кам пĕлет, тен, уя тухсан, урăх çĕрелле пăрăнчĕ-и...

— Ун номерне асăрхама ăс çитертĕн-и хуть?

— Ăна çырса юлтăмăр-ха, 33—12 ЧУА. Шупашкар номерĕ вĕт вăл?

— Шупашкарăн.

— Мĕн тумалла ĕнтĕ, майор юлташ? Тытасчĕ-çке вăл гастролерсене! Тем тесен те, преступниксем вĕсем, вăрланă грузпа çӳреççĕ! Çитменнине тата мана та чутах çапса пăрахатчĕç. Манăн свидетельсем пур — Вăкăрварпа Улăххĕрринчи продавщицăсем...

Милицин начальникĕ темиçе самант чĕнмерĕ.

— Эсĕ ху ирччен унтах пулатăн-и? — тесе ыйтрĕ унтан.

— Çĕр хута ăçта каям ĕнтĕ эпĕ? — терĕ Чатта.

— Кам патĕнче тупмалла сана?

— Завмаг килĕнче пуль...

— «Пуль» мар, тĕп-тĕрĕс кала! Пĕр-пĕр хусах матка патне кĕрсе выртăн та, шыра вара сана...

— Майор юлташ, эпӗ... эпӗ мӗн... — тӑрук чыхӑнчӗ Чатта,— мораль енчен таса ҫын! Кӳрентеретӗн мана ун пек каласа...

— Юрӗ, юрӗ, хӳрӳне ан тӑрат,— терӗ милици начальникӗ.— Кӗт, унта пирӗн ҫынсем пырӗҫ.

— Кӗҫӗрех-и?

— Паллах, виҫ кунтан мар. Леш машинин номерне тепӗр хут кала-ха, ҫырса хурам.

— 33—12 ЧУА, майор юлташ...

— Тавтапуҫ. Эс кӗт, эппин, кирлӗ пулатӑн. Сыв пул. Трубка шӑпӑрт пулчӗ.

...Ларисӑпа Кира Чатта районри милици начальникӗпе мӗнле калаҫнине пӗтӗмпех илтсе тӑчӗҫ. Трубкӑра провод тепӗр вӗҫӗнчи ҫын сасси те лайӑх илтӗнчӗ.

— Маттур иккен эсӗ ҫапах та, пысӑк ҫынсемпе те пит хӑюллӑ калаҫатӑн,— терӗ Кира, вӗсем урама тухсан.— Ахаль рядовой ҫын мар вӗт-ха вӑл, милици начальникӗ...

— Пулин! Мӗншӗн калаҫас мар-ха унпа? — тӗлӗннӗ пек, аллисене ик еннелле сарса пӑрахрӗ Чатта.— Мӗнех вара милици? Маяковский мӗн каланине пӗлетӗр пуль? «Манӑн милици мана хӳтӗлет!» тенӗ аслӑ поэт...

— Илтнӗ ӑна. Тӗрӗс, ҫаплах пулса тухать: такамсем хӑвна хӗнерӗҫ те кӗҫӗр, эсӗ хӑвӑн хутна кӗме милицие чӗнтӗн. Ҫапла-и?

— Пӗртте апла мар. Хама ҫапнӑшӑн мар, ҫав кашкӑрсем халӑх пурлӑхне вӑрланине туйнипе шӑнкӑравларӑм. Вӗсем ыр шухӑшлӑ этемсем марри паллӑ-ҫке! Епле-ха вара ҫавна пӗлнӗ ҫӗртех — шарламастӑн?!

Калаҫӑва Лариса хутшӑнчӗ:

— Эс кӑлӑхах кулма хӑтланатӑн, Кира... Тӗрӗс турӗ Чатта юлташ, питӗ тӗрӗс! Кам пӗлет, тен, лешсем чӑнах та преступниксем? Юрать-и вара ун пеккисене ирӗккӗн ярӑнса ҫӳреттерме?

— Килӗшетӗп, килӗшетӗп сирӗнпе, манӑн Кольӑна кӑшт йӗкӗлтессӗм килчӗ ҫеҫ,— кулса илчӗ Кира.

— Ҫав йӑлах пӗтмест-ҫке санӑн!

Вӗсем Кагаева килне таврӑнса кӗнӗ чух стена ҫинчи куккуклӑ сехет йӗппи ҫур ҫӗр иртни пӗр сехет ҫитнине кӑтартнӑ.

— Ҫывӑрас пулать, атьсемӗр,— терӗ Лариса,— ыран пирӗн пурин те ӗҫлемелле вӗт-ха...

— Çывăрасси çывăрмалла та-ха, хамăрăн хĕрӳ чĕреллĕ поэта ăçта хурăпăр эпир? — ун çине пăхса ыйтрĕ Кира.— Ют арçынпа пĕр пӳлĕмрех выртатпăр-и? Хăнăхман эп ун пек...

— Ах, тур, каларĕ те çав! — ал сулчĕ Лариса.— Пусса çимест пуль вăл пире? Астумастăн-им, Йĕпреç вăрманне кăмпа татма ярсан, лесник сарайĕнче мĕнле пурăнтăмăр? Çичĕ хĕр, вуникĕ каччă...

— Вĕсем пурте хамăрпа пĕрле вĕренекен ачасемччĕ.

— Ку та хамăр поэт!

— Эп... эп çенĕхе тухса выртма пултаратăп,— терĕ Чатта, нимĕнле мар пулса.— Пĕр-пĕр кив тумтир илетĕп те...

— Çук-çук, ниçта та тухмастăн! Шăнса пăсăлăн та, район поэтсăр тăрса юлĕ тата, пирĕн саншăн ответ тытма тивĕ! Допроссем туса, протоколсем çырса тăнран кăларĕç! — кулса ячĕ Лариса.— Ак çак çĕтĕк дивана тепĕр майлă, тӳртĕн çавăрса лартатпăр та пит лайăх пулать. Тыт, Коля, тепĕр пуçĕнчен... ак çапла! Патша ыйхипе çывăратăн-ха эс ку вунулттăмĕш ĕмĕрти диван çинче...

Çур сехетрен пӳртре шăп пулчĕ.

Грузовик çинчи тимĕр листисеневаскасах пахчана, выльăх карти хыçне йăтса купаласан, Васюковпа каçхи «хăнасем» виççĕшĕ те унпа пĕрле пӳрте кĕчĕç.

— Ну, халь ĕнтĕ пырсене кăштах йĕпетсе илме те юрать,— терĕ Шишкин, тӳрех тĕпелелле иртсе.— Ĕç хыççăн — ĕç, тетчĕ ман малтанхи хăйматлăх. Мăкриччи тума чармастăн пуль вĕт, Мархи кин?

— Сире юрать, анчах хамăнне памастăп пĕр тумлам та,— терĕ Васюков арăмĕ.— Каллех сысна пек пулса каять, йăлăхрăм...

— Ун пекех ан хаярлан-ха, çынна пăртак хĕрхенни те кирлĕ тепĕр чух. Асапланать-çке вăл, тата халь ĕçлесе те ывăнчĕ,— Васюков хутне кĕчĕ Шишкин.

— Илсе кĕрт тата часрах, çынсене ан кĕттер! — арăмĕ çине çиллессĕн пăхсаваскатрĕ Васюковĕ.

Мархи тек кутăнланса тăмарĕ. Кĕçех сĕтел çине виçĕ çур литр, тимĕр чашăкпа тăварланă хăяр лартрĕ, çăкăр касса хучĕ.

— Ан тиркесемĕр, ал айĕнче урăх нимĕн те çук...

— Мĕн тиркемелли! Пире, чĕнмен хăнасене, кунтан ытла мĕн кирлĕ тата? — терĕ те Шишкин, аллисене сăтăркаласа илчĕ.— Стаканĕсем мĕншĕн тăваттă çеç? Пиллĕк кирлĕ! Хăвна мĕншĕн тăратса хăваратăн?

— Çук-çук, эп ĕçместĕп... — пуçне пăркаласа ал сулчĕ Мархи.

— Юрамасть ун пек, пирĕн кампание хисеплемен пек пулать апла,— хĕрарăм çине çуллă куçĕсемпе шăтарасла пăхрĕ Шишкин.— Эпир кунта усалпа мар, ырăпа килнĕ пуль?

— Сирĕн ыррипе усалли юнашарах-ха. Паян ыр куратăр, анчах тепĕр кунне тем пулса тухать-ха унта, ăна нихăшĕ те пĕлместĕр,— терĕ те Мархи йĕрĕннĕ пекрех, шкапран тепĕр стакан илсе сĕтел çине пырса лартрĕ.

— Ним те пулмасть пире! Пулман та, пулмасть те! — Шишкин Васюкова çурăмĕнчен çапса илчĕ.— Çапла-и, хуçи? Пирĕн яланах яп-яка та тап-таса, йĕритаврах çĕр процент!

Васюков стакансене тултарчĕ.

— Эппин... ĕç тунă ятпа — салам сире! — терĕ те вăл, виç кун шыв курман выльăх пек васкаса, никамран малтан ĕçрĕ.

— Салют! — çаплах Мархи çинчен куç илмесĕр стаканне çĕклерĕ Шишкин.— Паян та, ыран та телей пултăр пире! Кайрăмăр!

Çул çинче пĕрмаях кузовра ларса килнĕ хĕсĕк куçлă, сайра сар сухаллă çын та пĕррех çавăрса хучĕ стаканне.

Анчах шофер тăхтарĕ-ха, ярса панă эрехне ăшăтасшăн пулнă пек стакана ик аллипе тытса ларчĕ.

— Эс мĕн тата венчете каяс хĕр пек именетĕн? — йăл кулчĕ Мархи, ун çумне йăкăш пырса ларса.

— Хăратăп,— терĕ Ясмаков тӳррипе.— Ӳсĕрĕлсе кайăп та... темрен тем пулĕ!

— Ах, тур! — пĕççине çат! çапрĕ Мархи.— Çак çĕр грамран мĕн пултăр сан пек молодеццăна? Ан тĕлĕнтер-ха! Атя, иксĕмĕр шаклатса ĕçетпĕр!

— Çулĕ вăрăм, çĕрĕ тĕттĕм... — тытăнса тăчĕ Ясмаков.

— Кай, пуçласа куратăп сан пек хăюсăр шофера! Пирĕн колхоз шоферĕ Бычков кун каçа темиçе хут та

лавккана чупса кӗрсе «ҫӗр грамм с прицепом» шаплаттарать. Хамӑн хырӑмра горючи пулманни — бакра бензин пулман пекех вӑл, тет хӑй...

Шофер ӗҫмесӗр ларнине Шишкин та асӑрхарӗ те куҫне хӗсрӗ:

— Яр пӑртак, ҫӗрле никам та тытса шӑршламасть сана, мӗн хӑрамалли пур?

Мархи ҫав вӑхӑтра хӑйӗн стаканне ун стаканӗпе шаклатрӗ.

— Ӗҫсем ара мана ыр сунса... — чавсипе тӗртсе илчӗ вӑл шофера.

Ясмаков тек тытӑнса тӑмарӗ вара, ӗҫрӗ. Малтан «ҫук-ҫук, эп ӗҫместӗп», текен Мархи те тӗппипех ҫавӑрса хучӗ.

— У-ухх, хаяр-ҫке, шуйттан япали! Епле ӗҫеҫҫӗ пуль ҫак пакӑҫа арҫынсем... — тутине саппун аркипе шӑлса илчӗ вӑл.

— Ку чухне хӗрарӑмсем те арҫынсенчен юлсах каймаҫҫӗ,— терӗ Ясмаков, хӑяр чӑмласа.

— Эс мана тӗртсе каларӑн-и куна? — пуҫне чалӑштарса пӑхрӗ шофер ҫине Мархи.— Эп пур чух та мар, сан пек маттур кӑччӑсемпе пӗр кампанине лексен ҫеҫ сыпкалатӑп... хаваслӑрах пулма.

— Каччисене вара — хӑюллӑрах пулма ӗҫтеретӗн-и?

— Вӗсен хӑюлӑхӗ унсӑр та ҫитет... Пурте сан пек пӑру мар пуль?

— Каччӑ шутӗнчен тухнӑ-ҫке эпӗ, ҫав хуплать,— кулчӗ Ясмаков.

— Авланнӑ та-и эсӗ? Ытла та ҫамрӑк пек курӑнатӑн-ҫке?

— Авланнӑ ҫеҫ мар, ача та пур. Кӗҫех тепре пулать.

— Юрататӑн пуль арӑмна?

— Тиркеместӗп.

— Апла пулсан, сан арӑмушӑн ӗҫер-ха тепрер... — Мархи йӑпӑр-япӑр стакансене тултарса лартрӗ.

Малтан ӗҫни пуҫа кайнӑ пек туйӑнмарӗ Ясмакова, кӑмӑла кӑштах ҫӗклерӗ ҫеҫ. Ҫавӑнпа та иккӗмӗш хут вӑл ним шикленмесӗрех ӗҫрӗ. Ҫамрӑк хӗрарӑмпа йӑкӑлякӑл калаҫса ларнӑ май виҫҫӗмӗш хут та янклаттарчӗ унтан.

Çав хушăра Шишкинпа Васюков — сутаканпа илекен — тавар хакĕ пирки кĕлешрĕç пулмалла, анчах хĕрнĕçемĕн хĕрнĕ Венька Ясмаков (эрех хăйĕн ĕçне тăвать вăл, эсрелĕ!) итлемерĕ вĕсем калаçнине. Ăна мĕн? Пуклак Шишкинпа вăл çирĕм пилĕк тенкĕлле калаçса татăлнă, çав укçана илетех вăл унран: пирвайхи хут мар вĕт, кашнинчех çавăн чухлĕ панă ăна çакăн пек «сулахай» рейссемшĕн...

— Телейлĕ сан арăму,— Ясмакова хулĕнчен чĕпĕтрĕ хĕрелсе кайнă Мархи.— Ăмсанатăп...

— Мĕншĕн? — тĕлĕннĕ пек пулчĕ шофер.

— Сан пек лайăх арçынпа пурăннăшăн... Тепре ку еннелле килме тивсен, кĕрсе тухмасăр иртсе ан кай... Юрать-и?

— Мĕн сăлтавпа кĕрес-ха? — ун çине шăтарас пек пăхрĕ Ясмаков.

— Мана курма... — терĕ те Мархи, тата хытăрах чĕпĕтрĕ.

Юлашкинчен Васюковпа Шишкин калаçса татăлчĕç пулмалла, Васюков хăйĕн арăмĕнчен çĕр аллă тенкĕ укçа ыйтрĕ. Мархи, чăлана кĕрсе, чылайран тин пĕр ывçă хĕрлĕ хут укçа илсе тухрĕ те упăшкине пăрахса парса кăмăлсăр мăкăртатрĕ:

— Килти юлашки укçана пĕтеретĕн, япалине сутасси тахçан-ха!

— Ан кулян, карчăк, ыранах тавăрса паратăп сана ку укçана! — терĕ Васюков.— Укçа тени вăл — юхакан япала, каять — килет, килет — каять... Паян сахалтарах, ыран — ытларах...

— Килни питех курăнмасть-ха çав сан пек услапсен. Ав, çынсем епле мăннăн хыпаççĕ! — шĕвĕр пӳрнине йĕпете-йĕпете укçа шутлакан Шишкин çине кăтартрĕ Мархи.— Пурăнма пĕлеççĕ ăслă çынсем!

— Вăл енне кайсан, эпир те ухмахах мар-ха... Курăн вăт, тепрер çултан ик хутлă çурт пулать санăн! Акă, ыр çынсем умĕнче калатăп...

— Ан вĕçсе кай, çăмăлттай! Тен, унччен шур çуртра кирпĕч шутласа та ларăн-ха!

— Нихçан та пулмасть ун пекки! — ура çине сиксе тăчĕ Васюков.— Них-çан та! — сĕтеле чант! тутарчĕ вăл.— Мĕншĕн тесен Васюков трудовой çăкăр çиет, честнă пурăнать! Çаратман, вĕлермен... и так далее! Комар нос не точит, теççĕ вырăссем...

Вăл суланса кайрĕ те каялла лак! ларса пуçĕпе стенана çапăнчĕ.

— Ну, хуçи, эпир кайрăмăр,— терĕ Шишкин сĕтел хушшинчен тухса.— Сывă пулса юл тепреччен...

— Çул курки! — сĕтеле каллех чанлаттарчĕ Васюков.— Мархи, хăнасене ăсатса яма пĕл, эсремет ами! Малтан аслине пар!

Мархи васкасах юлашки эрехе стакансене тултарчĕ, анчах «аслине» ĕçтерес вырăнне чăн малтан Ясмакова тыттарчĕ.

— Куна ĕçсен ӳсĕрĕлсе каятăп эпĕ, манăн руль тытса пымалла... — аяккалла пăрăнма тăчĕ шофер, анчах Мархи ăна пушă аллипе мăйĕнчен ыталаса илчĕ.

— Ан кутăнлан, эп сана юратса... кунта килмелли çула манса каясран ĕçтеретĕп... Тĕл пуласах пулать пирĕн!

Ясмаковăн ирĕксĕрех ĕçме тӳр килчĕ çул куркине.

...Ялтан тухса мăн çул çине ӳксенех, машинне вăл çав тери хытă ыткăнтарчĕ. Лакăм-тĕкĕмсенче грузовик лăнк та ланк сикрĕ, кузов шăлтăр та шалтăр лăканса, чĕтренсе илчĕ.

— Ун пекех ан хăвала ĕнтĕ, таçта ывтăнса кайăпăр тата! — терĕ юнашар ларса пыракан Шишкин, грузовик пĕрре уйрăмах хытă сиксе илнĕ пирки пуçĕпе кабина маччине çапăнсан.— Ĕлкĕретпĕр çутăличчен, ма ытла васкас...

— Чăт-чăт, чунăм, чăт, чунăм... — сăвăласа каларĕ Ясмаков, машина чуппине пурĕпĕр чакармасăр.

Вăл хăйне çулăхма тăрăшнă Васюков арăмне аса илчĕ.

— Юхха, шуйттан ами... Стариккине пĕрмай улталать ĕнтĕ. Мĕн тума качча тухнă вăл ăна? Укçашăн пуль, урăх мĕншĕн пултăр тата? Хытă ĕçекенскер, лешĕ нумаях пурăнас çук, ку вара ĕмĕрлĕх пуйса юлать... пĕр-пĕр фраер киле кĕрсе якатса тухса каймасан... Мĕн тĕрлĕ çын çук çĕр çинче!

Километр хыççăн километр хыçа вăркăнса юлчĕ. Спидометр йĕппи пĕрмай çитмĕл-сакăрвуннă çинче сиккелерĕ. Çырма, сăрт, тӳрĕ çул, унтан каллех çырма, сăрт... Малта — вăрман. Ясмаков тӳрех аса илчĕ: çав вăрман хыçĕнче — ГАИ посчĕ. Унта (ах, çав ĕçсĕр аптранă автоинспекторсене курас килмест-çке!..) иртен-çӳрен машинăсене час-час тăратса тĕрĕслеççĕ. Чăнни-

пе — машинисене те мар, шоферсене тӗрӗслеççӗ вӗсем. Урă-и, ӗçмен-и? Тепӗр чух таптасах каçса каяс килет вăл шуйттансене! Пӗрте-пӗр паян тӗл пулсан... пӗтрӗм! Правана пӗр сăмахсăрах туртса илеççӗ. Çӳре вара шăхăрса. Грузчика кайса кӗр ăçта та пулин... Галя хуйхăрса вилет вара. Хуняма çисе ярать... Правасăр тăрса юлнисӗр пуçне, тӗпчеме пултараççӗ — ăçта, мӗн ӗçпе кайнă, кам таварне турттарнă. Ку пуклак прохвостăн, Шишкинăн, темле шанчăклă хутсем пур, терӗ те-ха... Кам пӗлет ăна? Куçпа курман. Тен — улталать? Çынни çавăн йышшискер. Вăрă, жулик...

...Çук, пăрахас пулать кун пек çӳреме. Ырăпа пӗтмест вăл. Укçине лайăх параççӗ ӗнтӗ, анчах укçа тесе пурнăçа пӗтерсе хума пулмӗ. Галя кашнинчех калать— ан çыхлан такамсемпе, ан çӳре вăрттăн унта-кунта, вăрланипе пӗрех вӗт вăл, ун пеккишӗн пурпӗрех хăçан та пулин лекеççӗ. Санпа мӗн те пулин пулсан — ăçта кайса кӗрес манăн ик ачапа? Тӗрӗс калать Галя... Пӗтӗм пурнăçа пӗтерсе хума пулать капла. Анчах пирӗн пурнăçӗ тин çеç пуçланнă вӗт-ха. Эп çирӗм пиллӗкре, Галя халь кăна çирӗм иккӗ тултарчӗ. Валерик виççе кайрӗ... Темиçе уйăхран Саша е Маша пулать. Ик ача... Вӗсене çын тумалла...

Çапла шухăшласа пынă çӗртех Ясмаков сасартăк ăшӗ пăтранма, хăсас килме, куçӗ улшу курма пуçланине туйрӗ.

— Ак хайхи... леш вӗреçӗлен эрехӗ...— çиçӗм пек шухăш вӗçсе илчӗ те ун пуçӗнче, машинăна пат! чарса тăратрӗ вăл. Юнашар тӗлӗрсе пыракан Шишкин малалла сулăнса çамкипе кабина кантăкне çапăнчӗ.

— Мӗн пулчӗ? Çитрӗмӗр те-и? — ыйтрӗ вăл ним ăнланмасăр.

— Шыв вӗреме пуçларӗ, мотора сивӗтес пулать,— суйрӗ те ăна Ясмаков, кабинăран ерипен тухса канав хӗррине ларчӗ, ăшӗ лӗкленнине пӗтерес тесе, ик пӳрнине пырне чике-чике хăсрӗ. Унтан, уçă сывлăша ытларах та ытларах çăтма тăрăшса, пӗр хушă курăк çинче выртрӗ.

— Пурнăç-и вара çак? — шухăшларӗ вăл, хуп-хура пӗлӗтри çут çăлтăрсем çине пăхса.— Ыр çынсем халь пурте килӗсенче ăшă вырăн çинче çывăраççӗ. Ман Гальăпа Валерик те çывăраççӗ ӗнтӗ. Эп уй варринче, пăч-тӗттӗм çӗрте, йӗпе курăк çинче выртатăп... Мӗн ну-

шапа? Кам хушнӑ мана, кам хӑваланӑ? Никам та мар, хам. «Четвертак» кирлӗ пулнӑ-и мана? Е ҫав ясар матка эрехӗ-и? Ухмах... Киле ҫитсе ӳкес пулать часрах. Ыран канмалли кун. Ҫывӑрас, ҫывӑрас... Текех вара — нихҫан та, пӗр купа ылтӑн сӗнсен те каймастӑп. Ҫитет кун чухлӗ ухмахланнипе. Алхасас мар. Этемле пурӑнас... Чӑн та, Галя амӑшӗ каланӑ пек, пурнӑҫа ҫамрӑклах хуҫса хума пулать...

Ясмаков ерипен тӑчӗ те машина тавра утса ҫаврӑнчӗ. Скатсене тапа-тапа пӑхрӗ. Унтан пӗр-ик самант шухӑша кайнӑ пек пулчӗ те, ҫул хӗрринчи канава чупса анса йӗкӗр ывҫӑпах унти ҫӑра пылчӑка ӑсса илсе машинӑн хыҫалти номерне ним палӑрми шӑлса лартрӗ. Тепре анса ӑсса малтине те хупларӗ.

— Шанчӑклӑрах пулӗ... — шухӑшларӗ хӑй ӑшӗнче.

Кабинӑри Шишкин каллех ҫывӑрать-мӗн. Машина тӑрук хускалсан вӑранчӗ те ҫӗтсе ларнӑ сасӑпа кӑмӑлсӑр ыйтрӗ:

— Халь те ҫитмерӗмӗр-и-ха? Ну, ҫӳретӗн те эс паян... Санпа вилнӗ ҫынсене пытарма ҫеҫ каймалла...

Ясмаковӑн темшӗн ӑна тути урлӑ ҫапас килсе кайрӗ.

— Часрах ҫитес килет пулсан — ан та чуп!

Спидометр йӗппи тӳрех ҫитмӗл ҫине сикрӗ.

Шоссе вӑрмана пырса кӗчӗ. Пысӑк мар вӑл вӑрман, тӑршшӗ пӗр икӗ километр та пулмасть-тӗр. Грузовик ун витӗр питӗ хӑвӑрт ыткӑнса тухрӗ. Кунтан ҫул анаталла каять. Яп-яка вӑл, тип-тикӗс. Ҫатма! Нумай та мар ӗнтӗ хулана ҫитесси.

Ясмаков руль ҫаврашкине ик аллипе те хыпкӑч пек хытӑ тытса пычӗ. Ывӑннӑ куҫӗсене хӗссе, пӗрре хупса илмесӗр тенӗ пек малалла пӑхрӗ. Унӑн епле пулсан та ҫак тӗлтен пӗр чӑрмавсӑр, хӑвӑрт иртсе каймалла-ҫке-ха...

Пулмарӗ! Чылай инҫетренех фарӑсен ҫутинче ҫын мӗлкисем курӑнчӗҫ. Ик мӗлке. Ҫулӑн сылтӑм хӗрринче тӑраҫҫӗ. Пост! Автоинспекци!

Акӑ, пӗр мӗлки ҫутӑлакан «жезла» — кӗске ула туяна — ҫӳлелле ҫӗклерӗ, аялалла антарчӗ. Пӗрре, иккӗ, виҫҫӗ...

Ку вӑл — машинӑна ҫак тӗлте чарӑнма хушни. Эппин, Ясмаковӑн ҫав мӗлкесем патне ҫитмелле те грузовике тӑратмалла. Унтан-и? Унтан лешсем «путевой

лист» кӑтартма хушаççӗ, шофер правине ыйтаççӗ. Ясмаков урӑ маррине кураççӗ те экспертизӑна илсе каяççӗ...

— Лекрӗм эпӗ сирӗнпе! — хаяррӑн кӑшкӑрчӗ Ясмаков, самантлӑха Шишкин еннелле çаврӑнса.

— Епле... лекрӗн?! Нимӗн те пулман-çке, чиперех килетпӗр! — терӗ Шишкин.— Мӗн çухӑратӑн пустуй?

— Курмастӑн-им, малта камсем тӑраççӗ? Чарӑнма хушаççӗ!

— А эс ан чарӑн! Сур вӗсем çине, курмиш пулса иртсе кай!

— Епле курмиш пулатӑн-ха, вӗсем çул çинчех...

Анчах ГАИ посчӗ тӗлӗнче чарӑнас мар шухӑш Ясмаков пуçӗнче унччен çуралнӑ. Номерсене пылчӑкпа шӑлса палӑрми тунӑ чухнех çавӑн çинчен шутланӑ вӑл. Халь ӗнтӗ чӑнах çавӑн пек тума тивет. Урӑх май çук хӑтӑлма. Хӑваласан та тарса ӳкес пулать...

...Пушӑ кузова хӑрушла кисрентерсе, грузовик пост тӗлӗпе çил пек иртсе кайрӗ. Çул хӗрринче тӑнӑ ГАИ çыннисем харӑсах аяккалла сиксе илчӗç — грузовик чут çеç хӑйӗн çунаттипе çапса каймарӗ вӗсене.

— Хӑваласа çитес! Тытас! — кӑшкӑрчӗ вӗсенчен пӗри.

Иккӗшӗ те пост будки патнелле ыткӑнчӗç. Унта вӗсен «сӑпкаллӑ» мотоцикл тӑнӑ.

— Хускат! — кӑшкӑрчӗ пӗрине тепри.

Ясмаков пуçӗнче пӗр шухӑш çеç вӗлтлетрӗ халь: епле те пулсан çавсен куçӗнчен хӑвӑртрах çухалас, тарса ӳкес! Калама та çук хытӑ ыткӑнтарчӗ вӑл хӑйӗн машинине, шӑлне çыртса, пур шӑнӑрӗсене хытарса, йывӑррӑн сывласа тытса пычӗ ӑна. Çамки çине пӑрçа пек шултра тар тапса тухрӗ... Ик минут та иртмерӗ пуль — фарӑсен çутинче шлагбаум курӑнса кайрӗ. Çулӑн ик енче — ула юпасем. Урлӑ хумалли кашти çӳлелле çӗкленнӗ. Пит аван! Эппин, чугун çул урлӑ чиперех каçса кайма пулать. Унтан хула пуçланать — урам хыççӑн урам, урлӑ та пирлӗ, хуть те ӑçталла чӑм!

Çывхарать, питӗ хӑвӑрт çывхарать шлагбаум, машина ун патнелле мар, вӑл хӑй машина патнелле ыткӑннӑ пек туйӑнать. Юлсан юлчӗ пуль пӗр икçӗр метр. Е унтан та сахалтарах-и. Анчах мӗн-ха ку? Çӳлелле çӗкленсе тӑракан кашти хускалчӗ мар-и? Анма пуçларӗ мар-и вӑл? Пуйӑс килет-ши? Шлагбаум хупӑнса

ларсан — пĕтрĕ вара пурнăç! Çук-çук, чарас пулмасть машинăна, ĕлкĕрес пулать чугун çул урлă сиксе каçма!

...Ерипен анса пыракан шлагбаум айнех кĕрсе кайрĕ Ясмаков. Кашта малтан кабина тăррине çапăнчĕ, унтан кузов тăрăх хăвăрт шуса иртсе юпа çине ўкрĕ. Çав самантрах шлагбаум умне милицисен сăпкаллă мотоциклĕ çитсе тăчĕ. Малалла кайма пултараймарĕ вăл — çул хупăнчĕ. Сулахай енчен пăравус чашкăрса килни курăнчĕ. Ясмаков машини çĕрлехи хула урамĕ тăрăх ирĕккĕн, ним чăрмавсăр ыткăнса пычĕ.

— Антарса хăвар пире çакăнта! — кăшкăрчĕ Шишкин, вĕсем спорт магазинĕ тĕлнелле çитсен.

— Чарăнмастăп! Хăвалаççĕ! — кăшкăрчĕ ăна хирĕç Ясмаков.

Хăвăртлăха ним чухлĕ те чакармасăр, вăл машинине Гагарин урамнелле пăрса ыткăнтарчĕ, унтан сулахаялла, Ярославски урамалла пăрчĕ те... сасартăк радиатор умĕнче икĕ çын пуçĕ курăнса кайрĕ. Грузовик çулĕ çине çĕр айĕнчен тухса тăчĕç пуль вĕсем! Пĕр секунда, тен, çур секунда хушши çеç курчĕ Ясмаков вĕсене, мĕншĕн тесен радиатор çавăнтах çапса ўкерчĕ çав икĕ çынна.

Мĕн пулса тăнине тўрех ăнланчĕ Ясмаков («Таптарăм! Вĕлертĕм!»), анчах хăй — пĕрре çапса антарнă çынсене тепре таптасран сыхланнă пек — руле вăрр... сылтăмалла пăрса ячĕ те, машина газон çине сиксе кĕрсе кузов хĕррипе çăка хуппине шăйăрса илчĕ. Асĕ пуçĕ арканса кайнă Ясмаков руле халь сулахаялла пăрчĕ, машинăна асфальт çине кăларчĕ те, каялла çаврăнса пăхмасăрах анаталла вăркăнтарчĕ.

— Эс... эс такамсене таптарăн пулмалла! Чар машинуна, эп пымастăп санпа, анса юлатăп! Манăн санпа пĕрле тĕрмене кĕрсе ларма интерес çук! — кăшкăрчĕ Шишкин, шофера сылтăм хулĕнчен çатăрах тытса.

Ясмаков ăна чавсипе кăкăрĕнчен чышрĕ.

— Хуп çăварна, сатана!

## 16

Редакци сотрудникĕ Чатайкин Вăкăрвара темле грузовик пырса кайни, такамсем хăйне хĕнесе хăварни çинчен пĕлтерсенех, Сумбатов майор районри ОБХСС инспекторĕн хваттерне шăнкăравларĕ.

— Итле-ха, Борцов, санӑн халех хамӑр машинӑна илсе Юркассине, Кучанов патне кайма тивет...

— Мӗн тума? — тӗлӗнсе ыйтрӗ лешӗ.

— Ун участокӗнче таҫтан килсе кӗнӗ шанчӑксӑр ҫынсем ҫӳреҫҫӗ. Грузовикпа. «Сулахаялла» ямалли таварпа килнӗ пулмалла. Пӗр-ик сехет каялла вӗсем Вӑкӑрварӗнчи завмаг Кагаева патне пынӑ, анчах лешӗ килте ҫуккипе таҫта урӑх ҫӗрелле тухса кайнӑ. Ҫула май пирӗн редакцири Чаттана хӑлха чикки парса хӑварнӑ,— кун ҫинчен мана пӗтӗмпех вӑл пӗлтерчӗ. Кучанов патне пырса ӑна лартса тух та, иксӗр пӗрле тӳрех Вӑкӑрвара кайӑр, Кагаева килне пырӑр. Чатта унта ҫӗр выртать, эп ӑна пирӗн ҫынсем пырасса кӗтме хушрӑм. Мӗн-мӗн пулнине каласа парӗ вӑл сире. Ӗнер ҫумӑр ҫурӗ, тен, машинин йӗрӗсем палӑрса юлнӑ? Тӗрӗслесе пӗлме тӑрӑшӑр — ӑҫталла кайнӑ вӑл, хӑш тӗле ҫитнӗ? Тен, ӑна куракансем татах пулнӑ? Машинӗ пирӗн мар, Шупашкар номерӗпе ҫӳрет. Ӑнлантӑн-и?

— Ӑнлантӑм, майор юлташ.

— Ыйтмаллисем ҫук-и?

— Ҫук. Анчах хам енчен ҫакна калама пултаратӑп, майор юлташ. Кун ҫинчен эп сана ыран ир пӗлтересшӗнччӗ те, халех калатӑп ӗнтӗ. Эп паян Йӳҫҫырмара пултӑм, каҫаллапа тин таврӑнтӑм унтан. Ман ятпа пӗр анонимка килнӗччӗ, ҫавна тӗрӗслерӗм...

— Мӗн пирки ҫырнӑ анонимкине?

— Унта пӗр колхозник, Иванов Николай,— ялта ӑна темшӗн Яка Микула теҫҫӗ, анонимкинче те ҫавӑн пекех ҫырнӑ,— нумай та пулмасть пӳрчӗ, ҫенӗхӗ, кӗлечӗ ҫинчи кив чуса сӗвсе пӑрахнӑ та пӳрчӗпе ҫенӗхне тимӗрпе, кӗлетне шиферпа витсе лартнӑ. Анонимщик пӗлтернӗ тӑрӑх, ҫав дефицитлӑ материал — пӗтӗмпех вӑрланӑскер имӗш. Анонимщиксене ӗненсех каймастпӑр пулин те, кайса пӑхас, терӗм...

— Вара мӗн?

— Тупрӑм вӑл ҫынна. Чӑнах та чаплӑ витсе лартнӑ пӳрт-ҫуртне. Мухтаса илтӗм малтан, кун пек витни ӗмӗрлӗхе пырать, терӗм. Унтан ӳпкелешнӗ пек пултӑм: манӑн та ҫакӑн пек тӑвас килет те — тимӗрне ниҫтан та тупаймастӑп, укҫишӗн тытӑнса тӑмӑттӑм, сутаканне ҫеҫ мар, тупса параканне те тав тӑвӑттӑм, терӗм. Кӑмӑлне ҫавӑртӑм ҫыннӑнне. Ӑс пачӗ вара вӑл мана: эс Вӑкӑрварти лавӑшник патне ҫитсе пӑх-ха, ку йышши

тавар унӑн яланах пулакан, терӗ. Ҫав Кагаева туянтарнӑ иккен ӑна, тимӗрне те, шиферне те уйӑх каялла илсе килнӗ вӑл ун патӗнчен. Киле таврӑнсан Фроловран, райпо председателӗнчен ыйтрӑм — ялпосене сутлӑх тимӗр хӑҫан панӑ эсир? Пӗр ҫур ҫул хушши пирӗн пӗр листа та пулман, терӗ вӑл. Паллах, халлӗхе эпӗ леш Кагаева пирки нимӗн те шарламарӑм. Тӗрӗслеме тивет, майор юлташ, Йӳҫҫырмана ҫав тимӗрпе шифера вӑлах сутнӑ пулсан — ӑҫтан тупнӑ ӑна?

— Килӗшетӗп,— терӗ Сумбатов.— Кучановпа иксӗр шӑпах унта каятӑр халь. Пӗлме ҫук, тен кӗҫӗрхи гастролерсем — шӑпах унӑн «поставщикӗсем» пулнӑ? Хӑй килте ҫуккипе ҫеҫ урӑх ҫӗрелле кайнӑ?

— Пулма пултарать, майор юлташ.

— Пӗр сӑмахпа, витӗртерех пӑхас пулать.

— Анланатӑп...

— Эс тытӑнса ан тӑр, эппин, васка.

...ОБХСС инспекторӗпе каласса пӗтерсен Сумбатов районри иккӗмӗш участока шӑнкӑравларӗ. Темшӗн, унӑн телефонӗ тӑруках ответ памарӗ. Сумбатов почтари телефонисткӑна хытӑрах шӑнкӑравлама хушнӑ хыҫҫӑн тин трубкӑра сас пулчӗ:

— Милици лейтенанчӗ Кучанов итлет...

— Ӑшӑ ыйхӑран вӑратрӑм-и сана, лейтенант? — терӗ Сумбатов.

— Ҫывӑрнӑ ҫав, майор юлташ,— хӑйӗн начальникӗн сассине тӳрех палласа илчӗ провод тепӗр вӗҫӗнчи ҫын.— Хӑш чух милиционерсен те ҫывӑрма юрать пуль? — Кучанов ҫар служби хыҫҫӑн Шупашкарти милици шкулӗнчен кӑҫал ҫеҫ вӗренсе тухса ӗҫлеме килнӗ пулин те хӑюллӑ, ҫивӗч чӗлхеллӗ каччӑ пулнӑ, аслисемпе те хӑрасах калаҫман.

— Ҫывӑрма юрать, лейтенант, анчах эсӗ хитре тӗлӗксем курса выртнӑ вӑхӑтра санӑн участокунта шайка ҫӳрет-ха унта, акӑ мӗн! — терӗ Сумбатов.

— Мӗнле шайкӑ? Кам шайки? — чутах кӑшкӑрса яратчӗ Кучанов.

— Ӑна манӑн санран ыйтас пулать, лейтенант.

— Ан тӗлӗнтерӗр-ха, майор юлташ...

— Тӗлӗнтерме эпӗ фокусник мар, Кучанов. Кӗҫех сан патна Борцов пырать, вӑл сана пӗтӗмпех каласа парӗ. Тумланса хатӗрлен. Вӑл ҫитсенех Вӑкӑрвара каятӑр. Оперчӑматанна манса ан хӑвар, асту. Машина

йĕрĕсене ӳкермелле, слепоксем тумалла пулать пуль. Йĕр тăрăх вĕçне çитичченех кайăр. Эп кирлĕ пулсан — шăнкăравла. Астăвăр, тĕплĕрех ĕçлĕр, пĕр йĕр çинчен тепĕр йĕр çине те ӳкмелле пулас пек туйăнать.

— Пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулĕ, майор юлташ!

...Унтан Сумбатов хăйне Шупашкарпа çыхăнтарма хушрĕ те республикăри автоинспекцие хăйсен районĕнче «çапкаланса çӳрекен» грузовик номерне пĕлтерчĕ.

Ясмаков грузовикĕ Гагарин урамĕнчен вăркăнса тухса сулахаялла пăраннă вăхăтра Ярославски урам урлă каçакансем тăваттăн пулнă — икĕ хĕрпе икĕ каччă. Пĕр мăшăрĕ кăшт маларахра утнă, машина çулĕ çинелле ик-виçĕ утăм тунă ĕнтĕ, тепĕр мăшăрĕ тротуар çинчен тин çеç аннă. Сасартăк сиксе тухнă грузовик малти мăшăра çапса антарчĕ, кайра пыракансене те чут çеç лекмерĕ — машина кузовĕ вĕсен пичĕсем çуммипех кĕмсĕртетсе иртсе сив сывлăш вĕртерсе хăварчĕ.

Иккĕмĕш мăшăрти хĕр хăрушла çухăрса ячĕ:

— А-а!.. Вĕлерчĕ-ĕç!..

Каччи асфальт çинче выртакан юлташĕсем патне ыткăнса пырса чĕркуçленчĕ:

— Витя! Сима! Чĕрĕ-и эсир? Чĕрĕ-и?.. — кăшкăрчĕ вăл.

Выртакансенчен нихăшĕ те сас памарĕ.

— Ниушлĕ... ниушлĕ... Сима! Витя!..

Каччă сиксе тăчĕ те хĕр патне чупса таврăнса тăнран тухса кайнă пек кăшкăрчĕ:

— Света! Вилнĕ вĕсем! Вилнĕ! Мĕн тумалла?!

Юпа пек хытса тăнă хĕр ним те калаймарĕ, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтренчĕ. Ăна тăрук йĕксӳ аптратма пуçларĕ. Çынпа çакăн пек пулнине тухтăрсем «шок» теççĕ.

— Эс тăр кунта! — каллех кăшкăрчĕ каччă.— Эп часрах милицие чупатăп, инçе мар вăл, вĕсем васкавлă пулăшу та чĕнĕç, тен, вилмен-ха Симăпа Витя...

Тротуар хĕрринче пĕччен тăрса юлнă хĕр ниçта кайса кĕрейми хурланса макăрчĕ. Хĕр вырăнтан хускалма та хăрарĕ. Епле-ха хăрамастăн? Тин çеç, темиçе минут каялла кăна вĕсем пурте пĕрлеччĕ, калаçса-кулса, шӳтлесе утрĕç урампа, анчах халь вĕсенчен иккĕшĕ... чи çывăх туссем, юратнă çынсем... асфальт çинче ним тапранмасăр выртаççĕ! Хăрушă! Ой, хăрушă-çке ку!..

Сисмерĕ те хĕр — ун çумне пĕр старикпе карчăк пырса тăчĕç.

— Мĕн пулчĕ, ачам? Ма макăратăн, кам кӳрентерчĕ? — хуллен ыйтрĕ карчăк. Хĕр картах сиксе илчĕ те аран-аран каларĕ:

— В-вĕлерчĕç... п-пирĕн юлташсене... Ав, ç-çул çинче...

— Кам вĕлерчĕ?!

— М-машина... т-таптаса кайрĕ...

— Милицие пĕлтерес пулать, эппин, часрах! — хыпăнса ӳкрĕ старикĕ.— Макăрса тăнинчен мĕн усси? — Вăл карчăкĕнчен уйрăлса чупма пикенчĕ, анчах çав вăхăтрах анат енчен милици машини çитсе тăчĕ.

Машинăран пĕрин хыççăн тепри темиçен сиксе тухрĕç. Вĕсем хушшинче милицие пĕлтерме чупнă каччă та курăнчĕ.

Милици çыннисем тӳрех ĕçе тытăнчĕç. Иккĕшĕ — следователь тата судпа медицина эксперчĕ — асфальт çинче выртакан кĕлеткесем умне кукленсе тĕрĕслерĕç: чĕрĕ-и, чĕрĕ мар-и ку çынсем, ăçтан, еплерех аманнă. Пĕри машина çапса ӳкернĕ çынсене тĕрлĕ çĕрте тăрса пур енчен те фотоаппаратпа чăлт та чăлт ӳкерчĕ. Тепри таврара мĕнле паллăсем пуррине сăнарĕ. Газон çинче юлнă кустăрма йĕрĕсене курсанах фотографа чĕнсе илсе ӳкерттерчĕ, хăй çав йĕр сарлакăшне виçсе илчĕ, çăка хуппи шăйрăлнине асăрхаса, çав шăйрăк çĕртен миçе сантиметр çӳлерехре пулнине те виçсе çырчĕ.

— «ГАЗ-51» аташса çӳренĕ,— терĕ вăл.— Ун пеккисем пирĕн хулара пин те ытла пуль... Атя-ха, малалла пăхар. Таптанă хыççăн çакăнта çаврăнса каялла кайман-и?

Çав вăхăтра судпа медицина эксперчĕ ура çине тăчĕ те ассăн сывласа ячĕ.

— Хĕрĕ вилнĕ, арçынĕ чĕрĕ-ха, анчах пульс пит начар. Хăвăртрах больницăна çитерес пулать, операци тумалла...

«Хĕрĕ вилнĕ», тенине илтсен халь те тротуар хĕрринче юпа пек хытса тăнă хĕр а-ах!.. тесе кăшкăрчĕ те сулăнса кайрĕ, юрать-ха каччи ăна пилĕкĕнчен ярса тытса ӳкме памарĕ.

— Лăплан, Света, тархасшăн лăплан...

Анатран васкавлă пулăшу машини пырса чарăнчĕ.

Тухтăрсем судпа медицина эксперчĕпе хăвăрт-хă-

вăрт каласса илчĕç те, грузовик таптаса пăрахнисене иккĕшне те васкавлă пулăшу машини çине илсе хучĕç. Çав машинăпах эксперт та кайрĕ.

Каччăпа хĕре милици уйрăмне чĕнчĕç:

— Сирĕнтен тĕплĕрех ыйтса пĕлме тивет,— терĕ следователь.— Эсир вĕсемпе пĕрле пулнă вĕт-ха?

— Пĕрле çав... пĕрлеччĕ эпир,— терĕ каччă çĕтсе ларнă сасăпа.— Туй пулчĕ кĕçĕр, пирĕн пе́р студент авланчĕ, хамăрпа пĕрле вĕренекен студенткăнах илчĕ. Пире чĕнчĕç те — кайрăмăр. Пит йĕркеллĕ пулчĕ туйĕ...

— Лешсем... машина айне пулнисем те студентсем-и?

— Студентсем. Пирĕн курсранах. Виктор Сундыревпа Сима Ясмакова. Килес çул иккĕшĕ те инженерсем пулмаллаччĕ...

Отделенире следователь ыйтнисене хирĕç каччи çеç ответ пачĕ. Хĕрĕ пĕрмай макăрнипе йăлтах халран кайса çитрĕ, сăмах та чĕнеймерĕ. Протокол çине ал пуснă чух та куççулĕсем шăпăртатса анчĕç.

— Ма кайрăмăр-ши ку туя, ма кайрăмăр-ши...

Следователь ăна шывпа хутăштарса лăпланмалли эмел ĕçтерчĕ.

— Тăванĕсем пур-и вĕсен хулара? — ыйтрĕ вăл юлашкинчен.

— Сундыревăн çук, анчах Ясмаковăн — пур, вăл пурăнасса та общежитире мар, пиччĕшĕ патĕнче пурăнатчĕ,— терĕ студент.— Шофер унăн пиччĕшĕ. Хваттерĕ аякра пирки эпир шăпах ăна пурĕ пĕрле ăсатса ярасшăнччĕ...

Эрнекун пир-авăр фабрикинчи çамрăк ткачиха Галя Ясмакова иккĕмĕш сменăра ĕçлерĕ те, киле çĕрле, вуник сехет иртсен тин таврăнчĕ. Яланхи пекех, килтисене вăратас мар тесе, хваттерне вăл хăйĕнпех илсе çӳрекен уççипе уçса кĕчĕ, тумтирне алăк патĕнче хывса çакрĕ те хуллен кăна кухньăналла иртрĕ. Анчах хунямăшĕ — утмăлтан иртнĕ карчăк — вăл килнине сиснĕ иккен, йăпăртах тăрса тухрĕ.

— Валерик çывăрать-и? — шăппăн ыйтрĕ Галя.

— Каçах çывăрса кайрĕ те пĕрре те вăранмарĕ-ха,— терĕ карчăк.

— Питех ӳсӗрмерӗ-и кӗҫӗр? Ҫывӑриччен эмелне ӗҫтерме манмарӑн пуль?

— Ӗҫтертӗм. Чирӗ иртет пулас-ха, пӗр-икӗ хут ҫеҫ ӳсӗркелерӗ.

— Апла, тен, тунтикун садике те яма пулӗ.

—Васкас мар, хам кунта чухне килтех пултӑр...

— Венька хӑш вӑхӑтра таврӑнчӗ?

— Венька... ҫук-ха вӑл. Кӗтрӗм-кӗтрӗм...

— Халь те килмен-и?! — алла тытнӑ кастрюле плита ҫине чӑнкӑрт! лартрӗ Галя.— Ӑҫта вара вӑл?

— Эп пӗлеп-им... Серахвими те ҫук-ха, вӑл та таҫта кайса кӗчӗ. Валерикпе иксӗмӗрех пурӑнатпӑр.

— Сими пирки пӑшӑрханмалла мар-ха, вӑл туя каятӑп, терӗ. Пӗрле вӗренекен студент авланать, терӗ. Туйне тума хӑйсем хушшинче укҫа та пухрӗҫ вӗсем. Анчах Венька... Вӑл ӑҫта ҫухалма пултарнӑ?! — сасартӑк вӑй пӗтсе килнӗ пек туйӑннипе пукан ҫине ларчӗ Галя.

— Таҫта инҫе ҫула янӑ пулинех,— терӗ хунямӑшӗ.

— Канмалли куна хирӗҫ ӑҫта яччӑр? — терӗ Галя.— Тата, ун пек пулсан, каласа хӑвармалла-ҫке вӑл? Кӳршӗсен телефон пур, тепӗр чух шӑнкӑравлать, пӗлтерет ӑҫта каяссине...

— Тен, васкаса тухса кайма тӳр килнӗ. Ҫитет пуль-ха, таҫтах ҫухалман-тӑр. Шоферсен ҫурнӑҫӗнче тем те пулать, ҫул ҫинче кӗтмен ҫӗртен мӗн те пулин ҫӗмӗрлет те — ларать вӑл уй варринче, тепри ҫитсе пулӑшиччен... — лӑплантармалла каларӗ те карчӑк, плита патне пырса апат ӑшӑтма лартрӗ.

— Тем те пулать ҫав... — терӗ Галя пӗр хушӑ чӗнмесӗр ларнӑ хыҫҫӑн.— Паян ирпе радиопа каларӗҫ: иртнӗ виҫӗ уйӑх хушшинче республикӑри ҫулсем ҫинче хӗрӗх икӗ «автопроисшестви» пулнӑ, вунпӗр ҫын вилнӗ, ҫирӗм ҫын ытла аманнӑ. Пуринчен ытларах шоферсем урӑ пулманнинчен килнӗ ҫав хурлӑх.

Хунямӑшӗ кӳреннӗ пекрех пӑхрӗ:

— Венька машин ҫине хӗрӗнкӗ пуҫпа ларнине пӗрре те курманччӗ-ха эпӗ...

— Ай, ан кала, анне,— пуҫне пӑркаларӗ Галя.— Пулкалать. Эс юлашки вӑхӑтра пирӗн пата час-час килместӗн те — курмастӑн. Ӗҫкелет ҫав Венька. Хӑш-хӑш каҫ хытах ӳсӗр таврӑнать. Укҫине ӗҫсе ярать тесе каламастӑп, мӗн илнине пӗтӗмпех мана парать, хӑй ҫумне

пируслăх, тепĕр чух буфетра-мĕнре çырткаламалăх çеç хăварать...

— Мĕнпе ĕçет эппин?

— Мур пĕлет-и! Такам ĕçтерет ăна. Хăш чух пач кĕтмен çĕртен укçа тухать ун кĕсйинчен. Мĕнле укçа, ăçтан илтĕн, тесе ыйтсан — пĕрисене ăна-кăна леçме пулăшрăм та — ирĕксĕрех пачĕç, тет. Çак пĕр-ик уйăх хушшинче темиçе хут та пулчĕ ун пекки. Хăратăп-ха, анне, киревсĕр çынсемпе çыхланса ан кайтăр ăнсăртран! Ĕçкĕ вăл таçта та илсе çитерме пултарать...

— Пустуй сăмах ан калаç-ха эсĕ, кин, Венька нихçан та юраман ĕç тăвас çук! Вăл салтакра чухне те ун командирĕсем эп çавăн пек ывăл çуратса çитĕнтернĕшĕн мана тав туса икĕ хутчен саламсем ячĕç. Халь тата ĕçре те ыр ятлă терĕр-иç, май праçникĕ умĕн сăнне хисеп хăми çине çакнă, преми те панă, терĕр...

— Вăл çапла, вăл пĕтĕмпех тĕрĕс,— йывăррăн сывласа ячĕ Галя,— анчах тепĕр чухне лайăх çынсем те пăсăлаççĕ-çке! Путсĕр этемсем сахал-и çĕр çинче, хăйсем усă курасшăн теприсене тӳрĕ çул çинчен пăрса яраççĕ, ĕçкĕпе, çăмăллăн килекен укçапа илĕртсе юлашкинчен пуçĕпех пĕтерсе хураççĕ!

— Ман Венька ун пекех пăтранса каймĕ-ха, ырăпа усала уйăрса илме пĕлет вăл, ухмахах мар, йăлтах ашшĕне хывнă... — кинĕ çине кăмăлсăртараххăн пăхрĕ ват хĕрарăм.— Ашшĕ шутсăр таса кăмăллă çынччĕ пирĕн, ялта колхоз председателĕ те, партейнăй секретарь те пулнă — нихçан никам тиркемен ăна. Вăрçăран та виçĕ орденпа таврăнчĕ, миталĕсем — шăкăри, шӳлкеме пек. Çавăн пек çын ачи те пăсăлса кайсан.... аça çаптăр ăна!

Ачисене хытă шаннă çав ку хĕрарăм. Вăл хăй пĕтĕм пурнăçне питĕ тĕрĕс пурăнса, ялан ĕçре пиççсе ирттернĕ те ачисене те çавăн пек пурăнма вĕрентнĕ. Ун пурнăçне аса илес пулсан... мĕн курман пуль вăл! Упăшки вăрçăра чухне бригадир пулнă, çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçленĕ, Атăл леш енне вăрман касма кайсан йывăç айне пулса урине хуçнă, хăйне çуна çине хурса таврăннă кунах колхоз почтальонĕ ун упăшки вăрçăра паттăрсен вилĕмĕпе вилни çинчен пĕлтерекен хут пырса панă, тепрер эрнерен пĕртен-пĕр ачине çĕре чикме тивнĕ — тăрук чирлесе виç кунтанах вилнĕ вăл... Хурлăх хыççăн хурлăх, хуйхă хыççăн хуйхă! Пурне те тӳссе ирттермелле

çыннăн! Мĕн тери çирĕплĕх кирлĕ ун пек чух!.. Юратьха, упăшки çинчен çырса яни тĕрĕс пулман — тепĕр уйăхран вăл хăй аллипе çырнă çыру çитнĕ: аманнипе çапăçу хирĕнче ним пĕлми выртса юлсан, ăна урăх часть санитарĕсем тупса илсе кайнă, анчах хăйсен чаçĕнче вăл вилнисем шутне лекнĕ... Чун кĕнĕ вара хĕрарăма, хуçăлнă ури кăшт тӳрленсенех, туяпа çӳресех, ĕçлеме тытăннă. Бригадир та мар, председатель тунă ăна.

...Халь пурăнакан ачисенчен асли — Венька — вăрçă хыççăн ик çултан çуралчĕ, хĕрачи, Сима, Венька пиллĕк тултарсан. Лайăх çитĕнчĕç вĕсем, анчах ашшĕне вăрçăри сурансем час-час асаплантарма пуçларĕç те тӳсеймерĕ вăл, каллех çар госпитальне кайса хунă пулин те сывалаймарĕ, вилчĕ.

Пĕтĕм ял халăхĕ хуйхăрчĕ ун упăшкишĕн...

Вунвиçĕ çул иртрĕ ĕнтĕ унтанпа. Каллех çăмăл пулмарĕ хĕрарăмăн пурнăçĕ. Çапах та ачисене çын тума тăрăшрĕ вăл. Чăн та, асли ялта сакăр çул вĕреннĕ хыççăн малалла каймарĕ, колхозра ĕçлерĕ, унтан çара илчĕç ăна. Çартан шофер пулса таврăнчĕ. Хĕрачи вара çине тăрсах вĕренчĕ, университета кĕчĕ, тепĕр çултан пĕтерет ĕнтĕ... Ялта пĕр çулталăк ĕçленĕ хыççăн ывăлĕ хулана куçса килчĕ — тен, каçхине вĕренме пулĕ, терĕ, анчах темшĕн вĕренессиех пулмарĕ, авланса яни те чăрмантарчĕ пулмалла. Çапах та япăх пурăнмасть-ха, пĕлтĕр кинне, фабрикăра ялан лайăх ĕçленине шута илсе, виç пӳлĕмлĕ хваттер пачĕç. Савăнса çеç пурăнмалла çав! Укçине те лайăх ĕçлесе илеççĕ, хваттерĕнче те мĕн кирли пурте пур — холодильникпе телевизор таранах...

Хăй вăл ялтах пурăнать, ывăлĕпе кинĕ чĕнеççĕ пулсан та куçасшăн мар, упăшкипе иккĕшĕ тертленсе лартнă кил-çурта пăрахса тухас килмест унăн. Хĕрĕ каникулсем вăхăтĕнче килтех пурăнать. Отпуск вăхăтĕнче ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕ яланах ун патĕнче. Пит хитре сад çитĕнтернĕ-çке вăл, çулла улма-çырла тем чухлех. Ачи-пăчи пымасан, кам çисе ятăр ăна? Кинĕ çав тери тăрăшать вара — улмине типĕтет, йӳçĕтет, тĕрлĕ-мĕрлĕ компотсем, варенисем тăвать. Теприсен кинĕсем усал пулаççĕ, анчах ун кинĕ — ытармалла мар çын. Ĕçчен, сăпай, кăмăлĕ пурçăн пек çемçе.

Нивушлĕ вара çавăн пек ыр курса кăна пурăнмал-

ла чух та этем тени пăсăлма пултарать?! Мĕншĕн, мĕн çитменнипе?

Çук, ĕненмест ват хĕрарăм хăйĕн ывăлĕ унталла-кунталла пăрăнасса! Лайăх унăн ывăлĕ. Ăслă. Нихçан та нимĕнле усал ĕç те тăвас çук.

Хăватлă-çке амăшĕн чĕринчи юрату!

...Хунямăшĕ ăшăтса панă апата Галя темиçе кашăк çеç сыпрĕ. Анмарĕ унăн. Ăшчикĕ вăркарĕ. Чĕри тем ырă мар пуласса сиснĕ пек тапрĕ. Мĕншĕн ун пекех-ши? Ытти чух та Венька час таврăнманнисем пулнă, анчах кунашкалах пăлханман-çке Галя! Кĕткелесе выртнă та çывăрса кайнă. Ма-ха паян ун пекех пăшăрханать вăл?!

Çамрăк хĕрарăм тепĕр пӳлĕмре çывăракан виç çулхи ывăлĕ патне пырса вăл мĕнлерех сывланине итлесе тăчĕ, унтан ерипен саланса утиял айне кĕрсе выртрĕ. Анчах çывăраятăн-и кун пек чух? Ун шухăшĕ упăшки çинчех. Çур çĕр иртни иккĕмĕш сехет — Венька çук. Ăçта-ши-ха вăл? Мĕн тăвать-ши? Тем пулман-ши?.. Амăшĕ кунта чух хытă калаçас пулать-ха унпа. Пăрахтăр çакăн пек çĕр хута таçта çапкаланса çӳреме. Амăшне итлекенччĕ-ха...

Галя, кун каçа ĕçлесе ывăннăскер, майĕпе çапах та тĕлĕрсе кайрĕ. Темле тĕлĕк те курăнма пуçларĕ ăна. Унтан сасартăк варт! вăранса куçне уçрĕ — хунямăшĕ такампа калаçнине илтрĕ вăл.

Йăпăр-япăр сиксе тăрса, Галя кухньăна чупса тухрĕ. Чăтаймарĕ, хыттăн калаçма тытăнчĕ:

— Килтĕн пулать çапах та? Ăçта çапкаланса çӳрерĕн-ха çак таранччен! Кала акă аннӳ умĕнче!

— Ниçта та çапкаланман,— терĕ пукан çинче пирус туртса ларакан Венька, арăмĕ çине пăхмасăрах.— Ĕçпе çӳренĕ.

— Мĕн ĕçĕ пултăр канмалли куна хирĕç, ма суян? Ыран ятарласах кайса ыйтатăп-ха автобаза начальникĕнчен, ăçти шăтăка, мĕн ĕçпе янă вăл сана!

— Кай ара, кам чарать сана...

— Чим-ха, чим! — Галя ун патнерех пычĕ.— Эс каллех ĕçсе килнĕ вĕт! Шăрш перет! Ан пытар-ха куçусене, пăх ман çине. Паллах ĕçнĕ, куçусем хĕп-хĕрлĕ... Тăнсăр çамка, пĕтетĕн вĕт эс капла! Çамрăклах пьянчука тухса каятăн! — Гальăн куççулĕсем шăпăртатса анчĕç. Вăл хунямăшĕ еннелле çаврăнса тăчĕ.— Кур

ёнтё, анне, мёнлерех çӳрет сан мухтанă ывăлу каç-каç!

Амăшĕ ним те чĕнмерĕ, ассăн сывласа ячĕ çеç.

— Мĕнле пурăнмалла кун пек? Этем мар пуль эс... Малашнехи çинчен шухăшласчĕ пăртак!

— Çитĕ! — пĕççине чант! çапса сиксе тăчĕ Венька.— Ан вĕрент, хамăнне хам пĕлетĕп! Ан тарăхтар!

— Çавă çав,— лăпланмарĕ Галя,— юлашки вăхăтра эсĕ хăвăн ăсупа çеç пурăнатăн, эп каланисене хăлхана та чикместĕн. Тем шухăш сан пуçунта! Таçта çӳретĕн, тем тăватăн — ним те пĕлместĕп. Тен, урăххине тупрăн ăçта та пулин, çамрăкраххине, кăтăклама пĕлекенне, ясаррине...

— Чарăн, теççĕ! — урайне тапса илчĕ Венька.— Ниçта та кайман эпĕ, никам та çук манăн! Рейсран таврăнсан пĕр юлташпа çĕршер грамм ятăмăр та, пĕтĕм ĕçĕ те çав кăна! Ывăннă эпĕ йытă пек, пуç çурăлса тухасла ыратать, чирлерĕм пулмалла, çитменнине эс янратăн тата!

— Нимех те пулман-çке ытлашши, ан ятлаçăрха,— тин сăмах хушрĕ амăшĕ.— Çынни сăнран ӳкнĕ, тен, чăнах чирленĕ-и...

Галя упăшки çине пăхрĕ те унăн çилленни çавăнтах иртсе кайрĕ. Нихçан та курман вăл Венька кун пек пулнине. Сăнĕ-пичĕ темле тĕксĕм кăвак. Çул çинчи тусан пек. Çĕр пек. Куçĕсем путса ларнă пулин те питĕ хытă хăранă çыннăнни пек çуталса тăраççĕ. Сывласса та час-час сывлать. Мĕн пулнă ку çынна? Мĕншĕн кун пек вăл? Чăнах та чирленĕ эппин, ахаль мар.

— Тен, сана пĕр-пĕр эмел парас...— терĕ Галя.

— Эмел мар-ха, санăн тепĕр чух урăххи пулаканччĕ, — мăкăртатса илчĕ Венька.

— Юрамасть пуль, эс ахаль те ĕçнĕ...

— Юрать! Ирччен пĕтĕмпех иртсе каять вара.

— Пур пулсан — пар, кин,— терĕ амăшĕ,— эп хам та, хăш чух, халсăрланнине сиссен, кăшт ĕçсе чĕркенсе выртатăп та — пулăшать.

Галя ваннăя кĕрсе тĕпне пĕр çĕр аллă грамм пек юлнă кĕленчене илсе тухса пачĕ те ачи çывăракан пӳлĕмелле утрĕ. Упăшки эрехе тӳрех стакана тултарса ĕçрĕ те темшĕн чыхăнсах кайрĕ. Чут çеç хăсмарĕ, йĕрĕнсе ал сулчĕ.

— Юлашки! — терĕ вăл, пырне аран тасаткаласа.— Тупа туса калатăп сире — юлашки хут ĕçрĕм! Урăх

нихҫан та ăша вараламастăп! Пăрахатăп! Вовҫҫă! Ҫакăнтан юлса пултăр...

— Тем пекчĕ, ывăлăм, тем пекчĕ... — терĕ амăшĕ, ун ҫине хурлăхлă куҫĕсемпе пăхса.— Ыр тумасть-ҫке вăл эсремет япали! Ăна пула мĕн чухлĕ халăх пĕтет пуль ҫĕр ҫинче! Ҫамрăксем те ҫын пулса ҫитмесĕрех хăйсен пурнăҫне аркатаҫҫĕ. Астăватăн-и, пирĕн ашшĕ пачах ĕҫместчĕ вĕт. Ун пек урă пурăнакан ҫын та ҫукчĕ ялта...

— Астăватăп.

— Аҫу пек пул-ха эсĕ те...

— Пулатăп, анне!

(Тытатчĕ-и хăйĕн сăмахне Ясмаков шофер, тытмастчĕ-и, ăна пĕлме ҫук, анчах ҫав стакан чăнах та юлашки пулчĕ унăн. Темиҫе ҫуллăха манма тиврĕ унăн эрех таврашĕ ҫинчен...)

Амăшĕ ăна ҫиме сĕнчĕ, анчах вăл ним те ҫăвара чикмерĕ, каллех пирус хыпса мăкăрлантарма тытăнчĕ.

Аҫтан ҫиетĕн-ха! Мĕн кĕтĕр ун пырне! Килтисене ним те каламарĕ вăл, анчах хăйĕн чĕри кăвар хунă пек ҫунчĕ-ҫке унăн, siксе тухас пекех тапрĕ. Ăна халь нимĕнпе те, ним тусан та лăплантарас ҫук! Хăйĕн машинипе икĕ ҫынна таптарĕ вăл кĕҫĕр,— ку тĕп-тĕрĕс. Курчĕ Ясмаков — радиатор умĕнче икĕ ҫын пуҫĕ вĕлтлетрĕ, унтан ҫав самантрах иккĕшĕ те куҫран ҫухалчĕҫ. Машина айне пулчĕҫ! Ясмаков машинне чармарĕ, ҫапса ӳкернĕ ҫынсене пулăшасси, вĕсене — саккун хушнă пек — больницăна илсе каясси пирки те шухăшламарĕ. Вăл, хăтăлас тесе, часрах тарчĕ...

Тарчĕ!.. Хуть те мĕн пулнă пултăр унта — ҫапса ӳкернисем вилнĕ-и, чĕрĕ-и, уншăн пурĕпĕр, унăн хăйĕн хăтăлмалла! Тен, никам та курмарĕ ăна? Ҫĕрлехи урам пушахчĕ. Кам та пулин курнă пулсан та ун машинин номерне пĕлеймен, мĕншĕн тесен вăл номерсене — малтине те, кайрине те — ҫăра пылчăкпа шăлса палăрми тунă. Ҫапах та... кам пĕлет, тем пулса тухать-ха! Тен, йĕр-йĕрлесе, шыраса та тупĕҫ? Ҫав вăхăтра камăн гаражне машина рейсран таврăннă? Кам илсе пынă вăл машинăна? Аҫта кайса ҫӳренĕ? Йывăрах та мар тупма...

Мĕн пулĕ-ши ĕнтĕ, мĕн пулĕ-ши!

— Выртса ҫывăр, эппин, Венька...— терĕ амăшĕ.—

Мĕн пит шухăша кайса ларатăн? Чиперех кайса килтĕн пуль?

— Э? Мĕн терĕн эс? — ыйхăран вăраннă пек ыйтрĕ Ясмаков.

— Чиперех кайса килтĕн пуль, терĕм...

— Чиперех, чиперех... Йĕркеллĕ...

Чăнкăрр! турĕ алăк патĕнчи шăнкăрав. Чăнкăрр..

Ясмаков чĕрине ку сасă çĕçĕпе каснă пек пырса тиврĕ. Самантрах хут пек шуралса кайрĕ хăй. Сывлăшĕ пÿлĕнчĕ.

«Ман пата... мана тытма... — шухăшларĕ вăл.— Пĕтрĕм...»

— Тур çырлах, ку вăхăтра кам этемми çÿрет пуль!— терĕ амăшĕ.— Уçас-и, Венька?

— Ыйт, кам... — терĕ Ясмаков шала кайнă сасăпа, хăй хускалма та пултараймасăр.

Алăк патне амăшĕ мар, шăнкăрав сассине илтсе тăрса тухнă Галя чупса пычĕ.

— Кам унта? — хуллен ыйтрĕ вăл.— Мĕн кирлĕ?

— Уç-ха, Галя... — илтĕнчĕ хĕрарăм сасси.— Эпĕ ку, Светлана...

Галя алăка хăвăрт кăна уçрĕ те Венька йăмăкĕпе пĕрле вĕренекен университет студенчĕсене — Светлана Тораевăпа Андрей Сымкина курчĕ. Палланă çынсем. Сима патне вĕсем пĕрре кăна мар килнĕ.

— Сима ăçта? — тÿрех ыйтрĕ Галя, вĕсемпе пĕрле хăйĕн хĕр-пултăрĕ çуккине курса.

— Эпир калама килтĕмĕр... — терĕ Светлана вăйсăр сасăпа.

— Ăçта Сима? Мĕн пулнă ăна? — халь ĕнтĕ питĕ хăраса, кăшкăрсах ыйтрĕ Галя.— Мĕн пулнă, калăр часрах!

Алăк патне Ясмаковпа амăшĕ те васкасах пырса тăчĕç.

— Ма каламастăр?! Мĕн пулнă Симăна? — татах кăшкăрчĕ Галя.

— Ăна... ăна больницăна илсе кайрĕç... васкавлă пулăшу машинипе... — аран каларĕ Светлана хыçĕнче тăракан студент.

— Мĕншĕн? Мĕн пулчĕ?

— Ăна... ăна урамра грузовик çапса ÿкерчĕ... Унпа пĕрле пирĕн тепĕр студента. Эпир Симăна ăсатма килеттĕмĕр те...

— Вĕлернĕ-и вара ăна? Вилнĕ-и вăл? Калăрсам часрах!...



Светлана хăйĕн юлташĕ çине пăхса илчĕ. «Тĕрĕссинех калас-и?» тесе ыйтнă пек пулчĕ вăл. Студент куçне хупса илчĕ: ан кала...

— Пĕлместпĕр. .. Вилмен пуль, больницăна илсе кайрĕç иккĕшне те.

— Пĕтрĕ пуç... турăçăм! — пăшăлтатса илчĕ те Галя хыçĕнче тăракан амăшĕ, майĕпе кăвакарса пырса аллипе чĕрине ярса тытрĕ.

Венька хытнă пек пулчĕ. Чĕлхи çăвар маччи çумне çыпăçса ларчĕ пулас. Тем калама тăчĕ— калаймарĕ, сăмахĕ пырне ларчĕ.

«Эпĕ.... эпĕ... эп таптанă ăна! — ян, ян! турĕ пуçĕнче.— Ниушлĕ вĕлернĕ... ниушлĕ эпĕ, Симăна...»

— Мĕн тăратăн юпа пек! — кăшкăрчĕ Галя ун çине пăхса.— Халех кайса пĕлес пулать, мĕнле унта... Чупас больницăна, тухтăрсенчен ыйтас — чĕрĕ-и, вилĕ-и... Май пулсан хăйне курас!

— Кайăр, ачамсем, кайăр... — пăшăлтатрĕ амăшĕ.— Турăçăм, мĕншĕн кун пекех асаплантаратăн-ши эс мана...

Венька вĕсем çине тăнран тухса кайнă пек, хăрушла чарăлса кайнă, пĕртте мăчлатман куçĕсемпе пăхрĕ.

«Эпĕ... эп айăплă... хамăнах кайса калас милицие... хуть те мĕн туччăр, халех персе пăрахчăр...»

Вăл питĕ васкаса тумланма тытăнчĕ.

Çав вăхăтра каллех шăнкăрав янраса илчĕ.

— Турăçăм, тата кам-ши? — терĕ те Галя, алăка уçса ячĕ.

Алăк хыçĕнче икĕ милиционер тăнă.

— Ясмаков Вениамин Гаврилович çакăнта пурăнать-и? — ыйтрĕ пĕри.

— Кунта... — терĕ Галя, кăштах каялла чакса.

— Ăçта вăл?

— Эп Ясмаков,— терĕ Венька аран тухакан сасăпа. Милиционерсем шала кĕчĕç.

— Сире арестлетпĕр, гражданин Ясмаков.

— Мĕншĕн?! Калăр, мĕншĕн? — вĕсем патнелле ыткăнчĕ Галя.— Ман упăшка ним те туман! Вăл тин çеç ĕçрен таврăнчĕ!

— Вăл кĕçĕр икĕ çынна машинпа таптанă,— терĕ милиционер.

## 17

Районри ОБХСС инспекторĕ Борцов капитанпа иккĕмĕш участокри уполномоченнăй Кучанов лейтенант питĕ васканă пулсан та, вĕсем Вăкăрвара çитнĕ чух тул çутăлчĕ. Сумбатов майор хушнă пек, вĕсем тӳрех кунти ялпо лавккин заведующийĕ Кагаева килне пычĕç — участокри уполномоченнăй ун тĕлне лайăх пĕлнĕ: пĕррехинче, ку яла темле ĕçпе пырсан, Кагаева ăна вăйпа тенĕ пекех киле илсе кайса «кукар яшки» çитернĕ. Апат умĕн, çине тăрсах, пĕр стакан килти «çырла шывне» те ĕçтернĕ. Районран пыракансене, уйрăмах хăйне кирлĕ пулма пултараканнисене, яланах ыр туса яма тăрăшнă-çке çав Ангелина Егоровна!

Хăнăхман çĕрте çăмăлтарах ыйхăпа çывăрнă Чатта, çĕрле те пĕр-икĕ хут вăранса милици çыннисем килесси çинчен аса илнĕскер, урам алăк шашулкки чăнкăл-чăнкăл тусанах сиссе куçне уçрĕ.

«Сумбатов çыннисем ĕнтĕ кусем... — шухăш вĕçрĕ ун пуçĕнче.— Хамăнах тухса уçас-ши е Ларисăна вăратас?.. Хуçи вăл-çке халь кунта. Мана тухма аван та мар. Кулĕç тата...»

Каччă васкасах пушмакне тăхăнчĕ те ура çине тăрса диван хыçĕ урлă хĕрсем çывăракан çӳллĕ кравать еннелле пăхрĕ. Пăхрĕ те — çав самантрах лак! ларчĕ. Питĕ аван мар пулса кайрĕ ăна: Ларисăпа Кира витĕннĕ утиял вĕсен пилĕкĕ таранах шуса аннă, кравать хĕрринче месерле выртакан хĕрĕн (тахăшĕ пулчĕ вăл, ăна Чатта уйăрса та илеймерĕ) ик кăкри те уçăлнă, стена çумĕнче выртаканĕ хăрах урине утиял çине тăс-

са хунӑ. Чатта кун пеккине нихҫан та курман пирки хӑрасах кайрӗ: тем шутлӗҫ хӗрсем! Диван ҫине чӗрӗп пекех хутланса ларчӗ вӑл.

Тултан каллех хапха шашулкки ик-виҫ хут чӑнкӑлтатни илтӗнчӗ.

Тек кӗтсе тӑмалли ҫук, тухса уҫас пулать...

— Логинова! Лариса! Вӑран-ха, такамсем килчӗҫ унта! Шаккаҫҫӗ! — терӗ вара Чатта хыттӑн, хӑй диван ҫинчен тӑмасӑрах.

Лешин те ыйхи ҫӑмӑл иккен, ҫав самантрах вӑранчӗ.

— Кам килчӗ-ши тул ҫутӑлнӑ-ҫутӑлман? — ыйтрӗ хӗр.

— Ман шутпа — милицисем. Сумбатов телефонпа каларӗ-ҫке, пирӗн ҫынсем пыраҫҫӗ, терӗ...

— Чӑнах-ҫке! Эп мансах кайнӑ. Тухса уҫ, эппин, анчах ҫынсене тӳрех пӳрте ан кӗрт, эпир тумланкаласа вырӑнсене пуҫтарар...

— Юрать... — Чатта халь хӗрсем еннелле пӑхма мар, пуҫне пӗксех утса иртрӗ кравать тӗлӗпе.

— Лайӑх ҫывӑртӑн-и? — ыйтрӗ Лариса, вӑл алӑк патне ҫитсен.— Куҫу мӗнле? Ыратмасть-и?

— Аптрамастпӑр, трахом ермен,— ал сулса хӑварчӗ Чатта.

«Кӑмӑллӑ йӗкӗт... Ӑна юратма та пулать пуль...» — шухӑшларӗ те Лариса, вырӑн ҫинчен анса халат тӑхӑнса ячӗ, унтан Кирӑна лӑскама тытӑнчӗ:

— Тӑр, ыйхӑ чӑпти, сан патна хӗҫпӑшаллӑ каччӑсем ҫитрӗҫ! Кравать ҫинченех тытса кайма пултараҫҫӗ...

— Кунти хӗҫпӑшаллисемпе тем тумалла пуль! — терӗ те Кира, питӗ тутлӑн карӑнса илчӗ.— Хамӑрӑннисем, ӗнерхи фотоӳкерчӗк ҫинчисем килнӗ пулсан... харӑсах икӗ туй тунӑ пулӑттӑмӑр-и, тен!

— Эс мӗн, чӑнах качча каясси ҫинчен шухӑшлама пуҫларӑн-и? — кулса пӑхрӗ тусӗ ҫине Лариса.

— Хӑҫан та пулин пулатех ӗнтӗ вӑл! Эпир леш райпори вупӑр карчӑкӗ Сятрова пеккисем мар-ха. Типпе юлас ҫук,— Кира вырӑн ҫинчен сиксе анчӗ те, аялти ҫӳхе кӗпипех шкап ҫумӗнчи мӑн тӗкӗр умне пырса темиҫе хут ун-кун авкаланса илчӗ.

— Тумлан часрах, намӑссӑр, халех милицисем килсе кӗреҫҫӗ вӗт! — вакатрӗ ӑна Лариса.

— Кӗрӗҫин! — кулса ячӗ Кира.— Ман ҫумра сак-

куна хирӗҫҫи нимӗн те ҫук, йӑлтах саккунлӑ... Тытса кайма пултараймаҫҫӗ. Юратма — пултараҫҫӗ, унран хӑрамастӑп. Чармастӑп та...— Кире каллех тӗкӗр умӗнче ҫаврӑнкаласа илчӗ те темле ҫӑмӑл кӗвӗ ӗнӗркелесе тумланчӗ.

— Мӗн пулнӑ сана паян, Кира? Ытла та хаваслӑҫке эс! — терӗ Лариса, ун ҫине кӑмӑллӑн пӑхса.

— Ним те пулман,— пуҫне пӑркаларӗ Кира.— Тӗлӗкре Федьӑна куртӑм. Таҫта, Атӑл леш енче, йӑлӑмра ҫӳрерӗмӗр. Чуптурӗ вӑл мана. Эп те чуптурӑм. Хы-ытӑ, ак ҫапла ыталаса чуптурӑм... Вӑрантӑм та — тӳсме ҫук тарӑхса кайрӑм,— сана ыталаса, сан ҫурӑмна чуптӑватӑп иккен.

— Тутлӑ пуль? — ахӑлтатса илчӗ Лариса.

— Сана чышас килсех кайрӗ... Тьфу!

— Эппин, санӑн ман ҫумран тӑрса, Чаттана кайса чуптумаллаччӗ.

— Ӑна чуптума пулать те пуль-ха. Ачи аван. Тиркемелле мар.

— Юратать вӑл сана. Сисетӗн-и?

— Сисмесӗр! Анчах мӗн тӑвам-ха эпӗ? Манӑн Федя пур.

— Пӗр сӑмах калам-и сана?

— Каласам.

— Ан асаплантар эс ӑна.

— Кама?

— Ҫак Чаттана ара. Тӗрӗссине кала — ачи лайӑх эсӗ, анчах пирӗн хушӑмӑрта нимӗн те пулма пултараймасть, эп хамӑн салтака, Федьӑна, никампа та улӑштармастӑп, те. Атту-тӑк ӗҫӗ шала кӗрсе кайӗ, вӑл сана чӑннипех юратса пӑрахӗ те ахалех асапланӗ...

— Ун пек калама сӑлтавӗ ҫук-ха манӑн! Хӑйӗн туйӑмӗсем ҫинчен ҫӑвар та уҫман вӑл. Пырать, тем ҫинчен те калаҫать те тухса каять, пӗтӗм ӗҫӗ те ҫавӑ ҫеҫ. Пыма сӑлтавӗ пур унӑн — пирӗн завмагпа хурӑнташлӑ имӗш, ман пата мар, ун патне пынӑ пек тӑвать...

— Вӑтанать, эппин. Хӑюсӑр. Леш вӑрӑм ҫӳҫлисем, ансӑр йӗмлисем пек пӑсӑлнӑскер мар. Поэт тата. Туйӑмӗсем таса унӑн. Романтик...

— Ну-у, тусӑм, ҫамрӑк поэтсем хушшинче тӗрлӗренех пур-ха унта. Теприсем виҫӗ сӑвӑ ҫапӑнсанах хӑйсене турӑ вырӑнне хураҫҫӗ. Театр студине ҫӳренӗ чух куркаларӑм эпӗ. Чтец-декламаторсен ӑмӑртуне пычӗҫ

иккĕшĕ... Çӳçĕсем хулпуççи таран, бакенбардсемпе — иккĕшĕ те Пушкин! Сăввисене вуланă чух ай хуçкаланчĕç, ай курнăçланчĕç! Кулса вилмелле! Пĕри тата сăввине те пĕлмест — хут тăрăх вулать. Пĕрремĕш премие ун чух тахăш стройкăри каменщике пачĕç, вăл Хусанкайăн «Çĕрте те çĕрместпĕр!» поэмине вут-хĕм сирпĕтсе вуларĕ çав!..

— Ку Чатти ун йышши вĕçкĕн мар ĕнтĕ...

— Пĕлетĕп, вăл ун пек мар. Унран çын пулать. Паллах, пăсăлмасан.

— Пăсăлассăн та туйăнмасть. Шухăшĕсем çирĕп. Тĕл пур унăн пурнăçĕнче. Çав тĕл патне çитетех вăл...

Лариса картиш енчи чӳречерен пăхрĕ.

— Ăçта çухалчĕç тата кусем? Ма кĕмеççĕ? Ниушлĕ Чатта вĕсене халь те урамрах тытса тăрать? — тĕлĕнчĕ вăл.— Тухса пăхас пуль, кĕччĕр, аван мар çынсене кун пек кĕттерме...

Лариса пӳртрен чупса тухрĕ те минут та иртмерĕ пуль — каялла ыткăнса кĕчĕ.

— Çук унта никам та!

— Епле çук? — тĕлĕнсе пăхрĕ ун çине Кира.— Чатти те-и?

— Вăл та, лешсем те.

— Лешсем — камсем пулмаллаччĕ-ха? Эс малтан курнă-и вĕсене?

— Курман. Чатта каланă тăрăх çеç пĕлетĕп — милиции начальникĕ леш ĕнерхи хурахла машина пирки тĕрĕслеме хăйĕн çыннисене яма сăмах панă. Паян килнĕ вĕсем кунта,— çавсем пуль ĕнтĕ, кам пултăр урăх? — хапхана шакканă, эпĕ Чаттана тухса уçма хушрăм, анчах халь нихăшĕ те çук...

— Ăçта кайса кĕме пултарнă-ха вĕсем? Тен, Чаттине хăйне тытса кайнă? — шӳтлесе илчĕ Кира.

— Эс кирлĕ мара ан калаç-ха,— кăмăлсăрланчĕ Лариса.— Мĕншĕн тытчăр ăна? Хăйсен ĕçне тума ял Советне е правление кайнă пуль-и?

Хĕрсем пĕр хушă ним тума пĕлмесĕр тăчĕç.

— Мĕн мурĕ пулса тухать капла? — терĕ унтан Кира.— Ара, Чаттан мана каялла леçсе хăвармаллаçке! Эпир унпа çавăн пек калаçса татăлнă. Унăн хăйĕн те ĕçе çитмелле пуль...

— Атя-ха, эппин, юмăç ярса тăрар мар,— терĕ Лариса, пуçне косынка çыхса,— часрах чей ĕçкелер те

кайса пăхар. Манăн çавах кĕç-вĕç лавкка уçмалла. Правлени те, ял Совечĕ те пĕрлех унта. Чаттин ĕçех çук пуль, сана лартса вĕçтертĕр вăл.

Çав вăхăтра шăпах Христин сĕт витри йăтса кĕчĕ— кĕтӳ ярас умĕн ĕне сума та ĕлкĕрнĕ иккен.

— Хĕрсем, пĕрер стакан ăшă сĕт ĕçетĕр-и? — кăмăллăн ыйтрĕ вăл.

— Пит аван! Ĕçетпĕр, тин çеç сунă сĕт пек юратни те çук манăн! Пăру пек ĕçĕттĕм кашни кун! — алă çупса илчĕ Кира.

Христин çутă шуç кружкăсем çине ярса панă сĕте хĕрсем тумлам юлмичченех ĕçрĕç те шăкăл-шăкăл калаçса тухса кайрĕç. Христин вĕсем хыççăн çав тери ăмсанса пăха юлчĕ. Унтан хурланчĕ... Мĕншĕн вăл та çак хĕрсем пек мар-ши? Мĕншĕн çав териех телейсĕр пулма пӳрнĕ ăна? «Хăлха илтмен пиркиех пĕтетĕп, çынсем шутлă пурăнаймастăп ĕнтĕ... Ни вĕренеймерĕм, ни ĕçе илмеççĕ. Ĕмĕрех çак вĕреçĕлен патĕнче тарçă пулса пурăнмалла-ши манăн?!.»

Вăл тĕкĕр умĕнче чарăнса тăчĕ.

«Сăнран та тиркемеллех мар... Ман пеккисем качча кайса телейлĕ пурăнаççĕ. Çак Лариса та каларĕ пĕркун — хитре эсĕ, куçусем уяр кунхи пĕлĕт пек, терĕ... Анчах мĕн усси? Эх, пурăнăç, пурăнăç! Ĕмĕр тăршшипех асапланмалла пулать пуль...»

Чӳрече тĕлĕпе выльăхсем иртни курăнчĕ. Кĕтӳ хăвалаççĕ, эппин. Христин та пӳрт алăкне питĕрсе картишĕнчи выльăхсене урама кăларчĕ. Лавкка патнерех çитсен Ларисăпа Кира крыльца çинче аллисене сулкаласах, тем пирки тавлашнă пек калаçса тăнине курчĕ.

— Ма кĕместĕр тата? — лавкка алăкĕ еннелле кăтартса ыйтрĕ Христин.— Çынсем çуккипе-и?

— Пирĕн хăна çухалнă-çке, леш хамăр патра çĕр выртнă каччă! Çавна шыратпăр! — кăшкăрчĕ ăна хирĕç Лариса.

Паллах, Чатта ниçта та çухалман.

Лариса хушнипе тухса хапха калинккине уçсанах Борцов капитанпа Кучанов лейтенанта курчĕ вăл.

— Сывлăх сунатăп сире, юлташсем...

— Здорово, писатель! — ал пачĕ те ăна Борцов, унăн шыçса кăвакарса ларнă куçĕ çине пăхса кулсах

ячĕ.— Ай-ай, лайăх илемлетнĕ-çке сана! Кун пек «фотографипе» урамри светофор вырăнне тăма та пулать...

— Саншăн — кулă, анчах эпĕ чут суккăр пулса юлаттăм,— хаштах сывласа ячĕ Чатта.

— Кам туянтарчĕ-ха кун пекех?

— Шуйттан пĕлет-и! Çĕрле, тĕттĕм. Грузовикпа килсе тăчĕç, çак кил хуçине ыйтаççĕ. Çук, терĕмĕр. Ырă мара туйса, эпĕ вĕсем машини çине мĕн тиенине пĕлме шут турăм. Чарчĕç. Эп татах малалла кайма пикенсен, пĕри тăхăнтартса ячĕ вара. Куçпуçран вут-çулăм сирпĕнчĕ, пĕр хушă пăхаймарăм та. Унтан вĕсем машинне хускатрĕç те вĕçтерчĕç кăна... Анчах номерне пĕлсе юлтăмăр эпир, Сумбатова каçах каларăм машинĕн мĕнле номер пулнине.

— Ăçталла кайрĕ-ха машинĕ?

— Ав çавăнталла... — Чатта сулахай еннелле ал сулчĕ.

— Унтанпа ку таврашра урăх нимĕнле машин та пулман-ши? Илтĕнмерĕç-и машин сассисем?

— Çук. Çĕрĕпех шăп пулчĕ.

— Кил хуçи, Кагаева, халь те таврăнман-и?

— Çук-ха. Вăл больницăна кайнă, кăнтăрласăр килеймест пуль.

— Юрать апла пулсан... — Борцов участокри уполномоченнăй çине пăхрĕ.— Ну, мĕн тăватпăр-ха, лейтенант?

— Йĕр тăрăх каяс пулать. Куратăн, протектор йĕрĕ ак кунтах пит лайăх палăрса юлнă. ГАЗ-51 пек туйăнать.— Кучанов грузовик кустăрмисем урам варринче туса хăварнă путăксем çине кăтартрĕ.

— Тĕрĕс шутлатăн, лейтенант. Пăхса кайăпăр ерипен, ăçта илсе çитерĕ пире вăл йĕр... — терĕ те Борцов, хăйсен машини еннелле уттара пачĕ.

— Мана та илсе каймăр-ши хăвăрпа пĕрле, капитан юлташ? — çав самантрах хăвăрт ыйтрĕ Чатта.

— Пырассу килет-им? — хулпуççи урлă пăхрĕ ун çине Борцов.

— Питĕ пырас килет! Эп... эп мĕн... ку таранччен пĕрре те преступниксене тытнă çĕрте пулман-ха,— васкаса калама тытăнчĕ Чатта,— анчах журналистăн пурне те курмалла, пурне те пĕлмелле... Тен, хамăр хаçата та çырăп кун çинчен?

— Сенсаци тăвасшăн ĕнтĕ эсĕ. Пуç çавăрса кай-

малла приключенисем ҫинчен ҫырасшӑн, ҫапла-и? — йӑл кулса илчӗ Борцов.

— Сенсаци тӑвасси — совет журналисчӗн ӗҫӗ марха вӑл, анчах...

— Ҫапах та вулакансен нервисене кӑтӑклас, вӗсене тӗлӗнтерес килет, ҫапла-и? — Чаттана пӳлчӗ Борцов.

— Хаҫатра ҫара сводкӑсем ҫеҫ пичетлемелле мар ӗнтӗ...

— Вӑхӑту пур-тӑк — лар, эппин, машина пушах. Тен, понятой тума та тивӗ сана.

Хӗпӗртенӗ Чатта машина ӑшне кушак пекех йӑкӑш! кӗрсе хыҫала вырнаҫрӗ, кабинӑра Борцовпа Кучанов ларчӗҫ. Анчах Чатта вӗсен хулпуҫҫийӗсем хушшипе малта мӗн пуррине пӗтӗмпех курчӗ. Руль тытса пыракан Борцов машинӑна ҫӗрлехи грузовик йӗрне таптамасӑр, ун ҫуммипе чуптарчӗ. Ӗнер каҫаллапа ҫунӑ ҫумӑр хыҫҫӑн грузовик пит лайӑх палӑракан йӗр туса хӑварнӑ иккен. Таҫта ҫитиех кайма пулать ун пек йӗр тӑрӑх!

Чаттан ҫак оперативлӑ заданипе ҫӳрекен милици ҫыннисемпе питӗ калаҫас килчӗ, анчах калаҫмалли сӑмахне тупаймарӗ. Унтан — чылай хушӑран — тӑрук ыйтрӗ:

— Капитан юлташ, преступникӗсем тарма тапратсан перетӗр-и?

Шутсӑр ачалла пулчӗ ку. Борцов кулса ячӗ:

— Эс ӗнтӗ пулас детектив сюжетне калӑплама тытӑннӑ курӑнать, ҫапла-и? Оперативниксем бандитсене хупӑрласа илеҫҫӗ, вӗсенчен иккӗшӗ чӳречерен siksе тухса тарма тытӑнаҫҫӗ, милиционерсем хыҫалтан хӑвалаҫҫӗ, бандитсем вӗсене чупнӑ ҫӗртех чарӑна-чарӑна пеме тапратаҫҫӗ, милицисем те переҫҫӗ — пант та пант! Пӗр бандитне вӗлереҫҫӗ, анчах милиционерсенчен те пӗри аманать, ҫапах та ӳкмест-ха, пурӗпӗр малалла ыткӑнса бандита хуса ҫитет, лешӗ ӗнтӗ перейместь, унӑн патронӗсем пӗтнӗ, вӑл юлашки мӗнпур вӑйне пухса милиционер ҫинелле сикет, милиционер ӑна самбо меслечӗпе хӑйӗн пуҫӗ урлӑ ҫавӑрса ҫапать те ҫӗр ҫумне пусса лартать... Лайӑх сюжет вӗт?

— Начар мар,— терӗ Чатта.

— Ил, сутма пултаратӑп. Анчах вӑл сюжетпа ҫырнӑ кӗнекесем халь темиҫе ҫӗр те пулӗ.

— Чӑвашсен ҫук.

— Эс мĕн, чăвашсем вырăсла çырнă детективсене вуламаççĕ тетĕн-им? Епле вулаççĕ-ха! Библиотекăсенче черет тăрса вулаççĕ.

— Пĕлетĕп, капитан юлташ. Детектива хăш-хăш критиксем тиркеме пăхаççĕ, çав вăхăтрах хăйсем те каçса кайсах вулаççĕ. Тĕрĕссипе каласан, приключени, детектив — усăллă литература вĕт вăл, çынсене хăюллă пулма, кирек мĕнле йывăрлăха та çĕнтерсе тухма вĕрентет.

— Кĕнекине лайăх çырнă пулсан...

— Ну, вăл паллах ĕнтĕ!

Сасартăк Борцов машинăна чарса тăратрĕ. Пĕчĕк кăна кĕпер иккен малта. Ун умĕнче шыв тулнă лакăм. Борцов пĕр сăмах каламасăрах кабинăран тухрĕ те çав кĕпер патне пычĕ. Темиçе самантранах Кучанова чĕнсе илчĕ. Офицерсем кĕпер патĕнче тем курнине ăнланса, Чатта та машинăран сиксе тухрĕ. Пĕрре пăхсанах паллă пулчĕ: çĕрлехи грузовик кунта ланкса ларса чылай тапаçланнă. Лакăма улăм пăрахса тултарнă, улăмĕ пылчăкпа хутăш çăраннă, унталла та кунталла сирпĕннĕ...

— Çапах та хăтăлкаласа тухнă-ха, ирсĕрсем,— мăкăртатса илчĕ Борцов.— Хытă тăрăшнă пулмалла. Пăхар-ха, тата ăçта çити кайнă вĕсем ку çулпа...

Вăл машинăна ерипен, питĕ асăрханса, кĕпер урлă каçарчĕ те Чăрăшкассинелле вĕçтерчĕ. Грузовик йĕрĕ вĕсене малтанхи пекех çул кăтартса пычĕ. Анчах яла пырса кĕрсен чарăнса иккĕленсе тăмалла пулчĕ: вĕсем çитиччен ку урампа кĕтӳ иртнĕ те протектор йĕрĕсене çăрса пылчăк айне тунă. Борцовпа Кучанов, каллех машинăран тухса, пĕри пĕр еннелле, тепри тепĕр еннелле кая-кая пăхрĕç. Кăшт тăрсан, сылтăмалла кайнă Кучанов чылай инçетрен кăшкăрчĕ:

— Тупрăм! Кунталла килнĕ!

Тепĕр ик минутран хĕрлĕ «пиçиххиллĕ» милици машини питĕ çӳллĕ, тимĕр витнĕ, картишне «ют куç-ран» крепость пекех хӳтĕлесе тăракан, тĕрлĕ тĕслĕ сăрпа эрешлесе сăрланă вырăсла хапха тĕлĕнче чарăнчĕ. Грузовик картишнелле кĕнĕ йĕр те, унтан тухнă йĕр те пулнă кунта,— Борцовпа Кучанов хăйсен машинĕнчен тухсанах пит лайăх курчĕç ăна.

— Камăн килĕ-ши ку, пĕлместĕн-и? — ыйтрĕ Борцов Кучановран.

— Пĕлмесĕр! Çак ялти завмаг Васюков пурăнать кунта, çавăн керменĕ! — терĕ лешĕ.

— Завмаг?! — тепĕр хут ыйтрĕ Борцов.

— Так точно. Пĕр вăхăтра ăна ĕçрен кăларас хыпар та тухнăччĕ, кайран темшĕн шарлами пулчĕç тата.

— Апла-ха, эппин... — Борцов карттусне хывса пуç тӳпине хыçса илчĕ.— Асăрха-ха çакна, лейтенант: темскер тиенĕ грузовик сĕм-çĕрле малтан пĕр ялти завмаг патне пырать, унтан, лешĕ килте çуккипе, тепĕр ялти завмаг патне ярăнтарать. Мĕнле те пулин çыхăну пур-и çакăнта сан шутупа?

— Пулмасăр! Пĕрине парса хăвараймаççĕ те теприне килсе сĕнеççĕ,— терĕ Кучанов.— Лешĕ те, ку та малтанах палланă çынсем ĕнтĕ. Пач палламан çын патне ăçтан пырса кĕретĕн çĕр хута?

— Юрĕ. Халь ĕнтĕ хамăр та кĕрсе курар ку çын патне, мĕн тĕслĕ вăл, мĕнле юрă юрласа парĕ вăл пире.

— Мана та кĕме юрать пуль? — ыйтрĕ машина çумĕнчех тăракан Чатта.— Çитменнине, ку çынна паллатăп эпĕ, çырнă ун çинчен...

— Мухтанă пуль?

— Фельетонсенче мухтамаççĕ.

— Пирĕнпе килтĕн пулсан — паллах юрать. Пресса представителĕ эсĕ, дружинниксен штабĕн членĕ тата темтепĕр,— кулса илчĕ Борцов.— Çынни те палланăскер тетĕн ав...

Çав самантра крыльца çине Васюковăн çамрăк арăмĕ тухса тăчĕ — мăн чечеклĕ капăр тутăрпа, кĕрен пиншакпа, çӳллĕ кунчаллă сенкер резин атăпа. Милици тумĕсем тăхăннă çынсене курсанах вăл хут пек шуралса кайрĕ,— ăнланчĕ ĕнтĕ вĕсем ахальтен килменнине! — анчах хăй хăранине палăртасшăн пулмарĕ, тӳрех йăл-йăл кулнă пек турĕ те юрласах ячĕ:

— Ай-у-уй, мĕнле кĕтмен хăнасем ара кусе-ем? Çывăрма та пĕлмеççĕ-иç, ӳркенмесĕрех, хĕвел тухнăтухман ялсем тăрăх чупаççĕ...

— Çавăн йышшисем çав эпир,— терĕ Борцов,— хамăр та çывăрмастпăр, çынсене те çывăрма памастпăр. Ĕçĕ çавăн пек пирĕн, мĕн тăвас тетĕн! Хуçи килте-и?

— Килтех ара, килтех, ăçта кайтăр ĕнтĕ вăл пĕртен-пĕр арăмне пăрахса? — терĕ хĕрарăм. Тинех ун питне юн пычĕ, кĕрхи анис пекех хĕрелсе кайрĕ.— Пĕчĕк ача пекех çывăрать-ха вăл, каçхине шăлĕ ырат-

нипе час çывăраймарĕ те... Ĕçĕ те нумай çыннин, çамрăках мар, ывăнать, çавăнпа та çывăрнă чух çывăртăрах, тетĕп-çке, ытла ир вăратмастăп...— вăл çаплах крыльца çинче тăчĕ-ха, Борцовпа Кучанов, вĕсемпе пĕрле Чатта та аялтан çӳлелле пăхса тăчĕç.— Çав териех кирлĕ пулчĕ-и сире ман арçынĕ! Лавккаран мĕн те пулин илмелле пулсан, хам та парса яма пултаратăп...

— Мухмăр çук-ха пирĕн, кирлĕ мар нимĕн те, сан упăшкуна курмалла çеç,— терĕ хăй ăшĕнче тарăхма пуçланă Борцов.— Çавăнпа та, тен, пӳрте кĕртĕн эс пире?

— Кĕрĕр ара, кĕрĕр... Пӳртĕнче таса мар-ха манăн, пуçтараймарăм, çавăнпа çеç чĕнмерĕм сире, ан çилленӗр ĕнтĕ...

— Эпир тухтăрсем мар, çынсен килĕсенче таса-тасамаррине тĕрĕслесе çӳреместпĕр,— терĕ те Борцов, крыльца картлашки çине ярса пусрĕ. Ун хыççăн Кучановпа Чатта та хăпарса хĕрарăм хыççăн шалалла кĕчĕç. Чатта хыçалта пычĕ. Пӳрт çумĕнчи вăрăм чăланпа утнă чухнех сăмсана ялти лавккасенче ялан пулакан хутăш шăршă — пулă, супăнь, эрех, краççын шăрши пырса çапрĕ. «Эппин, ку завмаг килте те тыткалать таварсене,— шухăшларĕ Чатта,— ун пек тума юрамасть-çке! Апла, саккуна пăсать вăл...»

Кил хуçи — Васюков — чăнах та çывăрать-мĕн, кравать çинче алли-урисене арман çунаттисем пекех саркаласа пăрахнă та пӳртри пĕтĕм сывлăша чĕтретмелле харлаттарать. Пуçĕ çитар çинчен шуса аннă та сайра сар сухалĕ качака хӳри пек çӳлелле каçăрălнă.

Арăмĕ ăна уринчен тытса туртсанах вăл варт! тăрса ларса темиçе самант милици çыннисем çине ним ăнланмасăр, куçĕсене час-час мăчлаттарса пăхрĕ.

— Мархи-и! Арă-ăм! — сасартăк кăшкăрчĕ унтан çĕтсе ларнă сасăпа.— Тĕлĕк куратăп-и эпĕ? Тĕлĕк-и ку? Вăрат-ха мана, хăратăп эпĕ! Васпати, тур çырлахтăрах, тур ан пăрахтăрах...— вăл пăтти-патти сăхсăхса илчĕ те йăпăр-япăр выртса утиялĕпе пуçĕ çинченех витĕнчĕ.— Мархи-и! Ман куçа шуйттансем курăнаççĕ! Хăваласа яр вĕсене! Хăвала! Хăра-ап!.. — Васюков утиял айĕнче урисемпе тапкаланма тытăнчĕ.

Кравать пуçĕнче тăракан Борцов Кучановпа Чатта çине пăхрĕ.

— Ăнланатăр-и эсир мĕн те пулин?

— Юри хӑтланать,— терӗ Кучанов.— Симуляци...

— Ытла симуляциех те мар пуль-ха ку. Алкогольнӑй психоз унӑн. Белая горячка, галлюцинаци, темтепӗр... — Борцов Васюков арӑмӗ еннелле ҫаврӑнса ыйтрӗ: — Юлашки кунсенче нумай ӗҫнӗ-и вӑл?

— Нумаях мар, кӑшт-кашт кӑна. Картран иртмен,— терӗ Мархи.— Сутӑ тӑваканӑн нумай ӗҫме юрамасть, йӑнӑшсем туса ҫунса кайма, йӗмсӗр тӑрса юлма пулать, ара.

— Ӗнер те ӗҫнӗ-и?

— Пулнӑ пӑртак... ӗҫ хыҫҫӑн,— суйрӗ Мархи.

— Тен, юри тӑвать вӑл? Пире курасшӑн мар, чирлӗ тесе кӑларса ярасшӑн? Анчах эпир сирӗн пата вӑшваш тухса каймалла килмен-ха, пирӗн калаҫмалли пур! Эс унпа чипер пуплесе ӑнлантар-ха...

— Мархи-и! — кӑшкӑрчӗ ҫав вӑхӑтра Васюков утиял айӗнчен.— Шуйттансем тухса кайрӗҫ-и, хӑваласа ятӑн-и эс вӗсене? Виле-еп, ман тула каяс килет!

— Ан ухмахланса вырт-ха, аҫа ҫапманскер! Нимӗнле шуйттан та ҫук кунта, сан патна ҫынсем ӗҫпе килнӗ, тӑр! — хыттӑн кӑшкӑрса, утияла сӗвсе илме карт! туртрӗ арӑмӗ. Анчах Васюковӗ утиялне хытӑ тытса лартнӑ иккен, ямарӗ. Хирӗҫ кӑшкӑрчӗ:

— Мӗнле ҫынсем тата? Никам та кирлӗ мар мана! Килте ҫук, те!

— Милицисем!

— Милици?! Мӗнле милици? Суятӑн эсӗ, вӗреҫӗлен, юри хӑрататӑн мана, хӑратса вӗлересшӗн! Милицин нимӗнле ӗҫ те ҫук манпа!

— Ӗҫ пур ҫав, Васюков! Пысӑк ӗҫ! — тӳсеймесӗр кӑшкӑрчӗ ӑна хирӗҫ Кучанов.— Халех тӑр, кутӑна персе ан вырт! Атту-тӑк хамах сӗтӗрсе антаратӑп акӑ!

— Кам вара эсӗ, ун пекех хаярскер?

— Милици лейтенанчӗ Кучанов, участокри уполномоченнӑй!

Васюков ерипен кӑна утиялне пуҫӗ ҫинчен сирсе пӑхрӗ.

— Палларӑн-и? — ыйтрӗ Кучанов.

— Палларӑм... Пурне те паллатӑп,— терӗ те Васюков, тӑрса ларчӗ. Хырӑмне хыҫкаларӗ. Унтан пӳрнипе Чатта ҫине тӗллерӗ: — Ку писателӗ мӗн тума сӗтӗрӗнсе килнӗ тата ман пата? Ему какой делӑ? Каллех ман



çинчен элеклесе хаçата çырма штоль? Шалиш, филлитон пулмасть хальхинче, Чаплашкин юлташ...

— Ун выранне протокол пулма пултарать,— тусей м е рё Чатта ăна хирĕç каламасăр.— Милици протоколĕ!

— Ниччево та пулмасть ман пирки! Христосран та святой эп халь!

— Юрĕ, юрĕ, хăвăн ухмахна кăтартса ан лар! — çурăмĕнчен çат! çапрĕ те ăна арăмĕ, вырăн çинчен тĕпĕл-тепĕл! туртса антарчĕ.—Тумланса питне çу та этем тĕслĕ пул! Эп хăнасем валли çăмартапа чăкăт ăшалам хуть, ирхи çиме те ĕлкĕреймен пульха паян, выçнă пуль.

— Нимĕнле çăмарта та, чăкăт та кирлĕ мар пире, ан та шутла чăрманма,— терĕ ăна Борцов, сĕтел патне иртсе ларса.

— Ай-уй тата, ĕмĕрте пĕрре килсе кĕнĕ хăнасене епле выçă кăларса яратăн?! — тĕлĕннĕ пек пулчĕ Васюков арăмĕ.

— Хăнасем те мар эпир, выçă та çӳреместпĕр.

Васюков шăлавар тăханчĕ те «эп чиччас!» тесе çара уранах çенĕхелле тухрĕ. Ун хыççăнах арăмĕ те васкаса тухма тăчĕ, анчах Борцов чарчĕ ăна:

— Эс тăхта-ха, йăмăк, ан кай, văл унта хăйĕн ирхи ĕçне сансăрах тукалĕ, пĕчĕк ачах мар, йĕмне хăпартса тӳмелеме пĕлет пуль...

— Юрамасть-им? — чалăшшăн пăхрĕ Мархи.— Манăн хамăн ĕç...

— Ан васка, кун вăрăм. Сăмах пур санпа. Ларха... — Борцов çав вăхăтрах Кучанова пуçĕпе алăк ен-

нелле сулса кăтартрĕ те лешĕ тӳрех ăнланса Васюков хыççăн тухрĕ.

— Мĕнле сăмах-ши... — Мархи малти сак çине ларчĕ те аллисене пĕрле тытса чĕркуççисем çине хучĕ.— Милици тавращĕпе ĕмĕрне те калаçса курманччĕ-ха...— кулнă пек турĕ хăй.

— Ак мĕнле сăмах... Анчах асту, йăмăк, эп ыйтнисене хирĕç тĕп-тĕрĕссипе, ним суймасăр калас пулать.

— Ку тарана çитсе те суйма вĕренеймерĕм çав...— тутине пăчăртаса илчĕ Мархи.

— Пит аван апла пулсан. Кала-ха, эппин, кĕçĕр сирĕн пата камсем килсе кайрĕç? Мĕнле çынсем? Мĕн ĕçпе?

— Кĕçĕр-и? Кай, кĕçĕр... — Мархи пырне сасартăк темскер кĕрсе ларнă пек пулчĕ, вăл çине-çине ӳсĕркелесе илчĕ, унăн сăнĕ паçăрхи пекех кăвакарса-шуралса кайрĕ, анчах çав вăхăтрах хăйне çирĕп тытма тăрăшса пат татса каларĕ: — Кĕçĕр пирĕн патра никам та пулман. Эпир старикпе каçах выртса çывăрнă та, ним те илтмен. Эп ирпе кĕтӳ ярас умĕн тин вăрантăм, ман арçынĕ эсир киличченех çывăрчĕ ав, ăна эсир хăвăр та куртăр...

— Никам та, пĕр çын та килмен, эппин?

— Çук, килмен... — пуçне пăркаларĕ Мархи, халь ĕнтĕ тата ытларах çирĕпленсе.— Мĕн пулнă вара? Темле усал хыпар пур-им?

— Хыпарĕ пур-ха вăл.

— Таçта тем пулнă пулсан та, эпир ним те пĕлместпĕр. Çук, çук! Курман, илтмен...

— Çапах та, лайăхрах шухăшласа пăх-ха, Васюкова. Тен, астумастăн эсĕ, маннă, э? Тепĕр чух, çывăрнă хыççăн, çын ĕнер мĕн пулнине йăлт манса каять.

— Пьянчуксем манаççĕ ăна,— ал сулчĕ Мархи,— ман старик те ав хăш чух ĕçкелесе килсе янракалать те — ирпе ним астумасть, хут те пус-кас эс ăна. Анчах эпĕ ĕнер пĕр тумлам та ăша яман. Йăлт астăватăп, ним те манман...

— Пит аван. Пурне те астăватăн пулсан, çакна кала: мĕнле грузовик кĕрсе тухнă кĕçĕр сирĕн картишне?

— Грузови-ик?! Ан тĕлĕнтер-ха! — пĕççине шарт! çапрĕ Мархи.— Нимĕнле грузовик те пулма пултарайман пирĕн патра, тур çырлахтăрах! Эпир мăн хапхине хăçан уçнине те астумастăп! Кай, кай... тем те илтĕн

ку пурнăçра! — Мархи тарăхнă пек калаçма пуçларĕ.— Такам темскер йĕпетсе панă пулмалла та сире, эсир шарт! ĕненсе лартнă курăнать. Курайман çынсем нумай, тем те калĕç. Çын сăмахĕ хыççăн каякан суккăр пулнă, тет. Кашни суя сăмаха ĕненсен — мĕнле пурăнас çĕр çинче? Юрамасть ун пек... Саккунсене эпир те чухлатпăр пăртак!

— Саккунсене чухлани пит аван вăл,— терĕ Борцов, хĕрарăм куçĕнчен тӳррĕн пăхса,— анчах çав саккунсене пăхăнни, вĕсене тытса пыни тата лайăхрах, çапла-и?

— Эс мĕн вара, эпир саккунсене пăсса пурăнатпăр, тесшĕн-и? — хирĕç кастарса илчĕ Мархи.— Саккуна пирĕн пек пăхăнакансем çĕрте те пĕрре кăна пулĕ, е унтан та сахалтарах-и...

— Ĕненесех килмест куна, йăмăк. Сăмахран, саккун суйма, улталама хушмасть, анчах эсĕ халь мана куçкĕрет улталама тăрăшатăн. Суятăн! Грузовик пулнă кĕçĕр сирĕн патра. Кĕрсе тухнă.

— Пулман! Кĕмен, тухман! — урипе тапсах илчĕ Мархи.

Çак самантра тултан Васюков кĕчĕ,— вăл питне çунă курăнать, кукша пуçĕ çинчи çӳç пĕрчисене турасăрах каялла шăлса хунă,— сылтăм аллипе çур литр тытнă. Ун хыççăнах Кучанов кĕчĕ.

— Старик, пирĕн патра кĕçĕр машин таврашĕпе никам та килмен вĕт! — упăшкине курсанах кăшкăрчĕ Мархи.— Мана ĕненмеççĕ! Кала часрах, килмен, те!

— Васюкова!—сĕтеле ал лаппипе çат! тутарчĕ Борцов.— Юрамасть ун пек! Хăй пĕлнине хăех калать вăл! Кала тӳррипе, Васюков, кĕçĕр сирĕн пата грузовикпа килекен пулнă-и?

— Пулман, никам та килмен! — кăшкăрчĕ Мархи.

— Васюкова! Ан хутшăн, хăвăнтан ыйтман чух шăп лар! — тарăхса сассине хытарчĕ Борцов.— Килха, Васюков... Ку аллунти эрехне пытарса ларт ăçта та пулин, паян ĕçмелли кун мар, ĕçлемелли кун!

— Мухмăр манăн, начальник. Ăна уçмасан, сирĕнпе те калаçаймастăп,— хурланнă пек каларĕ ăна хирĕç Васюков.

— Нимех те мар, аптрамастăн, пит лайăх калаçатăн! Кала ĕнтĕ мана тĕп-тĕрĕссипе: санăн мăшăру кĕçĕр сирĕн патра никам та пулман, тесе ĕнентерме тăрă-

шать, анчах эпир пит лайăх пĕлетпĕр — пулнă! Пулнă-и, çук-и? Ну?

Васюков йăпăрт кăна арăмĕ çине пăхса илчĕ те пуçне пăркаларĕ.

— Курман... астумастăп! Ӳсĕртерех пулнă та вилнĕ пекех çывăрнă, хама çĕклесе тухса кайсан та сисес çук.

Борцов хăвăрт кăна пирус тивертсе ячĕ. Лăпкăн, пăлханмасăр ĕçленĕ чух вăл туртсах кайман, анчах ĕç ăнмасан, чăрмантаракансем пулсан, тарăхмаллисем тупăнсан çине-çинех туртнă вара.

— Эппин, эс нимĕн те курман, илтмен, пĕлместĕн? — Васюкова шăтарас пек пăхрĕ вăл.— Сан арăму та кĕçĕрхи каç хăлхасăр-куçсăр пулнă. Сирĕн картишне такамсем грузовикпа кĕрсе тухса кайнине нихăшĕ те сисмен эсир, çапла-и?

— Килнех пулсан, сисеттĕмĕр пуль те, нимĕнле сас та илтĕнмен-çке! — çирĕппĕнех калаçа пуçларĕ Васюков.— Арăм та пулин вăранмалла...

— Ман ыйхă питĕ çăмăл, эп кушак утнине те сисетĕп,— хушса хучĕ Мархи.

— Юрать, эппин, апла пулсан... — Борцов сӳннĕ пирусне тепĕр хут чĕртрĕ.— Килмен-тĕк, килмен пултăр...— унтан Кучанова каларĕ: — Лейтенант юлташ, халех çывăхри кӳршĕсенчен пĕр-иккĕшне чĕнсе кил-ха. Кирлĕ пулаççĕ.

— Ай-уй, ăна ма чăрмантарас?! Эп хамах хуть те кама пĕр наччасра чĕнсе килетĕп! — вырăнтан сиксе тăчĕ Мархи.

— Çук ĕнтĕ, Васюкова, эс халлĕхе килтех лар-ха,— терĕ Борцов.— Лейтенант санран çамрăкрах, вăл чуптăр.

— Эп те ытла тиркемеллех ватăлман-ха,— мăртлатса тутине пăчăртарĕ те Мархи, чăланалла пăрăнчĕ. Ун хыççăн Васюков та кĕчĕ. Самантранах унта кĕленче çумне кĕленче перĕнсе чанклатнă сасă илтĕнчĕ.

— Асту, Васюков, ан ĕç! — хыттăн каларĕ Борцов çавна илтсенех.— Кайран хăвнах кансĕр пулать. Ĕç нумай-ха пирĕн!

— Ç-çук... шыв çеç ĕçетĕп, ăшчик çунать,— мăкăртатрĕ те ăна хирĕç Васюков, хăй çавăнтах чыхăнса кайрĕ. Эрехĕ вырнаçасшăнах пулмарĕ курăнать.

Чатта çак хушăра стена çумĕнчи тăрăхла сак çинче ним чĕнмесĕр сăнаса ларчĕ. Васюковпа унăн арăмĕ

ОБХСС инспекторне куҫкӗрет суйса ӗнентерме хӑтланни питӗ тарӑхтарчӗ ӑна. «Ма суятӑр, мурсем, грузовик сирӗн пата кӗрсе тухнӑ йӗрсем пур-иҫ! Тап-таса, ҫӗнӗ йӗрсем, атьӑр, тухса кӑтартам!» — тесе кӑшкӑрас килчӗ каччӑн. Анчах унӑн ним калама та, хутшӑнма та юраман. Вӑл, вырӑсла каласан, «при сем присутствующий» ҫеҫ пулнӑ...

Ҫапах та Васюковсем шат та пат туннинчен усси пулмарӗ. Кӗҫех Кучанов лейтенант икӗ ҫынна илсе пычӗ — пӗри вунсакӑр-вунтӑхӑр ҫулсенчи йӗкӗт, тепри аллӑсенчен иртнӗ хӗрарӑм. Амӑшӗпе ывӑлӗ иккен, Васюковсемпе юнашар пурӑнаканскерсем. Борцов вӗсенчен иртнӗ каҫхине ку таврашра пӗр-пӗр машина пулни-пулманни ҫинчен ыйтсан, йӗкӗт ним тытӑнса тӑмасӑрах каларӗ:

— Ҫур ҫӗр тӗлӗнче пӗр машина килчӗ ҫав. Эп тин ҫеҫ урамран таврӑнса ҫенӗхри чатӑр айне кӗрсе выртсаттӑм та, пит лайӑх илтрӗм...

— Мӗн илтрӗн? Мӗн илтме пултарнӑ эсӗ?! — тӳрех пӳлчӗ ӑна Мархи.

— Машин сассине илтрӗм,— терӗ йӗкӗт питӗ лӑпкӑн.— Сирӗн ума килсе тӑчӗ. Кӑшт тӑхтасан эсир ӑна картишне кӗртрӗр. Темскер пушатрӑр пулмалла ун ҫинчен. Кайран вӑл тухса кайнине те илтсе юлтӑм...

— Суятӑн вӗт, веҫ суятӑн! — кӑшкӑрсах ячӗ Мархи.— Тӗлӗкре куртӑн пулинех! Никам машини те килмен пирӗн пата! Тен, сирӗн пата пынӑ, ӑна пӗлместӗп!

— Епле килмен? — тӗлӗннӗ пек ыйтрӗ йӗкӗт.— Йӗрӗсем те пур-иҫ, пит лайӑх палӑраҫҫӗ, халь кӑна куртӑм...

— Нимӗнле йӗр те ҫук унта выльӑх ури йӗрӗсемсӗр пуҫне!

— Тухса пӑх ара, ӗненместӗн пулсан...

— Пулсан та, тахҫанхи йӗр ҫеҫ вӑл. Пӗр-ик эрне каялла тахӑшӗ килсе кайнӑччӗ...

— Тахҫанхи мар ҫав, хальхи, Мархи аппа, кӗҫӗрхи, эсӗ ху суйса ан тӑр! — терӗ йӗкӗт, ҫилленме пуҫласа.

— Машинӗ килсе кайнине эп те илтрӗм-ха ӑна,— ывӑлне тӳрре кӑларма сӑмах хушрӗ кӳршӗ хӗрарӑмӗ.

— Эс мӗн шӑршлӑ ҫӑварна каратӑн тата?! Сана мӗн кирлӗ? — халь ун ҫине сиксе ӳкрӗ Мархи.— Юрих айӑплаттарас тетӗн-и? Хӑвӑн усал автанун урине хуҫса янине халь те манаймастӑн-и?

— Ҫитӗ! — сассине хӑпартса ура ҫине тӑчӗ Борцов.— Тавлашса тӑмӑпӑр. Атьӑр, пурсӑмӑр та пӗрле тула тухса пӑхӑпӑр — малтан урама, унтан картишне: йӗрсем пур-и унта, ҫук-и? Куҫпа курнине нимӗн ҫитмест, ҫапла-и?

...Тулта вара Васюковсем шӑпӑртах пулчӗҫ. Грузовик йӗрӗсем ытла та лайӑх палӑрнӑ ҫав. Ҫӗнӗ йӗрсем! Машина урамран кӗни те, картишӗнчен тухни те пурин куҫӗ умӗнчех пулнӑ.

— Выльӑх йӗрӗсем-и ҫаксем? — ыйтрӗ Борцов, Мархи ҫине пӑхса.

Леш чӗнмерӗ, тутине ҫыртса лартрӗ ҫеҫ.

Пахчаналла тухмалли ансӑр алӑк патӗнче вӗр-ҫӗнӗ тимӗр листи выртни курӑнчӗ,— тӗттӗм ҫӗрте пушатнӑ чух темлерен ӳксе юлнӑскер.

— Ку мӗне пӗлтерет? Ӑҫтан килсе выртнӑ ку тимӗр? — ыйтрӗ Борцов Васюковран. Анчах ун выранне каллех арӑмӗ янрама тытӑнчӗ:

— Тахҫанхискерех вӑл, тимӗр кӑмака шӑтнӑччӗ те, ҫавна саплама хӗллех пӗр ҫынран илсе килсеччӗ, халь эп унпа сыснасем пахчана кӗрсе каясран алӑка картласа хуратӑп...

— Кив тимӗр тутӑхмалла-ҫке, ку санӑн ытла ҫӗнӗ! — терӗ те Борцов, пахча алӑкне уҫса кӗчӗ. Ыттисене те чӗнчӗ: — Атьӑр, ан юлӑр манран...

Инҫе каймалла пулмарӗ — пурте сарай хыҫӗнче ҫурт тӑррине витмелли пит лайӑх тимӗр листисен купине курчӗҫ. Ҫӗрле, васканипе, йӗркеллех хурайман, лӑп-лап кӑна пӑрахса тултарнӑ.

— Ку та тимӗр кӑмака сапламалли-и? — хуллен ыйтрӗ Борцов, ҫак купа ҫине кӑтартса.—Кунта, ҫӗр тимӗр кӑмака тумалӑх та пулӗ...

Васюковпа арӑмӗ ҫӑвара шыв сыпнӑ пек тӑчӗҫ.

— Ну, ма нимӗн те чӗнместӗр? Шутласа кӑларӑр мӗн те пулин!

— К-ку тимӗр... м-ман мар! Эп м-мар ун хуҫи! — тӑрук тытӑнчӑклӑ каласма пуҫларӗ Васюков.

— Камӑн тата? Кам ун хуҫи? Ӑҫтан лекнӗ вӑл сан патна?

— Ӑна... ӑна т-темле ш-шофер килсе п-пӑрахрӗ... в-вӑхӑтлӑха, терӗ, к-кайран илсе к-каятӑп, терӗ...

— Мӗнле шофер? Ӑҫтисем?

— Точнӑ пӗлместӗп, Ш-шупашкарта ӗҫлетӗп, терӗ.

— Так ахалех, килчĕ те пăрахса хăварчĕ-и?

— М-мана сутасшăн пулчĕ вăл, эп илмерĕм... Эппин, покалĕ сан патăнтах в-вырттăр, тесе х-хăварчĕ...

— Кĕтрĕмĕр-кĕтрĕмĕр, çынни килмерĕ-ха çаплах,— васкаса хушса хучĕ Мархи.

— Суятăр. Кĕçĕр илсе килнĕ тавар ку сирĕн,— терĕ Борцов.

— П-пирĕн мар! — макăрасла кăшкăрчĕ Васюков.— М-ман отношени никакой та çук унта!

— Паллах, сирĕн мар. Вăрланăскер вăл. Патшалăх пурлăхĕ.

— П-пĕлместĕп эпĕ нимĕн те!

— Вăхăчĕ çитсен — пĕлĕн,— ал сулчĕ Борцов.

Ыттисемпе пĕрле пăхса тăракан Чатта асăрхарĕ — Васюковсене тарăхнипе, тăвăнса çитнипе, Борцов пĕрре хĕрелсе, тепре кăвакарса илчĕ, анчах сассине пĕрре те хăпартмарĕ, лăпкăн, ним пулман пекех калаçма тăрăшрĕ.

— Ну, шутлар, эппин, хуçи те, турă та маннă тимĕре, миçе листа унта,— терĕ вăл,— шутлар та протокол çырар, унтан шанчăклă вырăна кайса хурар. Хуçи тупăниччен.

— Ăна к-кунта та никам та тивмест те-ха... — мăкăртатрĕ Васюков.— Тен, х-хуçи те п-паян-ыранах килĕ...

— Çук ĕнтĕ, саккун хушмасть пăрахса хăварма. Тытăнар!

Милици çыннисем тимĕр листисене иле-иле урăх çĕре хурса шутлама тытăнсан (вĕсене кўршĕ йĕкĕчĕпе Чатта та пулăшрĕç) Васюков арăмĕ кăшт кăна пăрăнса картишнелле кĕрсе кайрĕ, ун хыççăн Васюков хăй те кайма пикенчĕ, анчах Борцов ăна тўрех чарчĕ:

— Эс ниçта та ан кай, хуçи. Пулăшмасан та, эпир шутланине пăхсах тăр — кам пĕлет, тен эпир йăнăш тăвăпăр, сан çине ытлашши çырса хурăпăр? Кайран эсĕ, кутăна персе, протокол çине те алă пусмăн!

— Эсирех йăнăшас ç-çук-ха... — терĕ те Васюков, темшĕн питĕ хытă хыçкаланма тытăнчĕ.

Çав вăхăтра унăн арăмĕ пўрте чупса кĕрсе алăка шал енчен çаклатрĕ, унтан кăмака умĕнчен спичка илчĕ те тĕпсакай алăкне хăвăрт кăна уçса анса кайрĕ. Тепĕр тăват-пилĕк минутран каялла тухрĕ, тĕпсакайне каллех хупрĕ, кĕпе аркине çыпăçнă тусанран тасатма

силлекелесе илчӗ те крыльца алӑкӗпе урама тухса, тӳрех хӑйсен пӳрчӗ хыҫӗнчи пралукалла чӑмрӗ. Тата тепӗр пилӗк минутран ҫырма хӗрринчи пӗчӗк пӳрт алӑкӗнчен шаккарӗ—унта унӑн утмӑлтан иртнӗ чирлӗрех амӑшӗ пурӑннӑ.

— Сӗт илсе килтӗн-и? — ыйтрӗ карчӑк.

— Каккуй унта сӗт шухӑшӗ! — тарӑхса ал сулчӗ Мархи.— Кӗтмен хурлӑх йӑтӑнса анчӗ пуҫ ҫине!

— Мӗн тата? Айтурух...

— Милицисем пырса кӗчӗҫ, ухтараҫҫӗ! Каҫхине пӗрисенчен таҫтан шӑхӑртнӑ тимӗр илсе юлтӑмӑр та, ҫавна тупрӗҫ. Тунма майӗ ҫук. Тен, кил таврашӗнче те опӑскӑ тӑваҫҫӗ-и! Ман ухмахне тытса кайма та пултараҫҫӗ... Кайран-малтан тем курас пур, ӑҫтан пӗлен!

— Ай тур-тур, апла... Мӗн тумалла?!

Мархи хӗвӗнчен тутӑрпа чӗркенӗ япала туртса кӑларчӗ.

— Ҫакна тӗплӗрех пытарар, анне, халех!

— Мӗн вӑл? — хӑрарах ыйтрӗ карчӑк.

— Ӗне пӑхӗ мар ӗнтӗ! Укҫа! Шӑп пилӗк пин унта. Лешсем тупсан, пӗр сӑмахсӑрах туртса илеҫҫӗ, ҫавӑнпа та часрах тӗпсакайӗнчен кӑларса сан патна чупрӑм. Тавай, пӗр-пӗр чӳлмек ӑшне хурса ҫенӗк айне чавса хуратпӑр.

— Ах, тур-тур-тур, мӗнле-ха капла?

— Ан тур-турлатса тӑр!

— Ара, кӗрӗве тытсах кайсан каллех хӑраххӑн юлатӑн-ҫке! Ахаль те тӑват упӑшкана ҫитрӗн...

— Вунна ҫитсен те сан ӗҫ ҫук! — кӑшкӑрса пӑрахрӗ ӑна хирӗҫ Мархи.— Тытса кайсан та кулянмастӑп, вӑл тӗрмере ҫӗрсен те пӗр пӗрчӗ куҫҫуль ӳкерессӗм ҫук — килӗ-ҫурчӗ пурӗпӗр хама юлать!

— Ытлах-ҫке ҫав эсӗ... хӑвӑн ҫинчен ҫеҫ шухӑшлатӑн...

— Кам ҫинчен шутлас тата манӑн? Пурнӑҫра ӑна мӗн май килнӗ таран ыр курас пулать. Ку упӑтепе пурӑннинчен — ырри пур-и? Арҫын ӗҫне те пултараймасть, сӗлеки кӑна. Юнашар выртсан та хӑсӑк килет!

— Ма ҫыхлантӑн, эппин, унпа? Сана никам та вӑйпа паман...

— Ак тата! Астумастӑн пулать иксӗмӗр мӗнлерех калаҫса шут тунине? Вӑл вилсен, пӗтӗмпех сана юлать, тесе калаканӗ эс марччӗ-и?

— Астумастăп ĕнтĕ, хĕрĕм. Сана хирĕç мĕн калам эп?

— Калама та кирлĕ мар. Атя, укçине шанчăклăрах пытаратпăр та, ман часрах киле таврăнас. Шырĕç тата, тухса тарнă ку, тейĕç. Милицисем умĕнче ман таса пулмалла. Лешне хуть те мĕн туччăр!

...Вĕсем хăйсен ĕçне Мархи каланă пек пит тĕплĕ туса пŷрте кĕчĕç кăна — хайхи кŷршĕ йĕкĕчĕ чупса та çитрĕ.

— Атя хăвăртрах, Мархи аппа, милицисем чĕнеççĕ! — терĕ вăл хашка-хашка.

— Мĕн тума кирлĕ эп вĕсене? Кил хуçи пур-иç унта! Çŷреççĕ шăршласа, шуйттансем...— вăрçса илчĕ Мархи.

— Милицисем кĕлете кĕрсе пăхасшăн, анчах старикку уççи сан çумăнта, терĕ пулмалла...

— Кĕлетре мĕн шырамалла вĕсен?

— Эп пĕлеп-им! Хăйсенчен ыйт киле пырсан...

— Санне те мăйна тепĕр майлă пăрса лартмалла-ха, продягă! — терĕ Мархи, вĕсем йĕкĕтпе иккĕшĕ урама тухсан.

— Мĕн тунă вара эпĕ? — ыйтрĕ йĕкĕт.

— Çĕрле пирĕн пата машин пыни çинчен мĕн тума йĕпетсе памалла пулчĕ? Ылтăн тухать-и сана уншăн?

— Атте-анне мана суйма вĕрентмен. Комсомол уставĕ те суйма хушмасть. Эп тĕрĕссине каланă. Пулнă япалана пулман тесе мĕнле калам-ха эпĕ? Тата, эп ним каламан пулсан та, вĕсем пурĕпĕр пĕлетчĕç: сарай хыçĕнчи тимĕре кĕсъене чиксе пыраймастăн. Лаша та туртаймасть ун чухлĕ. Эппин, машинпа пынă...

— Тăхта акă, таварăтăп сана куншăн! Каçармастăп!

— Ан юна, хăраканниех мар эпĕ. Малашне сирĕн пеккисене хытăрах тытма пуçлатпăр-ха, дружина тăватпăр. Пĕр вăрă та, пĕр жулик та, пĕр хулиган та иртĕнеймест пирĕн ялта!

Урăх вара çул тăршшĕпех чĕнмерĕç вĕсем.

...Сарай хыçĕнче таçтан вăрласа килнĕ тимĕр купи тупăнсанах ОБХСС инспекторĕ Борцов капитан ку Васюков килĕнче тĕплĕ обыск тума шутларĕ. Кам пĕлет, тен, тата тем те тупăнĕ?

Кучанов лейтенант ку шухăшпа тӳрех килĕшрĕ.

— Анчах кун пирки постановлени çырас пулать пирĕн,— аса илтерчĕ çеç вăл.

— Ăна çырасси темех мар-ха, çырăпăр,— терĕ Борцов.

— Эппин, тимĕр листисем пирки халлĕхе протокол çырмастпăр?

— Обыск хыççăн çырăпăр. Протокола кĕртмеллисем татах тупăнма пултараççĕ.

— Тĕрĕс. Эпĕ те çапла шутлатăп.

Пахчаран картишне тухсан, Борцов Васюкова чăн малтан кĕлетне уçма хушрĕ — кĕлет алăкĕ çинче тимĕр тăлă çăраççийĕ çакăнса тăнă.

— Кĕрсе курар-ха, мĕнле пуянлăх упранать сан унта...

— Мĕн п-пултăр к-кĕлетре? Н-нимĕн те ç-çук... ăпăр-тапăрсăр пуçне... — хулпуççисене хутлатса, аллисене ик еннелле сарса илчĕ Васюков.—Ч-чăрманма та кирлĕ мар...

— Нимĕн те çук пулсан, чăрмавĕ те пысăках пулмĕ, анчах пире ăпăр-тапăра курни те кансĕрлемест.

— Уççи çук манăн, арăм çумĕнче. Пӳртрен чĕнсе т-тухам-ха эппин ăна...

— Халь ĕнтĕ эс ан чăрман, Васюков, арăмна ак çак каччă та чĕнме пултарать,— терĕ Борцов.

Кӳршĕ йĕкĕчĕ пӳртре пĕр самант та тытăнса тăмарĕ.

— Çук унта никам та!

— Епле çук? Ăçта кайнă? Тен, эс ăна юри таçта чуптартăн? — çилĕпе ыйтрĕ Борцов Васюковран.

— Тупата т-туршăн... — пăт-пат хĕрес хывса илчĕ Васюков, пиçнĕ пулă куçĕ пек куçне час-час мăчлаттарса.— П-пĕр сăмах та... к-каламан!

— Эппин, ăçта çухалнă вăл?

— П-пĕлместĕп! Ç-çапса пăрахсан та!

— Шухăшла-ха лайăххрах, тен, санпа пĕрле хăйне те айăпласран хăраса, пуçĕпех тухса тарнă, э?

— Ап... аплах м-мар пуль-ха, ытлашши шикленекенни мар вăл, кирлĕ пулсан хăй те хуть к-кама та х-хăратма пултарать. Вĕреçĕлен, каснă-лартнă сăтана ами... Амăшĕ патне кайнă п-пулинех! Чирлĕ те лешĕ, кая-кая п-пулăшать ăна.

— Ăçта ун амăшĕ?

— Ак... ку п-пӗлет... — кӳршӗ йӗкӗчӗ ҫине кӑтартрӗ Васюков.— Ч-чуптӑр, инҫе мар...

...Халь ӗнтӗ ҫав йӗкӗт Васюков арӑмне киле илсе пычӗ.

Борцов ӑна тӳрех кӗлет алӑкне уҫма хушрӗ.

— Мӗн тума-а? Унта мӗн шырас тетӗр тата-а? — ҫав тери кураймасӑр, ҫисе ярасла пӑхрӗ ун ҫине Мархи.— Кӗлетре ман япаласемсӗр пуҫне нимӗн те ҫук!

— Пурри-ҫуккине хамӑрах курӑпӑр,— терӗ Борцов.

Курмалли пит нумай пулнӑ-мӗн кӗлетӗнче! Алӑкран кӗрсенех, Борцовпа Кучанов, вӗсемпе пӗрле кӗнӗ Чатта та, кӳршӗ хӗрарӑмӗпе унӑн ывӑлӗ те мачча ҫумӗнчи урлӑ каштаран ваткӑллӑ фуфайкӑсем ҫакӑнса тӑнине курчӗҫ,— ҫирӗм-вӑтӑр та пулӗ. Пурте ҫӗнӗ. Кӗтесре пӗр купа кирзӑ кунчаллӑ атӑ выртать. Вӗсем те ҫӗнӗ. Ҫавӑнтах хӗрлӗ, сенкер, симӗс резин атӑсем выртаҫҫӗ — хӗрарӑмсем пит юратакан тавар.

— Кусем пурте сан япалусем ӗнтӗ, ҫапла-и? — йӗрӗнерех ыйтрӗ Борцов Васюков арӑмӗнчен.— Ҫӗр ҫинче миҫе ҫул пурӑнмалла-ши кусене тӑхӑнса пӗтерме?

— Эпир вӗсене вӑхӑтлӑха, лавккари подсобкӑра вырӑн ҫитменнипе ҫеҫ илсе килнӗ,— терӗ Мархи ним тытӑнса тӑмасӑр, ӗнентерес пекех.

— Ун пек саккун ҫук, Васюкова! Ан та суйса тӑр, эсир ку тавара пӗтӗмпех вӑрттӑн сутма сӗтӗрсе килнӗ. Спекуляци валли! — терӗ Кучанов.— Ходовой тавар, пурне те кирлӗ, хуть те кам та ун хакне ыйтса тӑмасӑрах илет.

Мархи ҫавӑнтах ӑна хирӗҫ кастарма тапратрӗ:

— Эс мана тытрӑн-и? Тытрӑн-и? Куртӑн-и спекуляци тунине? Курман, тытман, ҫавӑнпа та ан та йӑслаcа тӑр! Эпир пур енчен те таса! Улталаман, вӑрламан, ыттисем пек пинӗ-пинӗпе растратӑсем туман!

Ӑна Борцов пӳлчӗ:

— Эсӗ ху ан йӑсла-ха, Васюкова! Курӑнать эсир мӗн тери таси, вӑрламанни, пит лайӑх курӑнать!

Япаласем чылай тупӑнчӗҫ Васюковсем патӗнче — икӗ михӗ чи лайӑх йышши шур ҫӑнӑх, пӗр михӗ типӗтнӗ вобла, аш консервисем — ещӗкӗпех, ҫӑралатнӑ сахӑрлӑ сӗт...

— Вӑйлӑ! — терӗ Борцов, кӗлетре мӗн пуррине пӑхса тухсан.

Унтан вӑл кӗлете питӗрсе илчӗ те уҫҫине хӑй ҫумне

чикрĕ. Нӳхрепçине уçтарчĕ, анчах унта нимех те тупăнмарĕ. Çенĕхри чăланта вара виç-тăватă ещĕк эрех тăнине курчĕç — шурри те, хĕрли те.

— Кам валли тытатăр кун чухлĕ эрех? — ыйтрĕ Борцов Васюковран.

— К-кирлĕ п-пулать тепĕр чух...— аран сывласа ячĕ лешĕ.

— Ахальтен мар алкоголика тухса кайнă иккен эсĕ!

— Нимле олгоголик та мар вăл, çынсенчен ытла ĕçмест,— упăшки хутне кĕме васкарĕ Мархи.— Ку эрехе эпир ман валли илсе килнĕ!

— Сан валли?! — Борцовпа Кучанов иккĕшĕ те ĕненмесĕр пăхрĕç хĕрарăм çине.— Епле... сан валли?

— Ман валли çав!

— Эс те çав териех ĕçетĕн-и вара? — кулмасăр тӳсеймерĕ Борцов.

— Хам ĕçме мар, çынсене ĕçтерме илсе килнĕ! Кĕçех манăн менелник çитет, вăтăр пиллĕк тултаратăп. Хăна пухатăп. Аллă çын ытла чĕнетĕп. Сахал кирлĕ-и вĕсене?

— Анчах ма-ха эрехне малтанах хатĕрлемелле, хăнусем пухăннă кун та илсе килмелле мар-и? Лавкки хăвăрăн алăра-çке?

— Эрехĕ пĕтет, ку чухнехи халăх лаша пекех ĕçет вĕт! Тепĕр чух икшер уйăх пĕр тумламсăр ларатпăр. Çавăнпа хатĕрлесе хутăм. Çăкăр ыйтмасть, шăршланмасть...

— Лавккара çуккипе, çынсене ир-каç хаклăраха та сутма пулать,— терĕ кӳршĕ йĕкĕчĕ.— Пĕлетпĕр...

— Мĕн пĕлетĕн эс? Мĕн пĕлетĕн? — харр! турĕ Мархи.— Сана сутрăм-и? Миçе тенкĕ ытлашши илтĕм санран?

— Эп ĕçместĕп, мана сан эрехӳ ахаль парсан та кирлĕ мар.

— Кама сутнă, эппин? Куртăн-и? Тытрăн-и? Кала! Е юри элеклессӳ килчĕ-и милицисене? Аннӳпе иксĕр те лĕпĕрти эсир! Суда паратăп ак элек сарнăшăн!

— Судне ăна эпир мар, эсир кайăр-ха... пит лайăх кайса ларăр! — ал сулса аяккалла пăрăнчĕ кӳршĕ йĕкĕчĕ.

Юлашкинчен милици çыннисем пӳртре ухтарчĕç. Мархин «Москвич» кузовĕ пысăкăш арчинче мануфак-

тура пит нумай иккен. Чыхсах тултарнӑ. Тем тӗрли те пур. Пӗтӗмпе шутласан, икҫӗр-виҫҫӗр метр та пулӗ. Пушмаксем ҫич-сакӑр мӑшӑр. Пӗрне те тӑхӑнман. Кӗпи-йӗмӗ тӗрки-тӗркипе. Алла ҫыхмалли сехетсем виҫҫӗ, пӗри ылтӑн. Шӑрҫасем, хӑлха ҫаккисем темиҫе тӗслӗ...

— Пуян пурӑнатӑн,— терӗ Борцов, арчари пӗтӗм пурлӑха тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн пирус тивертсе.— Ӗлӗкхи кулак хӗрӗсене те кун чухлӗ парне паман пуль...

— Мӗн пуянӗ пур унта? — хирӗҫлерӗ Мархи, ун ҫине кӗҫ-вӗҫ сиксе ларас пек пӑхса.— Туяннӑ ҫав вӑй ҫитнӗ таран! Эп ватӑ мар-ха, ман тумланмалла! Эс те хӑвӑн арӑмна ҫӗтӗк-ҫатӑк ҫӳретместӗн ӗнтӗ, ҫапла-и?

— Ман арӑмӑн кун пек промтавар склачӗ ҫук, тата кирлӗ те мар вӑл ӑна.

— Анчах мана кирлӗ! Кирлӗ пирки туяннӑ!

— Кун чухлӗ тупра туянмалӑх укҫа-тенкӗ е заем-лотерейӑпа выляса илес пулать, е... вӑрламалла, Васюкова!

— Ӑҫтан пӗлес, тен, эпӗ чӑнах та выляса илнӗ? Ӑна никама та каламаҫҫӗ вӗт? Тен, пилӗк пин тухнӑ мана? Пулаҫҫӗ-иҫ ҫӗр ҫинче телейлӗ ҫынсем? Шӑкӑрт! пӗлӗтрен телей татӑлса анать вӗсен пуҫӗ ҫине...

— Ҫитӗ, Васюкова! — чарчӗ ӑна Борцов.— Ан васка, пӗтӗмпех паллӑ пулӗ ак — выляса илни те, ытти те!

Вӑл Кучанов лейтенанта тӗпсакайне кӗрсе пӑхма хушрӗ.

Мархи, лейтенант ҫине пӑхса, тӑрӑхламалла кулса илчӗ:

— Тытса тух-ха пӗр-икӗ йӗкехӳре! Урӑх ним те тупаймастӑн унта!

Анчах ҫав вӑхӑтра Васюков Мархи ҫине темрен питӗ хытӑ хӑранӑ пек пӑхрӗ. Вӑл питӗ пӑлханчӗ курӑнать, тем каласшӑн пулчӗ, сӑмахӗсем чӗлхе вӗҫнех пычӗҫ, ҫапах та ҫынсем умӗнче нимӗн те калаймарӗ. Май килнӗ пулсан, вӑл хӑйӗн арӑмне: «Унта укҫа-ҫке пирӗн, милицисем тупсан — мӗн курӑпӑр?» — тейӗччӗ. Пӗлмен-ҫке вӑл нимӗн те, чухламан Мархи тӗпсакайӗнчи укҫана пӗр пус юлми кӑларса кайнине...

Кучанов пӗр вунӑ минут тӑчӗ тӗпсакайӗнче.

— Ак ҫакӑнсӑр пуҫне нимех те курӑнмарӗ, капитан юлташ,— терӗ те вӑл каялла тухсан, Борцов умне пӗр вӑтӑр сантиметр сарлакӑш, ҫирӗм сантиметр ҫӳллӗш тимӗр коробка хучӗ.

— Авалхи япала-ҫке ку... — терӗ Борцов, коробкăна ун-кун ҫавăркаласа.— Революцичченхи. Кун пек коробкăсемпе ӗлӗк чей сутнă. Ав, кукăрткаласа ҫырни халь те палăрать — «Чай китайский...»

— Ансанах ура айне лекрӗ, чут такăнса ӳкеттӗм,— терӗ Кучанов.

Ҫав самантрах вӗсем патне Васюков пырса тăчӗ те, темиҫе хут хаш та хаш сывласа илсе, чӗтрекен сасăпа ыйтрӗ:

— П-пушахчӗ-и вара в-вăл? Н-нимӗн те ҫукчӗ-и коробкинче?

— Пушахчӗ. Фонарьпе ҫутатса пăхрăм — уҫă выртатчӗ.

— С-суятăн! Суятăн эсӗ, т-тавариш! П-пушă пулман вăл! — Васюков сасси тата хытăрах чӗтрерӗ.— П-пушă мар! П-пулнă унта... пӗр-пӗр япала! Пулнă!

— Мӗн тытнă вара эсир ку коробкăра? — ăна куҫран пăхса, хăвăрт ыйтрӗ Борцов.— Укҫа-и? Тен — ылтăн, кӗмӗл?

Васюков тем калама тăчӗ, анчах арăмӗ пӳлсе лартрӗ ăна:

— Мӗн палкатăн кирлӗ мара?! Ним те пулман, тахҫан песок тыткаланăччӗ ҫеҫ вăл савăтра. Тутăхнă япала, ниме юрăхсăр, кăларса пăрахмаллискер. Тӗпсакайне темле ӳкнӗ-ҫке...

— М-мархи... М-мархи, эс м-мӗн... Илтӗн-и? Илсе ч-чикрӗн-и? — арăмӗ патнелле пӗр-иккӗ ярса пусрӗ Васюков.— Эп... эп сана...

— Мӗн, мӗн мана?! — кăшкăрчӗ ăна хирӗҫ Мархи.— Пуҫӗпех тăнран тухса кайрăн-и? Пӗр пӗрчӗ ăс та юлмарӗ-и?

— Вӗлере-еп! — ҫухăрса ячӗ Васюков.— Вӗреҫӗле-ен! Килти бандит, вуник мăйракаллă шуйттан!..

— Асту, ху вилсе ан вырт малтан! — чышкине кăтартрӗ Мархи.

Борцовпа Кучанов упăшкипе арăмӗ ҫак тимӗр коробка пирки ахальтен кăшкăрашманнине ăнланчӗҫ. Эппин, темскер пулнах унта! Анчах — мӗн-ши? Укҫаши? Укҫах пулсан — ăҫта кайса кӗнӗ вăл?

Борцов Васюковран хăйӗнчен ыйтрӗ:

— Каласа пар-ха ҫапах та, мӗн тытнă, мӗн усранă, эсир ку тимӗр коробкăра? Тен, темле хаклă япала? Пӗр купа капитал?

— Тытман, нимĕн те тытман! — кăшкăрчĕ Мархи.

— Санран ыйтмаççĕ, Васюкова! Упăшку калатăр, ан чар ăна!

— Ухмаха ернĕ вăл ĕçе-ĕçе, ăсĕ пăтранса кайнă, çавăнпа тем те пĕр шухăшласа кăларать!

— Кала, Васюков...

Анчах Васюковĕ тек нимĕн те каламарĕ. Пукан çине лак! ларса, пуçне сĕтел çине хучĕ те ӳлесех макăрса ячĕ.

— Явăл... Вĕреçĕлен!.. Пĕтерчĕ мана... пуçа çирĕ... ы-ы, йытами!.. Ыр курах ĕнтĕ халь, ыр кур! Санăн та шалчу тулĕ-ха хăçан та пулин, эс те юнлă куççулĕпех макăрăн... — мăкăртатрĕ хăй.

Питĕ йĕрĕнмелле пулчĕ ку. Çав тери!

— Пĕр вăрă тепĕр вăррине çаратнă пек туйăнмасть-и сана, капитан юлташ? — ыйтрĕ Кучанов.

Борцов чĕнмерĕ.

## 18

Милици çыннисем Васюковсен килĕнче ухтарса тупнă япаласене пурне те йĕркипе асăнса, вĕсем мĕн чухлĕ пулнине кăтартса, тĕплĕ протокол çырчĕç. Пахчари тимĕр, кĕлетри таварсем, чăланти эрехсĕр пуçне Мархи арчинче мĕн-мĕн выртнине те кĕртрĕç протокола — вĕсене ĕçлесе тупнă укçапа илменни ытла та лайăх курăннă-çке! Мĕн çырнине пурте илтмелле вуласа пачĕç те малтан милицисем хăйсем ал пусрĕç, унтан Васюковсене — арăмĕпе иккĕшне те, «пунеттейсене» — Чаттана, кӳршĕ хĕрарăмĕпе унăн ывăлне пустарчĕç.

— Халь ĕнтĕ кунти власене чĕнес, лейтенант, вĕсемсĕр ĕç тухмасть пирĕн,— терĕ Борцов.— Курччăр, мĕнле ĕçсем пулса пыраççĕ вĕсен территорийĕнче, вĕсем сисмен чух. Унсăр пуçне, вещдоксене * илсе тухса ăçта та пулин хумалла вĕт-ха. Шанчăклă склад кирлĕ. Каç-каç хурал тăратмалла. Уншăн вĕсем ответ тытаççĕ.

— Юрĕ, капитан, халех кайса тупса килетĕп,— терĕ Кучанов.— Колхоз председателĕ пулать-и унта, ял Совечĕн-и...

— Иккĕшне те тупсан тата авантарах.

— Шыраса пăхăп.

---

* **Вещдок** — вещественное доказательство.

Анчах лейтенантăн ниçта та кайма тивмерĕ — шăп çав вăхăтра Васюковсен картишне пĕр вăтăр çулсенчи лутрарах хĕрарăмпа кăшт ухсахлакан, кăкăрĕ çине орденсемпе медальсен колодки çакнă типшĕмрех арçын пырса кĕчĕç. Участокри уполномоченнăй Кучанов лайăх паллать вĕсене: хĕрарăмĕ — кунти ял Совет председателĕ, арçынĕ — колхозри парторганизаци секретарĕ.

— Питĕ вăрттăн ĕçлетĕр-çке! Эпир ним те пĕлместпĕр... — терĕ мăнăрах саслă хĕрарăм-председатель, пўрте кĕрсе милици çыннисене ал парсан.— Юрать, сисĕмлĕ çынсем пур, пырса каларĕç...

— Кам пĕлтерчĕ вара сире?

— Хамăрăн техничках, кунтан инçе мар пурăнать, урамра сирĕн машина тăнине курнă та шăтăк витĕр пăхнă. Пычĕ те — Васюковсем патĕнче картиш тулли милици, тет...

— Ун чухлех мар-ха, иккĕн кăна эпир,— терĕ Борцов.

— Мĕн пулнă капла? — председатель чăлан çумĕнче юпасем пек хытса ларакан Васюковсем çине пăхрĕ.— Çаратса кайман пулĕ-çке сире кĕçĕр? Ма чĕнместĕр?

— Ним те пулман,— терĕ Мархи шăл витĕр.— Пире юратнипе килнĕ вĕсем, курма килнĕ!

— Тĕрĕссипе калăр-ха ĕнтĕ! — Борцовпа Кучанов еннелле çаврăнчĕ председатель.— Ман пĕлмеллех вĕт. Епле пулсан та, эп — Совет...

— Тĕрĕссине пĕлме хăвăн куçупа кур,— терĕ те Борцов ăна хирĕç, ура çине тăчĕ.— Атьăр, кăтартар сире.

Милици çыннисем ял Совет председателĕпе парторганизаци секретарьне малтан пахчана илсе тухса хайхи тимĕр купине, унтан кĕлетри таварсене, чăланти эрех ещĕкĕсене те кăтартрĕç.

— Епле пуян пурăнать сирĕн Васюков, э? Ĕлĕкхи лавăшник-хуçасенчен те кая мар-иç? — терĕ Борцов.

— Çĕр çăттăрах! Кам шухăшланă вăл ун пекех хăтланать тесе!—питĕ кўренсе каларĕ председатель.— Пăхма чипер çынах пек...

— Чиперри тахçанах пĕтнĕ унăн, анчах эсир çаврăнса пăхман, ирĕке янă. Вара вăл мĕн тăвас тенĕ — çавна тунă!

— Нумаях та пулмасть райпосем килсе ревизи тунӑччӗ-ха. Унти хӗрарӑмпа, леш Сятрова тенипе, хам та калаҫрӑм. Пӗтӗмпех йӗркеллӗ, недостача-растрата тавраш ҫук, терӗ вӑл. Хӗпӗртерӗм унӑн...

Калаҫӑва парторганизаци секретарӗ хутшӑнчӗ.

— Хамӑр айӑплӑ, хамӑр! — терӗ вӑл.— Ытла нумай тӳссе пытӑмӑр, темле иртӗнсен те каҫартӑмӑр ӑна! Юлашки вӑхӑтра Васюковӑн ӗҫсе супман кун та пулман. Вӑл ӳсӗр чух лавккинче арӑмӗ хуҫаччӗ. Жалобӑсем нумайччӗ ун пирки—питӗ кӳрентернӗ вӑл ҫынсене. Пӗлтӗр, ав, фельетон та тухнӑччӗ вӗсем пирки райхаҫатра. Эс ҫырнӑччӗ вӗт-ха, Чатайкин юлташ? — ун ҫине пӑхса илчӗ секретарь.— Лайӑх ҫунтарса илнӗччӗ, вӑрахчен кулса пурӑнчӗҫ ҫынсем, ҫапах та уссиех курӑнмарӗ. Ун пек ҫынсемшӗн выговор — мӗн вӑл? Пӗр кунлӑх ернӗ сунас вырӑнне те хумаҫҫӗ ӑна вӗсем!

— Сирӗн хӑвӑрӑн та ҫирӗпрех сӳтсе явмалла-мӗн ун пирки,— терӗ Борцов.— Куҫран ӳкес темен ӗнтӗ, ҫавӑнпа шарламан эсир!

Секретарь хирӗҫ каларӗ:

— Тӗрӗс мар, капитан, шарламасӑр тӑман эпир. Лавкка пирки эпир хамӑрӑн партпухура та калаҫнӑ, райпона та пӗлтернӗ, Васюковне кӑларса урӑххине лартма та ыйтнӑ. Анчах вӗсем килсе ревизи пекки турӗҫ те шӑп пулчӗҫ. Тивмерӗҫ Васюкова. Те ревизорӗсене лайӑх кӑна ҫу ҫӗрсе хӑтӑлса юлчӗ... кам пӗлет! Тен, халь те ҫӑлӑнӗ?

— Тек ҫӑлӑнасси пулаймасть пуль,— терӗ Борцов.— Темиҫе статья тӑрӑх ответ тытма тивет унӑн. Ҫирӗп лекет...

— Ҫавӑ чух эппин ӑна! — терӗ ял Совет председателӗ ҫилӗпе.— Арӑмӗ те шутсӑр иртӗнсе кайрӗ, теҫҫӗ. Лавккана пыракансене тепӗр чух поматтӗрни те ярать, теҫҫӗ. Пӗр карчӑка чыша-чыша хӳтернӗ тет лавккаран, текех килсе те ан кӗр, пӗр коробка спичка та памастӑп сана, тесе ҫухӑрать, тет.

— Мӗншӗн-ши?

— Карчӑкне улталанӑ вӑл, вакки тавӑрса панӑ чух ҫирӗм пус хӗссе юлнӑ, анчах карчӑкӗ ухмахах пулман курӑнать, шутласа пӑхнӑ та — эс мана куҫкӗрет улталарӑн, шульӑк, тенӗ. Пуҫланса кайнӑ вара ахӑрсамана. Мархийӗ карчӑка тӗксе кӑларса яма таппратсан, лешӗ те парӑнсах кайман, аллинчи треска-пу-

лăпа пĕр-иккĕ çатлаттарнă Мархие пуç урлă. Юратьха, çынсем пулнă та — чарнă...

— Ытлашши пуйнă, çавăнпа мăнланса кайнă вăл, пурне те ним вырăнне хуми пулнă,— терĕ Кучанов.— Хĕсмелле-мĕн ăна сирĕн пăртак. Тĕрĕсрех каласан — лавккара сутă тума та чармаллаччĕ!

— Райпона эпир ун пирки те каланă,— терĕ парторганизаци секретарĕ,— хăлхана та чикмерĕç пирĕн сăмаха! Хуçи — райпо вĕт!

— Вĕсене те ответ тыттармасăр хăвармăпăр-ха,— терĕ Борцов.

...Протокола кĕртнĕ япаласене Борцов капитан йăлтах тиеттерсе тухса колхоз складне кайса панă вăхăтра Кучанов лейтенант Васюковсен килĕнчен тухмарĕ — Васюкова сыхларĕ. Хăйне арестленине пĕлсе тăракан çынна шанма çук, тĕрмене илсе кайиччен тарма та шут тытĕ! Пулать ун пекки. Хăйсене пурĕпĕр тытасса, тарнăшăн тата хытăрах айăпласса пĕлсех, хăшĕсем тарма пикенеççĕ — хамăр çĕршывра çын куçĕнчен çухалма май пур пек!

Кучанов лейтенант Васюкова: «Тумланса хатĕрлен, эс ĕнтĕ пирĕнпе пыратăн»,— тесенех, Васюков тăпра тĕслĕ пулса кайрĕ.

— Т-тĕрмене штоль? — ыйтрĕ хуллен.

— Çу-ук, районтделенине кăна,— терĕ Кучанов.— Ыйткаласа пĕлмелле санран, куçа-куçăн ларса калаçмалла. Эс пире питĕ интереслĕ япаласем каласа парассăн туйăнать-ха, Васюков...

— Ман çумра нимĕнле интерес та çук! — мăкăртатрĕ Васюков.— Эп ахтьор мар, камитсем кăтартма пĕлместĕп...

— Камичĕсене пит лайăх кăтартатăн-ха эсĕ, паçăр та кăтартрăн пире, утиял айĕнче тапкаланнă чух...

— Ун чух ман куçа чăнах шуйттансем курăнчĕç.

— Халь курăнмаççĕ-и ĕнтĕ?

— К-курăнать... пĕри! Ак çакă! — арăмĕ çине тĕллесе кăтартрĕ Васюков.— Чĕр шуйттан... Халь манăн пĕр интерес анчах — ăна çапса пăрахасси!

— Ай-у-уй, мĕншĕн-ши, старик? — тутине чалăштарса илчĕ Мархи.— Пи-итĕ лайăх пурăнтăмăр-çке, çамрăк пуçпах сана, ват йытта, качча тухса пĕр çул-

талăк ыр кăтартса пурăнтăм... Хăвна тытса кайнăшăн эп айăплă-им?

— Кам тата?! Кам? — сиксе тăчĕ Васюков.— Пĕтĕмпех эс айăплă! Эсĕ, вĕреçĕлен! Ним те çитмест сана: тавай, тавай, май пур чухне пуйса юлас! Пуйрăн ĕнтĕ халь!

— Эс пуйнă пулинех,— йĕрĕнсе ал сулчĕ Мархи,— эп нихăш енчен те пуйман-ха, ман çумра нимĕн те çук!

— Ç-çук?! Епле çук? Ăçта... леш укçа?

— Мĕнле укçа-а? Мĕн калаçатăн эсĕ, ват сăс? Мĕн палкатăн кирлĕ мара? Пуçна шăк тулчĕ пуль санне!

— Пилĕк пин! Ак çакăнта выртни! — чӳрече анинче ларакан паçăрхи тимĕр коробка çине кăтартрĕ Васюков.— Хăш вăхăтра çаратрăн, аçа çапманскер? Кала!

— Ай, ухма-ах, ай, ухмах-çке-е! — пуçне пăркаласа илчĕ Мархи.— Сан пек тăмсай тĕнчипе те урăх çук çав...

— Тĕрĕс! Ухмах эпĕ! Тăп-тăр ухмах, адийот! Сана итлесе пурăнтăм. Эс хушнă пек турăм. Халь хамах пĕтрĕм! Кала луччă, ак, милици умĕнче кала, ăçта чикрĕн çав пилĕк пине? Маншăн халь пурĕпĕр, ним те пытармастăп!..— вăл, питĕ тимлĕ итлесе ларакан Кучанов еннелле çаврăнса, кăшкăрма тытăнчĕ: — Милици юлташ! Манпа пĕрле ăна та тытса кайăр! Вăл укçа вăрланă! Пилĕк пин!

— Камăнне? — ыйтрĕ Кучанов.

— Хамăрăнне... çук-çук, манне! Ак çак коробкăран...

— Чăнах-и ку, Васюкова? — Мархирен ыйтрĕ Кучанов.

— Ухмаха ерме пуçланипе калаçать,— терĕ Мархи,— упăшки çине çав тери кураймасăр пăхса,— нимĕнле укçа та курман эпĕ, ним те пĕлместĕп. Вăл мана нихçан та укçа тыттарман. Парсан та кашни пусне виçĕ хут шутлатчĕ. Тимĕр пăрça — хыткукар, теççĕ-çке, шăп çавăн йышшискер вăл!

— М-ма суян? Пĕтĕм укçа сан аллунта, шуйттан! Пĕр пус таран! Коппек таран...

— Тытман эп сан укçуна!

— Ахх, йытă... — Васюков хăвăрт кăна хайхи тимĕр коробкăна илчĕ те пĕррех печĕ Мархие. Лешĕ пăрăнма ĕлкĕрчĕ.

Çав вăхăтра Борцовпа Чатта таврăнчĕç.

— Ну, кайрăмăр, Кучанов. Эс те, Васюков,— терĕ Борцов.

— Пĕччен пымастăп! — кăшкăрчĕ ăна хирĕç Васюков.— Ак çак курвăна та хупăр! Вăрă вăл! Манран ытла преступник!

— Паянлăха эс пыни те çитĕ-ха.— Борцов Мархи еннелле çаврăнса тăчĕ: — Эсĕ, Васюкова, килтех пул, ниçта та ан кай. Хуть те хăш кун та чĕнме пултаратпăр. Ак çакăнта алă пус-ха, шанчăклăрах пулĕ вара...— вăл, сумкинчен темле бланк кăларса, темиçе сăмах çырчĕ.

— Мĕн тесе ал пусмалла ара? — иккĕленсе тăчĕ Мархи.

— Ниçта та каймастăп, тухса тармастăп тесе...

— Пустуй чăрманатăр, начальник... — тутине чалăштарса кулса илчĕ Мархи.— Ним айăпсăр çын мĕн тума тартăр? Эпĕ Васюков мар вĕт...

Урама тухса машинăна кĕрсе ларас умĕн Васюков арăмне чышкипе юнаса илме ĕлкĕрчĕ:

— Ну, çĕлен! Çапах та таврăнăп-ха хăçан та пулин! Пуртăпа ваклатăп, вутта пăрахса çунтаратăп!

— Юрĕ, юрĕ, ан йăсла, упăте! — йĕрĕнсе ал сулчĕ Мархи.— Чипер кай. Сунас ан ерт, тăмпуç! Варвиттипе ан аптра!

...Милици машини паçăрхи çулпах уя вăркăнса тухрĕ. Хальхинче Чатта малта, Борцовпа юнашар ларса пычĕ. Хыçалта Кучановпа Васюков ларчĕç. Кантăк витĕр малалла пăхса, Чатта паян курнисем çинчен питĕ тарăхса шухăшларĕ... Тарăхмасăр! Нирĕн пĕтĕм халăх, пĕтĕм çĕршыв ырлăхĕшĕн чунне парса, ырми-канми ĕçлекен, çутă ĕмĕтсемпе, таса чунпа пурăнакан совет çыннисем хушшинче пур иккен-ха тӳсме çук путсĕрсем! Улталаса, вăрласа, тем тĕрлĕ киревсĕр меслетсемпе «майлаштарса», ĕçлемесĕр, халăх шучĕпе пуйса пурăнма тăрăшакансем! Тĕп-тĕрĕссипе каласан — халăхăн тăшманĕсем вĕсем. Ăна вăрттăн сиен кӳрекенсем. Ун юнне ĕçекен сăвăссем... Хытăрах тытмалла вĕсене, тăрă шыв çине кăларса пĕр хĕрхенмесĕр айăпламалла. Кукăр аллисене пăрса лартмалла,— ан тăсăлччăр халăх пурлăхĕ патнелле. Тăранман карланкисене пăкăламалла,— ан хыпчăр ĕçлесе тупман çăкăра. Пĕр-

май, кашни кун, пĕр чарăнмасăр тасатса пымалла хамăрăн обществăна ун пек ирсĕрсенчен!..

Чăрăшкассинче май та килмерĕ, вăхăт та пулмарĕ Чаттан çĕркаç хăйне Лариса Логинова мĕн пĕлтерни çинчен милици çыннисене калама. Халь аса илчĕ те каласа пама шут тытрĕ.

— Итле-ха, капитан юлташ,— терĕ вăл,— эп ăнсăртран пĕлнĕ тăрăх, Вăкăрварĕнчи завмаг Кагаева патне те хăш чух тĕрлĕ стройматериал пыра-пыра пăрахаççĕ. Халь те пур, терĕç-ха. Тен, çула май кĕрсе пăхатăр? Кам пĕлет...

— Аçтан илтрĕн эс кун çинчен? — ыйтрĕ Борцов.

— Унти çĕнĕ продавщица каларĕ. Эп пĕлместĕп, тен тĕрĕс те мар ку, анчах, кĕçĕрхи машина малтан Кагаева патне пынине шута илсен...

— Тĕрĕс пулма та пултарать. Ун пирки сигнал пур-ха пирĕн. Кĕрсе пăхатпăрах. Сигналсем ахалех паракан мар. Халăх сисĕмлĕ вăл...

— Нивушлĕ вара... нивушлĕ вăл та махинацисем туса пурăнать?!

— Мĕншĕн тĕлĕнтерет ку сана?

— Тĕлĕннинчен ытларах — тарăхтарать-ха.

— Кама тарăхатăн?

— Хама!

— Ăнланаймастăп. Такамсем, вăрăсемпе çыхланса, преступленисем тăваççĕ, эс хăвна тарăхатăн...

— Кагаева çинчен эпĕ пĕлтĕр мухтаса очерк çырнă-çке!

— Ăна эс кăна мар, пурте мухтаса пурăнаççĕ.

— Ку Васюковĕ пирки фельетон çырнă хуть, тĕрĕс тунă, анчах Кагаева пирки йăнăшнă ав...

— Ан кулян. Ним туман çын çеç йăнăшмасть, ĕçлекен çыннăн йăнăшсем пулаççех. Вĕсене вăхăтра сиссе тӳрлетмелле çеç, вара çылăху каçать санăн. Малашне тимлĕрех пăхатăн пурнăç çине...

Пĕр хушă чĕнмесĕр пычĕç. Унтан сăмаха Борцов пуçларĕ:

— Пĕрре-пĕрре пырса лар-ха ман патăма, Чатта юлташ, эп сана пит лайăх материалсем кăтартăп,— лар та çыр детективлă повесть! Кăмălу пур-и?

— Пулмасăр! — тăруках хавасланса кайрĕ Чатта.— Тахçанах пур манăн ун пек кăмăл, анчах питĕ

кăткăс жанр-çке вăл, детектив тени, лайăх консультантсăр нимĕн те тăваймастăн...

— Пулăшăп сана, ĕçле, ан ўркен. Ăçтан пĕлес, тен эсĕ Конан Дойлпа * Жорж Сименонран ** та иртсе кайăн? — йăл кулса илчĕ Борцов капитан.

...Вăкăрварĕнче те Чаттан Чăрăшкассинчи пеккинех курма тўр килчĕ вĕт!

Кагаевăн лупасĕ айĕнче çиелтен тем те пĕр пăрахса тултарнă икĕ купа выртнă, пĕри — тимĕр, тепри шифер купи. Вĕр-çĕнĕ. Çавсене уçса пăхсанах, Борцовпа Кучанов çак пĕтĕм район умĕнче ыр ятлă (унăн сăнĕ райпо умĕнчи хисеп хăми çинче!) завмаг килĕнче те тĕплĕн ухтарса пăхма шут турĕç.

Кăнтăрла иртнĕ, çапах та Кагаева хăй районран таврăнман иккен-ха, ун килĕнче хăлхи начар илтекен Христин тата хуть те кама та тытса çурма пултаракан овчарка çеç пулнă. Чатта хушнипе, Христин ăна хăйĕн йăвине питĕрсе лартрĕ.

— Эсĕ ку фокусникпа лар,— терĕ Борцов Кучанова, Васюков çине кăтартса,— эп правление кайса Сумбатовпа телефонпа калаçса илем. Мĕн хушать вăл? Ирĕк парсан, обыскне кил хуçисĕрех те тума пултаратпăр. Выранти влаçсем, понятойсем пулĕç — мĕн кирлĕ тата?

Вĕсем Чаттапа пĕрле кайрĕç.

— Ну, писатель юлташ, материал пухăнать-и хаçат валли? — ыйтрĕ Борцов Чаттаран çул çинче.— Детективах піçеймест пуль, анчах лайăх кăна судебнăй очерк валли — çителĕклĕ, çапла-и? «Халăх пурлăхне çаратакансем» ятлă икĕ подвал... Е çўлтен аялалла виç колонка...

— Хаçат ĕçне ăçтан пĕлетĕн эсĕ, капитан юлташ?— тĕлĕнерех пăхрĕ ун çине Чатта.

— Сан пек çамрăк чух «Пионер сассинче» ĕçленĕ эпĕ, тусăм. Кашни хаçатçă пекех, писатель пулма ĕмĕтленнĕ. Пулаймарăм! Çара илсен погранслужбăна лекрĕм, вăрçă пуçлансан — контрразведкăна, хĕрĕх саккăрмĕшĕнче киле таврăнсан вара райком милицие кай-

---

* Конан Дойл (1859—1930) Шерлок Холмс ятлă сыщик çинчен детективлă произведенисем çырнă акăлчан писателĕ.

** Жорж Сименон — Франци писателĕ, пĕтĕм тĕнчипе сарăлнă детективлă романсен авторĕ.

ма хушрӗ. Отставкӑна тухмалли вӑхӑт та ҫитрӗ — ярасшӑн мар-ха, тӑхта, теҫҫӗ...

— Тем те курнӑ эппин эсӗ, капитан юлташ. Эпир ӑна нихҫан та курас ҫук. Сирӗн вырӑнта пулсан тепри тахҫанах мемуар ҫырмалла!

— Эпир курни-тӳсни те ҫитет, Чатта юлташ. Сирӗн курма ан тивтӗрех эпир курнине. Мемуар пирки... ларкалатӑп-ха хӑш чух. Анчах манӑн пери мӑкарах-ха. Хӑвӑрт шумасть.

— Материалӗ лайӑх пулсан — ҫивӗчленет. Ҫырӑр, ҫырӑр!

— Хам ҫырнинчен ытла, сана ҫыртарасшӑн эпӗ...

Малтан вӗсем лавккана пырса кӗчӗҫ. Чаттана курсан, Лариса хӑй палламан милици капитанӗнчен именмесӗрех вӑрҫса тӑкрӗ йӗкӗте:

— Ӑҫта ҫухалтӑн эсӗ, мур ачи?! Совӗҫ тени пур-и санӑн кӑшт та пулин? Кира кӗтрӗ-кӗтрӗ те, ҫурранах тухса утрӗ вӗт! Сана подлец, теме хушса хӑварчӗ. Ҫухатрӑн халь хӑвӑн вут-хӗмлӗ юратуна. Санпа пӗр сӑмах та калаҫмасть вӑл урӑх, пӗлсех тӑр!

— Эп... эп айӑплӑ мар, ҫавӑн пек килсе тухрӗ те... — тӳрре тухма тӑрӑшса мӑкӑртатрӗ тӑрук хӗрелсе кайнӑ Чатта.

Борцов ӑна хӳтӗлеме пикенчӗ:

— Чӑнах та, айӑплӑ мар вӑл, юлташ, каҫарӑр ӗнтӗ пӗррелӗхе. Эпир ӑна ЧП пулнӑ ҫӗре понятой вырӑнне илсе кайрӑмӑр. Кирлӗ пулчӗ вӑл пире. Журналист-ҫке, тен, ҫырма та тивӗ, терӗмӗр...

— Манӑн каҫармалли нимӗн те ҫук,— тутине кӑшт ҫеҫ хускатса кулам пек турӗ Лариса,— унӑн савниййӗ те каҫарать-ҫке? Хӑвӑрах шутлӑр-ха: хӗре хӑйӗн ҫӗтӗк мотоциклӗпе илсе килет те, ӑна каялла леҫсе хӑварас вырӑнне ним каламасӑр пӑрахса тухса каять. Мӗнле ӑс-тӑнлӑ каччӑ тӑвать ҫавӑн пек?

— У-у, ун пекех пулсан, хӗр умне чӗркуҫҫи ҫине тӑрсах каҫару ыйтмалла ӗнтӗ! Ӑшӑтма тивет хӗрӗн пӑрланнӑ чӗрине! — кулса илчӗ Борцов та. Унтан Ларисӑран ыйтрӗ:

— Эсир ҫӗнӗ работник вӗт-ха кунта, ҫапла-и?

— Ҫапла. Ик уйӑх та ҫитмен-ха килни.

— Ӗҫсем мӗнлерех ӑнса пыраҫҫӗ?

— Ӗҫлетпӗр майӗпе... Тавар сахалтарах, ҫав лайӑх мар. Ҫынсен кӑмӑлне пӑсатпӑр...

— Кагаева халь те таврӑнмарӗ-и?

— Ҫук-ха.

— Эсир ниҫта та ан кайӑр-ха, эппин, ӗҫ пур манӑн сирӗнпе. Эп халех таврӑнатӑп, тӑхтӑр.

Лавккара Ларисӑпа Чатта иккӗшех тӑрса юлчӗҫ.

— Мӗнле ӗҫ пур-ши манпа ку милицин? — тӗлӗнсе ыйтрӗ Чаттаран Лариса.— Тен, эс пӗлетӗн, пӗрле ҫӳренӗскер?

— Калама пултараймастӑп ҫав.

— Калама хушман-и, пӗлместӗн-и? Ӑнланмалларах кала!

— Пӗлместӗп. Тен, завмаг пирки-и...

— Эс вӗсемпе пӗрле ӑҫта кайрӑн?

— Чӑрӑшкассине ҫитрӗмӗр. Ӗнерхи машина йӗрӗпе.

— Тупрӑр-и вара? Тытрӑр-и?

— Машинӗ ҫук, анчах вӑл пырса чарӑннӑ ҫӗрте вара...

— Мӗн?

— Темтепӗр! — Чатта тарӑхса хыттӑн ал сулчӗ те Васюков килӗнче мӗн-мӗн тупӑнни ҫинчен калама тытӑнчӗ.

Питӗ тӗлӗнсе, куҫӗсене чарса пӑрахсах итлерӗ ӑна Лариса. Ҫав хушӑрах Васюков пӗрре кӑна мар Кагаева патне пыра-пыра кайнине, вӗсем кашнинчех эрех ӗҫнине, Христин пӗррехинче вӗсем иккӗшӗ пӗрле выртнине те курни ҫинчен каланине аса илчӗ. Ним иккӗленмелли те ҫук — ахальтен ҫавӑн пек туслӑ пурӑнмаҫҫӗ Васюковпа Кагаева, пӗрле тӑваҫҫӗ вӗсем хӑйсен жуликла ӗҫӗсене! Лариса кунта килнӗ чӑн малтанхи кунах палкаса ларчӗ ӳсӗр Васюков: «Эпир Анкӗл Егорчӑпа питӗ килӗштеретпӗр... Пулӑшатпӑр пӗр-пӗрне... Эп — ӑна, вӑл — мана...» Мӗнле пулӑшаҫҫӗ? Хӑш енчен? Халӑхӑнне никам сисмелле мар вӑрлама пулӑшаҫҫӗ, урӑх ним те мар!..

— Тухса таратӑп эп кунтан,— терӗ Лариса, Чатта каласа пӗтерсен,— пурӑнмастӑп ҫакӑн пек хӑрушӑ ҫынсем хушшинче! Хама та таҫта тӗпсӗр лачакана кӗртсе ярӗҫ. Пӗр айӑпсӑрах тем курса ларӑн...

— Ун пек пулма пултараймасть-ха,—терӗ Чатта,— ан та шутла!

— Епле пултараймасть?! Сахал-и ун пекки? Пӗри вӑрлать, айӑпне теприн ҫине яраҫҫӗ.

— Эп ун пирки мар-ха, эс кунтан тухса тарасси

пирки калатăп. Шухăшламасăр персе ятăм кăна. Эс комсомолка вĕт-ха! Комсомолецсем йывăр самантсенче хăçан аяккалла тарнă? Вĕсем йывăрлăхсене çĕнтерме тăрăшнă! Вăрçă çинчен каламастăп — фронтра комсомолецсем ĕмĕрлĕх историе кĕрсе юлмалли ĕçсем тунине пĕтĕм тĕнче пĕлет. Анчах мирлĕ пурнăçра та комсомолецсем йывăрлăхсенчен хăраман. Колхозсем тунă вăхăтра кулаксем çамрăк активистсене сахал тапăннă-и? Пăшалпа та пенĕ, килĕ-çурчĕсене çунтарса янă... Уншăн вĕсем ял пурнăçне çĕнетесшĕн кĕрешме пăрахман-çке? Таçти тайгасенче çĕнĕ хуласем, заводсем тунă чух çăмăл пулнă-и çамрăксене? Сиввине те, выççине те тӳснĕ, çавах ĕçленĕ, мĕн тумаллине тунă. Чыссăррисем çеç тарнă...

— Эс чим-ха, агитаци туса ан тăр ман умра,— пӳлчĕ ăна Лариса,— ытла та хаçатра çырнă пек калаçатăн... Йывăрлăхсенчен эп те хăрамастăп, улпут хĕрĕ мар, анчах сан тавра жуликсем çĕлен-калтасем пек йăшăлтатсан...

— Пурпĕрех хăрамалла мар! Тасатаççĕ вĕсене! Совет çĕршывĕнче пурăнатпăр пуль? Акă, пĕрине, Чăрăшкассинчине, тытса та килчĕç. Пĕлме çук, тен, санăн завмагу та унпа пĕрлех кайĕ. Лупас айне пытарса хунă тимĕрпе шифера тупрĕç ĕнтĕ. Ухтарсан, тен, татах та темтепĕр тупăнĕ. Пулчĕ те вара — кĕмсĕртетсе каять санăн Анкĕл!

— Ухтарас теççĕ-им? — картах сиксе илчĕ Лариса.

— Çавăн пекрех ăнлантăм...

— Кагаева хăй çук-çке, епле-ха унсăр ухтарччăр?!

— Преступлени паллисем пулсан, преступникĕ пурри-çуккине пăхса тăмаççĕ, ăçта мĕн пуррине йăлт тĕрĕслеççĕ.

— Пит нумай пĕлетĕн-çке эсĕ, судья пекех.

— Вуланă пăртак... — йăл кулчĕ Чатта.

Лариса, урамалла пăхса, шухăша кайса тăчĕ. Палăрмаллах пăлханчĕ вăл. Прилавок çинчи шут шăрçисене куçпа пăхмасăрах шăкăр-шакăр тутарса илчĕ темиçе хут.

— Енчен те... эс каланă пек... манăн завмага милицисем чăнах илсе кайсан, мĕнле-ха вара? — терĕ вăл кăшт тăхтасан.

— Мĕн пултăр? Тĕнче пĕтмест! — терĕ Чатта.—Эс пур-иç? Ĕçлетĕн те ĕçлетĕн!

Урамран çерçи пек шĕвĕр сăмсаллă хĕрача васкаса чупса кĕчĕ.

— Сана... мĕн çав... халех лавккана питĕрсе киле кайма хушрĕç! — терĕ вăл Ларисăна.

— Кам хушрĕ?

— Председательпе ватă милици, ара...

— «Пунеттей» пулатăн ĕнтĕ эсĕ те, урăхла каласан — обыск тунă чухнехи свидетель,— терĕ Чатта Ларисăна.— Ну, кайрăмăр, эппин...

Лариса лавккана икĕ çăрапах питĕрчĕ те вĕсем урампа утрĕç.

— Çав тери тарăхмалла-çке ку! Тьфу! — сурам пек турĕ Лариса кăшт тăхтасан.— Нихçан шутламан...

— Мĕншĕн ун пекех? Ытлашши нимĕн те пулманçке? — терĕ Чатта.

— Ара, шутла-ха эсĕ, вĕренсе тухнă хыççăн ĕçлеме пуçланă-пуçламан милици тавраш̆ĕсемпе явăçтараççĕ. Кайран ак судсем тăрăх та сĕтĕрĕç-ха! Эпир Кирăпа иксĕмĕр ĕмĕрне те суд-следстви органĕсемпе çыхланмалла мар ĕçлеме сăмах панăччĕ...

— Мĕн тăвас тетĕн! Коммунизм пулса çитеймен-ха пирĕн. Суя чунлă çынсем чылай-ха. Кĕрешмелле вĕсемпе. Парти программинче те халăх пурлăхне хапсăнакансемпе хытă кĕрешме хушнă...

— Питĕ «политически» каччă иккен эсĕ, Коля-Колька-Микулай,— ун çине кăмăллăн пăхса кулчĕ Лариса.

— Хаçатра ĕçлекен çын епле-ха политикăран аякра тăтăр?

— Эс хĕрсене те программăра кăтартнă пек юрататăн пуль?

— Çыншăн çын — тус, юлташ тата тăван,— тенĕ унта.— Çемьере пĕр-пĕрне хисеплени пулмалла, тенĕ.

— Анчах эсĕ Кирăна хисеплемерĕн-ха, пăрахса хăварса çурранах уттартăн паян. Намăс мар-и? Мĕнле куçпа пăхатăн-ха ун çине çакăн хыççăн, э?

— Мирлешмелли майне шыраса тупма тивет... Сăвă çырса каçару ыйтатăп,— йăл кулса илчĕ Чатта.— Сонет... е акростих. Илтнĕ-и эсĕ çавăн йышши сăвăсем çинчен?

— Эс мĕн, пĕр ху кăна пурне те пĕлетĕп, тесе шутлатăн-им? Эпир те шкулта вĕреннĕ пуль? Акростихăн малтанхи саспаллийĕсенчен мĕнле сăмах тăватăн-ха?

«Эп сана юрататăп» тетĕн-и е «каçар мана ухмаха», тетĕн?

— Ун пирки лайăххрах шутлама тивет,— ассăн сывласа ячĕ Чатта.

Борцов капитан Чăрăшкассинчи лавкка хуçи патĕнче ухтарнă хыççăн ăна арестлени, халь Вăкăрварĕнче те таçтан вăрланă тимĕр-шифер тупăнни, çавăн пирки вăл кунта та обыск тума шутлани çинчен шăнкăравласан, районри милици начальникĕ Сумбатов майор пĕр тытăнса тăмасăрах каларĕ:

— Ырлатăп! Лайăххрах хыпашласа тухăр! Ун пек йĕкехӳресем таçта та тем те чикме пултараççĕ — пурне те тупас пулать!

— Анчах хуçи хăй килте çук-ха,— терĕ Борцов,— ĕнер кайнă та паян та таврăнман. Хăçан таврăнассине те пĕлместпĕр...

— Вăл ниме те пĕлтермест, капитан! Ухтар!

Çакăн хыççăнах Борцов кунти колхоз председателĕпе — питĕ йăвашшăн калаçакан сап-сарă çӳç-пуçлă, куç харшисем те палăрман, йĕтĕн чечекĕ тĕслĕ куçĕсемпе ялан кулнă пек пăхакан Майрин хушаматлă, аллăсенчен иртнĕ çынпа пĕрле Кагаева килне кайма тухрĕ. Крыльца çинчен ансанах вĕсем шкул директорне, Валентин Васильевич Цветкова, тĕл пулчĕç — правленине пырать-мĕн вăл.

— Ак, парторг та çитрĕ, пит аван! — терĕ председатель.— Эс те пыр-ха пирĕнпе, Васильччă, кĕтмен-туман пысăк ĕç сиксе тухрĕ...

— Мĕнле ĕç тата вăл? — ыйтрĕ лешĕ.

— Ангелин Егорччă патĕнче обăскă тумалла, тет...

— О-обыск?! — тĕлĕнсех кайрĕ Цветков.— Мĕн сăлтавпа? Мĕн пулнă-ши тăруках?

— Мĕн пулни лере, патĕнче курăнĕ,— пуçĕпе сулчĕ Борцов.— Кăмăлăр пулсан — атьăр пирĕнпе.

— Пырать, пырать! Парторг епле ан пытăр вара çавăн пек çĕре? Ялти ĕçсемшĕн вăл та ответлă пуль? — Цветкова çаннинчен тытрĕ председатель.— Тĕлĕнсе тăнран тухсах кайрăм-ха эпĕ, Васильччă...

Цветков хирĕçсе тăмарĕ, килĕшрĕ.

— Çапах та, капитан юлташ... пĕлме юрать-и? — ыйтрĕ вăл, кăшт утсан.— Нимĕн те илтĕнмерĕ-çке ха-

лӑх хушшинче? Пӗтӗмпех йӗркеллӗ пек... Ҫӗнӗ продавщица килнӗренпе уйрӑмах лайӑх ӗҫлеме тытӑнчӗ пирӗн магазин, хӗрачине пурте мухтаҫҫӗ...

— Хӑшпӗр этемсем никам сисмелле мар ӗҫсем тума та ӑста ҫав, ялйыш ним те пӗлмест ун ҫинчен,— ӑна куҫран пӑхса каларӗ капитан.

— Ку тӗрӗс ӗнтӗ... — килӗшрӗ Цветков.

...Кагаева пӳртне кӗрсен, вӗсем нимрен малтан диван ҫинче Васюков хырӑмне ик аллипе тытса ахлатса выртнине курчӗҫ.

— Ку мӗне пӗлтерет тата? Мӗн пулчӗ тӑруках? — Кучановран ыйтрӗ Борцов.

— Шолуткӑ манӑн! Шолуткӑ хытса ларчӗ! Чул пек! — Кучанов ответ пама ӗлкӗриччен йынӑшса ячӗ Васюков.— Вилеп, чиччас чун тухать!

— Сарай хыҫне кайса ларас пулать, эппин! — терӗ Борцов.

— Иккӗ те илсе тухрӑм,— ал сулчӗ Кучанов,— ним палли те ҫук!

— Фельдшера чӗнес апла, патӑр ӑна пӗр-пӗр касторка.

— Ун йышши лекарццӑ ӗҫместӗп эпӗ... Вӑт, пӗр ҫур стакан эреке парсан... шивӑ-два сывалаттӑмччӗ! — варне шӑлкаласа илчӗ Васюков.

— Шампански памалла мар-и тата сана?

— Шампанскинчен те усси ҫук... Коньяк тени — аптрамасть. А-ахх!

— Камит кӑтартса ан вырт, Васюков! Асту, фельдшера чӗнтерсе халех клизма ларттаратӑп, пӗлӗн вара! Вӑхӑт ҫук пирӗн санпа аппаланма. Ан анрашнӑ пултӑр!

Ҫав вӑхӑтра Ларисӑпа Чатта пырса кӗчӗҫ.

— Ну... пухӑнтӑмӑр пулас, ӗҫе тытӑнар, юлташсем,— терӗ Борцов.— Обыск тӑватпӑр ҫак килте. Малтан картишне пӑхӑпӑр, унтан кӗлет-нӳхрепе кӗрӗпӗр, пӳрт таврашне тӗрӗслесе тухӑпӑр. Пуҫлӑхсемпе калаҫса татӑлнӑ эпир кун пирки. Атьӑр...

— Манӑн та тухас-и? — ыйтрӗ Кучанов.

— Эс лар-ха, ку фокусникӗ темрен тем туса ан хутӑр тата! — пуҫӗпе Васюков еннелле сӗлтрӗ те Борцов, пӳртрен тухрӗ. Ун хыҫҫӑн ыттисем те тухрӗҫ.

— Акӑ, курӑр, «объект № 1»,— терӗ капитан, лупас айӗнчи тимӗрпе шифер куписем ҫине кӑтартса.—

Ку пуянлăх кунта ăçтан килсе выртнине пĕлместпĕр-ха эпир, анчах саккунлă йĕркепе килменнине чухлама йывăр мар. Шутласа пăхар-ха, мĕн чухлĕ,— протокол çине пирĕн тĕп-тĕрĕс çырмалла...

Вăл хушнă пек, çынсем тимĕр купине хупланă ăпăр-тапăра иле-иле аяккалла ывăтма тытăнчĕç кăна — урамра, хапха леш енче, машина çитсе чарăнни илтĕнчĕ.

Пурте унталла пăхрĕç.

— Ку мĕне пĕлтерет тата? Кил хуçи хăй персе çитрĕ-ши? — карттусне хăвăрт хывса пуç тӳпине хыçса илчĕ Борцов.

Анчах калинккерен кил хуçи Кагаева мар, Сумбатов майорпа райпо председателĕ Фролов кĕрсе тăчĕç.

— Э, питĕ аван-ха ку! Ман ĕç çăмăлланать...— шухăшларĕ Борцов.

Лупас айĕ патĕнчи çынсене сывлăх сунса пурне те ал парсан, Сумбатов Борцов куçĕнчен пăхса чăн малтан Васюков пирки ыйтрĕ:

— Ăçта сан леш жуликĕ?

— Пӳртре, симуляци туса, эрех ыйтса выртать,— терĕ капитан.

— Тăранман иккен-ха çак таранччен ĕçсе пурăнса! Карланки тĕпсĕр пуль çав. Ăна халех ман машинăпа КПЗăна ăсатас, ан чăрмантартăр кунта. Конвой пур.

Борцов васкасах Васюкова пӳртрен илсе тухрĕ.

Картишĕнчи çынсем хушшинче райпо председателĕ Фролов та пуррине курсан, Васюков темиçе самант юпа пек хытса тăчĕ, унтан тăрук ĕсĕклеме тытăнса, Фролова ыталама хатĕрленнĕ пек аллисене ик еннелле сарса, ун патнелле ыткăнчĕ.

— Владимир Яккăлччă!.. Тăванăм!.. Ним айăпсăр, так ахалех тытса каяççĕ-çке мана! Эс пирĕн питĕ ăслă начальник... ырă çын... Хăтар тархасшăн! Çăл мана! Ĕмĕр манмăп...

Вăл çулăхасран, Фролов хăвăрт кăна аяккалла пăрăнчĕ.

— Вăрлама пĕлтĕн пулсан — ответне тытма та пĕл! — терĕ çеç шăл витĕр. Тĕрĕссипе каласан, чунĕ тăвăнса килнипе, унăн çав вăхăтра çак йĕрĕнчĕк этеме питĕ хытă çупса ярасси килчĕ.

— Вăрламан эпĕ нимĕн те! — темле çинçе сасăпа тискеррĕн кăшкăрчĕ Васюков.— Яланах чеп-честнă



ĕçленĕ! Вунпилĕк çул торговльăра... пĕр пус растратăсăр... Турă пул маншăн! Çылăхсăр эпĕ...

Ăна тек янраса тăма памарĕç, участокри уполномоченнăй Кучанов ик хул айĕнчен тытсах урама, милици машини патне илсе тухрĕ.

— Пирĕн алла лексен, пурте святой вĕсем,— терĕ Сумбатов çилĕпе.— Пинĕ-пинĕпе вăрланă пулсан та тап-таса, тин çеç çуралнă ача пекех çылăхсăр мар-и!

## 19

Вениамин Ясмаков шофер малтанхи допросрах следователе тĕп-тĕрĕссипе, ним пытармасăр каласа пачĕ.

Тунас тенĕ пулсан та тунма май килмен çав унăн. Ăна хăйне тытса пыричченех милицире пĕтĕмпех пĕлнĕ. Пĕр районри милици начальникĕ Сумбатов майор «33—12 номерлĕ грузовик çĕр хута пирĕн патра вăрттăн çӳрет, пĕлесчĕ халех—камăн вăл?» тесе шăнкăравласанах, автоинспекцире ĕçлекенсем, картотека тăрăх шыраса, вăл иккĕмĕш стройуправлени машини пулнине палăртнă. Çавăн хыççăн тӳрех гаража кайса тĕрĕсленĕ. Ку номерлĕ машина вырăнта пулман. Ĕç хыççăн та гаража пыман иккен...

Милици çыннисем гаражри дежурнăя хытарсах хушса хăварнă: çав машина таврăнсан, пĕр самант та тăхтамасăр, ун çинчен автоинспекцие систерĕр, анчах шоферне хăйне нимĕн те ан калăр...

Çур çĕр иртсен пĕр сехет те вăтăр пилĕк минутра милицие çав тери хытă пăлханнă çамрăк çын чупса пырса Ярославски урамра темле грузовик икĕ çынна таптани çинчен пĕлтернĕ. ЧП пулнă çĕре опергруппа

тухса кайнă-кайман стройуправлени гаражěнчен 33—12 грузовик таврăнни çинчен шăнкăравланă.



Çав мар-ши тин кăна Ярославски урамра икě çынна таптанă хыççăн чарăнса та тăмасăр тараканни? Хăрушă ěç пулнă вырăнтан (милицисен чěлхипе каласан— «с места происшествия») халь çеç таврăннă оперативниксем çийěнчех гаража кайса хайхи машинăна пур енчен те питě тěплěн пăхса тухрěç. Номерěсем палăрмаççě, пылчăкпа хупланă. Кустăрмисем те питě вараланчăк. Сылтăм енчи борт хăми пěр çěрте чěлпěннě. Кузовра, чěлпěннě вырăнтан кăшт çеç аяккарахра, хуçăлса ӳкнě пěр метр тăршшě çăка туратти выртать. Анчахрах хуçăлнă вăл — çулçисем пěртте шанман, чěп-чěррипех.

— Асфальт çинчен тăрук пăрăнса йывăçа çапăнсан пулнă ку,— терě милици çыннисенчен асли, борт хăми чěлпěннě вырăна кăтартса.— Астăватăр пуль урамри çăка хуппи те хытă шăйрăлнине? Турат та хуçăлса кузова ӳкнě ав. Кирлех пулсан, машинне вăл вырăна илсе кайса виçсе пăхма пулать...

Унăн сăмахěсемпе пурте килěшрěç.

Гаражри дежурнăй ку машинăпа çӳрекен шофер ятне-хушаматне каларě, унăн адресне те пачě. Тепěр сехетрен Вениамин Ясмаков милицири следователь умěнче ларчě.

— Каласа кăтарт йěркипе, Ясмаков, ăçта кайса çӳрерěн эс кěçěр, кампа кайрăн, мěн ěçпе? Хăçан таврăнтăн, хулана кěрсен хăш-хăш урамсемпе пытăн, кама тата мěн тěл пултăн, мěн пулса иртрě? Унталла-кунталла пăрăнма ан тăрăш, ним те сиктерсе ан хăвар, ан пытар, усси пулмасть. Эпир ахаль те пěлетпěр, пирěншěн йăлтах паллă, эс тěп-тěрěссипе калани хăвăншă-

нах лайăх пулĕ, — питĕ лăпкăн ыйтма тытăнчĕ следователь.

— Мĕн пытармалли пур ĕнтĕ манăн халь тин,— уснă пуçне çĕклемесĕрех ал сулса ассăн сывласа ячĕ шофер.— Пурĕпĕр пĕтрĕм эпĕ...

...Паян вĕсем Шишкин прорабпа хула хыçĕнчи стройкăран грузовик тулли тимĕр листисем тиесе района тухса кайнă. Пĕр çĕрте илекенĕ килте пулманнипе тепĕр яла çитсе пушатнă. Ĕçнĕ унта. Таврăннă чух ГАИ постĕнче тытасран хăраса тарнă, анакан шлагбаум айĕпех сиксе тухнă. Унтан, Ярославски урамалла пăрăнсан, радиатор умĕнче икĕ çын курăннă, анчах машинăна чарайман вăл. Хăранипе тата хытăрах тарнă...

...Çук-çук, кĕçĕр çеç мар, Шишкин чĕннипе ытти чух та çӳренĕ çавăн пек вăрттăн рейссене. Пилĕк-ултă хут. Тен, ытларах та-и. Яланах тимĕр, шифер, хăш чух кафель, кирпĕч тиесе кайнă. Кашнинчех ĕçсе таврăннă. Тытакансем пулман вĕсене...

— Çав Шишкин тени вăрланă материалсемпе сутă тунине пĕлнĕ-и эс?

— Пĕлнĕ.

— Лексен хăвна та унпа пĕрлех суда парассине чухланă-и?

— Шухăшланă ун çинчен... Анчах вăл мана кашнинчех шантаратчĕ: ан хăра, санăн нихçан та ответ тытмалла пулмасть, ку тавар пирки ман кĕсъере пит шанчăклă документсем пур, тетчĕ.

— Вăрă тем чухлĕ вăрласа пурăнсан та юлашкинчен лекетех, тенине илтнĕ-и эсĕ?

— Илтмесĕр. Ăна пурте пĕлеççĕ.

— Çавна пĕлсе тăнă çĕртех, епле хăраман-ха жуликпа пĕрле çӳреме, ăна пулăшма?

— Хăрасси... пулнă ĕнтĕ, анчах иртнинче лекменскер, паян та лекмĕп, тенĕ çав. Кашни рейс хыççăнах сăмах параттăм хама — урăх каймастăп, ку юлашки хут, теттĕм. Унтан кăшт вăхăт иртетчĕ те... леш Шишкин татах чĕнетчĕ те...

— Каяттăн-и вара?

— Килĕшеттĕм çав, ухмах... Укçа-çке...

— Мĕн чухлĕ паратчĕ вăл сана кашни рейсшăн?

— Нумай мар... Хăш чух — çирĕм пилĕк, хăш чух — вăтăр тенкĕ.

— Питĕ шутсăр кирлĕ пулнă-и сана вăл укçа? Пуй-

рăн-и эс унпа? Арăмна параттăн-и е... тусусемпе ĕçсе яраттăн?

— Уссиех пулман çав. Мĕнле килнĕ — çавăн пекех пĕтнĕ.

Следователь, аллинчи ручкине сĕтел çине хурса, пирус тивертрĕ те темиçе самант хушши хăйĕн «подследственнăйĕ» çине тинкерсе пăхса ларчĕ. Хăй ăшĕнче хĕрхенчĕ те пулмалла ăна.

— Туртма юрать-и? — ыйтрĕ Ясмаков, пуçне ерипен çĕклесе.

— Турт, турт, тархасшăн...— следователь хăйĕн умĕнчи пирус пачкипе зажигалкăна ун патнелле шутарчĕ.

Ясмаков чĕтрекен пӳрнисемпе пирус илсе чĕртсен, следователь пĕртте допросри пек мар сăмахлама тытăнчĕ:

— Эх, Ясмаков, Ясмаков... Пит лайăх ачаччĕ-çке эсĕ... Паллатăп эп сана. Ялтан куçса килсен эсĕ пĕр хушă такси çинче ĕçлерĕн. Пĕррехинче эс мана Канашран лартса килтĕн. Çул тăршшипех пуплерĕмĕр санпа. Ун чух санăн тин кăна ача çуралнăччĕ, шутсăр хĕпĕртенĕччĕ эсĕ уншăн — ывăл çуралнă-çке! Генерал пулать, терĕн тулли кăмăлпа. Сан пек телейлĕ çын та çукчĕ пуль çав самантра. Манăн Çĕрпӳри милицире пĕр пĕчĕк ĕç пурччĕ те, эс мана кĕтсе тăтăн, унтан эпир чайнăя кĕрсе апат çирĕмĕр... Астумастăн-и?

— Астăватăп,— терĕ Ясмаков, йывăррăн сывласа ярса.

— Чайнăйран тухсан урамри киоскра хамăрăн ачасем валли вылямалли теттесем илтĕмĕр...

— Çапла, эс пружинлă автомобиль туянтăн, эп — шăкăрчак...

Пĕр хушă чĕнмерĕç. Пӳлĕмре тĕтĕм çеç йăсăрланчĕ. Унтан сăмаха каллех следователь пуçларĕ.

— Çирĕм пиллĕкре-ха, эппин, эсĕ?

— Кăçал тултартăм,— терĕ Ясмаков.

— Çамрăк-ха. Тин çеç пурăнма пуçланă... Чыса çамрăкран упра, тенĕ ăслă çынсем. Çапла-и? Анчах эсĕ хăвăн чысна çав жулик Шишкинăн темиçе тенкипе улăштарнă. Эрехле сутнă ăна. Мĕн пулса тухрĕ-ха юлашкинчен? Ăнланатăн-и çавна?

Нимĕн те калаймарĕ Ясмаков. Унăн хулпуççийĕсем вĕттĕн-вĕттĕн чĕтреме тытăнчĕç.

Ана лăплантарма следователь графинран шыв ярса пачĕ.

— Кĕçĕр хăвăн машинупа кама таптанине пĕлетĕн-и хуть эсĕ? — тесе ыйтрĕ унтан.

— Ăçтан пĕлес-ха манăн... курман... — терĕ Ясмаков хуллен.

— Пĕр студентпа студенткăна таптанă, студентки... хăвăн йăмăку.

Ясмаков пукан çинчен сасартăк вĕри шывпа сапнă пек сиксе тăчĕ те кăшкăрса ячĕ:

— Ман... йăмăк?! Сима-и?!. Ч...ч...чăнах-и?!

Вăл сивĕннĕ кĕл тĕслĕ пулса кайрĕ, куçĕсем ухмаха ернĕ çын куçĕсем пек сиккелерĕç.

— Питĕ йывăр та сана кун çинчен пĕлтерме... чăнах çав! — терĕ следователь.— Серафима Ясмакова, санăн тăван йăмăку пулнă çав машина айне пулнă студентка. Вилнĕ вăл. Моргра выртать ĕнтĕ.

Ясмаков, пырне темле хытă япала кĕрсе ларнă пек, сывлайми пулчĕ. Кĕпе çухавине çатăрр! тытса çурса пăрахрĕ. Тин вара ы-ыхх! тесе вăраммăн йынăшса ярса лак! ларчĕ те, ним тума пĕлменнипе хăйĕн çӳçне ик аллипех тăпăлтарма тытăнчĕ.

— Вĕлерĕр мана халех! Çакăнтах персе вĕлерĕр... урăх пурăнмастăп эпĕ çĕр çинче... Пурăнма юрамасть манăн!.. — куççулĕ витĕр ӳлерĕ вăл.

Ясмаковпа халлĕхе тек калаçма май çуккине кура, следователь ăна камерăна илсе кайма хушрĕ.

— Лăплантăр кăштах...

Ирпе ирех леш пуклак Шишкина, иккĕмĕш стройуправленири прораба тытса пычĕç. Ăна çывăрнă çĕртенех тăратса килнĕ пулмалла. Питне те çуман курăнать, ĕнер çинĕ çăмарта сарри те тути çинчех. Ахаль те кӳпшек пичĕ пушшех шыçнă, куçĕсем хĕсĕнсех ларнă.

Следователь ыйтса тĕпчеме пуçличчен малтан, Шишкин хăй тапăнма тытăнчĕ ăна:

— Мĕнле основанипе илсе килтĕр мана кунта? Эп мĕн — пĕр-пĕр вăрă-хурах-и, бандит-и? Никампа та çапăçман, никама та çаратман, вĕлермен, ĕçрен таврăннă та çывăрнă, анчах мана вырăн çинченех туртса антараççĕ! Тӳсме çук беззакони ку! Совет конституцине пăсни пулать! Эп халех прокурор патне шăнкăравлатăп, ответ тыттаратăп сире куншăн! — сарлака çăварĕнчен сурчăк сирпĕтсех янрарĕ вăл.— Эп совет çынни, ман

личность неприкосновеннă! Причинсăр арестлеме никам та пултараймасть, хамăрăн совет законĕсене лайăх пĕлетĕп!..

— Сана никам та арестлемен-ха, гражданин Шишкин,— терĕ следователь.— Пĕр ĕç пирки калаçма çеç чĕнсе килнĕ. Ăна-кăна ыйтса пĕлме...

— Мĕнле ĕç пултăр сирĕн манпа?! Мĕн пирки калаçмалла? — лăпланмарĕ Шишкин.

Следователь пӳкан çине кăтартрĕ:

— Эс малтан лар-ха, гражданин Шишкин, ура çинче чăнлăх çук, теççĕ пулас? Лар та лăплан. Хăвах чухламалла — ĕçсĕр, ытахальтен чĕнес çук сана эпир. Сăмахĕ пирĕн... эс лайăх пĕлекен законсем çинчен пулĕ. Тĕрĕсрех каласан, çав законсене пăсни, законсене пăхăнмасăр вĕсем урлă каçса кайни çинчен.

— Эп законсене нихçан та пăсман! Эсир мана таçталла пăрса кайма ан тăрăшăр. Енчен те кам та пулин преступлени тунă пулсан, вăл хăй ответ тыттăр, мана неччу хутшăнтарма! Маншăн пулсан — ик айкки те тăвайкки, яп-яка та тап-таса! К чорту, тепĕр тесен!

— Эс çапах та лăпкăрах пул-ха, Шишкин. Ан кăшкăр, эп хăлхасăр мар, лайăх илтетĕп. Тата пирĕн патра кăшкăрашса никама та хăратма çук... Эсĕ мана, гражданин Шишкин, ху кĕçĕр ăçта, хăш районта, хăш ялта пулни, унта мĕн туни, мĕн сутни, çав «тавара» хăш объектран вăрласа тухни, эсир таврăннă чух шоферпа пĕрле миçе çынна таптаса каçса кайни çинчен каласа пар. Ăнлантăн-и? Тĕпĕ-йĕрĕпе, ним суймасăр...

Шишкин хĕсĕк куçĕсене мăч-мач тутарчĕ те ывăннă лаша пек сывласа ячĕ.

— Ним те каламастăп! Пулман ун пекки, суя ку. Вантази! — терĕ унтан.— Такам шухăшласа кăларнă япала. Йăлт — кливита!

— Суя та мар, клевета та мар çав, йăлтах тĕп-тĕрĕс, — терĕ ăна хирĕç следователь.— Пытанмалла выляс мар, Шишкин. Эп сана халех ху тара тытса илсе кайнă шоферпа куçа-куçăн тăратма пултаратăп. Вăл ĕнтĕ пире пĕтĕмпех каласа кăтартрĕ. Вăхăта тăсса сая ярас мар, пуçла калама. Законсене пĕлетĕп тетĕн вĕтха — кун пек чух тӳррипе каласа панине ним те çитмест.

Следователь хăй умне протокол çырмалли хут бланкисене шутарса хучĕ.

— Эп кӗтетӗп, Шишкин.

— Ман ним каламалли те ҫук! — кукша пуҫне пăркаласа илчӗ Шишкин.— Эп пӗр паллані ҫын патӗнче хăнара ҫеҫ пулнă!

— Хăнана кузов тулли тимӗр тиесе каймаҫҫӗ, Шишкин!

— Ним те тиемен! Тен, шоферӗ хăй вăрланă тавара ăҫта та пулин ăсатма шутланă? Ман кӗсъере ҫур литр эрех пулнă ҫеҫ!

— Мантăн пулать? Эппин, шоферне хăйне чӗнерха, аса илтерӗ вăл сана. Шоферӗ маттур, ним те манман, йăлтах астăвать...

Темиҫе минутранах Ясмакова илсе пычӗҫ. Шишкин ун ҫине сиксе ӳкрӗ:

— Эс мӗн элеклесе тултарнă кунта ман пирки? Мӗн лăпăртатнă? Тап-таса ҫынна хăвăнпа пӗрле тӗрмене сӗтӗрсе каяс терӗн-и, явăл пуҫӗ?!

— Ним те элеклемен, тӗп-тӗрӗссине ҫеҫ каланă,— терӗ Ясмаков, каҫхине кăна пӗрле ӗҫсе ҫинӗ ҫынна ҫисе ярас пек пăхса.— Явăлӗ эп мар-ха вăл, явăлӗ — эсӗ! Чӗр шуйттан! Пӗтертӗн ман пурнăҫа! Эс тӗп турăн, сволăч! Улах вырăнта пулсан, тӳрех пăвса пăрахăттăм!..

— Хăвăн айăпна ҫын ҫине ан яр! — кăшкăрчӗ ăна хирӗҫ Шишкин.— Эп никама та машинпа таптаман-ха! Эс таптарăн, эсӗ! Ӳсӗр пуҫупа... Лекрӗн халь, пит лайăх ҫаклантăн! Вышка * параҫҫӗ ак сана уншăн, вышка! Ҫавна ҫеҫ тивӗҫлӗ эсӗ...

— Ах, урнă йытă! Эп сана... — Ясмаков, сиксе тăрса, Шишкина ҫапма хăй умӗнчи хыҫсăр пукана ҫӗклерӗ, анчах следователь хаяррăн кăшкăрса чарчӗ ăна:

— Отставить! Ларт пукана хăй вырăнне! Ухмах, тата тепӗр статья хуштарас тетӗн-и хăвна валли?! Ак, лар та ҫакăнта, тепӗр хут каласа пар хăвăрăн ӗнер каҫхи гастрольсем ҫинчен — ăҫта ҫитнӗ, мӗн тунă? Гражданин Шишкин йăлтах манса кайнă, аса илтерес пулать ăна.

— Юрать, халех аса илтеретӗп,— терӗ Ясмаков, тарăхнипе хашкама ернӗскер.— Ӗнерхине ҫеҫ мар, эпир унпа ытти чух ăҫта-ăҫта ҫитнине те, вăл вăрланă таварсене кама сутнине те каласа паратăп!

---

* Высшая мера (персе вӗлермелле туни).

— Ан лăпăртат пустуй Венька!— темле çинçе сасăпа кăшкăрчĕ Шишкин.—Мана нимĕн те пулмасть, эп пурпĕрех тап-таса юлатăп, сана хăвнах йывăр килет, тăмпуç!



— Килин! Манăн халь ним пытарса тăмалли те çук, мĕн пуласси пулнă ĕнтĕ, çавçавах ответ тытмалла, анчах сана та юрласаташласа пурăнма памастăп! Эс те пыратăн манпа!

— Ним те тăваймастăн мана, сопляк! Тăмана пыйти вĕт эсĕ, çĕр çинчи çӳпĕ! Кам ĕненет сан элекне? Эп авторитетла çын, мана хулари пур начальниксем те палласçĕ!

— Пăрахăр харкашма! — сĕтеле çапса илчĕ следователь.— Пасар мар кунта! Эс шăп лар, Шишкин, Ясмаков калаçтăр!

— Палкатăр ара, эп чарап-им ăна... — мăкăртатрĕ Шишкин.

Ясмаков йывăррăн сывласа ячĕ те хăй сăмахне пуçларĕ...

Васюкова милици машинипе лартса янă хыççăн Кагаева картишĕнче пухăннă çынсем — Сумбатовпа Фролов, Борцовпа Кучанов, вĕсемпе пĕрле Ларисăпа Чатта, кунти колхоз председателĕ Майрин, шкул директорĕ — парторг Цветков — пĕр хушă калаçкаласа вырăнтах тăчĕç, хăшĕсем пируссем тивертсе ячĕç.

— Эх, хăямат, ăс çитмерĕ! — кăмăлсăр пулса ал сулчĕ Сумбатов кăшт тăрсан.— Каласа ямаллаччĕ сержанта...

— Мĕн пирки? — ыйтрĕ Борцов.

— Кагаевӑна шыраса тупма хушмаллаччӗ! Больницӑра-и вӑл, тен райпона кӗнӗ-и... Тупмаллаччӗ те ӑна, халех лартса килмеллеччӗ... Обыск тунӑ чух хуҫи вырӑнта пулни — авантарах. Ухтарма та меллӗрех.

— Эп ку ӗҫе халех хамӑн шофера хушатӑп, телефонпа,— терӗ Фролов.— Ман Вася ҫивӗч, тупать те ӑна — момент вӗҫтерсе ҫитет!

Ку шухӑшпа милици ҫыннисем пурте килӗшрӗҫ те, райпо председателӗ ҫавӑнтах колхоз правленине васкарӗ — телефонпа калаҫма. Вӑл кайса ҫӳренӗ вӑхӑтра Сумбатовпа унӑн юлташӗсем Кагаевӑн пахчинелле тухса сӑнаса ҫӳрерӗҫ, сад вӗҫӗнчи ҫырма хӗррине пӗр-ик ҫул каялла ҫеҫ лартнӑ мунчана пырса пӑхрӗҫ — ӑна та тимӗрпе витнӗ, урайне те хӑмаран туман, пысӑк плитасем сарнӑ, хулари мунчаран кая мар — душ та пур иккен.

— Вӑйлӑ, ай-ай вӑйлӑ... — мӑкӑртатрӗ Сумбатов,— маттур хӗрарӑм... пурӑнма пӗлни кашни утӑмрах курӑнать!

— Мӗн калӑн! Районӗпе те ҫук пуль ун пекки,— терӗ Борцов.

— Ҫукрах пуль ҫав,— килӗшрӗ Сумбатов.

Кучанов лейтенанта мачча ҫине хӑпарса пӑхма хушрӗҫ.

— Ҫук кунта нимӗн те,— терӗ участковӑй ҫӳлтен,— пушӑ тавар ещӗкӗсем ҫеҫ сапаланса выртаҫҫӗ...

— Унта пырса выртиччен тулли пулнӑ ӗнтӗ вӗсем, кайран пушатса пӑрахнӑ,— терӗ ӑна хирӗҫ Сумбатов.

Вӗсем пахчаран тухнӑ тӗле Фролов та ҫаврӑнса ҫитрӗ.

— Кагаева райпора ҫук, ирпе ҫеҫ йӑпӑртлӑха кӗрсе тухнӑ,— тесе пӗлтерчӗ вӑл.— Больницӑра та ҫук, главврачпа хӑйӗнпе калаҫрӑм. Сакӑр сехетре анализсем валли мӗн кирлине панӑ хыҫҫӑн урӑх пулман унта...

— Ӑҫта ҫухалнӑ-ха, эппин, вӑл? Киле килес пулсан, ку таранччен ҫурран та каллӗ-маллӗ иккӗ хутламалӑх пур-ҫке!

— Ним калама та пӗлместӗп. Ҫӳрет ӗнтӗ таҫта. Ҫула май кӗрсе ларнӑ пуль пӗр-пӗр ялти палланӑ ҫын патне. Пӗччен ҫыннӑн мӗн хуйхи? Килте макӑракан ҫук, лавккинче ӗҫ пырать...

— Эппин, тек тӑхтаса тӑмастпӑр пуль, майор юл-

таш? — Сумбатовран ыйтрĕ Кучанов.— Килĕ хуҫасăр мар, ҫын пур...

— Кам?

— Ун патĕнче пурăнакан хĕрача.

— Миҫе ҫулта?

— Ҫирĕмсене ҫитет пуль. Авă, крыльца ҫинче тăрать...

— Кагаева тăванĕ-и?

— Аппăшĕн хĕрĕ. Чылайранпа пурăнать кунта.

— Аван апла пулсан. Пĕтĕмпех йĕркеллĕ. Понятойсем ҫителĕклĕ пирĕн. Пуҫлас.

...Тĕплĕн ухтарчĕҫ милици ҫыннисем Кагаева килĕнче. Пур ҫĕрте те. Анчах ытлашши нимех те тупăнмарĕ, Васюков патĕнчи пек мар. Чăн та, кĕлетре пĕр ҫирĕм мăшăр резин атă выртнă та кĕрĕклĕ ҫĕнĕ курткăсем темиҫе ҫакăнса тăнă. Вĕсем ĕнтĕ, паллах, вăрттăн сутмаллискерсем пулнă, ахалĕн мĕншĕн киле илсе килнĕ вĕсене?

Пӳртре те, тĕпсакайĕнче те ним те ҫук иккен.

— Тĕплĕ пурăнать вată кашкăр ами,— терĕ Сумбатов, пирус ĕме-ĕме,— леш Чăрăшкассинчи алкоголик пек мар. Куна йăпăр-япăрах ҫулса илейместĕн. Анчах пулмаллах унăн... укҫа та пулин пулмаллах! Лайăх шырарăр-и эсир тĕпсакайĕнче? — ыйтрĕ вăл Борцовпа Кучановран.

— Тĕрĕслемен вырăн хăвармарăмăр,— терĕ Борцов.— Ҫĕрулми унта, пĕр катка купăста, тепĕр катка хăяр, мăн чĕресре — кăмпа...

Сумбатов, ҫаплах пирусне мăкăрлантарса, пĕр хушă тем аса илме тăрăшнă пек шухăша кайса ларчĕ.

— Тимĕр сенĕк тупса кĕрĕр-ха хăшĕ те пулин,— терĕ унтан.

Кучанов темиҫе самантранах вăл мĕн ыйтнине илсе кĕрсен, Сумбатов Борцова каларĕ:

— Атя-ха, иксĕмĕр кĕрсе тухар тепре... Хунар пур-и сан?

— Пур, майор юлташ, лайăх ĕҫлет.

Вĕсем кĕҫех тĕпсакайне анчĕҫ. Шăп пулчĕ. Пӳртре ларакансем чылай хушă тимĕр сенĕк юписем тăпра ăшне чашш! чашш! туса кĕнине ҫеҫ илтрĕҫ. Унтан пĕр вăхăт нимĕнле сас та пулмарĕ.

— Темскер ҫине тăрăнчĕҫ-ши кусем? — терĕ Кучанов хуллен.

Ыттисем чӗнмерӗҫ. Тата пилӗк минут, вунӑ минут... Пурте ҫӑвара шыв сыпнӑ пек ларса кӗтрӗҫ.

Тӗпсакайӗнчен малтан Сумбатов тухрӗ. Хӑйӗн тумтирӗ ҫумне ҫыпӑҫнӑ тусан-пӑраха тасатса та тӑмарӗ, тӳрех аллинчи эмальпе витнӗ пысӑках мар бидона сӗтел ҫине пырса лартрӗ.

— Тупрӑмӑр пулмалла мӗн шыранине,— терӗ хӑй.

Пурте сӗтел тавра кӗпӗрленсе тӑчӗҫ. Бидон хупӑлчи уҫӑлса каясран ӑна пӑхӑр пралукпа яваласа ҫыхнӑмӗн, Сумбатов ӑна йӑпӑрт кӑна сӳтсе пӑрахрӗ. Унтан хупӑлчана уҫрӗ те бидон ӑшӗнчен хура сӑран хутаҫ туртса кӑларчӗ. Хутаҫ анине те пралукпа яваланӑ, ӑна та сӳтме тиврӗ. Хутаҫ уҫӑлсанах шалта ҫап-ҫутӑ япаласем йӑлтӑртатни куранса кайрӗ.

— Ак мӗскер вӑл... — терӗ те Сумбатов, хутаҫа кутӑн тытса силлерӗ. Сӗтел ҫине патша вӑхӑтӗнчи ылтӑн укҫасем, ылтӑн ҫӗрӗсем, хӗрарӑмсен хӑлха ҫаккисем, нӑрӑ-эрешмен евӗрлӗ брошкӑсем чӑнкӑр-р... тухса выртрӗҫ.

— Пӗтрӗ пуҫ... Мӗне пӗлтерет ку?! — терӗ колхоз председателӗ Майрин, куҫне-пуҫне чарса пӑрахса.

— Мӗн куратӑн — ҫавна ҫеҫ пӗлтерет,— терӗ Сумбатов, ҫавӑнтах укҫасене ытти япаласенчен уйӑрма тытӑнса.

— Кай, ытла та тӗлӗнмелле-ҫке! Аҫа ҫаптӑр, ӑҫтан мурӗнчен, хӑш вӑхӑтра пухнӑ вӑл ку пуянлӑха? Ну, арлан-тӑк арлан!.. Илтессе илткеленӗччӗ-ха, калаҫатчӗҫ ял хушшинче тепӗр чух Ангелин Егорнӑн ылтӑн нумай тесе, анчах ҫын сӑмахне ӗненсех ҫитме ҫук-ҫке, теприсем пӗр-пӗрине курайманнипе те палкаҫҫӗ... Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пирӗн тӑрӑхри ялсенче Эстони—Латвисенчен куҫса килнӗ эвакуированнӑйсем нумай пулнӑ, Ангелин ҫавсенчен тем те пӗр туяннӑ, текелетчӗҫ. Ун чух пӗр витре ҫӗрулми те икҫӗр аллӑ тенке ҫитнӗ те...

— Тирне сӳнӗ ӗнтӗ лешсенне, хӗрхенсе тӑман,— терӗ Борцов.

— Выҫӑ ҫын пӗр татӑк ҫӑкӑршӑн та аллинчи ҫӗррине ҫеҫ мар, ҫийӗнчи юлашки кӗпине те хывса пама пултарать ӗнтӗ. Уйрӑмах, ун ачисем выҫӑ лараҫҫӗ пулсан...

— Намӑса пӗлмен ҫынсем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче те пуйнӑ ҫав!

Сумбатов сӗтел ҫинчи йӑлтӑр-ялтӑр япаласене суй-

ласа шутланӑ чух ыттисем тӗлӗннипе калаҫайми пулнӑ пек пӑхса тӑчӗҫ. Чатта Ларисӑна хулӗнчен пӑчӑртаса куҫӗпе ҫав ылтӑн купи ҫинелле кӑтартсан иккӗшӗ те пӗр харӑсах хашш! сывласа илчӗҫ.

— Тепӗр очерк ҫыр халь хӑвӑн «героинӳ» ҫинчен,— шӑппӑн йӗплесе кулам пек турӗ Лариса.

— Ӑна судьясем ҫырӗҫ,— ал сулчӗ Чатта.

Кагаева ҫӗр айӗнче тахҫантанпах пытарса усранӑ хаклӑ япаласем хушшинче патша вӑхӑтӗнчи пӗр тенкӗлӗх ылтӑн укҫасем вунулттӑ, пилӗк тенкӗлӗххисем виҫҫӗ, вунӑ тенкӗлӗххисем иккӗ, ылтӑн ҫӗрӗсем ҫиччӗ, хӑлха ҫаккисемпе тӗрлӗ брошкӑсем вуннӑ ытла пулнӑ.

— Ӗмӗр пурӑнма ҫитет ку пуянлӑх,— терӗ Сумбатов, пурне те шутласа пӗтерсен. Ҫавӑнтах Борцова хушрӗ: — Халех опись ҫыр, понятойсене ал пустарса протокол ҫумне хуратпӑр.

— Протокола кӗртместпӗр-и вара?

— Епле кӗртместпӗр пулать? Унта та ҫырса хуратпӑр, анчах опись те кирлӗ. Пӗлместӗн-им йӗркине!

— Пӗлетӗп, майор юлташ...

Борцов планшетӗнчен хут кӑларса ҫырма тытӑнчӗ. Сумбатов япала ячӗсене каласа пычӗ.

Пӗр хушӑ — тӗлӗннипе — шарламасӑр тӑнӑ ҫынсем калаҫа пуҫларӗҫ.

— Мӗн тӑвас тенӗ-ши вӑл ҫак пурлӑхпа? Хӑҫанччен пытарса усрама шутланӑ-ши, мур пуҫӗ! — терӗ Майрин, пуҫне пӑркаласа.— Хӑйӗнпе пӗрле леш тӗнчене илсе кайма ӗмӗтленнӗ-ши? Ну, пулаҫҫӗ те иккен тискер этемсем ҫут тӗнчере! Пухаҫҫӗ, пухаҫҫӗ, ҫаплах тӑранаймаҫҫӗ, шуйттансем!

— Ҫӑтлӑх, теҫҫӗ ҫавна, Майрин юлташ,— терӗ Сумбатов.— Чир вӑл. Хӑрушӑ чир. Ӑна пула Кагаева пеккисем ҫынсене те, патшалӑха та пӗр вӗҫӗм улталаҫҫӗ, хӑрушӑ преступленисем те тӑваҫҫӗ...

— Ҫынсен ӑстӑнӗнче юлнӑ капитализм юлашки ӗнтӗ вӑл,— сасартӑк хушса хучӗ Чатта.— Кӗрешес пулать унпа!

Ку темле кулӑшла пулса тухрӗ.

— Эсир, поэт-писательсем, пит начар кӗрешетӗр-ха ҫав,— Чатта ҫине пӑхса йӑл кулчӗ Сумбатов,— капитализм юлашкисене питлес вырӑнне ҫӗмӗрт ҫеҫкисемпе хӗрсен хӑнчӑр куҫӗсем ҫинчен ытларах ҫыратӑр! Ҫапла мар-им?

— Вăл та кирлĕ-çке... — нимле мар пулса кайрĕ Чатта.— Пурнăçра пурте кирлĕ...

Çак вăхăтра Кучанов кĕтесри турăшсене тинкерсе ларчĕ. Турăшĕсем нумай пулнă Кагаевăн — кĕтессе кантăк хашаки пек эрешленĕ пысăк рама çапса лартнă та, ун ăшне тем тĕрлине те вырнаçтарнă. Варринче ача тытнă турă амăшĕ пуçне чалăштарса, упăшкасăрах çуратнăшăн хуйхăрнă пек ларать, ун тавра пĕчĕкрех-хисем — тĕрлĕ çветтуйсемпе апостолсем. Кучанов шутласах кăларчĕ турăшсене — пурĕ вуниккĕ!

— Майор юлташ,— терĕ вăл тата кăшт ларсан, аллипе турăшсем çинелле кăтартса,— ак çак «картинсен галерейине» тĕрĕслесе пăхма ирĕк парăр-ха. Мĕн те пулин пытарса лармаççĕ-ши вăл çветтуйсем?

— Çавăн пек туйăнать-им сана?— ыйтрĕ Сумбатов.

— Туйăнасси-мĕнĕ... Кам пĕлет! «Чем чорт не шутит», теççĕ те вырăссем, кунта «чем бог не шутит», теме пулать...

— Тĕрĕсле ара.

Кучанов сак çине хăпарса тăчĕ те турăшсене ерипен кăлара-кăлара çавăркаласа пăхма пуçларĕ.

— Çапах та хисеплемест иккен ку кил хуçи хăй пуççапакан турăсене, пурин çинче те пŷрне хулăнăш тусан...

Пĕчĕккисенчен пилĕк-улттăшне илсе хурсан, Кучанов чăн пысăккине, турă амăшне кăларма тытăнчĕ.

— Ну-ка, мать-одиночка, кил-ха, санпа çывăхрах паллашар тата,— шŷтлерĕ хăй.

Турăша тŷртĕн çавăрчĕ те пĕр хушă чĕнмесĕр тăчĕ.

— Чимĕр-ха, юлташсем, чимĕр... — терĕ унтан.— Цэ дило треба разжуваты, тетчĕ кун пек чух пирĕн милици шкулĕнчи взвод командирĕ Дубенко... — Вăл, сак çинчен анса, аллинчи турăша пичĕпе аялалла туса сĕтел çине хучĕ.— Курăр-ха эсир... Çак хыçалти хăмана çирĕплетсе лартма сакăр пăта çапнă. Вĕсенчен виççĕшĕ кивĕ, тутăхсах кайнă. Пиллĕкĕшĕ — çĕнĕ. Мĕншĕн пĕр пек мар-ха вĕсем, пĕрисем кивĕ, теприсем — çĕнĕ? Ак сире тупмалли юмах... Анчах унăн тупсăмĕ йывăрах та мар, юлташсем: пилĕк пăтине кайран çапнă, тен, нумай та пулмасть-и çапни. Татăклăрах каласан, çакăн пек: ку турăш хыçĕнчи хăмана хуçин темшĕн илсе пăхма тивнĕ, ăна валли пăтисене кăларнă, анчах кив

пăтисем тепĕр хут çапса лартма юрăхлă пулман, çавăнпа та çĕнĕ пăтасем илсе çапнă...

— Вара мĕн-ха? — ыйтрĕ Сумбатов.

— Мĕнне çак хăмана илсе пăхсан тин пĕлме пулать...

Кучанов хуçмалли çĕçĕ вĕçĕпе хире-хире турăш хыçĕнчи пăтасене кăларчĕ те хăмана аяккалла илсе хучĕ. Ун айĕнче таса хутпа чĕркенĕ çӳхе япала выртнă. Çав хута сӳтсен, ун ăшĕнчен виçĕ перекет кĕнеки тухрĕ.

— Ак сире, тархасшăн! — терĕ Кучанов самаях мăнкăмăллăн.— Çĕнĕ пăтасен пĕтĕм секречĕ куç умĕнче!

Милици çыннисем перекет кĕнекисене уçа-уça пăхрĕç. Виçĕ кĕнеке çинче шăп вуникĕ пин пулнă.

Шак хытрĕç пурте.

— Детективлă романри пекех-иç ку! — аллисене ик еннелле сарса пăрахрĕ Чатта.— Тăнран тухса каймалла!

— Пирĕн пурнăçра тăнран кăларакан япаласем пур-ха çав,— терĕ Сумбатов.

— А эсĕ... эсĕ, Кучанов, Шерлок Холмс! Комиссар Мегрэ» * — ăна хулĕнчен тĕртсе илчĕ Чатта.

— Ан мухта ытлашши, сăмсине каçăртма пултарать,— кулчĕ Борцов.— Çынна пăсса яма нумай кирлĕ-и?

— Вĕçкĕнсем çеç каçăртаççĕ сăмсисене, эп вăл категорие кĕместĕп-ха, турра шĕкĕр,— кулса илчĕ Кучанов хăй те.

...Кагаева килĕнче ухтарса мĕн-мĕн тупни çинчен протокол çырса пурне те ал пустарсан, милици çыннисем лупас айĕнчи тимĕрпе шифера та, кĕлетри таварсене те колхоз складне тиеттерсе кайтарчĕç, ылтăнпа перекет кĕнекисене Сумбатов хăй çумне илчĕ.

Ухтарнă чух пĕрмаях халăхпа пĕрле пулнă, пĕтĕмпех курса тăнă, протокол çине те алă пуснă Христин халь тăрук макăрма тытăнчĕ.

— Вĕлерет халь мана Ангелин аппа! Пуртăпах касса ваклать!..

— Мĕншĕн тивтĕр, санра ним айăп та çук-çке, эпир ухтартăмăр, япалисене те эпир тиесе каятпăр,— лăплантарма пикенчĕ ăна участковăй Кучанов.

---

* Жорж Сименонăн детективлă романĕсенчи тĕп герой, чаплă сыщик.

— Кӗлет уҫҫине эп патăм-ҫке сире, ҫавăншăн ҫапса пăрахать...

— Ан хăра, ним те пулмасть!

— Эсир... эсир пӗлместӗр-ха ăна! Эп ӗнтӗ нумай тӳснӗ... Ҫвер вӗт вăл, урнă кашкăр! Упăшкине те хăех вӗлернӗ, теҫҫӗ...

Ун умне Сумбатов пырса тăчӗ.

— Лăплан, хӗрӗм, тивтерместпӗр сана. Ак ҫак милици, Кучанов, кунтан ниҫта та каймасть, Кагаевăна кӗтсе илет. Милици умӗнчех ал хураймӗ сан ҫине.

— Кайран тата? Кайран, милици тухса кайсан?

— Кучанов ăна санпа хăвармасть, хамăр пата... хăнана илсе пырать, калаҫса ларма.

— Тытса каять, эппин?

— Ун пек каламарăм-ҫке, хăнана, терӗм.

— Ăнланатăп эпӗ. Тахҫанах хупса лартмаллаччӗ ăна сирӗн. Шульăкран та шульăк вăл...

## 20

Чăрăшкассипе Вăкăрварӗнчи лавккасен заведующийӗсене тытса хупсан темиҫе кунтанах Шупашкартан ятарласа пынă ҫынсем икӗ лавккинче те питӗ тӗплӗ ревизи турӗҫ («судебно-бухгалтерская экспертиза», теҫҫӗ ун пеккисене). Лавккисене ревизи тунă ҫӗрте Кагаевăпа Васюков хăйсем те пулчӗҫ — ирхине илсе пычӗҫ, каҫхине илсе кайрӗҫ вӗсене. Уйăха яхăн тăсăлчӗ ку ревизи, хайхи пурин умӗнче те «ҫак тарана ҫитсе халăхăнне пӗр пус тытман, вунпилӗк ҫул хушшинче виҫӗ пуслăх недостача пулман манăн!» тесе мухтанакансем иккӗшӗ те питӗ пысăк растратăсем тунине палăртрӗ. Малтанхи ревизорсем — Сятровăпа Ярапаров пеккисем — Кагаевăпа Васюковăн ултавлă ӗҫӗсене пит лайăх курса тăнă ҫӗртех вӗсене пытарса пынă иккен, ревизи акчӗсене «пӗтӗмпех йӗркеллӗ, пурте документсенче кăтартнă пекех», тесе ҫырнă. Паллах, ара, ахаль пулса пыман ку — ҫав «ревизорсем» халăха ҫаратакан Кагаевăпа, Васюковпа пӗрле хăйсем те самаях пуйнă. Кун ҫинчен никам та, нихҫан та пӗлмӗ, тенӗ пуль ҫав. Халь вара Кагаевăн сакăр пин ытла тухман, Васюковăн растрати унтан та пысăкрах пулни курăннă.

Ялти халăх калама та ҫук тарăхса шавларӗ кун ҫинчен пӗлсен. Вăкăрварӗнче те, Чăрăшкассинче те хăй-

сем хушшинче нумайранпа пурăннă жуликсене мĕнле кăна ылханмарĕç пуль!

Райпо председателĕ Фролов ниçта кайса кĕме пĕлмерĕ.

— Эп айăплă! Кам хушнă мана çав териех суккăр пулма? Тахçанах тăрă шыв çине кăлармалла пулнăçке вĕсене!..

Çак преступниксемпе пĕрле хăйне те суд умне тăратассине, уншăн нимĕнле каçару та пулас çуккине ăнлансан, Фролов заместителĕ Сятрова наркăмăш ĕçсе вилме пикеннĕ, анчах кӳршĕсем сиснĕ те (аптраса ӳксе тăнсăр пулсан пит хытă кăшкăрнă вăл) вилме паман ăна, часрах больницăна илсе çитернĕ.

...Ревизорсем ĕç пĕтерсе кайсан ик-виç кунтан Ларисăна райпона чĕнчĕç. Ир-ирех тухса утрĕ хĕр. Çанталăк лайăх пулчĕ вăл кун — лăпкă, çил-мĕн çук, сывлăш ытармалла мар таса, кăкăра уçсах ярать те кăмăла çĕклет.

— Ĕç пирки чĕннĕ ĕнтĕ, урăх нимĕншĕн те пулас çук... Заведующи тăвас теççĕ пуль,— шухăшларĕ Лариса.— Фролов ревизорсемпе пĕрле яла пырсан кăштах систерсе хăварчĕ вĕт... Килĕшмех тивет-ши? Анчах пĕччене йывăр килет. Вăл, Кирăна Улăххĕрринчен ман пата куçарсан, аван пулĕччĕ! Ыйтса пăхас мар-ши? Кам пĕлет, тен килĕшме те пултарĕ Фролов? Ăнланакан çын-ха вăл...

Райцентр урамĕпе пынă чух вăл сасартăк Чаттана тĕл пулчĕ. Леш хăй чупса пычĕ ун патне — аякранах палласа илнĕ иккен ăна.

— О-о, Лариса! Эсĕ-çке ку? Епле ирех çитрĕн капла? Ăçта каятăн? Пурнăçсем еплерех пыраççĕ? — çине-çине ыйтма тытăнчĕ каччă.

— Чĕнчĕç те — килтĕм çав,— терĕ Лариса.— Пурнăç пирки... мĕн калас? Хăвах пĕлетĕн пирĕн мĕн пулнине. Тĕп-тĕрĕссипе каласан, пĕтĕм ĕç-пуç санран пуçланчĕ-иç? Çав каçхине леш вăрттăн çӳрекен хурахсем сана хĕнесе хăварман пулсан...

— Ну, тусăм, ку тĕрĕс мар вара! — хĕре каласа пĕтерме те памарĕ Чатта.— Мана пĕрре хăлха чикки пани ниме те пĕлтермест вăл. Вĕсем ман куç айне хунарлартса яман пулсан та милицие пурĕпĕр шăнкăравлаттăм. Шухăшла-ха ара: çав çĕрлехи «хăнасем» темле вăрланă таварпа çӳрени тӳрех паллă пулчĕ те... ун çин-

чен тивĕçлĕ органсене систермесĕр тăма пултарнă-и эпĕ? Пултарайман!..

Вĕсем райпо-çурчĕ патнелле çывхарса пычĕç.

— Мĕншĕн чĕннине пĕлместĕн-и? — ыйтрĕ Чатта, Лариса куçĕсенчен кăмăллăн пăхса.

— Чухлатăп кăштах. Лавккине ман алла парасшăн пулмалла. Иккĕленетĕп-ха. Те килĕшес, те килĕшес мар...

— Килĕшмесĕр тата! Паллах, килĕшмелле!

— Ара, ответлăхĕ ытла та пысăк вĕт! Шикленмелле...

— Ан шиклен! Суту-илӳ ĕçне эсĕ ятарласа вĕреннĕ-çке!

— Вĕренни — сахал-ха вăл. Опыт кирлĕ.

— Пурăннăçемĕн опычĕ вăл хăех пухăнса пырать.

— Йăнăшсем туса тултарăп та... эсех мана тиркесе фельетон çыратăн вара хăвăн хаçатăнта. Çапла марим? — кулам пек турĕ Лариса. Чатта ăна хирĕç ал сулчĕ кăна:

— Пулас çук япаласем çинчен калаçатăн!

Хĕрпе каччă пусмапа иккĕмĕш хута хăпарса тĕттĕмрех коридора кĕчĕç те сасартăк тĕлĕнсех кайрĕç: председатель пӳлĕмĕн алăкĕ умĕнчи диван çинче Кира Шакова лара парать. Ларисăпа Чатта çăвар уçиччен сăмаха вăл пуçларĕ:

— Ай-уй! Ăçта каяççĕ ку Сетнерпе Нарспи?

— Эсĕ ху... ху мĕн тăватăн кунта?! — ун патне пырса мăйĕнчен ыталарĕ ăна Лариса.

— Куран — кĕтсе ларатăп...

— Кама?

Кира Фролов алăкĕ çине тĕллесе кăтартрĕ:

— Чĕннĕ.

— Сана та-и?

— Урăх çыншăн килсе лармастăп ĕнтĕ.

— Мĕншĕнне пĕлместĕн-и?

— Ăс пама пуль... Хамăн айăп пуррине туймастăп та-ха...

Ларисăпа Чатта ик енчен ун çумне ларчĕç.

Чатта ун çинчен куç илмесĕр пăхрĕ.

— Эс те... чĕннипе-и? — ыйтрĕ Кира.

— Ахалĕн мĕн тума килем-ха эп кунта? — тĕлĕннĕ пек пулчĕ Лариса.— Ял Советĕнчен дежурнăй каçхине тĕттĕм пулсан пырса каларĕ — ирпе саккăртах

райпо председателĕ патне çитме хушрĕç, терĕ. Çурранах танккарăм.

— Мана хуть колхоз машини çула май лартса килчĕ. Çапах та, мĕн тума чĕннĕ вăл пире иксĕмĕре те? Сан пирки тавçăрса илме пулать-ха, сирĕн лавкка хуçасăр тăрса юлчĕ. Анчах манпа мĕн ĕç пур Фроловăн? Уlăххĕрри лавккинче эпир Вахрамеевпа иксĕмĕр чипчиперех ĕçлетпĕр, пирĕн пурте йĕркеллĕ...

Çав самантра тултан кĕмелли алăк уçăлчĕ те коридора райпо председателĕ кĕрсе тăчĕ. Яланхи пекех — офицерсен йышши кивĕрех кительпе, хурарах галифепе, уринче кирзă атă, пуçĕнче кепка. Хĕрсене курчĕ те пĕртен-пĕр аллине çĕклесе саламларĕ вĕсене:

— Ырă кун, хĕрупраç! Маттур-çке эсир, çитсе те ларнă! Комсомол темĕн — яланах хастар...

Вăл харăсах ура çине тăнă хĕрсен аллисене тытатыта чăмăртарĕ те хăйĕн пӳлĕмĕн алăкне уçса шалалла кăтартрĕ:

— Тархасшăн, иртĕр...

— Мана та кĕме юрать-и? — ыйтрĕ хĕрсенчен кăшт аяккарахра тăракан Чатта.

— Вăхăту пур пулсан, кĕр ара, кам чарать,— терĕ Фролов.— Ху каларĕш, санăн пурне те курмалла, пурне те пĕлмелле. Халех акă сире пурсăра та çĕнĕ хыпар калăп...

Пурте председатель пӳлĕмĕнчи çемçе пукансем çине вырнаçрĕç. Фролов сĕтел ещĕкĕнчен темле хутсем кăларса хучĕ, пирус тивертрĕ, тĕтĕмне хĕрсенчен аяккалла вĕрсе ячĕ.

— Мĕншĕн чĕннине пĕлместĕр-ха ĕнтĕ эсир, çапла-и? — терĕ унтан, хĕрсем çине ашшĕ хăй ачисем çине пăхнă пек пăхса.— Тĕлĕнетĕр те пулĕ — мĕн шут тытнă ку Фролов?

— Ним те пĕлместпĕр çав... — терĕ Лариса.

— Пуçлăхсем яланах ятлама чĕнеççĕ пуль,— кулам пек туса илчĕ те Кира, хăй хĕрелсе кайрĕ.

— Ятламалăх ĕçлемен-ха эсир,— йăл кулчĕ Фролов та,— халлĕхе эпир сирĕн пирки ыр сăмах çеç илтетпĕр. Малашне тавар илекенсем сире тата ытларах мухтасса шанатăп...

— Темле-çке, Владимир Яковлевич, пĕлме çук... Кагаева та нумай хушă ыр ятлă пулнă та ав...

— Ăна асăнмăпăр, вăл хăйне мĕн тивĕçлине тупрĕ

ёнтӗ, темиҫе статьяпа айӑплаҫҫӗ ӑна, часах хӑтӑлса тухас ҫук.

— Сучӗ пулман вӗт-ха?

— Пулать.

— Хӑҫан-ши?

— Ӑна пӗлместӗп. Следстви пӗтмен. Ӗҫӗ питӗ кӑткӑс та пӑтранчӑк, теҫҫӗ. Вӗсене, Кагаевӑпа Васюкова иккӗшне те, лавккисенчи растратӑсемшӗн ҫеҫ мар, спекулянтсемпе ҫыхланса кайнӑшӑн та, стройкӑсенчен вӑрласа килнӗ материалсемпе сутӑ тунӑшӑн та, ыттисемшӗн те айӑплаҫҫӗ. Тӗрлӗ йышши жуликсемпе пӗр ҫӑмхана кӗрсе кайнӑ вӗсем — ҫав ҫӑмхи питӗ пысӑк пулнӑ, ниепле те сӳтсе ҫитерейменҫҫӗ-ха ӑна. Анчах ытла нумаях та юлман пулмалла ёнтӗ — вӗҫне тухаҫҫӗ. Следстви органӗсем питӗ ӑста ӗҫлеҫҫӗ пирӗн, вӗсенчен ним те пытараймастӑн, шыраса-йӗрлесе тупаҫҫех! Преступниксем ҫавна асра тытмаҫҫӗ, хӑйсене ӑслӑрах тесе шутлаҫҫӗ курӑнать, юлашкинчен вара, темле чеелейсен те, преступлени кутне-пуҫне темле пытарма тӑрӑшсан та пурпӗр лексе халӑх сучӗ умне тухса тӑраҫҫӗ...

— Кусем, сирӗннисем, вӑрахчен иртӗнсе пурӑннӑ вӗт-ха?

— Преступленисене пытарма пулӑшакансем пулнӑ. Халь вӗсем те правосуди аллинче. Лешсемпе пӗрлех ответ тытаҫҫӗ.

— Каҫарӑр та, Владимир Яковлевич... — аллинчи сӑмса тутрине лутӑркаса, именнӗ пекрех каларӗ Лариса,— сирӗн заместитель Матрена Гавриловна Сятрова пирки ырӑ мар сӑмах илтрӗмӗр, тӗрӗсех-ши вӑл? Ёнене те килмест...

— Тӗрӗсех. Вилме тӑнӑ. Сыватаҫҫӗ халь. Айӑпланаканнисен тенкелӗ ҫине лармаллах пулать унӑн. Унпа пӗрле пирӗн бухгалтер-ревизор пулнӑ Ярапаров та каять. Чылай муталанӑ вӗсем. Ревизисене тӗрӗс мар тунӑ, растратчиксене тӳрре кӑларма недостачӑсене шӑлса хунӑ, татах ҫаратма май панӑ. Кӗскен каласан, жуликсемпе пӗр хурантан ҫисе пурӑннӑ. Эпир вӑхӑтра сисмен ҫавна, айвансем!

Фролов пирусне пепельница ҫине пусса сӳнтерчӗ те юлашки тӗтӗме аллипе аяккалла сиркелесе ячӗ.

— Юрӗ-ха хӗрсем, вӑл ирсӗрсем ҫинчен каласса ҫӑвар тутине ярар мар,— терӗ унтан.— Вӗсене пурне те саккун тӑрӑх ответ тыттарӗҫ, пуҫран ачашламӗҫ. Вӑрӑ-

жуликсем пирки совет саккунĕсем çирĕп. Халь пирĕн хамăрăн малашне мĕнле ĕçлесси çинчен шутлас пулать. Çавăнпа чĕнтĕм сире иксĕре те. Ĕнер правленире калаçса çапла шут турăмăр эпир: эсĕ, Логинова юлташ, паянтан пуçласа Вăкăрварĕнчи лавкка хуçи, заведующи пулатăн...

Чатта çав самантрах Лариса хăлхинчен пăшăлтатрĕ:

— Асту, хирĕç ан пул, килĕш!

Фролов çакна асăрхарĕ те ун çине кăмăлсăрланнă пек пăхрĕ.

— Эс мĕнле агитаци тăватăн унта, поэт-писатель?

— Ан пăшăрхан, Владимир Яковлевич, эп хирĕç мар, сан майлă юрлатăп, сан майлă! — пуçне ваш! çĕклесе каларĕ Чатта.

— Апла пулсан... юрĕ, атту-тăк эп сана хӳтерсе кăларса яма та пултаратăп! — Фролов Лариса çине пăхрĕ.— Мĕн калăн ĕнтĕ мана çакăн пирки, Логинова?

— Килĕшет вăл! — тӳрех персе ячĕ Чатта.— Эпир унпа калаçнă кун çинчен, килĕшет!

— Çыншăн ответ парса ан лар, тусăм, вăл хăй калатăр! Пирĕн ун шухăш-кăмăлне пĕлмелле!

Лариса темиçе самант тутине çыртса чĕнмесĕр ларчĕ те йывăррăн сывласа ярса ура çине тăчĕ.

— Килĕшме пултаратăп, Фролов юлташ, анчах манăн хам енчен пĕр услови, пĕр ыйту пулать...

— Мĕнле услови, мĕнле ыйту? Кала, итлетĕп.

— Штатпа Вăкăрвар лавккинче иккĕн ĕçлемелле. Халь эпĕ пĕчченех. Йывăр пулать мана. Ак çак Кира Шаковăна куçарăр ман пата... Вара ĕç ăнма та пултарĕ пирĕн... Пĕркунах, эпир сирĕнпе пирвайхи хут тĕл пулсанах, houses калараăр-çке эсир — май килсенех пĕрле ĕçлемелле тăвăпăр, терĕр. Халь шăпах çав май килсе тухрĕ...

— Сана çавăн пек туйăнать-и? — ыйтрĕ Фролов.

— Туйăнать çеç мар, ку вăл чăнах çапла! — Лариса хăйĕн хĕр-тусĕ çине çаврăнса пăхрĕ.— Эс килĕшетĕн вĕт манпа пĕрле пулма, Кира? Кала хăвăн сăмахна, ĕнентер Фролов юлташа!

— Çак минутрах тухса пыма пултаратăп,— аллине çĕклерĕ Кира.

— Улăххĕрринчи Вахрамеев — пысăк опытлă завмаг, Кира ун патне пыриччен тем териех пĕччен ĕçле-

нĕ, халь те аптрас çук, анчах эпĕ тин çеç ĕçлеме пуçлакан специалист... — терĕ малалла Лариса.— Опыт çук, хăнăху çителĕксĕр манăн...

Фролов пӳрнисемпе сĕтеле тăкăртаттарса илчĕ.

Ларисăна куçран тӳррĕн пăхрĕ.

— Тĕрĕс каларăн, Логинова... Специалист эсĕ, ятарласа вĕреннĕ çын, çавăнпа та халлĕхе пĕччен те ĕçлеме пултаратăн,— терĕ унтан.

— Шаковăна мĕншĕн куçарасшăн мар-ха эсир? — ыйтрĕ Лариса, самаях пăлханма пуçласа.— Вахрамеев патĕнчен мĕншĕн илесшĕн мар ăна? Вахрамеев пĕччен те...

— Каллех тĕрĕс сан сăмаху, Логинова, Вахрамеев пĕччен юлма та пултарать, хирĕçместĕп. Çавна шута илсе, эпир Шакова юлташа ун патĕнчен куçарас, терĕмĕр те ĕнтĕ...

— Ăçта? — хăвăрт ыйтрĕ Лариса.

— Ăçта ярас тетĕр мана? — пукан çинчен яшт! сиксе тăчĕ Кира.— Логинова патне мар пулсан, урăх ниçта та каймастăп. Мана Улăххĕрринче те лайăх. Хам килĕшмесĕр куçарма пултараймастăр... — Кира тăруках çырла пек хĕрелсе кайрĕ.

— Чăрăшкассине ярасшăн эпир сана, Шакова юлташ,— терĕ те Фролов, каллех пирус хыпрĕ.

— Чăрăшкассине-е?! Леш путсĕр Васюков вырăнне-и?! — кăшкăрсах ячĕ те Кира, питне ик ал лаппипе хĕссе лак! ларчĕ.— Пĕтрĕм!.. Ним тусан та каймастăп унта, çук-çук-çук... Апла-тăк, эсир мана халех ĕçрен хăтарăр та Шупашкара таврăнма ирĕк парăр! — Кира Лариса еннелле çаврăнса ларчĕ.— Илтрĕн-и, мĕн шухăшласа хунă вĕсем? Манпа пĕр сăмах калаçман, манран ыйтман... Атя, кайса сик çав шăтăка, шагом марш! Тĕлĕнсе хытса каймалла...

— Мĕншĕн — шăтăка? — пӳлчĕ ăна Фролов.— Нимĕнле шăтăк мар Чăрăшкасси. Чип-чипер, йĕркеллĕ ялах. Сакăр çул вĕренмелли шкул унта, клуб, библиотека, медпункт, кашни килте радио, нумайăшĕн телевизор... Леш намăс-симĕсе çухатнă йĕксĕк Васюков пулнăшăн пĕтĕм яла тиркемелле-и? Унта интеллигенци хĕрĕх çынна яхăн, вĕсенчен çурри ытла — аслă шкулсенче вĕренсе тухнисем...

— Çук-çук, çавах килĕшместĕп,— пуçне пăркаларĕ Кира.— Хуть те пĕр кĕтӳ академик пултăр унта, ман-

шăн пурĕпĕр. Логинова патне куçарсан — тархасшăн, паянах сиккипе чупатăп...

Пĕр хушă шăп пулчĕ. Нихăшĕ те чĕнмерĕ. Хĕре хирĕç, ăна ĕнентермелле калама Фролов та сăмах тупаймарĕ курăнать.

Кĕтмен çĕртен, сасартăк Чатта калаçа пуçларĕ.

— Владимир Яковлевич тĕрĕс калать,— терĕ вăл Кирăна ӳкĕтлес шутпа.— Культура енĕпе илсен, Чăрăшкасси ытти ялсенчен нумай малта пырать. Сăмахран... унти колхозăн хăйĕн духовой оркестр та пур, праçник-уявсенче янратать-тĕк — виç çухрăма илтĕнет! Шкулти пĕр учитель ертсе пырать ăна, çарта полкри капельмейстер пулнăскер...

— Духовой мар, маншăн хуть симфонически пултăр — кирлĕ мар,— ал сулчĕ Кира.— Музыкăна радиопа та лайăх итлетĕп.

— Эп çавна çеç каласшăнччĕ... ман шутпа... килĕшмелле сирĕн, Кира, хирĕçсе тăмалла мар... Пĕртте ӳкĕнмелле пулмасть! Магазинĕ пысăк, çĕнĕпе пĕрех...

— Эс те пулин ан хутшăн-ха! — Чатта çине çилĕпе пăхрĕ Кира.— Тупăннă агитатор! Сан пек ултавçăсемпе калаçмастăп эпĕ! Санăн йăлу çавăн пек — çынна ăçта та пулин кайса ярас та, хăвăн часрах аяккалла тарас. Эс мĕн, хама Вăкăрварĕнче пăрахса хăварнăшăн эп сана каçарнă, тетĕн-и?

— Эп айăплă мар-çке, ун чух манăн милицисемпе пĕрле кайма тиврĕ те час таврăнаймарăм... — мăкăртатса илчĕ Чатта, тарланă çамкине шăлкаласа.

— Ним те пĕлместĕп, пĕлме те кăмăлăм çук! Эс ултавçă иккенне çеç пит лайăх пĕлетĕп!

— Юрĕ-ха, юрĕ, ачамсем, хирĕçер мар,— лăплантармалла каларĕ Фролов.— Паллă ĕнтĕ, çын хăй ăнланасшăн мар пулсан, нимĕнле агитаци те пулăшмаст... Эп сана, Шакова юлташ, ăнланма ыйтатăп. Чăрăшкассинчи лавкка хăçантанпа хупă тăрать! Халăх кăмăлсăр. Пĕр коробка спичкăшăн пилĕк километр уттарма юрамасть-çке çынсене! Лавккана халех, паянах уçас пулать. Анчах ăна никама та шанса пама çук. Çын тупаймастпăр. Мĕн тĕрлĕ шухăшласа пăхмарăмăр пуль. Райисполкомра та, райкомра та сăмах пулчĕ ун çинчен. Юлашкинчен вара санпа калаçса пăхас терĕмĕр. Вăхăтлăха та пулин килĕш, хĕрĕм. Комсомолка вĕт-ха эсĕ, ăнланма тивĕç. Комсомолецсем

пурнăçра сиксе тухакан йывăрлăхсенчен нихçан та хăраман, хуть те мĕнле йывăрлăха та пĕтĕм вăя хурса çĕнтерсе пынă...

Кира ун çине пăхса ларчĕ-ларчĕ те йăл-йăл кулса илчĕ:

— Сирĕн ку каллех агитаци пулчĕ-çке, Владимир Яковлевич...

— Нимĕнле агитаци те мар, юлташла калаçу кăна,— терĕ Фролов.— Тата çакна хушса калама пултаратăп: Чăрăшкасси лавкки валли юрăхлă çын тупăнсанах сана Вăкăрварне куçаратăп. Логиновăпа иксĕр пĕрле ĕçлетĕр вара...

— Ун пек телее миçе çул кĕтме тивет-ши? Çăварта пĕр шăл та юлмиччен-и?

— Ытла нумай илетĕн, Шакова юлташ. Тен, виç уйăх, çур çул — унтан ытла мар. Ĕнен вăтă салтак сăмахне. Ну, мĕнле? Килĕшетпĕр-и çавăн пек?

Кира хуйхăрнă пекех сывласа ячĕ.

— Юрĕ, эппин... Сире хисепленипе — килĕшетĕп, тейĕпĕр. Анчах... хăрамалла-çке вăл Чăрăшкассине кайма, Владимир Яковлевич!

— Мĕншĕн хăрамалла?

— Леш малтанхи завмаг Васюков арăмĕнчен хăрамалла. Сăмах тухрĕ — лавккана хуть те кама ĕçлеме ярсан та, пурăнма памастăп эп ăна, виç кун та усрамастăп, тесе калать тет çав этем. Упăшкине хупнă пирки унăн райри пек пурăнасси пĕтнĕ-çке. Çавăнпа урать ĕнтĕ вăл. Çынсем каланă тăрăх, хĕрарăмĕ чăнах та арçурирен кая мар имĕш. Тем туса хурĕ, ĕçленĕ çĕре пырсах кислотапа куçран сапĕ...

Фролов кулсах ячĕ çакна илтсен.

— Кирлĕ мар хăрама! — терĕ вăл.— Çук халь унта вăл усал хĕрарăм. Тухса тарнă — никам та пĕлмест ăçта кайнине. Хаклăрах япалисене сутнă, тет, укçине унсăр та сахал мар пухнă пуль-ха вăл. «Пилĕк пин вăрларăн!» тесе кăшкăрнă тет-çке Васюков хăйне милицисем тытса кайнă чух...

— Килне пăрахсах тухса кайнă-и вара?

— Килне пăхма вăтă амăшне хăварнă тет. Анчах вăл та нумай пурăнаймасть пуль унта — суд хыççăн Васюков кил-çуртне сутаççĕ. Растрата тунисене саплamalла-çке. Кĕскен каласан, нимĕнле хăрушлăх та çук, Шакова. Каймалла та ĕçleме тытăнмалла çеç!

...Килĕшрĕç хĕрсем. Çав кунах, Фролов çырнă приказ тăрăх, Ларисăпа Кира Вăкăрварĕпе Чăрăшкасси лавккисен çĕнĕ заведующийĕсем пулса тăчĕç.

Унтанпа икĕ уйăха яхăн иртрĕ. Ылтăн кĕркунне хыça юлчĕ ĕнтĕ, çанталăк пăсăлчĕ, пĕр хушă тăтăшах çумăр çурĕ, урамсенче лапра-çĕпре çăрăлчĕ, унтан шăнтса та лартрĕ, мамăк пек çемçе юр çурĕ.

Уйри тырпула та, килти пахчасенчи çимĕçсене те чипер пуçтарса кĕртсе тирпейленĕ ял çыннисен халĕ пушă вăхăт та пулчĕ. Кĕр мăнтăрĕпе хăнасем те пухаççĕ, паян пĕр çĕрте, ыран тепĕр çĕрте тулли кăмăлпа юрлани илтĕнет. Вăкăрварĕнче пĕр уйăх хушшинчех тăвата туй сикрĕ — пĕрисем ывăлĕсене авлантараççĕ, теприсем хĕр параççĕ. Янрарĕ кăна ял хушши!

Лавккаран ир пуçласа каçченех çын татăлмасть. Тем те илет халăх, тем те ыйтать. Хакĕшĕн тытăнса тăмаççĕ — япали лайăх пултăр кăна! Пыра-пыра калаççĕ: çавна илсе кил, куна туянтар...

Çăмăл мар-çке вăл ялти «лавăшник» ĕçĕ! Хуларипе танлаштарсан, вунă хут та кăткăсрах, йывăртарах пуль. Хулари магазинсенче мĕнле-ха унта? Пĕри пиравăр, кĕпе-йĕм сутать, тепри атă-пушмак, виççĕмĕшĕ парфюмери, ачасем вылямалли теттесем... Ялти продавецăн универсал пулма тивет. Çĕр тĕслĕ тавара пĕлмелле унăн. Йĕп-çипрен пуçласа çĕвĕ машинипе мопед таран, тĕрлĕ йышши супăньрен кĕпе çумалли машина, сехет, радиоприемник, ачасен хуткупăсĕнчен пуçласа магнитофон таран. Малашне мĕнле таварсем кирлине те базăна хăйĕннех çырса ямалла, турттарса пырсан — грузчик та хăех вăл, отчетне те тумалла, укçине те кайса хывмалла. Ăнсăртран чŷрече çĕмĕрĕлсен е лавккари кăмака пăсăлсан та юсама пĕлекен маçтăрне унăннах тупса пымалла, урайне те çумалла, хĕлле вуттине те хутмалла. Ĕç-пуç çынсем тиркемелле мар пулса пытăр, пĕтĕмпех йĕркеллĕ пултăр тесен, кăлтăрмач пек çаврăнкалама тивет ялти продавецăн ирпен пуçласа каçчен!

Çапах та Ларисăпа Кира аптрамарĕç. Пур ĕçсене те вăхăтра туса пыма ĕлкĕрчĕç. Çамрăксен вăй пур вĕтха, чĕрери вут-хĕм çителĕклĕ. Пуринчен ытла — хăйсене шаннине тŷрре кăлармалла. Пĕр ырă мар сăмах та ан илтĕнтĕр вĕсем çинчен. Халăх кăмăллă пултăр!..

Каинмалли кунсенче вĕсем кашнинчех тĕл пулчĕç.

Е Лариса Чăрăшкассине каять, е Кира Вăкăрварне пырать. Калаçаççĕ вара... кунĕпе! Хăйсен ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен пĕлтереççĕ пĕр-пĕрине, вĕреннĕ чухнехисене аса илеççĕ, çарти савнă каччисем пирки калаçаççĕ. Сахал-и хĕрсен сăмах-юмах!

Пĕррехинче, района тавар илме кайсан, Лариса райпо базинчен тĕрлĕ йышши лайăх япаласем пирки калакан пысăк та хитре плакатсем нумай тупса килнĕ. Тем тĕрли те пулнă унта — çĕнĕ йышши радиоприемниксем, электричествăпа ĕçлекен çĕвĕ машинисем, утюгсем, пир-авăр, çумалли порошоксем тата темтепĕр туянма йыхăрнă çав плакатсем. Вĕсемпе мĕнле усă курмаллине те ăнлантарса панă.

— Шутсăр тарăхмалла! — терĕ Лариса, çав плакатсене сӳте-сӳте Кирăна кăтартнă май.— Мĕн тери лайăх реклама ним усăсăр выртнă складри кив ещĕкĕсем хыçĕнче! Ăнсăртран курса туртса кăлартăм... Вăрçсах тăкрăм склад хуçине, леш Шемекеев текеннине. Мĕншĕн ялпосене валеçсе памастăр? тетĕп. Анчах вăл шăлне йĕрчĕ те: тупнă тавар, кама кирлĕ ку хутсем, тула кайма та юрăхсăр-иç! тесе хучĕ. Тӳсеймерĕм, товаровед патне кĕрсе кăтартрăм. Усăллă япала çĕтĕлсе-çурăлса выртать сирĕн! тетĕп. Вăл ман çине тĕлĕнсе пăхрĕ те... ăçтан тупрăн? тесе ыйтрĕ. Ну, çилĕ килчĕ! Хăйсен ăçта мĕн пуррине те пĕлмеççĕ!

— Реклама пирки никам та шухăшламасть çав пирĕн райпора,— терĕ Кира.— Хамăрăннах тăрăшма тивет. Малашне эпĕ кашни çĕнĕ тавар пиркиех алăк умне пĕлтерӳ çырса çапатăп. Аякранах курăнтăр. Паллах, перцовка-зубровка илсе килни çинчен мар, ăна ахаль те çитерме çук, уйрăмах ялта туй-мĕн пулсан...

— Эпĕ çĕнĕ кĕнекесем пирки çырса çапрăм ав.

— Куртăм-ха. Анчах кĕнекисене пит сахал ярса параççĕ! Çыннисем, çĕнĕ кĕнекесем пирки хаçатсенче вуласа, радиопа итлесе пĕлеççĕ курăнать те, пыра-пыра ыйтаççĕ, анчах вăл кĕнекесен тĕсĕ те пулман ман патра. Такама айăпламалла уншăн?

— Пире мар ĕнтĕ, аслисене!

Çапла калаçа-калаçах хĕрсем хитре плакатсене стенасем çумне меллĕн вырнаçтарчĕç. Лавкка ăшчикки çуталса, темле ăшăннă пекех пулса кайрĕ. Питĕ кăмăллă!



— Çитес вырсарникун сан лавккуна та илемлетĕпĕр.— терĕ Лариса хăйĕн тусне.

...Хĕрсем лавкка заведующийĕсем пулса ĕçлеме тытăннăранпа вĕсем патне райпо председателĕ Фролов иккĕ-виççĕ те пырса кайрĕ. Кашнинчех питĕ ăшшăн, кăмăллăн калаçрĕ. Мухтарĕ, хавхалантарчĕ.

— Тăрăшăр-ха, хĕрупраç, тăрăшăр, пуриншĕн те пример пулăр! Пире халь пуринчен ытла суту-илӳ культури кирлĕ, çав çукки шутсăрах кансĕрлет...

— Пире тавар ытларах кирлĕ, ассортимент сарлакарах пултăр, председатель юлташ! Тем те ыйтать-çке халăхĕ, сигаретне те фильтрлине çеç туртасшăн хăшĕсем, махорка çине çаврăнса та пăхмаççĕ,— терĕç хĕрсем ăна хирĕç.

— Таварĕ пирки хуйхăрмăпăр, фондсене пысăклатсах пыраççĕ, мĕн кирли пурте пулать!

Лариса ĕçленĕ çĕре шкул директорĕ Цветков часчасах кĕркелерĕ. Кашнинчех «Беломор» илет те, каймасть, яланах кĕнекесем таракан сентре патне пырса пăхать, лавккинче çынсем çук пулсан вăрахчен калаçать вара. Хăй Лариса çинчен куç та илмест, çав тери йăвашшăн пăхать.

Ку ахальтен пулманнине туйса, Лариса пĕррехинче юриех пĕлмĕш пулнă пек ыйтрĕ:

— Валентин Васильевич, эсир çемьеллĕ çын-и çав? Сире нихçан та хăвăрăн мăшăрпа пĕрле курман...

Цветков кăштах хĕрелчĕ те пӳрнипе юнанă пек турĕ.

— Пĕртак тăрăхласа илес терĕр-и манран? Пĕлетĕр вĕт! Юри ыйтатăр!

— Ним те пĕлместĕп. Чăнах...

— Суйнине куçран пăхсах куратăп. Ялта ун пек

сăмах пит час сарăлать. Анчах сирĕн тĕп-тĕрĕссине хамран илтес килет пулсан — пытарса тăмастăп: уйрăлнă эпĕ. Ман арăм пулни ялта пурăнма килĕшмерĕ. Вăл хулара çуралса ӳснĕ, ашшĕ пысăк пуçлăх, персональнăй машина унăн, тăвата пӳлĕмлĕ хваттер, дача, сĕтел-пуканĕ те йăлтах урăх çĕршывран илсе килни. Ма пурăнтăр-ха вăл çак Вăкăрварĕнче?

— Пĕрлешессе... юратсах пĕрлешнĕ пуль-çке эсир?

— Çавăн пек туйăнатчĕ те... пиçсех çитмен иккен çав унăн юратăвĕ. Канлĕ пурнăç манран ытларах кирлĕ пулнă ăна.

— Халь кунта пĕчченех пурăнатăр-и?

— Аннене илсе килтĕм.

— Авланас пулать, эппин, сирĕн... Сахал-и ку чухне лайăх хĕр!

— Хăратăп,— именнĕ пекрех йăл кулчĕ Цветков.— Кашкăртан хăтăлса упа çăварне лекесрен шикленетĕп.

— Сирĕн пек нумай вĕреннĕ çын хăюллăрах пулассăн туйăнать мана.

— Тен, пурăна-киле хăюлланăп-и-ха...— сисмен çĕртенех вăл Ларисăн прилавок çинче выртакан аллине тытрĕ, анчах хĕр çав самантрах каялла чакса тăчĕ.

— Эп çакăн пек ирĕклĕ калаçнăшăн эсир тем ан шутлăр тата! — хĕрелсе кайрĕ Лариса.— Сыв пулăр, манăн лавккана хупмалли вăхăт çитрĕ... Чипер кайăр...

Тепĕр вырсарникун, Лариса Чăрăшкассине кайсан, Кира нимрен малтан ун умне район хаçатне сарса хучĕ.

— Кур-ха, мĕн хăтланать пĕри! — терĕ те вăл, «литература страници» варринчи самаях вăрăм сăвă çине кăтартрĕ.

— Чатта Микулайĕ... «Пирвайхи юрату»... «К. Ш-на халалласа»,— сасăпах вуларĕ те Лариса, тусĕ çине пăхса кулса ячĕ.— Ак хайхи! Литература историне кĕрсе юлма та ĕлкĕртĕн пулать? К. Ш. — эсĕ-çке вăл, Кира Шакова! Пĕлер-ха, эппин, мĕн халаллать сана район классикĕ? Мĕнлерех унăн пирвайхи юратăвĕ?

Лариса васкасах вулама тытăнчĕ:

Ăнсăртран эп тĕл пултăм сана,
Эс çунтартăн тӳрех ман чуна,

Эсӗ маншӑн халь ҫӑлтӑр, хӗвел,
Эсӗ маншӑн чи пысӑк телей...

— Ҫитӗ, малалла янратмасан та юрать! — хаҫата карт! туртса илчӗ Кира.— Таккойски телей кӑтартатӑп-ха эп ӑна ҫакӑн пек ухмахланнӑшӑн!

— Ма ҫилленен? Ҫынни пӗтӗм чӗререн, тар юхтарса, чӗлхине ҫавӑрса ҫыртса ҫырнӑ пуль, эсӗ пур...

— Хуть пуҫхӗрлӗ тӑрса ҫырнӑ пултӑр, анчах мӗншӗн ман инициалсене лартса янӑ вӑл унта?! Кам эпӗ уншӑн? Арӑмӗ-и, еркӗнӗ-и?

— Камне пӗлместӗн пулать! Унӑн юратнӑ хӗрӗ эсӗ! Пӗркунах каларӑм-ҫке, юратать сана вӑл Чатта. Мӗн тӑвас-ха каччӑн, чӗри хыпса тухать пулсан?

— Мана мӗн ӗҫ? Хыпать-и, ҫунать-и... Ӑна пырса сӳнтерме эп пожарник мар пуль? Эккей, тупӑннӑ! Эп ӑна илӗртмен, хама юраттарма тӑрӑшман!

— Эс тӑрӑшнинчен килет-им сана каччӑ юратасси! Калаҫатӑн ҫав, тин ҫеҫ ҫуралнӑ ача пек.

— Эп хам юратмастӑп пулсан, мӗн тума ҫулӑхмалла ман ҫумма?

— Кай, ытла та айванла калаҫатӑн-ҫке! Мӗн пулнӑ-ха сана каччӑ юратса пӑрахнӑшӑн? Савӑнмалла, мӑнкӑмӑлланмалла ҫеҫ пуль уншӑн?

— Намӑс кӑтартнӑшӑн савӑнмалла-и?

— Мӗнле намӑс?

— Ман инициалсене хӑйӗн сӑвви умне лартни — мӗн вӑл? Намӑс кӑтартни мар-им? Ҫынсем ҫав «К. Ш.» камне чухласа илсен, мӗн калӗҫ? Пӑх-ха эс ӑна! Еплерех герой-любовник! Пӗтӗм халӑха пӗлтермелле унӑн хӑй юратнине! Тупата, тӗл пулсанах ҫутӑлтарса яратӑп!

— Хӑвӑн ухмахна ҫеҫ кӑтартатӑн ун пек тусан.

— А вӑл мӗн, хӑй ӑслине кӑтартрӗ, тесшӗн-и эс? Астӑватӑн-и, сан патӑнта ман менелнике ирттернӗ чух вӑл темле парикмахер ҫинчен каласа кӑтартрӗ? Турившльский, терӗ-и ҫав? Пӗр тухтӑра юратса пӑрахнӑ тет те, ун патне кашни кун одеколонсем йӑтса пынӑ, тет...

— Астӑватӑп-ҫке.

— Халь хӑй те ҫав парикмахер меслечӗпе «наступлени» тума шут тытнӑ курӑнать, айван! Анчах одеколон вырӑнне — о д а! Пур вӗт-ха ҫавӑн йышши сӑвӑ?

— Пур ҫав. Анчах ун пек сӑвӑсене пуринчен ытла-

рах патша таврашӗсене мухтаса ҫырнӑ пулас. Эс патша майриех пулайман та-ха...

— Пӗлме ҫук, ку сӑвӑра хӗвелпе танлаштарнӑскер, тепринче вӑл Чатта-ҫатта мана турӑ амӑшӗ те туса хурӗ!

Хӗрсем иккӗшӗ те ахӑлтатсах кулса ячӗҫ.

Ҫав самантра Кирӑн хваттер хуҫи — утмӑлсенчен иртнӗ, куҫлӑхпа ҫӳрекен пӗчӗк кӑна карчӑк — таҫтан таврӑнчӗ. Тумтирне хывса ҫаксанах Кира патне пырса самаях лутӑрканнӑ канверт тыттарчӗ.

— Урамра почтарь тӗл пулса парса ячӗ,— терӗ вӑл.

— Камран-ши ку? Хӑвӑн сержанту Федя ҫырать пуль-ха? — Кира патнелле пырса ыйтрӗ Лариса.

— М-мар... — пуҫне пӑркаларӗ Кира.— Пӑх-ха, штамп: Верховный суд Чувашской АССР...

— Чӗнеҫҫӗ, эппин,— терӗ те Лариса, ассӑн сывласа ячӗ.— Ман пата та пынӑ ӗнтӗ ун пекки...

Конвертра суда пыма хушакан повестка пулнӑ. Кирӑпа Лариса ӑна пӗрлех вуласа тухрӗҫ.

— Шӑп тепӗр эрнерен иккен... — терӗ Кира, повесткӑна хутлатса кӗсйене чикнӗ май.— «В качестве свидетеля...» Эп курни те нумай мар та, мӗн тӑвас тетӗн, чӗннӗ ҫӗре каймах тивет. Ахаль суд та мар вӗт-ха, верховнӑй... Ма-ха районри судра пӑхмаҫҫӗ ку ӗҫе, Шупашкарах илсе кайнӑ?

— Юрамасть пуль. Ӗҫӗ питӗ пысӑк, эппин. Кагаевӑпа Васюков унта пурӑнакан жуликсемпе ҫыхланса кайнӑ тет те...

— Тет мар, вӑл чӑнах ҫапла-ха. Леш тимӗр-шиферсене вӑрласа килекенӗсем кунтисем мар-ҫке. Пӗрле айӑплаҫҫӗ ӗнтӗ вӗсене — вӑрлаканӗсене те, вӑрланӑ япаласене сутаканӗсене те...

Халь ҫеҫ кулкаласа хавассӑн калаҫса ларнӑ хӗрсен кӑмӑлӗ тӑруках пӑсӑлчӗ, сӑнӗсем тӗксӗмленчӗҫ.

— Суд-следстви органӗсемпе ӗмӗрне те ҫыхланмалла ан пултӑр тесе миҫе хут калаҫнӑ пуль эпир санпа... — йывӑррӑн сывласа илчӗ Лариса.— Анчах та килнӗ-килмен ав мӗнле пулса тухрӗ. Верховнӑй суда ҫити каятпӑр...

— Пирӗн хамӑрӑн айӑппа мар-ҫке, жуликсене пула! — терӗ Кира.

— Ҫавах... аван мар.

— Эп питех кӳренместӗп-ха. Шупашкара кайса

килме сăлтав пулчĕ хуть, уншăн саванатăп çеç. Аттутăк тахçан тӳр килетчĕ! Театрсенче çĕнĕ сезон пуçланнă, темиçе кунах пурăнма тивсен — кайса курман пĕр премьера та хăвармастăп!

— Спектаклĕсене хамăн та курас килет-ха...

Сĕтел хушшине чей ĕçме ларсан, сăмах каллех суд çине куçрĕ.

— Тĕрĕс каларăн эсĕ, жуликсемшĕн чăрманса çӳреме тивет! — терĕ Лариса.— Питĕ шутсăр тарăхмалла! Вĕсем вăрлаççĕ, халăх пурлăхне салатаççĕ, эпир ĕç пăрахса кай... Шутлатăп-шутлатăп та, ниепле те ăнланаймастăп, пуçа шăнăçмасть манне: мĕнле ал çĕкенет пуль çавăн пек этемсен хăйсем ĕçлесе тупман укçана ывăçласа илме? Мĕн çинчен шутлаççĕ вĕсем вăрланă вăхăтра, халăх укçине хăйсен çумне чикнĕ чух?

— Шутламаççĕ те пуль, пуяс килет кăна вĕсен...

— Лекесси, ответ тытмалла пуласси асра та çук-ши вара?

— Нихçан та лекместпĕр, теççĕ ĕнтĕ...

— Тата... мĕне пĕлтерет вĕçĕмсĕр пуйни? Сăмахран, манăн завмаг пулнă Кагаевăнах илер. Мĕн валли пухнă вăл çав ылтăна? Виçĕ перекет кĕнеки çинче — вунпилĕк пин!

— Çăтлăхăн виçи те, чикки те çук, теççĕ...

— Хăçан пĕтĕç-ши çавăн пек чыссăр-намăссăр çынсем?! — тарăхса сĕтеле çапса илчĕ те Лариса, тепĕр самантран хăех ответ пачĕ: — Ытла халех мар пуль-ха çав. Кĕрешмелле вĕсемпе, Чатта каланă пек. Пĕр чарăнмасăр! Кашни кун!..

## 21

...Суда каймалли повестка Лариса ячĕпе те пынă. Кунсăр пуçне, Лариса киле таврăнсан тепĕр кунне ун патне райпо председателĕ Фролов шăнкăравларĕ:

— Çитес тунтикун ирхине Шаковăпа иксĕр те кунта килĕр, Шупашкара хамăрăн машинăпа, пĕрле кайăпăр. Ĕлкĕретпĕр, сучĕ вуннăра тин пуçланать...

Анчах Ларисăпа Кира унччен кĕтсе тăрас темерĕç, шăматкун кăнтăрлах Фроловпа телефонпа калаçса илчĕç те,васкасах шоссе çине тухса автобуспа вĕçтерчĕç. Шупашкара çитсен йăпăрт кăна хăйсен суту-илӳ шкулĕн общежитине, хĕрарăм-комендант патне кĕрсе çĕр

выртасси пирки калаçса татăлчĕç, вара тӳрех Атăл хĕррине, «Родина» кинотеатра кайрĕç, унта çĕнĕ фильм — «Хозяин тайги» кăтартаççĕ. Билетсем пур-мĕн, черетре те нумай тăма тивмерĕ. Картини çав тери килĕшрĕ хĕрсене — пуринчен ытла тĕп герой, çамрăк милиционер, кăмăла кайрĕ. Чӳлмекĕ-чӳлмекĕпе сĕт ĕçет, вăхăчĕ-вăхăчĕпе шутсăр хитре юрлать, пăхсан хăй пĕртте паттăр çын пек туйăнмасть, анчах патшалăх пурлăхне вăрлакансене калама çук ăста йĕрлесе тытать.

— Маттур сержант! — терĕ Кира киноран тухнă чух, Ларисăна хулĕнчен пăчăртаса.— Питĕ маттур! Юратма пулать кун пеккине...

— Пирĕн хамăрăн сержантсем начар-им? — хулпуççи урлă пăхрĕ ун çине Лариса.

— Таçта-ха вĕсем,— кăмăлсăр пулнă пек каларĕ ăна хирĕç Кира,— тахçан курма тӳр килет...

— Ан хуйхăр, куратпăр! Çулталăкран служба срокĕ тухать вĕсен, таврăнаççĕ. Тен, пĕрре-пĕрре отпуска та килсе кайĕç-и...

— Пит аванччĕ! Тĕрĕссипе каласан, Федьăна манăн шутсăр курас килекен пулса çитрĕ. Хăш чух тĕлĕкре куратăп... Мĕншĕн-ши вăл?

— Мĕншĕнни каламасăрах паллă пуль. Юрататăн эс ăна.

— Эс хăвăн Гришуна юратмастăн-им?

— Пĕлместĕп... Тен, юрататăп та-и. Тепĕр чух, кичем пулсан, сăнӳкерчĕкне кăларса вăрахчен пăхса ларатăп.

— Çав ĕнтĕ вăл... чун туртни! Тĕрĕсрех каласан — юрату...

Вĕсем Чебоксарка çинчи ансăр кĕпер урлă каçса пăшал пемелли тир тĕлĕпе иртрĕç те, Кира тăрук темрен хăранă пек пат! чарăнса Ларисăна та хулĕнчен туртса чарчĕ.

— Эс пăх-ха, Лариса... Мĕн ку? Куçа курăнать-и?— пăшăлтатса илчĕ хăй.— Ним те ăнланмастăп...

— Мĕн курăнать? — тĕлĕнсе ыйтрĕ Лариса.

— Ара, ара... çынсем хушшинче... ик салтак! Çавсем вĕт!..

Хĕрсене хирĕç вĕр-çĕнĕ шинельсем тăхăннă, çĕлĕкĕсене кăшт чалăштарарах лартнă, аттисене тĕкĕр пек йăлтăртатмалла çутатнă, журнал хуплашки çинчи хитре ӳкерчĕк евĕрлĕ икĕ сержант-артиллерист хăйсен

хушшинче тем пирки аллисене сулкаласах калаçса утса пыраççĕ. Гриша Арсентьевпа Федя Кольцов, Ларисăпа Кирăн савнийĕсем вĕсем, урăх никам та мар!

— Тыт мана, Лариса, халех кайса ӳкетĕп эпĕ... — хĕп-хĕрлĕ пулса кайса, кулса ярасран тутисене чăмăртарĕ Кира.

— Тӳс-тӳс, чунăм, тӳс, чунăм... — кулчĕ Лариса та, хĕр-тантăшĕ çумнелле йăпшăнса.

— Атя-ха, пăрăнар... хăйсем кураççĕ-и пире?

Анчах савăнăçлăн пăлханса кайнă хĕрсем пăрăнма ĕлкĕреймерĕç, каччăсем вĕсен тĕлне çитрĕç. Хăйсен савнă хĕрĕсене курсан вĕсем те самантлăха юпа пек хытса тăчĕç — ытла та кĕтмен çĕртен, асамлă юмахри пек пулчĕ-çке ку!

— Во! Чăн та çылăхсăр çынсем иккен эсир! — хăлаçланса кăшкăрсах ячĕ сержантсенчен пĕри, Федя Кольцов.— Халь кăна сирĕн çинчен калаçса пыраттăмăр... Салам, хĕрсем, вут-çулăмлă салам!.. Тем пекех тытса чуптăвăттăмăр та сире... аван мар урамра, куракансем нумай, обществăри йĕркелĕхе пăснăшăн тытса кайĕç тата...

Сержантсем хĕрсен аллисене силле-силле чăмăртарĕç.

— Мĕн калаçрăр вара эсир пирĕн çинчен? — ыйтрĕ Кира, хăйĕн Кольцовне куçран шăтарасла пăхса.— Тиркерĕр пуль-ха...

— Мĕншĕн тиркес сире, çакăн пек ырă хĕрсене? Ыран такси тытсах сирĕн пата пырас пирки сăмахларăмăр! Тупата, халь курман пулсан, ирех тухса вăркăнаттăмăр çав...

— Пит хитре пулатчĕ: эсир — унта, эпир — кунта...

— Ан та кала! Салтакăн та телей пурах, тени тĕрĕс иккен!

— Сире... отпуска ячĕç-и? — Гриша Арсентьевран хуллен ыйтрĕ Лариса.— Нумайлăха-и?

— Отпуска килтĕмĕр çав, вунă кунлăха.

— Эпир те халь кăна сирĕн çинчен калаçрăмăр. Пĕрре-пĕрре отпуска килеççĕ пуль-ха, терĕмĕр. Пĕлнĕ пекех...

— Ну, мĕн туса тăратпăр-ха эпир урам варринче? — хĕрсене иккĕшне те хулĕсенчен тытрĕ Кольцов.— Атьăр ăçта та пулин! Кинона-и, мĕн-и...

— Эпир Кирăпа иксĕмĕр тин çеç киноран тухрăмăр,— терĕ Лариса.

— Апла-тăк — театра! Чăваш опери унта паян — «Шывармань». Кĕрсе курар-и? Килĕшетĕр-и?

— Эпир хирĕç мар,— терĕ Кира.— Анчах билетсем пур-ши-ха?

— Тупатпăр! Салтаксене хисеп пулмаллах...

Çамрăксем тăваттăшĕ те алла-аллăн тытăнса тăвалла утрĕç.

— Эсир хăвăр мĕнле килсе лекнĕ тата Шупашкара? — ыйтрĕ Кольцов, пĕрре Кира, тепре Лариса çине пăхса.— Канмалли кунсене столицăра ирттерес тесе-и? Уçăлма, çынсене курма, хăвăра кăтартма?

— Ĕçпе килнĕ-ха эпир. Çитменнине — питĕ усал ĕçпе,— терĕ ăна хирĕç Кира.

— Ан ултала-ха, мĕнле усал ĕç пулма пултартăр сирĕн çумра?

— Пĕртте улталамастăп. Суда чĕннĕ пире.

— Суда-а? Ан суеçтер! — Кольцов Лариса çине çаврăнса пăхрĕ.— Шӳтлет пуль Кира? Шӳтлет вĕт? Ĕненместĕп!

— Питĕ шел те... шӳтлемест çав, тĕрĕссине калать,— ассăн сывласа илчĕ Лариса.

— Аçа çаптăр! Мĕн сиксе тухнă вара ун пекех? Айăплаççĕ-и?

— Айăплаççĕ...

— Сире-и? Хăшне? Е иксĕре те-и?

— Турра шĕкĕр, халлĕхе пире мар-ха. Эпир свидетельсем çеç.

— Ну... апла татах хуть, Атту-тăк эпĕ хăрасах кайрăм...

Кира Кольцов çине куç харшисем айĕн пăхса пуçне пăркаларĕ.

— Ниушлĕ эсĕ... ниушлĕ эпир хамăрăн чыса çухатма, преступлени тума пултарнă тесе шутлатăн, Федя? Ай-яй, апла...

— Çук-çук, шутламан эпĕ нимĕн те! — ик аллипе харăс сулса ячĕ Кольцов.— Анчах тепĕр чухне ирсĕр этемсем хăйсен айăпне урăххисем çине ярса тап-таса çынсене те вараласçĕ-çке! ОБХССра ĕçлекенсем хамăр шкула пырса каласа кăтартнисене лайăх астăватăп!

— Ăна эпир те пĕлетпĕр. Çавăнпа та сыхланса ĕçлетпĕр, пире ытла тăруках муталаймăн. Халăх пур-

лăхне хапсăнакансен кукăр аллисене пăрма хамăр пулăшатпăр...

— Сучĕ хăçан-ха?

— Виçмине, тунтикун, вуннăра.

— Эпир те кайса итлер мар-и вăл суда, Гриша?— Ларисăпа юнашар утакан Арсентьевран ыйтрĕ Кольцов.— Пĕлер пирĕн хĕрсем тĕрлĕ жуликсене еплерех тăрă шыв çине кăларса çунтарнине.

— Юрать ара, эп хирĕç мар, вăхăт пур пирĕн,— килĕшрĕ лешĕ.

Театра вĕсем спектакль пуçланиччен чылай малтан кĕрсе тумтирĕсене гардероба пачĕç те, фойене хăпарсанах лара-тăра пĕлмен шухă Федя Кольцов пурне те тӳрех буфеталла туртрĕ:

— Атьăр-ха, çакăн пек телейлĕн тĕл пулнă ятпа сăра та пулин ĕçер! Шупашкар сăрине тутанса пăхманни... çĕр çул!

Вăл харăсах тăватă кĕленче сăра, хĕрсем валли пĕрер пирожнăй илчĕ. Сăрине стакансем çине янă чух та шав калаçрĕ:

— Э-эх, пăхăр-ха эсир, сăри ытла та лайăх-çке, еплерех кăпăкланать! Пĕр поэт мĕнле çырнă-ха? «Чăваш сăра тума ăста, чăваш сăри хăмлаллă, теççĕ...» Ну, тусăмсем, сирĕн сывлăхшăн пултăр эппин!

Пурте ĕçме хатĕрленсе стакансене çĕклерĕç. Лариса çав вăхăтра темлерен сылтăмалла пăхрĕ те тепĕр сĕтел умĕнче Чатта тăнине курах кайрĕ. Çав тери кӳреннĕ сăнлă хăй. Шеремет, ăнланнă ĕнтĕ вăл хĕрсем мĕнле каччăсемпе пулнине. Лешсем вĕсем, пĕркун Лариса патĕнче сăнӳкерчĕкре курнисем, Ларисăпа Кирăн савнийĕсем...

Çапла пулнă: хăйне те суда пыма хушакан повестка пырса парсан, Чатта, Шупашкара хĕрсемпе пĕрле кайма ĕмĕтленсе, Вăкăрварне шăнкăравланă. Ларисăпа Кира тин çеç тухса кайнине пĕлсен вара тытăнса тăман, хăй те тӳрех Шупашкара вĕçтернĕ. Театрне те «тен, вĕсене унта тĕл пулăп», тесе кайнă. Хĕрсем буфетра икĕ хитре сержантпа пĕрле хавассăн калаçса сăра ĕçме хатĕрленнине курсан чĕри пăчăртанса ыратсах илнĕ унăн...

Лариса тепре ун еннелле пăхсан, вăл курăнмарĕ.

Тӳсеймен каччă, аяккалла пăрăнса кайнă пулмалла, мăнтарăн!

...Спектакль хыççăн сержантсем хĕрсене суту-илӳ шкулĕн общежитине автобуспа мар, Чулхула урамĕпе ерипен уттарса çурранах ăсатрĕç те. хăйсем çĕр каçма Федя Кольцовăн пир-авăр комбинатĕнче ĕçлекен аппăшĕ патне кайрĕç. Ларисăпа Кира вара комендант пӳлĕмĕнче пĕр кравать çинче выртса вăрахчен çывăрса каяймасăр пăшăлтатрĕç. Питĕ савăнмалла пулса тухрĕ-çке вĕсен паян! Хăйсен каччисемпе çакăн пек тĕл пуласси çинчен вĕсем шутлама та пултарайман вĕт!..

— Ахаль мар чун туртрĕ çак кунсенче Шупашкаралла... — терĕ Кира.— Темле шалти сас систерчĕ курăнать çакăн пек пуласса...

— Ан та кала! Кун пек кĕтмен япала пурнăç тăршшипе те пĕрре кăна сиксе тухать-и тен... — унпа килĕшрĕ Лариса.

— Улшăннă вĕсем çулталăк хушшинче...

— Мĕн енчен улшăннă тесе шутлатăн?

— Асăрхамарăн-им, епле патварланса кайнă! Çара ăсатнă чух иккĕшĕ те шуранка, имшертерехчĕ. Халь пăх-ха вĕсене, пит çăмартинчен пӳрнепе пуссанах юн пĕрхĕнсе тухас пек-иç! Куçĕсем те ялкăшса çеç тăраççĕ. Сассисем те хулăнланнă...

— Салтак пăтти усăллă пулнă, эппин, вĕсемшĕн.

— Куртăн-и, кăкăрĕсем çинче миçешер значок вĕсен? «Гвардия», «Отличник Советской Армии», «ВСК»... Ыйтса пĕлтĕм эпĕ Федьăран — çав саспаллисем «военно-спортивный комплекс» тенине пĕлтереççĕ.

— Çавăнпа отпуска янă та вĕсене. Службăна начар туса пыракансене, дисциплинăна пăсакансенех ярас çук.

— Тупата, пит лайăх ачасем, ним те калаймăн! — ăмсаннă пек хаш! сывласа ячĕ Кира.

— Çитĕ, çывăр... — чавсипе тĕртрĕ ăна Лариса.— Тен, тĕлĕкре те курăн-ха хăвăн Федюна.

— Пулма пултарать...

Ирхине, пĕр тăхăр сехетсем тĕлнелле, вĕсем каллех пурте пĕрле пухăнчĕç. Çулталăк курмасăр пурăннă хыççăн епле-ха чун ан турттăр пĕр-пĕрин патне? Хула тăрăх нумай çӳрерĕç çамрăксем, тем çинчен те калаçрĕç, ресторана апат çиме кĕрсен пĕрер черкке портвейн та ĕçрĕç («шкул ачисем мар ĕнтĕ эпир, кăштах причаш

сыпсан та çылăх мар пире», терĕ Федя Кольцов), каç-хине каллех театрта пулчĕç — çамрăксен театрĕнче «Город на заре» пăхрĕç. Чун-чĕрене хускатакан, кăмăла çĕклекен спектакль иккен вăл. Инçет Хĕвелтухăçĕнче, унччен этем ури те пырса пусман тайгара Тăван çĕршывăн тĕрлĕ кĕтессисенчен хăйсен ирĕкĕпе пынă çамрăксем çĕнĕ хула — Амур çинчи Комсомольск тăваççĕ. Мĕн кăна тӳсмеççĕ пуль вĕсем, мĕнле йывăрлăхсене çĕнтерме тивмест пуль хастар чĕреллĕ çамрăксен! Паллах, ытла пурте пĕр пек мар, хăравçăсем, мĕскĕн чунлисем те пур вĕсем хушшинче, хăшĕсем йывăрлăхсене тӳсеймесĕр тухса та тараççĕ. Анчах йышлă мар ун пек йĕрĕнмелле этемсем. Паттăрсем нумайăн. Паттăрсем çĕнтереççĕ. Çĕнĕрен çуралнă хула çийĕнче хĕрлĕ ялав вут пек ялкăшать...

...Спектакль тăршшĕпех пирĕн туссем сывламасăр тенĕ пек пăхса ларчĕç. Ытла та хытă çавăрса илчĕç сцена çинче пулса иртекен ĕçсем çамрăксен кăмăлне. Театртан тухсан та вĕсем халь кăна мĕн курни çинчен калаçрĕç, уйрăм эпизодсене, геройсене аса илсе мухтарĕç.

— Вăйлă ĕçленĕ ун чухнехи çамрăксем! — терĕ Кира.— Питĕ вăйлă, калама та çук!

— Халь те унтан начар ĕçлемеççĕ,— терĕ ăна хирĕç Кольцов,— çĕршывра мĕн чухлĕ ударлă стройка,— пур çĕрте те комсомолецсем, çамрăксем... Çĕпĕрти нихçан сухаламан çеçенхирсене те вĕсемех сухаласа миллионшар пăт тырă паракан турĕç. Сахал-им ку?

— Вăл тĕрĕс, анчах ун чухнехи условисене шута ил-ха эсĕ! Сиввине те, выççине те тӳснĕ, ĕç хатĕрĕсем — пуртă та кĕреçе çеç пулнă вĕсен. Çапах та ĕçленĕ вĕт-ха çынсем, мĕн тери чаплă хуласем, заводсем туса лартнă! Халь кашни стройкăрах çĕр тĕслĕ машина...

— Машинĕ те хăй тĕллĕн ĕçлемест-çке, ăна çын ĕçлеттерет,— парăнасшăн пулмарĕ Кольцов.— Тепĕр сӳтĕк, шалттай-палттай аллине темле чаплă машина парсан та, ăна вăл виç кунтанах стройран кăларать. Сахал çĕмĕреççĕ-и тимсĕр çынсем хаклă техникăна? Машинăпа ĕçлеме те, ăна пăхма та пĕлес пулать. Эппин, ĕçлеме тытăниччен, хаçатсенче çырнă пек каласан, техникăна тĕплĕ вĕренмелле, ăна валли каллех вăхăт та, тӳсĕм те кирлĕ, туйран туя çӳренипех пулакан япала мар вăл...

— Çитĕ, Федя, ĕнентертĕн, парăнатăп,— Кольцов куçĕнчен пăхса йăл та йăл кулчĕ Кира.— Питĕ ăста агитатор пулса кайнă-çке эсĕ, шкулта вĕреннĕ чух ун пекех марччĕ...

— Замполит хушнипе вăл ротăра та час-часах питĕ хĕрӳллĕ калаçусем ирттерет, салтаксем çăвара карсах итлеççĕ ăна,— юлташне ырласа илчĕ Гриша Арсентьев.

— Ан мухта, пăсăлма пултаратăп!—кулчĕ Кольцов.

...Сасартăк малта, «Мир» кинотеатр тĕлĕнче, темиçен хытă кăшкăрса юрлани илтĕнсе кайрĕ. Темле сăмахсăр юрă пек туйăнчĕ— ла-ла-ла, ла-ла-ла! тенине çеç уйăрса илме пулать. Çывăхарах пырсан, пирĕн туссем юрлаканĕсене те курчĕç: кĕнеке киоскĕ çумне темиçе каччăпа хĕр тайăнса тăнă та, пĕри мăйĕнчен кантрапа çакса янă гитара хĕлĕхĕсене пур пӳрнисемпе пĕр харăс çапса янратнă май хăлхана çурмалла çухăраççĕ. Çанталăкĕ кĕçĕр самаях сивĕ, юр та çăвать пулин те, каччисем çара пуçăн, ахăртнех пупсем пек хулпуççирен те аяларах ӳстерсе янă çӳçĕсем ăшăтаççĕ пуль вĕсен пуçĕсене! Клёш-йĕмсем тăханнă икĕ хĕрĕ гитара калаканни умĕнче ун-кун авкаланса ташланă пек тукаласа тăраççĕ. Тӳрех курăнать, çав пĕтĕм якăлти ушкăн — каччисем те, хĕрĕсем те — самаях хĕрĕнкĕ. Чипер урă пуçлă çын халăх умĕнче нихçан та çакăн пек аташас çук ĕнтĕ!

Хăйсен тĕлĕпе икĕ салтакпа икĕ хĕр шăкăл-шăкăл калаçса иртнине курсан, çав вăрăмçӳççенчен пĕри, пуринчен те ытларах йĕркерен тухнăскер пуль çав, тăрук тротуар çинелле тухса пĕр аллине çĕклерĕ те çĕтсе ларнă сасăпа кăшкăрчĕ:

— Салют, генерал-прапорщиксем! Ыйту пур: пĕр чувихине пире парса хăварăр-ха, атту эпир комплектлă мар! Сире иксĕре йăпанма кĕçĕрлĕхе пĕри те çитет! Ажур? Контакт?

Çак тӳсме çук ирсĕр сăмахсене илтни сержантсемшĕн хăйсене кĕтмен çĕртен вĕри шывпа сапнă пекех пулчĕ. Пат! чарăнса тăчĕç вĕсем хĕрĕсемпе пĕрлех.

— Мĕ-ĕн?! Мĕн терĕн эсĕ?! — Федя Кольцов тӳрех Кира çумĕнчен уйрăлса çав урамри «юрăç» патнелле утрĕ.— Тепре кала-ха, илтеймерĕм... Уçăмлăрах кала!

Пĕлме çук, тем пулатчĕ. Федя хăш чух ытлашши хĕрсе каять, хăйне ним сăлтавсăр тарăхтарсан чаракĕ

çукрах унăн. Çавăнпа та Гриша Арсентьев ăна часрах хулĕнчен ярса тытрĕ.

— Ан ухмахлан! Хамăраннах намăс курма тивĕ!

Кира та пырса каялла туртрĕ каччине:

— Совет воинĕн ятне ярас тетĕн-и çав услаппа çыхланса? Ара, этем мар-иç вăл, ик ураллă выльăх!

Кольцов юлташĕсем ÿкĕтленине итлерĕ, çилĕпе ал сулчĕ те вĕсем патне таврăнчĕ.

— Тыттармаллаччĕ те пĕрре...— терĕ çеç юлашкинчен.

Вĕсем каллех пурĕ юнашар тăрса аначалла утсан, ÿсĕр ушкăнрисенчен тахăшĕ икĕ хут ши! ши! шăхăрчĕ. Ыттисем лаша кĕçеннĕ пек кулса ячĕç. Унтан малтанхи майлах юрлама тытăнчĕç — ла-ла-ла, ла-ла-ла!

— Тĕлĕнмелле халăх... — терĕ Гриша Арсентьев, тепĕр хут каялла çаврăнса пăхса.— Питĕ тĕлĕнмелле!

— «Халăх» сăмаха варалама та юрамасть ун пеккисем çинчен калаçнă чух,—терĕ ăна хирĕç Кольцов.— Халăх шутне ниепле те кĕме пултараймаççĕ вĕсем! Пăхсан та çын майĕ çук-иç! Орангутангсем!

— Çапах та камсем-ха вĕсем сан шутупа? Тĕрĕссипе!

— Тĕрĕссипе калас-тăк — лĕкĕ! Лапăрчăк кĕпе-йĕме лайăхрах тасатма хуранта вĕретнĕ чух шыв çине, çиеле, лĕкĕ тухать-çке? Шăп çавă вĕсем. Пирĕн общество пурнăçĕнчи лĕкĕ. Усал кăпăк.

— Анчах эсĕ чут çеç çапăçма кĕрсе каяттăн вĕсемпе...

— Ытла шутсăр тарăхрăм-çке, тÿсмелле мар! Хайсем камне пĕлмеççĕ, çапах чипер йĕркеллĕ çынсенчен мăшкăллама пăхаççĕ!

— Тислĕкпе çыхлансан, ху та тислĕк пулатăн, тенине илтмен-им?

— Пĕлетĕп-ха ăна. Тавах сире, вăхăтра чартăр мана. Тем курăн!

Калаçăва Лариса хутшăнчĕ:

— Пĕлессĕм килет манăн... Мĕнле ĕмĕтсемпе пурăнаççĕ çакăн пек «волосатиксем»? Кашни çыннăн, уйрăмах çамрăк çыннăн, пурнăçра пĕр-пĕр ĕмĕт, палăртса хунă тĕл, тĕп шухăш пулмалла-çке-ха! Унсăр мĕнле пурăнатăн çĕр çинче?

— Мĕн ĕмĕчĕ пултăр вĕсен! — ал сулчĕ Кира.— Ĕмĕтлĕ çыннăн шухăшлама пултаракан йĕркеллĕ пуç

пулма тивӗç. Анчах кусен пурин те пуç вырӑнне — çурӑк чӳлмек! Шӑтӑк параппан!

— Ытла тӗрӗсех мар эс калани,— хӗр сӑмахне пӳлчӗ Кольцов.— Ӗмӗтсем пур вӗсен...

— Мӗнле ӗмӗт? Мӗн ӗмӗчӗ? Ан пакӑлтат! — хӑрхар турӗ Кира.

— Калам-и?

— Сӑмахне пуçларӑн пулсан, каласа пӗтер çав!

— Çакӑн пек вӗсен ӗмӗчӗ-шухӑшӗ: епле те пулсан ӗçлес мар, çын шучӗпе пурӑнас, тӑраниччен çывӑрас, тӑрсан какӑриччен çиес, кашни кун эрех-сӑра тупса ӗçес, унтан танцплощадкӑна кайса тӗпӗртетес, упӑтелле сиккелес те хӑйсем йышши хӗрсемпе çапкаланса çӳрес... Паян та, ыран та, пур чух та!

— Çав кӑна ӗнтӗ! Анчах этем ӗмӗчӗ-и вӑл?

— Ашкӑнса пурӑнма ашшӗ-амӑшӗ панӑ укçа çитмест пулсан,— терӗ малалла Кольцов,— укçа тупма тӑрӑшаççӗ... Паллах, укçине вӗсем ӗçлесе, тар юхтарса мар, çӑмӑлтарах майпа тупасшӑн.

— Вӑрласа!

— Вӑрласа-и, кама та пулин улталаса-и, вӗсемшӗн пурӗпӗр. Меслечӗсене тупаççӗ. Хамӑр тин çеç тӗл пулнӑ эсреметсем пек тунеядецсем, харам пырсем час-часах преступленисем тӑвас çул çине тӑни çинчен хӑш чух хаçатсенче те вулама пулать, телевиденипе те кӑтарткалаççӗ вӗсен «паттӑрла» ӗçӗсене, хӑвӑр та курнӑ пуль. Укçи вӗсене ним тума та мар, ӗçсе супма çеç кирлӗ...

— Ӗçсен вара ашкӑнма-иртӗнме тытӑнаççӗ!

— Ара, шутсӑр паттӑр мар-и! Нимрен те хӑрамаççӗ! Телефон-автоматсене пӑсмалла вӗсен, парксенчи тенкелсене тӳнтермелле, урнӑсене çӗмӗрмелле, иртен-çӳренсене кӳрентермелле, хирӗç калама хӑякансене ним шухӑшласа тӑмасӑрах хӗнесе хӑваресси те пулать...

— Хӑш чух магазинсен хитре витринисем те кансӗрлеççӗ вӑл ирсӗр чунсене. Астӑватӑр-и, виçӗмçул хамӑр общежити патӗнчи çӗнӗ магазинӑн виçӗ метр çӳллӗш кантӑкне темле йывӑр япалапа çапса аркатнӑччӗ? Ун пек кантӑка заводра туса кӑларма та, кунта илсе çитерме те мӗне тӑрать пуль! Юрать-ха, хулиганӗсене кайран тупса суд тунӑ, терӗç...

— Кай, тек калаçас мар ун пек чыссӑрсем çинчен,

илтес те килмест, ытла йӗрӗнмелле! — терӗ пӗр хушӑ шарламасӑр пынӑ Лариса.



— Тӗрӗс, питӗ йӗрӗнмелле, анчах пурӑнӑҫра ҫавӑн пек чуна кӳрентерекен типсем, куҫа хупса иртес ҫук вӗсен тӗлӗпе,— терӗ ӑна хирӗҫ Гриша Арсентьев.— Федя каларӗш, лӗкӗ ҫӳле тухать, асӑрхатӑнах ӑна!

— Ҫирӗпрех тыткалас пулать вӗсене, иртӗнме-ашкӑнма памалла мар, пирӗн пурнӑҫ йӗркисене пӑснӑшӑн хытӑрах айӑпламалла!— чышкине чӑмӑртасах каларӗ Кира.

— Халь те ачашламаҫҫӗ, кашни чарусӑр этем закон тӑрӑх ответ тытать,— терӗ Кольцов.— Ҫавӑнпа та преступленисем ҫулсеренех чакса пыраҫҫӗ. Анчах... мӗн тӑвас, ҫемье чӑлахсӑр мар. Вӗсене хирӗҫ пӗччен-иккӗн мар, пӗтӗм халӑх кӗрешмелле...

Ҫамрӑксем пӗр хушӑ чӗнмесӗр пычӗҫ. Унтан сӑмаха Гриша Арсентьев пуҫларӗ:

— Эп каллех лешсене аса илтӗм-ха, «Мир» патӗнче тӗл пулнисене. Аса илтӗм те, кӗҫӗр сцена ҫинче курнӑ геройсемпе танлаштарма пикентӗм... Ҫук, май килмест танлаштарма. Ниепле те! Кусем, эпир урамра тӗл пулнисем, тайгара ҫӗнӗ хула тума каяс ҫук. Кайсан та темиҫе кунтанах тарса пӗтмелле!

— Салтаксем пек каласан, эпӗ ун пеккисемпе разведкӑна каймастӑп,— хушса хучӗ Федя Кольцов.

Тунтикун ирпе хӗрсем суд ҫуртне тӑхӑр сехетченех пычӗҫ. Ларусен пысӑк залӗ пушах, хыҫалти ретре ҫеҫ ялти пек тумланнӑ виҫ-тӑват хӗрарӑм шӑппӑн калаҫса лараҫҫӗ. Урӑх никам та ҫук.

— Иртерех килнӗ эпир, атя, уҫӑ сывлӑша тухса ҫӳрер, кам пӗлет, тен кайран кунӗпех пӑчӑхса ларма тивӗ,— терӗ Лариса.

Кира унпа пӗр сӑмахсӑрах килӗшрӗ.

Вӗсем сарлака пусма тӑрӑх анса урама тухма ӗлкӗреймерӗҫ — вӗсене хирӗҫ мӑн алӑкран Федя Кольцовпа Гриша Арсентьев кӗрсе тӑчӗҫ. Иккӗшӗ те халь кӑна сухалӗсене хыртарнӑ пулмалла, яп-яка, хӑйсенчен хаклӑ йышши одеколон шӑрши кӗрет. Каччӑсем темӗн!

— Сала-ам, ырӑ кун! — яланхи пекех, пуринчен малтан Федя Кольцов калаҫма тытӑнчӗ.— Ну, кӑмӑлсем мӗнлерех? Хӑрамастӑр-и? Е чӗтреме ертӗр? Калӑрха тӗрӗссипе...

— Ан тӗлӗнтер-ха, пирӗн мӗншӗн чӗтремелле? — терӗ ӑна хирӗҫ Кира, кӑмӑлсӑр пулнӑ пек.—Эпир айӑпланакансем мар пуль? Вӗсем чӗтреччӗр, пире мӗн?

— Ҫапах та... суд вӗт-ха! Верховнӑй тата!

— Пулин! Следстви вӑхӑтӗнче мӗн каланине тепӗр хут каласа паратпӑр та, ӗҫӗ те пӗтрӗ пирӗн...

— Ку тӗрӗс ӗнтӗ. Сирӗн ним хӑрамалли те ҫук.

— Хӑрамалли ҫук та, ҫавах питӗ пӑлханатӑп эпӗ, темле... чун-чӗре лӑпкӑ мар,— терӗ Лариса, пуҫне пӑркаласа илсе.— Шутлӑр-ха эсир: ытла нумаях пулмасан та, эпӗ ҫапах та хамӑн завмаг пулнӑ хӗрарӑмпа пӗрле ӗҫленӗ-ҫке, ҫитменнине ун патӗнче пурӑннӑ, пӗр чашӑкран ҫинӗ, темелле. Халь вара манӑн суд умӗнче, ют ҫынсем умӗнче тӑрса, вӑл мӗн тери путсӗр ҫын пулни, халӑхаултталани, киревсӗр ӗҫсем туни ҫинчен тӗпӗ-йӗрӗпе каласа памалла...

— Мӗн тата, хӳтӗлемелле-им ӑна? Унӑн «фокусӗсене» пытарса тӑмалла-и? — хӗр куҫӗнчен тӳррӗн пӑхрӗ Кольцов.— Закон хушнӑ пек пурӑнман, ӑна пӑснӑ пулсан, халь ҫав закон умӗнче тивӗҫлипе ответ тыттӑр. Халӑх пурлӑхне ҫаратакансене хӗрхенме пултараймастпӑр эпир. Нихҫан та!

— Ӑна эпӗ санран кая мар пӗлетӗп, Федя...

— Мӗн, эппин, тата?

— Ирсĕр, калама çук ирсĕр-çке... Йĕрĕнетĕп! Кагаева мĕн-мĕн хăтланнисене аса илсен — ăш пăтранать!

— Çав ирсĕр ĕçсем тек ан пулччăр тесе, тăрă шыв çине кăлармалла та ĕнтĕ преступниксене! Епле-ха тата?

— Тĕрĕс, Федя, тĕрĕс...

— Сăмах майĕн каласан, кам та пулин преступлени тунине пĕлнĕ çĕртех ун çинчен кирлĕ çĕре пĕлтерменшĕн, ăна пытарса усранăшăн уголовнăй йĕркепе айăплаççĕ пулас?

— Ăна та пĕлетĕп. Анчах эпĕ ним те пытарман, пытарма та шутламастăп-ха. Паян судра та йĕркипех каласа паратăп...

— Пит лайăх пулать.

Суд çуртне çынсем йышлăн пыра пуçларĕç. Кунта ĕçлекенсем чарăнса тăмаççĕ, тӳрех хăйсен пӳлĕмĕсене васкаççĕ, суда чĕннисем вестибюле кĕреççĕ те ун-кун пăхкалаççĕ, пĕлтерӳсене вулаççĕ, хăшĕсем ыйткаласа пĕлеççĕ, вара тин малалла каяççĕ.

Кĕçех сержантсемпе калаçса тăракан хĕрсем мăн алăкран хăйсен çыннисем — райпо председателĕ Фролов, ОБХСС инспекторĕ Борцов, милицин участокри уполномоченнăйĕ Кучанов лейтенант, райпо базинчи Шемекеев кĕнине асăрхарĕç.

Фролов хĕрсене курсанах вĕсем патне пырса ал пачĕ.

— Эсир çитнĕ те-çке? Маттур! Хваттере ăçта вырнаçрăр? Шупашкартан йăпăр-япăрах тухса каяймастпăр пуль, тен ик-виçĕ кун та иртĕ. Сире валли те гостиницăра вырăн йышăнмалла марччĕ-и?

— Тавтапуç, Владимир Яковлевич, çĕр выртмалли пур-ха пирĕн.

— Атьăр, эппин, хăпарса ларар пуль, кĕтер хамăр ятсем тухасса!

Çав вăхăтра алăкран Чатта кĕрсе тăчĕ те тӳрех тарланă куçлăхне хывса тутăрпа шăлкалама тытăнчĕ.

— Ак, пирĕн пичет представителĕ те çитрĕ,— терĕ те Фролов ăна курсан, çавăнтах кăчăк туртрĕ: — Кил кунта, курмастăн-им хамăр ялсене? Е паллайми пултăн-и?

Чатта куçлăхне тăхăнчĕ те вĕсем патне хăюсăррăн утса пырса пурне те ал памасăрах сывлăх сунчĕ.

— Мĕн эсĕ, виç кун апат çимен çын тĕслĕ? Чирлемерĕн пулĕ-çке? — ыйтрĕ Фролов.

— Тавтапуç, сывлăхăм лашанни пекех вăйлă-ха,— терĕ Чатта, темшĕн аяккалла пăхса.

Вăл паян мĕншĕн çавăн пек кичеммине хĕрсем кăна пĕлнĕ çав. Иккĕшĕ те хăйсен ăшĕнче кулса илчĕç: «Çунать мăнтарăн чĕри... Кĕвĕçет вăл...»

Тепĕр ик-виç минутран вĕсем ларусен залне кĕрсе маларах иртрĕç те пурте пĕр рете вырнаçрĕç.

— Пирĕнтен пуçлаççĕ-ши? — ыйтрĕ Лариса хăйĕнпе юнашар ларакан Фроловран.

— Пĕлместĕп,— терĕ лешĕ,— темле йĕрке пулать вĕсен кунта. Шутпа, пирĕнтен пуçламалла пек, мĕншĕн тесен ĕçĕ пысăк...

Анчах та ун пек пулмарĕ çав. Шăп вунă сехетре суда килнĕ халăх сасартăк алăк еннелле кĕр-р... çаврăнса пăхрĕ: икĕ милиционер зала икĕ арçынна илсе кĕрсе малалла ирттерчĕç те сылтăмри стена çумĕнчи карлăк хыçне лартрĕç. Хăйсем ик енчен вĕсен çумне тăчĕç.

— Темле хăрушă преступниксене илсе килчĕç... — пăшăлтатрĕ Кира, Лариса çумнелле йăпшăнса.— Эппин, малтан пирĕн ĕçе пăхмаççĕ-ха...

Вĕсенчен нихăшĕ те çак тарана çитсе судра пулса курман, çавăнпа та халь пĕр хушă сывламан пек ларчĕç. Милиционерсем сыхласа тăракан çынсем çинчен куç илмерĕç. Камсем-ши вĕсем, мĕнлескерсем? Çамрăкха хăйсем, çирĕм иккĕ—çирĕм пилĕк çулсенчен иртмен пуль. Мĕн тунă-ши? Айăпĕ пысăк пуль çав, ахальтен конвойпа илсе килнĕ-им?

...Сцена çинчи вăрăм сĕтел хушшинче халлĕхе хĕрлĕ кăтра çӳçлĕ çамрăк хĕрарăм-секретарь пĕчченех темле хутсене уçкаласа ларчĕ. Залри халăх çине пăхмарĕ те вăл. Унтан сылтăм енчи алăк уçăлчĕ те, çав хĕрарăм хăвăрт кăна ура çине тăрса хыттăн каларĕ:

— Встать! Суд идет!

Залри пĕтĕм халăхпа пĕрле Ларисăпа Кира та тăчĕç. Алăкран тухнă ватăрах хĕрарăмпа икĕ арçын — судьяпа заседательсем — сĕтел хушшине вырнаçсан залри çынсем те ларчĕç.

Тăруках шăп пулчĕ. Çав тери шăп.

Хĕрарăм-судья заседательсемпе хуллен кăна тем калаçса илчĕ, унтан лăпкăн, анчах пурне те илтĕнмелле каларĕ:

— Судебное заседание считаю открытым... Слушается уголовное дело по обвинению...

Карлăк хыçĕнче ларакансене хулари пĕр магазина çаратнăшăн айăплаççĕ. Вĕсемпе пĕрле тата тепĕр çын пур, анчах вăл лешсенчен уйрăм, карлăк тулашĕнче ларать, конвойсăр. Судья вуласа панинчен çакна ăнланчĕç: конвойпа илсе килнисем иккĕшĕ те темиçе уйăх каялла çеç колонирен таврăннă, анчах ытти пур йĕркеллĕ çынсем пек ĕçлесе пурăнас шут пулман вĕсен. Каллех унта-кунта çапкаланса çӳренĕ, ячĕшĕн ĕçе кĕнĕ пек тунă та эрнерен-иккĕренех пăрахса тухса кайнă. Ĕçлесси пирки вĕсен хăйсен юратнă «шӳтсем» пулнă: «Трактор ĕçлетĕр, ăна тимĕртен тунă», «ĕçленипе лаша та вилет...» Колоние те вĕсем вăрланăшăн лекнĕ пулнă-ха, анчах унта виçшер çул ларса тухнă пулин те ăсĕ-пуçĕ тӳрленмен мурсен, каллех вăрласа-çаратса, «çăмăл пурнăçпа» пурăнма тăрăшнă. Пĕр уйăх çурă каялла вара улах урамри магазина «тăпăлтарма» палăртнă. Иккĕне йывăртарах пулнă ку хăрушă ĕçе тума, çавăнпа та вĕсем тепĕр çын шыранă хăйсене пулăшма...

Кама тупас? Шанчăклă çын кирлĕ-çке, йывăр килсен те, лекес пулсан та ан суттăр вăл хăйĕн «напарникĕсене». Аса илнĕ: çав-çав урамра Проша Филин пурăнать, вăл та вĕсемпе пĕрле колонире ларнă,— ӳсĕрпе магазин витринине çĕмĕрсе эрех вăрланăшăн хупнă ăна. Чăн та, нумай ларман, çулталăк иртсен срокчен тухнă. Çаксем, çаратма хатĕрленнисем, ĕçмелли-çимелли илнĕ те çав Филин патне кайнă. Ĕçсе ларнă май, хăйсен планĕпе паллаштарнă. Анчах ку итленĕ-итленĕ те вĕсене... ал сулнă, килĕшмен «компание» кĕме.

— Çук ĕнтĕ, сирĕн помощник пулаймастăп,— тенĕ вăл,— текех тĕрме баландине çиес килмест манăн, килти яшка тутлăрах пек туйăнать. Эп ĕнтĕ тĕвĕлесе лартнă, салтăнмастăп, тек нихçан та ун пек-кун пек хăтланмастăп!

— Юрĕ эппин, хăвăн ирĕк,— тенĕ лешсем,— пусмăрламастпăр, сансăр та майлашăпăр! Анчах асту эсĕ, тусăм, сутса яма ан шутла пире! Уншăн мĕн пулассине ху пĕлен, пĕчĕк ача мар. Çĕр айĕнчен чавса кăларса тупатпăр сана!

Чышкисемпе юнасах каланă çак сăмахсене.

— Çук-çук,— ĕнентернĕ Филин,— кам вырăнне хуратăр эсир мана? Вăрăсен саккунне лайăх астăватăп-

ха. Хальччен сутман, сутассӑм та çук. Çӗр кӑшласа ӗнентерме пултаратӑп!

Чӑнах та вара, хӑйӗн колонирен таврӑннӑ тусӗсем мӗн тума хатӗрленни çинчен никама та шарламан. Лешсем магазина çаратнӑ та ... тепӗр эрнеренех лекнӗ. «Операци» ӑнӑçлӑ иртнӗ хыççӑн темиçе кун хушши пӗрре урӑлмасӑр ӗçнӗ вӗсем. Ӳсӗрпе тем те лӑпӑртатнӑ, Филина та асӑннӑ: «Ухмах, тӑр ухмах, мӗн тери лайӑх ӗçрен пӑрӑнчӗ, вӑл пынӑ пулсан эпир тата ытларах илсе тухаттӑмӑр, пымарӗ пирӗнпе, тӑмпуç!..»

Пӗр вӑррин йӑмӑкӗ, комсомолка, хӑйӗн пиччӗшӗпе унӑн çапкаланчӑк тусӗ мӗнле укçапа ӗçсе пурӑннине тавçӑрса илнӗ те, ним тытӑнса тӑмасӑрах кирлӗ çӗре кайса систернӗ, вӗсем Филина асӑннине те каламасӑр хӑварман.

Вӑрӑсемпе пӗрле халь çав Филина та айӑпланӑ...

Магазин çаратаканӗсем суд умӗнче унталла-кунталла пӑрӑнкалаймарӗç, вӗсен хӑйсен айӑпне йышӑнма тиврӗ: вӑрланӑ таварсенчен нумайӑшне вӗсем патӗнче тупнӑ-çке!

Анчах Филин тем пекех тӳрре тухма тӑрӑшрӗ.

— Айӑплӑ мар эпӗ нимӗн чухлӗ те,— терӗ вӑл,— колонирен таврӑнсанах завода ӗçе вырнаçрӑм, питӗ йӗркеллӗ пурӑнатӑп, ӑна хампа пӗрле ӗçлекенсем те, кӳршӗсем те тӗп-тӗрӗс каласа парӗç кирлех пулсан... Производствӑра лайӑх ӗçленӗшӗн икӗ хут преми илтӗм... Пурнӑç çавӑн пек йӗркеленнӗ чух мӗн тума татах вараланас-ха манӑн? Хам ята унччен пӑсни те çитет, уншӑн та хытӑ ӳкӗнетӗп. Текех нихçан та йӑнӑш тумастӑп эпӗ! Мӗншӗн тесен мана вӑрланӑ пурлӑх та, çаратса тупнӑ укçа та кирлӗ мар, хам ӗçлесе илни те çитет. Уйӑхне икçӗр тенкӗ таран тухать манӑн, пиллӗкӗмӗш разрядри слесарь эпӗ! Çыхланман ку ӗçпе, çавӑнпа та хама айӑпланине пӗртте йышӑнмастӑп! Çакна та шута илӗр-ха эсир, граждан судьясем: вӗсем магазина кӗнӗ каç эп хулара та пулман, хамӑрӑн тӑван ялта, пичче патӗнче, туйра ташланӑ — ывӑлне авлантарчӗ вӑл. Алиби манӑн! Çӗр процентлӑ алиби! Эп таптаса çын!..

— Мӗн вӑл... алиби? — хуллен ыйтрӗ Лариса Фроловран.— Нихçан та илтмен ун пек сӑмах...

— Çакӑн пек судсем тӑрӑх çӳреме пуçласан, пӗле-

кен пулатăн ак,— ун çине хулпуççи урлă пăхса кулам пек турĕ лешĕ.

— Чăнах ара, мĕне пĕлтерет вăл?

— Преступлени вăхăтĕнче çын урăх çĕрте, аякра пулнине, çавăнпа та преступление хутшăнма пултарайманнине пĕлтерекен сăмах...

— Ăнлантăм, тавтапуç.

Судья Филинран ыйтрĕ:

— Анчах та кала-ха эсĕ, Филин: çак çынсем магазин çаратма хатĕрленнине лайăх пĕлнĕ вĕт?

— Пĕлни-мĕнĕ... — тăрукках ответ парайманрĕ Филин,— пĕлнĕ темелле те мар...

— Вĕсем сан патна пырсах калаçнă-çке-ха, хăш магазина кĕрессине те каланă, хăвна та чĕннĕ. Çапла-и?

— Калаçнă пулин. Калаçни вăл çаратниех мар пуль? Вĕсем мана тĕрĕслес, эп вăрă ĕçне пăрахни-пăрахманнине пĕлес тесе юри калаçма та пултарнă... Çын тепĕр чух сăмахпа калать, анчах ĕçне тумасть. Эп хăйсемпе пыма килĕшмен хыççăн вĕсем çав магазина кĕрес шухăша пăрахма та пултарнă...

— Чим-ха, Филин, чим. Вĕсем хăйсен шухăшне пăрахас çуккине эсĕ лайăх пĕлнĕ, мĕншĕн тесен эс пĕрле пыма килĕшмесен вĕсем «сансăрах майлашăпăр», тенĕ-çке! Следствире çапла кăтартса панă эсĕ. Тĕрĕс-и?

— Ку тĕрĕс. Çапах та, вĕсем çаратаççех пуль тесе шутламан эпĕ.

— Мĕншĕн?

— Мĕншĕн тесен... риск ытла пысăк. Магазинсене хытă сыхлаççĕ халь. Сигнализаци, темтепĕр. Хăрушă. Лекме пулать. Вĕсем иккĕшĕ те нумай та пулмасть колонирен таврăннă, иккĕмĕш хут лексен — пысăк срок параççĕ...

— Хăйсене каламарăн-и эс ун çинчен? Асăрхаттармарăн-и?

— Ăна вĕсем хăйсем те пит лайăх пĕлеççĕ, пурăнса курман çынсем мар. Уголовнăй кодекспа та тĕл пулнă.

— Тусусем хăвăн патăнтан тухса кайсан, санăн вĕсем хатĕрлекен преступление малтанах чарса лартас, ăна тума парас мар шухăш çуралмарĕ-и? Эсĕ, халь ĕнтĕ — ху каланă тăрăх — тĕрĕс çул çине тăрса чăн-чăн

совет çынни пек пурӑнма тытӑннӑ çын, лайӑх пӗлмелле-çке: магазина çаратни вӑл — халӑх пурлӑхне çаратни, халӑха сиен кӳни. Эс ху та халӑх вӗт-ха, пирӗн совет обществин членӗ. Такамсем магазин çаратни — сана хӑвна çаратни пулать. Тӗрӗс-и?

— Пӗтӗмӗшпе илсен, тӗрӗс ӗнтӗ...

— Кам та пулин сана хӑвна çаратма, е çапса сусӑрлатма, вӗлерме хатӗрленни çинчен малтанах пӗлсен, эс ним шарламасӑрах ларнӑ пулӑттӑн-и? Власть, милици органӗсене систермен пулӑттӑн-и ун çинчен?

— Паллах, систеретӗп, епле пултӑр-ха тата...

— Мӗншӗн-ха, эппин, эс çак преступлени пуласси çинчен, уçӑмлӑрах каласан — хӑшпӗр çынсем магазин çаратма хатӗрленни çинчен — çийӗнчех тивӗçлӗ органсене систермерӗн?

Филин çӗрелле пӑхса тӑчӗ, ассӑн сывласа ячӗ.

— Ну, ма-ха чӗнместӗн? Каласам! — васкатрӗ ӑна судья.

— Эп ун пек тума... пултарайман... — мӑкӑртатса илчӗ Филин.

— Мӗншӗн?

— Эпӗ... эпӗ ку çынсене сутмастӑп тесе сӑмах панӑ. Эп «лягавый» мар. Хальччен доносчик пулман, пулас та çук... Вӑрӑсене тытма пирӗн милици пур, вӗсене уншӑн шалу тӳлеççӗ...

— Ав епле шутлатӑн иккен-ха эсӗ! — терӗ çак сӑмахсене илтсенех заседательсенчен пӗри, кӑвакарма пуçланӑ мӑйӑхлӑ арçын.— Эппин, сан шутпа, киревсӗр çынсем, тӗрлӗ преступниксем, пирӗн общество тӑшманӗсем хуть те мӗн туччӑр пулать — çаратчӑр, вӗлерччӗр, вут тӗксе çунтарччӑр, эпир вӗсем çинчен малтанах пӗлнӗ пулсан та çӑвара шыв сыпнӑ пек ларар, мӗншӗн тесен — «доносчиксем» мар, тус-юлташсене сутмастпӑр, вӗсене кӳрентерместпӗр, куçран ӳкместпӗр? Милици кӗрештӗр вӗсемпе, эпир хамӑр вӑл вӑхӑтра хӳтӗрех çӗре пытанса аякран пӑхса тӑрар. Анчах пирӗн милици — халӑх милицийӗ-çке, пӗтӗм халӑх, кашни ӑнлануллӑ совет çынни пулӑшмасан, ӑçтан ӑнӑçлӑ ӗçлесе пытӑр вӑл? Тӗрӗс шутламастӑн эсӗ, Филин! Çавӑнпа та пурнӑçра та тӗрӗс тумастӑн. Санӑн çак çынсем магазин çаратма хатӗрленни çинчен пӗлсенех— эс ӑна пит лайӑх пӗлнӗ-ха! — милицие кайса каламалла пулнӑ. Эс ун çинчен шутламан, пытарса пурӑннӑ.

Кусем вара ним шиксӗрех кайнӑ та магазина, икӗ пин тенкӗлӗх ҫаратса тухнӑ. Ҫавӑншӑн хӑвна айӑплӑ тесе шутламастӑн-и? Преступниксене пытарнипе эсӗ ху та преступлени тунӑ, ӑнланатӑн-и ҫавна?

Филин чӗнмерӗ. Ӑнланчӗ ӗнтӗ вӑл, анчах, хирӗҫ ним калама та ҫуккипе, шарламарӗ...

Судьясем хӑйсен канашламалли пӳлӗмне кӗнӗ хыҫҫӑн ҫынсем коридорта пӗр-пӗринпе шавлӑн калаҫма тытӑнчӗҫ. Хӑшӗсем тавлашсах кайрӗҫ. Пӗрисем Филина хӳтӗлеҫҫӗ, унӑн ним айӑп та ҫук, теҫҫӗ, теприсем пачах урӑхла калаҫҫӗ — айӑплӑ вӑл, теҫҫӗ.

— Эсир мӗнле шутлатӑр? — ыйтрӗҫ Ларисӑпа Кира хӑйсен каччисенчен.— Айӑплӑ-и ҫав Филин тени?

— Паллах, айӑплӑ! — терӗ Кольцов ҫирӗппӗн.— Преступлени пулассине пӗлнӗ ҫӗртех ун пирки шарламанни вӑл, ҫӑмӑллӑн каласан та...

— Мӗн?

— Предательство! Халӑха хирӗҫ пыни, унӑн интересӗсене сутни, тӑшманпа пӗр каварлӑ пулни, акӑ мӗн!

...Суд Филин айӑплӑ тесе йышӑнчӗ.

Халь ӗнтӗ хӗрсем те, вӗсемпе пӗрле суда пынӑ Фролов та, ыттисем те ҫак ӗҫ хыҫҫӑн вӗсенне пӑхаҫҫӗ пуль, тесе шутланӑччӗ.

Анчах та каллех ун пек пулмарӗ-ха...

Милиционерсем зала пуҫӗсене шап-шакла кастарнӑ виҫӗ ҫамрӑк каччӑпа ҫӳҫӗсене тимӗр ҫинчи тутӑх тӗслӗ сӑрлаттарнӑ икӗ хӗре илсе кӗрсе карлӑк хыҫне, айӑпланаканнисен вырӑнне лартрӗҫ. Каччисем пурте ула-чӑла курткӑсемпе, клӗш-йӗмсемпе, вӗсем те этемле мар — пӗрин сарӑ, теприн хӗрлӗ, симӗс. Хӗрӗсем арҫынсем пекех тумланнӑ — брюкипе, кӗске пиншакпа.

— Пӗтрӗ пуҫ! Ара, кусем ӗнер каҫ «Мир» патӗнче тӗл пулнисем мар-и! — чутах кӑшкӑрса яратчӗ Кира, Гриша Арсентьевпа Федя Кольцова ҫаннисенчен турткаласа.— Пӑхӑр-ха лайӑхрах, тупата ҫавсем вӗт! Ҫавсем!

— Чӑнах ҫавсем мар-и? — терӗ Лариса та.

— Ҫук-ха, вӗсемех кунта ҫитме ӗлкӗреймен пулӗ,— терӗ Кольцов,— ытла часах пулмасть суда ҫитесси, малтан следстви пулать, темтепӗр, анчах кусем те ҫавсен йӑхӗнченех, ҫӳҫӗсене хурт-кӑпшанкӑ хунасран касса янӑ ҫеҫ.

— Мӗн пирки лекнӗ-ши? Тӗлӗнсе вилсех кайма-

лла... Хӗрӗсем ҫап-ҫамрӑк... хальччен хӑйсем ӗҫлесе тупнӑ пӗр чӗл ҫӑкӑр та ҫимен пуль-ха, мурсем...

— Каччисем те ҫавах ӗнтӗ! Гитарӑпа черккесӗр пуҫне алла урӑх нимӗн те тытман вӗсем! — хушса хучӗ Гриша Арсентьев.

— Тем те курӑн пурнӑҫра! Тутисем ҫинче амӑш сӗчӗ типичченех ҫакӑн пек суда лекекенсем пур иккен...— пӑшӑлтатрӗ Лариса.

— Мӑнтӑрпа,— ун ҫине пӑхса илчӗ Фролов,— йӑлтах мӑнтӑр тӑвать ҫакна. Ашшӗ-амӑшӗ ытлашши ачашласа пурӑнни, ним те ӗҫлеттерменни, хуть те мӗн тума та ирӗк пани. Пӗтӗм ӗҫӗ ҫавӑнта!

...Судья ҫав ҫамрӑксене мӗншӗн айӑплани ҫинчен вуласа парсан, залри пӗтӗм халӑх калама та ҫук тӗлӗнсе, ҫав вӑхӑтрах тарӑхса кайрӗ, карлӑк хыҫӗнче ларакансене тӳсме ҫук курайми пулчӗ. Унтан та кунтан хаяррӑн калаҫни илтӗнчӗ:

— Тискер кайӑксем! Кам ҫуратса ӳстернӗ-ши вӗсене?..

— Никам пурӑнман утрав ҫине ҫӗҫ кайса ямалла, виличчен те халӑх хушшине килсе ан кӗччӗр!

— Эп пулсан, персех вӗлермелле...

Икӗ уйӑх ҫурӑ каялла, тӑп-тӑр уяр кун, кӑнтӑрла иртсен, хула варринчи ачасен паркне утмӑлтан иртнӗ арҫын пӗчӗк мӑнукне — виҫӗ ҫулхи хӗрачана—ҫавӑтса тухнӑ-мӗн. Вӑл инвалид пулнӑ, иртнӗ вӑрҫӑ инваличӗ, протезпа, туяпа ҫӳренӗ. Паркри аллейӑсем тӑрӑх, илемлӗ клумбӑсем хушшипе чылай уткаласан, пӗр сак ҫине канма ларнӑ. Ҫывӑхри саксем ҫинче вӗсем пеккисем татах пулнӑ — стариксем, карчӑксем хӑйсен мӑнукӗсене кӗрхи ырӑ хӗвел ӑшшине илсе тухнӑ. Унта-кунта ача коляскисене тӗксе ҫӳрекен ҫамрӑк хӗрарӑмсем те курӑннӑ. Уҫӑ сывлӑшра, шӑв-шавсӑр ҫӗрте пӗчӗк ачасем пит лайӑх ҫывӑраҫҫӗ-ҫке!

Старик-инвалид киоскра тин ҫеҫ илнӗ хаҫата пӑхкалама тытӑннӑ, унӑн хӗр-мӑнукӗ газон ҫине кӗрсе хитре лӗпӗше хӑваласа тытма тӑрӑшнӑ. Курӑк ҫинче вӑл хӑй те лӗпӗш пек курӑннӑ.

Сасартӑк паркри ытармалла мар шӑплӑха, канлӗхе такамсем гитара каласа, хыттӑн кӑшкӑрса юрлани пӑсса янӑ. Старик те, ытти саксем ҫинче ларакансем те, коляскӑллӑ хӗрарӑмсем те парк вӗҫнелле ҫаврӑнса пӑхнӑ — аллея тӑрӑх ун-кун хуҫкаланса, ташланӑ пек



туса, аллисене сулкаласа, мĕн вăй çитнĕ таран темле никам ăнланмалла мар юрă çухăрса, пиллĕкĕн килнĕ. Виçĕ каччă, икĕ хĕр. Малалла утнă май вĕсенчен хăшĕсем газон çинчи чечексене таптанă, йывăç тураттисене хуçа-хуçа ывăтнă, пĕри çул хĕрринчи урнăна темиçе тапса аяккалла ывтăнтарнă. Пăхма та хăрушă пулнă вĕсем çине. Хăрушă та ирсĕр.

Вĕсем çывхарсах килнине кура, саксем çинче ларакан ватăрах хĕрарăмсем мăнукĕсене çавăтса часрах аяккалла пăрăннă, çамрăккисем коляскисене урăх çĕрелле кустарса кайнă.

Старик-инвалид вырăнтан тапранман. Иртĕхекен ӳсĕр ушкăн хăйĕн тĕлне çитеспе тӳсеймен вара, туйи çине тĕренсе тăнă та кăшкăрса-туса мар, самаях лăпкăн каланă:

— Итлĕр-ха, атьсемĕр, епле намăс мар сире кун пек аташма, курмастăр-им, кунта пĕчĕк ачасем выляççĕ, хăраççĕ вĕсем сирĕнтен. Пăрахăр шавлама, кайăр урăх çĕре...

— Аха, хăраççĕ, да? — тусĕсенчен тăрук уйрăлса ун умнех пырса тăнă ӳсĕрсенчен пĕри.— Эсĕ ху хăрамастăн, да? Пире хăвалатăн, да?

— Мĕншĕн хăрас манăн? Эп сирĕн пеккисене мар курнă хам пурнăçра, çапах та хăраман-ха,— тенĕ старик.

Ӳсĕр каччă тусĕсем еннелле çаврăнса кăшкăрнă:

— Илтрĕр-и? Хăрамасть вăл! Епле паттăр, ха-ха-ха!

— Тăхăнтарт ăна пĕрре, Жорик! — кăшкăрнă çав самантрах пĕр хĕрĕ.

— Хисеплеме вĕрентĕр ыр çынсене! — кăшкăрнă тепри.

«Жорик» сайра шăлĕсене çыртма хатĕрленекен йытă пек йĕрнĕ те инвалида пĕррех чышкипе пуçĕнчен çапса йăвантарнă.

— Ак сана пиртен хăраманшăн!

Унтан шĕшлĕ пек шĕвĕр пуçлă пушмакĕпе айăкĕнчен тапнă.

— Ак тата ытла паттăр пулнăшăн! Пире хăвалануăшăн!

Аслашшĕне хĕненине курса, ун мăнукĕ кăшкăрса макăрса янă...

Инвалид, ура çине тăма тăрăшса, аран каланă:

— Аса кĕрĕр, ухмахсем! Мĕн хăтланатăр эсир?!

«Жорик» ăна тăма паман, каллех çапса ўкернĕ.

— Тусăмсем, мĕн пăхса тăратăр? Пире ухмах терĕ ку ват хăмăт, атьăр, хăйне лайăххрах тăн кĕртер! — çуйăхса илнĕ вăл.

Вара çĕрте выртакан старике пурте çапма, тапма тытăннă — ăçтан май килнĕ унтан. Урса кайнă каччисемпе пĕрле халь карлăк хыçĕнче ларакан çамрăк хĕрсем те хĕненĕ инвалида, вĕсенчен пĕри хăй пушмакĕн тимĕрлĕ кĕллипе тапса ун пуçне шăтарнă. Çак тискер лĕхе курса тăнă хĕрарăмсем кăшкăрма тапратнă — чарăнăр, чарăнăр, вĕлеретĕр çынна! Çывăха пыма хăранă вĕсем. Хĕрарăмсем кăшкăрнине илтсе, парк çуммипе утакан икĕ вăйпитти арçын чупса пынă, старике хĕнеме чарнă, анчах хулигансенчен пĕри çĕçĕ туртса кăларнă та чаракансене чикме тăнă. Лектереймен, леш арçынĕсем çĕççине туртса илнĕ те хăйне çĕре çавăрса çапнă.

Кĕçех çынсем тата чупса пынă, милиционер та çитсе тăнă.

Инвалида васкасах больницăна ăсатнă, ун мăнукне пĕр паллана карчăк килне леçнĕ, хулигансем — ушкăнĕпех — решетке хыçне лекнĕ.

— Кун пеккине куçпа курма мар, ун çинчен илтме те хăрушă! — йывăррăн сывласа ячĕ Кира, судья вуласа пĕтерсен.— Ĕненес те килмест хальхи вăхăтра пирĕн хушăмăрта çакăн пек çамрăксем пулма пултарнине! Первобытнăй çынсем те ун пек хăтланас çук...

— Куратăн, пур-ха вĕсем, тĕл пулкалаççĕ,— терĕ Федя Кольцов.

— Пуç миммисем çĕрнĕ пулинех вĕсен! Ăнланаймастăп... ăçтан, мĕнле çĕлен йăвинчен тухаççĕ кун пеккисем? Кам вĕрентет вĕсене этем сăн-сăпатне çухатса çавăн пек тискер пулма?! Хăйсен хушшинче çапăçнă пулсан — татахчĕ, ан тив, ўсĕрпе тўпелеччĕр пĕрне-пĕри, хуть те чикĕнсе вилччĕр, никам та шеллес çук, анчах кусем... кусем инвалида хĕненĕ вĕт-ха! Вăрçă инвалидне çапса пăрахма тапратнă! Вăл çын Тăван çĕршывшăн, пирĕншĕн, пирĕн телейшĕн юн тăкнă, ĕмĕрлĕх чăлах пулса юлнă... Мĕнле ал çĕклеме пулать ун пек çын çине?! — тарăхса, куçĕсене çутăлтарса пăшăлтатрĕ Кира.

— Шăп лар, курмастăн-им, айăплисенчен ыйтса пĕлме пуçларĕç,— чавсипе тĕртрĕ ăна Лариса.

...Паркра урасӑр ватӑ ҫынна хӗненӗ чух калама ҫук паттӑр пулнӑ «ҫӳҫлемессем» суд умӗнче хӑйсене питӗ мӗскӗннӗн тытрӗҫ. Калаҫасса та аран калаҫаҫҫӗ. Пӗри те айӑплӑ мар имӗш. Старикӗ хӑй айӑплӑ иккен. Вӗсен инвалида кӳрентерес шухӑш та пулман. Вӑл хӑй тапӑннӑ вӗсене, ӳсӗрскер. Кусем чип-чипер иртсе пынӑ ун тӗлӗпе, анчах вӑл сиксе тӑнӑ та ҫамрӑксене пӗр сӑлтавсӑрах темтепӗр каласа тӑкнӑ, ӑна хирӗҫ пӗр сӑмах каласанах аллинчи туйипе хӗнеме тапратнӑ. Кусем хӳтӗленнӗ ҫеҫ «самооборона» тунӑ. Тӗрӗс, тӗксе янӑ, анчах ҫапас-тӑвасси пулман!

— Пуҫӗ мӗнле шӑтнӑ-ха унӑн? Пичӗ-куҫӗ, кӗлетки унтан та кунтан мӗншӗн кӑвакарса пӗтнӗ? — ыйтаҫҫӗ судьяпа заседательсем.

— Эпир пӗлетпӗр-им? Тен, вӑл пире куричченех таҫта ӳксе йӑваланса ҫӳренӗ, е унччченех кампа та пулин ҫапӑҫнӑ! Эпир ӑна пӳрнепе те тӗкӗнмен!

Ним намӑса пӗлмесӗр суйса тӳрре тухма, хӑйсен айӑпне сирсе яма тӑрӑшрӗҫ хулигансем. Ҫак вара залра ларакансене тата ытларах тарӑхтарчӗ. Анчах свидетельсем вӗсен суйине йӑлтах тӑрӑ шыв ҫине кӑларчӗҫ: пӗртте ун пек пулман, хулигансем хӑйсем малтан пуҫласа хӗнесе тӑкрӗҫ старике! Урса кайса, пӗр хӗрхенмесӗр хӗнерӗҫ ват ҫынна, чарман пулсан, тен, вӗлерсех пӑрахатчӗҫ-и! Вӗсем, пӗр вӗсем ҫеҫ айӑплӑ, старик мар, элек ку!

Суда ҫав ҫапкаланчӑк каччӑсемпе хӗрсен ашшӗамӑшне те чӗннӗ иккен. Свидетельсемпе пӗрле вӗсене те калаҫтарчӗҫ. Ах, тур, мӗнле кӑна хӳтӗлемерӗҫ пуль вӗсем хӑйсен чӗпписене! Аслӑ та иккен вӗсен ачисем, сӑпайлӑ та, ӗмӗрне никама кӳрентермен, ку тарана ҫитсе ҫынна мар — кушак ҫурине те тӗкӗнмен. Йӑнӑшпа тӑратнӑ вӗсене суд умне, леш старик свидетельсене укҫа парса хӑй майлӑ ҫаварнӑ та, халь нимле айӑп ҫук ҫӗртенех айӑплӑ тӑвасшӑн ҫамрӑксене...

Тӳсмелле мар йӗрӗнтерчӗ залри ҫынсене подсудимӑйсен ашшӗ-амӑшӗсем ҫавӑн пек йӗпӗлтетни. Тахӑшӗ, хыҫалтарах лараканскер, чӑтаймасӑр, пӗрин амӑшӗ, аллӑсенчен иртнӗ пулин те ҫӳҫне кӑтралатса, тутине пӗветсе пынӑскер, хӑйӗн «пепкине» куҫҫульне шӑлашӑла мухтанӑ чух хыттӑн кӑшкӑрчӗ:

— Ывӑлупа пӗрле сана хӑвна та кайса хупмалла!

Кайран кун пирки прокурор та пит вӑйлӑ каларӗ:

ачисем ҫакăн пек иртĕнсе пăсăлса кайнăшăн никамран малтан ашшĕ-амăшĕсем айăплă, вĕсем хăйсем ачисене мĕн пĕчĕкренех обществăри йĕркелĕхе, ҫынсене хисеплеме вĕрентсе пынă пулсан, халь суд умĕнче куҫҫуль юхтарса тăма тивместчĕ!

Пĕрин ашшĕ ҫеҫ, чирлĕрех сăнлă, йывăррăн сывлакан ҫын, лайăх каларĕ:

— Эп хӳтĕлеместĕп хамăн ывăла, хам астмăпа чирлеме пуҫланăранпа иртĕхсех кайрĕ вăл, вĕренме те пăрахрĕ, ĕҫе те каймасть, каланине хăлхана та чикмест, хирĕҫ хăр-хар тăвать ҫеҫ, амăшĕпе иксĕмĕре ним вырăнне те хумасть. Аптрарăмăр ĕнтĕ. Айăпа кĕме пĕлнĕ пулсан, ответ тытма та пĕлтĕр,— терĕ вăл ал сулса.

Ҫав самантрах карлăк хыҫĕнчи ывăлĕ сиксе тăрса кăшкăрчĕ:

— Таврăнсан кăтартăп-ха сана куншăн! Пыршупакартуна кăларатăп!

Ҫак сăмахсене илтсенех зал кĕр-р... турĕ, ҫынсем йăшаланса, пĕр-пĕрин ҫине пăхса калаҫкаласа илчĕҫ:

— Епле пуҫкасан ӳстернĕ ку мĕскĕн ҫын!

— Шакал! Чăн шакал, этем мар вăл!

Вăраха пычĕ ку процесс. Икĕ ваккат — пĕри арҫын, тепри хĕрарăм — пĕрер сехет те калаҫрĕҫ пуль. Вĕсем ҫине тăрсах ҫак йĕркерен тухнă ҫамрăксен преступленийĕшĕн хăйсем мар, шкул, ҫемье, урамри йăласем ҫеҫ айăплă, тесе ĕнентерме тăрăшрĕҫ, вунҫич-вунсакăр ҫултан иртнĕ ҫынсем пирĕн пурнăҫра мĕн тума юранипе юраманнине пĕлмен пек.

Юлашкинчен тухса каланă прокурор ваккатсем преступниксене хӳтĕлеме кăларса тăратнă сăлтавсемпе пĕрре те килĕшмерĕ вара. Вăл ытларах пирĕн обществăра кашни ҫыннăн хăйĕн ответлăхĕ пулмалли ҫинчен каларĕ.

— Пирĕн умра тин ҫеҫ ача садĕнчен тухнă ачасем мар, ӳссе ҫитнĕ, хутла пĕлекен ҫынсем. Совет пурнăҫĕн йĕркисене те лайăх пĕлеҫҫĕ вĕсем, анчах ҫав йĕркесене юри, обществăран мăшкăлланă пек, пăсаҫҫĕ. Вĕсем, хăйсене телейлĕ пурăнма мĕн кирлине пурне те туса панă халăха тав тăвас вырăнне, ăна ятарласа сиен кӳреҫҫĕ. Мораль енĕпе пăсăлнă, ответлăха пĕртте туйман, пурнăҫ картинчен тухса кайнă пирки вĕсем хăрушă преступленисем тăваҫҫĕ. Ун пек этемсене эпир каҫарма пултараймастпăр, каҫарма та юрамасть...

Тимлӗн итлерӗ залри халӑх ун сӑмахне. Хӑй ӑшӗнче кашниех ун шухӑшӗпе килӗшрӗ. Преступниксене мӗнле наказани пама кирли ҫинчен каланине те ырларӗ.

...Судьясем каллех канашламалли пӳлӗме кӗрсен, Владимир Яковлевич Фролов суд секретарӗ патне хӑйсен ӗҫне хӑҫан пӑхасси ҫинчен пӗлме кайрӗ. Нумай та тӑмарӗ, темшӗн пит кӑмӑлсӑр таврӑнса пычӗ.

— Пирӗн ӗҫ пулмасть иккен паян, урӑх вӑхӑта хӑварнӑ,— тесе пӗлтерчӗ вӑл хайсен ҫыннисене.

— Епле пулмасть? Мӗншӗн? Мӗн сӑлтавпа? — тӗлӗнсе кайрӗҫ пурте, Фролова сырса илсе.— Пире паян килме хушнӑ-ҫке?

— Кагаева йывӑр чирлесе ӳкнӗ, больницӑра выртать, тет, Васюков та психиатричкӑра. Аташма пуҫланӑ имӗш, ухмаха ерме тытӑннӑ, ҫавӑнпа та тӗрӗслеме хунӑ ӑна. Ӑнмарӗ пирӗн...

— Суд умӗн юри хӑтланмаҫҫӗ-и вӗсем? — пуринчен малтан иккӗленсе илчӗ Чатта.

— Кагаева пирки ӗненме пулать-ха, вӑл юлашки вӑхӑтра чӑнах аптракалатчӗ,— терӗ Лариса.— Пӗверӗ шыҫать тет-и...

— Анчах Васюковӗ симуляци тума та пултарать, артист вӗт вӑл, арестленӗ кун та кӑтарткаларӗ хӑйӗн ӑсталӑхне,— калаҫӑва кула-кула хутшӑнчӗ Борцов.

— Тухтӑрсене улталаймасть,— ал сулчӗ Чатта,— суйине кураҫҫӗ!

— Питӗ шел, ахалех ӗҫе пӑрахса килтӗмӗр,— терӗ Фролов.

— Мӗншӗн малтарахран пӗлтермен-ха пире кун ҫинчен? — ыйтрӗ Лариса.

— Вӗсене хӑйсене те ӗнер каҫаллапа тин шӑнкӑравланӑ, тет. Мӗн тӑватпӑр ӗнтӗ халь? Киле каясси ҫеҫ юлать. Машина кунтах манӑн, анчах шел, пурсӑмӑр та шӑнӑҫаймастпӑр пуль...

— Мана ан хӑвар, ман питӗ васкамалла! — Фролова ҫаннинчен ярса тытрӗ те Чатта, Ларисӑпа Кира ҫине пӑхрӗ.— Хӑшӗ-пӗрисене кунта юлни те кирлӗ ав...

— Эпир Ларисӑпа иксӗмӗр ыран автобуспа таврӑнатпӑр эппин, Владимир Яковлевич! — терӗ Кира. — Юрать пуль?

— Юрать ĕнтĕ, анчах ыранах çитĕр вара.— Фролов кăшт аяккарахра тăракан сержантсем çине пăхса илчĕ.— Тытса чаракансем ан пулччăр. Кĕçĕр вăрласа ан кайтăр сире кам та пулин. Ĕçлемелле пирĕн.

— Ан иккĕленĕр, Владимир Яковлевич, никам та вăрламасть, прогул та пулмасть!

Пусма тăрăх пуринчен малтан Чатта чупса анчĕ. Ун хыççăн ыттисем те утрĕç. Урама тухсан, сывпуллашнă хыççăн, Ларисăпа Кира сержантсемпе пĕрле Атăл еннелле утрĕç, Фроловпа пĕрле кĕçĕрех каймаллисем — тăвалла. Чатта пĕр-икĕ хутчен каялла çаврăнса пăхрĕ...

Каçхине хĕрсем Федя Кольцовăн аппăшĕ патĕнче хăнара пулчĕç. Малтанах каясшăн марччĕ те вĕсем, сержантсем иккĕшĕ те хытă ӳкĕтленипе парăнмалла пулчĕ. Питĕ лайăх пăхса ячĕ вĕсене кăмăллă хĕрарăм. Шăллĕ салтакран курма килнĕ ятпа ним те хĕрхенмен вăл, сĕтел çине тем те кăларса лартнă — кукли-икерчи, темиçе тĕслĕ варени, эрехĕ те тĕрлĕренех. Вăрçă пĕтес умĕн пĕр эрне малтан çеç тăлăха юлнă хĕрарăм урăх никампа та пĕрлешес темен, пĕтĕм чун ăшшине хăйĕн йăмăкĕсемпе шăллĕне панă. Федя, тĕрĕссипе, ун патĕнчех ӳснĕ. Халь акă салтакра вăл, анчах таврăнсан авланас та пулать. Пурнăç йĕрки çавăн пек. Лайăх çын тĕлне пултăрччĕ-çке! Çемье телейĕ пуринчен ытла хĕрарăмран килет... Çак Кира тенĕ хĕр — ăна Федя салтака каяс умĕн те пĕрре илсе килнĕччĕ — питĕ килĕшӳллĕ пек туйăнать. Тен, шăпах Федьăн «тур çырни» вăл?

Лайăх иртрĕ çак каç. Çамрăксем нумай калаçрĕç, паянхи суд çинчен те аса илчĕç, леш инвалида хĕнесе тăкнă чыссăр-намăссăр эсрелсене ылханчĕç, Кагаевăпа Васюков пирки те сăмах пулчĕ.

— Судран пурĕпĕр пăрăнаймаççĕ вĕсем, сывалсанах хăйсене мĕн тивĕçлине туянаççĕ!..

Унтан юрларĕç, ташларĕç. Федя аппăшĕн сасси пит аван иккен. Çамрăксем пĕр хушă ташланă хыççăн сĕтел хушшине тепĕр хут ларсан, вăл, пурин черккисене те тултарнă май, хĕрсем çине пăхса тĕлĕнмелле уçă сасăпа пĕччененех юрласа ячĕ:

Не плачь, девчонка,
Пройдут дожди.

Солдат вернется —
Ты только жди...

— Питĕ тĕрĕс юрă-çке ку, аппа! — кулса ячĕ Федя.— Юрă та мар, приказ, темелле...

— Камшăн приказ? — ун пекех кулса ыйтрĕ Кира.

— Ну... саншăн та, Ларисăшăн та...

Аппăшĕ тата тепĕр çаврăм юрласа илчĕ:

Пускай далеко
Твой верный друг,
Любовь на свете —
Сильней разлук...

— Ку та шутсăр тĕрĕс! Ăçтан тупрăн эс кун пек лайăх юрра?

— Радиопа илтсе вĕренсе юлтăм... Сире юрласа пама!

Федя аппăшĕ хĕрсене хăй патĕнчех çывăратрĕ, кăларса ямарĕ çĕр хута. Ирхине сержантсем вĕсене автовокзала çитерсе автобуса кĕртсех лартрĕç. Нихăшĕн те уйрăлас килмерĕ. Калаçма халь сăмах та тупăнмарĕ, çамрăксем пĕр-пĕрине куçран пăхрĕç кăна. Федя Кольцов, Кирăн ăшă аллине чăмăртаса, хуллен юрларĕ:

...Пройдут дожди,
Солдат вернется,
Ты только жди...

Автобус моторĕ хыттăн кĕрлеме тытăнсан тин сиксе анчĕç Федьăпа Гриша. Машина тапрансан та пĕр хушă унпа юнашар утса аллисемпе сулчĕç каччăсем.

...Çул тăршшипех хĕрсен хăлхинче Федя юрланă юрă кĕвви янраса пычĕ.

*1970—1973*



# Шухăшласа та кăларайман...

ХАЯР КАЛАВСЕМ





## САРАППАНЛĂ КУШАКСЕМ, ЙĔКЕХӲРЕСЕМ ТАТА ЫТТИСЕМ

*(Судья пулнă çын каласа панисенчен)*

Панфил Иванч Себадаевпа (ун хушамачĕ çăпата сăмахран тухнă, тет) эпир пĕр хушă запасри полкра та, кайран вăрçăра та пĕрле, пĕр ротăра пулнăччĕ. Маттур салтакчĕ вăл. Çарти дисциплинăна çав тери çирĕп тытса пыратчĕ. Уставсене пăсни пĕрре те пулман унăн. Чи кансĕр вăхăтсенче те пур-çук сухалне яп-яка хырма май тупатчĕ, çипуçĕ те тирпейлĕччĕ унăн — çухави айĕнчен яланах шап-шур катанпир хĕрри курăнать, пур тӳмесем те тĕп-тĕрĕс; хăйне шанса панă хĕçпăшал, пĕтĕм амуниц — леш кĕске аварлă «кĕçĕн кĕреçе» таранах — пуринчен те тасарахчĕ. Командирсем хушнине вара ун пек хăвăрт та тĕп-тĕрĕс туса пыраканни çукчĕ, темелле. Запасри полкра пурăннă чух ротăри çивĕч чĕлхеллĕ этемсенчен (хайхи леш «остряк-само-

учка» текеннисенчен) пĕри ăна: пирĕн саккунлă салтак, саккунлă Панфил, тенĕ те, çав ят ун çумне çилĕмпе çыпăçтарнă пекех çыпăçса ларчĕ: «саккунлă салтак, саккунлă Панфил...»

Хăй вара уншăн пĕртте кӳренместчĕ.

— Саккуна пăхăнман салтак пулма та пултараймасть! — тетчĕ кăна.— Саккуна пăсакансен вырăнĕ — штрафбатра! *

Çапăçусенче те маттурччĕ. Çур çул хушшинче икĕ медальпе Хĕрлĕ Çăлтăр çакса ячĕç ун кăкри çине. Питĕ хăвăрт ӳссе пычĕ — пурин пекех рядовой салтакран кĕçех ефрейтор турĕç ăна, унтан кĕçĕн сержант, сержант, аслă сержант...

— Кун пекех хăпарса пырсан, вăрçă пĕтиччен эсĕ полковнике те çитетĕн пуль? — кулкаласа илеттĕмĕр хамăр хушăра.

— Полковник пулни сахал маншăн, генерала çитме ĕмĕтленетĕп-ха! — кулатчĕ вăл хăй те.

Анчах вăрçăра унта çавăн пек вĕт: паян пур та эсĕ, ыран — çук. Днепр леш енчи плацдармра йывăр аманчĕ те çак Панфил, ăна тыла ăсатрĕç. Вара вăрçă пĕтсен темиçе çултан тин ăнсăртран тĕл пултăмăр эпир унпа. Госпиталь хыççăн çар службинчен хăтарнă иккен ăна, сулахай алли ĕçлемен унăн,— киле таврăнсан, вăрçа тăххăрмĕш класран кайнăскер, хăйсен ялĕнчи шкулта вуннăмĕшне пĕтернĕ те Хусанти юридически института кайса кĕнĕ. Унтан вĕренсе тухсан судпа прокуратура органĕсенче ĕçлеме тытăннă. Халь пĕр районти судья иккен.

— Сан характерна шута илсен... хăвна валли специальность питĕ тĕрĕс суйласа илнĕ эсĕ, хисеплĕ Панфил Иванович! — ырларăм эпĕ.

— Ӳкĕнместĕп,— терĕ вăл.

Çул хыççăн çул иртрĕ. Панфил Иванчпа пăч-пач кăна тĕл пулкалаттăмăр. Кашнинчех вăрçăра иртнĕ хамăрăн çамрăклăха асăнаттăмăр, халь ĕнтĕ сисмесĕрех ватăлни, ĕмĕр иртсе пыни çинчен калаçса илкелеттĕмĕр.

— Эп уншăн кулянмастăп-ха,— терĕ вăл пĕррехинче,— пурнăçра мĕн тума пултарнине пĕтĕмпех ту-

---

* Штрафной батальон.

нă эпир, хамăр вырăна йышăнма ача-пача та çитĕнтерне. Турра шĕкĕр, хăшĕ-пĕрисен пек хĕсĕр арăм лекмерĕ мана — çичĕ ача туса пачĕ, пурте вĕренсе хăйсен çулĕ çине тухаççĕ, çын пулса пыраççĕ, ялйыш умĕнче те намăс кăтартмаççĕ. Сăмах майăн каласан, ман аслă ывăл килес çул юридически институт пĕтерет...

— О! Юристсен династийĕ пулать эппин сирĕн!

— Хуть те мĕнле кала... Эп ним чухлĕ те хистемен ăна, хăйĕн кăмăлĕ çавăн пек пулчĕ. Хирĕç тăмарăм вара. Чăн та ĕнтĕ... судья таврашĕн ĕçĕ шутсăр кăткăс вăл. Питĕ йывăр! Тепĕр чух пуç çаврăнсах каять...

— Анчах — хисеплĕ! — терĕм эпĕ.— Эсир пирĕн совет пурнăçĕн йĕркисене, пирĕн законсене пăсакансемпе, пире канлĕ пурăнса тухăçлă ĕçлеме кансĕрлекенсемпе, урăм-сурăм сиен кӳрекен преступниксемпе кĕрешетĕр, халăх интересĕсене сыхлатăр...

— Ку тĕрĕс. Çапах та тепĕр чухне ытла та тĕлĕнмелле ĕçсем сиксе тухаççĕ. Юри шухăшласа кăларас тесен те шухăшласа кăларас çук вĕт!

— Питĕ кăткăс преступленисем тĕл пулаççĕ ĕнтĕ, çапла-и?

— Преступленисем кăна мар, кулмалли япаласем те пулаççĕ! Анчах пирĕн кулма юрамасть, çын сан патна хуть те мĕнле ыйтупа пырсан та ăна тимлĕн итлемелле, йĕркеллĕ ответ памалла, темле ĕç лексен те ăна хамăрăн совет законĕсем хушнă пек пăхса тухмалла.

— Çав ĕнтĕ, çавă,— килĕшрĕм эпĕ.— Правосуди турри Фемида хушнă пек ĕçлемелле сирĕн. Пурне те тараса çине хурса виçмелле, пĕр енче — усалли, тепĕр енче — ырри, хăшĕ ытларах туртать...

...Пĕлтĕр çулла эпир Панфил Иванчпа Атăл леш енчи канмалли çуртра пĕр пӳлĕмрех пурăнтăмăр. Питĕ хĕпĕртерĕмĕр çавăн пек пĕрле пулма тӳр килнĕшĕн. Авалхи юлташсем-çке, фронтри туссем. Халь акă иксĕмĕр те пенсионер. Канма та тивĕç пур пирĕн,— тунеядцăсем пулман. Хыр вăрманĕнче çӳретпĕр, шаларах кайса кăмпа тататпăр, ытармалла мар хитре кӳлĕ хĕрринче вăлтасемпе ларатпăр. Ырлăх! Çав хушăрах калаçатпăр та ĕнтĕ. Фронтри пурнăçран пуçласа ĕнер вăлтаран вĕçерĕнсе тарнă жулик-çăрттан таранах пулать пирĕн калаçусен теми. Панфилĕ, чăн та, ытла калаçма юратакан çынах мар, çапах эп ăна, унтан-кунтан тĕккелесе, пурĕпĕр çăвара шыв сыпнă пек лартмастăм.

Анчах çавăн пек лăпкă пурнăç нумая пымарĕ пирĕн...

Темиçе кунтанах эпир пурăнакан пӳлĕме тепĕр çын вырнаçтарчĕç — кушак пичĕ пек çаврака та пĕчĕк питлĕ, кĕске сăмси çине тем пысăкăш куçлăх утлантарнă çынччĕ вăл.

Кĕнĕ-кĕмен пире ал парса хăйĕнпе паллаштарчĕ:

— Варзон Ахлут , поэт-писатель-драматург. Илтнĕ пуль вăл ята?

— Каçар, илтсех кайман... — терĕ Панфил Иванч.

— Чăваш литературине пĕлместĕр эппин. Намăс! — тӳрех кăмăлсăр пулчĕ çĕнĕ çын.

— Мĕнле кĕнекесем тухнă вара санăн? — ыйтрăм çакăнтан.— Тен, вуланă та пуль...

— Пĕлтĕр кăна «Пăсăк кĕпер» ятлă поэма тухрĕ. Тăватă пин йĕрке, «Нарспирен» икĕ хут пысăкрах. Ăна вуламасăр пĕр чăваш та юлма пултарайман...

— Вуланă, эп те вуланă! — терĕ тăрук Панфил Иванч.— Анчах поэмине мар, ун пирки хаçатра çырнине... «Пăсăк поэма» ятлăччĕ пулас-ха статйи. Çапла-и? Питĕ хытă тылланăччĕ...

— Юрунда! — ал сулчĕ поэт.— Ухмах вăл критик. Кĕвĕçсе çырнă. Мана хăйĕн арăмĕ çумне хушса пурăнать. Тем тума кирлĕ пуль мана унăн ик ытама кĕмен майри? Эп çинçисене, яштакисене юрататăп!

Тĕрĕснех каланă-мĕн вăл: кайран, хăй хĕрĕхелле сулăннă пулин те, вăл çав «яштакисем» хыççăн çу вăрлама вĕреннĕ кушак аçинчен кая мар çӳрерĕ. «Эс мĕн çав мини-юбкăсем хыççăн пит чупатăн?» тесе ыйтсан, вăл пĕрре куç хупмасăр ответ пачĕ пире: поэт юратусăр пурăнма пултараймасть, юрату — поэзи сĕткенĕ!

Анчах уссиех пулмарĕ курăнать унăн, пĕррехинче пит-куçне тахăшĕ урса кайнă кушакран кая мар тăрмаласа янăччĕ кăна. Çитменнине тата çав кунах хуларан арăмĕ пычĕ те, юратнă упăшкин пичĕ çинче маникюрлă чĕрне йĕрĕсене курсан, ăна тата ытларах илемлетсе хăварчĕ — поэт пит-куçĕ пĕр хуша географи карттипекех пулчĕ.

Çавăн пек воспитани панă хыççăн поэт килтех ларчĕ. Мĕнле хĕрарăм патне пыратăн-ха пăхмалла мар пăсăк фотографипе?

Пĕр пӳлĕмре пурăннă, пĕр сĕтел хушшинче ларса апат çинĕ пулин те, вăл пирĕн çинчен пĕртте ыйтса

пĕлмерĕ, пĕрмай хăй çинчен шапăлтатрĕ. Мĕнле кăна мухтанмарĕ пуль! Пурнăçĕнче $1\frac{1}{2}$ кĕнеке çеç çырса кăларнă пулин те (пĕр кĕнекине — повăрсемпе официантсем çинчен — тепĕр авторпа çурмалла çырнă-мĕн), хăйне чăвашсен хальхи чи чаплă писателĕ вырăнне хурать иккен. Ыттисем пурте бездарь! Нихăшин те талант çук! Эпĕ самаях паллă пĕр писатель ятне асăнсан, Ахлут шăл витĕр чăрт! сурса ал сулчĕ те:

— Мĕн писателĕ пур ун çумĕнче? Юлать ĕнтĕ вăл литература историнче пĕр-пĕр Чехов пек, унтан ытла мар! — терĕ.

— Чехов — начар писатель, эппин? — куллине пытарса ыйтрĕ Панфил Иванч.— Начар çырнă?

— Вуламан,— терĕ Ахлут.— Ун пеккисене вулама ман вăхăт та çук, манăн хамăн çырмалла!

— Тен, эсĕ Лев Толстоя та вуламан?

— Ăна вуланă. «Анна Каренина» — лайăх поэма унăн, кăмăла кайрĕ мана. Ытла яках мар, çапах та... пырать, тиркемелле мар.

Эпир Панфил Иванчпа пĕр-пĕрин çине пăхса илтĕмĕр те иксĕмĕр те пĕр харăсах «кăххăм!» терĕмĕр.

— Н-да... Санпа тавлашма йывăртарах, нумай пĕлетĕн эсĕ,— терĕ унтан Панфил, Ахлут çине чи мĕскĕн чĕрчун çине пăхнă пек пăхса.

Вĕçкĕнсене шутсăр юратмасть вăл!

Анчах çав Ахлут манăн тусăм Панфил Иванч пенсие тухиччен судья пулни çинчен таçтан пĕлнĕ те, ун çумне çыпçăнкă пекех çыпçăнчĕ.

— Каласа пар-ха темиçе истори, халех роман çырма ларатăп! Туршăн та хĕвелшĕн те — ик эрнерен роман пулать! Тĕнчене тĕлĕнтермелли теттектиф!

«Роман» сăмаха вăл темшĕн малтанхи сыпăкра ударени туса каларĕ — рОман, терĕ.

Литература терминне çакăн пек пăсса каланине Панфил Иванч тӳсеймерĕ курăнать, тӳрлетрĕ ăна:

— Сăмах майĕн каласан, поэт юлташ, культурăллă çынсем рОман темеççĕ, ромАн, теççĕ. Теттектиф та мар — детектив, ку сăмах чăвашсен «тетте» сăмахĕнчен мар, акăлчансен «детективе» сăмахĕнчен пулнă, вырăсла каласан вăл сыщик тенине пĕлтерет!

— Ан вĕрент, хамах пĕлетĕп,— ун çине куç шуррипе пăхрĕ Ахлут.

— Пĕлни питех сисĕнмест-ха çав санăн,— терĕ ăна

хирĕç Панфил Иванч.— Вĕренес пулать... Миçе класс пĕтернĕ-ха эсĕ?

— Максим Горькинчен ытларах вĕреннĕ, сакăр клас манăн!

— О, чăнах нумай вĕреннĕ-çке! — Панфил Иванч тутине чалăштарса кулса илчĕ.— Кун пек образовани-пе рОмансем мар, нумай томлă эпопейăсем те çырма пулать!

— Пĕлме çук, тен, ăна та çырăпăр! — парăнмарĕ Ахлут.— Талант пулсан, тем те пулать!

— Тĕрĕс,— терĕ Панфил Иванч,— талант пулсан...

...Ахлута «теттектиф» çырма материал памарĕ вăл, анчах пĕррехинче, çумăр çунă пирки ниçта тухаймасăр палатăра ларма тӳр килсен, сăмах çăмхи салтăнчĕ унăн.

Хальхинче эп йăлăнтăм ăна:

— Хăш чухне судра та кулăшла япаласем пулаççĕ тенĕччĕ эс пĕрре. Каласа кăтарт-ха пире кăштах...

Ахлут та «тут как тут» пулчĕ:

— Тархасласа ыйтатпăр, хисеплĕ Панфутий! Каласа кăтарт! Эп сана уншăн каçхине хамăн кефир порцине парăп!

— Взятка илсе курман-ха ку таранччен, хăвăн турăхна хăвах хып, ачам,— терĕ ăна хирĕç Панфил Иванч,— анчах пулла кайма май çук пирки сирĕн кăмăлăра çырлахтарма пултаратăп...

Аякран пуçларĕ вăл хăйĕн сăмахне.

— Чăн малтан, сире, айвансене, хамăрăн совет сучĕ çинчен ăнлантарса парас пулать...

— Пирĕн суд — ырă суд, халăх сучĕ, никамшăн та мар — ĕççынниссемшĕн тăрăшать, вĕсен интересĕсене сыхлать, пирĕн судйисене те, заседателĕсене те халăх хăй суйлать,— начаррисене мар ĕнтĕ, лайăххисене,— çавăнпа та вĕсене «халăх судйи», «халăх заседателĕ», теççĕ. Ĕлĕк-авал, патша вăхăтĕнче, «миравайсем» ялапах пуянсене хӳтĕленĕ, лешсем темле ирсĕр ĕç туса хурсан та судран тап-таса та яп-яка тухнă. Калăпăр, пĕр-пĕр ял куштанĕ, кулак-кармаçăвар ĕçсе ӳсĕрлет те тепĕр чухăн çынна ним сăлтавсăрах, «так ахаль», «шӳт тумалла», кулмалла-мăшкăлламалла çапса-сусăртса тăкать (ун пеккисем пин-пин пулнă!),— анчах лешĕ

суда парсан, валах, ҫупкă-тапкă ҫиниех, айăплă юлать: кулакĕ «миравайне» кайса тыттарнă, «ҫу сĕрнĕ», какăриччен, куҫĕсем ҫамка ҫинелле сиксе тухичченех ĕҫтернĕ... Хăрушă пулнă патша вăхăтĕнчи суд ĕҫҫынни-семшĕн, рабочисемпе хресченсемшĕн!

Пирĕн совет судĕнчен ним хăрамалли те ҫук ĕнтĕ, ма тесессĕн вăл — тĕрĕс суд, хуть те мĕнле ĕҫе те ҫав тери тĕплĕ пăхса тухать, кам айăплипе айăплă маррине тĕпчесе шыраса тупать, ҫын айăплах пулсан вара, паллах, ăна закон тăрăх тивĕҫлĕ наказани парать. Ҫавăнпа суд та вăл — айăплисене айăпламалла, айăпсăррисене тӳрре кăлармалла. Халăх сучĕ! Халăх шанакан, халăх ĕненекен суд. Калатăп-ҫке, патша сучĕ — халăх тăшманĕ пулнă, пирĕн суд — халăх тусĕ, унăн хӳтлĕхĕ...

Анчах темшĕн-ҫке хăшĕ-пĕрисем «суд» сăмахран та хăраҫҫĕ. Час-часах ҫакăн пеккисене илтме пулать:

— Юратмастăп суд таврашне! Уй, тур ан хуштăрах судпа ҫыхланма! Ĕмĕрне кайман, каяссăм та ҫук!..

Чылайăшĕ судра свидетель пулассинчен те шуйтанран хăранă пек хăраҫҫĕ. Пĕр-пĕр ӳсĕр хулиган урамра ашкăннине, кама та пулин хĕненине курсан — пырса чарас вырăнне — аяккалла тапса сикеҫҫĕ. Свидетель тăваҫҫĕ-ҫке, суд умне тăма тивĕ тата! Таси, таси паха!.. Хăйсем ҫавăн пек «переплета» лексен, урăхла хăтланаҫҫĕ те-ха вĕсем, ҫине тăрсах свидетельсем шыраҫҫĕ, анчах урăх ҫыншăн пулсан... о, ҫук-ҫук! «Курман, илтмен...»

Сăмах майĕн каласан, ун пек обыватель-мещенсем милици ҫине те ăшă куҫпа пăхмаҫҫĕ. Сиввĕн, сăмахсене шăл витĕр сăрхăнтарса калаҫаҫҫĕ ун ҫинчен:

— Уй, милиципе ҫыхланиччен — ҫыхланманни! Вĕҫне-хĕрне тупаймастăн! Допросĕ, протоколĕ, тем шуйттанĕ... Ҫук, ҫук, кирлĕ мар!

Анчах хăйсене пĕр-пĕр шарлатан кĕтмен ҫĕртен, сасартăк, ĕнсерен тăхăнтартса ярсан, е арăмĕнчен вăрттăн ҫур литр илсе ĕҫме пытарса хăварнă виҫ тенкĕ укҫана вĕт-шак вăрă кĕсъерен кăларса илсен, тӳрех ҫухăраҫҫĕ:

— Милици! Ăҫта милици?!

— Пулăшă-ăр!..

Аслă поэт «манăн милици мана хӳтĕлет» тенине ҫавăн пек чух тин аса илеҫҫĕ вара.

Ҫапла ҫав, милици те, суд та кирлĕ кунта ҫеҫ кирлĕ

вĕсене. Хăйсене типшар килсен. «Патне çитсен», теççĕ пирĕн енчи чăвашсем.

Анчах пурте ун пек мар. Суд таврашне юратакансем те пур. Эпĕ хисеплени çинчен каламастăп,— совет судне кашниех хисеплемелле, мĕншĕн тесен, каларăмçке, вăл пирĕн, хамăр суйланă суд. Эпĕ кунта ю р а т н и çинчен калатăп. Чăн та ĕнтĕ, вĕсен юратăвĕ самаях хăйне майлă, тĕлĕнмеллерех юрату, темелле.

Пĕлетĕр-и эсир, хăшĕ-пĕрисем судсăр пурăнма пултараймаççĕ! Пулчĕ-пулмарĕ чупса пыраççĕ. Тем пирки те! Çирĕм çул хушши судьяра ĕçлесе, куркаларăм эпĕ ун пеккисене.

Пĕрисем суд ларăвĕсене театра спектакль курма кайнă пек çӳреççĕ. Пенсионерсем кăна мар, вăйпитти çынсем те нумай. Уйрăмах, кăшт «кăтăклăрах» ĕçсене пăхса тухнă чух йышлă ун пек «наблюдательсем». Сăмахран, хĕрĕх çул пĕрле пурăннă хыççăн карчăкпа старик уйрăлаççĕ-и унта, хăшин те пулин ывăлĕ-хĕрĕсем, ултăн-çиччĕн, ашшĕ-амăшĕ вилнĕ хыççăн юлнă пурлăхшăн çапăçса кайнă-и, пĕр-пĕр «эпи-карчăка» хĕрарăмсене вăрттăн ача пăрахтарса пурăннăшăн айăплаççĕ-и, тăват-пилĕк алиментран тарса çӳренĕ прохвоста тытса суд умне тăратнă-и... Таçтан пĕлеççĕçке! Эпир, театрсем пек, афишăсем кăларса çакмастпăр вĕт, çав-çав числара Иван Иванч Иванова пилĕк пинлĕх растрата тунăшăн айăплатпăр, тесе хаçатра та пĕлтерместпĕр. Анчах çавăн пекрех ĕçсене пăхса тухмалли кун ир-ирех халăх тулать суд залне. Юри, суд çывăхнерех вырăн йышăнасшăн, малтарахран пыраççĕ пулмалла. Кунĕпе лараççĕ вара, ним хускалмасăр, темле пит ответлă задание пурнăçа кĕртсе ларнă пек! Пулаççĕ те иккен ĕçсĕр аптракан, вăхăта ниçта чикме пĕлмен çынсем!..

Юрĕ-ха, çăва патне ку. Эпĕ сире çынсене епле суд тунине курма-илтме юратакан «билетсăр зрительсем» çинчен мар, хăйсем судлашма юратаканнисем çинчен каласшăн. Çавăн пеккисем пур! Шутсăр сиенлĕ йăх! Сахалах та мар тата вĕсем! Çулталăкра камсемпе те пулин виççĕ-тăваттă судлашмасан, чунĕ пĕртте вырăнта мар çав çынсен, пурнăçра тем çитмен пек туйăнать тейĕн вĕсене. Судлашас килнипе ăшталансах, хыçкалансах çӳреççĕ — кĕçĕ ернĕ пек.

Мĕншĕн судлашаççĕ?

Е эрех лавккинче, е пуш кĕленче йышăнакан киоск умĕнче черет тăнă чух кампа та пулин хирĕçсе илет вал (малтан пуçласа яраканни хăй-ха, киремет!) — çав-çав çын мана пичетлеме юраман сăмахсемпе халăх умĕнче кӳрентерчĕ тесе суда парать; автобусра тăвăр пулнипе пĕр-пĕр хĕрарăмăн сумкинчи çăмарта çĕмĕрĕлсе ун кив шăлаварĕ çине юхса тухать — çав шăлавар хакне (çĕнĕ чухнехи хакне!) шыраса заявлени çырать; мунчара тазпа вĕри шыв çĕклесе пынă чух кам та пулин ăнсăртран тĕртĕннипе шывĕ тăкăнса мăнтăр пĕççине кăшт пĕçертет—уншăн та суда парать. Е администрацирен нихçан пулман «сверхурочнăй ĕçшĕн» укçа шырама тытăнать, е стена хаçачĕ редакторне хăй çинчен çырнă заметкăшăн айăпласшăн...

Тăнран кăлараççĕ çавăн пек сутяжник-сăхавçăсем!

Хăваласа яратăн ун пеккисене — кивĕ йĕмпĕççине çăмартапа вараланăшăн та, стена хаçатĕнчи заметкăшăн та суд тумастпăр, тетĕн ăна, анчах вăл ик-виç эрнерен татах мĕн пирки те пулин заявлени çырса пырать. «Фактсене çирĕплетекен» справкăсем те пухма ĕлкĕрнĕ мур! Заявленине йышăнмасан хирĕçеççĕ-ха, санах юнама тытăнаççĕ, «çӳлерех» кайса жалоба парассипе хăратма пăхаççĕ!

...Пĕррехинче, çавăн пек, ман кабинета ир-ирех сахалтан та пилĕк-ултă пăт таякан хĕрарăм пырса кĕчĕ. Пит капăр тумланнă хăй, йăлтăр та ялтăр кăна, аллинче ылтăн сехет, хăлхисенчен шушкă пысăкăш алкасем çакса янă, пичĕ-куçĕ пĕркеленннине пытарма пудрăпа штукатурка туса лартнă, хулпуççинчен виç-тăват «молниллĕ» çап-çут сумка çакса янă. Хура куçлăхпа— киносенчи шпионсем пек. Пĕрре пăхсах курăнать — «ахаль йышши» кайăк мар. Кун пеккине пĕр-пĕр стройкăра кирпĕч те йăттараймастăн, бетон та çăртараймастăн, фермăна ярса сысна та пăхтараймастăн. Гранд-дама! Ĕлĕкхи вăхăтра пулас пулсан — баронесса ĕнтĕ!

— Ырă кун, хисеплĕ юлташ,— терĕ вăл сăмса витĕр тухакан сасăпа.— Эсир-и-ха кунта судья?

— Эпĕ судья. Ларăр тархасшăн,— пукан çине кăтартрăм ăна.— Мĕн çăмăлпа килтĕр, итлетĕп сире...

— Эп халь кăна милицире пултăм, анчах унта мана ăнланмарĕç те, сирĕн пата килсе калаçас терĕм. Тен, эсир ăнланма пултарăр-и, тесе шутларăм... — вăл

ахаль те тем çӳллĕш кăкрине тата çӳлерех хăпартса хашш! сывласа илчĕ те, ман умри хутсем чут çеç вĕçсе каятчĕç — пӳлĕме вăйлă çил вĕрсе кĕнĕ пек.

— Итлетĕп, гражданка, ăнланма тăрăшăпăр май килнĕ таран...

— Хуйхă манăн, тӳсме çук пысăк хуйхă, судья юлташ!

— Мĕн пулнă-ши вара ун пекех?

— Манăн... манăн чи юратнă кушак çухалчĕ!

— Куша-ак? — чĕре картах турĕ манăн. Ак тата çĕнĕ япала! Ку тарана çитсе кушаксем пиркиех суд туса курманччĕ-ха.

— Кушак çав! — терĕ хĕрарăм.— Ма тĕлĕнетĕр? Сирĕн килте кушак çук-и-мĕн? Епле пурăнатăр кушаксăр? Кирлех пулсан, пĕр çурине пама пултаратăп, ыр çыншăн шеллесех тăмăп...

— Тавтапуç. Усрамастпăр. Кушак таврашне тӳсме пултараймаççĕ ман килте,— терĕм хирĕç.

— Шел! Анчах манăн вĕсем улттă танччĕ. Халь пĕри çухалчĕ. Чи лайăххи, чи ăсли, чи юратни! Кушак мар, ылтăнччĕ вăл! — Ман «хăна» сывлăш çавăрса илчĕ те, эп итлемесрен хăрана пек, хăвăрт-хăвăрт калама тытăнчĕ: — Ангорски породăччĕ вăл, çăмĕ ша-ап-шур, çе-еп-çемçе! Куçĕсем — хунарсем пек çуталса тăраççĕ! Мана уншăн аллă... çук, аллă мар, çитмĕл пилĕк тенкĕ сĕнчĕç пĕррехинче, анчах эпĕ пурĕпĕр сутмарăм. Ытла та ăслăччĕ вĕт! Эп магазина-мĕне кайнă чух ăсатса ярать, таврăннă чух кĕтсе илет, каçхине те хампа пĕрле çывăрать, телевизор пăхнă чух та чĕркуççи çинче мăрлатса ларать... Ытармалла мар! Епле уйрăлам-ха эп унран? Тата, ăна сутсан, ытти кушакĕсем тăлăха юлаççĕ, ак ку аçаччĕ, ыттисем пурте — ама, вĕсене хутран-ситрен кавалер кирлĕ, ăçтан тупас ман вĕсем валли ун пек лайăх каччă? Вĕсем хăйсем те чаплă йышши породăран, курасчĕ сирĕн! Сараппансем тăхăнтаратăп та, ах, выляççĕ вара, ах, сикеççĕ!

— Кама сараппан тăхăнтаратăр? — ăнланаймасăр ыйтрăм эпĕ.

— Кама пултăр, кушаксене! Пĕрине сарă, теприне сенкер, симĕс, хĕрлĕ, кĕрен...

— Аçине тата? Ăна брюки, пиншак, галстук пуль? — кулас килнине аран пытарса ыйтрăм эпĕ.

— Çук, вăл атăпа кăна çӳретчĕ. Брюкипе кансĕр

ăна. Телевизорпа «Кот в сапогах» ятлă мультфильм курнă пуль?

— Курман.

— Шел. Питĕ лайăх фильм. Çавăн хыççăн атă çĕлесе патăм та эпĕ Пупсика. Ак çакăн пек, пĕçĕ кăкĕ таран,— хăйĕн хапха юпи хулăнăш пĕççине тытса кăтартрĕ хĕрарăм.— Ботфорт! Петр Великийĕн пекки...

— Çав Петр Великий çухалчĕ-и-ха сирĕн халь?

— Ах, ан та калăр! Çавă çав, çавă, Пупсик! Юратнă Пупсик! — вăл тăрук хурланнă пек пулса куçĕсене сăмса тутрипе сăтăркаласа илчĕ.— Виçĕ кун ĕнтĕ çухални... Мĕн чухлĕ макăртăм, мĕн чухлĕ вĕри куççуль тăкрăм! Çĕр çывăрмасăр... Ухмаха еретĕп пуль ĕнтĕ...

— Эсир вара... çав кушак пирки килтĕр-и суда?— тарăхма пуçласа ыйтрăм çакăнтан.

— Кушак пирки çав, мĕншĕн килем-ха тата! Тупма пулăшăр тархасшăн, ахаль тумăп сире уншăн... — тархасланă пек пăхрĕ вăл ман куçран.— Тăрăшсан, тупма пулатех! Шырамалли çулне-йĕрне эп хам та чухлатăп... Ăна ман кӳршĕ вăрласа сутнă, шофер, таçта çити те çӳрекенскер. Тытса хутаççа чикнĕ те, илсе кайнă пĕр çĕр çухрăма. Сутнă та укçине ĕçсе янă! Точнă çаппа пулнă! Пĕрисем курнă ун ачисем Пупсика картишĕнче хăваласа чупнине... Ответ тыттарăр çав шофера! Тавăрса патăр вăл ман Пупсика! Аçта сутнине те пулин каласа патăр, вара эп ăна милиципе кайсах тăпăлтарса илĕттĕм! Хăяматне билет хакĕ, уншăнах ыйткалакана тухас çук эпĕ...

Пĕр хушă ним калама аптраса лартăм. Ытла та тĕлĕнтерсе пăрахрĕ-çке мана çак хĕрарăм! Ухмах пуль эсĕ, тухса вăркăн кунтан халех, теме юрамасть...

— Эсир милицире пултăм, терĕр-и-ха? Мĕн терĕç сире унта? — тесе ыйтрăм кăшт тăхтасан.

Вăл каллех ман сĕтел çинчи хутсене вĕçтерсе ямаллa сывласа илчĕ те пĕççине шарт! çапрĕ.

— Мĕн калаччăр!.. Чунсăр çынсем лараççĕ унта! Сирĕн кушак аçине тупма пултараймастпăр пулĕ, кӳршĕ çыннине ответ тыттарма та основани çук, теççĕ. Мĕнле основани çук пулать вара?! Вăл эсрелĕ ман кушаксене яланах кураймастчĕ, наркăмăш парса вĕлеретĕп акă пурне те, тетчĕ, çынсем авă Пупсика ун арçурилле ачисем хăваласа чупнине те курнă. Чулпа переççĕ тет-ха! Ман Пупсика... çав ачашран та ачаш

чĕрчуна... чулпа! Лектерчĕсех пулсан, мĕн тери ыратрĕ пуль шереметĕн...

Хĕрарăмăн куçĕсем чăнласах шывланчĕç. Мĕнле çын пулчĕ ку? Ăсĕ-тăнĕ чиперех-ши унăн, е ...тайăлнă?

Юриех ыйтса пĕлме тытăнтăм:

— Сирĕн упăшкăр ăçта ĕçлет, гражданка?

— Тăлăх арăм эпĕ, упăшкана пĕлтĕр пытартăм,— терĕ вăл.— Инженерччĕ вăл манăн, пит лайăх ĕçлесе илетчĕ. Шел, икĕ çул çеç пурăнтăмăр унпа.

— Мĕнле... икĕ çул? Эсир ытлах çамрăк мар-çке?

— Унăн малтанхи арăмĕ теприне качча кайсан пĕрлешрĕмĕр эпир. Пĕрле ĕçлеттĕмĕр те... Эп унăн секретарши пулнăччĕ пĕр хушă. Арăмĕ пур чухнех парнесем паркалатчĕ мана Иван Ипполитыч.— Хĕрарăм сумкинчен тĕкĕр кăларса çӳçне-пуçне юсаса илчĕ.— Ватти ватах мар-ха эпĕ, аллăран çеç иртнĕ. Анчах тепре качча каясси çинчен шухăшламастăп. Темле арçын пулать! Хăшĕсем кушаксене юратмаççĕ, эп вĕсемсĕр пурăнма пултараймастăп...

— Хăвăр ĕçлетĕр-и халь?

— Çук. Упăшкашăн пенси параççĕ. Çитет мана. Квартирантсем усратăп тата, хваттерĕ виçĕ пӳлĕмлĕ манăн, аллă икĕ метр. Ĕçлеме... вăхăчĕ те çукрах çав, кушакĕсене пăхас пулать-çке, вĕсем культурăна вĕреннĕ, пули-пулми апат çимеççĕ, сĕтне те вĕретсе çеç паратăп, чĕррипе варвиттине ереççĕ...

— Ăнланатăп,— алла çĕклесех пӳлтĕм ăна.— Анчах суда мĕншĕн килтĕр-ха эсир? Çавна ăнланаймастăп вара.

— Епле ăнланмастăр? — куçĕсене тăрук çутăлтарса илчĕ «кушак фермин» хуçи.— Пулăшу ыйтма. Каларăм-çке сире: Пупсика тупма пулăшăр! Ман кӳрше — леш шофера ответ тыттарăр! Суда чĕнсе хытăрах хĕссен, каласа парать вăл ман кушакпа мĕн тунине!

— Питĕ шел, гражданка, анчах вăл çынна суда чĕнме основани çук пирĕн,— терĕм ăна хирĕç.

— Эсир те... эсир те «основани çук» тетĕр, эппин? Епле çук? Ан тĕлĕнтерĕр-ха! Ак манăн заявлени! Мĕнле основани кирлĕ тата сире?

— Йышăнмастпăр сирĕн заявление.

— Йышăнмастăр?! Ĕçхĕрарăмĕн, пенсионеркăн интересĕсене сыхласшăн мар, эппин, эсир? Эп сирĕн умăрта куççулĕ тăкатăп, тархасласа пулăшу ыйтатăп,

анчах эсир... эсир... Бюрократ! — урипе тап! тапса илчӗ вӑл.— Чунсӑр ҫын! Мӗн тума суйланӑ сире кунта? Мӗн тума тытса усраҫҫӗ? Хам пулсан, халех кӑларса сирпӗтмелле!..

Нумай та пулмасть нӑшӑкласа ларнӑ хӗрарӑм тӑруках тигртан та кая мар хаярланса кайрӗ.

— Сирпӗтмелле! — тепӗр хут кӑшкӑрчӗ вӑл.— Кӑларса ывӑтмалла!

— Вӑл сирӗнтен килмест пуль, гражданка,—терӗм эпӗ.

— Эп сирӗн ҫинчен жалоба ҫыратӑп! Верхсуда каятӑп! Мускава ҫитетӗп! Хаҫатра фельетон ҫыртаратӑп! Курӑр вара!..

— Тур пулӑштӑр сире жалобӑсем ҫырма,— терӗм эпӗ,— анчах та халь ӗҫлеме ан кансӗрлӗр тархасшӑн. Сыв пулӑр.

Алӑка шанн! хупса тухса кайрӗ вӑл. Пӗтӗм чӳречесем чӗтренсе илчӗҫ. Тепӗр сехетренех Верховнӑй судран шӑнкӑравларӗҫ ман пата:

— Мӗн пулнӑ унта сирӗн нумай кушаклӑ хӗрарӑмпа? Эс ӑна ҫурӑмран аяларахран тапса кӑларса янӑ темест-и? — тесе ыйтаҫҫӗ.

— Тапаймарӑм ҫав,— терӗм эпӗ.— Анчах тата пӗртак тӑнӑ пулсан, тен, тӳсейместӗм, тапаттӑм та пулӗ!

— Пире те темтепӗр каласа тӑкрӗ вӑл. Мускавпа хӑратасшӑн. Ӗҫсӗр аптранӑскер, тата миҫе ҫынна ӗҫлеме кансӗрлет-ши, аҫа ҫапманскер!..

...Тепринче, ӗҫ пуҫланнӑ-пуҫланман, ман кабинета вӗри мунчара ҫине-ҫине ӑшши парса ҫапӑннӑ пек хӗпхӗрлӗ, кӳпшек питлӗ, чалӑш ҫӳллӗш, ҫирӗм пилӗксенчи арҫын пырса кӗчӗ. Ячӗшӗн тенӗ пек, мана сывлӑх сунам пекки турӗ те эп ларма сӗнмесӗрех сӗтел умӗнчи кресло ҫине лак! ларчӗ. Мӗнле этем пулчӗ ку? Тинкеререх пӑхсан, вӑл мана таҫта курнӑ ҫын пек туйӑнчӗ. Ҫавӑнтах аса илтӗм: аш-какай магазинӗнчи продавецҫке ку, ик-виҫ уйӑх каялла эп ӑна чайнӑйра ӳсӗрпе ашкӑннӑшӑн вунпилӗк талӑк панӑччӗ. «Мӗн хӑямачӗшӗн килчӗ ку тип?» — терӗм хам ӑшӑмра.

Эп ҫапла шухӑшлама ӗлкӗртӗм ҫеҫ, вӑл пӗр урине теприн ҫине явса хучӗ те шурӑ бинтпа ҫыхнӑ сылтӑм аллине ман пит патнех илсе пычӗ.

— Куратӑн-и ҫакна, судья? — ыйтрӗ хӑй.

— Куратăп, суккăр мар, аллу аманнă пулмалла, ахаль çыхас çук ĕнтĕ,— терĕм эпĕ. Темшĕн, хам çав вăхăтрах тарăхма пуçларăм.

— Ыратать! Ĕçлеме пултараймастăп! — мĕкĕрсе илчĕ каччă.

— Аш каснă чух пуртăпа лектертĕн пуль? «Производственная травма» теççĕ ун пеккине.

— Çук, ун пек пулман,— йывăррăн сывласа ячĕ «клиент».— Пуртăпа сылтăм алла касма пултараймастăп эпĕ, сулахайпа ĕçлекен çын мар.

— Мĕн пулчĕ, эппин?

— Мана йĕкехӳре çыртрĕ!

— Йĕкехӳре?! — тĕлĕнсех кайрăм эпĕ.— Çав териех нумай-им вĕсем сирĕн магазинра? Ма пĕтерместĕр? Тата мĕнле çыртма пултарнă-ха вăл сан çӳллĕш çынна аллинчен? Эсир мĕн, ĕçре сывăрмастăр пулĕ-çке? Унсăр пуçне... йăнăшнă эсĕ, гражданин, санăн суда мар, часрах больницăна, поликлиникăна каймалла-мĕн. Йĕкехӳре — ирсĕр чĕрчун, зараза та пулма пултарать...

— Пĕртте йăнăшман, гражданин судья,— пуçне пăркаласа илчĕ вăл.— Эс итле малтан, выводсем тума ан васка. Йĕкехӳри мана килте çыртрĕ. Эп паян кухньăри шкапа урăх çĕре куçарса лартма тăтăм та, сасартăк шкап хыçĕнчен çав шуйттан сиксе тухрĕ. Унта чышкă кĕмелĕх шăтăк пур-мĕн. Эп шăтăкне часрах çур литр кĕленчипе пăкăласа лартрăм та йĕкехӳрене хăвалама тытăнтăм. Унталла, кунталла... Манăн ăна тытса вĕлерес килет, унăн, паллах пурăнас килет... Ну, юлашкинчен çапах та пĕр кĕтесре ярса тытрăм çакна, анчах йăнăш турăм: манăн ăна ĕнсинчен тытмалла пулнă, эп хӳринчен çавăрса илтĕм... Вăл, негодяй, çав самантрах çаврăнчĕ те пӳрнерен кап! тутарчĕ. Витĕрех шăтарчĕ пӳрнене! Тӳрех юн тапса тухрĕ...

— Калатăп-çке, санăн поликлиникăна каймалла пулнă! Эс кунта килнĕ. Мĕн тума?

— Поликлиника пирки ан вĕрент эс мана, гражданин судья,— кăмăлсăр пулса ал сулчĕ «клиент».— Унта пулнă эпĕ. Уколпа та тирчĕç, çыхса та ячĕç, справка та пачĕç. Çавăн хыççăн тин килтĕм-ха сан патна. Акă, заявлени...

— Мĕнле заявлени?

— Иск паратăп. Шыраса илетĕп.

— И-иск? Мĕнле иск? Камран мĕн шыраса илес-

шĕн вара эсĕ? Хăвна аллунтан çыртнă йĕкехӳрене суда паратăн-и? — чутах кулса ярattăм эпĕ. Ытла та тĕлĕнмелле те-ха...

— Йĕкехӳрене мар,— тарланă çамкине çанă вĕçĕпе шăлса илчĕ мясник,— унпа ĕç татăлнă манăн, эп ăна пăхăр çăпалапах çапса вĕлертĕм, кончал вăл...

— Кама суда паратăн, эппин?

— Домоуправленине! Вăл айăплă эп аманнăшăн! Мĕншĕн хăйне пăхăнса таракан çуртра йĕкехӳресене ĕрчеме парать? Мĕншĕн йĕкехӳре шăтăкĕсене вăхăтра асăрхаса питĕрмест? Э? Ну, кам айăплă? — вăкăр пек пăхрĕ ман çине мясник.— Кала! Эс судья, санăн пурне те пĕлмелле, любой вопроса ответ памалла!

— Тăхта-ха, гражданин, ан çухăр, аллусемпе сулкалама та пăрах, кунта пасар мар,— терĕм çакна.— Эппин, сан шутпа, домоуправленин кашни хваттерти кашни шкап айне тĕрĕслесе çӳремелле? Урайне выртса, хырăмпа шуса... Çапла-и?

— Çӳремелле! Тĕрĕслемелле! Эпир вĕсене хваттер укçи тӳлетпĕр, вĕсем уншăн шалу илеççĕ! Анчах вĕсем унта пукансене ăшăтса çеç лараççĕ, трудовой халăхшăн ним чухлĕ те тăрăшмаççĕ!

— Кирлĕ мара калаçатăн, гражданин. Хваттерте пурăнаканăн хăйĕн тытса пымалла хваттерти йĕркесене. Вĕт-шак ремонта пирĕн хамăрăн тумалла, йĕрки çапла! — ĕнентерме тăрăшрăм эпĕ.

Анчах вăл итлесшĕн те пулмарĕ, хĕрнĕçемĕн хĕрсе пычĕ.

— Тĕрĕс мар!.. Вĕсен айăпĕпе инвалид пулса тăтăм эпĕ, ĕçлеме пултараймастăп, кам тăрантарать халь мана?!

— Суранĕ пысăках пулсан, поликлиникăра бюллетень илмеллеччĕ эппин санăн,— канаш патăм çакна.

— Кам тӳлет мана бюллетеньпе? — кăшкăрчĕ вăл мана хирĕç.— Пушкин тӳлет штолĕ?

— Ара, аш-какай магазинĕнче профсоюз...

Вăл мана каласа пĕтерме памарĕ, тата хытăрах кăшкăрчĕ:

— Ĕçлеместĕп эп унта, тухса кайрăм, заведующи хĕрарăм та — шутсăр усал, камран мĕн шăрши кĕнине шăршласах çӳрет, пĕр курка сăра ĕçнине те çухрăмранах сисет!

— Ах, а-ав мĕн иккен-ха... Ну, апла...

— Илместĕн, эппин, заявленине? — сиксе тăчĕ «инвалид».— Шыраса илсе памастăн? Апла пулсан, çыр резолюци! — хăйĕн хутне шап! çапса илчĕ вăл.

— Мĕнле резолюци? — ыйтрăм эпĕ.

— Йышăнмастăп, тесе çыр ман заявлени çине!

— Мĕн тума кирлĕ вăл сана?

— Епле мĕн тума? Резолюци пулмасан, Верховнăй суда мĕнпе каям-ха эпĕ? Эс мĕн, закон йĕркисене пĕлместĕн-и? Мĕнле судья эсĕ апла? Çыр резолюци!

Мана — мĕн? Çырса патăм резолюци. Тухса кайрĕ вара вăл йĕкехӳре ĕçĕпе манран аслăраххисен пуçĕсене минретме...

— Развод ĕçĕсене нумай пăхса тухнă эп хам пурнăçра,— терĕ малалла Панфил Иванч.— Шутсăр юратмастăп эп вĕсене! Ун пек ĕçсенчен ирсĕрри ним те çук пуль çав... Акă, пырса кĕрет пĕр мăшăр... Паллах, пĕр вунă çул каялла (тен, унтан та ытларах, тен — каярах та-и!) вĕсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе, пĕр-пĕрине юратсах пĕрлешнĕ пуль-ха. Ун çинчен ыйтсан çаплах калаççĕ: юратнăччĕ эпир, теççĕ. Халь тата мĕнле-ха? Çук, юрату пĕтнĕ пирĕн, юратма мар — пĕрне пĕри тӳсме пултараймастпăр, уйăрса ярăр пире часрах! Мĕншĕн ун пек-ха? Тен, çапах та, мирлешетĕр, малашне те пĕрле пурăнатăр? Э-эх, пуçланса каять вара! Мĕн кăна илтместĕн, мĕн кăна каламаççĕ пĕр-пĕрин çинчен!.. Арăмĕ упăшкине пылчăкпа хутăштарса таптасах лартать, упăшки — арăмне. Тĕлĕнсе хытсах каятăн тепĕр чух: мĕнле пурăннă-ха вĕсем çак таранччен, мĕнле пĕрле выртса тăнă, ача-пăча тунă, пĕр çăвартан çинĕ, урамсем тăрăх пĕр-пĕрине хулран тытса утнă, хăнана çӳренĕ, театрсене кайнă... Пурăннă-пурăннă та, иккĕшин те чĕрисенче чăн шуйттансем çуралнă. Пĕр-пĕрине сан умăнтах кăшласа яма хатĕр çав!..

Анчах пуринчен ытларах çамрăккисем уйăлаççĕ. Ку вара пушшех тарăхтаратчĕ мана. Сăлтавĕсем-и? Пи-ит нумай вĕсем! Пĕрисем ытла çамрăкла, пурнăç мĕн иккенне чухлаймасăрах, çемьеллĕ пурнăçпа пурăнма хатĕрленсе çитмесĕрех, тăранмалăх укçа ĕçлесе илекен пулмасăрах, татăлнă тӳмине çĕлесе лартма та вĕренмесĕрех, «пĕрре курсах юратса пăрахнипе» пĕрлешнĕ те, ик-виç уйăхранах уйрăлма шут тытнă. Теприсем «ращутпа» авланнă — хĕр ашшĕ-амăшĕн хваттерĕ ла-

йăх, укçи-тенки çителĕклĕ, тен пурăна-киле вĕсем «Волга» та илсе парĕç... Анчах каччи, авланаканни, малтанхи пекех нимĕн те ĕçлемест, унăн пĕтĕм «программи» — какăриччен çиес, кăнтăрлаччен çывăрас, стадиона кайса футбол тапас та каçалапа эрех ĕçес... Усраççĕ-усраççĕ те çавăн пек шарлатана, хăвалама тытăнаççĕ — кирлĕ мар пире сан пек харам пыр! Малтан тем пăхнă-çке? Анчах ку тухса каймасть — не имееш правă хăвалама, ман прописка кунта, эпĕ те сирĕн пекех хуçа! Хуньстариккипе хуняма карчăкĕ ытах тапăна пуçласан, ку лайăх кăна ĕçсе лартать те, киле таврăнсан кусене çăтти-çатти! паркаласа илет. Ваттисем милици чĕнеççĕ, акт çыраççĕ вара, протокол, унтан суд... Мĕнле пурăнчăр-ха вĕсем пĕрле? Ирĕксĕрех уйăрма тивет хăяматсене...

Калатăп-çке, сăлтавĕсем нумай пулаççĕ. Тĕрлĕренех. Тем тĕсли те. Эп уйрăмах пĕр ĕçе лайăх астуса юлтăм. Халь те куç умĕнчех...

...Пĕр çамрăк çын, тăлăх пирки ача çуртĕнче ӳснĕскер, ФЗОран вĕренсе тухнă хыççăн пĕр-ик çул заводра ĕçленĕ, унтан çарта виçĕ çул пулса таврăннă. Каллех завода кĕнĕ. Ниçта пурăнма çуккипе пĕр частнăй киле хваттере вырнаçнă. Нумай пулаççĕ ун пеккисем.

Хваттер хуçи вутă склачĕн заведующийĕ пулнă, ун арăмĕ сăра киоскĕнче ĕçленĕ. Вĕсем начарах пурăнманнине чухласа илме йывăр мар: вутта килогрампа виçсе сутмаççĕ — унта тем те тума пулать, сăра кăпăкĕ те питĕ тухăçлă япала. Час-часах вăл кăпăкран «Волга» автомобильсем те, икĕ хутлă дачăсем те çуралса тухаççĕ. Ун пек асамлă ĕçсене те пĕрре кăна мар пăхса тухма тивнĕ мана...

Çав завскладпа завкиоскăн хĕр пулнă. Пĕрререн пĕрре. Ашшĕ-амăшĕ ăна çуралнă самантран пуçласа тутине пĕветсе çӳрекен пуличченех пит ачаш усранипе, вăл мĕн ыйтнине пĕтĕмпех туса пынипе, нихăш енчен те чăрмантарманнипе, авалхи римлянсен юратупа илем туррин ятне панă çак Венера хăйне пуринчен те мăнна хуракан пулса ӳснĕ, анчах хăй шкулта та пит начар вĕреннĕ, ӳркеннипе уроксене те час-часах сиктернĕ, çав вăхăтрах учительсемпе те хăр-хар калаçнă. Çиччĕмĕш класра икĕ çул ларнă хыççăн вара тек вĕренеймен те вăл.

Çапах та хулара пурăнакан çыннăн мĕнле пулин

специальность пулмалла-çке! Ашшĕ-амăшĕсем ик ĕмĕр пурăнмаççĕ, ÿлĕм, вĕсем вилсен, мĕн çиесси çинчен те шухăшламалла!

Тытăннă çакна ĕçе вĕрентме. Малтан типографие кĕртеççĕ — линотипист-наборщик пулма. Анчах амăшĕ пĕрре пырса курать те — тÿрех пăрахтарать: сывлăш йывăр унта, тăхлан тусанĕ, наччас чахоткăна ерме пулать имĕш. Çук, Венера пек хитре хĕр ĕçĕ мар ку! Унтан машинисткăсен курсне вырнаçтараççĕ — ку та килĕшмест: пĕрмай алçырăвĕ çине, клавишсем çине пăхса куç пăсăлма пултарать. Кунтан та хăрушăраххи пур: тăтăшах машинка умнелле пĕшкĕнсе ларнипе курпун тухма пултарать... Суккăр та пулăн, курпун та пулса юлăн! Кам качча илтĕр вара ун пек хĕре?!

Амăшĕ, шутсăр çивĕчскер, таçта мурне те шăтарса кĕрсе кайма пултараканскер, хăйĕн ытарайми пепкине тата темиçе çĕре вырнаçтарма пикеннĕ, анчах ниçта та, нихăш ĕç те килĕшмен вĕсене. Юлашкинчен Венерăна парикмахерскине параççĕ — хитре хĕр валли пит лайăх вырăн!

Анчах вăхăт шăвать-çке, хĕрачаран хĕр пулса çитет, каччăсем питĕ пăхма пуçлаççĕ икĕ зав хĕрĕ çине. Сухал хырма, çÿç кастарма пыракан кашни йĕкĕтех— хăш чух кăшт ватăраххи те — Венерăна комплиментсем калать, каçхине унта-кунта кайма та чĕнет... Ку хирĕçех пулмасть, пĕринпе çÿрет, тепринпе... Хăш чух çур çĕрччен те, çур çĕр иртиччен те. Ашшĕ ятлакалать уншăн, анчах амăшĕ чарсах каймасть: çамрăк чух кам çÿремен?! Йăнăш япала ан пултăр кăна! Венера пек ăслă хĕр йăнăшах тăвас çук-ха, ку енчен шанчăклă...

Эпир судра пăхса тухнă «делора» ун çинчен нимĕн те каламанччĕ, анчах аякран пĕлтĕм: йăнăшне тунă вăл. Пĕррехинче таçтан кăнтăртан апельсин-мандарин, гранат-виноград сутма килнĕ спекулянтсем кăнтăрла ун патĕнче хырăннă та каçхине хăйсем пурăнакан гостиницăри ресторана илсе кайнă. Тул çутăлсан тин таврăннă хитре пике. Ашшĕ-амăшне хăйĕн пĕр юлташĕ патĕнче менелникре пултăм тесе тыттарнă. Кусем ĕненнĕ. Анчах кăштах вăхăт иртсен ун суйи пит лайăх палăрма пуçланă... Темле хăтăлкаланă вара вĕсем çав «менелник» результатĕнчен, ăна пĕлместĕп, анчах амăшĕ хăйĕн чаплăран та чаплă хĕрне епле те пулсан «вырнаçтарасси» çинчен çеç шухăшлама тытăннă.

...Маттур, хитре, пур енчен те кăмăла каймалла, тин çеç салтакран таврăннă, никампах та паллашма-туслашма ĕлкĕреймен качча хваттере ярсанах амăшĕ çирĕп шут тунă:

— Куна вĕçертместпĕр...

Хĕрне те асăрхаттарса хунă:

— Çакăн пуçне çавăраймасан, тăп-тăр ухмах пулатăн!

Тапратнă вара амăшĕпе хĕрĕ пĕр фронтпа наступлени туса пыма, пĕри — çак каччăран кĕрӳ тума, тепри — унран упăшка туса хума кĕрешӳ пуçласа янă. Кĕрешӳре пур меслетсем те лайăх, теççĕ вĕт-ха. Кусем меслечĕсене аван пĕлнĕ. Пур йышшипе те усă курнă. Апатне те хăйсемпе пĕрлех çитернĕ («Столовăй апачĕ — апат-и вăл, унта çисе пурăнни — вар-хырăма пăсни кăна!»), кĕпи-йĕмне те çуса, якатса панă («Прачечнăйра шуратса мар, саратса-кăвакартса çеç параççĕ!»), эрнере ик-виçĕ хут сĕтел çинче мамăк пек çемçе кукăль сарăлса выртнă, кукăльпе пĕрле — эрех; хăнасем пырсан та качча кил хуçипе юнашар лартнă, хăйсене хăнана чĕнсен те, пĕрлех сĕтĕрсе кайнă.

— Проша, Проша, пирĕн Проша...— тенĕ çеç Венера амăшĕ.

Ну, Венера хăй те илĕртме пĕлнĕ качча. Опыт пулнă унăн. Вĕреннĕ ĕнтĕ. Пулчĕ-пулмарĕ каччăпа выляма тытăннă, хăйне такам кăтăкланă пек ахăлтатнă, унпа пĕрле кинона, концертсене кайнă (билечĕсене хăех илнĕ — ун валли амăшĕ укça хĕрхенме хушман). Каччи чухăн пулнă-ха, малтанлăха салтак тумĕпех, кирзă атăпах çӳренĕ. Суту-илӳре ĕçлекенскер, Венера амăшĕ ун валли пит хитре костюм, ют çĕршывран илсе килнĕ чаплă пушмак тупса пынă.

— Укçине пуйсан парса татăн епле те пулсан... Халлĕхе тăхăн, тăхăн, ан вăтанса тăр! — пĕветнĕ тутине ирĕлтерсе илнĕ çеç вăл.

Кĕскен каласан, салтака пит вăйлă окружение илнĕ вĕсем. Тимĕр картана хупнă пекех. Анчах салтакĕ, Прохор Петров, парăнсах кайман-ха. Бдительность тени пулнă унăн. Ашшĕ-амăшĕ килте çук чух Венера ытлашши якăлтатма пуçласан, ун ытамĕнчен вĕçерĕнсе картишне сиксе тухма та хал çитернĕ. Хăш чух, Венери питех хĕрсе кайсан, вылянă пек туса сив шывпа та сапнă ăна.

Амăшĕ тĕпчесех тăнă хĕрĕнчен:

— Юрататăп, тет-и хуть сана? Авланасси çинчен каламасть-и?

— Ним те каламасть, анне... Пĕртте арçын пек мар...

— Пултараймастăн, эппин! Хам пулсан, эп ăна хальччен... ы-ых! Тахçанах урай çумалли мунчала туса хумалла!

— Мĕн тăвас-ха манăн, вăл чул пек сивĕ, бетон пек çирĕп пулсан?

— Пĕлес пулать мĕн тумаллине! Пĕчĕк ача мар, çирĕмре! Кирлĕ мар чух леш мандарин сутакансемпе пултарнă-çке эсĕ! Мĕн чухлĕ укçа тăкрăмăр ѐнтĕ... Хытăрах тăрăш, çуркуннеччен туй пултăр!

Вĕсен, ыттисемпе пĕрле, хула хыçĕнче сад пулнă. Садра — дача. Çура тухсан, амăшĕ çамрăксене унта йăран чавма, кайран купăста-хăяр-помидор шăварма янă. Ялта пурăнса курнăскер, Проша тени çĕр ĕçне юратнă, хапăл тусах кайнă сада. Тепĕр чух тĕттĕм пуличченех пурăннă вĕсем унта Венерăпа иккĕшĕ. Çавăнта вара, шăпчăк юррисене итленĕ май, салтакăн сыхлăх туйăмĕ мăкалнă курăнать...

— Сирĕн Венерăпа иксĕрĕн хушăрта мĕн пулса иртнине пĕтĕмпех пĕлетĕп эпĕ,— тенĕ амăшĕ тепрер ик эрнерен, сăнне хаярлатса.— Эс улталанă ман хĕре! Эпир сана ыр çын тесе усратпăр, хамăр ачана пăхнă пек пăхатпăр, анчах эсĕ ав епле шухăшпа пурăннă иккен! Намăссăр! Ăçта сан совĕç? Мĕн тума шутлатăн-ха малашне? Тен, тухса тарас ĕмĕтӳ пур? Анчах ун пек пулаймĕ, ачамккă!

Каччă тӳрре тухма пикеннĕ, эп кăна айăплă мар унта, теме тăнă, анчах лешĕ ăна çăвар уçма та паман.

— Ан янра! Ирсĕр ĕçне туса хутăн пулсан, ответне тытма пĕл! Халех кайса çырăннă пултăр. Мĕн курас-ха пирĕн, Венера кĕтмен-туман çĕртен, хĕр пуçăн, ача амăшĕ пулса тăчĕ-тĕк? Намăса ăçта чикес? Пирĕн пĕтĕм ырă ят каять вĕт! Виçĕ кун срок паратăп сана! Атту-тăк эпĕ таçта та çитетĕп, хальччен никама та мăшкăллаттарман-ха хамран! Ăнлантăн-и? Ы-ых, сире, çамрăксене, пушă кирлĕ те çав, хĕнекен никам та çук!

Эрнерен вĕсем туй тунă. Пит чаплă туй. Виçĕ талăк тĕпĕртетнĕ вĕсем патĕнче аллă-утмăл çын. Хăнасем хушшинче Венера амăшĕ пĕр-пĕр акăлчан королеви пе-

кех саркаланса çӳренӗ, хӗрӗпе те, кӗрӳшӗпе те ниçта кайса кӗрейми мухтаннӑ:

— Пит лайӑх мӑшӑр пулчӗ! Хӗрӗ ман — ылтӑн кӑмӑллӑ, кӗрӳ те çав тери ытармалла мар çын. Чӑнах та, питӗ чухӑн ӗнтӗ, кив шинельпе çӗтӗк атӑсӑр пуçне нимӗн те çук унӑн, ку костюмне те, кӗпине те хамӑр илсе патӑмӑр, атту-тӑк çынсем умне тухма намӑсчӗ... Каччисем пирӗн унсӑр та нумайччӗ те-ха, мӗн тӑвас тетӗн — пӗр-пӗрине юратрӗç те, хирӗç пулмарӑмӑр, килӗшес, терӗмӗр, пурӑнччӑрах, пурӑна-киле хӑйсене мӗн кирлине туянӗç, хамӑрӑн та пур-ха, вилсен пӗтӗмпех вӗсене юлать...

Çавӑн пек юрланӑ кӑна вӑл хӑнасем хушшинче.

— Эс ватӑ мар-ха, тата тепӗр çакӑн чухлӗ пурӑнатӑн! Паян тесен паян тепре качча кайма, хӗрӳпе ӑмӑртса ача тума пултаратӑн! Пиçнӗ çырла пекех-иç халь те! — мухтанӑ ӑна ӳсӗрлерех панӑ арçын хӑнасем, хӑшӗ-пӗрисем унтан-кунтан лӑпкакаласа та илнӗ.

Ку вара ирӗлсех кайнӑ:

— Пурӑнасчӗ-ха пурнӑçне! Ватӑлнинчен мӗн усси? Старикӗ хавшарӗ те-ха манӑн, уншӑнах аптрамӑпӑр!— çавӑнтах тутӑр сулса, тӑпӑртатса-такмакласа ташша янӑ.

Сар чечек пек хӗрӗм пур,
Ытарайми кӗрӳ пур,
Пирӗн мӗншӗн хуйхӑрас,
Ма ташлас мар, юрлас мар?
И-их, и-ха-ха!..

Калатӑп-çке, питӗ вӑйлӑ туй тунӑ вӗсем, икӗ зав. Эрехӗ-сӑри Атӑл пекех пулмасан та, Кайбулкӑран кая мар юхнӑ. Пурте савӑннӑ, юрланӑ-ташланӑ. Пӗр Прохор Петров çеç мрамортан тунӑ бюст пек ларнӑ сӗтел хушшинче. Хӑнасем «йӳçӗ! йӳçӗ!» тесе кӑшкӑрсан арӑмне пӑт-пат чуптукаласа илнӗ çеç. Тӑп-тӑр урӑ пулнӑ. Унӑн пурнӑç планӗнче халех çакӑн пек туйра ларасси пулман-çке, вӑл каç-каç вӗренсе те пулин институт пӗтересси çинчен ӗмӗтленнӗ-мӗн...

Те эрне иртнӗ туй хыççӑн, те иккӗ — ӑна пӗлместӗп, анчах хайхи «ытарайми кӗрӳ» çине амӑшӗпе хӗрӗ пит лайӑх утланса ларнӑ. Хӑйсен уйрӑм çуртӗнче пурӑннӑ май, вӗсен кил таврашӗнче ӗç тем чухлех пулнӑ: вуттине те татса çурмалла (хӗлле валли хатӗрлемелле!),

шывне те курсе килмелле, картишне те шăлмалла, чаххи-чĕппине те тăрантармалла, хула хыçĕнчи садне хураллама кайса кăкарнă овчаркине те кая-кая çитермелле! Пушă минут та юлман Проша-Прохорăн. Пĕр уйăх хушшинчен сăнран ÿкнĕ вăл, начарлансах кайнă. Ĕçри юлташĕсем кулнă-тăрăхланă:

— Ай-ай, Проша! Çамрăк упăшка должнăçĕ пит те йывăр пулас, э? Хунямуна кала — тутлăрах çитертĕр, атту пĕтетĕн эс капла!

Унччен ĕç хыççăн хаçат-журнал, кĕнеке вуланă вăл, халь вĕсене алла та тытман. Ăçтан тытатăн! Заводран таврăнса алăкран кĕнĕ-кĕмен командăсем панă ăна:

— Проша, пирĕн çăкăр пĕтнĕ. Чуп-ха магазина!

— Прошенька, бакра кушак ĕçмелĕх те шыв юлман, ăсса кил-ха!

— Керогазра краççын çук. Яр-ха!

— Урайĕнчи кавир çара тусан. Силле-ха!

Темле пурăннă-çке вĕсем çакăн пек ĕçчен кĕрÿ туяниччен?

Хунямăшĕ, туйра никамран та хытă сикнĕскер, питĕнчен пÿрнипе пуссанах юн пĕрĕхмеллескер, халь шав чире пенĕ — унăн пуçĕ Атăл вăрманĕ пекех кашлать имĕш, хул калакĕ айĕнче темскер тирет, аллине çĕклеме те пултараймасть; хĕрĕ «эп йывăр çын пултăм пулмалла, кăмăл пăтранать, пĕшкĕнме те пултараймастăп — пуç çаврăнать», тет те диван çинче текех мода журналĕсене уçкаласа выртать; хуньăшĕ ир-ирех тухса каять те çĕрле тин таврăнать, яланах кăшт хĕрĕнкĕ: вăрман складĕнче кулленех мăкриччи тăваççĕ пулас. Кам ĕçлетĕр? Паллах — Проша! Вăл çамрăк çын, тем тумалăх та вăй пур унăн! Ахальтен çакăн пек ырă киле кĕртнĕ-и-мĕн ăна? Райри пек пурăнать вĕт! Тав тума пĕлмелле уншăн! Ĕçлес пулать!

Ĕçленĕ ку. Тÿснĕ. Кăлтăрмач пек çаврăнкаланă кил таврашĕнче. Арçын ĕçне кăна мар, хĕрарăм ĕçне те тунă — урай та çунă, кĕпе те ухнă, яшка валли паранкă та шуратнă... Çапах та хунямăшĕ мăртлатма пуçланă. Асту, юраса çитерĕн ун пек эсремете!

Прохор Петров комсомолец пулнă. Рядовой кăна та мар-ха, бюро членĕ. Тĕрлĕ комиссисене кĕртнĕ тата ăна. Çартан нумай пулмасть таврăннине шута илсе, ДОСААФ организацине ертсе пыма хушнă. Пухусемпе ларусенчен вара ĕç хыççăн самаях кая юлса тав-

ранма тӳр килнӗ. Хунямӑшӗпе хӗрӗ ун пек чухне тӳрех допрос тума тытӑннӑ:

— Ӑҫта пултӑн? Мӗн туса ҫӳрерӗн ҫак таранччен? Тата... кампа? Кала тавай, кампа? Мӗнле йӗпе аркӑ тупрӑн? Килти ҫитмест-и сана? Аякра шырама пуҫларӑн пулать?

Прохор тӗрӗссине каланӑ:

— Комсомол пухӑвӗ пулчӗ. Бюро ларӑвӗ ирттертӗмӗр. Юлташсене тирта пӑшал пеме вӗрентрӗм. Суйланӑ та-ха мана...

— Пӑрахас пулать вӑл ача вӑйӑйисене! — тенӗ хунямӑшӗ, мӑнтӑр чышкипе сӗтеле шаккасах.— Комсомолӗ-пӑшалӗ, пухӑвӗ-ларӑвӗ — ҫӑва патне! Эс ҫемьеллӗ ҫын, санӑн пурнӑҫ ҫинчен шухӑшламалла. Хусах чухне ҫапкаланса ҫӳрени те ҫитет! Йӑлт пӑрахмалла сан! Мӗн усси? Пухура йӑх-яхсемпе лӑпӑртатса ларнипе хырӑму тӑранать-и хӑвӑн? Укҫа тухать-и уншӑн? Итленӗ пултӑр каланине!..

Малтанах Прохор нимех те чӗнмен куна хирӗҫ, ирттеркелесе янӑ вӑл, анчах хунямӑшӗ ҫине-ҫинех ҫавӑн пек янрама тытӑнсан, тӳсеймен вара, лаплаттарса хунӑ:

— Ан ҫыпӑҫӑр ман ҫумма! Пурӗпӗр сирӗн ӑспа пурӑнмастӑп, хама валли ман хамӑннах ӑс ҫитет. Халӑхран, обществӑран уйӑраймастӑр эсир мана. Комсомола пӑрахма мар, кӗҫех партие кӗретӗп акӑ!

Э-эх, вӗресе кайнӑ вара хунямӑшӗ!..

— Эпир сана, мура, этем шутне кӗртрӗмӗр, тӑрантартӑмӑр-тумлантартӑмӑр, нихҫан выртса курман крахмалланӑ простыньсем ҫине выrттартӑмӑр, эпир пулман пулсан, хальччен эсӗ Атӑл хӗрринче, кимӗсем айӗнче пурӑнаттӑн-ха! Выҫса вилеттӗн! Шӑпанана тухса каяттӑн! Ыр куртӑн-куртӑн та халь, сысналанса, хирӗҫ кастарма тытӑнтӑн-и?!

Хӗрне приказ панӑ:

— Ан выrттар ӑна юнашар! Кайса ҫывӑртӑр ав... чӑх витине!

Тыткалама шут тытнӑ ӗнтӗ вӗсем ӑна. Тáн кӗртес, хӑйсене хирӗҫ пӗр сӑмах та чӗнмесӗр итлекен туса ҫитерес, тенӗ. Вӑл ӗҫрен таврӑннӑ тӗле Венери килте пулман — таҫта тухса кайнӑ. Ҫӗрлесӗр те таврӑнман. Таврӑнсан та калаҫман.

Пурӑнкаланӑ-пурӑнкаланӑ та Прохор ҫавӑн пек,

унтан, хăйĕнчен мăшкăлланине ăнланса çитсе, никам çук чух лач! сурнă та тухса кайнă вĕсем патĕнчен общежитие. Хăйĕн салтак аттипе, кивĕ шинелĕпе, кутамккипе кăна. Урăх нимĕн те илмен.

Хунямăшĕпе унăн хĕрĕ хыпăнса ӳкнĕ: ай-уй, ытлашширех вылямарăмăр-и эпир? Таврăнмасан, мĕн тăвас? Кĕтмен çĕртенех тăлăх арăм пулса юлас пулатьиç? Епле-ха капла? Çапах та, тен, таврăнать-и?

Çук, таврăнман Проша. Пĕр кун, ик кун...

Амăшĕпе хĕрĕ ашшĕне тапăннă:

— Шыраса туп та, тавăрса кил шуйттана! Мĕн хăтланать вăл, услап? Арçын пулса, тăн кĕрт ăна лайăхрах!

Ашшĕ ал сулнă кăна:

— Çав кирлĕ сире, арçурисене! Тӳсĕмне пĕтертĕр çынна кăшла-кăшла. Ухмах пулать таврăнсан. Эп хам та таврăнассăм çук...

— Эс те тухса кай, эппин, ун хыççăн! Туп пĕр-пĕр ăшă йăва! Чармастпăр, кирлех пулсан — сирĕн вырăна урăххисем те килĕç!

Пĕр виçĕ талăк çĕмрĕлсе пурăннă вĕсем çавăн пек.

Унтан кĕрӳшне тавăрса килме хунямăшĕ хăй тухса кайнă. Капăртарах тумланса, çӳçне кăтралатса, тутине пĕветсе, ылтăн кăшăллă куçлăх тăхăнса. Пĕр аллине йăлтăр-йăлтăр сумка, теприне авалхи хулăн туналлă сунчăк тытнă. Унпа пуç урлă пĕрре парсан, лайăх лашана вĕлерсе пăрахма пулать. Кайран суда та илсе пынă çав сунчăка — оборона валли çеç мар, наступлени валли те пит лайăх хĕçпăшал-мĕн вăл япала.

Анчах кĕрӳшне шыраса çӳремен мăн кăмăллă хĕрарăм, вăл тӳрех директор патне кĕнĕ. Чакăр куçĕсене сăмса тутрипе шăла-шăла, макăрнă пек туса, жалоба панă:

— Сирĕн рабочи Прохор Петров, комсомол, ман хĕре улталарĕ. Юрататăп, качча илетĕп, тесе, ăна чыссăрлатнă. Вара эпир ăна ирĕксĕрех киле кĕртрĕмĕр. Выçăскерне тăрантартăмăр, çарамасскере тумлантартăмăр, вăл нихçан çисе курман апатсене çитертĕмĕр, тем чухлĕ расхут турăмăр уншăн. Туйĕ кăна сакăрçĕр тенке кайса ларчĕ. Хăй вăл вунă тенкĕ те кăларман, йăлт хамăр тӳсрĕмĕр. Анчах халь вăл, аçа çапманскер, пире тав туса, пире итлесе пурăнас вырăнне, пуçĕпех

йӗркерен тухса кайрӗ, шуйттан! Ҫӗрӗ-ҫӗрӗпе киле таврӑнмасть, таҫта чупать. Урӑххине тупнӑ пулмалла. Халь акӑ тӑватӑ кун киле пыман. Тӑн парӑр эсир вӑл чупкӑна, таврӑнтӑр ман хӗр патне, эсремет пуҫӗ! Хӗрӗ йывӑр ҫын ӗнтӗ, виҫ кун макӑрса выртать... Куратӑр, эп хам та макӑратӑп... Пулӑшӑр тархасшӑн!

Директорӗ хаяр ҫын-мӗн, хӑвӑрт кӑна завком председательне (вӑл хӗрарӑм пулнӑ), Прохорсен цехӗн начальникне, комсомол секретарьне чӗнтернӗ.

— Мӗнле ҫын вӑл сирӗн Прохор Петров? Мӗн хӑтланса пурӑнать?

— Пит лайӑх каччӑ,— тенӗ лешсем,— малта пыракан рабочи, коммунизмла ӗҫ ударникӗ, маттур общественник...

— Курӑнать епле лайӑх каччӑ пулни! — сӗтел ҫине шап! ҫапса илнӗ директор.— Акӑ, хӗрарӑм макӑрать ӑна пула...

— Мӗн тунӑ вара Петров?

— Нимӗнле усал сӑмах та илтмен ун ҫинчен...

— Ҫав тери йӗркеллӗ йӗкӗт-ҫке! — тӗлӗннӗ чӗнтернисем.

— Подлец вӑл! Ҫак хӗрарӑмӑн хӗрне йывӑрлантарса килтен тухса тарнӑ! Чупкӑн! Мораль енчен пӑсӑлса кайнӑ! Епле ударник пултӑр-ха ҫавӑн хыҫҫӑн? А ну, чӗнсе килӗр-ха ӑна хӑйне... ӑс парам ӑна!

— Парӑр-ха, парӑр, хытӑрах парӑр, ӗмӗр асӑнса пурӑнтӑр! — хӗпӗртесе, хавасланса, куҫӗсене ҫутӑлтарса, урисемпе тӑпӑртатса илнӗ Прохор хунямӑшӗ.— Эп хам та паратӑп-ха ӑна...

Чӑнах та панӑ вара. Прохор директор кабинетне пырса кӗнӗ-кӗмен, хӗрарӑм ӑна, ун ҫинелле выҫӑ кашкӑр пек сиксе, аллинчи сунчӑкӗн тимӗр тунипе хӗнеме тапратнӑ.

— А-ак с-сана! А-ак с-сана! М-мерзавцӑ! П-подлеццӑ! Атя киле, атя к-киле!.. — чашкӑрнӑ хӑй.

Иккӗн-виҫҫӗн аран чаркаланӑ урса кайнӑ хӗрарӑма. Сунчӑкне аллинчен туртса илсен те кӗрӳшне иккӗ-виҫҫӗ чавса илме ӗлкӗрнӗ. Унтан директор телефонӗн трубкине илсе пуҫӗнчен ҫапма пикеннӗ.

— Ну, ӑнлантарӑр ӗнтӗ ӑна, киле таврӑнтӑр вӑл!— кӑшкӑрнӑ юлашкинчен, халтан кайнипе диван ҫине ӳксе.

— Ӑнланчӗ пуль ахаль те! — тенӗ ӑна хирӗҫ зав-

ком председателĕ, леш хĕрарăм.— Эпир те пит лайăх ăнлантăмăр!

— Мĕн ăнлантăр?

— Сан пек вĕреçĕленпе этем пурăнма пултарайманнине!

— Вăл манпа мар, ман хĕрпе пурăнать!

— Çавах мар-им? Килĕ санăн. Эс ăна килĕнте те кун кăтартмастăн пуль. Чипер пурăннă çĕртен çын ма тухса тартăр? Çук-çук, памастпăр эпир сана хамăрăн лайăх йĕкĕте!

— А-ахх.. апла-и? — куçĕсене хĕссе, тутине пăркаласа сиксе тăнă Прохор хунямăшĕ.— Епле-ха памастăр пулать? Хăш енчен сирĕн йĕкĕт пулать-ха тата вăл? Сирĕн йĕкĕт мар, ман кĕрӳ вăл! Ман кĕрӳ! — ик аллипе те хăй пилĕкĕнчен тытса, кĕç-вĕç сиксе ларас пек утса пынă вăл завком председателĕ патнелле.— Тен, ырă çыннăм, эс ху пурăнатăн унпа? Тен, сана пула килтен тухса тарнă вăл, э? Илткеленĕ эпир сирĕн пек фабричнăй маткасем çинчен, никама та тиркесе тăмастăр тет эсир — хăть ватти, хăть çамрăкки... Арçынлăхĕ пултăр!

Директор чышкипе сĕтеле çапнă:

— Молча-ать!.. Сан мĕн, гражданка, халех вунпилĕк талăк ларса тухассу килчĕ-и? Тухса кай кунтан, атту халех акт çыратпăр!

— Хăратаймăр! — ăна хирĕç кăшкăрнă йĕркерен тухнă хĕрарăм.— Сире хăвăра ответ тыттаратăп акă, курман-ха эсир мана! Расврат тăвакансене хӳтĕлесе пурăнатăр кунта, хĕрарăм хутне кĕместĕр, чип-чипер çемьене аркатма пулăшатăр! Подлеццăсем эсир пурте, акă мĕн!

Унтан вăл каллех кĕрӳшĕ еннелле сикнĕ:

— Атя киле! Атя киле, теççĕ сана, йытаçи! Аттутăк халех пуçна çапса çуратăп, вилсе вырт çакăнтах!

Варсене тытсах кулнă директор патне пухăннисем çав хĕрарăм çавраçил пек çавăрттарса тухса кайсан.

— Ай-ай, вăйлă хуняма лекнĕ сана, Петров! Хуняма мар ку, вĕресе тăракан сăмавар! Мина! Бомба! Ахаль йышши те мар, атомли!

Çакăн хыççăн Прохор Петровăн пĕр лăпкă кун та пулман...

Жалоба хыççăн жалоба çырнă ун çинчен хунямăшĕ. Таçта та çырнă! Завкома, парткома, комсомола,

прокурора, редакцисене... Мĕн кăна каласа пĕтермен ăна — харам пыр та вăл, вăрă та, чупкăн та, мораль енчен йăлт арканса кайнă çын... Завод директорĕпе завком председателĕ çинчен те таçта та çырнă — вĕсем пӳтсĕр çынсене хӳтĕлесе пурăнаççĕ имĕш... Унтан пирĕн пата, суда заявлени пырса выртрĕ. Заявлени те мар — приключениллĕ повесть. Хĕрĕх икĕ страница. «Граждански иск» панă мар-и! Темшĕн те шырать кĕрӳшĕнчен: туй туса пĕтернĕ сакăрçĕр сакăрвун сакăр тенкĕрен пуçланă та, йăлт çырса кайнă. Хăйсем патĕнче пурăннă вăхăтшăн хваттер укçи — уйăхне çирĕм пилĕкшер тенкĕ, тахçанах çĕтĕлсе пĕтнĕ костюм хакĕ, миçе тенкĕлĕх апат çини, эрнере пĕрре мунчана кайса пĕтернĕ супăнь мĕн чухлĕ тăни, тем те, тем те! Пĕтĕмпе виçĕ пин тенкĕ таран пухăннă! Еплерех чĕлхепе çырнă-ха тата заявленине! «Сысна», «йытă», «подлец» тенисем — чи ачаш сăмахсемччĕ унта. Ытти эпитетсене халăх умĕнче сасăпа вулама та юрамастчĕ!

— Çав ĕçе вара шăп манăн пăхса тухма тиврĕ,— терĕ Панфил Иванч, ассăн сывласа ярса.— Ну, пулчĕ те вĕт тĕнче кулли! Ун пеккине малтан та, кайран та курман... Театрта та курас çук!

— Питĕ интереслĕ-и? Комеди çырма пулать-и? — йăшаланса илчĕ ку таранччен пĕр хускалмасăр итлесе ларнă Ахлут.

— Шутсăр вăйлă комеди пулĕччĕ. Ахаль комеди те мар, трагикомеди! Ахăрчĕ кăна çак Прохор Петров хунями. Арçурирен те арçури! Пĕтерет юратнă кĕрӳшне! Темиçе хутчен те ун патнелле чупса пырса ăна аллинчи сунчăкĕпе çапма тăчĕ... Вăл каланине ĕненсен, вĕсем патĕнче кĕрӳ вырăнĕнче этем мар, вуник мăйракаллă шуйттан пурăннă пекех пулса тухать. Вельзевул! Хăйне майлă свидетельсем те пĕр кĕтӳ илсе пынă — пурне те курнă имĕш лешсем, пĕтĕмпех пĕлеççĕ, пурте пĕр сасăпах Прохора айăплаççĕ. Пĕр карчăкĕ Прохор хула хыçĕнчи садра арăмне хĕненине курнă, тепĕр свидетелĕ вăл картишĕнче хунямăшне тимĕр кĕреçепе хăмсарса хăваланине шăтăк витĕр пăхса тăнă, тепри — вăл урамри канавра ним пĕлми ӳсĕр выртнине курнă... Хытă вĕрентнĕ вĕсене Прохор хунямăшĕ, пĕрре кăна мар репетици тунă пулмалла вĕсемпе. Свидетельсем каланă май, вăл ал çупа-çупа кăшкăрса ярать:

— Тĕрĕс! Çапла пулнă! Çаратрĕ вăл пире, разбой-

ник! Кăнтăр кунĕнчех, куç умĕнчех çаратрĕ! Пирĕн япаласене кая-кая сутрĕ, çав укçапа ĕçсе пырса пире хĕнерĕ, вĕлерсе пĕтерсе пирĕн пурлăха çавăрса илме ĕмĕтленчĕ! — Çавăнтах Прохор еннелле çаврăнса чышкипе юнаса илет: — У-у, намăссăр, харам пыр, çынçиен! Тĕрмере, тĕрмере сан вырăн!..

Ответчик — кĕрӳшĕ — калама пуçласан, хунямăшĕпе унăн свидетелĕсем калани йăлтах суя, юри шухăшласа кăларнă элек пулнине ĕнентерме тытăнсан, хĕрарăм вара пуçĕпех урса кайрĕ. «Суя-ан! Ултала-ан! Юри туна-ан!» тесе çухăрать. Вунă хут та асăрхаттартăм пуль ăна, çаплах чарăнмасть. Юлашкинчен вара «суд ларăвне хупатăп, суда ĕçлеме паманшăн сана çирĕм пилĕк тенкĕ штраф тăватăп» тесен тин шăпăрт пулчĕ. Кăшт тăхтасан пăхрăм та ун çине... чутах ахăрса яраттăм: хăйĕн çăварне вăл сăмса тутрипе пăкăласа лартнă! Хăйне хăй шанман ĕнтĕ вăл — каллех çухăрма тытăнса штраф ĕçлесе илесрен хăранă, шеремет! Нимĕнле фарсра та курас çук ун пеккине!

— Ку çеç мар-ха кулмалли. Судра çак хĕрарăмăн упăшки, Прохорăн хуньстарикки ĕнтĕ, питĕ вăйлă номер туса хучĕ. Свидетель пулнă-çке вăл та. Малтан урахчĕ вăл, кайран, хăйне чĕнессе коридорта кĕтсе ларнă чух, таçтан тем тупса ĕçнĕ — çывăхри магазина чупса кайса килнĕ пулинех! Чĕнсе кĕртрĕмĕр те — çын... кĕсел пек! Куçĕсем кантăк евĕр, пичĕ-куçĕ хĕпхĕрлĕ, хăйне иксӳ ернĕ, ик! ик! тесе кăна тăрать.

— Ну, Кукамаев юлташ, çак ĕç пирки мĕн калама пултаратăн? — ыйтма тытăнтăм çапах та.— Асту, суйма юрамасть...

— Çак шуйттан пирки-и? — аллипе хăйĕн арăмĕ еннелле кăтартрĕ вăл.— Мĕн суймалли пур ун пирки? Вĕреçĕлен, и вçо. Çынçиен! Ман пурнăçа çисе ячĕ, халь кĕрĕве хыпса ярасшăн. Ан ĕненĕр вăл тухатмăша! Ăна хăйне кайса хупмалла... шумашетши дома! Или вакка ямалла! Кĕрӳ лайăх манăн, анчах ку...

Старик каласа пĕтерейменрĕ, арăмĕ сиксе пычĕ те, темтепĕр каласа, унăн юлашки çӳç пĕрчисене тăпăлтарма пикенчĕ. Юрать-ха залра икĕ милиционер ларатчĕç те, çавсем пырса çăлчĕç старике...

— Хĕрĕ, Прохор арăмĕ, мĕн каларĕ судра? — ыйтрĕ Ахлут Панфил Иванча пӳлсех.— Вăл амăшĕ майлă пулчĕ-и?

— Хёрне илсе пыман суда. Чирлӗ, терӗҫ. Тӗрӗссипе, леш хӑй, намӑсран хӑраса, пыман пулмалла. Хальхинче эпир развод туман-ҫке-ха, «гражданский иск» ӗҫне ҫеҫ пӑхса тухнӑ.

— Мӗнпе пӗтрӗ вара сучӗ? Финалӗ мӗнле пулчӗ?

— Финалӗ-и? Питӗ тӗлӗнмелле! Прохор юлашки сӑмахне каласа пӗтерсенех хайхи истица — ну, хунямӑшӗ, эппин — пукан ҫинчен тӑчӗ те ҫӑварӗнчи пӑккине кӑларса ача-ашшӑн калаҫма тытӑнчӗ:

— Проша! Прошенька! — терӗ вӑл, ун патнелле пӗр-икӗ утӑм туса.— Итле мана... Эс пӗлетӗн вӗт-ха, эпӗ шутсӑр ҫемҫе чӗреллӗ хӗрарӑм... Чунтан хӗрхенетӗп сана! Итлерӗм-итлерӗм те сан сӑмахна, ша-алккӑ пулса кайрӗ... Тӑлӑх вӗт эсӗ, пирӗнсӗр пуҫне санӑн никам та ҫук. Тӑлӑха кӳрентерме ҫӗлен чӗриллӗ ҫын пулас пулать, анчах ман чӗре — ангӗл чӗри. Каҫаратӑп эп сана. Йалт каҫаратӑп! Нимӗн те шыраса илместӗп... Атя, заявленине каялла илӗпӗр те иксӗмӗр пӗрле ҫурса пӑрахӑпӑр ӑна. Ҫилпе вӗҫтерсех ярӑпӑр, юрать-и? Проша! Ҫапла тӑвӑпӑр-и? Ну, Проша...

Судри пӗтӗм халӑх тӗлӗннипе хытнӑ пек пулчӗ. Хам та тӗлӗнтӗм, ман заседательсем те кӑн-кан пӑхкаласа илчӗҫ. Мӗн пулчӗ ку вӗреҫӗлене? Мӗнле пит час «перевоспитаться» турӗ? Эп ӑна штрафпа хӑратса илнӗшӗн-и? Е упӑшкин сӑмахӗ хыҫҫӑн?

Театрти пек, самаях пысӑк пауза пулчӗ...

— Анчах эсӗ халех киле, пирӗн пата таврӑн! — терӗ унтан истица питӗ ҫирӗппӗн.— Ним кутӑнланмасӑр! Илтрӗн-и, Проша? Ну? Тепӗр хут калатӑп: таврӑн! Ытти-хытти ҫинчен килте калаҫӑпӑр. Суд таврашӗ кирлӗ мар пире, эп хам та питӗ лайӑх судья! Кирлех пулсан, прокурор та пулма пултаратӑп!

Прохор Петров юпа пек хытса тӑчӗ. Тӑрукках нимӗн те тавҫӑрса илеймерӗ курӑнать вӑл. Чӗнмерӗ.

Каллех пауза пулчӗ. Пурте кӗтрӗҫ: суд та, халӑх та.

— Ну, мӗн тӑмана пек тӑратӑн тата? Ма ним те шарламастӑн, чорт! — урипе тап! тапса кӑшкӑрчӗ хунямӑшӗ.— Чӗлхӳне ҫӑтса ятӑн-и-мӗн, разбойник? Пыратӑн-и киле, пымастӑн-и? Кала!

— Пымастӑп. Нихҫан та пымастӑп. Вӗлерсен те!— терӗ Петров.

— Сӑттана! — ҫухӑрса ячӗ хунямӑшӗ. Унтан пирӗн

еннелле вăрт! çаврăнса хăлаçланма, сунчăкĕпе сулкалама тапратрĕ: — Суд тăвăр часрах! Мĕн ыйтнине йăлт шыраса парăр мана! Тӳлемесен тĕрмене хупмалла тăвăр! Ссылкăна ярăр ăна! Çурçĕре! Шăнса вилтĕр! Виллине шур упасем çисе яччăр! Тата паянах уйăрăр ăна ман хĕртен! Развод, развод! Халех, ним тăхтамасăрах! Чортту-у!..

...Эпир, паллах, нимĕн те шыраса памарăмăр ăна. Анчах разводне турăмăр — тепĕр эрнерен, Петров хăй ыйтнипе.

Панфил Иванч хăй калавне пĕтерчĕ.

— Вăйлă сюжет! Çырма пулать,— терĕ Ахлут.

— Паллах, çырма пулать... талант пулсан,— терĕ Панфил Иванч.

— Таланчĕ тем мар-ха вăл, ăна тупма пулĕ... — ал сулчĕ Ахлут.

Тĕлĕнтерчĕ мана ку сăмах: таланта ăна епле тупма пулать-ха? Тур пани çук пулсан, ăна ни кĕнеке магазинĕнче, ни эрех лавккинче сутмаççĕ! Чылайран тин пĕлтĕм — çак «писатель» хăйĕн «опусĕсене» тара тытса çыртарать-мĕн. Ун çинчен фельетон тухрĕ.



## ЙЫВĂР КУН

Мина Мироновна Энтипова, хулари нумай-нумай кантурсенчен пĕринче машинисткăра ĕçлекен хĕрĕхрен иртнĕ мăтăк хĕрарăм, эрнекун службăран таврăнчĕ те хваттерне кĕнĕ-кĕмен диван çине çӳлтен пăрахнă чул пек ӳкрĕ. Кивĕ диванăн тутăхнă пружинĕсем чăкăртатса, çав тери хурлăхлăн йынăшса илчĕç. Ултă пăт таякан тушкана çĕклесе тăма çăмăлах мар çав!

— Мĕн эсĕ, анне, чирлемерĕн пулĕ-çке? — хăрарах ыйтрĕ сĕтел хушшинче уроксем хатĕрлесе ларакан вунултă çулхи хĕрĕ Нинуç.

— Чирлесси чирлемен те... шутсăр ывăнтăм, хĕрĕм, кунĕпе тислĕк турттарнă лаша та ун пек ывăнмасть пулĕ! — терĕ Энтипова, тимĕрç лаççинчи вĕркĕче пуснă пек сывласа ярса.— Ал-урана хускатма та вăй юлмарĕ, киле те аран-аран çитрĕм... Ффу-у...

— Çав териех ĕç нумай пулчĕ-и вара? — амăшĕ çине хĕрхенерех пăхрĕ Нинуç.— Каллех пĕр лав кирлĕ-кирлĕ мар хут çаптарчĕç-и?

— Хучёсене паян куçпа та курман-ха, турра шёкёр, машинкин пёр клавишё çине те пусман,— ал сулчё амăшё.

— Мён туса ывăнтăн эппин ун пекех?

— Ах, ан та кала, хёрём... Кунёпе чупрăм, кунёпе, вёшле йытăран та кая мар!

— Ма чупрăн, кам чуптарчё? Директор-и? Эс курьер та, рассыльнăй та мар-çке, эс машинистка? Санăн чупса мар, ларса ёçлемелле...

— Пурнăç вăл, ачам, пур чухне те директортан килмест.

— Службӑра çапах та пуçлăх хушнисене тумалла пуль? Вăл — начальник, эсё ăна пăхăнаканни...

— Э-эй... ялан вăл хушнипе пурăнсан... нихçан та пурнăç тăваймастăн! — Диван пружинёсем тепёр хут йынăшса илчёç,— Энтипова халь диван çине хăяккăн çаврăнса выртрё.— Службӑра чухне те хăвăншăн тăрăшма пёлес пулать, хёрём!

— Кала-ха эппин, мён турăн? Çав териех васкамалли ёçсем капланса килчёç-и?

Энтипова выртнă çёртех сётел çинчен пирус илсе тивертрё те, вырăнтан тапранайман çётёк мотоцикл пек тётём мăкăрлантарса, чыхăна-чыхăна каласа кăтартма тытăнчё.

— Службине эпё паян пёр сехет ытла кая юлса çитрём — универмаг тёлёнче кёпе çумалли порошок сутатчёç те, çавăнта черетре тăма тиврё. «Лотос» тенине сайра хутра çеç сутаççё-çке, тёл пулнă чух илесех терём... Эп пынă чух пурте вырăнтаччё ёнтё, кам хăçан килни-кайнине çырса пыракан журнал çине ал пуснă, никам та ман пек кая юлман. Ёç дисциплинине тытса пыма пёлеççё пирён сотрудниксем! Хама тем каласран, кая юлнăшăн сăмах тивесрен, эп тӳрех айăпне автобуссем çине ятăм: остановкăра хёрёх пилёк минут кётмелле пулчё, хăçан йёркеллё ёçлеме тытăнё пирён хулари транспорт?! Пурте ёненчёç те мана, хăйсем те час-часах çавăн пек нумайшар кётни çинчен калама тытăнчёç. Пёри çав автобуссене пула туя вăхăтра çитеймен, тепри пумилккерен юлнă, кайран ăна çавăншăн «штрафнойсем» парса пёр наччасра ураран ӳкернё... Калаçнă майăнах, эпё ёçе хатёрлентём — машинка чехолне илтём, саспаллисене щеткăпа тасатрăм, копирка, таса хут кăларса хутăм.

Стена ҫинчи сехет вунпӗр ҫапрӗ.

— Камăн мӗн шаккамалли пур? — тесе ыйтрăм хайхискер.— Тархасшăн, ман агрегат на ходу!

Нихăшӗ те чӗнмерӗҫ. Чылайран тин плановик сас пачӗ:

— Кан пăртак, Мина Мироновна, ним те хатӗрлеймерӗмӗр-ха сан валли. Ав, журналсем илсе килчӗҫ паян, тытса вула, хăвăн культурăллă шайна хăпарт май килнӗ чух...

Эпӗ ун еннелле пăхрăм — вăл хăй умне ҫӗнӗ «Огонек» сарса хунă та ҫамкине картлантарса, тути-ҫăварне пăркаласах кроссворд тупсăмӗсене шырать иккен. Кулас килсех кайрӗ, тӳсеймерӗм, калаpăм:

— Эсӗ, Пал Степанч, хăвăн культуруна хăпартма тытăннă пулас?

— А какшă,— терӗ вăл мана хирӗҫ самаях мăнкăмăллăн,— кроссворд шутлани — этем майсăр усăллă япала, ҫыннăн ерудицине сарать!

— Мӗнле ерундицине тата? Ерунда сăмахран пулать-и ку сăмах? — калаҫăва тăрук хутшăнчӗ Шакайкин счетовод.

— Ерундици мар, ерудици, ырă ҫыннăм! Этем нумай пӗлни! — ҫирӗппӗн ăнлантарчӗ плановик.— Тавракурăм сарлака пулни!

— Ерудици те мар, Пал Степанч, э-ру-ди-ци!— пуҫне йăпăрт ҫӗклесе тӳрлетрӗ ăна главбух, унччен тăрăшсах футбол чемпионачӗн таблицине туса ларнăскер.— Сăмахсене тӗрӗсрех калама вӗренес пулать!

— Эп халь те тӗрӗс калатăп, эсӗ ху яланах йăнăшатăн, хисеплӗ Нихват Ильич! — терӗ ăна хирӗҫ плановик, хăйне тиркенине хуть те хăҫан та тӳсме пултарайманскер.

— Тавлашатпăр-и? — сиксе тăчӗ главбух.

— Тавлашатпăр! — пуҫне ухса илчӗ плановик.

— Мӗн чухлӗ лартатăн?

— Хуть те мӗн чухлӗ пултăр! Пурӗпӗр санран тухать!

— Санран хăвăнтан пулсан?

— Манран пулмасть!

— Ну, кала эппин ставкине! Мӗн чухлӗ?

Вӗсене Шакайкин пулăшрӗ:

— Ставки паллă ӗнтӗ — ҫур литр! Кам йăнăшнă—

çавăнтан... Кăнтăрлахи апат умĕн виççĕмĕре как рас пулать...

— Сахал! Килĕшместĕп! — ал сулчĕ главбух.— Мĕн вăл виççĕне çур литр? Ял кулли! Тутана йĕпетмелĕх кăна-иç?

— Четвĕртех мар ĕнтĕ, ытлаши ярсан, хĕрарăмсен мунчине лекĕпĕр тата,— асăрхаттарнă пек турĕ Шакайкин.

— Эс мĕн, арăмунтан хăратăн-и? Арăму тип мунча кĕртесрен-и?

— Çук, вытрезвитель хĕрарăмсен мунчипе юнашар, ара.

— Ун çинчен кайран калаçăпăр. Халь ставки пирки...

Çав самантрах телефон питĕ хытă чăнкăртатрĕ. Главбух трубкăна ярса тытрĕ.

— Кам кирлĕ? Мĕн пирки? — кăшкăрса ыйтрĕ вăл. Кăшт тăхтасан тата хытăрах кăшкăрчĕ: — Кун пирки эсир кăнтăрла иртсен е ыран ирпе шăнкăравлăр, халь ерçместпĕр, пирĕн кунта васкавлă канашлу пуçланчĕ, май килмест!

Главбух трубкăна чанк! пăрахрĕ, анчах телефон татах янраса илчĕ. Главбух каллех кăшкăрчĕ:

— Каларăм вĕт сире — ыран, ыран шăнкăравлăр, лару пырать пирĕн, заседани! Çук, хăçан пĕтессине пĕлместĕп! Тек ан чăрмантарнă пултăр, ăнлантăн-и!

Вăл çавăн пек тарăхсах çухăрашнă вăхăтра директор приемнăйĕнчен Люся-секретарша, леш ара, ялан сăрланса, пит капăр тумланса çӳреме тăрăшаканни, вобла пек хытканни, тухса ман пата пычĕ те айăкран кăт! тĕкрĕ:

— Мина, итле-ха...

— Мĕн?

— Çӳлти универмага тавар нумай кăлараççĕ тет паян. Заграничнăй япаласем, тет. Кайса пăхмастпăр-и?

— Ĕç вăхăтĕнче епле-ха... — иккĕлентĕм эпĕ.

— Сăлтавне туп! Кала мĕн те пулин. Манăн хуть причин пур — почтăна заказнойсем яма каймалла...

— Эппин, эпĕ машинкă валли лентă пĕтнĕ, тетĕп... — тӳрех ăс çитрĕ манăн.— Юрать пуль çапла каласан?

— Юрамасăр! Пит аван!

Арçынсем çав хушăра тавлашу «ставки» пирки ка-

лаçса таталчĕç — литр! Унтан таçтан мурĕнчен пĕр çĕтĕк словарь туртса кăларса «эрудици» сăмаха шырама тытăнчĕç. Шутсăр васкаççĕ — чăлт, чăлт, чăлт! уçаççĕ кĕнеке страницисене.

Эпир вĕсен тавлашăвĕ мĕнле пĕтессе кĕтсе тăмарăмăр. Главбуха хамăрăн çав-çав ĕçсемпе кайса килмелли çинчен каларăмăр та, вăл пирĕн çине пăхмасăрах ал сулчĕ:

— Вĕçтерĕр!

Пире çав кăна кирлĕччĕ. Чăн та, тухса вĕçрĕмĕр вара. Нимĕнле почтăна та кĕрсе тăмарăмăр, тӳрех универмага ярăнтартăмăр. Чыла-ай çӳрерĕмĕр унта. Люся тени вăл çавăн пек: укçи çук пулсан та кашни хитререх япала умĕнче чарăнса тăрать, ăна тыткаласа пăхать, хакне ыйтса пĕлет. Тата пур продавщицăсене те паллать иккен — Маня та Таня тет кăна вĕсене, ал парать, калаçса-кĕçенсе илет.

— Хăçан паллашнă вара эсĕ вĕсемпе пуринпе те? Тата мĕн тума кирлĕ сана кашнинпех пакăлтатни? — ыйтрăм çакăнтан хамăр урама тухса тăрсан.

— Э-эх, Мина Мироновна, чухлаймастăн иккен эсĕ нимĕн те! — ассăн сывласа ячĕ вăл мана хĕрхеннĕ пек.—Манашкал модă хушнă пек çӳреме юратакан хĕрарăмшăн ку чухне продавщицăсемпе туслă пурăннине ним те çитмест, чи кирли, чи хакли вăл! Акă, кур-ха, манăн пĕтĕм çипуç заграничнăй: калпакĕ венгерски, жакет — польски, атă французски, аялти кĕпе югославски, кăкăр çакки пулса — вăл та испански вĕт! Туп-ха вĕсене!

— Сăмсу кăна чувашски, эппин, лапчăк! — кулса ятăм эпĕ.

— Ăна туянма çук çав, Калайкасси сăмсипех ĕмĕр ĕмĕрлес пулать ĕнтĕ,— каллех ассăн сывласа ячĕ Люся.— Эп вăл пур япаласене ăçта туяннă тетĕн? Тĕрлĕ Одессă-Ригăсене кайса çӳремен, йăлтах çакăнти продавщицăсем тупса панă мана! Эс пĕлместĕн те пуль-ха, анчах сана вăрттăн калама пултаратăп: лайăх япаласем килсен, вĕсене нихçан та прилавок çине кăлармаççĕ — хăйсем хушшинче валеçеççĕ те тусĕсем валли хăвараççĕ. Вăл шутра — ман валли те...

Эпĕ самаях тĕлĕнсе ыйтрăм:

— Мĕншĕн ун пекех хисеплеççĕ-ха вĕсем сана?

— Тыттаркалатăп хăш чух: пĕрине шоколад, теп-

рине пĕр коробка канфет. Вĕсен менелникĕсене те пуш алăпа каймастăп...

— Ун пек кучченеçсем пама укçа нумай кирлĕ-çке?

— Укçи пур-ха манăн... Хăвах пĕлетĕн — ик упăшкаран алимент илсе тăратăп! — кулса ячĕ Люся. Унтан мана хулран ярса тытрĕ: — Атя, станци патĕнчи «Экспресс» магазина çитсе килетпĕр!

— Инçе унта, тата ĕçе те каяс пулать, эпир магазинсем тăрăх йăрккаса çӳренине пĕлсен, директор пире... лектерет! — килĕшмерĕм эпĕ унпа. Анчах вăл ал сулчĕ кăна:

— Çук директор, командировкăра! Тĕрĕссипе, Елчĕке туя кайрĕ-ха вăл, пиччĕшĕ хĕр парать, тет, анчах та пурĕпĕр командировочнăй удостоверени туса кайрĕ хăй. Туйра та расхут тухать-çке, хакне кăларас пулать епле те пулин!

— Ăçтан пĕлетĕн эс куна?

— Фи! Эп те пĕлмесен тата! — йĕрĕннĕ пек туса илчĕ вăл.— Кун каçа директор пӳлĕмĕнче миçе хут пулатăп? Пурне те куратăп, пурне те илтетĕп...

— Хăш чух ун пӳлĕмĕнче питĕрĕнсе те ларатăр, çапла-и?

— Сайра хутра пулкалать... Уйрăмах секретлă хутсем çапнă чух...

— Секретсене пытарма пĕлес пулать çав,— йăл култăм эпĕ.

Люся хăй те хихиклесе илчĕ те мана хулран туртрĕ.

— Кайрăмăр тавай, кайрăмăр, ав, троллейбус килет!

«Экспрессра» та чылай çӳрерĕмĕр эпир. Люсьăн кунта та паллань продавщицăсем туллиех-мĕн. Нумайăшĕпе калаçса, çине тăрсах тĕпчерĕ вăл: юлашки кунсенче мĕн илсе килнĕ, çитес эрнере мĕн кĕтетĕр... Хăй хальхинче те нимĕн те илмерĕ, «вăл-ку пулсан» шăнкăравлама хушрĕ çеç. Унтан тухсан вăйпах агрегат завочĕ патĕнчи «Илеме» илсе кайрĕ мана. Каллех çавăн пек: пĕринпе пакăлтатать, теприпе...

— Ну, çитĕ кун чухлĕ çӳренипе, атя ĕçе! — терĕм «Илемрен» тухсан, пăшăрханма пуçласа.

— Мĕн тума-а?! — тĕлĕнсех кайрĕ Люся.— Ара, халь кăнтăрлахи апат вăхăчĕ-иç? Саккунлă перерыв!— вăл аллинчи ылтăн сехечĕ çине пăхса илчĕ. Сехечĕ

пы-ысăк, арçынсем çыхса çӳрекенни, чĕнĕ те аллаппи сарлакăш.— Пирĕн те çимелле пуль? Атя, çавăнта çĕнĕ кафе уçнă! Çитсе тĕрĕслер, мĕнлерех пĕçереççĕ, еплерех çитереççĕ унта...

Кайрăмăр, «тĕрĕслерĕмĕр», хырăмсене пит лайăх тултартăмăр. Анчах каферен тухиччен малтан Люся сасартăк «жалобăсемпе сĕнӳсен» кĕнекине пама ыйтрĕ. Куна илтсен, ун патне виççĕн-тăваттăн чупса пычĕç. Пурте хыпăнса ӳкнĕ:

— Мĕншĕн кӳрентерес тетĕр пире?

— Мĕн килĕшмерĕ? Хăш енчен юраймарăмăр?

Поварĕ, хăранипе, тытăнчăклă калаçма тапратрĕ:

— Апачĕ т-тутлах п-пулмарĕ п-пулсан, п-пĕрелĕхе к-каçарăрсам! Х-хальччен п-пĕр ж...жж...жалоба та пулманччĕ. Ч-ч-чуна парса ĕçлетпĕр, т-тупата туршăн!

— Тутлă пулчĕ çав апачĕ, çавăнпа çыратăп! Тав тăвас тетĕп! — ик аллине хире-хирĕç çапса илчĕ те Люся, шанкă пек урисене вашт! явса хучĕ.— Илсе килĕр часрах кĕнекине!

Э-эх, хĕпĕртесе кайрĕç каферисем! Люся умĕнче ташлама та, ăна хуть те ăçтан чуптума та хатĕр çав!

Люся çамкине пĕркелентерсе шухăшлакаласа ларчĕ те шурă хут кĕнеки çине çавракка та шултра почеркпа çырса хучĕ:

Хырăмăрсем хыт выççассăн
Çак кафене кĕрĕр!
Тутлă апат çитернĕшĕн
Повăра тав тăвăр!

Тĕлĕнсе хытсах кайрăм: сăвăлла çырчĕ, мур пуçĕ! Унтан тата «мухтав ку кафене!» тесе хушса хучĕ те ал пусрĕ: «Люся Линарская, республикăн тава тивĕçлĕ артистки».

Пĕтрĕ пуç! Кĕтмен-туман çĕртен артистка та пулса тăчĕ! Çитменнине — ахаль артистка та мар, тава тивĕçли вĕт!

— Мĕн хăтланатăн эсĕ, ма ун пек ал пусрăн? — ыйтрăм урамра.

— Авторитета хăпартма! — терĕ Люся.— Куншăн вĕсем мана ӳлĕмрен патша майрине пăхнă пек пăхаççĕ!

— Анчах эсĕ тава тивĕçлĕ артистка пулманнине пĕлсен тата? Çурăмран аяларахран тапса кăларса ямĕç-и?

— Ăçтан пĕлччĕр вĕсем ăна? Хушаматăм янравлă, сăнран-питрен эпĕ театрти хуть те хăш артисткăран та ирттеретĕп, тава тивĕçлисен шучĕ те çук халь...

— Ну, пултаратăн та иккен! Ăслă-ă... — пуçа пăркаласа илтĕм кăна эпĕ.

— Виççĕ качча кайса килнĕ хыççăн та ухмах пулсан тата! — кулса ячĕ вăл.— Пĕр упăшки манăн кандидат наук пулнă, тепри писатель, виççĕмĕшĕ артист. Вĕренме май килнĕ!

Утрăмăр. Гагарин урамĕпе пыратпăр. Вăхăт — виççĕмĕш сехет.

— Атя часрах,— васкатрăм Люсьăна,— çухатрĕç пуль пире ĕçре...

— Ан хыпалан! — ал сулчĕ Люся.— Ĕлкĕрĕн-ха главбух мăкăрлантаракан махорка тĕтĕмне шăршласа ларма! Май килнĕ чух парикмахерскине кĕрсе тухас пулать-ха. Прическа тутарăпăр. Паян эпĕ театра каятăп пуль-ха, пĕр ватсупнăпа калаçса татăлнăччĕ. Санăн та çӳçӳ-пуçу ним латти те çук, эс те ытла карчăках мар вĕт, тирпейлĕ çӳрес пулать. Атя, кутăнлашса ан тăр!

Парăнтарчĕ мана. Кĕрсе лартăмăр парикмахерскине, çӳççене кăтралатрăмăр. Виç сехет иртрĕ. Унтан гардероб умне тумланма пырсаттăмăр кăна — кĕтмен-туман çĕртен хăрушă япала пулчĕ-тăчĕ. Пире хирĕç урамран тин çеç кĕнĕ хĕрарăм Люся çине витĕр шăтарас пек пăхрĕ те тăрук çухăрса ячĕ:

— Аха-а! Тинех тытрăм-и сана-а! Лекрĕн-и, йытами!..

Çавăнтах Люсьăна сулахай аллинчен ярса тытрĕ.

— Тавай сехете! Салт! Ман старик сехечĕ ку! Салт, теççĕ!

— Эс ухмаха ернĕ пуль, гражданка! — терĕ ăна хирĕç Люся, тăруках помидор пек хĕрелсе кайса.— Псих пуль! Сумашедши!

— Эп псих-и? Эп шумашетши-и? Эп сана! Эп сана... — чалт! çутăлтарса ячĕ çав хĕрарăм Люсьăна.— Ют арçынсене хăвăн патăнта çĕр каçаратăн та, ирхине сехечĕсене вăрласа юлатăн пулать? Эп кăтартăп сана! Таккуй вĕрентĕп сехетсем вăрлама! Манăн ку сехет, паспорчĕ те пур! Вăрă, вăрă! — чалт, чалт, чалт! çиçеçиçе ячĕ хĕрарăм хайхи «тава тивĕçлĕ артисткăна».— Тавай сехете, кĕççе пит!..

— Краву-ул! Пулăшă-ăр!.. — çухăрма тытăнчĕ Люся.

Эп чарма пикентĕм — шалккă-çке юлташа! — усси пулмарĕ, урса кайнă хĕрарăм мана пĕррех аяккалла ывтăнтарса ячĕ те Люсьăна тин çеç кăтралатнă çӳçĕнчен ик аллипе харăс ярса тытса лăскама тапратрĕ. Хăй темтепĕр, темтепĕр калать çав!..

— Шулĕк! Крапиттĕл! Эп сана халех милицине... тĕрмене!

Парикмахерсем пурте ĕçлеме пăрахсах чупса пычĕç, сухалĕсене кăпăклантарнă клиентсем те сике-сике тăчĕç. Çухăраççĕ:

— Чарăр хĕнеме, вĕлерет вĕт! Пуçран çапса сотрясени мозга туса ярать! Астăвăр, пурне те суда сĕтĕреççĕ!

— Милици чĕнĕр! Часра-ах!..

Кĕç-вĕç, чăнах та, икĕ çамрăк милици пырса кĕчĕ— тахăшĕ систерме ĕлкĕрнĕ курăнать. Калаçса та тăмарĕç — пире хăвăрт кăна отделение илсе кайрĕç. Люся пăру макăрнă пек ӳлет, леш хĕрарăм çаплах çĕтĕлет — тем те калать, ним чаракĕ те çук! Урампа пырансем чарăна-чарăна пăхаççĕ пирĕн çине. Ниçта кайса кĕме çук намăс! Ма тухрăм-ши кантуртан, ма çыхлантăм ку шуйттан Люсьипе, тетĕп хама хам тарăхса.

Çитрĕмĕр милицие. Протокол çырчĕç. Ал пустарчĕç. Унтан «ыран татах чĕнетпĕр», терĕç те кăларса ячĕç. Эп часрах ĕçе чупрăм. Люся нăшăкла-нăшăкла килне кайрĕ.

— Кала унта ман пирки, чĕрипе аптрарĕ, те,— хушса ячĕ мана.

Пилĕк сехет çине кайнăччĕ ĕнтĕ эп кантура таврăннă чух.

— Вăрçаççех мана кунĕпе сĕтĕрĕнсе çӳренĕшĕн...— хăраса шухăшласа пытăм çул çинче.— Прогул вĕт ку, урăх ним те мар!

Анчах никам та пĕр сăмах та шарламарĕ. Ман çине пăхакан та пулмарĕ. Главбухпа плановик шашкăлла выляççĕ. Счетовод вĕсем çумĕнче канашсем паркаласа тăрать.

— Çи, çи, Нихват Ильич! Дамкăна тух!

Эп хамăн сĕтел умне ларса машинкăна пушăллах тăкăртаттаркаласа илтĕм те ыйтрăм:

— Ну, мӗнпе пӗтрӗ сирӗн ирхи спор? Кам ҫӗнтерчӗ?

— Паллах, эп ҫӗнтертӗм, кам пултăр тата! — терӗ главбух.— Пал Степанчăн ерундици кăна пулса тухрӗ.

— Литр илет, эппин?

— Паҫăрах илчӗ! Юхса та тухрӗ ӗнтӗ вăл...

— Ан мухтан, уншăн эсӗ халь илетӗн! Акă, сахвута кӗртсе те лартăн вӗт, шапаш! — терӗ ҫав самантрах плановик.— Чуп тавай литр патне!

— Пултараймастăп,— пуҫне пăркаласа илчӗ главбух.— Ак, Шакайкин кайтăр, вăл ҫамрăк-ха, швежи!

— Швежиех мар ҫав паян, манăн та пуҫ ҫаврăнать,— терӗ лешӗ.— Тен, Мина Мироновна пулăшӗ пире, эрне хушши ырми-канми ӗҫленӗ арҫынсене, э? Ырă ҫын пулса...

Эп хирӗҫсе тăмарăм. Хамăн айăпа та каҫарттармалла-ҫке, кунӗпе ӗҫре пулман. Укҫа пачӗҫ те, тухса чупрăм. Эрехӗ час тупăнмарӗ тата, виҫ-тăват ҫӗре ҫитрӗм эсрел шӗвекӗшӗн, урaран ура иртми пулчӗ. Пырса патăм та вара — вӗсем тӳрех ыр курма тытăнчӗҫ. Эп килелле лăпсăртатрăм. Ҫавăн пек пулчӗ паян, хӗрӗм...

— Чăнах та йывăр кун пулнă санăн, аннеҫӗм,— терӗ Нинуҫ, Мина Мироновна каласа пӗтерсен.— Хам пулсан, паянхи куншăн сирӗнтен пӗрине те ӗҫ укҫи памăттăм. Ӗҫри ханттарсем эсир, акă мӗн!




## ЧĂНАХ УССИ ПУР-МĔН...

— Эс мĕн, Василь Васильч, йытă-кушак таврашне тӳсме пултараймастăп, ун пек чĕрчунсене хам виличчен те киле кĕртместĕп, тесе тупа тăваттăн мар-и? Хăвăн сăмахна тытмарăн пулать? — терĕм хамăн тахçанхи юлташа, ăна хулари пĕр паркра курсан.

Вăл унта пăру пысăкăш, кашкăр тĕслĕ йытта, леш овчарка тенине, сăнчăр вĕççĕн çавăтса уçăлтарса çӳретчĕ.

— Ахалех тупа тунă эп ун чухне, йăнăш пулнă вăл,— терĕ Василь Васильч, ман çумма сак çине ларса.

— Кăмăлу улшăнчĕ, эппин?

— Çапла, тусăм, улшăнчĕ. Ĕлĕкрех эпĕ йытăсене чăнах та кураймастăмччĕ, йытă çавăтса çӳрекенсене те шутсăр тиркеттĕм, анчах халь ĕнтĕ...

— Йытăсене юратакан пултăн-и?

— Тĕрĕс. Юратакан пултăм.

— Тĕлĕнмелле!

— Ытлашши тĕлĕнмеллиех те çук, тусăм...

— Çапах та, епле майпа пулса тухрĕ-ха ку санăн? Мĕн пирки юратрăн ку кашкăр раттине? Мĕнле сăлтав пулчĕ? — çине тăрсах ыйтма тытăнтăм Василь Васильчран.— Джек Лондон, Тургенев, Куприн тата ыттисен кĕнекисене вуланипе мар-и? Вĕсем йытăсем çинчен пит хитре çырнă... Е «Ко мне, Мухтар!» ятлă кинокартинăна курнă хыççăн-и?

— Литературăпа искусство айăплă мар кунта,— терĕ Василь Васильч, сак çине хăйĕнпе юнашар ларнă килти кашкăрне ачашлакаласа.— Пачах урăххи...

— Мĕн тата?

— Пурнăç. Кулленхи пурнăçри фактсем.

— Мĕн, вăл санăн хăрушă преступнике тытрĕ-и, пушар вăхăтĕнче вут-çулăм ăшĕнчен такамăн ачине сăпкаран çĕклесе тухрĕ и? Тахçан авал вуланăччĕ эпĕ çавăн пек историсем çинчен...

— Ытла ун пеккиех пулман, çапах та кăштах майĕ пур,— кулса илчĕ ман тус.— Темиçе хут та вырăссем «собака — друг человека!» тенине тӳрре кăларчĕ вăл. Çапла-и, Пулька?

Хуçи мĕн çинчен ыйтнине ăнланнă пекех, йытă ăна хирĕç икĕ хутчен «хав! хав!» турĕ.

— Куртăн-и? Тĕрĕс, тет...

— Чăнах та ăслă пулмалла ку санăн!— мухтамасăр тӳсеймерĕм эпĕ.

— Ăсĕ пур-ха унăн, пур,— йытта каллех ĕнсинчен шăлкаласа илчĕ Василь Васильч,— хăй ăсне тепĕр çынна кивçен пама та пултарать!

— Ăçта туянтăн вара кун пек ырлăха?

— Туянасси-мĕнĕ... Пĕлтĕр хĕлле ывăл ача, шкулта вĕренекенни, пиншакăн шалти кĕсйине чиксе илсе пычĕ. Чышкă пысăкăш кăначчĕ, куçĕсем те уçăлса çитейменччĕ. Ывăлăн пĕр юлташĕ ахалех панă — лешсен овчарки харăсах тăхăр çура çурланă тет те... Эп хайхи, йытăсене курайманскер, вăрçса тăкрăм ачана, кайса пар каялла, атту-тăк халех çырмана кăларса вăратăп, терĕм. Арăм та кăшкăрма тапратрĕ: «Сире хăвăра пăхса та тăн тухать манăн, халь тата йытă хыççăн тасаттарса пурăнтарасшăн-и эсир мана?!» Ывăлĕ ĕнтĕ йыт çурине каялла кайса пама та хатĕрччĕ, анчах çав вăхăтра ман кĕçĕн хĕрачи, улттăри шĕпĕнĕ, çав кăшт çеç хускалакан кăвак муклашкана çупăрласа илчĕ те, хăй-

не çараллах вĕлтрен çине лартнă пек çухăрма тапратрĕ: «Пама-асп!!! Памасп ку йыт çурине, мана выляма кирлĕ вăл, эп ăна хам пăхса ӳстереп, чăпăл та кĕртеп!..»

Мĕн тăвас тетĕн айван ачана? Ăнран тухса каймалла кăшкăрать. Эп ал султăм та аяккалла пăрăнса утрăм, арăм та шăпăртах пулчĕ. Пурăнса кайрĕ вара çав овчарка çури. Ачасем унран уйрăлма та пĕлмерĕç — Пулька та Пулька, теççĕ кăна, тем те çитереççĕ, тем те хыптараççĕ. Темиçе хут та асăрхарăм: пĕчĕк хĕрачи амăшĕнчен мороженăй валли вак укçа ыйтса илет те, мороженăйне илсе килсен ăна хăй çимест, ăçта та пулин пытанса ларса йыт çурине çуллаттарать. «Эс ма ун пек хăтланатăн, ухмах ача?» — терĕм те пĕррехинче, вăл мана хирĕç: «Сирĕн ĕç çук кунта, эп Пулькăна хам тӳпене çитеретĕп, сирĕнне мар! Ман Пулькăран часрах пы-ысăк йытă тăвас килет!» — тесе хучĕ кăна...

Ӳсессе питĕ вăйлă ӳсрĕ вара вăл, кунсерен мар — сехетсерен пысăкланса пычĕ, темелле. Пĕр виç уйăхранах сурăх путекки пысăкăш пулчĕ, çур çултан — пăруран та кая мар. Сасси — духовой оркестри мăн труба сасси пек пулса кайрĕ. Иртен-çӳренсене пĕрре «хав!» тесенех лешсем аяккалла тапса сикеççĕ...

— Çапах та, мĕн усси пулнă-ха сире ăна усранинчен? — ыйтрăм Василь Васильчран.— Ну, калăпăр, тепĕр йытăсем магазинсене, окладсене сыхлаççĕ — ку патшалăхшăн усăллă, милицири йытăсем йĕр-йĕрлесе вăрă-хурахсене тытаççĕ, пограничниксен йыттисем — тĕрлĕ диверсант-шăпийонсене çулса илеççĕ... Сан йытту мĕн тăвать? Харам пыр кăна вĕт вăл, çĕр процентлă тунеядцă! Эсĕ ху мĕнле шутлатăн?

— Эпĕ, тусăм, кăшт урăхларах шутлатăп,— терĕ Василь Васильч.— Харам пыр та мар вăл, тунеядцă та мар.

— Ну, кала, эппин, мĕн усси унтан, мĕн пархатарĕ?

— Пархатарĕ-и? Пур пархатарĕ.

— Сăмахран?

— Сăмахран, ӳсĕрсене тӳсме пултараймасть. Алкоголизмпа пит вăйлă кĕрешет...

— Мĕнле майпа?

— Туллать пьянчуксене, аллисенчи кĕленчисене туртса илсе çĕмĕрет. Ĕçме памасть.

— Эс, тăванăм, суясси суй та, виçине пĕл пĕртак...
— Пĕртте суймастăп!
— Ăçта, мĕнле тăвать вара вăл ку хисеплĕ ĕçе?
Василь Васильч ман çине пăхса илчĕ.
— Хамăр çуртрах... Итле акă эсĕ:эпир пурăнакан çуртра икĕ магазин. Иккĕшĕнче те эрех навалом. Пур кĕленчисене те уçса юхтарас-тăк, тем пысăкăш кӳлĕ тума пулать. Иртен пуçласа каçчен тĕрмешет унта ӳсĕр халăх. Пуринчен ытларах «на троих» тăваççĕ. Чаракан çук та ара. Илсе тухаççĕ те... ну, ытла ӳсĕрех маррисем урамрах ĕçме кăшт именеççĕ пулас. Çынсем кураççĕ-çке. Арăмĕсене е месткома пĕлтерме пултараççĕ. Вара çаксем пирĕн çурт подъезчĕсене кĕре-кĕре хыпаççĕ. Çавăнтах çӳплеççĕ, вараласçĕ, йĕпетсе хăваракан сыснасем те пур вĕсем хушшинче. Хĕререх парсан палкама, шавлама тапратаççĕ, сăмахсене суйласа тăмаççĕ, чĕлхе вĕçне мĕн пынă — çавна персе яраççĕ. Хĕрарăмсем хăлхисене хупласа иртеççĕ вĕсем тĕлĕпе, ма тесессĕн, вĕсем мĕнлерех калаçнине илтсен, намăс пулнипе, слон та хĕрелсе каймалла. Ах, тур, йăлăхтарса çитерчĕç! Пĕррехинче, çумăр шăпăртатса çунă чух, пирĕн подъезда çавăн пеккисем çиччĕн-саккăрăн кĕпĕрленсе кĕнĕччĕ. Хăтăль-хатăль калаçнине илтсе юриех тухса иккĕмĕш хутран аялалла пăхрăм. Пурте йăйăр пек тĕреклĕскерсем. Ахаль каланине итлес çук вĕсем, хытăрах каласан — вĕсенчен хăшĕ те пулин мана пĕрре çапсах отбивной катлет туса хума пултарать. Çыхланиччен — çыхланманни... Куратăп — батарея çине тăвать кĕленче (икĕ литр!) кăларса лартнă. Пĕрисем селедка çурхавне сĕвеççĕ, теприсемваскасах сухан шуратаççĕ—хатĕрленеççĕ ĕнтĕ. Çӳп-çапне çавăнтах пăрахса таптаççĕ... Мĕн тăвас кусене, мĕнле хӳтерсе ярас? Нумай шутласа тăмасăрах, йытта чĕнсе кăлартăм та, аялалла тĕллесе команда патăм:
— Пулька, фас! Фас, Пулька!
Вăскăртрăм урăхла каласан. Эх, ыткăнчĕ ман йытă! Хăрр-хамм! хăрр-хамм! Эп çӳлтен вăрттăн пăхса тăратăп... Самантрах аялти площадкăна çитрĕ те ман кашкăр, чăн малтан çынсем çине мар, батарея çинче ларакан кĕленчесем çине сикрĕ. Чăнкăр-чанкăр! чăнкăр чанкăр! турĕç перцовкăсем.
— А-а, шуйттан йытти!
— Пĕтерчĕ!

— Камăн çĕçĕ пур? Чиксе вĕлерес ăна! — кăшкăрчĕç пьянчуксем.

Анчах асту, ман Пулька хăйне чикессе кĕтсе тăрать пуль! Пĕрин кĕпине çурса антарчĕ вăл, теприн шăлаварне латăртаттарчĕ, унтан тахăшне хăлхинчен ярса илчĕ... Пăрçа пек саланчĕç çур литр паттăрĕсем! Урамах хăваласа кăларса ячĕ вĕсене Пулька. Каялла пăха-пăха тараççĕ лешсем. Пĕр-иккĕшĕ шуçса ӳксе тăсăлса выртрĕç — каларăм-çке-ха, çумăр çăватчĕ ун чух. Кулăш! Ытлашши ан пултăр тесе, хам та урама тухрăм. Пулька... 

Пулька хăйсене хăвалама пăрахсан, хайхи пьянчуксем чарăнса тăчĕç те тепĕр хут шавлама тапратрĕç:

— Камăн йытти пулчĕ ку? Хуçине тупас! Илсе патăр пире халех икĕ литр перцовка! Ахаль килĕшмесен, акт çырса суда парас!..

Пĕлместĕп, ĕç темпе пĕтетчĕ, анчах шăп çав вăхăтра магазинран икĕ милиционер тухрĕç те шавлакансем çине питĕ хытă тинкерсе пăхрĕç. Лешсем çакна асăрхарĕç пулас та, самантранах шăпланса анаталла уттарчĕç, мĕскĕнсем.

Çакăн пекки тата пĕр-икĕ хут пулчĕ. Унтан вара «на троих» тума юратакансем пирĕн çурт подъезчĕсене мар, картишне те кĕме пăрахрĕç — Пулькăран хăрарĕç. Сисет те ку (эрех шăршине çухрăмранах туять пулас, хăямат!), çийĕнчех хӳтерсе кăларса ярать, хăш чух, çула май, кăшт-кашт «чуптукаласа» та илет...

— Ну, тепринче вара нихçан манмалла мар интереслĕ истори пулчĕ,— терĕ Василь Васильч малалла, йыттине татах ачашласа.— Манăн пĕр палланă чудак пур, паспортри хушамачĕ — Кукшаев, анчах хăйне пĕрмай Янтрай тетерет. Темскер, кăшт-кашт çырма хăтланать пулмалла та, ĕçĕ тухсах каймасть курăнать. Вăл литературăпа çыхăннине çакăнтан çеç пĕлетĕп: пĕлтĕр çулла ман пата ӳсĕртерех пырса кĕчĕ те (эп ăна урă çӳренине сайра куратăп) çав тери хавассăн пĕлтерчĕ: паян эп çуралнă кун, хĕрĕх тултартăм! Çавăн пирки кăштах сыпрăм-ха. Хăш чух поэтсене те юрать, çапла-и?

— Эс поэт-и вара? — куллине пытарса ыйтрĕ ман арăм.

— Тин пĕлетĕн-и ăна? — куçĕсене чарсах пăрахрĕ

Кукшаев.— Пурнăçран юлнă-çке эсĕ! Ман сăвăсем шкулта вĕреннĕ чухнех стена хаçатĕнче тухнă! Пĕр сăввине халь те астăватăп... — Вăл пуçне хур аçи пек каçăртрĕ те кăшкăрма тапратрĕ: — Хаваслă вăхăт чуна хыпалать, манăн кăмăла уя хăвалать!.. Лайăх каланă вĕт?

— Вăйлă,— терĕ арăм.— Эппин хĕрĕхе çитрĕн?

— Çитрĕм, ваçка.

— Нумай пурăнатăн, Лермонтов çирĕм çиччĕрех вилнĕ,— ассăн сывласа иленçи турĕ арăм, ӳсĕрсене Пулька пекех юратманскер.

— Çапла çав... Çирĕм çиччĕрех вилнĕ вăл, мăнтарăн! — Кукшаев-Янтрай сасартăк макăрса ячĕ.— Пушкин та хĕрĕхе çитеймен... Пирĕн Константин Иванов та çамрăклах çĕре кĕнĕ... Çав тери хĕрхенетĕп вĕсене! Писательсен союзне те кĕреймен, Литфонд членĕ те пулайман, шереметсем... — Куççулĕпех макăрать çын, чарса та чарăнмасть!

Ĕнентĕм вара: çын Пушкинпа Лермонтовшăн çĕр çул ытла иртсен макăрать пулсан, литераторах вăл! Пĕр-пĕр бухгалтер е сапожник ун пек хăтланмасть ĕнтĕ!

Çак Янтрай пире самаях йăлăхтарчĕ. Пирĕн айри магазинра кашни ир тенĕ пекех хăйне мĕн кирлине илет те йăкăшт пирĕн пата кĕрсе ларать. Черкке пар вара ăна, çыртмалли пар (вăл ăна «путармалли», тет), кăшт ĕçет те тытăнать лĕпĕртетме — тĕнчери пур редакторсем те çынсем мар иккен, çынçиенсем, унăн, Янтрайăн, талантне хаклама пĕлмеççĕ, ун пирки вăл, пĕрре-пĕрре урăлса çитсен, аслисем патне каять акă, тăн кĕртеççĕ вара лешсем редакторсене... Арăмĕ те вĕреçĕлен унăн, хут вараласа ларатăн тесе иртен пуçласа каçчен вăрçать ăна, кăшламаллипех кăшлать, анчах хăй ача та тумасть, эсрел, çавăнпа та юттисем çине те пăхкалать пулмалла...

Ялан пĕр юрă унăн! Çĕр хут та илтнĕ эпир ăна. Анчаха хамăр пĕлетпĕр: Янтрай нумайранпа ниçта та ĕçлемест, арăмĕ шучĕпе пурăнать. Арăмĕ унăн пĕр сăра киоскĕнче ĕçлет, пит тупăшлă вырăнта...

Пулаççĕ-çке çавăн пек сăвăссем!

Ман арăм миçе хут тĕртсе кăларса ячĕ пуль çав Янтрая, анчах вăл çаплах пыра-пыра кĕрет. Унтан çак паттăр таçта ӳксе урине хуçнă, терĕç. Пĕр çул хушши

пырса чăрмантармарĕ пире. Шăп çав вăхăтра ман ывăл йыт çури илсе пырса çитĕнтерчĕ.

Пĕрре вара çапла пулса иртрĕ. Хальхи пекех астăватăп, тунтикун — йывăр кун — пулчĕ-ха вăл. Ирхине арăм ĕçе тухса кайрĕ, ывăлăм — шкула, пĕчĕк хĕрачи — садике, эп килте пĕчченех юлтăм, манăн вăл эрнере иккĕмĕш сменăра ĕçлемеллеччĕ.

Чей ĕçкелерĕм те, туртас килчĕ. Анчах пирус пĕтнĕ иккен. Алăка питĕрмесĕрех магазина чупса тухрăм. Йăпăрт кăна вĕт — илнĕ те кĕнĕ. Эп шутланă пек пулмарĕ, ытла час кĕреймерĕм — ăнсăртран, черетре, нумайранпа курман палланă çынна тĕл пултăм. Эпир унпа фронтра пĕрле çапăçнă. Сăмах хыççăн — сăмах: мĕнле пурăнатăн, апла-капла. Хваттере кĕрсе ларма чĕнтĕм — килĕшмерĕ, ун пек вăраха кайма пултарать, терĕ вăл. Урамрах калаçса тăтăмăр вара, çур сехет те ытла пулĕ. Унтан киле кĕтĕм те... шак! хытрăм. Коридорта, стена çумĕнче, хайхи Янтрай-Кукшаев тăра парать. Епле тăрать-ха тата! Аллисене «хенде-хох» тунă — пĕлĕтелле çĕкленĕ, шăлаварĕ кăвапаран нумай аяларах анса ларнă, пĕр енчи кĕпи арки йĕмĕ çийĕн усăннă... Ана хирĕç, ун умĕнчех, ман Пулька ларать. Енси çинчи тĕкне шăрт пек тăратнă, хўрине кукăртнă, чĕнмен хăна çине куç илмесĕр пăхать. Хăй хуллен кăна, пĕр майлăн «хăр-р... хăр-р...» тăвать. Коридор урайĕ йĕппйĕпе, такам халь çеç шыв сапнă пек. Çавăнтах кĕленче ванчăкĕсем выртаççĕ.

Эп çук чух кунта мĕн пулса иртнине тўрех ăнланса илтĕм пулин те, хам шутсăр тĕлĕннине юри кăтартма ыйтрăм Янтрайран:

— Айтурух, Ярмулай, мĕн пулчĕ капла?

— Сан йытту... — макăрса ячĕ ўсĕртерех Янтрай.

— Мĕн тăвать?

— Кăларса ямасть! Алăсене те устармасть... Кĕртессе чиперех кĕртрĕ хăй, анчах, килте никам та çук пирки эпĕ каялла тухма тăрсан, пĕррех сиксе ларчĕ. Чăн малтан алăри эрехе малти урипе çапса антарчĕ — куран, пĕтĕм ырлăх урайĕнче кўлленсе выртать, унтан алăсенчен çыртма тапратрĕ те, ирĕксĕрех çĕклесе тăмалла пулчĕ...

— Нумайранпа тăратăн-и вара кун пек?

— Пĕлмесп... тăнран тухса кайрăм... Тен, пĕр сехет те иртрĕ-и!

— Ну, халь аллусене ус ёнтӗ.
— Ҫыртать!
— Ман умра тивмест.
— Тархасшӑн ан ҫырттар!
Эпир ҫавӑн пек мирлӗн калаҫнине кура, Пулька Янтрай ҫине юлашки хут пӑхса «хӑр-р...» турӗ те («асту эп сана, тепре килсен тата хытӑрах тыткалатӑп!» тенӗ пекех пулчӗ ку), коридор вӗҫне кайса выртрӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн вара Кукшаев-Янтрай пирӗн пата пӗрре те ура ярса пусмарӗ...
— Аван тунӑ, маттур йытӑ,— терӗм эпӗ.— Мидал пама та юрать ӑна куншӑн!
— Мидалӗ тарам-ха вӑл,— ал сулчӗ Василь Васильч,— эс малалла итле вӑт!
— Татах темскер турӗ-и?
— Тӗлӗнтерчӗ! Шалт тӗлӗнтерчӗ! Тепри ӗненес те ҫук, анчах эп сана, хамӑн ҫывӑх юлташа, ним суймасӑр-хушмасӑр каласа паратӑп... Бытовой обслуживани енӗпе пулчӗ ку истори. Ҫак сӑмаха чӑвашла калама питӗ йывӑр — халӑхӑн йӑла ыйтӑвӗсене тивӗҫтерекен... тата темтепӗр, ҫавӑнпа та вырӑслах каларӑм-ха. Тем тӗрлӗ мастерскойсем те пур вӗсен, ӑна пӗлетӗн-ха ёнтӗ. Вывескисем те, реклами те чаплӑ. Ара, вӗсене хӑйсемех тӑваҫҫӗ те, ӑҫтан начар пулччӑр? Ҫав рекламӑсене ӗненсен, вӗсем халӑха темӗнле ырлӑх та кӳреҫҫӗ...
— Ҫапла, ҫапла. Ҫынсене илӗртме пӗлеҫҫӗ, анчах ӗҫӗ патне ҫитсен нервӑсене тӑпӑлтараҫҫӗ вара! — терӗм эпӗ.— Куркаланӑ вӑл «тивӗҫтерекенсен» ырлӑхне.
— Ҫавна каласшӑн-ха ҫав хам та. Пӗр ҫич-сакӑр уйӑх каялла эп вӗсем патне пушмак юсама кайса патӑм. Пит лайӑх пушмак, заграничнӑй, Югослави таварӗ. Вӑтӑр ултӑ тенкӗ те ҫирӗм пус парса илнӗччӗ. Ҫийӗ тата пилӗк ҫул тӑхӑнсан та пӗтес ҫук, анчах тӗпӗ кӑштах шӑтнӑччӗ те кӗллисем пӑртак чалӑшнӑччӗ. Манӑн ури усал, урлӑ ура — атӑ-пушмака наччас чалӑштарса ярать. Ну... йышӑнчӗҫ ҫаксем, квитанци пачӗҫ, тепӗр уйӑхран пулать, терӗҫ. Вӑхӑчӗ ҫитсен кайрӑм хайхи. Ҫук-ха, хатӗр мар, ик эрнерен кил, терӗҫ. Юрать... Кайрӑм ик эрнерен. Каллех юсаман ман пушмака. Тата ик эрне кӗтме хушрӗҫ. Ӗҫ нумай имӗш вӗсен, ӗлкӗреймеҫҫӗ. Ку срок тухсан, хам чирленӗ пирки, арӑм кайрӗ. Каллех пулман иккен ман пушмак! Вӗсен патуш ҫук, тепӗр уйӑхсӑр та пулмасть, тесе янӑ. Ак хайхи! Пӗле-

тĕн-и, тусăм, вуникĕ хут кайрăмăр мастерскойне çав пушмашкăн!..

— Вуниккĕмĕшĕнче парса ячĕç-и вара?

— Çук! Арăм куççулĕпех таврăнчĕ: çунса кайтăр сан пушмаку-качку, урăх пĕр утăм та тумастăп уншăн, тет. «Тивĕçтерекеннисене» каламанни хăвармарĕ, тем тĕрлĕ ылханса пĕтерчĕ, ĕмĕрне шутламан ман Марье ун пекех ăста ылханма пултарасса! Бытовой обслуживани мар ку, бытовой издевательство, çунса кайччăрах вĕсен мастерскойĕсем, тет, тата темтепĕр... Тепĕр кунне хам кайрăм. Вунвиççĕмĕш визит пулчĕ ĕнтĕ ку. Çичсакăр тĕслĕ сăрланнă майрана мунчала пек пулса кайнă квитанцие тыттартăм. Çавăркаласа пăхкаларĕ çак майра ман квитанцие, тем шутпа мана куçран питĕ хытă пăхрĕ, унтан тепĕр пӳлĕме кĕрсе чылайччен тытăнса тăнă хыççăн каялла тухрĕ те, пушмак парас вырăнне хайхи квитанцие ман умма ывăтса кăшкăрчĕ-пăрахрĕ: «Эсĕ мĕн, гражданин, мăшкăллас тетĕн-и пирĕнтен?! Хăвăн пушмакна эс тахçанах илсе кайнă вĕт!..»

Куçпуç чарăлсах кайрĕ манăн.

— Епле... илсе кайнă? Кам илсе кайнă?

— Акă, икĕ уйăх каялла, алă пуссах илнĕ, пăх çакăнта!

Вăл мана квитанци корешокĕпе чутах сăмсаран тĕкетчĕ, аран аяккалла пăрăнса ĕлкĕртĕм.

— Ман алă мар ку, эп ун пек пусмастăп! — кăшкăртăм майрана.

— Кам пуснă вара? Пушкин килсе ал пуснă-и саншăн? — тата хытăрах çухăрса ячĕ вăл.— Намăс, гражданин! Куç умĕнчех улталама хăтланса çӳретĕн! Ак, халех милицие шăнкăравлатăп та, кăтартĕç сана иккĕмĕш мăшăр пушмак! Эккей, тупăннă иллюзионист!

Майра çухăрнине илтсе, тепĕр пӳлĕмрен виççĕн-тăваттăн сиксе тухрĕç. Пĕри, пиçнĕ слива тĕслĕ тачка сăмсаллăскер, çывăхарах пычĕ те, çăмламас пуçне пăркаласа, пит-куçне пĕркелентерсе намăслантарма тытăнчĕ мана.

— Эх, этем, этем! Ăçта сан совĕç? Пĕр мăшăр пушмакран икĕ мăшăр тăвас терĕн, эппин? Кунта ухмахсем лараççĕ, терĕн пуль те — не выйдет, милейший!

— Ним те темен эпĕ! Илсе кайман хамăн пушмака, акă, квитанцийĕ те алăрах, куратăн-и? кăшкăртăм ăна хирĕç.

— Пушмакне эсĕ квитанцисĕр те илсе кайма пултарнă, ăна çухатрăм тесе суйнă та... Сан пеккисем питĕ чее вĕсем! Куркаланă!

— Эсĕр мĕн, мана жулик тесшĕн-и?

— Çавăн пекрех пулса тухать, папаша!

— Эсир хăвăр жуликсем кунта!

— Ах, эсĕ пире кӳрентерме пăхатăн-и-ха тата? — мана кăкăртан ярса тытмах тăчĕ слива пек сăмсалли. Хăйĕнчен эрех шăрши перет.— Маруська, тавай хут, халех акт çыратпăр, лектеретпĕр ку нахала вунпилĕк талăклăх! Кăтартăпăр çут тĕнче!..

Аран хăтăлкаласа тухрăм вĕт! Тухрăм та — тӳрех министр патне. Чиперех калаçрĕ вăл манпа, тĕрĕслеме пулчĕ, квитанцие илсе юлчĕ. Эрнерен хут пычĕ: сирĕн пушмак çухалнă, çавăнпа та уншăн укçа тӳлетпĕр... Анчах мĕн чухлĕ пачĕç тетĕн укçине? Виçĕ тенкĕ те утмăл икĕ пус! Пушмак хакĕн вунă пайĕнчен пĕр пайне!

— Шăп çур литрлăх! — кулса илтĕм эпĕ.

— Çавă çеç! Тарăхнине ирттерсе яма пĕрре ларса ĕçтĕр ку усал заказчик, терĕç пуль. Мăшкăлларĕç, кĕскен каласан! Тьфу!

Василь Васильч калама чарăнса аяккалла сурса илчĕ.

— Анчах чим-ха, тăванăм, ку приключениллĕ историнче йытă пулмарĕ-çке санăн? Эс малтан: бытовой обслуживани енĕпе тĕлĕнтерсе пăрахрĕ вăл, терĕн мар-и? — ыйтрăм çакăнтан кăшт тăрсан.

— Вăл каярахпа пулчĕ,— терĕ Василь Васильч.— Эпир ĕнтĕ çав «тивĕçтерекеннисем» патне урăх ĕмĕрне те ура ярса пусмастпăр, тесе тупа тусаттăмăр. Анчах тӳр килчĕ вĕт, мур илесшĕ, мĕн тăвас тетĕн! Ман ак çак Пулька хăйĕн намордникне, чăвашла каласан — сăмсалăхне, нăхтине таткаласа пĕтерчĕ. Унсăр йытта хула урамне илсе тухма та май çук. Лавккасене кайса пăхкаларăм — тупăнмарĕ. Киввинех юсас пулать. Хам юсаймастăп — ни пăшатанĕ çук манăн, ни чĕнĕ, ни çиппи. Шăла çыртсах «тивĕçтерекеннисем» патне утрăм вара. Паллах, йышăнчĕç. Эрнерен пулать, терĕç. Анчах... мĕн тетĕн эсĕ? Каллех малтанхи истори пуçланчĕ. Тепĕр эрнерен кил, пилĕк кунтан, виç кунтан... Çиччĕ кайса та усси пулмарĕ! Юлашкинчен тарăхса çитрĕм те, Пулькăна мăйĕнчен кăкарса сăмсалăхсăр-

мĕнсĕрех хайхи мастерскоя çавăтса кайрăм... Çитрĕмĕр. Мастерской алăкĕнчен кĕнĕ-кĕмен, ман йытă ун-кун пăхкаларĕ, унтан пĕчĕк тĕкĕр çине пăхса тутисене пĕветсе ларакан леш пĕркунхи капăр майра тĕлне пырса малти урисене карлăк çине хучĕ те: «Хав!» — терĕ.— «Хав, хав!»

— А-аа! — çухăрса ярса сиксе тăчĕ майра. Аллинчи тĕкĕр ўксе чăнкăрт! турĕ.

— Хав, хав! — сас пачĕ каллех Пулька.

— А-а-а!

Хыçалти пўлĕмрен икĕ арçын чупса тухрĕç.

— Мĕн пулчĕ, Муся?

— Кашкăр! Çисе ярать!..

Арçынсем ман паталла ыткăнса ятлаçма тапратрĕç.

— Мĕн хăтланатăн эсĕ, гражданин?! Мĕншĕн йыттуна пўлĕме илсе кĕтĕн? Çитменнине — намордниксĕр тата!

— А вăл шăпах хăйĕн намордникне шыраса килчĕ сирĕн пата! — терĕм вĕсене хирĕç хăюллăн.

— Хав, хав! — эп каланине çирĕплетрĕ Пулька.

— Илтрĕр-и? Намордник пама ыйтать!

— Хав, хав!

— Мĕнле намордник?

— Сирĕн патра выртать, уйăх çурă иртрĕ!

— Хав, хав! Хăр-р...

— Хулиган! Халех илсе тух йыттуна, атту-тăк иксĕре те момент милицие ăсататпăр!

Арçынсенчен пĕри, чăнах та, хыçалти сĕтел çинчи телефон патнелле чупрĕ. Анчах çав самантрах ман Пулька пĕррех карлăк урлă сиксе каçрĕ те телефонлă сĕтел çине хăпарса ларчĕ.

— Хăр-р... хав, хав!

— Чар йыттуна, теççĕ сана! Илсе тухса кай!

— Ниçта та каймастăп,— терĕм эпĕ çирĕппĕн,— ак çак квитанци тăрăх ман йытă сăмсахлăхне халех тупса юсаса парăр, вара тин каятăп! Унччен вырăнтан та хускалмастăп! Хăвăрах ăнланма тивĕç: пирĕнтен хăтăлмалли урăх май çук сирĕн, телефон патне пыраймастăр, урама тухасси çинчен ан та шухăшлăр — йытă тўрех ĕнсе çине хăпарса ларать, унтан мĕн пулассине хăвăрах чухламалла...

— Бандитизм ку! — кăшкăрчĕ пĕри.— Насили, пусмăр!

— Юрӗ, юрӗ! Ытлашши калаçса вăхăта сая ан ярăр, тытăр та юсăр часрах йытă сăмсахлăхне! — приказ панă пекех каларăм эпӗ.

— Итлерӗç-и вара, юсаса пачӗç-и? — Василь Васильча пӳлсех ыйтрăм эпӗ.

— Мӗн тăвас пулатчӗ-ха вӗсен тата? — кулса ячӗ ман тус.— Çур сехетрен намордникӗ вӗр-çӗнӗ пекех туса пачӗç! Анчах ӗç кунпа пӗтмерӗ-ха, çавăнтах тепӗр истори пулса иртрӗ...

— Халь мӗн тата?

— Эп хайхи намордникӗ Пулькăна тăхăнтартма тăрсаттăм çеç, мастерскойне урамран леш слива пек сăмсалли, пӗркун мана пушмак пирки намăслантараканни пырса кӗчӗ. Пӗрре пăхсах сисрӗм: мухмăр уçнă ку, лайăхах уçнă, куçӗсем кантăк пекех пулса кайнă.

— Мӗнле собашник кунта? Кам хăйнă йытăпа килсе кӗме эпир ӗçленӗ çӗре? — мӗкӗрсе ячӗ вăл.— Эп ăна... парăр-ха мана пӗр-пӗр пысăкрах калăп!

Çаплаkalарӗ çеç слива сăмса, ман йытă алран карт! туртăнса вӗçерӗнчӗ те, çакна уринчен кап! çыртрӗ.

— О-о-о! — мӗкӗрсе-йынăшса илчӗ лешӗ, урине йытă çăварӗнчен туртса кăларма тапкаланса.

Эп йытта чарма ыткăнтăм, анчах вăл варт! каялла çаврăнса ман умма пушмак пырса пăрахрӗ. Пӗлетӗн-и, мӗнле пушмак? Ман пушмак, çак мастерскоя юсама парсан çухални! Эп ăна тӳрех палласа илтӗм. Çитменнине, эп унăн шал енне, шур сăран çине, хамăн ятпа хушаматăн малтанхи саспаллисене çырнăччӗ.

— Ак япала! Тупăнчӗ, эппин? — тӗлӗнсех кайрăм эпӗ.

— Тупăнчӗ çав! Пулька палласа хывса илчӗ ăна! Ну... кайран мӗн-мӗн пулни çинчен каламастăп та ӗнтӗ. Хăвах чухламалла ăна...

Василь Васильч йыттине ачашласа илчӗ.

— Нимӗнле харам пыр та мар пирӗн Пулька, усси пурах унăн! Ахаль каламан çав йытă — этем тусӗ, тесе...



## ВĂРĂМ ВАÇЛИ — КАЧАКА ПАТШИ

Юлашки вăхăтра эпĕ вулаканран хăрама пуçларăм-ха.

Мĕншĕн, тетĕр-и? Ара, шутсăр ăсланса кайрĕ-çке вăл! Ытла нумай пĕлет. Тем те курнă, тем те вуланă. Пурне те астăвать тата. Эс пĕртак йăнăшсанах, пурнăç çинчен кă-ăшт та пулин хăвна майлă каласа пама пикенсенех ярса тытать сана:

— Э-э, тусăм-тăванăм, эс мана çав тери айван чĕрчун вырăнне ан хур, улталаймăн! Пурнăçне эпир те санран кая мар чухлатпăр! Çырасси çыр эсĕ, çапах та ытлашши иртĕнсе кайма ан пар хăвăн фантазине! Пур ĕçре те виçе пулмалла!

Енчен те эсĕ — ăнсăртран — хăвăн çĕнĕ произведенинче (романра, повеçре, калавра, сăвăра, юптарура т. ыт.) ху ĕлĕкрех çырнипе тепĕр хут чĕрне хури тăрш-шĕ те пулин усă курнине сиссен вара хăлхаран тытса пăрмах хатĕр вăл сана:

— Эсе, тусăм-тăванăм, мана тахçан пĕçернĕ пăтта çитересшĕн пулас, э? Шалиш, браток! Аппетита ан пăс манне, атту çилленетĕп те акă, эс çырнисене вуçех вулама пăрахатăп! Ан ман çавна!..

Паян та акă хăра-хăрах çырма тытăнтăм çак калава. Пĕр вунă-вуникĕ çул каялла эпĕ качака такисем çинчен çырсаттăм ĕнтĕ. Халь каллех сăмахăм качака таки çинчен пулать. Каçарĕç-ши мана куншăн хисеплĕ вулакансем?

Хама хӳтĕлес шутпа малтанах каласа хурас пуль: ĕлĕкрех çырнă калавра ман сăмахăм чăн-чăн качака такисем çинчен мар, ик ураллисем, килте ним ĕçлеместĕр эрни-эрнипе доминолла çапса пĕр-пĕрне качака такин хисеплĕ ятне пама тăрăшакансем çинчен пынăччĕ. Час-часах тĕл пулаççĕ вĕт-ха пурнăçра çавăн пек тава тивĕçлĕ (вырăсла каласан — заслуженный) качака такисем. Халь вара манăн чăн-чăнни, леш кукăр мăйракалли, шĕвĕр сухалли, тăвата уралли çинчен калас килет...

Тата тепĕр шухăш пур манăн. Качака такине ĕмĕр-ĕмĕр ним усăсăр чĕрчун, харам пыр тесе шутлаççĕ. «Мĕн усси пур унтан — ни çăмĕ, ни сĕчĕ...» Хӳме урлă пахчана ялт! сиксе кĕрсе сăтăр тăвать кăна иккен вăл. Анчах, ман шутпа, çакă пĕртте тĕрĕс мар. Пачах йăнăш шухăш, ăна качака хӳри пекех кĕске ăслă этем шухăшласа кăларнă та, ыттисем ун çине критикăлла куçпа пăхмасăрах, пĕр-пĕр ученăй советра пур енчен те тишкермесĕрех йышăннă. Кайнă вара çав шухăш тĕнче тăрăх! Паян кун та çӳрет...

Эп халь çав шухăша çапса аркатасшăн. Тĕппипе, ним юлми! Мĕншĕн тесен качака таки чăнах та усăллă чĕрчун. Вăл хамăр планета çинчи качака йăхне пĕтме паманшăн, ăна çуллен ӳстерсех пырас ĕçе активлăн хутшăннăшăн çеç каламастăп эп куна. Качака таки, унăн ни çăмĕ, ни сĕчĕ çук пулсан та, тепĕр çынна чиперех тăрантарса усрама пултарать. Чăнах ара, чăнах! Ан кулăр эсир! Тăрантарма çеç те мар, кашни кун ӳсĕр çӳретме те пултарать вăл. Хуçи ĕçмен çын, пурнăç тума пĕлекен çын пулсан... пуйтарма та пултарать, во!

— Ан сӳпĕлтет кирлĕ мара, гражданин писатель, этемлĕх историйĕнче ун пекки пулман-ха, пулма та пултараймасть! — теççĕ ĕнтĕ мана хурçă кăмăллă критиксем.

Анчах эпӗ вӗсене хирӗҫ питӗ хӑюллӑ калатӑп: пулнӑ ун пекки! Пулнӑ! Ман алӑра фактсем пур, сире ним сӑлтавсӑр суйма эпӗ пӗр-пӗр Лапшу Ҫтаппанӗ мар!

Акӑ, сӑмахран, пӗр питӗ кӑтартуллӑ истори...

Таҫта хӑяматра, кунтан пин-пин ҫухрӑмра, ҫитмӗл ҫичӗ кун утсан та ҫитес ҫук ҫӗрте мар, хамӑр Чӑваш ҫӗршывӗнчех, Канашпа Шупашкар хушшинчи чугун ҫул ҫывӑхӗнчи пӗр ялта (хӑш ялтине каламасан та юрӗ) Вӑрӑм Васли ятлӑ ҫын пурӑннӑ. Вилмен пулсан, тен, паян кун та пурӑнать-и-ха. Ятне ӑна ҫынсем сӑлтавсӑрах паман ӗнтӗ, вӑл чӑнах та шутсӑр ҫӳллӗ (вӑрӑм) пулнӑ, тет, хирте пӗччен утнӑ чух ун кӗлетки телефон юпи пекех курӑннӑ, хуть те мӗнле хӳме урлӑ та урине пӗрре ярсанах вӑшт кӑна каҫма пултарнӑ, ҫавӑнпа та нумай чухне калинккесем уҫса чӑрманас хуйхӑ пулман унӑн, вӑл тӳрӗрен тӳрӗ ҫӳренӗ имӗш.

Пӗррехинче ҫапла та пулнӑ, теҫҫӗ: таҫтан ытлашширех хӗрӗнкӗ таврӑнаканскер, тек утма пултарайманнипе, шоссе урлӑ тӑсӑлнӑ та выртнӑ ҫак. Пӗтӗм шоссене картласа хунӑ вара. Пӗтӗм транспорт чарӑнса ларнӑ ӑна пула, пӗр машина та иртсе каяйман, ни унталла, ни кунталла. Аллӑ машина таран пухӑнса тӑнӑ тет ҫул ҫинче. Шоферсем пӗринчен тепри хытӑрах кӑшкӑртнӑ — нарт, нарт, нарт! — анчах Васли хӑнк та туман, яка асфальт ҫинче харлаттарнӑ кӑна. Тен, ырӑ тӗлӗксем те курнӑ-и. Шоферсен ирӗксӗрех кабинӑсенчен тухса, ҫакна пӗрене пек ҫӗклесе ҫул хӗрринчи канава кайса пӑрахма тивнӗ. Тин ҫул уҫӑлнӑ вара.

Ав мӗн таран вӑрӑм пулнӑ ҫак Васли! Тӗлӗнсе каймалла!

Анчах ҫынсене вӑл хӑй ҫав тери вӑрӑм (ҫӳллӗ) пулнипе ҫеҫ те мар, хӑй шутсӑр кахал пулнипе те тӗлӗнтернӗ. Ашшӗ-амӑшӗ пур чухне ытла ачаш пулнипе, пӗччен юлсан хӑвалакан ҫуккипе, нихҫан та нимӗн те ӗҫлемен. Пӗр-икӗ хут авланса та пӑхнӑ — арӑмӗсем туха-туха кайнӑ. Ӑҫтан пурӑнса ҫитеретӗн ҫавӑн пек наянпа? Анчах ун хыҫҫӑн та ӗҫе тытӑнман Васли. Пурӑнма ашшӗ-амӑшӗнчен юлнӑ кил-ҫурчӗ пулнӑ-ха унӑн: пӳрчӗ те пысӑк, ампарӗ-кӗлечӗ те йӗркеллӗ, анкартинче мунчи те пур. Анчах ҫынна кил-ҫурт тӑрантармасть-ҫке, пӗрене пуҫӗсене татса чӑмлаймастӑн! Ҫӑкӑр ҫиес тесен, ӗҫлесех пулать мӗн те пулин!

Васли ӗҫлемен. Хуть те хӑҫан пырсан та, ҫынсем

вăл çыварнине курнă. Ир пыратăн-и, кăнтăрла-и, каç пуласпа-и,— пурĕпĕр харлаттарать вăл. Туртать кăна ыйха!

— Мĕнпе пурăнатăн эсĕ, Ваççа, мĕн çикелетĕн? Пĕтетĕн-иç капла, ĕçлес пулать санăн ăçта та пулин! — тенĕ ăна хăш чух кӳршĕсем. Хăйне хĕрхенсе каланă.

— Пĕтместĕп, мана, пĕччен çынна, нумай кирлĕ-им? — лăпкăнах ответ панă Ваçли.— Тата арçын вĕт эпĕ...

— Арçынĕ — арçын та-ха, çынна çара арçын пулниех тăрантармасть-çке, унăн та çиес пулать!

— Пурăнма пĕлсен — тăрантарать. Çиме мар кашни кун ĕçме те пулать,— парăнман Ваçли.

Анланнă вара çынсем Ваçли мĕншĕн нимĕн те ĕçлеменнине. Кунĕ-кунĕпе мĕншĕн çыварнине те тавçăрса илнĕ.

Унтан сасартăк çакăн пек хыпар сарăлнă: Вăрăм Ваçли хăйĕн килне ютран килнĕ тракторист çемйине хваттере янă та, хăй Йĕлмекассине пĕр матка патне киле кайса кĕнĕ... Матки хăйĕнчен вунçичĕ çул аслăрах тет ĕнтĕ, анчах пит пуян, тупри нумай, тет...

Çур çул та иртмен — тепĕр хыпар сарăлнă яла: Ваçли халь Йĕлмекассинче мар, Çаăккассинче пурăнать, урăх матка патĕнче.

Виç уйăхран тата çĕнĕ хыпар:

— Вăрăм Ваçли хăй адресне татах улăштарнă...

— Халь ăçта вара вăл?

— Чĕрĕккассинче пурăнать, çĕнĕ арăмпа!

Ял çыннисем вар тытса кулнă:

— Ара, унăн профессийĕ — арçын та-ха, пĕкĕ пек кукăрăлса уринчен ури иртми пуличченех авланать ĕнтĕ вăл!

— Арăмĕсем мĕне кура киле кĕртеççĕ пуль вăл аçа хурта! — тенĕ хăшĕсем. Пуринчен ытларах хĕрарăмсем вăрçнă: — Мĕн пур-ши çав усал çумĕнче? Ĕçлет-и вăл, пурнăç тăвать-и?

— Арçын вăл, арçы-ын! — ахăлтатса кулнă упăшкисем.

Анчах арçын званийĕпе те ĕмĕр-ĕмĕрех пурăнма çук иккен çĕр çинче. Пĕри тапса кăларса янă Ваçлие, тепри ун çурăмĕ çинче ухват аври хуçнă, унтан никам та киле кĕртми пулнă. Таврари вунпилĕк-çирĕм çухрăмра йăлтах пĕлсе çитнĕ ун çинчен:

— Ĕне пек çиет, сысна пек çыврать, ĕççен — чисти кашкăр, ĕç патне пырас шухăш та çук, ĕмĕрне пĕр хул хушши шанкă та татса кĕмест, мур çименскер!

Кĕскен каласан, Васлин арçын авторитечĕ пĕтетларать. Чапĕ сӳнет, çав тери ырă профессийĕ çухалать. Отставка! теççĕ ун пек чух.

Таврăнать Васли киле.

Пӳртĕнче ют çынсем пуранниpe мунчана вырнаçать (ăна хутма вутă нумай кирлĕ мар, чулĕсене пĕрре лайăхрах хĕртсен эрне те пурăнма пулать), анчах хырăм выççи ытларах та ытларах аптратма тытăнать ăна. Темме выçмалла тунă-çке вăл этем хырăмне! Пӳртре пурăнакансенчен хваттер укçине çитес çур çулшăн та илсе пĕтернĕ ĕнтĕ...

Мĕн тумалла?

Шухăшлать-шухăшлать Васли, анчах выçă хырăмпа ун пуçне пĕр йĕркеллĕ шухăш та пырса кĕмест. Шухăшлама пуçлать çеç — пуш-пушă пыршăсем касса каяççĕ...

Тухса утать Васли станцие. Пĕр-пĕр охранник вырăнĕ çук-ши? Йывăр ĕç мар-çке охранник пуласси: алла ĕмĕрне пĕрре персе пăхман тутăхнă пăшал тыт та, лар та лар питĕрнĕ алăк умĕнче шăхăркаласа!

Çук иккен ун пек вырăн. Складсем валли рабочисем çеç кирлĕ, теççĕ ăна. Ай-ай вăл ĕç! Сакăр сехет хушши тем йывăрăш ещĕксемпе, михĕсемпе, контейнерсемпе кĕреш-ха эсĕ! Пыршă-пакарта тухса кайĕ! Наччас алурасăр, пилĕксĕр тăрса юлатăн! Çав териех ухмах марха Васли ун пек ĕçпе çыхланма!

Станци начальникĕ патĕнчен шутсăр кӳренсе перрон çине тухнă хыççăн вăл пĕр хушă ним тĕлсĕр тăрать. Хырăмĕ пăкăр-пăкăр тăвать çав хушăра...

— Пĕр-пĕр пассажирски килсен, кама та пулин чăматансем йатма пулăшсан, пĕрре çимелĕх укçа пулатчĕ те-ха... — шухăшлать Васли ун-кун пăхкаласа.

Чăнах та аякран кĕçех пуйăс килни илтĕнет, тĕтĕм курăнать, анчах станцие пассажирски мар, товарнăй пырса тăрать. Тем вăрăмăш, çĕр вакун та пулĕ, анчах мĕн усси унтан?

Ал сулса аяккалла утма пуçлать Васли, çав вăхăтра сасартăк питĕ тĕлĕнмелле япала курах каять: пĕр хĕрлĕ вакун пуçĕнче, тамбурта, качака тăра парать!

Уласкер, шурӑпа кӑвак хутӑш. Хӑй тӗреклӗ, сухалӗ вӑрӑм, мӑйракисем те шеп.

— Мӗнле пассажир ку? Хуҫипе пӗрле килет-ши, пӗчченех-ши? — интересленсе каять Ваҫли.

Качака патӗнче ҫын курӑнмасть. Пӗчченех, эппин. Пуйӑс тахӑш станцире чарӑнсан ку шуйттан тем шутпа сиксе хӑпарнӑ та ӗнтӗ, состав тапранса кайсан ҫӗре сиксе анма хӑюлӑх ҫитмен унӑн. Килнӗ вара «мулкачла», билетсӑр-мӗнсӗрех. Ах, жулик!

Качакана ытараймасӑр, Ваҫли ун патнелле пырать. Хытӑ пахать ун ҫине, тепӗр лайӑх картин ҫине пӑхнӑ пекех. Ҫавӑнтах унӑн кукшаланма пуҫланӑ пуҫӗнче калама ҫук хӑюллӑ шухӑш ҫуралать:

— Ку чӗрчуна кукӑр мӑйракисенчен ҫаклатса илсе кайсан мӗнле пулӗ-ши? Вӑл кунтискер мар — ку пӗрре, хуҫи ҫук унӑн — ку иккӗ, сӗт параканскер пулсан, ӑна суса сӗт ҫиме пулать — ку виҫҫӗ, пурӑна киле сутма май пур — ку тӑваттӑ, пусса ҫиме те ҫылӑх мар — ку пиллӗк... Ак ӑҫта тупӑш!

— Кача, кача... — кӑчӑк туртса йыхӑрать ӑна Ваҫли.— Кил кунта, сик, сик, иксӗмӗр туслӑ пулӑпӑр...

Качаки ытла мӑн кӑмӑллӑскерех мар-мӗн, сикет те анать, Ваҫли ӑна ҫавӑнтах мӑйракисенчен ҫулса илет, анчах ҫав самантрах питӗ кӳренмелле пулать унӑн: така иккен!

— Вӑт, мӑйракаллӑ шуйттан! — вӑрҫса илет Ваҫли.— Усӑллӑ чӗрчун мар-ҫке эсӗ, ман йышшиех иккен! Ик аҫа мӗн тума пӗлӗпӗр эпир санпа? Выҫса вилес пулать санпа...

Ҫапах та аллинчен вӗҫертмест-ха качака такине, мӑйракинчен тытсах тӑрать. Темле пулсан та, тупнӑ япала-ҫке! Ҫӑмӗ-сӗчӗ пулмасан та, усси пулӗ, тен? Калӑпӑр, пуссан... ашӗ те, тирӗ те...

Ваҫли часрах пиҫиххине салтса такана мӑйракисенчен яваласа илет те станцирен аяккарах илсе каять. Унтан вӗсем поселок урамӗпе утаҫҫӗ. Ваҫли малта, качака таки — ун хыҫҫӑн. Иккӗшӗ те мӑнаҫлӑн пыраҫҫӗ, халь кӑна ялхуҫалӑх выставкинче мидал илсе тухнӑ пек.

Ытла инҫе те каяймарӗҫ ҫаксем — вӗсене пӗр ватӑрах хӗрарӑм тӗл пулса чарса тӑратать.

— Ку... ку выльӑх санӑн хӑвӑн-и? — тесе ыйтать вӑл Ваҫлирен.

«Лекрĕм!.. Тытрĕç!..» — çурăм тирĕ сӳ! туса каять Ваçлин, анчах çапах та хăй пĕтĕм паттăрлăхне пухса хуравлать:

— Хамăн пулмасан, камăн пултăр тата? Ют выльăха çавăтса çӳреместĕп ĕнтĕ! Килтен тухса тарнă та, эсремет, пĕр эрне шыраса аран тупрăм!

— Така-и?

— Така çав, племеннойскер, çавăнпа тытса чарма çук. Шутсăр аскăн мар-и! — ним шиксĕрех мухтанма тытăнать Ваçли хăйĕн халь çеç вăрланă выльăхĕпе.

— Апла пулсан, хăта... йăпăрт ман пата кĕрсе тухмăн-ши? Чăрмав пулать те-ха сана...— ун куçĕнчен пăхать хĕрарăм.

— Мĕн тума кĕмелле сан патна? — каллех хăраса каять Ваçли: «Ку такана палларĕ пуль те, мана милицие тыттарса ярасшăн пуль...»

— Ман пĕр усал качака пур, чуптарма вăхăт çитрĕ çавна, анчах пирĕн поселокра никам та качака таки тытмасть. Ахаль тумăп сана уншăн... Ыр çын пул ĕнтĕ!

— Э-э... йеттă мошнă! Куна пултаратпăр эпир, ку вăл пирĕншĕн ним те мар! — сасартăк хĕпĕртесе, çунатлансах каять Вăрăм Ваçли.

Ара, хĕпĕртемесĕр! Кĕтмен çĕртен пĕлĕтрен татăлса аннă телей-иç ку! Тупăш! Паллах, качака такине илсе кĕртнĕшĕн вăл укçа та сăптăрать-ха çак карчăкран, хырăмне те тултарса тухать! Ĕнертенпе ăша нимĕн те яман атту...

...Çур сехетрен Ваçли чăнах та карчăк патĕнче сĕтел хушшинче ыр курса ларнă. Умра чĕрĕк кĕленчи, çуллă яшка, шаркку — пехле кăна хырăму параппан пек пуличчен! Тепĕр ресторанта та кун пеккине курас çук. Çитменнине — пĕр пуссăр! Э-эх, пурăнăç!..

Эрехне сыпа-сыпа шарккуне çăвар туллин çавăрттарнă май Ваçли пĕр чарăнмасăр качака такине мухтанă:

— Пит чаплă ăратă вăл манăн! Эп ăна виçĕмçул Самар патĕнчи пĕр совхозра туянса килтĕм. Пĕтĕм республикипе те çук ун пекки! Туркменски поротă, теççĕ. Икçĕр тенкĕ патăм, анчах халь ăна пилĕкçĕре те памастăп... Сан качаку сахалтан та улт-çич путек туса парать акă, курăн! Ĕмĕр асăнса пурăнăн мана! Кирлĕ пулсан, килес çул каллех чĕнме пултаратăн — рас ан-

чах персе çитетпĕр. Эп мăн кăмăллă çын мар, çынсене пулăшма яланах хатĕр...

Тайкаланса, юрла-юрлах тухса кайнă Васли. Вăрман хĕрне çитсен çемçе курăк çине ларнă та качака такине ыталаса чуптума тытăннă:

— Э-эх, мăйракаллă тусăм, шуйттан хăраххи! Ăçтан кăна тур пачĕ пуль сана! Пурăнатпăр халь санпа шик шăхăрса, çапла-и? Ним те хăрушă мар пирĕншĕн! Сыттый та, пянный та пулатпăр кашни кун. Эс ăслă пул кăна, ан ÿркен нихçан та, итле каланине! Ы-ых, эп сана, сăттана юлашкине, кÿр-ха, тепре чуптăвам!

Пĕр икĕ эрне таврăнман Вăрăм Васли. Çÿренĕ вăл упа кăтартакан чикан пек ялтан яла. Пырса кĕрет те пĕр-пĕр ял пуçĕнчи киле, хуçинчен тÿрех ыйтса пĕлме тытăнать:

— Сирĕн ялта качака усракансем пур-и?

— Пурри пур та, нумаях мар,— тет кил хуçи.— Ытларах ĕне усраççĕ халь, вăрçă вăхăтĕнчи пек мар.

— Çапах та, пур, эппин?

— Çиччĕ-саккăр тупăнать пуль.

— Таки пур-и вĕсем валли?

— Çукрах çав. Камăн усрас килтĕр вăл шăршлă шуйттана?

— Апла пулсан, хуш ачусене, халех качака хуçисене кайса систерччĕр: племсовхозран ятарласа сире валли швецарски качака таки илсе килнĕ, теччĕр. Анчах хакне малтанах калаччăр: кашни качакаран виç тенкĕ тата çур литр аншарли. Московски пулсан — чĕрĕк те çитет, ытлашши хаклă илес мар. Сан ачусене куншăн эпĕ канфет çимелĕх укçа парăп, ахаль тумăп...

Ĕçсем пит аван пынă Васлин. Хăй ĕмĕтленнĕ пекех пулнă: хырăм та тута, ĕçки те какăричченех. Укçа та пур. Ма пурăнас мар?!

Çÿресен-çÿресен, качака таки начарланма пуçласан, вăл пĕр хушă килте пурăннă.

— Отпуск патăм-ха Орела,— йăл-йăл кулкаланă вăл,— кантăр пăртак, вăй пухтăр... (Качака такине вăл Орел — Амăрткайăк — тесе ят панă иккен!).

Ялта та çивĕч чĕлхесем, хаяр сатириксем пур çав. Вăрăм Васлие наччас «Качака патши» тесе ят панă. Çыпăççах ларнă ун çумне çав ят. Тахăшĕ тата Васли мĕнле майпа, кам шучĕпе ыр курса пурăнни çинчен райхаçата çырса пĕлтернĕ те, унта пĕр райпоэта сăвăл-

лă фельетон хайлаттарнă — Шупашкарти Дымилов-Тури поэтран та кая мар çырнă лешĕ, шельма:

Атя, Ваççа, тухар-и,
Ют качака тытар-и,
Ялсем тăрăх çӳрер-и,
Çынсене улталар-и,
Уншăн эрех ĕçер-и,
Тăпăр-тăпăр сикер-и!

Ах, кулнă та вара çынсем çакна вуласан! Ниçта кайса кĕреймен! Халăхпа пĕрле Вăрăм Ваçли хăй те ахăрнă. Питĕ яка çырнă-çке такмакне! Савăннă:

— Чапа тухрăм ку качака такипе! Пĕтĕм район пĕлет халь мана! Тăхтăр акă, часах пĕтĕм республика пĕлекен пулĕ! Пĕр сăмахпа каласан—эй, ну, яра пар!..

Çав кунах Ваçли хăйĕн мăйракаллă Орелне çавăтнă та каллех «гастроле» тухса кайнă. Хальхинче тепĕр еннелле, аяккарах кайнă, мĕншĕн тесен ку тăрăхра пĕр хĕсĕр качака та юлман.

Пĕр яла çитнĕ, виç яла, çич яла. Аптраман. Лайăхах пулнă. Эрех ĕçет Ваçли, укçа çапать.

Унтан сасартăк...

Пырса кĕреççĕ Вăрăм Ваçлипе унăн качака таки пĕр пысăк яла. Хваттере вырнаçаççĕ. Ваçли кил хуçипе калаçать: систерĕр-ха качака усракансене, чăрмантарнăшăн укçа тӳлетĕп, тет. Кил хуçи качака таки çине пăхать — унтан, кунтан. Мухтаса та илет:

— Вăйлă качака таки санăн, чаплă! Кун пеккипе тăванлашма хуть те мĕнле качака та килĕшмелле. Халех кайса систеретĕп кама систермеллине,— тет.

Çавăнтах тухса каять те, тепĕр çур сехетрен колхоз председательне илсе пырать. Темшĕн-çке, председательпе пĕрле хитре кăна милиционер та пырса тухать.

— Нивушлĕ милици те качака усрать? Шутпа, унăн пĕр-пĕр овчаркă çеç пулмалла-çке? — тĕлĕнет Ваçли.

— Аçта-ха санăн чаплăран та чаплă таку? — тесе ыйтаççĕ çаксем.

— Сарайĕнче канать-ха,— тет Ваçли.

— Кăтарт тавай. Курар: мĕн тĕслĕ, мĕн пысăкăш...

— Тархасшăн, ара. Така — первăй сорт. Вышши теме те пулать.

Сарай алăкне уçсанах колхоз председателĕ милицие калать:

— Пирĕн выльăх! Кăçал çуркунне çухалчĕ. Шырарăмăр — тупаймарăмăр, халь акă хăех таврăнчĕ, турра шĕкĕр.

— Епле сирĕн?! Çу-ук, хаклă юлташсем, йăнăшатăр... — Хăранипе Вăрăм Васлин аллисем сивĕнсе каяççĕ, çапах та парăнмасть-ха, хирĕç çаптарать: — Манăн сопченăй така ку, эп ăна çичĕ çул усратăп ĕнтĕ, кун çинчен пĕтĕм район пĕлет!

— Çичĕ çул çӳретĕн-и вара эс унпа çакăн пек? — ыйтать милици.

— Çиччех мар, анчах чылайранпа уш. Халăх ыйтнипе çӳретĕп...

— Ну-ка, документ кăтарт-ха, эппин! Пур-и санăн ялсем тăрăх çакăн пек случной кампанисем туса çӳреме ирĕк паракан хут? Ветврачран справка пур-и? Тен, санăн таку чирлĕ? Тен, эсĕ юриех пĕр-пĕр сап е сибирски язва сарса çӳретĕн? Хăвăн личнăй документна та кăтарт — пĕлес пулать пирĕн: кам эсĕ, мĕн эсĕ, ăçтан килсе тухнă фокусник-гастролер?

Вăрăм Васлин, паллах, нимĕнле документ та пулман.

— КПЗ! — тенĕ милици.— Вырăсла каласан, камера предварительного заключения, акă мĕн вăл. Вăхăтлăх тĕрме. Унта эс камне питĕ хăвăрт пĕлĕç! Колхоз выльăхне вăрласа унпа усă курса пурăннăшăн — суд! Обществăллă пурлăха çаратнăшăн пуçран ачашламаççĕ...

Вăрăм Васлин вăрăм урисем лĕнчĕрех хутланса аннă.

Эх, ма кайнă-ши вăл ют çĕре! Ухмах! Тăр-ухмах! Аякка кайман пулсан, тен, паян кун та пурăнатчĕ-и качака такине суса!



## ХЁР ШЫРАТПАР

*(Санюк инке калавӗ)*

...Эпӗ те ӗнтӗ, пурин пекех, хӗр пулса курнӑ, вунсаккӑр-вунтӑххӑрта чух, ҫуркуннехи-ҫуллахи вӑхӑтсенче, хапха умӗнче е пӗр-пӗр ватӑ йӑмра айӗнчи пӗренесем ҫинче ҫур ҫӗрчченех каччӑпа ыталанса, унӑн ӑшшине туйса, хамӑн чӗре пӑлханнипе кӑлт-кӑлт тапнине илтсе, сахал мар ларнӑ. Питӗ лайӑхчӗ ҫавӑн пек ларма, астӑватӑп. Каччи ыталать сана, ачашлать, чӗре ирӗлсе каймалла сӑмахсем калать. Хӑш чух тул та ҫутӑлма пуҫлать, анчах ҫаплах киле кӗрес килмест санӑн. Киле час таврӑнманшӑн анне йӗтӗрпе юна-юна вӑрҫни те, кӑтра ҫӳҫӗмрен туртни та пулкалатчӗ, атте пӗр-икӗ хутчен чӗн урхалӑхпа ачашласа илнине те астӑватӑп пӑртак.

Хамӑн тантӑшсемпе пӗрле Шупашкарти пысӑк

çуртсем тунă çĕре ĕçлеме килсен, пулас старикпе паллашрăм та, кашни каçах хулран хул кĕлентĕр пек çакланса Атăл хĕррипе те, урамсем тăрăх та тем териех çӳреттĕмĕр. Халь ĕнтĕ вăрçакан та, урхалăхпа тăн кĕртекен те çукчĕ те, çӳре-еттĕмĕр вара ураран ура иртми пуличчен! Паллах, утсан-утсан ларса та канаттăмăр, ларсан-ларсан чуптукаласа та илеттĕмĕр, унсăрах мар ĕнтĕ,— ман Терентти чуптума питĕ юрататчĕ, пăру пекех çуллатчĕ пĕр пуçласан.

...Анчах тиркемелли, кирлĕ-кирлĕ марри пирĕн хушăра нимĕн те пулман. Хама хам çирĕп тытаттăм, хут уйăрса саккуна кĕриччен — ни-ни-ни! теттĕм, Терентти ытлашширех иртĕнме пуçласан, ун аллисене наччас каялла пăрса лартса сăмсинчен шак! тутараттăм. Лара-атчĕ вара тутине усса!

Çулталăк ытла çӳрерĕмĕр эпир. Унтан пĕрлешрĕмĕр. Умлăн-хыçлăн ывăлпа хĕр çуралчĕç пирĕн. Çамрăк пулнă та-ха, васканă ĕнтĕ. Чиперех ӳстертĕмĕр хамăрăн чĕппĕмĕрсене. Вăхăчĕ çитсен пирĕн ывăлĕ çара кайрĕ те — таврăнмарĕ, салтак службине килĕшнĕ пулмалла ăна,— киле килмелли срок çитсен çар шкулне вĕренме кĕнĕ. Лайăх-ха вăл, юрататăп эпĕ çар çыннисене. Дисциплина унта вĕсен, йĕрке, иртĕнме памаççĕ. Сăмахăма кĕскетсе каласан — ывăл пирки хуйхă-суйхă пулмарĕ пирĕн. Пире ытлашши чăрмантармасăрах çын пулчĕ. Капитана çитрĕ халь Ванюк, танкистсен командирĕ хăй.

Анчах хĕрĕ вара... Хĕрĕ кăтарткаларĕ!

Эсир тем ан шутлăр, ун пек-кун пекки, усалли нимĕн та пулман. Ашшĕ-амăш ятне яман, вăл енчен чиперех. Вĕренессе те начарах вĕренмен. Ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕсенче те учительсем яланах ырлатчĕç ăна, хальхи пек каласан — «паха тĕслĕх» вырăнне илсе кăтартатчĕç. Питĕ нумай вулатчĕ, вăл вуланă чухлĕ эпĕ шыв та ĕçмен пуль, туршăн та.

Анчах, хĕр картине кĕрсен, сиссе те юлаймарăмăр, каччăсемпе питĕ çӳреме пуçларĕ. Вăл хăй те айăплах мар-ха, каччисем хăйсем çыпăçатчĕç, эсреметсем! Килти телефона çавăрса çапса ун çине хăпарса сикес патнех çитрĕм,— пĕрмай чăнкăртатать! Ялан пĕр ыйту: «Анютăна чĕнĕр-ха! Сăмах пур!» Мĕн каянни сăмахĕ пултăр вĕсен? Пĕри кинона чĕнет, тепри — театра, концерта, танцине...

«Анюта килте çук, таçта кайрĕ», тесен ĕненмеççĕ-ха, суятăн, хĕрне юри пытарса усратăн, анчах сан ĕç тухаймĕ, халь ĕлĕкхи мар, хĕрсене сăнчăрта усрама никамăн та права çук, тесе лăпăртатма пикенеççĕ. Эп вĕсене хирĕç хытăрах каласан, хамах вăрçса тăкаççĕ. Арçури ятне те, киремет-тухатмăш ятне те чылай илткелерĕм. Шутсăр тарăхмалла! Хам çуратса, хам пăхса ӳстернĕ хĕршĕнех тем те илтес пулать, çĕр çăтманскер!

Вунă хут, çĕр хут та асăрхаттартăм Анютăна, ан çӳре ытлашши, йĕркеллĕ пул, çынсем тем калĕç, тетĕп. Итлеççĕ-им хальхи çамрăксем ашшĕ-амăшне? «Кинона каятăп-ха, сеанс пĕтсенех килетĕп», тесе тухса каfive те пач çухалать. Кини саккăртах пĕтнине пĕлетĕп-ха, анчах ман хĕр тăххăрта та çук, вуннăра та... Тепĕр чух вунпĕр те çитет, унтан та иртсе каять, вăл çаплах таврăнмасть...

Чун юлмасть вара, ăш хыпсах тухать! Тем тĕрлĕ те шутласа пăхатăн. Ăнсăртран машин айне пулмарĕши? — тетĕн. Машинисем халь шуйттан чухлех, шоферĕсем арçурисем пек çӳреççĕ, ӳсĕррисем те пулаççĕ вĕсем хушшинче, таптаççĕ те пăрахаççĕ — вĕсене мĕн! Час-часах илтĕнет ун пекки... Тен, юлташĕсемпе пĕрле, каç пулнине пăхмасăрах, шыва кĕме кайнă та, Атăла путнă? Ун пекки те пулкалать... Тен, шăпанасем тĕлне лекнĕ? Вĕсем çук мар-ха хулара, лешсем ара, упăте тĕслисем, вăрăм çӳçлисем, сарлака йĕмпĕççиллисем, çĕрне кунне пĕлмесĕр гитар хăнтăртаттарса çӳрекен услапсем. Тем тума та пултараççĕ пуль вĕсем,— ĕçме укçа çуккипе иртен-çӳрене çаратма та, ĕçсе ӳсĕрĕлсен хĕрсене усал тума та...

Калатăп-çке, çавăн пек шутланипе чĕре çурăлас патнех çитетчĕ!

Лара-атăп вара чӳрече витĕр пăхса, хамăн хĕрĕн кĕлетки курăнасса кĕтсе. Хушшăн-хушшăн урама та чупса тухатăп, унталла-кунталла кайкаласа килетĕп. Таçта вăл! Хули майсăр пысăк-çке халь, çĕр урам та пулĕ, вуншар парк, сквер, никама та шыраса тупаймастăн! Эпир çамрăк чух вăл тăват-пилĕк урам кăначчĕ, вĕсем те пĕрре чупмалăх çукчĕ — вĕçĕ курăнсах тăрать.

Аптраттăм çапла!

Аш хыпнă пирки ниçта кайса кĕрейменнипе старике пăсăрлантарма тытăнаттăм:

— Эс ма чармастăн хăвăн хĕрне? Чупкăна тухса кайрĕ вĕт! Ма пĕртте кулянмастăн ун пирки, ма пăшăрханмастăн? Халех кайса шыра! Халех тупса кил!..

Анчах вăл, мĕшĕлти, хăнк та тумасть. Эп кăвайт çинче ларнă пек ларатăп, тарăхнипе, пăлханнипе, манăн çӳçпуç вирелле тăрать, вăл пур — хыçкаланмасть те хуть! Сăмсипе журнал страници çине тăраннă та, аллипе сулать кăна ман еннелле:

— Кай-ха, ан кансĕрле, кроссворд тухмасть манăн! Эс кала мана луччă: чăвашсен ĕлĕкхи сăра ĕçмелли савăт мĕн ятлă пулнă? Пилĕк буквă унта,— тет.

Эп сиксе тăрса ун аллинчи журнала туртса илетĕп те пĕррех хăйне пуç урлă яратăп.

— Этем мар эсĕ! Епле-ха хăвăн пĕртен-пĕр хĕрӳшĕн пĕртте хыпмастăн, пăшăрханмастăн?!

— Мĕн пăшăрханмалли пур вара уншăн? — тет Терентти мана хирĕç, ыратнă вырăнне сăтăркаласа.

— Çухалчĕ вĕт! Шырас пулать! Тен, милицие пĕлтермелле?

— Э, ниçта та çухалмасть,— каллех ал сулать вăл.— Килти выльăх ăçта кайтăр? Килех килет...

— Ашшĕ пулса, мĕншĕн ним те каламастăн эс ăна, ма çакăн пек тахçанччен çӳреме ирĕк паратăн?! Пăх-ха эсĕ сехет çине, вунпĕр иртрĕ! Урамра пĕр çын та юлмарĕ ĕнтĕ, санăн хĕрӳ çеç çуккă!

Терентти, пăшăрханас вырăнне, ерипен карăнса, тутлăн кăна анаслаca илет те ман çине пăхса кулать:

— Эс хăвна пĕл, карчăк...

Ку вара маншăн хама вĕри шывпа сапнă пекех пулать.

— Мĕн пĕлмелле манăн?! — сиксе ӳкетĕп старик çине.— Эс мĕн, мана чупкăн тесшĕн-и? Ăçта çухалса çӳрерĕм эпĕ, хăçан? Сăнчăрланă йытă пек ларса пурăнатăп сире пула, кăçал киноя та пĕрре кайса кураймарăм! Мĕн тери лайăх картинсем пулчĕç — «А если это любовь?», «Еще раз про любовь» тата темтепĕр...

— Лăплан,— тет старик,— эп сана хальхи çинчен мар, çамрăк чухнехи çинчен калатăп! Халь тин кама кирлĕ эс, ват кункра, мансăр пуçне? Сан çине халь персональнăй пенсионер мар, ахаль йышши пенсионер та пăхмасть... Анчах çамрăк чухне еплерех çӳреттĕн эсĕ?

Çур çĕрччен, тепĕр чух кăвак çутă киличчен, тул çутăличчен, хĕвел тухиччен! Çапла мар-им, э?

— Эп сансăр пуçне никампа та çӳремен! — кăшкăратăп ăна хирĕç.

— Çавах мар-им? — тет вăл. — Эп те каччах пулнă. Хăраман-çке эс ун чухне?

— Эс вăл — эсĕ, санран мĕн хăрамалла? Пăру пулнă вĕт эсĕ!

— Хăш чух вăкăр пулнине те астăватăп...

— Эп сана иртĕнме паман!

— Эп хам та иртĕнме тăрăшман. Юратнă пулмалла сана, эсреле, хĕрхеннĕ, çавăнпа качча иличчен кӳрентермен...

— Мĕн каласшăн вара эсĕ? Анютăшăн та хăрамалли çук, тесшĕн-и?

— Çапла каласшăн çав. Анюта та хăйĕнне хăй пĕлет пуль, пĕр-пĕр пуçкасанпа, тĕрмерен тарнă бандитпах çӳремест пуль. Вунтăххăрта лешĕ — юрату тени те — пулма пултарать. Эпир иксĕмĕр пирвайхи хут чуптунă чух эсĕ ху миçере пулнă-ха?

— Маннă!

— Эп хам ун чух миçере пулнине манман. Шăп çирĕм çул тултарнăччĕ. Эс манран пĕр çул кĕçĕн. Миçе пулать-ха вăл?

— Ан лăркаса лар, ват тунката! Ме журнална, шыра чăвашсен авалхи сăра ĕçмелли савăчĕн ятне!

— Атя, пĕрле шутлатпăр. Пĕр ăс лайăх, ик ăс — тата лайăххрах, теççĕ...

Ларатпăр, хайхискер, юнашар. Лăпланнă пек пулатпăр. Тытăнатпăр кроссворд тупписене шырама. Вăхăт нумай та иртмест — каллех тавлашса каятпăр. Авалхи сăра ĕçмелли савăта вăл а л т ă р, тет, эпĕ — к у р к а, тетĕп. Ик сăмахĕнче те пилĕкшер саспалли. Хăшĕ тĕрĕс? Вăл хăйĕнне перет, эп — хамăнне. Ниепле те килĕштерейместпĕр.

Çав вăхăтра Анюта пырса кĕрет. Ашшĕ чĕнмест, анчах эпĕ тӳрех ятлаçма тытăнатăп.

— Аçта çӳрерĕн çак таранччен? Кампа? Тек эп сана килтен те кăлармастăп! Чупкăн!

Анюта эп кăшкăрнинчен ним чухлĕ те хăрамасть.

— Хăвна пĕл, анне, çамрăк чухне ху мĕнле çӳренине аса ил, — тет те, йăл-йăл кулать.

Эп çавăнтах ашшĕне тыллама пуçлатăп:

— Эсир иксĕр те пĕр каварлă иккен! Иксĕр те мана хирĕç! Манран кулса пурăнас тетĕр-и? Эп сире, шуйттансене...

Терентти тутлăн карăнса анаслать:

— Кулас килмест-ха манăн, çывăрас килет...

* * *

Ну, пĕррехинче пулчĕ те вара!..

Пирĕн Анюта каллех киле час таврăнмарĕ. Терентти телевизорпа футболла вылянине пăхрĕ-пăхрĕ те (хăй ĕмĕрĕнче мечĕке пĕрре тапса курман пулин те, футболшăн вилсех каять вăл, пирĕннисене ютран килнисем çĕнтерме тапратсан ниçта кайса кĕрейми ăшталанать!) çывăрма выртрĕ. Мана та хĕрĕме кĕтсе чӳречерен пăхса ларнă çĕртех ыйхă пуса пуçларĕ. Кăшт канса илем-ха, тесе выртрăм та, хам та çывăрсах кайнă. Тем вăхăтран, такам пырса чышнă пек, варт! вăранса кайрăм...

— Пăхатăп — пĕр сехет çитнĕ! Килсе выртнă-ши Анюта? Çак шухăшпа тепĕр пӳлĕмелле вăркăнтăм.

Çук Анюта! Вырăнĕ пуш-пушах! Кухньăна чупса кайрăм — кулятран таврăнсан апат çисе лармасть-и? Унта та çук! Апайтурух!... Мĕн тумалла? Хĕрсĕр тăрса юлтăмăр-иç капла? Çухалнă вăл! Пĕтнĕ! Вилнĕ! Машин айне пулнă! Шыва путнă!

Тем те шутлăн, тăвансем!

Усал мотоцикл лăкăртатнă пек хăрлаттарса, аллиурине сарса выртакан старике пĕррех туртса вăратрăм.

— Анюта таврăнман, тăр часрах! Темскер пулнах унпа! Ахаллĕн çак таранччен çӳрес çук вăл! Пăх-ха... иккĕмĕш сехет! Атя часрах шырама!..

Терентти куçне мăч-мăч-мăч тутарса сехет çине пăхрĕ те сăвăлла каларĕ хучĕ:

Ах, юрату, юрату,
Ватă чуншăн ырату...

Унччен те сискелеттĕм-ха эпĕ, пенсие тухнăранпа вăл час-часах, пулчĕ-пулмарĕ, сăвăлла калаçкаласа илетчĕ. Урампа чип-чипер пынă çĕртех персе ярать: «Хырăм выçрĕ, мĕн тăвас, киле кĕрсе мĕн хыпас?» Мунчаран тухать те: «Ай-ай, ăшă пулчĕ-çке, сăра ĕçес

килет-ҫке, ырă карчăк пулмăн-ши, пĕр полтинĕк памăн-ши?» тет. Хăрамах пуҫларăм, ватлăхра сăвă ҫырма тытăнмасть-ши ку? Пенсионерсене вăл чир час-часах ерет те аптратсах ҫитерет, нимĕнпе сыватма ҫук, тенине илткеленĕ эпĕ... Тур ҫырлахтăрах ун пек хурлăхран!

— Ухмаха супса ан лар, йĕмне тăхăн часрах, шырама каятпăр! — чышса илтĕм ҫакна.

Тухрăмăр урама. Шăп. Пĕр чун та ҫук. Ăҫта каяс? Ăҫтан шырама тытăнас ҫухалнă хĕрĕме?

— Атя, Атăл хĕрринчен пуҫласа кунталла ухтарса килетпĕр,— терĕм старике, ҫаннинчен туртса.

— Атăл, Атăл, ҫĕршывăн илемĕ... — терĕ вăл мана хирĕҫ.

Эп ĕнтĕ каялла ҫаврăнса та пăхмарăм, анаталла ярăнтартăм кăна. Вăл ман хыҫҫăн лăпăстатрĕ. Хăй пĕрмай тем мăкăртатать. Сăвă калать пулмалла, йӳтенĕскер.

Ҫитрĕмĕр Атăл хĕррине. Кунта та шăпах. Никам та ҫук. Пристаньрен хăпаракан та, унталла анакан та курăнмасть. Старике тăвалла, «Юрату хысакĕ» еннелле сĕтĕртĕм. Вăл часах пăравус пек хашкакан пулчĕ, пăс кăлармасть кăна. Кăларать те пуль те, мана курăнмасть. Пĕр сак тĕлне ҫитрĕ те лак! ларчĕ.

— Эпир санпа ак ҫак вырăнтан Атăл ҫине пăхса ларма юрататтăмăр, астăватăн-и? — терĕ хăй, аран сывлăш ҫавăрса.

— Хăҫан ларнă эпир санпа кунта, мĕн сӳпĕлтететĕн? — терĕм ăна хирĕҫ.— Эп Атăл хĕррине хăҫан тухса курнине те астумастăп.

— Ҫамрăк чух ара, авланиччен...

— Тьфу, тупнă асăнмалли! Тăр тавай, ут! Пирĕн Анютăна шырамалла пуль?

Тепĕр пăртак хăпарсан, Терентти татах ларчĕ.

— Астăватăн-и, ҫакăнта ларнă чух пире пĕррехинче милиционер хăратса пăрахрĕ: «Обществăллă вырăнсенче чуптунăшăн штраф» терĕ...

— Ăна та аса илтĕн пулать, ват сăпса!

— Астурăм ҫав! Эсĕ «пирĕн укҫа ҫук-ҫке...» тесе макăрса ятăн...

— Эпех макăрас ҫук-ха, эс макăрнă пулинех! — ал султăм эпĕ.

Тата тăварах хăпартăмăр, «Юрату хысакне» çитрĕмĕр.

— Эпир санпа ыран ЗАГСа каяс тенĕ чух çакăнта тăнăччĕ, астăватăн-и? — каллех пуçларĕ Терентти.— Тул çутăлнăччĕ ĕнтĕ, а-ав çавăнтан хĕвел те тухма пуçланăччĕ. Шутсăр лайăхчĕ çав, ах!.. Эс пуçна ман хулпуççи çине хутăн та... ак çапла... темле юрă юрларăн. Хи-итре юрă... Эп сана пуçăнтан ачашларăм... а-ак çапла...

Вăл чăнах ман пуçа хăй патнелле тайăнтарчĕ те чип-чиперех ачашлама тытăнчĕ. Аллинчен çат! тутартăм.

— Ухмаха ертĕн-и эсĕ, кукша пуç? Эпир кунта çĕр хута мĕншĕн килнине те манса кайрăн-и? Анютăна шырамалла-иç?

— Анюти тармĕ-ха вăл, килех таврăнĕ... — хаш! сывласа ячĕ ман Терентти.— Анчах çамрăклăх тарчĕ ĕнтĕ, тек нихçан та таврăнмасть вăл... Эх, карчăк, карчăк! Лайăхчĕ-çке çамрăк чух! Эс те лайăхчĕ, хальхи пек хаяр марччĕ... — Вăл каллех мана ыталама пикенчĕ, эп ăна тĕртсе ятăм та лач! сурса анаталла утрăм. Паллах, вăл та манран юлмарĕ. Йĕппи хыççăн çиппи, тенĕ пек.

Хĕрлĕ площаде çитсен, эп тӳрех сулахайри парка кĕрсе ухтарма тытăнтăм. Пырса пăхман пĕр сак та хăвармарăм. Усси пулмарĕ. Пĕр чĕрчун та çук иккен.

— Атя-ха тепĕр паркне, фонтанлине! — терĕм Тереттие.— Хальхи çамрăксем фонтансем патĕнче тĕл пулма юратакан!

— Ĕлĕк валаксем умĕнче тĕл пулнă,— терĕ те вăл мана хирĕç, каллех сăвăлла калаçма тытăнчĕ:

Çӳллĕ валак патĕнче
Вата йăмра ешерет,
Куллен ирех çавăнта
Сетнер Нарспие кĕтет...

— Пăрах лăркама! — кăшкăртăм тарăхса.— Тупнă сăвă каламалли вăхăт! Хĕрӳ пирки шухăшла эсĕ, услап!

Вăл пурĕпĕр мăкăртатрĕ:

Йăлтăр-йăлтăр куçĕсем
Сар хĕр çине пăхаççĕ,
Сар мăйăхлă тутисем
Ăшă сăмах калаççĕ...

— Асту, сухалӑнтан тытса лӑскатӑп пӗрре! — хӑратса илтӗм хайхине. Тин чарӑнчӗ.

Пирӗн хӗр, паллах, кунта та тупӑнмарӗ. Пӗтӗм паркӗпех ҫаврӑнтӑмӑр, пӗр-пӗрин ҫумне пӑталанӑ пекех ларакан темиҫе мӑшӑра куртӑмӑр, анчах Анюта мар, урӑххисем пулчӗҫ.

— Атя киле, ҫитет пуль хамӑрӑн ҫамрӑк чухнехи маршрута кун чухлӗ тӗрӗсленипе! — терӗ старик.— Темле, чун хурланма пуҫларӗ!

— Мӗншӗн? Анюта тупӑнманшӑн-и?

— Ҫ-ҫук... Ҫав маршрутпа тек ҫӳреме пултараймансӑн. Ватӑлтӑмӑр, карчӑк, кивелтӗмӗр. Э-эхх!..

— Сана, мур, яш шухӑш кӗрсе кайрӗ-им? Халь те чупассу килет мар-и? Пенсионерсен пулкалать тет ун пекки... Чуптарӑп эп сана, ват тӑмана! Авӑ, кур, саншӑн халь хӗрӳ чупать. Кашни каҫ, кашни каҫ йӑрккать. Эс чармастӑн...

— Чуптӑр-иҫ ара, ҫӳретӗр-иҫ, ҫамрӑклӑх пӗрре кӑна килет...

— Ак хайхи! Эс ун майлӑ-ха, эппин? Чарма шутламастӑн? Ахальтен мар ҫынсем Анюта пӗтӗмпех сана хывнӑ, теҫҫӗ!

— Мана мар, сана хывнӑ вӑл, карчӑк. Эс ҫавӑн пек ҫӗрӗ-ҫӗрӗпе чупнӑ вӗт-ха...

— Хӑҫан, хӑҫан чупнӑ? Кампа чупнӑ? — вӗресе кайрӑм эпӗ.

— Манпа чупнӑ,— терӗ Терентти.— Ҫамрӑк чух. Вунтӑххӑрта. Мӗн, тунас тетӗн-и? —вӑл лӗх-лӗх-лӗх кулса илчӗ.— Шутсӑр ҫивӗччӗ ҫав эсӗ, ывӑнтарсах ҫитереттӗнччӗ мана...

— Мӗн туса? Мӗнпе ывӑнтарнӑ сана? Кӳлсе чупман пуль?

— Бульвар тӑрӑх, урамсем тӑрӑх ҫӗрӗ-ҫӗрӗпе ҫӳреттерсе...

— Ҫӳремелле марччӗ, лармаллаччӗ килте! Ма ҫӳрерӗн?

— Сана юратнипе, ара...

— Апла пулсан, ан та янра!

Ҫавӑн пек хирӗҫкелесе, тавлашса, хамӑр тӗлелле ҫитрӗмӗр. Эпир пурӑнакан мӑн ҫурт умӗнче лайӑх сквер пур. Йывӑҫсем ҫав тери парка ӳсеҫҫӗ. Чечексем нумай. Пит илемлӗ. Шӑршине те ытармалла мар. Хашкама ернӗ Терентти, киле кӗрес вырӑнне, тротуар ҫин-

чен пăрăнса, лăпсăркка йывăç хӳттинчи сак çине ларчĕ.

— Ырлăх!— терĕ Терентти.— Сывлăшĕ кăна мĕне тăрать... Пăх-ха тата, уйăхĕ епле хитре! Пирĕн çинех пăхать... Астăватăн-и, çамрăк чухне çавăн пек уйăхлă каçсенче еплерех лараттăмăр? Ак çапла... — Вăл пĕр аллипе мана ыталарĕ. Чармарăм ухмаха, мĕн хăтланать-ха ку, терĕм. Хамăн тӳсме çук кулассăм килет.— Э-эх, карчă-ăк! — ассăн сывласа ячĕ вăл, кăшт ларсан.— Юрататтăмăрччĕ-çке пĕрне пĕри! Эп — сана, эс мана... Çапла вĕт? Питĕ лайăхчĕ эсĕ... Чуптăваттăм сана... ак çапла... — Вăл ман пуçа хăй еннелле тайăлтарчĕ те питçăмартинчен чап! чап! туса илчĕ.

Çав самантрах пирĕн хыçра темле хĕрарăм чăх-чăх-чăх кулни илтĕнчĕ, унччен те пулмарĕ — арçын хулăн сасăпа вырăсла юрласа ячĕ:

Любви все возрасты покорны...

Эп хама çĕлен сăхнă пек сиксе тăрса кăшкăрса ятăм:

— Кам шуйттанĕ унта? Мĕнле хурах? Асту эп сана!

Йывăçсем хыçĕнчен пирĕн Анюта тухса тăчĕ. Ун çурăмĕ хыçĕнче каччă курăнса кайрĕ.

— Ăçта çухалса çӳретĕр эсир çĕр хута? — терĕ Анюта йăл кулса.— Кĕт, кĕт сире...

— Сана шырарăмăр, сана, усал чĕппи! Эс ху вăт ăçта çухалса çӳретĕн, чупкăн? — хăмсарсах илтĕм ăна.

— Мĕн шырамалли пур мана? Эпир çакăнтах ларнă, ниçта та кайман, шутламан та кайма,— терĕ Анюта лăпкăн кăна.— Эсир васкасах таçта тухса чупнине куртăм та, таврăниччен кĕтес, терĕм...

— Куртăн пулсан, ма сас памарăн? Ма чуптартăн пустуй?

— Уçăлса çӳреме кансĕрлес мар терĕм...

— Халь те кансĕрлерĕмĕр ав, каçарăр,— сăмах хушрĕ каччи.

— Лекет-ха сана куншăн! — каллех хăмсартăм Анютăна.— Пит лайăх лекет, курăн акă!

— Сире чуптуса ларма чăрмантарнăшăн-и? — кулса ячĕ вăл.

Ним калама та аптрарăм ăна хирĕç.

Ман Терентти вара сак ҫинчен тăчĕ те, халь ҫеҫ илтнĕ юрра мăрлатса, уттара пачĕ: «Любви все возрасты покорны, ее порывы благотворны...» Ана мĕн? Ҫынни ҫавнашкал. Пӳрт ҫунма пуҫласан та галстукне тупса ҫакмасăр тухмасть пуль. Нервисене тилхеперен тунă пулмалла унăнне!

Киле кĕрсен эпĕ Анютăна ҫапах та нумай ҫӳренĕшĕн хăтăрма тытăнтăм, анчах Терентти ман умма пырса шĕвĕр пӳрнипе юнарĕ:

— Ан шавла, карчăк. Ан кĕрле, тусан ан кăлар пустуй. Хăвна пĕл. Аса ил те ҫамрăк чухнехине — шăпăрт пул...

Хăй ҫавăнтах мана ҫамкаран чуптуса илчĕ.

Анюта кулкаласа тăчĕ...

## ТУПМАЛЛИ

ЧИ ХАКЛИ. Роман . . . . . . . 3

ШУХĂШЛАСА ТА КĂЛАРАЙМĂН. Хаяр калавсем . . . . . . . . . 307

Сарăппанлă кушаксем, йĕкехӳресем тата ыттисем . . . . . . . 309

Йывăр кун . . . . . . 339

Чăнах усси пур-мĕн . . . . 349

Вăрăм Ваçли — качака патши . . . 361

Хĕр шыратпăр . . . . . 371

**АГАКОВ ЛЕОНИД ЯКОВЛЕВИЧ**

**САМОЕ ДОРОГОЕ**

**Роман**

**НАРОЧНО НЕ ПРИДУМАЕШЬ...**

**Сатирические рассказы**

На чувашском языке

Редактор Ю. С. Семенов
Художник В. Л. Агаков
Художественный редактор А. А. Афиногенов
Технический редактор В. И. Павлова
Корректоры Л. К. Ванюшкина,
Л. С. Богатеева

НТ 26752. Сдано в набор 9-I-74 г. Подписано к печати 5-VII-74 г. Изд. № 35/74. Формат 84×108/32. Бумага типографская № 2. Физ. печ. л. 12. Усл. печ. л. 20,16. Учетно-изд. л. 20,16. Заказ № 99. Тираж 25.000 экз. Цена 82 коп.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР. г. Чебоксары, Канашское шоссе, 13.

ХИСЕПЛӖ ВУЛАКАНСЕМ!

*Ҫак кӗнекене вуласа тухнӑ хыҫҫӑн вӑл сире кӑмӑла кайни е кайманни ҫинчен, малашне сирӗн мӗнле кӗнекесем ытларах вулас килни ҫинчен ҫырса пӗлтерме ыйтатпӑр.*

*Пирӗн адрес: 428000, г. Чебоксары, Чуваш. АССР, пр. Ленина, 4. Чувашкнигоиздат, редакция художественной литературы.*